4434

# ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИ

X КЛАСС ВАЛЛИ

ХРЕСТОМАТИ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ — 1949

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

10-МĔШ КЛАСС ВАЛЛИ

## ХРЕСТОМАТИ

Н. Т. ВАÇАНККАПА Ф. А. ШАПОШНИКОВ
ПУХСА ХАТĔРЛЕНĔ

ИККĔМĔШ ИЗДАНИ

*Чăваш АССР Çутĕç министерстви çирĕплетнĕ*

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатой
2 сентября 1949 г.
№ 164

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1949

# ЧĂВАШ ХАЛĂХĔ АСЛĂ СТАЛИН ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ*

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Çут хĕвелĕмĕр! Пиртен
Йышăнсам çак çырăва эс—
Пур чăваш халăхĕнчен.

Çан ятна савса çыраççĕ
Ăна пирĕн сăвăçсем.
Сан çутупала çĕклевчĕç,
Çунатланчĕçĕ вĕсем.

Юрăсем çӳле çĕкленччĕр,
Вĕçчĕр ăмăрт-кайăк пек!
Тутарпа пире тус турăн,
Грузинпа та таджикпе.

Эс хĕвел кĕртсе çутатрăн
Пирĕн сĕм чăтлăхсене.
Эс тăванлатса тыттартăн
Алла-ал халăхсене.

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Çут хĕвелĕмĕр, тавах:
Вырăс халăх чапĕпе эс
Çутрăн пирĕн мухтава.

Вырăс халăхĕ хăватлăн
Вăй парса тăчĕ ялан:
Пире те çунат сармашкăн
Пур халăхсемпе пĕртан;

Ăмăрт-кайăкла вĕçмешкĕн
Сенкер пĕлĕт айĕнче,
Юнашар тăрса ӳсмешкĕн
Халăхсемĕр йышĕнче.

Шупашкар та çĕн Мускавшăн
Туслă пултăрччĕ, тесе,—
Вырăс халăхĕ чăвашшăн
Вăйне хучĕ тимлесе.

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Çут хĕвелĕмĕр! Пире
Эс савса, çырса пиллеиĕ
Аслă Конституцире—

Унта пирĕн ĕмĕр кĕтнĕ,
Пиçсе çитнĕ ĕмĕтсем.
Ылттăн хучĕ, телей хучĕ,
Теççĕ ăна чăвашсем.

Союзри Закон пулса та,
Чăвашри Закон пулса,
Ялкăшса çиçсе тăрать вăл,
Ленин çулăмпе çунса.

Ăна эсĕ çитĕнтервĕ
Аслă Совет çĕрĕнче,
Ăна эпир çĕнсе илнĕ
Юнлă çапăçусенче.

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Чăвашсен çĕршывĕнче
Юрăсем янраççĕ ирĕк
Хавас пурăвăç çинчен.

Юрăсем çӳле çĕклеççĕ
Санăн ялав пек ятна,
Уççăн янраса вĕçеççĕ.
Аслă СТАЛИН, сан патна!

---

* Кĕскетсе пичетленĕ.

* * *

„Историсĕр халăх“ тенĕ
Пирĕн пек халăхсене.
Тискер кайăк пек йĕрленĕ
Пире ĕмĕр-ĕмĕрне.

Чĕрене тытса вулатпăр
Иртнĕ кун кĕнекинче—
Ĕмĕрсем хушши таптаннă
Халăх пурнăçĕ çинчен.

Эсĕ уçнă кĕнекемĕр
Сарăлса выртать умра:
Тискер кайăк мар-мĕн эпĕр,
Историйĕмĕр пурах.

* * *

Çаврăнса пăхма хăрушă...
Кам пире лутăркаман?!

Чингисхан пире туланă
Çеçенхир ордисемпе;
Çунтарса, хăртса юланăн
Вĕçсе иртнĕ тăвăл пек.

Тамерлан килсе пĕтернĕ
Пирĕн лăпкă ялсене.

Хуласем çунса кĕлленнĕ,
Юлнă халăх çаралса;
Вилепе тулса пĕвеннĕ
Чулман-Атăл[1], Çарăмсан.

Ĕмĕртен: каханĕ, ханĕ,
Князь, мăрса, тӳре-шара
Пире Новгородра сутнă,
Пире сутнă Багдадра.

Тăтăшах пырса тустарнă
Пурлă-суклă çуртсене;
Çав-çавах ясак[2] турттарнă
Хансеве, тăрăнсене...

Уйсене те тăпăлтарнă
Улпутсем, монастырьсем.

Чунсене те сăнчăрланă,
Хĕрессем çине тирсе.

Халиччен сыхланнă юрă:
„Йăлăмра—шыв-хум сасси,
Ку енче—тӳсме çук хурлăх
Чан сасси те пуп сасси...“

* * *

Çĕр мунча пек пăчă пурнăç
Хĕсĕнет хĕсĕннĕçем.
Чăл та пар тарса пытаннă
Сехри хăпнă этемсем.

Вăрманкас, Çатра, Паланлă,
Çырмапуç та Упавар—
Çак ялсен ятне хăварнă
Пире ырă пурнăç мар.

Чăнласах упа йĕнни пек
Хура пӳрт ăшĕ тĕттĕм:
Курăнмасть хăмпă тĕнни те,—
Явăнать кăвак тĕтĕм.

Сухапуçăн çук ним тухăç,
Пĕр пус та кĕрет хĕнпе.
Ваттисем каларĕш: пурнăç—
Йĕппе пусă алтнă пек.

Пуянсен çăкри те йӳçĕ;
Тарçа лекрĕн—ĕмĕрлĕх.
Çĕтĕк-çатăкăн çи-пуçĕ
Çурăлать йыт вĕрнипех.

Ак тăса-тăса хураççĕ
Чухăна хурал пӳртне;
Çара-çанлăн çунтараççĕ,
Чĕрĕллех сĕвеç ӳтне.

Вăрмана час-час янратнă
Шăнкăрав сассийĕсем:
Приставпа тиек кустарнă
Хырăç-марăç тиесе.

Кучченеç шаккать тăлмачĕ;
Куштансем, усламçăсем
Ашкăнаççĕ, мăшкăлаççĕ
Ял хевти хавшаннăçем.

---

[1] Кама шывĕ.
[2] Хырçă.

Çаралать çĕршыв кунран кун...
Таврари сĕм вăрманта
Ши те ши! шăхрать ак таркăн,
Çĕн хавха вăл вăратать.

* * *

Кам калана—аслă Атăл
Типсе хухăнĕ, тесе?
Кам ĕненĕ халăх-паттăр
Ĕмĕрех пуç пĕкессе?

Кам калана—Алтăр Çăлтăр
Сÿнсе ÿпĕнĕ, тесе?
Кам шанмасть çăраллă сăнчăр
Ункăн-ункăн сÿтĕлессе?

Шăпи тулĕ! Халăх пирĕн
Чура чунлă çуралман.
Ак хăпарнă шыва хирĕç
Аслă Разин утаман![1]

Тепĕр хут хумсем çĕклеççĕ
Чĕррĕн пирĕн ятсене.
Халь пире аса килеççĕ
Пихтемей те Аттеней.

Воеводăсен хаярĕ,
Улпутсен сехре хăппи—
Çĕкленет Тутимĕр çарĕн
Йывăçран тунă туппи.

Çĕкленеç вĕсем тем чухлĕ:
Эсаул маттур Емай,
Иселпей, Искей Пайтулĕ...
Чĕннĕ паттăр çапăçма.

Йÿçсе çитнĕ аслă çилĕ
Тепĕр хут силлет çере...
Анчах витĕмлĕ те вирлĕ
Долгорукован етре[2].

Тепĕр хут пире путарнă
Ашайми юн сĕлтĕше...
Ялĕ-ялĕн шĕл кăваррăн
Выртнă йăмăх тĕлкĕшсе.

[1] 1670 ç.
[2] 1670-71 ç. ç. пăлхава пусарма янă çарăн пуçлăхĕ Долгоруков князь пулнă.

* * *

Ĕмĕрти лаштра юманлăх,
Хырлăхсем йĕри-тавра
Тахăш те пĕр хапсăнмалăх
Ÿснĕ пирĕн çĕршывра.

„Сăрхăнать юман сĕткенĕ
Хуппи айĕн çÿлелле.
Лашман çурăмĕ вистеннĕ
Саламат веçĕпеле.

Сирпĕнет юман турпасĕ
Ах, ачсемĕр, аякка!
Хăçан çÿрĕп эп—сунарçă—
Ирĕк пуççăн кайăка?

Ыткăнать, витмест-çке савăл
Шăнса хытнă каскана.
Ыткăнас та çупăнас вăл
Этем мурĕ патшана!.."

А лере, сивлек тĕтреллĕ
Балти шывĕ хĕрринче,
Тепĕр юрă кĕвĕленнĕ
Чура халăх чĕринче:

„Çил çĕкленчĕ, çил лăпланчĕ,
Хум çапать те хум чакать.
Ăçта юлнă пирĕн шанчăк?
Кам вăрланă шанчăка?

Шурлăхра эпир пĕтетпĕр,
Чĕркуççи таран шывра.
Хутлă-хутлă çурт çĕклетпĕр
Чултан мар-çке—шăмăран.

Анчах çитĕ вăхăт, харăс
Эпир тухăпăр пĕрре—
Чăваш, пушкăрт, мăкшă, вырăс—
Хамăр тунă Питĕре."

Улпутсем пиртен хăранă.
Пире тимĕр суттарман.
Тимĕрçĕ ĕçне те чарнă,
Хăвалана пур ялтан...

Эпир—Атăлăн хăравсăр
Ĕмĕрхи пăлхавçисем—
Эпир кар сиксе тăрайнă
Пĕр йыхрав кăна çитсен.

Яик шывĕ ейӳ кайнă,
Атăл тухнă çырантан
Емельян—маттур Иванăч—
Пугачёв хумхатнăран[1].

—Утаманăмăр! тыт халĕ
Йĕкĕр сарă алтăра.
Чăваш халăх чун хавалĕ
Иксĕлми вăй пултăрах!

—Утаманăмăр! çырт халĕ
Пирĕн çăкăр-тăвара
Тăшману сан—чăваш ялĕн
Тăшманех вăл, тавăрар!..

Ак вĕçсе туха пуçларĕ
Кунсерен „хĕрлĕ автан".
Улпутсен паçмин пушарĕ
Курăнать таçтан-таçтан.

Хыпăнать Айтар[2] килçурчĕ,
Арпаланчĕ кив капан.
Харампырăн шалçи тулчĕ—
Тулма тивĕçлĕ таран.

Улпутсем хыт йăлăнаççĕ:
Иккĕмĕш Кĕтеринтен
Хĕçпăшаллă çĕнĕ тарçă
Тилмĕреççĕ Питĕртен.

Пирĕн-пирĕн сăнчăрланă,
Каснă пирĕн чĕлхене,
Сăмсана çурса кăларнă,
Çăлса илнĕ чĕрнене.

Хамăра ĕмĕр çаратнă
Тӳресем пире çакса
Сулăпа юхтарса янă,
„Вăрăсем" тесе çырса.

—Утаманăмăр, хур пултăн
Михельсонăн[3] çарĕнчен.

[1] 1774 ç.
[2] Пугачёвпа пĕрлешсе пăлханнă халăха пусарнă чух чапа тухнă чăваш çĕрулпучĕн хушамачĕ.
[3] Хусан кĕпĕрнинче Пугачёв майлă тăрса кĕрешнĕ халăха пусаракан çар пуçлăхĕ.

Анчах пурĕпĕр улпутăн
Вăрлăх пĕтĕ çĕр çинче.

Вĕсем вуннăн, эпир—çĕрĕн,
Вĕсем пин, эпир—миллион!
Каллах кар тăрăпăр чĕррĕн,
Сая каймĕ тăкнă юн.

Ак каллах Сăкăт Васлейĕ[1],
Хăлхине касĕçин те,
Çĕн йыхрав илтсе вĕçлейĕ
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕте.

Çав вунçич çулхи хастарăн
Чунхавалĕ малашне
Вĕрилетĕ шĕл кăваррăн
Хăлат куçлă яшсене.

Ак тепре, хĕн-хур амакĕ
Пуснăçемĕн çурăмран,
Тапса сикĕ урхамахĕ
Утаманăн—Васанккан![1]

* *
*

Халлĕхе çăхан çунатлăн
Карăнать сĕм тĕттĕм каç.
Пире пурте пĕр каварлăн
Хупăрланă та сăхаç.

Пуянсем тĕне кĕреççĕ
Çĕршĕн, шывшăн сутăнса.
Ял-йыша ирĕксĕрлеççĕ,
Салтаксем çӳреç урса:

Кӳпчекпе çапса ватаççĕ
Çӳпçесен тĕпĕсене;
Манахсем тапăлтараççĕ
Ывăçа мĕн лекнине:

Шĕлкеме, хушпу, пир-авăр,
Çăмарта, шăрттан та çу,
Сурăх тирĕ, çăм, сӳс кантăр—
Ӳпĕнсех юлать çӳпçӳ.

„Миссие полицирен те,
Полицие миссирен
Уйăрмашкăн май килмен"—тет
Хусанти пĕр эрхерей.

[1] Пугачёва çывăх тăрса кĕрешнĕ сынсем.

Çавăн чух тўрккес, пăлхавçă
Елекхи лашмансене
Уделсен[1] чури тăваççĕ,
Пусараç çĕн хур айне.

Сулланаç вара, мăнтарăн,
Сухапуçĕ хыçĕнчен.
Йаран ăшăк, хуйхă тарăн—
Юрăпа вăл сирĕлмен...

* * *

Пире пана виçĕ тивĕç—
Çулне виççĕ пухăнма:[2]
Январьте хумашкăн хырăç,
Апрельте—çĕр уйăрма,

А октябрьте пуçтарнă
Туимккасене хырма.
Пĕр шалçа юлми тустарнă,
Татмасассăн парăма.

Ваттисем ĕнсе хыçаççĕ,
Юптараç сив кăмăлпа:
— Вĕренти утран ыйтаççĕ
Ирĕкри утсем апат!

Шăн паранкă ларттармашкăн
Пуçласассăн ялсене—
Астутарчĕç тепĕр ăстрăм
Пугачĕвăн вăхăтне.

Тапранать хай урăм-сурăм
Çĕрулми пăлхаварĕ:
Пĕр кунта вăл çĕршер çухрăм
Арасланчĕ, ялкăшрĕ.

Анчах нит хăвăрт ăнкарнă
Хусанта мĕн иккенне,—
Сулмакраххăн аварланă
Губернатор туппине.

Казаксем çитсе хўтерне
Çиллĕн тухнă халăха,
Тепĕр хут юнпа шўтерне
Халăхри хăюлăха.

Палатай,[1] пăлхав çарпуçĕ,
Темиçе çĕр тусĕпе,
Пиншер хулă айне пулнă
Хăйĕн харсăр пуçĕпе.

Ун ик куç пекех ĕненнĕ
Кĕркури Васлейĕпе
Çемен Çитăрĕ тертленнĕ
Ĕмĕр-ĕмĕр Çĕпĕрте.

* * *

Утмăл пĕрмĕш çул хăтланчĕç
Манифест кăларанçи.
Анчах халăх улталанчĕ,
Хушăнайрĕ çеç выççи...

Çулсерен юра еретпĕр.
Çĕр сахал. Тўлев нумай.
Хуçасем патне сĕнккетпĕр
Вĕсен тарçисем пулма.

Хуçасем хута яраççĕ
Укçана усламăçла:
Çĕр тара илсе акаççĕ,
Ларттара пуçлаç хăмла.

Укçа чул каса пуçланă.
Каскăн çын—Ехрем хуçа
Пирĕн мăй çине утланнă,
Пухнă çын вăйпе укçа.

* * *

Эх, çĕршывăмăр, мăнтарăн!
Кам саппа юпкурнă-ха?
Сана ĕмнĕ; тăпăлтарнă
Пурлăхна пур йыт-качка.

Çăварна та çăвархланă,
Туртса илнĕ чĕлхўне.
Пуянсем юри пытарнă
Хăйсем чăваш иккенне.

[1] 19-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Кăрмăш. Чĕмпĕр, Нăва уезчĕсенче пурăннă чăваш хресченĕсене удел çĕрĕ (патша тăван-пĕлĕшĕсен çĕрĕ) çинче ĕçлеттермелле тунă.
[2] Граф Киселĕв 1838 ç. кăларнă реформа.

[1] „Паранкă пăлхавĕ“ пулса иртнĕ вăхăтра (1842 ç.) пăлханнă хресченсене ертсе пынă çынсенчен пĕри.

Чухӑнсем савса упранӑ
Хӑйсен тӑван чӗлхине.
Пирӗн Çеçпӗл сӑвӑç çырнӑ
Асилсе çав иртнине:

„Эй, ваттисем! Эй, ват çынсем!
Авал чӑваш асаплӑ пулнине
Çамрӑксене каласа парӑр:
Тӑван çӗршывӑн капӑр чӗлхине
Ялан савма хушса хӑварӑр.

Эй, ваттисем! Пӗтӗм чӗререн
Сире пиллетпӗр ыр пилпе.
Эсир асапсене парӑнманнипе
Чӑваш чӗлхи чӗрӗлчӗ вилӗмрен".

* * *

Ху кӑкру аталантарнӑ
Ывӑлу-хӗрӳ те сан,
Тӳсеймесӗр, тухса тарнӑ
Тыткӑнрискертен, санран.

Аçтӑрханӑн та Уралӑн,
Чулхулан та Çӗпӗрӗн—
Чӑваш хурлӑхлӑн юрланӑ
Хӑй шӑпи-тӳпи çинчен.

Хура тинӗсӗн те хумӗ
Илтнӗ хуйхӑллӑ сасса;
Ӑстамбулӑн хӳми умӗн
Хӗрсем йӗнӗ татӑлса.

Аслӑ шывӑн шавӗ майӑн,
Тӑван çӗрӗнчен инçе,
Ваттисем шухӑша кайнӑ
Хӑйсен Атӑлӗ çинчен.

Кӑнтӑртан вӗçсе ӑсаннӑ
Кайӑк-хур картипеле,
Вӗсем тӑлӑх салам янӑ
Ашшӗ-амӗш çӗрнелле.

А çӗршывӗ... Эх, аннемӗр!
Чун тухас патне çитсе,
Хӗвеле те ӗненмесӗр,
Эс çӳренӗ пуç чиксе.

Мӑн çулпа чи лайӑх, çутӑ
Ӗмӗтпе çунакансем
Шартлама Çӗпӗре утнӑ,
Конвой умӗн пӗшкӗнсе.

Çав çулпа Радищев[1] тухнӑ:
Бурлака хӗненине,
Выç аптӑратнине вӑл курнӑ,
Курнӑ халӑх чир-чӗрне.

Чернышевский хумхантарнӑ
Хурлӑн çав хурӑнлӑха;
Мӗскӗнсем, тесе хӑварнӑ
Герцен пирӗн халӑха.

Достоевский курса иртнӗ
Пирӗн çӗтӗк-çатӑка.
Лев Толстой ӳкерсе илнӗ
Пирӗн чӗмсӗр салтака...

Камшӑн, мӗншӗн-ши хатарлӑ
Кимӗ туртнӑ чӑвашсем
Максим Горькие пӑхтарнӑ,
Сӑнаттарнӑ тинкертсе?

Этем чунӗн инженерӗ,
Аслӑ маçтӑр—мӗскере
Вӑл тӗпченӗ те ӗнернӗ
Пирӗн юрӑ-кӗвӗре?

Туйман-ши вӑл пирӗн халӑх—
Иксӗлми тан тапнӑ пек—
Пултаруллӑ, хал-хавallӑ
Пулнине ӗмӗртеппе?

Туйман-ши вӑл, харсӑр сокол,
Мӗн пуссассӑн та сасса,
Çав-çавах эпир хаваслӑн
Юрласа-пӗр ярасса?

Çаксене пурне те харӑс
Халь пире ӑнлантарать

---

[1] **А. Н. Радищев—вырӑссен малтанхи демократчӗсенчен пӗри; вӑл 1797 ç. Çӗпӗр ссылкинчен таврӑннӑ май Шупашкарта чарӑнса тӑнӑ, хӑй дневникне чӑвашсем çинчен ӑшӑ кӑмӑлпа çырса хӑварнӑ.**

Чăваша та Карл Маркс
Асăннийĕ Лондонра[1];

Пролетарисен çулпуçĕ
Туйса илнĕ, авалтан
Мĕнле пирĕн вăйлă тăвăл
Таппине ват Атăлтан.

Аслă генисенчен гени,
Революци активне
Ĕмĕрлĕх кӳртсе, пилленĕ
Чăваш харсăр халăхне.

* * *

Кăлăхах çырман çав ĕнтĕ
Хусан земствин йыттисем
Чăваш йăхĕ ĕрчесен те
Ыр кăтартмĕ вăл, тесе.

Çавăнпа вĕсем кĕретĕн
Пĕсмĕхре пăнчăхнине,
Суккăрсем ĕрченине те
Хавас пулнă пирĕнне.

Анчах халăх, тем курсан та,
Пулнă пурнăçлă, хастар.
Кĕпине кĕлпе çусан та
Çӳремен вăл тасамар.

Иксĕлми ун пулнă вăйĕ.
Пирне пĕрчĕн суйласа
Тĕрĕпе вăл çырнă хăйĕн
Ăрăскалĕ çутăласса.

Хăйчикки умне пуç пĕкнĕ
Пирĕн харсăр аппасем
Хантăсла[2] çеç мар тĕрленĕ,—
Çуннă ирĕкшĕн вĕсем:

„Шур пĕркенчĕк эп вĕçтертĕм,
Пăхса юлтăм хыçĕнчен:
Вĕçсе кайрĕ пек ман тертĕм
Ăрăскалсăр пуç çинчен".

Ваттисем, маташнă майăн
Чăштăр-чăштăр пушăтпа,
Паттăрсем çинчен юптарнă,
Кĕтнĕ вăйлă Улăпа.

Килчĕ ĕмĕр кĕтнĕ Улăп:
Вырăс пролетариат;
Манăнми пиллĕкмĕш çул ак
Пĕлĕте ялкăштарать.

Ленин, Сталин чĕртнĕ вутăн
Хĕмĕсем сарăлнăçем
Çитнĕ пирĕн пата вăрттăн
Большевик чĕнĕвĕсем.

Пĕтĕм вырăс ĕç çыннийĕн
Ӳссе çитнĕ халĕпе
Тепĕр хут çĕкленчĕ пирĕн
Халăх çилĕ тăвăл пек.

Анчах çав шантар-масарĕ,
Çав патша йытти-качки
Ак пире килсе шăршларĕ,
Юхрĕ юншăн сĕлеки.

Тăхлан çумăр пĕрхĕнтерчĕç
Кĕç тискер пулемĕтсем.
Мĕн-мĕн чухлĕ юн юхтарчĕç
Мускаври рабочисем!

„Чăвашра каллах вут хыпнă,
Пĕтĕмпех пăхăнтарас!"[1]
Тесе час премьер Столыпин
Телеграмма çаптарать.

Юлашки хут чыхăнтарчĕç
Ирĕке чĕрĕ юнпа.
Ялсем тăрăх лартса тухрĕç
Синкерле хура юпа.[2]

---

[1] К. Маркс Костомаров историк çырнă кĕнекерен чăвашсем т. ыт. халăхсем те С. Т. Разинпа пĕрлешсе пăлханни çинчен каланă вырăна çырса илнĕ.

[2] Хантăсла тĕрĕ—ĕлĕкрен тĕрленĕ чаплă тĕрĕ ячĕ.

[1] Патша министрĕ Столыпин 1907 ç. февралĕн 19-мĕшĕнче янă депеша; ăна Чемей ялĕ таврашĕнчи чăваш хресченĕсен пăлхавне пусарас тĕлĕшпе çырнă.

[2] Хура юпасене патшана хирĕç пынă ялсенче лартса тухнă.

Эпир хурлăн асăнатпăр
Халăх чун пек юратан
Çамрăклах типсе хăртаннă
„Нарспи“[1] авторне паян.

Эпир халь пуçа таятпăр
Хăй хăюллă юррине
Вĕçлеймесĕр сăнчăрланнă
Харсăр Тайăр Тимккине.[2]

Пирĕн халăх хисепленĕ
Шелепи[3] сăвăç унчух
Ялĕнчен тарса çÿренĕ,—
Тÿр чĕлхен пулман кунçул.

* * *

Ак патшалăх шинель çакнă:
Вăрçа хăвнă пур енчен.
Чăваш йĕкĕчĕ юрланă
Хăйĕн хурлăхĕ çинчен:

„Çăлтăр витĕр çул куратпăр,
Çав эпир каяс çул пуль.
Уйăх витĕр уй куратпăр,
Çав эпир вăрçас уй пуль?

Хĕвел витĕр хĕр куратпăр,
Çав эпир илес хĕр пуль.
Илме илĕпĕр те, ахăр,
Мĕншĕн такĕ вал куççуль?..“

Килçурт юхăннă, саланнă,
Килйыш юлнă тăлăха.
Икçĕр пин чăваш çыннийĕ
Юн юхтарнă вăрçăра.

* * *

Пин те тăхăрçĕр вунçиччĕ!
Февраль шăлчĕ патшана.
Çĕнтерÿшĕн пулса тăчĕ
Ку пуçламăшĕ кăна.

Килчĕ çулăмлă Октябрь,
Çитрĕ кĕтнĕ самана,—
Тăпăлтарчĕ те çунтарчĕ
Киввине тымартанах.

Хурлăхпа асап пĕчланчĕ
Çав ĕмĕр манми кĕрте,
Пирĕн çуркунне пуçланчĕ
Çав хаяр Октябрьте.

Халăхсен тĕрми арканчĕ
Кăшăлĕпе-мĕнĕпе.
Тÿпере пирвай çуталчĕ
Çăлтăр пилĕк юппипе.

Çут Октябрĕн вучĕ-хĕмĕ
Кайрĕ пĕтĕм тĕнчене.
Пирĕн халăх та пуçларĕ
Хăйĕн чăн историне.

Çывăхран та çывăх СТАЛИН!
Çав куна асăнсанах,
Чи малтан куратпăр халĕ
Эпир ЛЕНИНПА САНА.

Каялла та, малалла та
Тинкерÿсĕн ĕмĕре,
Чи малтан халь тав тăватпăр
Иксĕре эпир сире.

Эсир икĕ çут хĕвел пек
Çутататăр тĕнчене:
Грузина та, карела та,
Чăваша та—кашнинех...

Ăшăтаççĕ те саваççĕ
Ик хĕрÿ хĕвел пире.
Ĕмĕрсем тăршши çутатĕç
Вĕсем çÿллĕ тÿпере.

Çĕнĕ тухăçпалан тухнă
Çакă икĕ хĕвеле
Ĕмĕр-ĕмĕрех тав-тăвĕ
Этем хĕрĕ-ывăлĕ.

---

[1] К. В. Иванов сăвăç (1890—1915 ç. ç.) питĕ çамрăклах кăкăр чирĕпе (чахоткăпа) чирлесе вилнĕ; вăл хăюллă хастар чăваш хĕрĕ çинчен чаплă поэма „Нарспи“ çырса хăварнă.

[2] Т. С. Семенов (Тайăр Т.) типографире ĕçленĕ рабочи. 1906—07 ç. ç. революци поэчĕ. Ăна Çĕпĕре ссылкăна янă, ссылкăран таврăнсан вăл, 1916 çулта, пĕрремĕш тĕнче вăрçинче вилнĕ.

[3] Чăваш респ. халăх поэчĕ Н. И. Полоруссов—Шелепи, 1881 ç. çуралнă; сăвăсем 1906 ç. çырма пуçланă.

Çĕн тĕнче хĕвелĕ—СТАЛИН,
Çывăх тус, тăван атте!
Ленин—Сталин парти ертрĕ
Пире çĕнтерӳ патне.

Унпала пĕрле хăюллăн
Шур бандăна çĕмĕрсе,
Чăваш халăхĕ вăй илчĕ,
Çитрĕç кĕтнĕ ĕмĕтсем.

Нумай пирĕн паттăр ывăл,
Ирĕккĕн пăшал тытса,
Çуралан çĕнĕ çĕршывăн
Тивĕçне тăчĕ сыхха.

Пирĕн юнпала хĕрелнĕ
Урал шывĕ, Ангара...
Ирĕк юррăмăр çĕкленнĕ
Двинаран Кура таран.

Каклярăмăр Колчака та,
Вăркăтрăмăр Врангеле
Çĕнтерӳллĕ, аслă, паттăр
Вырăс халăхпе пĕрле.

Манăнми кĕрешӳре-çке,
Ытти халăхсем пекех,
Ĕмĕрлĕх туслашнă эпĕр
Аслă вырăс халăхпе.

Чăваш халăхĕ телейлĕ:
Мускава кармашакан
Тăшмана вăл иттермерĕ
Хăй çĕршывĕ тăрăххăн.

Асăнмашкăн тивĕç харсăр
Комиссар Крепков[1] çинчен,—
Шур отряда çывхартмасăр
Тытса чарнă вăл пĕччен;

Юлашки патрон тухсан та
Пулемĕт панчен кайман.

Кадыков—хастар Иван[1] та
Ассенчех пурăнать паян.

Перекопшăн вăрçса вилнĕ
Иванов[2] илчĕ хисеп:
Вăл çĕрте çĕрмесĕр выртнă
Тăшмана вĕчĕхтерсе.

Чăваш халăхĕ телейлĕ:
Ун хăюллă çĕрĕнче
Çуралса Чапаев[3] ӳснĕ,
Вăл пурăнать ун чĕринче.

Чăваш халăхĕ телейлĕ:
Çав хăрушă çулсенче
Кунта Молотов, Калинин[4]
Килсе ĕмĕт чĕртвĕччĕ.

* * *

Тăванран та тăван СТАЛИН!
Çĕнĕрен çуралакан
Чăваш халăх сăпки умĕн
Тăтăн эс Ленинпалан.

Пур чунтан юратнă СТАЛИН,
Вăрçă вучĕ ăшĕнчен
Пире эсĕ хыпарларăн
ЧĂВАШПАЙ[5] уçни çинчен!

Тупăсем-ха лăпланманччĕ—
Тепĕр савнăç чĕртрĕн эс:
АВТОНОМИ çĕнĕ шанчăк
Вĕрсе кӳртрĕ чĕрене.

---

[1] Пăвари çар комиссарĕ, большевик, чăваш; 1918 ç. август уйăхĕнче Патăрьел патĕнче ăна, пулемётпа персе тăракансене, шуррисем çавăрса илсе вĕлернĕ.

[1] И. Г. Кадыков—Шупашкарти совета ертсе пыракансенчен пĕри, ăна 1918 ç. çулла Хусана шуррисенчен сыхлама отрядсем пухнă вăхăтра контрреволюцилле пăлхавра вĕлернĕ.

[2] Иванов—Элĕк районĕнчен пулнă.

[3] В. И. Чапаев—Шупашкарпа юнашар Будайка ятлă ялта çуралнă.

[4] М. И. Калинин 1919 ç. çуркунне Улатăра (унтан Хусана) Хĕрлĕ Çара тата тыла çирĕплетес ĕçпе килнĕ.

В. М. Молотовпа Н. К. Крупская çав вăхăтрах Шупашкара (унтан Хусана) агитпароходпа килнĕ; вĕсем—Колчака Атăлпа та, ытти çул-йĕрпе те Хусан патне çывхартас мар тĕлĕшпе ĕç халăх вăйне чăмăртанă, çирĕплетнĕ.

[5] 1918 ç. чăваш халăхĕ хушшинчи ĕçе пăхса йĕркелесе тăма Национальноçсен Комиссариачĕ çумĕнче Чăваш пайĕ уçнă.

Сан аллу çырса майланă
Декрет пулчĕ никĕс-чул.
Çавăнтан вара хăпарнă
Ак ĕнтĕ вунçичĕ çул...

Çамрăк Область чăмăртанчĕ,
Паттăр тытăнчĕ ĕçне;
Пирĕн ĕмĕт чечекленчĕ
ЛЕНИН панă тивĕçпе.

Пирĕн ĕмĕт чечекленчĕ...
Анчах савăнăç тĕлнех
Атăл тăрăх выçлăх килчĕ
Шăлве йĕрсе, эсрел пек.

Эпир манмăпăр нихçан та
Выç чăваш ачисене
Хăй паёкĕпе хăтарнă
Мускав рабочисене...

Кулакне те, выçлăхне те
Пĕрлешсе çĕнтертĕмĕр;
Националистсене те
Ĕмĕрлĕх питлерĕмĕр.

Халь Кавашăн, Шупашкарăн,
Анлă Атăл хĕрринче,
Шăтса тухрĕç эсĕ акнă
Хĕвел вăрлăх калчисем.

Çавă—çĕн тĕнче калчийĕ,
Çĕнĕ пурнăç чечекки,
Пирĕн савнăçпа телейĕн
Ĕмĕр ешерен çеçки.

* * *

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Ĕмĕр тивĕç эс тава!
Мĕнлерех çырса парар-ши
Халăхри юратăва?

Мĕнлерех çырма пĕлер-ши
Партие юратнине,
Чăваш халăхĕ сана халь
Мĕн пек ăшшăн савнине?

Çĕршыва мухтав, хаваслăх,
Çут телей паракана—
Мĕнле кĕсле-купăспа-ши
Мухтама пĕлер сана?

Аслă тус, телей ялавĕ,
Сана, аслă çулпуçне,
Пуç таять кашни пучахĕ,
Кашни ешерен çеçке;

Пуç таяççĕ ачасем те,
Аннесем, хĕрарăмсем;
Савăтсем те, колхозсем те,
Пирĕн улăх-вăрмансем.

Сывлăх çурчĕсем, пур шкулĕ,
Пирĕн çарансем, сăртсем...
Комсомолĕ, пионерĕ,
Ăстаçсем, комбайнĕрсем;

Бригадирĕ, звеньевойĕ,
Трактористĕ, музăкçă,
Инженерĕ те, поэт та,
Вăрман çынĕ, юрăçă...

Пуç таять тулли тухăçлăн
Уйĕ-хирĕ, улăхĕ.
Пуç таятĕ орден çакнă
Республика халăхĕ.

* * *

Капăрлантăр Атăл, улăх!
Ешертĕр вăрман, уй-хир!
Чечеклен, Чăваш çĕршывĕ,
Çĕнелсе чапланнăскер!

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Кăмăллă пахчаçăмăр!
Халĕ ĕнтĕ чăваш ялĕн
Сăн-сăпачĕ тĕксĕм мар.

Вĕçĕмсĕр колхоз хавасĕ,
Ял хула пек курăнать.
Хуласем пысăкланаççĕ,
Чап яраççĕ таврана.

Ĕлĕкрех юрлана эпĕр:
„Шупашкар—чăваш хули,
Курăнмасть патне çитмесĕр!
Курăнсан та—çын кулли".

Хутлăн-хутлăн купалатпăр
Чул çуртсем те кермеnсем;
Ялкăшать шĕкĕр хуламăр
Куççене килентерсе.

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Çĕрпеле кăна та мар,—
Эпир халь индустриаллăн
Янрама пуçларăмăр.

Лашмансем ĕлĕк шар курнă
Вармантa халь кĕр-кĕрлет:
Çĕн ăсталăхпа маттуррăн
Авăрланнă Çĕмĕрле.

Бурлаксем йĕрсе юрланă
Аслă Атăл хĕррипе
Каять шавĕ Куславкканăн—
Чĕрĕлĕх юррийĕ пек.

Канашра чăвашăн халĕ,
Хурçă шавлă çул çинче,
Вагонсем юсакан савăт
Çĕн хула пек çитĕнчĕ.

Шахтăра, савăтсенче те
Халь стахановла меслет:
Тăрăшать çын, ма тесессĕн,
Хăй патшалăхшĕн ĕçлет.

Эс вĕрентнипе пурнатпăр,
Эпир халĕ унпала
Телей çулĕпе утатпăр—
Эсĕ уçнă çулпала.

* * *

Пирĕн аслă çĕршывра халь
Халсăр, хурлă халăх çук;
Халь чăваш та ырлăхра ак,—
Колхозра ун—çĕнĕ çул.

Пирĕн колхозсем, хăватлă
Тырпулпа уяв туса,
Çунтарса тĕп турĕç вата—
Юлашки сухапуçа.

Халь уйра хастарлă трактор,
Ун касси айне—çĕре—
Пытарса чиксе пыратпăр
Хамăр иртнĕ ĕмĕре.

Халь уйра чакан пек пуçлă,
Тĕлĕкре эпир курман
Хăмăш хăмăллă сар тулă,
Пуçтарать ăна комбайн.

Чĕрĕлсе тăрас пулсассăн
Тупăкран асаттесем,
Ĕлĕкхи ырхан çĕре халь
Паллас çук,—çавах тесен.

Ассенчех тытса тăратпăр:
Чăвашсенĕн çĕршывне
Илсе килтĕн эсĕ, СТАЛИН,
Чăн-чăн пурнăç илемне.

Сталин, эсĕ пире патăн
Çутă кунлă самана.
Тавтапуç, тăван çулпуçĕ,
Тавтапуç чунран сана!

Ирхине ирех тухаççĕ
Хĕрсем Атăл хĕррине,
Тăван Сталин çинчен уççăн
Янратаççĕ юррине:

„Çуллĕ тусем çинче ахах пĕрчи,
Ахах пĕрчи тавра çĕр-çырли;
Çĕр-çырлисем калĕç çĕр тути,
Сталин сăмахĕсем—пыл тути.

Шурăмпуçпе шăпчăксем юрлаççĕ,
Тĕнчен чаплă сăвăçи пуласшăн;
Юрă ăстисем юрă суйлаççĕ
Сталин умне тăрса юрласшăн.

Ахах пĕрчи хаклă, çырли тутлă,
Пухаясчĕ кăмăл туличчен;
Пирĕн юрă чаплă, янăравлă,
Юрлаясчĕ Сталин умĕнче".

* * *

Тĕттĕм—сĕрĕмлĕ, хăрăмлă
Хура пÿрт çук ĕнтĕ тек.
Тасалсах пырать трахома—
Авалхи хăруш инкек.

Вăл хĕн-хур асап кӳретчĕ,
Вăл инкекчĕ ĕмĕртен.
Чăвашсем трахомлă пулнă
Сакăрвуннăшĕ—çĕртен.

Пĕр трахом кăна та мар-ха
Пире тăнă минретсе:
Пире çулнă кăкăр чирĕ,
Кăрчанкийĕ, чеччесем.

Пире аслă Ленин ĕçĕ,
Сталин тăрăшни кăна
Нишлĕ пурнăçран хăтарчĕ,
Кӳрсе пачĕ çак куна.

„Вĕрӳç-юмăçă тĕп пултăр!"
Теççĕ ĕнтĕ ялсенче.
Темиçе çĕр чăваш тухтăр,
Больница халь пур енче.

Чирсене кăклатпăр ĕнтĕ
Ĕмĕрхи инкек тесе.
Хисепре—çĕршывăн халĕ
Паллă мар геройĕсем.

Тав тăватпăр вĕсене халь.
Тав сана, тăван атте!
Ĕнтĕ халь старик-колхозник
Тивĕçлишĕн хĕпĕртет:

„Иртсе кайрĕ хуйхăм-суйхăм.
Сталин уçрĕ ман куçа,
Сталин уçрĕ тăн-пуçа,
Эп ик хут куракан пултăм..."

* * *

Çывăхран та çывăх СТАЛИН!
Ăçтан сăмах тупса, мĕнле
Каласа, çырса парар-ши
Пĕтĕм халăх кăмăлне?

Ирĕк, савăк пурăнмашкăн
Советсен çĕршывĕнче,
Халь хисеплĕ халăх эпĕр
Халăхсенĕн йышĕнче.

Калаçма именесси те
Тăрса юлчĕ ĕлĕке.

Ирĕккĕн, илемлĕн, уççăн
Янăрать пирĕн чĕлхе.

Янăрарĕ аслă Ленин
Тăван халăх чĕлхинче.
Вăл пире чĕнсе çĕклерĕ
Кĕрешӳ кунĕсенче.

Çисĕм пек çиççе çутатрĕ
Унăн шухăшĕ пире.
Вăл кӳрсе уçса кăтартрĕ
Çĕнĕ ĕмĕрти ире.

Фронтсенче эпир юрланă,
Çĕмĕрсе шуррисене—
Тăхти сăвăçăн хĕрӳллĕ
Çĕнтерӳ юррисене.

Фронтсенче, Хусан-Самаршăн
Вăрçнă чух пăшал тытса,
Малтанхи театр пирĕн
Тухрĕ вут-хĕмре шăтса.

Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Кăмăллă пахчаçăмăр,
Халĕ ĕнтĕ чăваш ялĕн
Сăн-сăпачĕ кивви мар.

Çутă кун курманччĕ юрă:
Çĕлĕке пусса лартса
Ĕнĕрешнĕ—эпĕр хурлă,
Шикпеле пӳлсе сасса.

Халь çунат хушса çĕкленчĕ
Пирĕн ирĕк сассăмăр.
Тĕнчипе пире итлеççĕ.
Кремльте чыс куртăмăр.

Пирĕн ирĕкри чĕлхемĕр
Тĕрекленчĕ кулленех.
Вăл наукăпа искусство
Чĕлхи пулчĕ ку чухне.

Вăл патшалăх чĕлхи пулчĕ
Сан ĕçӳ çĕнтернипе.
Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин—
Чăвашла халь, пирĕнпе.

Пирĕнпе халь Горький, Шиллер,
Лев Толстой, Ромен Роллан,
Руставели те Белинский,
Фирдуоси, Аристофан.

Пирĕнпе халь Пушкин, Гейне,
Маяковский те Шекспир;
Сервантес, Мольер, Шевченко—
Йăлт тĕпчетпĕр халь эпир.

Хăпараççĕ пирĕн хамрăн
Чĕр сăмах ăстийĕсем;
Хулара та, ялсенче те—
Хисепре халь вăл ятсем!

Çывăхран та çывăх СТАЛИН!
Сан паха тивлетӳпе
Шухăш пирĕн çĕр пек анлă,
Ĕмĕт çӳллĕ—пĕлĕт пек.

Сан тивлетӳпе, çулпуçĕ,
Кашни виç çынтан пĕри
Вĕренет халь пирĕн; уçă—
Çутлăх алăкĕ яри.

Вĕсем тухтăр, вĕсем лётчик,
Тракторпа тухаç хире,
Хĕç-пăшал тытса тăраççĕ
Пирĕн ĕçшĕн чикĕре.

Ылханса, йĕрсе пĕркенчĕк
Пĕркенен хĕрупраç—
Халь пăшал тытса переççĕ,
Парашют карса ярнаç.

Темиçе ĕмĕр пусарнă
Пултарулла паттăр хал
Тымартан, тĕпрен тапраннă
Тĕнчене тухасшăн халь.

* * *

Акнă вăрлăх çумăр хыççăн
Кашласа çĕкленнĕ пек,
Чăваш халăхĕ çĕкленчĕ
Сталинпа ĕçленипе.

Пĕтĕм чĕрепе саватпăр
Чăваш сталинçисене,
Вĕсем усмĕç малашне те
ЛЕНИН—СТАЛИН ялавне.

Яланах эпир кĕрешнĕ
Тăван партишĕн тăрса.
Пур тăшмансене çĕнтернĕ
Тымарĕпех çунтарса.

Националистсене те,
Тĕрлĕ тĕслĕ элменçе—
Çапнă, çĕмĕрнĕ, питленĕ
Пĕтĕм халăх умĕнче.

Вĕсем юмахсем юптарчĕç
Чăваш халăх пĕтессе:
Чăваш халăхĕ телейсĕр,
Мĕскĕн халăх вăл, тесе.

Кам вăл юмаха ĕнентĕр?
Кам итлетĕр вĕсене?
Эпир пухрăмăр хăватлă,
Çĕнтерӳллĕ вăйсене.

Телее сутма хăтланнă
Ирсĕр урнă йытсене
Çĕр çинчен шăлса тăкатпăр,—
Вилĕм тивĕç вĕсене!

* * *

Аслăран аслă пахчаçă,
Çут хĕвелĕмĕр, ялав!
Юратса пăхса ӳстертĕн
Эс пире çултан çула.

Ӳсĕм хыççăн ӳсĕм пулчĕ.
Пур ĕçре, кĕрешӳре,
Çывăхран та çывăх СТАЛИН,
Хастарлатрăн эс пире.

Хастарлатрĕ аслă парти
Хăйĕн пысăк ăсĕпе,
Ертсе кайрĕ малалла вăл
Çĕнтерӳлĕх çулĕпе.

Эпир ӳсвĕшĕн патвартăн—
Чăваш халăх кăкăрне
Тивĕç турăн эс çакмашкăн
Аслă Ленин орденне.

Пирĕн чапăмăр халь кайрĕ
Пĕтĕм аслă çĕршыва,
Сана пирĕн колхоз çарĕ
Тавтуса такмак хывать.

Сан çинчен халлап калаççĕ
Ваттисем сума суса.
Сан ăнна савса сăрлаççĕ
Çамрăксем, хавхаланса.

Сан ятна хĕрсем тĕрлеççĕ
Питшăлли-сĕлкĕ çине.
— Хурçă пул!—тесе пиллеççĕ
Çуралан ывăлсене.

* * *

Çывăхран та çывăх СТАЛИН!
Пурнăç çулĕ-йĕрĕпе
Эпир утнă çумма-çуммăн
Вырăс пролетарипе.

Эпир кăмăллă чăнтан чăн
Туслăхпа республикре;
Тутар, вырăс, мăкшă—таччăн
Чăвашпа утаç пĕрле.

* * *

Çывăхран та çывăх СТАЛИН!—
Çут хĕвел эс çĕн тĕнчен!
Йышăн пирĕн çырăва эс
Пур чăваш халăхĕнчен.

Сан сăмахупа çĕкленнĕ?
Çунатланнă мĕн пурри.
Сан ятпа юхса шăранчĕ
Пирĕн сăвăçсен юрри.

Сан умра тупа тăватпăр:
Тăшман вăрçă кăларсан,
Совет аслă çĕршывне вăл
Сăмсине чикме тăрсан,—

Хастарланнă халăх харăс
Тăрса тухĕ çĕкленсе,
Хĕç-пăшал тытас пулсассăн,
Кĕтмĕ уйрăм чĕнессе.

Эпĕр пĕлĕпĕр пулмашкăн:
Пулемётçă, танкистсем,
Пулăпăр вĕçевçĕсем те,
Харсăр парашютистсем.

Вырăспа пĕрле çĕкленĕç
Пур чăваш, тутар, ирçе.
Тăшмана çапса салатĕç,
Айĕн-çийĕн çĕмĕрсе!

Вĕсем пĕлĕç те пултарĕç—
Çĕршывне те, унпа тан
Çĕнĕ Конституцине те
Сыхламашкăн тăшмантан.

Кĕрешсе илнĕ телейшĕн,
Ирĕкшĕн тăма хушсан,
Аслă СТАЛИН, эсĕ панă
Хавас пурнăçшăн пулсан—

Саншăн, СТАЛИН, çĕршыв çийĕн
Çисен хĕвелшĕн, тăма
Ялан хатĕр пирĕн халăх,
Хатĕр пуçсене хума!

Ирĕк халăхсен çулпуçĕ,
Чăваш халăхĕ сана
Пур çĕрте те, пур ĕçре те
Савса ăшшăн асăнать.

Ленинпа пĕрле эс патăн
Ирĕк пурăнăç пире.
Улăп пек ертсе пыратăн
Çĕнтерсе çитес çĕре.

Тавтапуç, мухтавлă СТАЛИН!
Аслă чыс аттемĕре!
Сан çинчен юрланă юрă
Кайтăр ĕмĕр-ĕмĕре!

*(Ку çырăва чăваш халăхĕ Аслă çулпуç И. В. СТАЛИН юлташ патне 1935 çулта, Чăваш республикĕ 15 çул тултарнă майпа, çырса янă)*

---



# УЙĂП МИШШИ

## ĔМĔРСЕН ĔМĔЧĔ.

Шăранса çĕкленет юрă ман чĕремре,
Чаплă ĕмĕр çинчен чаплă юррăм
пур ман.
Халиччен çын курманччĕ кун пек
ĕмĕре,
Çук, кун пек çынсене нихăш ĕмĕр
курман.

Ĕлĕкрен, авалтан, миçе ĕмĕр тăршши
Хĕн курман ĕç çынни пусмăрпа асапра?
Халăхсен тĕрми пулнă патшаллă
çĕршыв,
Юнпала куççульне сăрхăнтарнă тăпра.

Çут Октябрь, хаяр вутлă тăвăл пулса,
Ĕмĕрхи пусмăра ишсе тăкрĕ тĕпрен.
Çĕршыв çийĕн çĕкленчĕ хĕвел çуталса,
Ирĕк пурнăç хĕвелĕ çĕкленчĕ хитрен!

Ирĕк халăхсем тăчĕç чăн-чăн хуçалла,
Улăштарчĕç тĕпрен çĕнетсе çĕр
питне.
Çĕршывра, юмахри пек, тĕнче уçăлать.
Пурнăçларĕ çĕршыв ĕмĕрсен ĕмĕтне.

Çĕршывра юмахри пек ÿсеç
паттăрсем:
Анаç тинĕс тĕпне, çĕкленеç пĕлĕте,
Тупалаç тусене. Епле харсăр вĕсем!
Пурнăç, пурнăç вĕрет пур çĕрте,
пур тĕлте.

Кĕрлеç мăн хуласем. Тулли
пурнăç ялта.
Чухăнлăх йăранне хунă каса айне.
Хирсем тинĕс пек аслă. Туянăр
йăлтах—
Кăкрине уçса хучĕ пуян çĕр-анне.

Çĕнтерме аслă Ленин вĕрентрĕ пире,
Аслă Ленин! Ялан асилетпĕр ăна.
Вăл пурнать пирĕн чаплă, мухтавлă
ĕçре,
Вăл кашнин чĕринче, асĕнче пурăнать.

Аслă Сталин, çулпуçăмăр! Санăн ятна
Ялав пек çĕклесе юрра хунă çынсем.
Чи хĕрÿ юратупала санăн патна
Туртăнаççĕ ялан пирĕн савăк чунсем.

Аслă тупăк умне тăрса пирĕн ятпа
Тупа турăн эс аслă çулпуç умĕнче.
Халиччен хавшанса курман
вăй-хăватпа
Эс çул тытрăн хаяр тăвăлсен хумĕнче.

Епле урчĕ тăшман! Тăчĕ хĕç-пăшалпа,
Е çĕлен пек вăрттăн турĕ ирсĕр ĕçне.
Халиччен усăнса курман хурçă алпа
Çапса çĕмĕртĕн эс ун ылханлă пуçне.

Пĕр çын пек сан тавра чăмăртанчĕ
çĕршыв.
Вăл хальччен çын курман çĕнтерӳсем
тăвать.
Ют çĕре хапсăнмастпăр пĕр утăм,
пĕр шит,
Хамăр çĕршĕн тăма пирĕн çитĕ хăват.

Халăха халалларăн эс ылттăн саккун,
Унта пирĕн телей, пирĕн ирĕк, тивлет.
Çавăнпа халăхсем савăнаççĕ çак кун.
Юрăсен юррине ман çĕршыв кĕвĕлет.

Çавăнпа шăранать юрă ман чĕремре,
Чаплă ĕмĕр çинчен чаплă юррăм
пур ман.
Халиччен çын курманччĕ кун пек
ĕмĕре,
Çук, кун пек çынсене нихăш ĕмĕр
курман.

Юх эс, юрă, паян, уçăрах янăра!
Эс тултар ман мухтавлă çĕршыв
сывлăшне.
Пирĕн савăнăç, пирĕн хастарлăх
санра,
Юрра хунă кашни паян хăй пурнăçне.

Çиçĕр, çиçĕр, питсем, çутăрах!
Ир çинче
Хĕвел кулнă пек кулăр, пур
каччă-хĕрсем!
Чаплă, ирĕк, хĕвеллĕ Совет çĕрĕнче
Чи телейлĕ иртеç пирĕн кунăмăрсем!

Аслă Сталин, çулпуçăмăр! Санăн
ятна
Ялав пек çĕклесе саламлаççĕ
çынсем.
Чи хĕрӳ юратупала санăн патна
Туртăнаççĕ çак кун пирĕн савăк
чунсем!

1937.

## СУЛĂ ÇИНЧИ ЮРĂ.

Ак Атăл, çут Атăл выртать ман умра.
Ав шăппăн шăваççĕ хуллен икĕ сулă.
Хĕвелĕ пытаннă, вăрман çулăмра.
Пĕр уççăн сывларĕ каçхи симĕс улăх.

Хуллен икĕ сулă шăваççĕ шыв тăрăх,
Йăл-йăл йăлкăшаç вуттисем инçетре.
Ах, каçĕ уяр-çке! Уяр та тăп-тăрă,
Шăп Атăл çинче ав пĕр юрă чĕтрет...

Юрлать ăна Атăл çыннийĕ вăраххăн,
Чунне йăпатасшăн çав сулă çинче.
Эх, уйăх, хуралçă каçхи шăп тĕнчен,
Ма тĕксĕм, кичем-им, сана та
хăраххăн?..

Çак Атăл хĕрне каç тухсассăн вара эп,
Итлесессĕн вĕсен янăран юррине,
Ăçтан-ха пĕр ним асилмесĕр тăрайăп,
Ăçтан асилместĕн пулса иртнине?..

Ах, Атăл, ах, Атăл, ытла та эс анлă,
Хăш чух пуçласассăн хумсем авăсма,
Кам чунĕ, курсассăн, сана хавас мар?
Анчах та шыв вăл куççульпе тăванлă...

Пăхайрăм шур хăйăр çине сан урлах,
Мĕнчул куççульпе çын юнне вăл
сăхман-ши?
Мăн кимĕсем туртнă, ахлатнă бурлак...
Камсемшĕн ахлатнă? Юн ĕмнĕ
пуяншăн!

Куçа курăнать ав паттăр пĕр хура çын,
Чĕнет вăл пур чухăнсене хăй
тавра...

Ку кам-ши, тесессĕн, эп калăп: ку
Разин,—
Хастарлă пăлхавçă. Палач Мускавра

Унне пуçне татнă пĕр ним
хĕрхенмесĕр.
Ăçтан хĕрхенес? Хĕрхенӳ вăл
ыйтман...
Пуçне вăл кастарнă мăнаçлăн,
чĕнмесĕр.
Çапла пуçне хунă казак утаман.

„Пур пусмăрти халăх, эй, тăрăр,
вăранăр,
Харампырсене пĕтерме малалла!.."
Тесе ун йыхравĕ малтан янăрать,
Çут Атăл çинче кĕрлесе тăвăлла.

Хастарлă пăлхавçă мĕнле пуçне çинĕ,
Çавна асăнса ав юрлать Атăл çынĕ.
Çавна асăнса Атăл хумĕ кĕрлет,
Çавна асăнап вĕсемпе эп пĕрлех...

1937.

## САЛТАК АМĂШĔ.

Кашни каçах кантăк умне,
Анне, ан лар макăрса,
Йĕке тытса, çиппӳ çине
Ан тумлатсам куççульне..
*Хумма Çеменĕ.*

### I. Ăсату.

Амĕш ывăлне вăратрĕ
Пĕр салхуллă ирхине.
Пуçтарса ăна тăратрĕ
Ăсатма вăрçă хирне.

Пичĕ-куçĕсем ун шывлă,
Тути хĕррисем чĕтрес:
Ун пĕртен-пĕр савнă ывăлĕ
Уйăрлать çак сехетре.

Йывăр-çке уйăрăлмашкăн
Ӳссе çитнĕ ачинчен,—
Пĕчченçи тăрса юлмашкăн
Ватлăх килнĕ кунсенче.

Ун чĕри-чунне пит тăвăр.
Куç çутти пек ывăла
Кăларса ямашкăн йывăр
Çав кили-килми çула...

Ăна мар-и вăл чĕм кĕртнĕ
Хăй чĕрийĕ çумĕнче,
Çĕр-çĕр çывармасăр кĕтнĕ
Сиктересшĕн аллинче?

Ăна мар-и вăл сиктернĕ
Чĕрçи çинче пĕчĕкле,
Ăш кăкăр сĕтне ĕмтернĕ,
Савнă кайăк чĕппилле?

Ăна мар-и вăл çын турĕ,
Ĕçпеле пиçĕхтерсе?
Анчах килчĕ нимĕç мурĕ,
Çынсене инкек кӳрсе..

Пирĕн пурăнăç юсаннă,
Аталаннă вăхăтра—
Гитлер кашкăрла ăмсаннă
Ыр курмашкăн ямăтра.

Хаяр вăрçăпала килчĕ
Ирсĕр ĕмĕт-шутпала,
Ял-хуласене вăл илчĕ
Хĕçпеле те вутпала...

Тăчĕ пирĕн халăх харăс
Тăшмана хирĕç вăрçма,
Арçынсем ав тухса кайрĕ;
Таван çĕршĕн çапăçма.

Амĕш пуçтарса тăратрĕ
Хăй юратнă ывăлне,
Татăлса йĕчĕ, ахлатрĕ
Пĕр салхуллă ирхине.

Анчах кӑмӑлне хытарчӗ,
Шӑлса типӗтрӗ куҫне,
Ывӑр кутамкка тыттарчӗ
Ҫула тухнӑ Куҫукне.

— Ывлӑм, ылттӑнӑмҫӑм,—терӗ,
Ун ҫине ӑшшӑн пӑхса,—
Тен, чипер пӑхма пӗлмерӗм,
Кӑмӑлсӑр ан кай тухса.

Ачаран ӳсме тӳр килчӗ
Сан тӑван аҫусӑрах,
Ирӗкшӗн ҫапӑҫса вилчӗ
Аҫу санӑн вӑрҫара.

Вӑрҫрӗ нимӗҫсене хирӗҫ
Вӑл вунсаккӑрмӗш ҫул.
Нимӗҫсем ун пуҫне ҫирӗҫ,
Эс унран раскаллӑ пул.

Чи малтан аҫушӑн тавӑрӑн,
Аллуна пӑшал тытсан;
Чаплӑ ҫӗнтерӳпе таврӑн,
Ҫулу такӑр пултӑр сан.

Пул тӗрӗс-тӗкел те сывӑ,
Умӑнта пултӑр телей.
Инкекре—Тӑван ҫӗршывӑ,
Ун чысне эс хӳтӗле.

Хӳтӗле эс тӑван халӑх
Ирӗкне, ун пурнӑҫне:
Хӳтӗле ман ватӑлмалӑх,
Кань[1] курмалӑх кунсене.

Хӑравҫах пулса ӳсменччӗ,
Вӑйсӑр марччӗ аллусем.
Умӑнта сан сехӗрленччӗр
Ҫав тӗнче усалӗсем.

Ҫирӗп пул! Пӗр утӑм ан чак
Тӑшман вӑйӗ умӗнче!
Сан ҫинче—ҫӗршывӑн шанчӑк,
Манӑн шанчӑк сан ҫинче.

Пӗр ҫавна нихҫан та ан ман,
Эс ӑна аса илсен—
Эп шанса тӑрап: хавшамӑн
Умна йывӑрлӑх ҫитсен.

Эп сана пиллетӗп,—терӗ,—
Ху ятна эс ан ӳкер.
Пур тӑшман йӑхне пӗтерӗр.
Сывӑ тавӑрӑн, чипер...“

Ывӑлӗ тав турӗ хытӑ
Хӑйӗн ватӑ амӑшне:
— Хам чӗре ҫумӗнче тытӑп,—
Терӗ,—сан сӑмахсене.

Ыталарӗ те чуптурӗ,
Шывлӑ куҫӗсем ҫиҫеҫ.
Ним те чӗнеймерӗ урӑх,
„Сывӑ пул!“ теейрӗ ҫеҫ.

Сывлӑх сунчӗ, алӑ сулчӗ
Амӑшне, ял-йышсене.
Шурӑ тутӑр сулса юлчӗҫ
Ял-йышсем тахҫанччен.

Мӑнҫул тӑрӑх мӑкӑрланчӗ
Лавсем хыҫҫӑн шур тусан.
Кун салху. Чунсем хурланчӑк:
„Хӑҫан килӗҫ-ши, хӑҫан?“

Хапхара пӗр ват хӗрарӑм
Тӑлӑххӑн йӗрсе тӑрать.
Кайӑк-хур карти пӗр ярӑм
Вӗҫсе иртрӗ кӑнтӑра.

Тӳпере иртеҫҫӗ хӑвӑрт
Хура хулӑм пӗлӗтсем.
Куҫук амӑшне пит йывӑр,
Арканаҫ ун шухӑшсем.

Ҫак асран тухми кӗр ирӗ
Тӑрӗ ун куҫ умӗнче.
Тӑрӗ пушӑ тӑлӑх хирӗ,
Куҫа астарман инҫет.

Сарӑ ҫулҫӑ тӑкӑннийӗ
Шавлӑ йывӑҫсем ҫинчен,
Ывӑлӗн куҫсем ҫуннийӗ
Каймӗ амӗш асӗнчен...

[1] *Кань*—канлӗх тенӗ сӑмаха кӗскетсе каланӑ.

## II. Иртрӗ уйӑх хыҫҫӑн уйӑх.

Иртрӗ уйӑх хыҫҫӑн уйӑх.
Ывӑлне кунсеренех
Асилет-ҫке амӑш. Хуйӑх
Пусрӗ унӑн чӗрине.

Кам чӗрийӗ тунсӑхламӗ
Тӑван амӑш вырӑнче?
Шухӑшлать пӗр вӗҫҫӗр амӑш
Савнӑ ывӑлӗ ҫинчен.

Ҫырусем килсе тӑратчӗҫ
Юнлӑ вӑрҫӑ хирӗнчен.
Ывӑлӗ ҫапла ҫыратчӗ
Хайӗн ҫырӑвӗсенче:

„Ҫапӑҫатпӑр пит те вирлӗ.
Анчах вӑйлӑ нимӗҫ, мур.
Пирӗн те пур-ҫке мӗн кирлӗ,
Ытларах та пирӗн пур.

Мӗн кирли пулсан—ытти вӑл
Хамӑртан, пиртен килет.
Ан кулян, аннем, сан ывӑл
Ҫапӑҫма кӑштах пӗлет.

Юлташсем—туссем хастарлӑ.
Вӗсемпе эп пӗтес ҫук.
Чӗрере вӗрет хаярлӑх.
Фрицсене ҫунтарнӑ чух.

Хӑш чухне кайса килетӗн
Туссемпе тӑшман тылне.
Тем те пӗр илтсе пӗлетӗн.
Тарӑхатӑн, тӗлӗнсе.

Ах, анне! Пӗлесчӗ эсӗ,
Епле ирсӗр нимӗҫсем!
Никама та шеллемесӗр
Ҫын юнне тӑкаҫ вӗсем.

Пурӑнаҫ мӑшкӑласа ҫеҫ
Пирӗн ҫывӑх ҫынсене.
Иртӗнсе урса асаҫҫӗ
Эпир ӳснӗ ҫӗр ҫинче.

Кам чӗрийӗ тӳстӗр халӗ?
Ун пек ҫын тупӑнас ҫук
Юнӗҫсен нимӗҫ усалӗ
Ҫӗршыва таптанӑ чух.

Ҫапӑҫатпӑр кунӗн-ҫӗрӗн
Хӗҫ-пӑшалсем хӗриччен.
Эпӗр ҫапӑҫӑпӑр чӗррӗн
Пӗр фашист хӑвармиччен!"

Ҫакӑн пек ҫыратчӗ ывӑлӗ
Тӑван амӑшне ялан.
Вӑл ӑна сунатчӗ сывлӑх,
„Маншӑн,—тетчӗ,—ан кулян."

Анчах пӗринче ак килчӗ
Амӑшне ҫыру-хыпар.
Амӑш час уйӑрса илчӗ:
Ҫырнӑ ывӑль алли мар.

Чӗтрекен аллипе тытрӗ
Ҫырӑва вӑл хумханса,
Вулаттарчӗ те шак хытрӗ,
Кӗҫех кайрӗ йӑванса.

„Манӑн ывӑлӑм! Ман ылттӑн!
Манӑн шанчӑкӑм!" тесе,
Чӗри татӑлнӑ пек хыттӑн
Йӗрсе ячӗ хӳхлесе.

Пӗртен-пӗр ачийӗ унӑн,
Юлашки сывлавӗччен
Ҫапӑҫса-мӗн пуҫне хунӑ
Юнлӑ вӑрҫӑ хирӗнче...

## III. Салтак амӑшӗ хӳхлени.

„Куҫӑмсен ҫутти, Куҫукҫӑм,
Епле тӳсӗ ман чӗре?
Е сан тӗллӗн вырӑн ҫук-ши
Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере?

Пурӑнма та ырӑ ӗмӗр,
Пурнӑҫ ҫитнӗччӗ ку чух.
Епле хупӑнчӗҫ-ши ҫӗмӗрт
Евӗр ик хура куҫу?

Епле чарӑнчӗ-ши ахӑр
Сан вӗри чӗрӳ тапма?
Хӑш этем вӑрӑ-хурахӗ
Хайрӗ кунҫулна татма?

Мӗнлескер, çын усаллийӗ,
Пӗлчӗ-ши çулна пӳлме?
Хӑш тискер тӑшман аллийӗ
Хӑйнӑ сан çине ӳкме?

Мӗн тесе тӳсет-ши çӗрӗ
Кашкӑр чунлӑ çав йӑха?
Хӑçанччен тата вӑл йӗрӗх
Шар кӑтартӗ халӑха?

Кам кӑна çуратса янӑ
Çав тискер кайӑксене?
Хӑш аман ылханлӑ варӗ
Ӳтлентернӗ вӗсене?

Кашкӑр чунлӑ ирсӗр нимӗç
Тек юлминччӗ çӗр çинче.
Çӑхансемшӗн пултӑр çимӗç
Ун вил ӳчӗ хирсенче!

Ывӑлӑм, чун-чӗре ӑшшийӗ,
Ёнтӗ кам çине пӑхса,
Савӑнса пурӑнӑп-ши эп,
Хама ӳкӗтлӗх тупса?

Пӗтрӗн, харсӑр ӑмӑрткайӑк,
Касрӑн манӑн чӗрене.
Ёнтӗ кам çынни пӑхайӗ
Санӑн вата аннӳне?

Халь камра вӑл хӳтлӗх тупӗ,
Кама пурӑнӗ кӗтсе?
Кам ун куçӗсене хупӗ
Юлашки самант çитсен?

Пӗр сана çеç эп кӗтсеччӗ,
Эсӗ çеçчӗ ӗметре.
Киле кин кӳртӗп-и, тесеччӗ,
Çур килсессӗн, çимӗкре.

Çур та килӗ, килӗ кӗр те,
Курас çук эп ачама.
Ёнтӗ кам савӑнӑç кӗртӗ
Ман вут хыпнӑ ӑшӑма?

„Ачуна алра сиктерӗп“,—
Тенӗччӗ ӗмӗтӗмре.
Кам çине шанса ирттерӗп
Халь эп хамӑн ӗмӗре?

Кам çепӗç кӗвӗ-саспа тултарӗ
Ман пушаннӑ пӳртӗме?
Кам-ши йӑпатма пултарӗ
Мӗскӗн, тӑлӑх чӗреме?

Юн суран чӗремçӗм—чунӑм
Нихӑçан тӳрленес çук.
Ёнтӗ кун çуттийӗ сӳннӗн
Туйӑнать мана кучух...“

Ҥумайччен йӗрсе хӳхлерӗ
Куçук амӑшӗ вӑл кун.
Çынсем тем пек ӳкӗтлерӗç,
Лӑпланмарӗ мӗскӗн чун...

### IV. Ёç хуйха-суйха сирет.

Чул пек йывӑр хуйӑх пусрӗ
Салтак амӗш чӗрине.
Унтанпа вӑл пуçне усрӗ,
Хурланать кунсеренех.

Анчах халь ӗлӗкхи мар-мӗн,
Колхозра,—çын йышӗнче
Тӑлӑххӑн кулянса лармӑн
Çак хӗрӳллӗ кунсенче.

Ёç алли çунать-мӗн ӗçшӗн,
Ёç хуйха-суйха сирет.
Тӑшмана хӑвӑрт çӗнесшӗн
Халӑх пикенсех ӗçлет.

„Арçынсем фронтра çӗмӗреççӗ
Тӑшмана вутпа, хӗçпе,
Фронта пулӑшӑпӑр,—теççӗ,—
Колхозра хӗрӳ ӗçпе“.

Куçук амӑшӗ те тухрӗ
Çӗнтерӳшӗн ӗçлеме.
Мӗнпур тарӑх-çилне пухрӗ,
Вӑл ырма-канма пӗлмест!

Тӗлӗнет унтан халь халӑх,
Хӗрхенет те хисеплет.
Хисеплет ӑна патшалӑх,
Пулӑшать те хӳтӗлет.

Мĕн тăван, вăрçи тăкаклă.
Ик шăпаллă çын—салтак:
Кашнинех тăван пек хаклă
Унăн ывăлĕ ялта.

Пурте пулăшу сĕнеççĕ,
Тăрăшаççĕ ыр тума.
Кашни хăй патне чĕнеççĕ:
„Тăван пул кил-çуртăмра".

Ир-каç ун патне пыраççĕ—
Шăппăн калаçса ларма;
Ăшă сăмахсем тупаççĕ
Ун чунне лăплантарма.

Вăл çеç мар хаваллă пулчĕ,—
Килчĕ хут таçти ютран:
Урăх туйăмпала тулчĕ
Ун чĕрийĕ çав хутран.

Мĕнле çын-ши кăмăл тунă,
Кам çырать-ши ун патне?
Кам çынни пĕлет-ши унăн
Хушамачĕпе ятне?!

### V. Ывăлĕсен çырăвĕ.

„Ырă кун, тăван аннемĕр,
Тайма-пуç сире пиртен.
Тиркесе ан тĕлĕнсемĕр
Пирĕн çак сăмахсенчен.

Ку хута çыраççĕ сирĕн
Хаклă ывăлăр тусĕсем,
Вăл чи хаклă çынччĕ пирĕн,
Пĕрле иртнĕ вăхăтсем—

Тăванлатрĕç пире юнлă
Çапăçу хирĕсенче,
Пĕр чĕреллĕ те пĕр чунлă
Турĕç вилĕм умĕнче.

Пурăнсаччĕ пĕр тăванлăн
Сирĕн ывăлăрпа пĕрле.
Çăкăра çурма пайланă,
Выртса тăнă пĕр çĕрле.

Пĕрле савăннă, кулянна,
Пĕрле тӳснĕ тертсене.
Пĕр тĕлĕк курса суйланнă—
Асилсе аннесене.

Чĕлĕм туртнă, паклаттарнă
Унпала пĕр енчĕкрен.
Тăшмана пĕрле çунтарнă
Çапăçма тухмассерен.

Иксĕлми вăй вăл тупатчĕ,
Йывăр çапăçусенче,
Чăтăмĕ ăçтан тухатчĕ
Тӳсме çук вăхăтсенче!

Вăл ялан малта пыратчĕ,
Шикленес-тăвасси çук,—
Тăшмана вăл хăй шыратчĕ,
Сирĕн ывăлăр Куçук.

Вăрçă хирĕнче—хуçаччĕ.
Харсăр, хăйне хăй манса,
Арăслан пек çапăçатчĕ,
Вĕчĕхсе, хаярланса.

Тăрăхлаттăмăр: „Хăй кунĕ,
Çиелтен пăхсан—йăваш.
Анчах йăваш мар мĕн чунĕ,
Ăшĕнче иккен чăваш".

Вăл калатчĕ:—Пирĕн халăх
Мухтанса мăнаçланмасть
Кирлĕ пек чухне вăй-халĕ
Çуккипе те аптăрамасть.

Ун алли ĕçчен, хисеплĕ,
Вăл юлмасть ыттисенчен.
Унăн ячĕ те хисеплĕ
Халăхсенĕн йышĕнче.

Халь чăваш та ĕнтĕ урăх,—
Тетчĕ вăл. Юлташсене
Юрласа паратчĕ юрă,—
Шеп ташлатчĕ ташшине.

Вăл разведкăна çӳретчĕ
Хăй пĕлен сукмаксемпе.
„Чĕлхесем" тытса килетчĕ,
Шав супатчĕ вĕсемпе.

Тавранатчĕ те ыйтатчĕ:
— Ярăр тепĕр хут мана...
Çĕрхута тухса утатчĕ
Вăл каллех разведкăна.

Куç пекех кĕтсе тăратпăр
Эпĕр вăл таврăнасса.
Шик те пур, анчах шанатпăр
Ăна ним те пулмасса.

Пĕринче, çапла, каç кўлĕм,
Каласа та пама çук,
Пит хаяр та пит хĕрўллĕ
Пулчĕ юнлă çапăçу.

Сывлăш çавăрма памасăр
Тăшмана йĕрле-йĕрле,
Пысăк ял умне пĕр шавсăр
Çитсе тăтăмăр çĕрле.

Ир çинче пуçланчĕ вăрçă.
Çав яла-çке илмелле.
Мĕн снаряд, мĕн мина вăрчĕ
Нимĕç пирĕн çинелле!

Пуля çумăр евĕр çурĕ,
Вилĕм—кашни утăмра.
Таврара çунать мĕнпурĕ,
Илес ял та çулăмра.

Явăнать çеç тĕтĕм-сĕрĕм
Çĕрĕ кисренсе тăрать.
Эх, тўсет те иккен çĕрĕ
Çавăн чухлĕ сăтăра!

Нимĕç вутлă хўме хўрĕ,
Çăлăп, терĕ пуль хăйне.
Виçĕ хут атака турĕ,
Çывхартмасть ял яхăнне.

Анчах камăн вăйĕ çиттĕр
Хуçма пирĕн вăй-хала!
Çулăм витĕр, вилĕм витĕр
Ыткăнтăмăр малалла.

Юнлă тытăçу пуçланчĕ:
Алпа ал та хĕçпе хĕç,
Нимĕç тем пек тапаçланчĕ,
Ĕçĕ пулчĕ кăлăх çеç.

Уншăн каçару пулмарĕ,
Касса тăкрăмăр йăлтах.
Пĕр чĕр нимĕç те юлмарĕ,
Вилсе юлчĕç çав ялтах.

Çав самант курасчĕ эсĕр
Хăвăр ывăл вăрçнине,
Вилессе-мĕнне пĕлмесĕр,
Вут çине ыткăннине.

Вĕчĕрхеннĕ çиллĕскерĕн
Аллисем çав тер кăра,
Куçĕсем хăруш, тискеррĕн
Ялкăшса çунса тăраç.

Вылянать алăри пăшалĕ,—
Тăшмансем çинче çўрет;
Штыкпала тирет те майлă,
Прикладпа кĕç илтерет.

Çапăçса, ниме пăхмасăр,
Нимĕç хыççăн ăнтăлса,
Вăл темле, асăрхамасăр,
Пиртен кайнă татăлса,

Нимĕçсем ăна хуплană,
Пур çĕртен те тăкнă вут...
Чĕррĕн те тытма шутланă:
„Парăн!—тенĕ.—Рус! Капут!“
Кăшкăрать Куçук çиллессĕн:
— Парăп эп „капут“ сире!

Ун çине вăраç граната.
Вăл, леш ўкнĕ-ўкменех,
Самантрах ярса тытать те
Вăркăтать хăйсем çине.

„Ак, сире,—тет,—кучченеçĕр,
Тутă пулăр мăй таран!
Нимĕçсем кĕç сирпĕнеççĕ
Шарт! çурлан гранатăран.

Амантаççĕ Куçука та
Урса çитнĕ нимĕçсем.

Калăн эс: вăйне çухатĕ
Паттăр, юнĕ кайнăçем.

Ну, Куçук та чăрсăр чунлă,
Пăшалне алăран ямасть.
Хăй выртать чĕп-чĕрĕ юнлă,
Шав пемешкĕн чарăнмасть.

Кăшт чупаç те тăкăнаççĕ
Çывхарма тăран фрицсем,
Умлă-хыçлăн тăрăнаççĕ,
Вилĕм туянса, мурсем.

Васкаса чупса пыратпăр
Куçука çăлма эпир.
Тĕлĕнсе пăхса тăратпăр.
„Ак, чарăп",—тет командир.

Йăванаççĕ çирĕм вилĕ
Пĕр Куçук йĕри-тавра.
Мĕн тăвать иккен вут çилĕ,
Кур, епле вăл тавăрать.

Куçук пит йывăр аманнă,
Юнĕ пĕрхĕнсе юхать.
Пулас çук иккен хаманĕ[1],
Сывлăшĕ аран тухать.

Суранне çыхса сиплетпĕр.
„Ял камра?"—тет хăй çапах.
„Ан кулян, ял пирĕн, тетпĕр,
Ан хускал эс, вырт шăпах".

„Юлташсем,—тет,—ан чăрманăр
Кунта эсир манпала.
Тарса хăтăлĕ тăшманăр,—
Васкăр, васкăр малалла!

Ман хал çук. Ан тăвăр айăп.
Йывăр килчĕ пĕччене.
Çапăçрăм вăй çитнĕ май эп
Патронсем пĕтиччене.

Эп ĕнтĕ вилетĕп,—терĕ,—
Уйăрлатăп сирĕнтен.

Аннене çырса пĕлтерĕр
Эп епле вилни çинчен".

Вăл пире çĕнмешкĕн сунчĕ.
„Эх,—тет,—шел вилме, туссем!"
Юлашки хут çиçсе сӳнчĕç
Унăн çутă куçĕсем.

Куçсенчен вĕри куççулĕ
Шăпăртатрĕ боецсен:
Татăлчĕ Куçук кунçулĕ,
Упраймарăмăр иккен.

Упраймарăмăр, аннемĕр,
Ăмăрткайăк-ывăлăра.
Татăлсах пит ан йĕрсемĕр,
Ӳкĕтлетпĕр кăмăлран.

Ăнланатăр пулĕ хăвăр,
Пире тивĕç кацарма:
Унăн тусĕсене йывăр
Çавăн пек çыру çырма.

Мĕн тăвас-ха, ик тĕлейлĕ
Вăрçăри салтак шăпи...
Çĕре хутăмăр тирпейлĕ
Чысласа ăна эпир.

Тăпри çăмăл пултăр унăн.
Çапăçса тăшмансемпе,
Вăл хăй паттăр пуçне хунă.
Вилчĕ чаплă вилĕмпе.

Ăна манмĕ ирĕк халăх,
Ĕмĕр тытĕ асĕнче.
Шур чулран çĕкленĕ палăк—
Ывăлăр тăпри çинче.

Ешĕл хурăнсем чӳхенĕç,
Упраса ун канăçне.
Йывăç-курăк чечекленĕ.
Çăтмахри пек, çуркунне.

Çулçӳрен чыс парса иртĕ,
Пуç тайса ун тăприне.
Килсе çӳрĕпĕр эпир те
Асилме çак кунсене.

[1] Сывлăшĕ.

Кулянса эпир вал çукшăн—
Чыс, хисеп туса ăна,
Сăмах патăмăр Куçукшăн
Тавармашкăн тăшмана.

Халь ăна хаяр тавратпăр,
Пур тĕлте те, пур çĕрте
Айăн-çийĕн çавăратпăр,
Çилĕ вĕчĕхет пирте.

Путсĕр фриц хуçа пулаймĕ
Пирĕн аслă çĕр çинче.
Пурпĕр чĕррĕн хăтăлаймĕ
Совет Çарĕ хĕççинчен.

Пирĕннисем халь йĕрлеççĕ
Тăшмана çине тăрсах,
Тупă сассисем кĕрлеççĕ,
Куçука салют парса.

Тамăк пек хаяр, хăрушă
Хĕрсе çитрĕ çапăçу.
Умри аслă çĕнтерÿшĕн
Эпир ним те шеллес çук.

Ĕненсе шанса тăратпăр
Ĕпир хамăр вăй-хала,
Эненсе шанса пăхатпăр
Паян эпир малалла!

Тата пĕр сăмах каласшăн
Сире эпир, итлĕрсем!
Куçук вырăнне пуласшăн
Эпир сирĕн ывăлăрсем.

Йышăр пысăкрах пулать, тен,
Хирĕç пулмасан эсир—
Эпир мĕн пурĕ тăваттăн:
Виç боец, пĕр командир,

Кĕçĕн командир Хĕветĕр,
Пулемĕтчик Пурхиле,
Боецсем Ваçça та Петĕр
Кĕрес тетпĕр пĕр киле.

Вăл кил пултăр сирĕн килĕр,
Эсир пулăр ыр анне.
Пире ывăллăха илĕр
Хăвăр Куçукăр вырăнне.

Пирĕн пур—мухтав тени кăшт.
Çакна çырнă сехетре
Пиртен орден илнĕ иккĕш,
Иккĕшĕ халь черетре.

Тен, чухлатăр пуль хусамăр,
Тиркемеллех мар çынсем.
Кăмăлпа хисеп тусамăр:
„Ывăлăмсем“, тесе чĕнсе.

Пирĕн те аннесем пулнă,
Хăшин вилнĕ, е хăшин
Нимĕç пусмăрĕнче юлнă,
Чĕрĕ-ши, е вилĕ-ши...

Кил ăшши пире те кĕтнĕ,
Кĕтнĕ çемьесем хальччен;
Халь таçта саланса пĕтнĕ,
Юлнă кашниех пĕччен.

Çавăнпа ĕнтĕ çырасшăн
Çире эпир çырусем.
Ӳлĕм хăнана пырасшăн,
Тĕрĕсех юлсан пуçсем...

Çакăнпа хута вĕçлетпĕр,
Юлмĕ, тетпĕр, кăмăлăр.
Хирĕç çырасса кĕтетпĕр:
Мĕнле сирĕн кăмăлăр?

Сывă пулăр, ыр аннемĕр,
Таймапуç сире пиртен.
Тиркесе ан тĕлĕнсемĕр
Пирĕн çак сăмахсенчен“.

Çыру вĕçĕнче: Хĕветĕр,
Пулемĕтчик Пурхиле,
Боецсем Ваççук та Петĕр
Ала пуснă пĕр тĕле...

Чи паха хаваслăх пулчĕ
Куçук амăшне çак хут.
Урăх туйăмпала тулчĕ
Ун чĕри. Темиçе хут

Çырăва вăл вулаттарчĕ,
Пĕр сăмахăн суйласа.
Хăй пĕр ним чĕнмесĕр ларчĕ,
Тем çинчен-çке уйласа.

Чун йăпатмăшне вăл тупрĕ
Çырури сăмахсенче.
Савăнăç куççуллĕ тухрĕ
Вăйсăрланнă куçсенчен.

Тăлăх мар иккен ун чунĕ,
Вăл юлман иккен пĕччен.
Çĕнĕ шанчăк пур-мĕн унăн
Çĕнĕ ывăлсем çинче.

Ав, епле çыру çыраççĕ
Ун Куçукĕ вырăнне,
Амĕш ăшшине шыраççĕ,
„Пулăр,—теççĕ,—ыр анне"...

„Пулăп, ывлăмсем,—тет,—пулăп"—
Куçарса вăл куçсене
Вăйпитти те пултаруллă
Яшсен сăнĕсем çине.

VI. Амăшĕн çырăвĕ.

Ак мĕнле çыру çыртарчĕ
Амĕш ывăлĕсем патне.
Чи малтан вăл асăнтарчĕ
Кашни ывăлĕн ятне.

„Кĕçен командир Хĕветĕр,
Пулемĕтчик Пурхиле,
Боецсем Ваççук та Петĕр,
Сире сывлăх пехиллеп.

Эсир тупрăр хăвăр юратнă,
Хăвăр ширанă аннĕре.
Эпĕ мар сире çуратнă,
Анчах та вăл пурпĕрех.

Пĕртен-пĕр Куçукçăм манăн
Пуçне хучĕ вăрçăра,
Халь ун вырăнне тăванлăн
„Ывăлсем" теп пурсăра.

Ыр сăмахсемпе йăпатрăр
Эсир манăн чуна.
Çĕнĕ шанчăкпа çутатрăр
Тĕксĕмленнĕ кунăма.

Тӳсме çук нумай пуль тертĕр
Юнлă вăрçă хирĕнче,
Çапах та çырса пĕлтертĕр
Куçук ĕçĕсем çинчен.

Мана кăмăллă—вăл чаплă
Çапăçни çинчен пĕлме.
Вăл манман мĕн ман сăваплă
Таса кепе-пиллĕме.

Эп йĕретĕп, кулянатăп,
Унсăр пит йывăр мана.
Чĕререн эп ылханатăп
Çĕр çăтасшĕ тăшмана.

Вăл ман ывăл пуçне çирĕ.
Хал пулсан пăшал тытма —
Кайăттăм эп ăна хирĕç,
Пăхмăттăм хам ваттăма...

Ывăлăмсем! Куçукшăн тавăрăр.
Тархаслатăп эп сире.
Çăттăр вутлă вилĕм авăрĕ
Мурсене пĕр шелсĕрех...

Тавăрăр! Тăшман ан тухтăр
Чĕррĕн пирĕн çĕр çинчен.
Тавăрăр! Çырма пек юхтăр
Юнĕ çав юнĕçенсен.

Хăвăртрах тасатнă пултăр
Çав йăхран тăван çĕре.
Ун шăрши-марши ан юлтăр!
Çакăн пек ман пил сире.

Ӳкерместĕр пулĕ, тетĕп,
Эсĕр манăн пиллĕме.
Çĕнтерӳпеле кĕтетĕп
Сире хамăн килĕме.

Телейлĕ пултăр кунçулăр,
Чаплă пулччăр ĕçĕрсем.
Сывă пулăр та пур пулăр,
Ăмăрткайăк-ывлăмсем".

Çакăн пек çыру çыртарчĕ,
Суйласа сăмахсене,
Çĕнĕ шанчăк тупнă карчăк
Çĕнĕ ывăлĕсем патне.

* * *

Ĕнтĕ иртрĕ ăшă çу та.
Иртрĕ кĕр, ак хĕл çитет.
Чĕринче ун ăшă, çутă,
Вал куллен çыру кĕтет.

Тăтăшах килсе тăраççĕ
Ун патне халь çырусем,
Ырă хыпарсем çыраççĕ
Амăшне ывăлĕсем:

„Малаллах халь çул тытатпăр,
Хĕвеланăç еннелле.
Вайлă тапăнса пыратпăр
Нимĕç çарĕ çинелле.

Хăталать хулийĕ, ялĕ
Тăшмансен пусмăрĕнчен.
Инçе мар, ак кĕç тасалĕ
Таван çĕр тăшмансенчен.

Ирĕккĕн сывласа ярĕç
Халăхсем ун чух тинех,
Унччен аслă Сталин çарĕ
Алран ямĕ хăй хĕçне".

## VII. Улахра.

Тĕттĕм-тĕттĕм сив хĕл каçĕ,
Мăръере шав çил улать,
Шăкăл-шакăл хĕрупраçĕ
Пĕр пӳртре ларать улах.

Улахсем тăрăх юртмаççĕ
Ялти шавлă каччăсем.
Хĕрсене кăчăк туртмаççĕ
Кантăкран чун савнисем.

Камсем кăчăк туртса тăрĕç,
Кам куç хĕстĕр йыхăрса?
Илтĕнмест халь тăрăс-тăрăст
Ташлани те шăхăрса.

Кайнă купăсçă Микулĕ.
Хăй винтовкипеле халь
Фрицсене ташлатать пулĕ,—
Сыв пулсассăн килĕ-ха.

Кайнă тракторист Виталий.
„Эп танкист. Çапăçура
Хытă çĕмĕретĕп халĕ
Нимĕçе",—тесе çырать.

Çапăçать иккен маттурăн
Кĕтерне каччи—Палюк.
„Кĕтернеçĕм, тӳрĕ пурăн,
Эп сана,—тет,—манас çук".

Бригадир Семĕн Иваныч
Ĕçчен çынччĕ хăй питех,
Колхозра медаль туяннăччĕ,
Халь те орден илчĕ, тет.

Тăван ял ятне ямаççĕ,
Кашниех халь вĕсенчен
Тăшмана хирĕç вăрçаççĕ
Юнлă вăрçă хирĕнче.

Хăйсене ӳстернĕ çĕршĕн,
Чысшăн, ирĕкшĕн тăрса,
Тăван килшĕн, савнă хĕршĕн
Çапăçаç юн юхтарса.

Йĕкĕтсем хастар пулнишĕн
Хĕрупраçĕ савăнать.
Савăнать чĕри ял-йышăн,
Пурте кĕтнĕ-çке çавна.

Пурте шанчăкне хураççĕ
Фронтри паттăрсем çине.
Ĕневсе, кĕтсе тăраççĕ
Çĕнӳпе килессине...

Тулта тĕттĕм сив хĕл каçĕ,
Куçук амĕш пӳртĕнче
Ăшă, çутă. Хĕрупраçĕ
Улахра—ун патĕнче.

Ку пӳртре илтсе пĕлеççĕ
Паянхи кун хыпарне.

Ку пӳртре халь хатӗрлеҫҫӗ
Фронт валли тӗрлӗ парне.

Йӗкесем пӗтӗрӗнеҫҫӗ,
Сӳтӗлеҫҫӗ ҫӑмхасем;
Алшишсем хатӗрленеҫҫӗ,—
Ӑша-ӑша чӑлхасем.

Кашниех кунтан ӑсатнӑ
Ҫывӑх ҫыннине вӑрҫа.
Е ӑсатнӑ та ҫухатнӑ,
Ун пекки те пур-тӑр ҫав.

Туссене аса илеҫҫӗ,—
Вӗсем вӗҫсӗр шухӑшра!
Хуйхӑ-суйхӑна сиреҫҫӗ
Пӗр ӗҫре те пӗр йышра.

Юрӑсем янраҫҫӗ уҫҫӑн.
Юрӑран кам ютшӑнать!
Куҫук амӑшӗ—килпуҫӗ—
Вӑл та шӑппӑн хутшӑнать.

Унӑн кӑмӑлне—кӗвви те,
Хуйхине-ҫке пусарса,
Вӑл юрлать, куҫҫулӗ витӗр
Ывӑль сӑн-питне курса.

Ун ҫемҫе сасси салхуллӑн
Янраса тӑрать ҫинҫен,
Вӑл юрлать умри кунҫулӑн
Шанчӑкне тупни ҫивчен.

Ун фронтра тӑвата ывӑл—
Куҫук евӗр паттӑрсем.
Тӑват ывӑлне валли вӑл
Хатӗрлет халь парнесем:

Алшишсем—тӑвата мӑшӑр,
Тӑват мӑшӑр ҫӑм чӑлха—
Мамӑк пек ҫемҫе те ӑшӑ,
Кӗрхи ҫӑм ҫипрен ҫыхать.

„Сивӗпе ан аптӑраччӑр
Ӑмӑрткайӑк-ывӑлсем.
Сӑхӑ тӑшмана аркатчӑр
Хӑвӑртрах унта вӗсем.

Сивӗ ҫил-тӑмансем витӗр,
Хаклӑ ывлӑмсем патне
Ман чӗрем ӑшшийӗ ҫиттӗр,
Ҫиттӗр эп янӑ парне.

Ӑна ывӑлӑмсем илччӗр,
Ырӑ юлччӑр киличчен.
Аслӑ ҫӗнтерӳпе килччӗр
Юнлӑ вӑрҫӑ хирӗнчен",—

Тет вӑл. Урамра хӗл каҫӗ.
Мӑръере сив ҫил улать.
Яланхи пек хӗрупраҫӗ
Ҫак пӳртре ларать улах...

1943.



## *ЛЕОНИД АГАКОВ*

# ПĔРРЕ, ÇУРКУННЕ...

(*Повесть*)

I

Садсем чечекре...

Яштак чиесем, çĕмĕрт йывăççисем, çатрака туратлă улмуççисем—пурте шап-шур çăра тумпа витĕннĕ. Аякран пăхсан, садсем çине кăпăшка ăшă юр çуса лартнă пекех туйăнать. Вĕсем ытармалла мар тутлă, кăмăла йăпатакан шăршă сарса лараççĕ, иртсе пынă чух чарăнса тăрсах сывлас килет вĕсен шăршине.

Кăнтăрла ку ырлăха татах та пит асăрхасах каймастăн, анчах каçхине вара, хĕвел анса ларса улăхсенчи ешĕрекен курăк сывлăмпа нӳрелме пуçланă чух, хуть кам та киленет çурхи чечексен шăршипе, вĕсен тутипе тулнă сывлăша пĕтĕм кăкрипе сывласа çăтать.

Аван çав садсем чечекленнĕ вăхăтра!..

Анчах та пин те тăхăрçĕр çирĕм иккĕмĕш çулхи çуркунне чечекленнĕ садсем никама та савантармарĕç, никам кăмăлне те çĕклентермерĕç, вĕсем саракан ытарма çук ырă шăршă килентермерĕ. Вăл çуркунне çынсен сăн-сăпачĕсем çуталмарĕç, вĕсен çинче кулă-савăнăç курăнмарĕ. Выçăллă-тутăллă, унччен нихăçан та çăвара чикмен апатсем çисе хĕл каçкаланă çынсем халĕ пушшех аптăраса çитрĕç. Мăянпа, сĕлĕпе хутăштарса авăртнă çăнăх çеç мар, кĕркунне пухнă йĕкел те, çу заводĕнчен илсе килкеленĕ турантă та—тахçанах пĕтнĕ, пур-çук выльăха сутса, пусса çисе янă. Килрен киле вилĕм шаккаса çӳрет, хăйĕн тискер, хыткан аллипе çынсене, ватти-вĕттине тиркемесĕрех, пăва-пăва пăрахать. Ял хĕрринчи кивĕ йывăç чиркӳре вил кĕлли тумасăр пĕр кун та иртмест, çурăк чан сасси

кулленех тата кам та пулин вилни ҫинчен пӗлтерет. Чиркӳрен ҫӗклесе тухнӑ тупӑксене ҫынсем чечекленекен садсем ҫумӗпе, пуҫӗсене усса, ним чӗнмесӗр, вӑй ҫуккипе аран-аран утса, масар ҫине илсе кайса чикеҫҫӗ. Вилнисем нирки йӗрекен-макӑракан та, ытлашши хуйхӑракан та ҫук. Выҫӑпа аптӑраса халран кайнӑ ҫынсен туйӑмӗсем те мӑкалнӑ, йӗркеллӗн тавҫӑрса шухӑшлама та пултараймаҫҫӗ ӗнтӗ вӗсем. Кам пӗлет, тен паян тупӑк ҫӗклесе пыракансен тепӗр темиҫе кунран хӑйсен те масар ҫине кайса выртмалла пулӗ?..

Каҫхине, кӗтӳ хӑваласа кӗрсенех (кӗтӗвӗнче те выльӑхӗ вӑтӑр-хӗрӗх пуҫран ытла мар), ял вилнӗ пек пулать. Каччӑсемпе хӗрсем вӑйя тухмаҫҫӗ, юрӑ-сӑвӑ, купӑс сасси тавралӑ илтӗнмест, ниҫта та нимле сас-чӗвӗ те ҫук. Сайра-хутра ӑҫта та пулин выҫӑхса ҫитнӗ йытӑ вӗрсе ярать те, ял хуралҫи хӑйӗн шӑкӑрчакне шакӑртаттарса илет. Чечекпе витӗннӗ садсем ҫеҫ яланхи пекех сывлӑша тутлӑ шӑршӑ тултарса лараҫҫӗ, вӗсенче каҫхи кайӑксем чӗвӗлтетни илтӗнет. Ҫав кӑна ҫӗр ҫинче пурнӑҫ пурри ҫинчен систерет.

... Ҫавӑн пек каҫсенчен пӗринче Энтриялӗн вӑта урамӗнчен ҫырманалла анакан тӑкӑрлӑкри пӗчӗк пӳртре пӗр хӗрарӑм аран сывласа, ахлатса выртрӗ. Тапхӑр-тапхӑр вӑл ӑнран та тухса кайрӗ, унтан майӗпе ӑса кӗрсе пычӗ, кӑштах вӑхӑт иртсен, каллех антрашса каларӗ. Ҫурҫӗр тӗлӗнче, таҫта инҫетре автансем пӗр-пӗрине сас пама тытӑннӑ вӑхӑтра, вӑл юлашки вӑйӗпе ерипен йынӑшса ячӗ:

— Шыв... Микуль... шыв пар...

Тӑрӑхла сак ҫинчи анчахрах тӗлӗрсе кайнӑ вунвиҫ ҫулхи ача йӑпӑртах тӑрса ларчӗ.

— Шыв юрамасть пуль сана, анне...

— Ҫук... Тӳсейместӗп, пар...

Микуль ҫенӗкрен куркапа шыв илсе кӗчӗ. Амӑшӗ ӑна ҫавӑнтах ланкӑртаттарса ӗҫсе ячӗ те, йынӑшайынӑша, пуҫне минтер ҫине хучӗ. Темиҫе самантран, сывлӑш ҫавӑран пекки туса, вӑл хӑй ӑшӗнчен аран темиҫе сӑмах пӑчӑртаса каларчӗ:

— Вилетӗп пуль эп кӗҫӗр... Ытла йывӑр... Кун пекех пулманччӗ, паян ытла та... ах... Шел — Тараса курмасӑрах вилетӗп-иҫ... Таҫта ӗнтӗ вӑл халь... Те вӑл та вилчӗ? Унпа пӗрле кайнисем пурте таврӑнса пӗтрӗҫ, вӑл кӑна ҫухалчӗ. Кураймастӑпах ӗнтӗ, мӑнтарӑн...

Макӑрас патнех ҫитнӗ ывӑлӗ амӑшне лӑплантарма тӑрӑшрӗ:

— Апла ан кала-ха, анне, тен иртсе кайӗ. Ав, Ҫтенккисен амӑшӗ те сан пекех йывӑр чирлесе выртрӗ те кайран тӳрленчӗ вӗт, халь чиперех ҫӳрет. Эс те сывалӑн акӑ...

— Ҫтенккисем ҫинчен мӗн калӑн... Вӗсем ҫимелли тупаҫҫӗ. Пирӗн мӗн пур?

— Ыран столовӑйран илсе килнине пӗтӗмпех сана парӑп, анне...

— Кирлӗ мар, ывӑлӑм. Сан хӑвӑн пурӑнас пулать, эп хамӑнне пурӑннӑ ӗнтӗ... Тараса курасшӑнччӗ те... Вӑл таврӑнсан, чиперех пурӑнӑр акӑ... Кӑҫал тырӑ пулать, теҫҫӗ. Пирӗн акни те ҫукпа пӗрех те... Ял ҫинче ҫын вилмест, теҫҫӗ. Кил-ҫурта юсаттарӑр, выльӑх-чӗрлӗх туянӑр... Тарас ӗҫе юрататъ, вӑл — ашшӗ пекех ӗҫчен...

Хӗрарӑм сасси вӑйсӑрланнӑҫемӗн вӑйсӑрланса пычӗ, юлашки сӑмахсене вӑл таҫта шала кайнӑ сасӑпа каларӗ. Унтан йынӑшса илчӗ те шӑпах пулчӗ.

— Анне, анне, мӗн калаҫан ҫав эсӗ?

Микуль амӑшне хулпуҫҫинчен тытрӗ. Питӗнчен пӑхма тӑрӑшрӗ, анчах пӳртре тӗттӗм пирки — нимӗн те кураймарӗ. Лампа ҫутас — ни краҫҫын, ни шӑрпӑк ҫук...

— Анне, анне! — хытӑраххӑн чӗнчӗ

Микуль, хӑрама пуҫласа.—Анне, тетӗп, сас пар ӗнтӗ!

Амӑшӗ чӗнмерӗ... Микуль, вӑл вилнӗ пуль тесе,—шари! . кӑшкӑрсах макӑрса ячӗ те урама сиксе тухрӗ. Унталла пӑхрӗ, кунталла... Часрах анат енчи кӳршӗсен чӳречинчен чышкӑпа шанлаттарма тытӑнчӗ:

— Павӑл пичче! Марфа аппа! Тӑрӑр-ха, айтӑр-ха пирӗн пата, анне вилет пулмалла!

Хӑй ҫавӑнтах килнелле ыткӑнчӗ. Амӑшӗ малтанхи пекех пӗр сассӑр выртать, чӗнсе те чӗнмест. Кӗҫех кӳршӗсем чупса ҫитрӗҫ. Ҫивиттине сирсе пӑрахрӗҫ, аллине тытса пӑхрӗҫ, чӗрине итлерӗҫ.

— Ҫук-ха, вилмен... Чӗри тапать, сывлӑшӗ те пур,—терӗ шӑппӑн кӳршӗ арӑмӗ.—Чуп-ха, Павӑл, ҫенӗкри сентре ҫинче кӑштах сӗт пурччӗ, илсе кил, парӑпӑр, тен усси пулӗ... Тата ҫутмалли илсе кил мӗн те пулин.

Унӑн упӑшки хӑвӑрт тухса кайрӗ. Кӳршӗ арӑмӗ Микуль ҫине пӑхрӗ те йӑвашшӑн йӑпатма пуҫларӗ:

— Ан макӑр, ачам, ан макӑр... Хӑрамалли нимех те ҫук. Иртсе каять вӑл...

## II

Ҫав каҫах Й... хули енчен хӗвелтухӑҫнелле Хурӑнла ҫул тӑрӑх питӗ васкаса пӗр ҫын утрӗ. Вӑл красноармеец тумӗ тӑхӑннӑ—ҫӑлтӑрлӑ шлемпа, гимнастёркӑпа, атӑпа. Ҫурӑмӗ ҫинче—чылай пысӑк кутамкка, шинельне хулӗ урлӑ уртса янӑ. Утнӑ май, шинельне вӑл пӗр аллинчен тепри ҫине куҫарса хурать. Ниҫта та тытӑнса тӑмарӗ, пӗрмай малалла, пӗрмай малалла утрӗ. Сайра-хутра ҫеҫ чӗлӗм чӗркесе тивертмешкӗн чарӑнкаласа тӑчӗ, унтан каллех утрӗ. С... шывӗ тӑрӑх ҫӳрекен пӗчӗк ҫеҫ пароход ҫинчен аннӑранпа вӑл нумай ялсем витӗр тухрӗ; хыҫӗнчи кутамкки самаях каялла туртрӗ ӑна, тарланипе аялти кӗпи тахҫанах ҫурӑмӗ ҫумне ҫыпӑҫса ларчӗ, анчах вӑл ун ҫине ҫаврӑнса та пӑхмарӗ, малаллах васкарӗ. Хурӑнлӑ ҫул хӗрринчи „27“ цифрлӑ ула юпа тӗлне ҫитсен, вӑл сылтӑмалла пӑрӑнса, сукмак тӑрӑх ыраш калчи хушшипе Энтрияль еннелле кайрӗ.

Вулакан, тен, пӗлчӗ те пуль ку ҫынна: ку Энтриялӗнчи тӑлӑх Хветуҫ ывӑлӗ—Тарас пулнӑ...

Виҫӗ ҫул ӗлӗкрех, ҫакнашкалах илемлӗ ҫуркунне, вӑл, ватӑ амӑшӗпе пӗчӗк шӑллӗне киле хӑварса, ялти ытти ҫамрӑксемпе пӗрле Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ. Виҫӗ ҫул хушши инҫетри ҫӗршывсенче ҫӳренӗ, нумай ҫапӑҫусенче пулса, ӗҫ халӑх тӑшманӗсене хӑваланӑ. Перекопа илнӗ чух Сиваш шывӗнче путассинчен аран ҫеҫ хӑтӑлса юлнӑ. Юлашки ҫапӑҫусенчен пӗринче, Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче, сулахай айӑкне питех те йывӑр суранлатнипе, вӑл нумай вӑхӑт лазаретра выртнӑ. Халӗ ӗнтӗ, сывалса ҫитнӗ хыҫҫӑн, тӑван ялне амӑшӗпе шӑллӗне часрах ҫитсе курас ӗмӗтпе васканӑ. Ҫур ҫул хушши ытла Тарас вӗсем ҫинчен нимӗн те пӗлмен: те чӗрӗ вӗсем, те тахҫанах вилнӗ... Кам пӗлет, тен вилнӗ те пулӗ—Атӑл тӑрӑхӗнче выҫлӑхӗ ытла та хӑрушӑ пулнӑ. Килнӗ чухнех курчӗ Тарас: пристаньсенче, станцисенче—пичкери пулӑ пек халӑх—ҫавӑнтах выртаҫҫӗ, лараҫҫӗ, ҫиеҫҫӗ, ҫавӑнтах вилеҫҫӗ...

„Ҫимелли пулман ӗнтӗ кӑҫал вӗсен: ватӑпа вӗтӗ ӑҫтан тупчӑр?“

Сукмак анкартисем хыҫне пырса тӑрӑнчӗ. „Ку Лявасен анкартийӗ пулмалла-ха,—шухӑшларӗ Тарас.—Халь мӗнле пурӑнаҫҫӗ-ши, ӗлӗкхи пекех халӑх ӗнси ҫинче-ши?“ Пӗр-ик самантлӑха чаранса чӗлӗм тивертнӗ хыҫҫӑн вӑл картасем ҫуммипе аналла утрӗ. Мӗнешкел паллаӑ вырӑнсем! Акӑ—Кӗске-вар пуҫӗ, кунта пӗчӗк чух яланах выртмара пулнӑ,

акӑ кукӑр хурама—ун айӗнче текех „ҫӗҫӗлле“, „тӑла тартмалла“ выляна... Лере, сылтӑмарахра, Автан ҫырминче кашни кӗркунне пӗве туса, амӑшӗпе пӗрле кантӑр хутма кайнӑ... Кунта вара, Мӑрсуксен арпалӑхӗ ҫумӗнчи кив каска ҫинче, пӗрремӗш хут Варука хӑй юратни ҫинчен каласа панӑ... Мӗнле-ши вӑл халь? Епле пурӑнать-ши? Виҫӗ ҫул хушшинче ик ҫыру ҫеҫ ячӗ. Тен качча кайнӑ-и? Кайнах пулсан—кама-ши? Пӗлесчӗ часрах ун ҫинчен те. Ҫав тери лайӑх уйӑрлнӑччӗ-ҫке...

Пуҫра шухӑшсем, аса-илӳсем пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫуралаҫҫӗ, пӗрпӗринпе ҫыхӑнса тӑсӑлаҫҫӗ.

Тарас, сукмакпа ҫырмана чупса анса, тӑкӑрлӑкалла пӑрӑнчӗ. Акӑ ӗнтӗ вӑл пӗчӗкрен ӳснӗ вырӑн. Миҫе хутчен анса хӑпарнӑ-ши вӑл ҫак ҫырмана? Хӗллехи кунсенче мӗн чухлӗ ярӑннӑ-ши ҫунашкапа ҫак сӑрт ҫинчен? Эх, тӑван вырӑнсем, ытла та нумая аса илтеретӗр-ҫке эсир!

Ик енчен те ватӑ лапсӑркка йӑмрасем хупласа тӑнипе—тӑкӑрлӑкра куҫран чиксен те курас ҫук. Сӑрт хӗрринчи ҫуртсем нӗрсӗр хура капансем пек курӑнаҫҫӗ,—темле чӗрене ҫӳҫентермелле тӗслӗ. Ӑҫта та пулин пӗр хӑйӑ ҫути пулсанччӗ! Ҫук, тӗттӗм... Сас-чӗв те ҫук, чӑннипех пурте вилсе пӗтнӗ пек туйӑнать. Ҫӗрлехи тӗттӗмлӗхпе шӑплӑхра пӗр чечексен шӑрши ҫеҫ сисӗнет.—Тарас вӗсен ырӑ тутипе тулнӑ сывлӑша пӗтӗм кӑкӑрӗ туличчен ҫӑтса пычӗ.

Акӑ вӗсен килӗ курӑнчӗ. Ыттисенчен раснах, пӳртре темшӗн хӑй ҫути пур. Мӗне пӗлтерет-ши ку? Часрах ҫитес, пӗлес... Тайӑлса кайнӑ вӗрлӗк алӑка Тарас уҫса та тӑмарӗ—ун урлӑ вӑштах сиксе каҫрӗ, алӑка вӑйпа туртса уҫрӗ те—пӳрте кӗрсе тӑчӗ.

Сӗтел ҫинче шӑши куҫӗ пысӑкӑш ҫутӑ мӗлтлетсе ларать, ҫавӑнпа та пӳртре тӗттӗмпе пӗрех. Кутник сакки ҫинче тахӑшӗ ҫывӑрать—палламалла мар, пуҫӗ ҫинченех витӗннӗ. Тӑрӑхла сак ҫинче тепӗр ҫын...

„Иккӗшӗ те чӗрӗ пулас-ха хуть,—шухӑш вӗҫрӗ Тарас пуҫӗнче.—Чӗрӗ пулсан, урӑх нимӗн те кирлӗ мар, ытти—пулӗ“.

Вӑл шинельне алӑк патӗнчи пӑта ҫине ҫакрӗ, кутамккине хывса сӗтел ҫине хучӗ те, амӑшӗпе шӑллӗне вӑратмасӑрах, сӗтел пуҫӗнчи каска пуканӗ ҫине ларчӗ. Халь васкамалли ҫук ӗнтӗ,—халь килте! Курас тенӗ ҫынсем—ун умӗнче, ҫак пӳртрех, унран ик утӑмра ҫеҫ. Ҫывӑраҫҫӗ... Тен, ыйӑннӑ пулӗ вӗсем, тен, хырӑм выҫҫине манас тесе, юри часрах ҫывӑрнӑ пулӗ. Тивес мар, ҫывӑрччӑр.

Тарас ҫак шухӑшсемпе чӗлӗм чӗртсе ячӗ, анчах нумай тӳссе лараймарӗ, ҫурри таран та ҫунман пирусне сӳнтерчӗ те—кутник патне пырса, амӑшӗн пуҫӗ ҫинчен ҫивиттине сирчӗ.

— Анне...

Амӑшӗ илтмерӗ те, чӗнмерӗ те.

— Анне, анне, вӑран...—хытӑрах сас пачӗ те Тарас, ӑна хыткан хулпуҫҫийӗнчен хуллен кӑна лӑскарӗ. Лешӗ малтан йынӑшса илчӗ, тарӑннӑн сывласа ячӗ, унтан куҫне уҫмасӑрах ыйтрӗ:

— Мӗн?

— Вӑрансам, анне...

— Ах, вӑй ҫук, Микуль...

— Микуль мар ку, анне, ку—эпӗ.

— Кам?

— Тарас... Тарас эпӗ!

Чирлӗ хӗрарӑм, куна илтсен, мӗнпур вӑйне пухса, чун-хавалӗпе тепӗр айӑкӗ ҫине ҫаврӑнчӗ те тӑрса ларчӗ. Темиҫе самант хушши ывӑлӗ ҫине ним ӑнланман пек пулса, куҫсене хӑвӑрт мӑчлаттарса пӑхрӗ. Унтан сасартӑк вӑрӑммӑн йынӑшса ячӗ те, унӑн пуҫӗ минтер ҫине ӳкрӗ.

— Ах, ывӑлӑм, вилетӗп вӗт... Сана та кураймастӑп пулӗ, тенӗччӗ... Юрать, пытарма та пулин килтӗн...

Калаçнине илтсе, нумаях. та пулмасть тутлăн çывăрса кайнă Микуль те вăранса сиксе тăчĕ. Тарас ăна пур вăйĕпе ыталаса чуптуса илчĕ, унтан вĕсем иккĕшĕ те амăшне лăплантарма тытăнчĕç.

— Ан макăр, анне, ан пăлхан, халĕ санăн хуйхă-суйху пĕтрĕ ĕнтĕ, чиперех таврăнтăм вĕт... Сывалатăн та, пит лайăх пурăнма пуçлатпăр акă...—амăшне ачашла-ачашла йăпатать Тарас.—Ыранах тухтăр илсе килетĕп... Çиессӳ килет-и? Ман кутамккара çимелли пур, юри сана валли илсе килтĕм...

Амăшĕ майĕпе лăпланма пуçларĕ. Тарас Микуле часрах хуранпа шыв вĕретме хушрĕ, хăй кутамккинчен çимеллисем, сахăр, канфет кăларчĕ. Çав хушăрах, калаçма вăйĕ çук пулин те, амăшĕ унран юлашки вăхăтра мĕнле пурăнкалани çинчен ыйтса пĕлсе пычĕ. Амăшне кӳрентерес мар тесе, Тарас пурне те хитрелетсе каласа пачĕ. Хăй йывăр суранпа выртни çинчен шарламасăр хăварчĕ. „Сывалсан та калама пулĕ-ха ун çинчен",— шухăшларĕ хăйĕн ăшĕнче.

Тепĕр çур сехетрен Хветуç килйышĕ чей ĕçме ларчĕ. Амăшне выранран хускатас мар тесе, ывăлĕсем сĕтеле кутник патне пырса лартрĕç. Вырăнтан ыйăхса çитнĕ, тахçантанпах чăн-чăн çăкăр çавăра чиксе курман амăшĕпе шăллĕне Тарас хăй илсе килнĕ çимĕçсемпе хăналарĕ. Тем пекех чирлĕ, тĕрексĕр пулин те, Хветуç, хăйĕн ывăлĕсем çине пăхса, пĕр-икĕ хутчен вăйсăррăн кулса илчĕ. Унăн хĕрелнĕ куçĕсенчен чей чашки çине савăнăç куççулĕсем тумларĕç.

— Этемлех пурнăпăр-и-ха, тен, малалла...

### III

Тул çутăлнă чух тин выртнă пулин те, Тарас ирех тăчĕ. Кĕпине хывса, пилĕк таран çăвăнчĕ, алшăллипе ӳчĕ хĕреличченех лутăркаса шăлчĕ, унтан, чĕлĕм чĕртсе ярса, çенĕк алăкĕ умне тухса тăчĕ. Ирхи хĕвел йăмра тăррисемпе танашайман мĕн-ха, килхушшинчи кĕççе пек курăк çинче сывлăм тумламĕсем ахах пĕрчисем пек курăнаççĕ. Пĕлĕт—кăвак кантăк пек, тап-таса. Çил-мĕн çук. Лăпкă, ăшă. Таçта çӳлте, сенкер тӳпе айĕнче, тăри хăй юррине шăрантарать. Ытармалла мар çанталăк!

Тарас тутлăн карăнса илчĕ те куçĕсемпе килхушшине йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ.

— Н-да,—терĕ вăл, чылай вăхăт пăхса тăрсан,—пĕтĕмпех çĕнĕрен тăвас пулать... Шуткă мар.

Вырьăх карти тăрри ик çĕртен ишĕлсе аннă, тытăнса юлнă уламĕ çийĕнче вĕлтрен, мăян, хупах—тем те пĕр ӳсет. Тахçан хăмаран çапса тунă алăк тăпсисенчен вĕçерĕнсе кайнă та—хăяккăн выртать, лаç пекки те тӳнес патнех çитнĕ. Çара каяс умĕн тӳрлетсе хăварнă кĕлет çеç йĕркеллĕ. Килхушши варринче кустăрмасăр урапа ларать, сапур çумне хăрах тупанлă çара çунана таянтарса тăратнă. Урăх нимĕн те çук.

Тарас шухăша кайрĕ. Мĕнрен пуçламалла-ши ĕнтĕ пурнăçа юсама? Хăш кĕтесрен тытăнмалла? Пӳрчĕ те кивĕ, ăна та юсас пулать, никĕсĕсем веçех çĕрсе кайнă...

Сасартăк вăл хăйне такам ятпа чĕннине илтрĕ.

— Тарас! Хăçан килтĕн?

Ку—Павăл пичче, кӳршĕ иккен. Тарас ответне кĕтмесĕрех, карта урлă сиксе каçрĕ те, ун патнелле хăвăрт утса пырса, аллине чăмăртарĕ, вара каçса кайсах калаçма тытăнчĕ:

— Эпир кунта сана кĕтсе шалт хăшкăлтăмăр, Тарас Петрович... Никак та пурнăç малалла каймасть вĕт, ху куран. Микулĕ ачарах-ха, мăн ĕç патнех пыраймасть, аннӳ чирлĕ ав.

Каҫхине хăратсах пăрахрĕ пире... Ну, халь майлашатăр ĕнтĕ, эс таврăнтăн... Пит аван пулать.

Калаҫнă майăнах пусма вĕҫне ларчĕ те, чĕлĕмне кăларса, шултран туранă килти табак тувине тултарма пикенчĕ.

— Ме, фабричнăйне турт,—сĕнчĕ Тарас.

— А-а, ку юрать вара!—терĕ Павăл пичче. Хапричнăйне туртманни пит нумай пулать... Тĕлĕнмелле! Хăҫан пулать вăл тавар? Итле-ха эс, Тарас Петрович, табак ҫитмест, хăйă ҫунтаратпăр, шăрпăк вырăнне—вутчулĕ. Тăварсăр, супăньсĕр аптăратпăр акă. Ытти таварсем пирки каламастăп та ĕнтĕ. Мĕнле вăл, хуласенче те ҫавах-и?

— Халь ҫине ҫавăн пекрех-ха, Павăл пичче.

— А мĕнле, нумай пурăнатпăр-ши эпир капла? Кансĕр вĕт питĕ, питĕ кансĕр!

— Нумай мар ĕнтĕ халь. Часах пĕтĕмпех улшăнать...

Тарассен тĕлĕпе иртсе пыракан икĕ хресчен вĕсене курчĕҫ те тӳрех кĕрсе ал тытрĕҫ.

— Епле ҫиткелерĕн, шăллăм?—ыйтрĕ пĕри, Тяпук ятлă тĕреклĕ хура ҫын.

— Аванах ҫитрĕм...

— Аннӳне манмарăн пулать ҫапах та,—хушса хучĕ тепри, урисем кукăртарах пирки Хăмăт тенĕскер.

— Ма апла калан?

— Ара, эс коммунист пуль-ха вĕт?

— Коммунист, мĕн вара?

— Эпĕ коммунистсем ашшĕ-амăшне те, арăмĕсене те пăрахаҫҫĕ тенине илтнĕччĕ те...

— Калакансем калĕҫ вĕсем. Сахалтарах итлес пулать ун пеккисене,—терĕ Тарас.

Павăл пичче татăлнă калаҫăва каллех хускатса ячĕ.

— Ҫапах та, хăҫан ҫителĕклĕ пулать-ха вăл тавар тени, Тарас Петрович? Пире ытла темех кирлĕ мар, пире краҫҫын, тăвар, кăшт-кăшт тимĕр хатĕрсем, тĕрлĕ ăпăр-тапăр пулсан ҫитетчĕ-ха халь. Атту ытла пĕтсе ҫитрĕмĕр.

— Вăл ҫеҫ мар, пурте пулать, Павăл пичче,—ĕнентерӳллĕн татса хучĕ Тарас.—Халь пур таварсене те майĕпе туса кăларма тытăннă ĕнтĕ... Юлашки ик-виҫĕ ҫул хушшинче мĕн пулса пынине хăвăрах пĕлетĕр. Пĕтĕм вăй тăшмансемпе ҫапăҫнă ҫĕре кайса пычĕ. Шуткă мар вĕт—пирĕн ҫине вунă патшалăх ытла тапăнчĕҫ, а эпир пурĕпĕр хăваласа ятăмăр вĕсене... Пуриншĕн те—рабочишĕн те, хресченшĕн те пит йывăр пулчĕ вăл, эпир те фронтра сахал мар нуша куртăмăр, анчах та—мĕн тăвас тетĕн? Камăн ĕлĕкхине тавăрас килтĕр, камăн каллех урядникпе полицейски нухайккине ҫиесси килтĕр? Чăнах та, ĕлĕк ĕҫ ҫыннисен ĕнси ҫинче ларса пурăннисем вăл пурнăҫа тем пекех тавăрасшăн пулчĕҫ, анчах та сирпĕнчĕҫ вĕсем... Мĕн ĕнтĕ халь малалла? Хамăра тапăннă тăшмансенчен тасалтăмăр, вăрçă пĕтрĕ,—халь пурнăҫа юсаса ямалла ҫеҫ. Ҫак выҫлăх питĕ кансĕрлет те-ха пире, анчах ăна тӳсесси те нумаях юлмарĕ. Хуласенче заводсене йĕркене кӳртеҫҫĕ, эпир тыра ытларах тăвăпăр. Курăр акă, тепрер ик-виҫ ҫултан пурнăҫ еплелле пулĕ... Унтан малашнехи ҫинчен каламастăп халь.

— Аван калатăн эс,—терĕ Хăмăт, пуҫне хыҫса,—анчах пулассăн туйăнмасть вăл мана...

— Мĕншĕн?

— Ку таранччен пĕрмаях япăхса пытăмăр та-ха, ара. Ялта пĕр манерлĕ выльăх юлмарĕ. Юлашкинчен ҫак выҫлăх авса хучĕ.

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ, Тарас Петрович,—хушса хучĕ Павăл пичче.—Чăн сăмахăн суйи ҫук...

— Пĕтĕмпех пĕлетĕп,—терĕ Та-

рас—Анчах та мĕншĕн ун пек пулнине ăнланас пулать.

Унтан вăл ял çыннисене пĕтĕм çамрăк хĕрӳлĕхĕпе ăнлантарма тытăнчĕ. Патша вăрçи çĕршыва юхăнтарса яни çинчен, интервенци çинчен, ялти тăшмансем мĕнешкел чăрмантарни, республикăна хăтармашкăн çĕршыври пур вăя пухма кирлĕ пулни çинчен, çавăн пирки вăрçăллă коммунизм, мĕншĕн продразвёрстка тумалла пулни çинчен, малашне пурнăçа епле майпа юсаса пымалли çинчен каларĕ...

— Татах калатăп: иртнĕ йывăрлăхсем вĕсем пурте вăхăтлăха пулнă, вĕсем халь иртсе кайрĕç ĕнтĕ. Продразвёрсткăна пĕр çулталăк çурра яхăн каялла пăрахăçа кăларнă, çĕршывра суту-илӳ пуçланчĕ, заводсемпе фабрикăсем ĕçлеме тапратаççĕ... Пурнăçа çĕнĕрĕн пурăнма пуçлатпăр!

Вăл калаçнă хушăра килхушшине ял çыннисем пĕрин хыççăн тепри пухăнса пычĕç. Паллă мар, такам каласа çӳренĕ,—анчах та Тарас таврăнни çинчен пурте тенĕ пекех пĕлме ĕлкĕрнĕ. Арçынсем пычĕç ăна курма, хĕрарăмсем, çамрăк каччăсемпе хĕрсем, ачи-пăчи... Пурте пырапыра ал тытаççĕ. Ыттисем хушшинче Варук та пырса ал пачĕ.

— Чипер-и?—пĕр самах çеç каларĕ вăл, халь çеç мунчаран тухнă пек хĕрелсе кайса. Урăх нимĕн те каламарĕ, хĕрарăмсем хушшине кайса тăчĕ. Тарас та пĕр самантлăха нимĕнле мар пулса кайрĕ, Варукăн илемлĕ кĕлеткине пăхса илчĕ те, çынсем асăрхасран, куçсене часрах урăх еннелле пăрчĕ.

Калаçу тата чылай вăхăта тăсăлчĕ. Ял çыннисем пурин çинчен те пĕлесшĕн пулчĕç: вăрçă мĕнле пĕтнĕ, шуррисене епле хăваласа янă, хуласенче епле пурăнаççĕ, малашне хресченсене мĕн çăмăллăхсем пулмалла... Тĕпĕ-йĕрĕпех каларĕ Тарас, картина çине ӳкернĕ пекех кăтартса пачĕ малашне пурнăç епле пулассине. Чухăнсене, лашасăррисене — тĕрлĕрен льгота, кивçенле вăрлăх, машинăсем, — ăна валли юлташлăхсем, пулăшу комитечĕсем пулаççĕ. Кооперации урлă пысăк пулăшу илмелле... Питех те тинкерсе, ним шарламасăр итлерĕç ăна пухăннă çынсем, анчах иккĕленерех ĕненсе пычĕç вăл сăмахсене...

Унтан Тарас хăй ыйтса пĕлме пуçларĕ:

— Ну, хăвăр мĕнле пурăнкалатăр кунта? Мĕнле çĕн хыпарсем пур?.. Эп нимĕн те пĕлместĕп вĕт-ха.

— Мĕн çĕн хыпарĕ пирĕн...—терĕ Павăл пичче, чĕлĕмне кукăр пралукпа чакаласа.—Выçă ĕнтĕ пурте, мĕн урăх... Куратăн, пĕрин те çын сăнĕ çук.

— Вăл паллă ĕнте,—килĕшрĕ Тарас.—Ну, ытти енчен мĕнле? Пурнăç лăпкă-и халь? Пĕринче ман пата ку тăрăхра бандитсем алхасаççĕ, тесе çырнăччĕ. Халь епле?

— Халь те пур çав,—хулăм сасăпа мăкăртатса илчĕ Тяпук.—Çав Кăрмăш пăлхавĕ вăхăтĕнче пăшал тавраш туянса юлчĕç те, тек ашкăнаççĕ унпа.

— Хытах-и вара?

— Хытах çав. Кулленех илтĕнет: кунта лаша вăрланă, лере ĕне пуснă, кĕлет çаратнă... Хĕрарăмсем вăрман çывăхне те кайма хăраççĕ ĕнтĕ халь. Пĕр эрне каярах Мучаш вăрманĕнче, çултан инçе те мар, икĕ çамрăк хĕр ачана мăшкăлланă та алли-урисенчен çыхса пăрахса хăварнă... Пĕри намăса чăтайман вара, çав кунах çакăнса вилнĕ.

— Епле-ха апла? Чарма çук-им вĕсене?

— Чарасшăн та-ха. Анчах нумайăшĕ хăраççĕ. Хăш-пĕр милицисем хăйсем те вăрмантан аяккарах пăрăнса çӳреме тăрăшаççĕ, тет.

— Бандичĕсен нимрен хăраман пуçлăхĕ пур, тет, Махорка ятлăскер,

темле капкăна лексен те хăтăлать, тет.

— Пур халăхпа тăрсан, тытма пулать ăна, халăхĕ хăрать,—хушса хучĕ Тараспа юнашар тăракан пĕр çамрăк.

— Хăрăн!—кăшкăрса пăрахрĕ ăна Хăмăт.—Авă, Анаткасри совет председателĕ облава тунă та, вара Махорка ăна мĕн тунă, пĕлетĕн-и?

— Мĕн?

— Тепĕр куннех пĕтĕм çемйипе пусса тухнă. А эс калатăн... Чĕпĕ!

— Вĕсен кашни ялтах хăйсен çыннисем пур, тет. Çавăнпа тытма йывăр. Кăшт сас-хура пулсанах, кайса пĕлтереççĕ, тет.

— Агентсем ĕнтĕ.

— Ара çав...

Çынсем калаçнă хушăрах Тарас шухăшласа ларчĕ... Паллах, вăл бандитсем çара алăллă çынсене чылаях сиенлеме пултараççĕ. Пухăннă ĕнтĕ тĕрлĕрен дезертир пулнисем, уголовниксем, тахçан офицер пекки пулнисем,—пĕр сăмахпа каласан, пурнăç картинчен тухса ӳкнĕ çынсем. Ялсенче вĕсене кулак таврашĕсем пулăшаççĕ,—совета хирĕç восстанимĕн пулас пулсан—кирлĕ пулĕç, тесе шутлаççĕ вĕсене... Кун пирки кирлĕ çĕрте халех ыйту лартас пулать, ашкăнтарас пулмасть...

— Темĕн пек вăйлă ют патшалăх çарĕсене çĕнтернĕскер, вĕсенченех хăраса тăмăпăр-çке,—терĕ вăл юлашкинчен, халăх майĕпе саланма пуçласан.—Ĕçлеме кансĕрлеттермĕпĕр!

## IV

Энтрияльне тарăн çырма икке уйăрать. Çырман сулахай енче, ял вĕçнерех—икĕ хутлă пысăк çурт. Аялти хутне кирпĕчрен тунă, çӳлтине йывăçран. Хӳмисене варринчен çурнă юман пĕренесемпе тытнă, вĕсем çӳллĕ, йăпăр-япăрах сиксе каçас çук. Иртен-çӳренсем тĕлĕнсе кăна пăхса иртеççĕ ку „хула пек“ çурт çине: ытла та пурне те тĕреклĕ те чаплă тунă-çке!

— Лява таврашĕсен çакă...

Ĕмĕртен пуян пурăннă çак килхуçисем, уездчĕпех пĕлсе тăнă вĕсем çинчен. Ляви хăй темиçе арман тытнă, чăпта çаптарнă, çăмарта, панулми, çăм—тем те пĕр пухнă, килĕнче унăн пысăк лавка пулнă... Икĕ ывăлĕ сутуилӳ ĕçĕпе Атăл тăрăх тăвалла—Чулхулапа Рыбинска çити, анаталла—Аçтăрхана çити, чугун çулпа Мускавпа Питĕре çити çӳренĕ. Темиçе пар лаша, карта тулли выльăх, пилĕкултă тарçă усранă вăл. Уездри пуçлăхсем уншăн тăвансем пекех пулнă, тем тусан та Лявана хирĕç пыман, ун патĕнче, кирек те хăçан пырсан та, çăвартан каялла тухиччĕнех ĕçсе-çинĕ пулнă...

Çав тери пуйса, чапланса кайсан, Лява хăйне „чăваш патши“ пулатăп, теме пуçланă, дворян ятне сутăн илме тăрăшнă. Патшалăх Думине лекесси çинчен ĕмĕтленсе пурăннă. Анчах ĕмĕчĕ çитеймен унăн; тĕнче вăрçи тухиччен шăп çулталăк малтан вилсе кайнă. Питĕ хăвăрт пуçтарăннă вăл: каçхине таçти ярмаркăран таврăннă та, ирччен—хытса та выртнă. Ялти халлап тăрăх, вăл ярмаркăра ват пуçĕпех пĕрисенне йăйăр вăрланă пулнă. Лешсем хăваласа çитнĕ, питĕ хытă хĕненĕ, юлашкинчен, хыçалтан хулăпа йăкăрласа, тарантасĕ çине пăрахса янă.

— Ытла тăранма пĕлместчĕ-ха, тинех шалçи тулчĕ,—тенĕ ун пирки нумайăшсем, çăмăллăн сывласа илсе.

Анчах та „улмуççинчен улми инçе ӳкмест“ теççĕ. Унăн халăха çаратма ашшĕнчен пит ăста вĕренсе юлнă ывăлĕсем—Уртемпе Матви—çав çулпах пынă. Вăрçа каяссинчен вĕсем укçапа хăтăлнă, вара хĕрарăмсем тата вата та вĕтĕ çеç тăрса юлнă ялта чăн пуç пулса тăнă. Нихçан никама пă-

хăнмалла пулас çук пек тыткаланă хăйсене хăйсем. Мĕн чухлĕ куççулĕ юхтарттарнă пуль вĕсем тăлăх арăмсене, мĕн чухлĕ ĕçлеттернĕ пуль... Çур ял çĕрĕ вĕсен аллинче пулнă,— обозĕ-обозĕпе тырă ăсатнă вĕсем тĕрлĕ çĕрелле. Нумай пуйтарнă вĕсене вăрçă!

Февральти революцие вĕсем часах ăнланса илнĕ; Матвийĕ кăкри çине хĕрлĕ бантик çаксах кайнă вулăсри „хресченсен пуххине", мĕншĕн тесен Лява тавраш̆ĕ пеккисен пурнăçĕ улшăнман ун чухне.

Анчах та Октябрь тăвăлĕ хытă силленĕ вара вĕсене. Чăнах, вĕсем нумай япала пытарма ĕлкĕрнĕ, çапах та комбед вăхăтĕнче вĕсенне çĕр лава яхăн тырă, темĕн чухлĕ хаклă япаласем тиесе тухнă, икĕ кĕлет турттарса кайнă, выльăх-чĕрлĕхĕсене чухăнсене салатса панă, çиелтен контрибуци хурса тӳлеттернĕ. Кашкăрсем пекех шатăртаттарнă вĕсем хăйсен шăлĕсене, анчах нимĕн те тăвайман, çилле ирĕксĕрех шăнарма тивнĕ...

Тепрер çултан, Кăрмăш тăрăхĕнче кулакла-эсерла пăлхав тапрансан, Лява ывăлĕсем кашни самантрах обрезсем тытса сиксе тухма хатĕр тăнă, пупа чиркӳре амвон çинчен совета хирĕçле проповедьсем калаттарнă, хăйсем тарăхса пурăннă çынсене уççăнах юнама тытăннă, анчах ĕмĕчĕ каллех татăлнă вĕсен: пăлхав нумая пыман, ăна хытă путарса лартнă. Каллех шăла çыртса пусăрăнма тӳр килнĕ кусен.

Вăхăт шунă; уйăх хыççăн уйăх, унтан çулталăксем те иртнĕ. Советсем пĕтмен, республика хăйĕн тăшманĕсене аякран аякка хăваласа пынă, унтан пусĕпех хăваласа янă. Лява ывăлĕсене ку хытă кӳрентернĕ, анчах 1921 çулта выçлăх çитсе пуссан—чунĕсем çĕкленнĕ вара вĕсен. Сӳнме пуçланă шанчăк тепĕр хут çунатланнă:

— Пурĕпĕр выçăпа вилсе пĕтеççĕ...

Çур енне, хиресенче çулсем хуралса шывланма пуçланă вăхăтра, вĕсем патне кĕтмен çĕртен Уртем арăмĕн шăллĕ пырса тухнă. Вăл тĕнче вăрçи вăхăтĕнче унтер-офицер пулнă, февральти революци хыççăн кулаксен крепить тунă çĕрĕсемпе чиркӳ çĕрĕсене тытса илнĕ хресченсене персе вĕлерсе çӳренĕ. Октябрь хыççăн ăна пурте çухалнă тесе шутланă пулнă, анчах вăл пĕр складран хысна япалисене вăрласа сутнăшăн тĕрмере ларнă-мĕн. Халĕ, пĕр хуларан тепĕр хулана илсе кайнă чух, конвойран тарнă та—йыснăшĕсем патне çитсе ӳкнĕ.

Пулштух самогонпа çур витре кăрчама кутĕнче вĕсем тахçанхиченех çын илтмелле мар мăкăртатса ларчĕç. Иртнĕ вăхăтсене шеллесе аса илчĕç, хальхи çинчен шăл витĕр калаçрĕç... Иртнийĕ çинчен калаçнă чух, чылаях ӳсĕрĕлнĕ унтер сифилис пирки çĕтсе ларнă сассипе юрласа ячĕ:

— Эх, на плечах погоны,
На грудях кресты...

Ăна малалла юрлама памарĕç, чарса лартрĕç, вара вăл сиксе тăчĕ те, кăкрине çапса кăшкăрма тапратрĕ:

— Василий Разумова пĕтертĕмĕр, терĕç пуль вĕсем! Нет, шалишь, брат, ăна часах пĕтереймĕн!.. Вăл чĕрĕ-ха, пурăнать. Кăтартĕ-ха вăл хăйне. Тавăратăп, пуриншĕн те тавăратăп!.. Мана чинсăр хăварнăшăн та, тĕрмере тытса усранăшăн та, аттен пурлăхне туртса илнĕшĕн те... Пирĕн пеккисем пур-ха Российăра. Эпир пухăнатпăрах!.. Часах акă вĕсене пурне те вĕлерме, çунтарма пуçлатпăр... Манăн хамăн çар пулать... Полк! А эп—полковник пулатăп... Анчах та эп халь Разумов мар, эп халь—Махорка...

Унтер-офицер тата темле ăнланмалла мар сăмахсем кăшкăрса, çил ар-

манё пек хаlaçланчё, пёр енчен тепёр енне суланма пуçларё те—тӳнчё. Юлашки вăхăтра ним чёнмесёр ларнă Лява ывăлёсем ăна, аллипе уринчен тытса, алăк патёнчи сак çине кайса пăрахрёç.

... Махорка полковник пулаймарё, анчах та çёршыв типе пуçласан, Лява ывăлёсем кăтартнипе унта-кунта çӳресе, хăйне тавра пёр ушкăн вăрăхурах пухрё. Вара вăл Сăр вăрманёнче, этем çӳремен вырăнта „штаб" туса, таврари халăха терроролама тытăнчё. Малтан иртен-çӳренсене çаратрё, выльăхсене тыта-тыта пусрё, унтан унăн „молодчикёсем" кашни каçах тавраи ялсем çине тапăнма тытăнчёç. Çыхăнусем кулленех вăйланса пычёç вёсен; советсем çине шăл хăйракансем кашни ялтах пурмён... Çаратасса та çавсем кăтартса панă тăрăх çаратнă Махорка банди.

Пёр уйăх хушшинче унран пётём тавра хăракан пулса çитнё. Бандăна хирёç янă милици отрячё те ним те тăвайман, вёсенчен темиçе çыннине бандитсем персе пăрахнă, ыттисем аран хăтăлнă... Пёррехинче çывăхри ялсем облава тума тытăннăмён, анчах бандитсем пёр-икё граната пăрахсанах, хёç-пăшалсăр халăх пăрça пекех саланнă. Облавине пуçарса янă ял совет председательне бандитсем тепёр икё кунранах пётём кил-йышёпех чиксе пăрахнă.

Нумай кёлетсем пушатрё Махорка, темён чухлё лаша вăрласа тарса, тёрлё çёрелле ăсатрё, нумай выльăх пусса çирё, иртен-çӳренсене çаратрё, хёрарăмсене пусмăрларё. Анчах ялсенче нумайăшё Махоркăран шар курса вёри куççуль юхтарни çине теприсем сивё тарăхупа пăхса тăчёç.

— Çапла кирлё-ха сире, кёлмёççем... Чимёр акă, ку çеç те мар пулё-ха!

Çапах та вёсем нумаях савăнса пурăнаймарёç. Милицисен отрячё таврăннă хыççăн тепёр вунă кунран бандăна тытмашкăн уездран лайăх хёç-пăшалланнă рота янă. Вара çав рота, пёр-ик кун хушши вăрман тăрăх çӳресе, банда йăви тёлнех пырса тухнă та ăна пуçёпех аркатнă. Бандăн пысăк пайне вырăнтах пётернё, нумайăшне çавăрса илнё, вёсен „штабёнчен" темён тёрлё пурлăх тупса турттарса кайнă.

Анчах Махоркине хăйне тытайман...

## V

Каçалапа,—амăшне çитеркелесе ёçтернё хыççăн (çивё пирки пулас—вăл паян кăштах самайланчё), Тарас килкарти алăкне тӳрлетме тухрё. Вăл ёçленё çёре икё çамрăк—Микишпа Исай пырса тăчёç. Вёсем иккёшё те—пёр çулсенче, Тарас çара кайнă чухне ача кăна пулнă, анчах ку хушăра нумай ӳснё, тёреклённё, вёсене çитённё çын сăнё кёнё. Ют çёрте курсан, паллас та çук.

— Вăй патăр...

— Спасибо.

— Тӳрлетес терён-и?

— Ара, ытла та юхăнса выртатьçке...

Çамрăксем Тараса ал пачёç те, ун çывăхнерех пырса, курăк çине ларчёç.

— Эпир сан патна каласса ларма килтёмёр...

— Пит аван... Ман хамăн та каçхине кам патне те пулин кайса ларас ёмёт пурччё-ха...

— Акă мён, Тарас,—терё Микиш ятлă çамрăкё, кăшт тăхтасан,—эп паян вулăсра пултăм. Манпа волкомри Арасланов, леш Треньккасси ачи—калаçрё унта. Анчахрах хуларан вёренсе килнё вăл. Ялта пурнăç мёнле пыни, çамрăксем мён туни çинчен ыйтса пёлчё. Унтан РКСМ ячейки тумашкăн çамрăксене пухма хушрё. Ытти ялсенче РКСМ-ра тăракан нумай, тет, сирён кăна çук, тет... Эс килнине илтсен, юриех малтан санпа

каласса пăхас терĕм. Хамăр эпир пит чухласах каймастпăр-çке-ха, çав касать. Мĕнле шутлатăн эс, май килĕши пирĕн?

Тарас алăка тăратса лартрĕ те тумĕ çумне çыпăçнă тусан-турпаса силлесе тасатрĕ. Унтан шлĕмне тӳрлетсе тăхăнчĕ те:

— Пит кирлĕ ĕç тапрататăр, юлташсем,—терĕ.—Кун çинчен тĕплĕн каласас пулать. Айтăр-ха, кĕрер...

Пӳртре вара вăл комсомол мĕн иккенне, вăл мĕн тума кирли, унăн мĕн-мĕн тумалли, уйрăмăнах ялта мĕн ĕçлемелли çинчен пит тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Микишпа Исай ăна тинкерсех итлесе ларчĕç.

— Çамрăксене кирлĕ таран пухма пулать-и сирĕн шутпа?—ыйтрĕ Тарас юлашкинчен.—Малтанлăха пĕр пилĕкултă çын пулсан та çитет пире.

— Ун чухлĕ тупăнать, — терĕ Исай,—вăл ним те мар.

— Тата çакна астăвас пулать, юлташсем,—асăрхаттарчĕ Тарас.—Пулипулми, унталла-кунталла сулăнакансене пухма юрамасть. Пирĕн халь чăн малтан чухăн ачисене пухма тăрăшас пулать. Шанчăклă çынсем, хамăр çынсем, пуянсен танатине лекменнисем пулччăр... Эпир ача вăййи мар, çирĕп ушкăн тăватпăр, унăн пĕтĕм ял пурнăçне ертсе пымалла пулать.

— Пире ертсе пыраканĕ эс пулатăн ĕнтĕ...

— Унта курăнĕ, туман тиха пилĕкне малтанах хуçмаççĕ. Малтан ячейкине тăвас пулать. Ну, кам-кам пур-ха сирĕн шутпа?

Микиш шутлама тытăнчĕ:

— Калăпăр, эпĕ—пĕрре, Исай—иккĕ, эсĕ ху—виççĕ... Унтан Арçукпа Шăнкăрч кĕме пултараççĕ...

— Леш енчи Коля,—хушса хучĕ Исай.

— Тĕрĕс, Коля... тата кам?

— Антун...

— Çук, унпа ĕç тухас çук, ытла хăравçă...

— Малтанлăха çитет те,—чарчĕ Тарас.—Тăруках нумая хапсăнмăпăр. Кайран хăйсемех килме пуçлĕç. Пĕрик хĕр ача пулсан аванччĕ те...

Микишпа Исай пĕрне пĕри куçран пăхса илчĕç. Микиш пуçне сулчĕ:

— Хĕрсем тупăнмаççĕ пуль... Хăюсăр халăх. Сăмах-юмах тухасран хăрĕç, тем...

— Малашне хутшăнтарасах пулать вĕсене. Пĕлетĕр-и, Ленин хĕрарăм çинчен мĕн каланă? Кашни кухаркăн патшалăха тытса тăма пĕлмелле, тенĕ. Халăх хушшинчи ĕçе хутшăнтарса пымасан, ăçта вĕренччĕр вĕсем?

— Пĕрре пур та ĕнтĕ...—сас пачĕ Исай.

— Кам?

— Учительница.

— Э-э,—аллипе сулчĕ Микиш.—Темле, пули-пулмишĕнех макракансker вăл, усси пулмасть пулĕ унтан. Кирлĕ мар...

— Ну, юрĕ эппин,—терĕ Тарас.—Хăçан пухăнса калаçăпăр эпир вĕсемпе? Ĕçе тытăнатпăр пулсан, вăраха ярас марччĕ...

— Ыранах пухма пулать. Каçхине.

— Ăçта?

— Хуть те ăçта. Каçпа пушă вĕт.

— Систерĕр эппин. Кусемпе каласса татăлсан, кайран пур çамрăксене пухăпăр.

Сăмах татăлчĕ. Тарас чĕлĕм чĕртсе ячĕ. Микишпа Исай тухса кайма ура çине тăчĕç.

— Чимĕр-ха, ан васкăр,—пуçĕпе сак енnelle сулчĕ Тарас,—ман тата ыйтса пĕлмелли пур. Микульрен ыйтрăм-ыйтрăм, йĕркине тупаймарăм. Советра кам-кам халь?

— Советра пит „чаплă" халăх-ха унта,—терĕ Микиш, каллех сак çине ларса.—Председателĕ—Каçăр Куçма, секретарĕ—Иливан. Кирлĕ чух

нихҫан та тупма ҫук вара вӗсене. Таҫта ҫӳреҫҫӗ...

Тарас пуҫне пӑркаласа илчӗ.

— Ну, тупнӑ та вара халӑх! Мӗнле пуҫпа суйланӑ ара вӗсене? Каҫӑр Куҫма ӗлӗк урядник пулнӑ мар-и вӑл?

— Илтмен...

— А Иливанӗ тахҫантанпах уезчӗпе паллӑ жулик. Кам кӑна пулман пуль вӑл, судпа-темпе муталашса мӗн чухлӗ ҫынна макӑртнӑ пуль! Революци хыҫҫӑнах ялта совета хирӗҫ кӑшкӑраканни самӑй ҫавӑ вӗт, а халь — пӑх та кур! — хӑй совет влаҫӗ пулса ларнӑ. Ай-ай... Ӑнран тухса каймалли ӗҫсем тӑватӑр иккен эсир кунта.

— Мӗн тӑвас тетӗн, пӗлекен ҫынсем ҫук та, пуҫ ҫине хӑпарса лараҫҫӗ ҫав...

Тарас пирусне лутӑркаса пӑрахрӗ те каллӗ-маллӗ утма тытӑнчӗ.

— Кун пек „власть" пулсан, ял пурнӑҫӗ, паллах, часах малалла каяс ҫук. Мӗн, вӗсем халӑхшӑн тӑрӑшакан ҫынсем-и? Вӗсемшӗн пулсан, хуть те паян пурте вилсе пӗтчӗр.

— Ку тӗрӗс вара,— терӗ Микиш.— Акӑ, ытти ялсенче выҫҫисене валли тунӑ столовӑйсем чиперех ӗҫлеҫҫӗ, йӗркеллех ҫитереҫҫӗ, пирӗн пур — кашни кун харкашу. Чип-чипер ҫӑнӑхранах тем шуйттанла ҫӑкӑр туса параҫҫӗ. Апачӗ те ним манерӗ ҫук — темскер, мӑшкӑлтӑк шывӗ...

— Кам асли унта?

— Мамун, Лява кӗрӳшӗ...

Тарас лач! сурчӗ.

— Хысна паракан апата та пуянсемсӗр пӗҫерсе ҫиеймеҫҫӗ. Эх, халӑх!

— Халӑха апат ҫитерме унӑн пӳрчӗ аслӑ, терӗҫ пулас пухура...

— Вӗсен пӳрчӗ аслӑ та — пырӗ те аслӑ ҫав! Мӑннӑн ҫӑтаҫҫӗ!... Столовӑйӗ уҫӑлнӑран вара пӗрре те пулин тӗрӗслесе пӑхнӑ-ши?

— Илтмен ӑна. Ахаль халӑх питӗ кӑмӑлсӑр...

Тарас сӗтел пуҫне пырса ларчӗ:

— Итлӗр, юлташсем. Пирӗн часрах пӗр ҫӗрелле чӑмӑртанас пулать. Унсӑр пурнӑҫа юсаймастпӑр эпир. Каллех калатӑп — Каҫӑр Куҫмасемпе, Иливансемпе нумаях малалла шӑвайманпӑр...

Микишпа Исай тухса кайрӗҫ.

„Ку каччӑсемпе ӗҫ тума пулать, тӗрӗс ҫул кӑтартмалла ҫеҫ вӗсене,— шухӑшларӗ Тарас. — Пуянсем илӗртнӗ хыҫҫӑн каяс ҫук кусем, тутлипе йӳҫҫине уйӑрма пӗлеҫҫӗ курӑнать..."

Урамран Микуль хашкаса чупса кӗчӗ.

— Пичче, сана валли ҫыру илсе килтӗм!

— Мӗнле ҫыру?

— Курӑн унта...

Микуль пиччӗшне лутӑрканса пӗтнӗ хут татки тыттарчӗ. Пӳртре чылаях тӗттӗмленнӗ пирки, ку тӗлӗнмелле ҫырӑва вулама Тарас чӳрече патнерех пычӗ. Хут ҫине чалӑш-тӗлӗш саспаллисемпе темиҫе сӑмах ҫеҫ ҫырнӑ иккен:

„Ман сана каламаллисем нумай. Кӗҫӗр пирӗн тӗле пыр. Варук."

Тарас ҫемҫен кулса илчӗ те, алӑк патӗнче ура салтса ларакан Микуль еннелле ҫаврӑнчӗ:

— Кам пачӗ сана ку хута?

— Хӗех... Эс пӗлместӗн пуль-ха, пичче, эсӗ ҫук чухне вӑл манран пӗрмаях ыйтатчӗ: пиччу ҫыру ямарӗ-и, мӗн ҫырать, хӑҫан килет, тетчӗ. Вӑл сана качча пырасшӑн пулмалла.

— Ҫитӗ сана, ытлашши калаҫатӑн! — чарчӗ ӑна Тарас.— Ав, анне валли шыв вӗрет те — ҫитер.

— Мӗн пулать вара апла каланӑшӑн?— кӑмӑлсӑр пулчӗ Микуль.— Эп анчах мар, пурте ҫапла калаҫҫӗ. Пӗрре анне те каларӗ...

— Ну, юрӗ, юрӗ. Ту мӗн хушнине.

Тарас, çийӗнчи тумне тӳрлетсе, пиçиххине хытӑрах çыхрӗ, те килӗнчен тухса утрӗ.

VI

Çуркаç тӗлнелле çенӗк алӑкне шаккани илтӗнчӗ. Нумаях пулмасть сывӑрма выртнӑ Лява Уртемӗ вырӑн çинчен пуçне çӗклерӗ те, темиçе самант сывламан пек пулса итлесе тӑчӗ. Алӑкран каллех хуллен кӑна шакка пуçларӗç.

— Кам вӑл?— ыйтрӗ Уртем çилӗпе.

— Эпӗ, уç-ха часрах,— илтӗнчӗ алӑк хыçӗнчен.

— Кам эс?

— Махорка çынни...

— Ятна кала?

— Пӑшатан... Ниушлӗ паллаймастӑн, Уртем Лявонч? Уçсам хӑвӑртрах.

Уртем тӑчӗ те, алӑка уçса, кӗтмен хӑнана çенӗке кӳртрӗ. Сентре çинчен шӑрпӑк тупса çутса пӑхрӗ. Ку чӑнах та Пӑшатан иккен — Махорка помощникӗ. Çара пуçӑн, хура çӳçӗсем арпашса кайнӑ, кӗпи лапӑртанчӑк, сылтӑм пӗççи çинче шалаварӗ тӑршшипех çурӑлса тухнӑ.

— Ма килтӗн?— кӑмӑлсӑр ыйтрӗ Уртем, тем ырӑ маррине туйса.

— Махорка ячӗ...

— Атя, кӗр эппин пӳрте.

Пӳрте кӗрсен Уртем лампа çутрӗ те, сӗтел çине чавсаланса ларса, Махорка çынни çине каллех сиввӗн, шӑтарасла пӑхрӗ. Тӗрӗссипе каласан, йӑлӑхтара пуçларӗç ӑна бандитсем: чӑрмавӗ нумай, усси сахал.

— Ну, кала, мӗн кирлӗ?

— Пӗтрӗмӗр ача эпир, Уртем Лявонч,— куççене мӑчлаттарса кала пуçларӗ Пӑшатан.— Кӗтмен çӗртен аркатса тӑкрӗç...

— Епле апла?—кӑртах сикрӗ Уртем.

— Çаплах вӑт... Аркатрӗç. Виçӗмкун каçхине эпир виççӗн — Махорка, эпӗ тата Чалӑшкуç Мӑн-Хатнара тухса кайрӑмӑр. Унта Хветле ятлӑ пӗр хусах арӑм пур. Ну ӗнтӗ, чиперех çитрӗмӗр, çирӗмӗр, ӗçрӗмӗр, Хветле тата ик арӑм илсе пычӗ. Пит веççолӑй çӗр каçрӑмӑр. Ун пек, кун пек пуласси асра та пулман.

Пӑшатан чарӑнчӗ те пырне тытрӗ.

— Итле-ха, Уртем Лявонч, турӑ пул — пӗр черкке пар, шутсӑр ӑш çунать...

Уртем чӑлантан пуçланӑ çур пулштухпа чей стаканӗ тата хӑпарту татӑкӗ илсе тухрӗ.

— Ӗç!

Пӑшатан пӗр стакан туллиех ярса ӗçрӗ те, малалла калама тытӑнчӗ.

— Тул çутӑлас умӗн лашасем çине утлантӑмӑр та каялла вӗçтертӗмӗр çеç. Вӑрмана çитсен, ерипен юрлакаласа уттартӑмӑр. Хамӑр пата çитесси нумаях та юлманччӗ — пӑшал сассисем илтӗнме пуçларӗç. Чухласа та илме çук — таçтан пересçӗ... Малта та, кайра та, пур енче те! Манпа юнашар пыракан Махорка ним шутласа тӑмасӑрах чӗлпӗрне туртрӗ те, ӑйӑрне тӳрех малалла сиктерчӗ. Эпир — ун хыççӑн. Пӗр уçланкӑна ыткӑнса тухрӑмӑр кӑна—сасартӑк йывӑççем хушшинчен пирӗн еннелле ручной пулемёт шатӑртаттарма тапратрӗ, тӗмӗсем хыçӗпе салтаксем чупни курӑнчӗ. Махорка, ӑйӑра чарса ик ура çине тӑратрӗ те, каялла çаврӑнса пӗрӗхтерчӗ. Эпир те ун хыççӑн вӗçтертӗмӗр. Ну, тартӑмӑр та вара... Пульӑсем хӑлха çуммипе вжи-и, вжи-и!.. туса иртеççӗ, кӗç лекет, кӗç вилетпӗр, тесе пыратӑп. Темле майпа, ни мана, ни Чалӑшкуçа лекмерӗ, анчах та Махоркӑна сулахай пӗççинчен лекнӗ иккен... Çапах та — çирӗп вӗт! — пӗр-ик çухрӑм ытла ларса пынӑ вӑл, унтан тин, юн кайса аптранипе сулӑнса кайса, пӗр

шĕшкĕ тĕмĕ ҫине кĕрсе ӳкрĕ. Айăрĕ малалла тапса сикрĕ. Эпир, хамăрăн вĕриленсе кайнă лашасене аран чаркаласа, ун патне чупса пытăмăр. Вăл вилнĕ ҫын тĕслех пулса кайнă, аран сывласа выртать...

Пăшатан типсе ларнă пырне йĕпетме тата тепĕр ҫур стакан тултарса ĕҫрĕ.

— Часрах, кĕпе аркине ҫурса, суранне ҫыхкаларăмăр та, аллисемпе урисенчен тытса, чăтлăх ăшнелле ҫĕклесе кĕрсе кайрăмăр...

— Лашисем тата?

— Тарнă. Каҫалапа тавăрнса пăхрăмăр — тупаймарăмăр...

— Кайран мĕн пулчĕ?

— Таҫта ҫитиех кĕрсе кайрăмăр эпир. Пăшал сассисем ҫаплах чарăнмаҫҫĕ. Пĕрре ҫывхарса килеҫҫĕ, тепре аяккарах каяҫҫĕ. Чун юлмарĕ; пирĕн пата пырса тухассăн туйăнчĕ. Ну, тупнах пулсан, чĕррĕнех парăнмастăмăр ҫав пурпĕрех. Унтан ик талăка яхăн ниҫта хускалмасăр выртрăмăр чăтлăхра, Хветле патĕнчен Чалăшкуҫ икĕ пулштух чиксе тухнă-мĕн те, Махоркăна ҫавăнпа ҫеҫ усрарăмăр. Темиҫе ҫăвар сыпать те — пĕлми пулса ҫывăрать, сыпать те ҫывăрать. Ыйхă витĕр аташать хăй, тем те каласа вăрҫать, командăсем парать.

— Кайран ăҫта кайрăр?

— Каҫ пуличчен вăрман хĕррине тухса выртрăмăр. Ҫĕрле Махорка кунта ҫитсе ӳкесшĕнччĕ, анчах суранлă ури ытла ыратнипе, кивĕ утар пӳртне вырнаҫмалла пулчĕ. Вара мана сан патна ячĕ. Патрон парса яма хушрĕ, тата укҫа... Кам пĕлет, тен урăх ҫĕрелле тармалла пулать-и, терĕ. Эсĕ пĕркун килсе панă хатĕрсене сутрăн пуль вĕт, Уртем Лявонч?

— Сутайман-ха.

— Эх, халь пирĕн тупра та нумайччĕ! Илсе кайрĕҫ пуль ĕнтĕ отрядсем...

Уртем стакана пушатса лартрĕ.

— Апла-ха эппин сирĕн пурнăҫсем...

— Ҫапла ҫав.

— Ни унталла, ни кунталла эппин? Хăй мĕн тума шутлать-ха малашне?

— Парăнмастăп, тет. Ҫĕнĕрен вăй пухатăп та каллех ҫĕмĕрме пуҫлатăп, тет. Анчах... — Пăшатан пуҫне усрĕ. — Усси те пулать, тем... Эп хам та... пустуй ҫыхлантăм пулмалла... Мĕн чухлĕ суд тунине лармаллаччĕ те, ҫур султан тухаттăмччĕ... Халь каялла таврăнма та май ҫук ĕнтĕ...

— Но! Кун пек калаҫас йăлана пăрахас пулать, — сасартăк сассине хăпартрĕ Уртем. — Хамăра шар кăтартса кӳрентернисене тавăрса пĕтермен-ха эпир! Чим, вăхăт килĕ...

— Мана никам та кӳрентермен. Эп хам...

— Ҫитĕ! — сĕтел ҫине ҫапса илчĕ Уртем.— Атя, вĕҫтер каялла. Патрон мĕн чухлĕ кирлĕ?..

— Пĕр виҫҫĕр штук.

— Укҫа тата?

— Пĕр-икĕ миллион.

— Ҫимелли илсе каймастăн-и?

— Вăл та кирлĕ...

Пурне те хатĕрлесе ҫитерсе, ҫурăм хыҫне кутамккаласа ҫаксан, Пăшатан пулштухри юлашки самогона ярса ĕҫрĕ те, татах ларчĕ.

— Итле-ха, Уртем Лявонч,— терĕ вăл каштах ҫыхланакан чĕлхепе.— А манăн каймалли инҫе вĕт, сахалтан та пĕр вуникĕ ҫухрăм пур. Пĕр-пĕр лаша тупса пулмасть-ши, э?

— Лаша?

— Лаша ҫав, утланса кайма... Наччас ҫитеттĕмччĕ эпĕ унпа. Тата халăхĕ усалланса кайрĕ,— нисашто тытма пултараҫҫĕ. Калама мантăм эп сана: халь кунта килнĕ чух та Мăнъял ыраш пуссинче иккĕн чупрĕҫ ман хыҫран. Волĕ-неволĕ ик хутчен персе хăвармалла пулчĕ... Ăҫта тупса утланас-ши?

Уртем пӗр вӑхӑт шухӑшза кайса тӑчӗ. Унтан пуҫӗпе урам еннелле кӑтартрӗ:

— Ҫырма леш енче, уй хапхинчен анатарах, виҫҫӗмӗш киле кӗрсе пӑх-ха... Ҫавсен лаша килтех пулмалла, арӑмӗ каҫ пулсан тин таҫтан таврӑнчӗ. Анчах та асту, хуллен. Килкартине кӗме анкарти енчен алӑк пур унта. Тем пулсан — эп сана курман, илтмен, палламастӑп. Хӑвах пӗлетӗн...

— Ну, කаларӗ тата! — терӗ хӗрсе кайнӑ Пӑшатан, аллипе сулса.

— Махоркине кала: ҫанталӑк лӑпланиччен ан шавлатӑр, ку яхӑнта пуӑнма хамӑр патра та вырӑн тупӑпӑр.

— Юрӗ.

VII

Тарас урам тӑрӑх тӑвалла хуллен кӑна шӑхӑркаласа утрӗ...

Пӗркуннехи каҫхи пекех — урамра шӑп, ним сас-чӗв те ҫук. Ҫынсем каҫ пулнӑ-пулманах ҫывӑрма кӗрсе выртнӑ курӑнать. Тарас хурал пӳрчӗ патӗнчен иртнӗ чух пӗр хӗрарӑм ҫухалса кайнӑ путеке хӑваласа кайнине курчӗ ҫеҫ, урӑх никам та тӗл пулмарӗ ӑна.

„Мӗн калать-ши ӗнтӗ ку мана?" — шухӑшласа пычӗ вӑл Варук ҫинчен.

Варуксен килӗ — ял хӗрринчех, уничерен — виҫҫӗмӗш, лупашкаллӑрах вырӑнта ларать. Пӳрчӗ умӗнче — пӗчӗкҫеҫ сад, унта Варукӑн ӗҫчен ашшӗ-амӑшӗ чие йывӑҫҫисем, акаци, сирень лартса тултарнӑ. Хапхи, картисем, ҫурт-йӗрсем — пурте йӗркеллӗ вӗсен, пурне те лайӑх шухӑшласа тирпейлӗ тунӑ. Варуксен ашшӗне, хуҫалӑха тытса пыма пӗлнӗшӗн, ял йышӗ яланах ырланӑ...

Тарас юриех урамӑн сылтӑм енӗпе пычӗ. Виҫ-тӑват кил урлах вӑл Варуксен лаҫӗ пусӗнче такам ларнине курчӗ.

„Кӗтет пулас..."

Ку чӑнах та Варук иккен. Тутрине каялла ҫыхнӑ, хулпуҫҫинчен сӑхман уртса янӑ, мӑйӑр катса ларать.

— Ырӑ каҫ пултӑр, — ал пачӗ ӑна Тарас.

— Килех... Васкамастӑн пулсан — лар.

— Васкамаллиех ҫук-ха...

Тарас Варукпа юнашар каска ҫине ларчӗ.

— Мӑйӑр ҫиетӗн-и? — ывӑҫласа пачӗ Варук.

— Ҫисе пӑхас...

Пӗр-ик минут хушши ним те шарламарӗҫ вӗсем. Пӗрне пӗри нумай вӑхӑт курмасӑр пурӑнсан, яланах ҫапла пулать вӑл: каламалли нумай, анчах та нимрен пуҫлама пӗлместӗн...

— Ну, Варук, каласа кӑтарт, мӗнле пурнатӑн? — аран пуҫларӗ Тарас, епле те пулин сӑмах хускатас тесе...

— Мӗнле пурӑннӑ пултӑр? Ҫаплах. Ӗҫленӗ, ҫинӗ те ҫывӑрнӑ. Унта-кунта питех тухса ҫӳремен, ҫынсемпе пит хутшӑнсах кайман.

— Ҫыру ҫырма ма пӑрахрӑн ман пата?

— Ара, ху текех пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре куҫса ҫӳрерӗн те, адрессене пӑтратса ятӑм эп. Ҫынсенчен ыйтма аван мар пулчӗ.

— Эп сана качча кайнӑ тесе.

— Теме кирлӗ пуль пит... Ыйткалакансем кӑчухве ахаль те нумай. Пӗччен хырӑма та тӑрантараймастпӑр та.

— А вӑл яланах апла пулмасть вӗт. Тӑхта акӑ, пурнӑҫ епле юсанса кайӗ...

— Юсансан тем пекчӗ. Атту шалт йӑлӑхтарса ҫитерчӗ ку ҫити-ҫитми пурнӑҫ. Эсир, таҫта аякра ҫӳресе, ӑна сиссех те каймарӑр пуль, — кунта пит те сисӗнчӗ вӑл.

— Эпир сиртен те ытларах тӳсрӗмӗр пуль, тусӑм, — терӗ Тарас, хӑй

сисмесӗрех Варук аллисене тытса.— Виҫшер кун ҫимесӗр те, икшер уйӑх кӗпе-йӗм улӑштармасӑр та, эрни-эрнипе ура типӗтмесӗр те пурӑннӑ. Кашни кун вилӗм куҫӗнчен пӑхнӑ, вилӗм пирӗнпе юнашарах ҫӳренӗ...

— Ара, вӑл апла пуль те ха...

— Ҫавӑн пек чухне вара килти пурнӑҫ шутсӑр аса килетчӗ. Ашӑ пӳрт, вӗри апат, тӑвансем, паллана ҫынсем... Сана та аса илеттӗм час-часах...

Тарас Варук аллине чӑмӑртарӗ те, ун куҫӗнчен пӑхрӗ.

— Чӑн калатӑп.

Варук нимле мар пулса кайрӗ, ҫӗрелле пӑхрӗ.

— Эп те яланах аса илнӗ...— терӗ вӑл хуллен.

— Уйрӑлнӑ чух калаҫнисене манмарӑн-и?

— Ма манас... Эпӗ ҫавна асра тытса ҫеҫ пурӑнтӑм. Леш хӗлте ҫураҫсах ҫитернӗччӗ мана аттесем, эп ним тусан та каймастӑп, терӗм те, вара килме пӑрахрӗҫ...

Вӑл пуҫне Тарас еннелле ҫавӑрчӗ. Тарас сылтӑм аллине унӑн хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ. Нимӗн те шарламарӗҫ,— ма тесессӗн, сӑмахсӑрах пӗтӗмпех паллӑ пулчӗ. Виҫӗ ҫул иртнӗ,— вӑл хушӑра нумай шыв юхнӑ, темӗн тӗрлӗ улшӑну та пулма пултарнӑ, анчах та вӗсен хушшинче нимӗн те улшӑнман иккен. Виҫӗ ҫул каялла. ҫакнашкалах ҫурхи каҫ, вӗсем ҫак каска ҫинчех пӗр-пӗрин ӑшшине туйса, алӑран ал тытса ларнӑччӗ, пӗрне пӗри манас ҫукки ҫинчен калаҫнӑччӗ,— ак халь каллех пӗрле, юнашар, ун чухнехи пек кӑмӑлсемпех, пӗр кунлӑх та уйрӑлман пекех...

— Аннӳ мӗнле?—ыйтрӗ Варук, чылай чӗнмесӗр ларсан...

— Паян кӑшт самайланчӗ пулас-ха.

— Эп ӑна тем пекех кая-кая пулӑшасшӑнччӗ, анчах ҫынсем кулас-ран хӑраса тӑтӑм. Пӗлетӗн вӗт, ялта ҫав тери усал чӗлхесем пур.

— Майӗпе сывалать пуль-ха, выҫӑпа аптӑраса ҫитнӗ вӑл. Сирӗн епле, пурте тӗрӗс-и?

— Тӗрӗсех-ха.

... Сӑмах хыҫҫӑн — сӑмах, шухӑш хыҫҫӑн — шухӑш; Тараспа Варук нумайччен ларчӗҫ шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса, пӗрне пӗри харпӑр хӑй ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпех каласа кӑтартрӗҫ. Тавра-ра ним хусканми шӑплӑх тӑчӗ, улӑх енчен майӗпе ирхи нӳрлӗх туртӑна пуҫларӗ, анчах вӗсем ҫаплах калаҫрӗҫ... Тарас пулас пурнӑҫ ҫинчен, хӑйӗн ӗмӗчӗсем, шухӑшӗсем ҫинчен каларӗ, унӑн пур сӑмахӗсем те Варука тем пекех кӑмӑла кайрӗҫ, чӗри патнех пырса вырнаҫрӗҫ. Ҫак каҫхине вӑл ӑна ӗлӗкхинчен те вӑйлӑрах, темле ӑшӑ, тӑванлӑ юратупа юратрӗ.

«Епле аван, ӑслӑ вӑл...»

Варуксен ҫенӗк алӑкӗ чӗриклетрӗ. Тахӑшӗ тула тухрӗ пулас.

— Кӗрес пулать, нумай пулчӗ,— терӗ Варук.

— Кӑштах лар ӗнтӗ,— хулӗнчен тытрӗ ӑна Тарас.

— Ыран та ларма пулать вӗт...

— Вӑл особӑ...

Ҫак вӑхӑтра килхушшинче сасартӑк Варук ашшӗн сасси илтӗнчӗ.

— Кам ку? Мӗн тӑван кунта?!

Ӑна хирӗҫ чӗнекен пулмарӗ, анкартинелле тухмалли алӑк халтлатса хупӑнчӗ ҫеҫ.

— Стой!.. Хурах! Краву-ул! — кӑшкӑрса ячӗ Варук ашшӗ.— Тытӑ-ӑр!..

Таҫта йытӑ вӗрсе ячӗ. Хурах кӑшкӑрнине илтнӗ-илтмен, Тарас каска ҫинчен вӑшт кӑна тӑчӗ те, карта урлӑ пӗррех сиксе каҫса, уҫӑ алӑкпа Варуксен анкартине чупса тухрӗ. Самантранах, вӑл паранкӑ кассисем хушшипе чупакан Варук ашшӗпе танлашрӗ те:

— Ӑҫта?—тесе кӑшкӑрчӗ.

— Ав, çырманалла тарчĕ...

Урăх нимĕн те чĕнмерĕ Тарас, арăслан пекех малалла ыткăнчĕ. Варук ашшĕ таçта, хыçалта, хурах кăшкăрса юлчĕ...

Çырма хĕррине çитеспе Тарас карта урлă темле мĕлке йăванса каçнине курчĕ.

„Çавă! Пурĕпĕр тытатăп!"— шухăшларĕ те вăл, çырманалла сикрĕ.— „Куçран вĕçертес марччĕ кăна..." Карта урлă каçсан, питĕ хытă чупма тапратрĕ вăл вăрă хыççăн. Анчах лешĕ те маттур чупать иккен, ниепле те çывăха ямасть. Акă, вăл картаран сылтăмалла пăрăнчĕ те çырма тĕпĕпе чупрĕ. Унтан сăрталла хăпарма пуçларĕ. Пырать — каçĕ çутă, курăнать...

Тарас сăрталла темиçе утăм тунăччĕ çеç — çӳлтен револьвер сасси шартлатрĕ. „Кунпах хăратайăн",— шухăшларĕ те Тарас хăй ăшĕнче, самантлăха чарăнса тăнăскер, каллех малалла ыткăнчĕ. Вăрă хирелле тухса, ыраш хушшинелле кĕрсе кайрĕ, анчах ырашĕ лутра пирки — пытанаймарĕ, пилĕк таранах курăнса пычĕ. Пĕр аллă чалăш кайсан, чарăнчĕ те каллех печĕ Тарас çинелле, анчах каллех сиен тăваймарĕ, тарма тытăнчĕ. Чылай вăхăт пычĕ Тараспа вăрă хушшинчи хăрушла ăмăртса чупасси. Пĕрин епле пулсан та тарса хăтăлас килет, тепри тем пулсан та çитсе çапса ӳкересшĕн... Вăрри çурăм хыçĕвчи кутамккине те пасăрах калча ăшнелле вăркăнтарса хăварчĕ, татах чарăнса пересшĕнччĕ, анчах револьверĕнче пульлисем пĕтнĕ иккен, çавăнпа унăн пĕр хăйĕн урисем çине çеç шанмалли юлчĕ, вăл юлашки вăйне пухса чупрĕ.

Вĕсем шăлĕсене çыртса, ăнтăхас патне çитсе чупнă хушăра пĕтĕм ял ура çине сиксе тăчĕ. Пур урамсенче те кăшкăрашаççĕ, çуйхăшаççĕ, йытăсем вĕреççĕ, алăксем уçăлса хупăнни илтĕнет. Аçта мĕн пулнине ăнланайманнипе, çынсем урамран урама чупаççĕ, пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ, анчах ретлĕн никам та каласа парайманнипе татах чупаççĕ.

Автан-çырми патнелле çывхарнă чух вăрă вăйсăрланса пыни сисĕнме пуçларĕ. Вăрăпа Тарас хушши чакнăçемĕн чакса пычĕ. Ак ĕнтĕ çывăх, темиçе чалăш çеç... Тарас мĕнпур вăйне пухрĕ. Унтан минут та иртмерĕ пуль — вăрра ĕнсинчен чышса антарчĕ те, хăй те тирĕнсе кайрĕ... Анчах вĕсем иккĕшĕ те харăсах сиксе тăчĕç, пĕр-пĕринпе тытăçса ӳксе, çырма хĕрринче йăваланма тапратрĕç. Хăрушă кĕрешӳ пуçланса кайрĕ вĕсем хушшинче... Иккĕшĕ те ывăннă ĕнтĕ, аран сывлаççĕ, анчах нихăшĕ те парăнасшăн мар,— кашниннех пурăнас килет. Пĕрре пĕри çиеле тухать, тепре — тепри, аллисем пыр патнелле туртăнаççĕ.

— Килĕр!.. Пулăшăр!.. — вăрăммăн кăшкăрса ячĕ Тарас. — А-а-а!.. Унччен те пулмарĕ, вĕсем сисмесĕрех çырма хĕрринелле йăванса пычĕç те, чăнкă çĕртен кутăн-пуçăн чикеленсе анса кайрĕç.

Хире чупса тухнă халăх, Тарас кăшкăрнине илтсе, Автан-çырми еннелле ыткăнчĕ. Çынсем çырмана чупса аннă çĕре Тарас бандита ӳппĕн пăрахса, унăн аллисене хыçалалла пăрса лартма ĕлкĕрнĕ-мĕн.

## VIII

Калама та çук пăлханса кайнă çынсем бандита ялалла çав тери кăшкăрашса, ним ăнланмалла мар шавласа илсе пычĕç.

— Вĕлерес ăна халех!

— Çакăнтах çапса пăрахас!

— Пилĕкне çапса хуçас — вырăнтан та ан хускалтăр!..

— Пăркăчлас пулать...

— Мĕн кĕтсе тăмалли пур — тӳпелес тавай!

Юнашар пыракансем бандита сисмен хушӑрах ӑҫтан май килнӗ унтан паркаласа илме пуҫларӗҫ. Хӑшӗ чышкӑпа, хӑшӗ ҫӗҫӗ аврипе, хӑшӗ алла тытнӑ рычаг вӗҫӗпе. Лешӗ, ним тума пӗлмесӗр унталла та кунталла ҫаврӑнкаласа, йӑлӑнма пуҫларӗ.

— Тархасшӑн ан тивӗр... Тархасшӑн ан вӗлерӗр...

Кун пек йӑлӑнни халӑха тата ытларах хускатса ячӗ, унӑн тарӑхне татах вӑйлатрӗ.

— А-а, тархасшӑн-и? Эсир хӑвӑр, мур пуҫӗсем, тархасланине пӑхатӑр-и?

— Миҫе айӑпсӑр чуна пӗтертӗр?

— Мӗн чул ҫынна макӑртрӑр?

— Ы-ых, чунилли!..

Бандита малтанхинчен те хытӑрах чышкӑлама тапратрӗҫ. Тахӑшӗ ҫурӑмӗнчен пысӑк лаптак чулпа хаплаттарчӗ. Капла ырӑ ӗҫ пулас ҫуккине кура, Тарас халӑха лӑплантарма пикенчӗ:

— Ытлашши ан ҫапӑр-ха, юлташсем! Совет влаҫӗ ун пек тума хушмасть. Хӑвӑрах япӑх пулма пултарать уншӑн.

— Мӗншӗн? Вӑрра хӗненӗшӗн и?— кӗрлесе кайрӗ халӑх.

— Вӗсемшӗн тем тума та юрать те, пире мӗншӗн юрамасть?

— Закон тӑрӑх ответ тыттаратпӑр ӑна, чышкӑпа мар!— кӑшкӑрчӗ Тарас. — Никам та пӑрнепе те тӗкӗнне ан пултӑр!

Ял патнелле ҫывхарсан, бандита ҫавӑтса пыракан халӑха хирӗҫ Иливан — ял совет секретарӗ — мӑн ҫӑматӑпа лӑпсӑртатса ҫитрӗ. Халӑх чарӑнчӗ.

— Ӑҫта вӑрри? Хӑшӗ? — ыйтрӗ те вӑл сӑмси витӗр, хӑрах аллипе тимӗр куҫлӑхне тытса, халӑх хушшинелле кӗрсе кайрӗ.— Ҫакӑ-и? Мӗн вӑрланӑ вӑл, прохвост этӑки?

— Назарӑнне лаша илсе тарма тӑнӑ,— терӗ тахӑшӗ.

— Ах, подлец, ах, подлец!.. Ну айтӑр ман хыҫҫӑн!

Тул ҫутӑлса килчӗ. Бандита хурал пӳрчӗ патне илсе пычӗҫ. Темле чарма тӑрӑшсан та, халӑх лӑпланма пӗлмерӗ (ытла пурте тарӑхса ҫитнӗмӗн хурахсем ҫине!). Асӑрхаса пынӑ ҫӗртех, бандитӑн пуҫне ҫапса шӑтарса пӑрахрӗҫ, пичӗсене тӑрмаласа пӗтерчӗҫ, кӗпине ҫурса тӑкрӗҫ...

— Председатель ӑҫта? — ыйтрӗ Иливанран Тарас.

— Виҫӗмкунах Вӑратин пасарне кайнӑ.

— Милици патне ярас пулать.

— Ёлкӗрӗпӗр-ха, малтан хамӑр килти майпа допрос тӑватпӑр.

— Допроса следстви органӗсем тӑваҫҫӗ...

Иливан куҫлӑхне сӑмси вӗҫнерех антарса лартса, Тараса тӑрӑххӑн пӑхса илчӗ. Хӑрах куҫне хӗсрӗ.

— А эс мӗн? Учитель-и? Хамӑрах лайӑх пӗлетпӗр, юлташ салтак. Ялта эпир власть!

Вӑл хӑвӑрт ҫаврӑнчӗ те, хурал пӳрчӗ умне илсе тухнӑ сӗтел хушшине кӗрсе ларса, папкине салатма тытӑнчӗ. Халӑх ҫаплах шавларӗ, бандит ҫинелле кӗпӗрленсе пычӗ, ҫӗр тӗрлӗ ыйту парса кӑшкӑрашрӗ. Тарас халӑх хушшинчен Исая чӗнсе илсе пӳрт кӗтесси хыҫнелле илсе кайрӗ:

— Итле, тусӑм, паян кунта ӗҫ ытлашши пулса кайма пултарать. Иливан темшӗн милицие чӗнтересшӗн мар. Тавай, лашуна утлан та — халех вулӑса вӗҫтер. Милици яччӑр. Хут ма ҫырса паман тесен—ял совет ҫынnисем килте ҫук, тесе кала. Атя, халех яра пар...

Исай, килӗшсе пуҫӗпе сулчӗ те, ҫавӑнтах килне чупрӗ. Тарас сӗтел патнерех кайса тӑчӗ. Иливан папки ӑшӗнче чакалансан-чакалансан, темле сар хутсем кӑларса хучӗ, куҫлӑхне тасатса тӑхӑнчӗ, сайра хӗрлӗ сухалне якаткаласа илчӗ.

— Ну, ристанне кунтарах илсе килӗр-ха! — терӗ вӑл юлашкинчен, ик аллипе сӗтел пуҫӗсенчен тытса. Харӑсах темиҫе ҫын ҫурӑмӗнчен чышса бандита, сӗтел умнелле тӗртсе кӑларчӗҫ. Вӑл Иливан ҫине куҫ илмесӗр пӑхма тытӑнчӗ.

— Кала, кам эс? — хыттӑн пуҫларӗ Иливан, мӑйне пӑркаласа.— Тӗрӗссипе кала, атту эпир сана халех йӑмра тӑрринчен ҫакма пултаратпӑр. Илтрӗн-и?

Бандит чӗнмерӗ. Вӑл ответ парасса пӗр ҫур минут пек кӗтсе тӑнӑ хыҫҫӑн, Иливан тепӗр хут, тата хытӑраххӑн ыйтрӗ:

— Ну, калатӑн-и? Кам эс? Ӑҫти ҫын?

Бандит каллех ответ памарӗ, Иливан ҫине ҫав тери сивӗ курайманлӑхпа тулнӑ куҫӗсемпе шӑтарасла пӑхса тӑчӗ ҫеҫ.

— Кала, теҫҫӗ сана! — кӑшкӑрчӗ Иливан, сӗтел ҫине ҫапса.— Элле халех вилессӳ килет-и?

Бандит пӗр утӑм малалла ярса пусрӗ те, ывӑннӑ лаша пек хашкаса, шӑл витӗр:

— Мӗн ыйтатӑн, палламастӑн-и-мӗн?— терӗ.

Иливан кӑпӑр-капӑр ура ҫине сиксе тӑчӗ

— Мӗн терӗн эс?

— Палламастӑн-и мӗн, терӗм. Лайӑхрах пӑх, эппин,— Пӑшатан эпӗ!

— Епле апла?!

— Ҫаплах.

— Ах, йытӑ вилли! — ҫуйӑхса ячӗ Иливан, сӗтел хушшинчен чупса тухса. Сӑмси темле сасартӑк хӗрелсе кайрӗ унӑн, аллисем чӗтреме тапратрӗҫ. — Ӑҫтан паллам эп сана? Эс мӗншӗн мана халӑх умӗнче пустуйран намӑс кӑтартатӑн?! Ах... — Вӑл виҫӗ хутлӑ намӑс сӑмах лаплаттарчӗ те, Пӑшатан ҫине сиксе пӗрре пӗр енчен, тепре тепӗр енчен пӗтӗм вайӗпе ҫапрӗ.

— Ан ҫап, Иливан! — кӑшкӑрчӗ кун хыҫҫӑн Пӑшатан та, янах шӑммине тытса.— Ай, пӗрле ӗҫсе-ҫинисене мантӑн-и? Эс пире суя лаша хучӗсем туса панӑшӑн эпир сана миллионсем тыттарнӑ чух ыталансах юрлаттӑмӑр-ҫке?! Эх, сысна!.. Килсе тӑр халӑх умне манпа юнашар!

Иливан пуҫран тукмакпа ҫапнӑ пекех каялла сулӑнса кайса ларчӗ. Чарӑлса кайнӑ куҫӗсемпе халӑха ухмаха ернӗ ҫын пек пӑхса ҫаврӑнчӗ, унтан Пӑшатан ҫине тӗллесе кӑтартса, ҫинҫе сасӑпа ҫухӑрма тапратрӗ:

— Суять вӑл! Юри калать! Эп нихҫан та тӗл пулман унпа! Мана вараласа, хӑй хӑтӑласшӑн... Вӗлерес пулать ӑна халех!..

— Мӑнъялта пӗркун виҫӗ миллион илнине мантӑн-и? — кӑшкӑрчӗ Пӑшатан каллех.— Хам тыттартӑм вӗт!..

— Суять! Суять!..

Иливан тата темскер каласшӑн пулчӗ, анчах та Пӑшатан сӑмахӗсем хыҫҫӑнах юпа пек хытса тӑнӑ халӑх халь мӗн пулнине тавҫӑрса илчӗ те, пӗр харӑс ӗрлесе ярса, унӑн сассине путарса лартрӗ.

— Ах, Иуда!..

— Намӑссӑр, кӗҫҫе пит!

— Вӑт, шуйттан!

— Пирӗн юна сутса пурӑннӑ...

— Ҫыхас ӑна!

— Ҫапса ӳкер!

— Иккӗшне те пӗрле ҫакас!..

Халӑх Иливан ҫине кӗпӗрленсе пыма тапратрӗ. Иливан, хӳме ҫумӗнчи сак ҫине хӑпарса кайса, кӗтессе йӑпшӑнчӗ:

— Эп мар! Эп айӑплӑ мар!..

Ун пуҫӗнчен кӑшт аяккарах ҫеҫ хӳмене ҫур кирпӗч пырса ҫапӑнчӗ. Кирпӗчрен пӑрӑнма ӗлкӗрчӗ кӑна — ун еннелле алтуйи вӗркӑнчӗ.

— А-а-а!..

— Чарӑнӑр! Шӑпланӑр! — кӑшкӑрса сак ҫине сиксе тӑчӗ Тарас. — Чакӑр каялла! Халех милицисем килеҫҫӗ!

Пĕр вăхăтлăха халăх лăпланкаларĕ. Унтан каллех шавлама пуçларĕç, ним ăнланмалла мар пулса тăчĕ.

— Давай, допрос ту, Тарас!

— Халăх умĕнче каласа кăтарт-

— Каламасан, халех пăркăçлас...

Милицисем килсе çитиччен халăха епле те пулин чарса тăрас тесе, Тарас допрос пекки тума тытăнчĕ. Малтан Пăшатанран пуçларĕ.

— Ăçтан килтĕн эс кунта?

— Килтен...

— Килŭ ăçта сан?

— Вăрманта, кашни тĕмĕ айĕнче.

— Пит те шутник пулас эсĕ... Махорка бандинче çӳретĕн-и?..

— Çавăнта.

— Халь ăçта вăл хăй?

— Пĕлместĕп.

— Ан суй. Хăвнах япăх пулать. Кала тӳррипе — ăçта Махорка?

Пăшатан кăштах тытăнса тăчĕ, унтан, темскер каласшăн пулса, çăварне уçрĕ çеç — сасартăк тахăшĕ сăнчăр вĕçне çыхнă кĕренке пуканĕпе ăна пуç тӳпинчен туртса çапрĕ. Кăкран каснă юман пекех лапларĕ çĕрелле бандит, йынăшаймарĕ те...

Халăх кăрах каялла чакрĕ.

— Кам çапрĕ? Кам çапрĕ? — сиксе тăчĕ Тарас. — Халех калăр, кам çапрĕ?

Никам та ответ памарĕ, çынсем çăвара шыв сыпнă пекех тăчĕç. Халăх хушшинчен Лява Уртемĕ майĕпе шăвăнса тухса тăкăрлăкалла пăрăннине Тарас курăймарĕ.

Çынсем Пăшатан кĕлеткине çĕртен илсе сак çине вырнаçтарса хунă вăхăтра икĕ милиционер çитсе тухрĕç.

## XII

Çамрăксен пуххи пулни çинчен хыпар çав кунах пĕтĕм ялĕпех сарăлчĕ. Пур çĕрте те Хветуç Тарасĕ çамрăксене „комуна çырни“ çинчен калаçма тапратрĕç. Кам мĕнле пĕлет — çапла палкать, илтнĕ сăмах çумне хăйĕнчен хушса калать...

Лява Уртемĕ кун çинчен илтсенех, ăна Махоркăна каласа пачĕ. Лешĕ ăна тӳрех ял хушшинче сăмах ятлараха сарма хушрĕ:

— Ун пек ячейкăсем вĕсем пире те чăрмантарма пултараççĕ, сан йышшисене те хĕсме тытăнаççĕ. Тымар яриччен кĕтсе тăма юрамасть, çийĕнчех таптаса тăкмалла. Пупа систер: вырсарникун калатăр вăл мĕн те пулин. Астутар ăна: вăл чи малтан чиркĕве пĕтерме тапратать, те.

Ĕçле пуçларĕ вара кулаксен „агитпропĕ“... Темĕн тĕрлĕ сăмах-халлап та, темĕн тĕрлĕ элек те сарма тытăнчĕ ялта комсомол пирки, унта çырăннисем пирки.

Пĕр çăл кутĕнче хĕрарăмсем калаçаççĕ:

— Илтнĕ-и эсир, çамрăксем антихрист партине çырăннă, тет.

— Улталаса çырнă, тет, вĕсене.

— Турăран уйрăлтăм тесе тупа тунă, тет.

— Кайран таçта илсе каяççĕ, тет.

— Кашни çинех темле паллă çакаççĕ пулать...

— Хĕрсем те пулнă, теççĕ, унта...

— Камсем-ши?

— Варукпа Марине, теççĕ...

— Ах, чарусăрсем!.. Ах, вĕлтренпе пĕçертесчĕ пĕрре!

Килте ашшĕпе амăшĕ калаçаççĕ:

— Ванюк килмерĕ-и?

— Çук-ха, иртенпех таçта çӳрет.

— Çавəен партине çырăнма кайман-ши вăл?

— Ах, çырлахах...

— Пĕр те пĕр çырăннах пулсан — эп ăна паянах хăваласа кăларса яратăп. Ун шăрши те ан пултăр ман килте! Кăтартăп эпĕ ăна комун...

Тепĕр ирхине ирех Тарас патне Антун ятлă çамрăк чупса çитрĕ. Пăлханса кайнă, хашкать хăй.

—Итле-ха, Тарас... Чĕрсе пăрах тархасшăн ман ята,— терĕ вăл макăрас пек сасăпа.

— Ма апла?

— Ахалех.

— Епле ахаль? Кала, мĕн пулнă?

— Килте вăрçаççĕ... Атте каçхине çапса пăрахма тапратрĕ, киле те кĕртместĕп, тет. Ăçта каям эп, килтен хăваласа ярсан? Тархасшăн хурат...

— Юрĕ эппин, питех тухассу килет пулсан — хуратăп,— терĕ Тарас.— Пĕлетĕп эп мĕншĕн кун пек пулнине, элек сараççĕ пирĕн çинчен, анчах пурăна-киле вăл тĕрĕс марри курăнĕ акă. Ун чухне эсĕ те каялла çырăнăн, тата çĕнĕрен кĕрекенсем те нумай пулĕç. Астăвăн ман сăмаха.

— Тен, апла та пулĕ те, эс çапах ман ята хуратса хур...

Антун тухса кайрĕ çеç, Тарас патне тата иккĕн пырса тухрĕç. Вĕсем те хăйсен ячĕсене хуратма ыйтаççĕ, вĕсене те çавнашкалах ашшĕ-амăшĕсем вăрçса ăнран кăларнă иккен: килтен ним памасăр хăваласа ярассипе, çиелтен ĕмĕрлĕх ылханассипе хăратса пĕтернĕ.

— Пултараймастпăр çырăнма, тем тусан та...

— Эпир сире ним тума та хатĕрленместпĕр-ха, анчах та эсир, ман шутпа, пустуй хăраса ӳкнĕ...

Тарас вĕсене татах ăнлантарма, ӳкĕтлеме тытăнчĕ, анчах лешсем итлесшĕн те пулмарĕç:

— Халех чĕрсе пăрах...

Список çинче хăйсен ятне хуратнине курсанах, хăвăрт тухса кайрĕç.

— Ну, пулать те çав халăх,—терĕ Тарас вĕсем тухса кайсассăн,—пасар кун çур пус тăмаççĕ.

Çав вăхăтрах Микиш пырса кĕчĕ.

— Ман килес,—терĕ вăл, сĕтел патне пырса,—Ыр кун пултăр.

— Пит ырах мар-ха çав паянхи кун...—ал пачĕ Тарас.—Ниме , юрăхсăр, темелле.

— Мĕн пулнă тата?

— А эс пĕлместĕн-и? Ĕнер çырăннисем пĕрин хыççăн тепри каялла тухаççĕ.

— А-а... Ăна пĕлетĕп.

— Эсĕ те ăнсăртран ятна хураттарма килмерĕн-и? Яра пар, чаракан çук.

Микиш аллинчи картусне аяккалла хучĕ те тӳрех Тарас куçĕнчен пăхрĕ.

— Ан мăшкăла, Тарас. Манран нихçан та пулас çук вăл, пĕлессӳ килсен... Эс ман атте мĕнле вилнине пĕлетĕн-и?

— Ну?

— Вăл комбедсен вăхăтĕнче Янашвар куштанĕсем хĕнеnипе вилчĕ. Сывлăшĕ тухиччен темиçе сăмах çеç каласа хăварчĕ мана: хам пек пул, халăхшăн тăрăш, терĕ. Çав сăмахсене эп нихăçан та манас çук. Ман атте пуян-куштансемпе çапăçса вилнĕ, эпĕ те çав йĕрпех каятăп... Нимрен те хăрамастăп.

Халь çеç ача çулĕнчен тухнă вунçиччĕри йĕкĕт çакнашкал хĕрӳллĕ калаçни, калаçнă чух унăн куçĕсем хастарлăхпа çутăлса тăни Тараса пит те кăмăла кайрĕ. Вăл çемçен кăна кулса илчĕ те, Микиш патне пырса, ăна хулпуççинчен лăпкаса илчĕ:

— Çук, эп ахаль каларăм...

Юлташсем пĕр вăхăт чĕнмерĕç. Унтан сăмаха Микиш пуçларĕ.

— Çапах, мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ халь?

— Мĕн тумалла? Ĕçлес пулать,— терĕ Тарас.—Тепре каласан, нимех те пулман вĕт ытлашши. Хавшаккисем сирĕлчĕç çеç. Паянхи куна вĕсенчен усси те питех пулмастчĕ пуль. Анчах та—курăн акă—майĕпе каллех килĕç вĕсем пирĕн пата!

Тулта урам алăкĕ хыттăн уçăлса хупăнчĕ те, чӳрече тĕлĕпе Хăмăт Энтри чупнă пекех курăнчĕ.

— Ку мĕн сăлтавпа килет-ши тата?—шухăшларĕ Тарас.—Ывăлĕ пирки мар-ши?

Унăн шухăшĕ тĕрĕс пулнă. Хăмăт

пӳрте кӗрсенех паллӑ пулчӗ вӑл: ырӑ та сунмарӗ, ал та памарӗ, тӳрех кутник ҫине ларса, Тараспа Микиш ҫине куҫхарши айӗпе пӑхрӗ те йывӑррӑн сывласа илчӗ.

— Мӗнле ыр хыпар пур, Энтри пичче?—ыйтрӗ Тарас, ҫав хушӑрах хӑрах куҫӗпе Микиш ҫине пӑхса илсе.

— Ытлашши нимех те ҫук,—терӗ хулӑм сасӑпа Хӑмӑт,—хам ача пирки килтӗм.

— Ача пирки? Тем пулнӑ-и-мӗн?—юриех сисмен пек пулчӗ Тарас.

— Пуласси пулман та, пулма пултарать... хӑш-пӗрисене итлесе, вӗсем хыҫҫӑн кайсан. Хӑйсем ухмаха ерни ҫитмест, тата ыттисене ертесшӗн хӑйсемпе пӗрле!

— Мӗн ҫинчен апла тата эс?

— Ҫавӑн ҫинченех!—сасартӑк сиксе тӑчӗ Хӑмӑт.—Сирӗн ҫинчен! Мӗн эсремет ушкӑнне ҫырса хунӑ эсир ман ывӑла? Как имел право ҫамрӑка улталама?

— Чим-ха, Энтри пичче, йӗркипе калаҫ...

— Эпӗ сан пиччӳ мар, эс ман шӑллӑм мар, неччу пирӗн нумай калаҫса тӑма. Ман сӑмах кӗске: халех чӗрсе хур ман ывӑл ятне хут ҫинчен! Не имеш право ун пек тума!

— Ара ӑна никам та вӑйпа ҫырман вӗт,—хутшӑнчӗ Микиш.

— „Вӑйпа ҫырман!" Мӗн пӗлет вӑл тӑнсӑр сурӑх? Эсир тем те пӗр тыттарса тултарнӑ та—ал йӑтнӑ ӗнтӗ вӑл. Сирӗн вӗт чӗлхесем...

— Эс вара пире ултавҫӑсем вырӑнне хуратӑн-им?

— Чорт вырӑнне хуратӑп, ним вырӑнне те хумастӑп. Ҫыхланмастӑп та, калаҫмастӑп та! Хуратӑр ман ывӑла, урӑх ним те ҫук. А ешӗл тепре ҫавнашкал тусан, сирӗнпе урӑхла та калаҫӗҫ...

— Мӗн тусан?

— Ачасене ашшӗсенчен уйӑрса, вӗсене хирӗҫ тӑратсан, вот мӗн!

— А кам апла тунӑ-ха? Итле эс Энтри пичче!..

— Ним те итлеместӗп! Ан калӑр эсир мана ним те! Хуратӑр, тетӗп, халех!

Хӑмӑт вӗриленнӗҫемӗн вӗрилене пуҫларӗ, сак ҫинчен сиксе тӑчӗ, кӑшкӑрнӑҫемӗн сӗтел патне ҫывхарса пычӗ. Унӑн куҫӗсем темле ылмашса кайрӗҫ, тутисем кӑвакарса чӗтреме тапратрӗҫ. Вӑл кӑшкӑрни, сӑмахсене суйласа тӑмасӑрах лаплаттарни— Тараса самаях тарӑхтарма пуҫларӗ, пӗр вӑхӑтра вӑл ӑна хирӗҫ кӑшкӑрса ярасси патнех ҫитрӗ, анчах та хӑйне хӑй тытса чарчӗ. Хӑмӑта текех пӳлмерӗ, пӗтӗмпех каласа пӗтерме пачӗ, унтан чӗлӗм чӗркесе тивертрӗ те, лӑпкӑн кӑна:

— Эс ҫапах та лар-ха, Энтри пичче,—терӗ.—Ура ҫинче чӑнлӑх ҫук, теҫҫӗ. Йӗркеллӗн, пӗрне-пӗри хӑратмасӑр калаҫӑпӑр. Кӑшкӑрас тесен— эпӗ те кӑшкӑрма пӗлетӗп вӗт, анчах мӗн усси унтан? Эпир кунта нумайӑн мар, хуллен каласан та илтетпӗр. На, чӗлӗм туртса яр...

Тарас ҫав тери пӑлханмасӑр, ним пулман пек лӑпкӑн калаҫнипе, Хӑмӑт нимле мар пулса кайса, каллех сак ҫине ларчӗ, Тарас панӑ табака чӗлӗмне тултарчӗ.

— Акӑ мӗн, Энтри пичче, чӑн малтанах манӑн хампа сана танлаштарас килет,—пуҫларӗ Тарас, чикарккине мӑкӑрлантарса.—Эп кам та—эс кам...

Ҫӗрелле пӑхса, пӑлхануллӑн сывласа ларакан Хӑмӑт пуҫне кӑштах пӑрса, Тарас ҫине ӑнланман куҫӗсемпе пӑхрӗ.

— Мӗн каласшӑн вара эсӗ?—ыйтрӗ вӑл.

— Ҫакна каласшӑн... Эп сана питӗ аван пӗлетӗп ӗнтӗ, Энтри пичче. Эс хӑвӑн ӗмӗрӗнте яланах лаша пек ӗҫленӗ пулин те, нихҫан та ҫителӗклӗ тулӑх пурнӑҫпа пурӑнса курман. Куҫитмен те—леш ҫитмен... Терписем

пек ĕçкĕ-çикĕ тума мар—праçниксенче те сĕт-çупа аш-какай тăраничченн çимен, çура тухсан, яланах кивçене кайнă. Çапла-и?

— Çапла пултăр, — терĕ Хăмăт, Тарас ăçталла пăрнине халĕ те ăнланаймасăр.

— Эпир те çавнашкалах, ырă пурнăçпа пурăнман, атте вилнĕренпе пирĕн кашни çулах çимелли çитмен. Ăна пĕлетĕн ĕнтĕ эс.

— Пĕлетĕп...

— Ялти „ырă çын" тенисем, Лява тавраш̆ĕ пеккисем, пире нихçан та этем вырăнне шутламан, выльăх вырăнне хунă. Вĕсем урамваррипе утнă, эпир вĕсене курсан—хӳме çумĕпе йăпшăннă. Çапла вĕт?

— Çапла та-ха вăл, анчах мĕн тума калатăн эс куна мана?

— Эпир иксĕмĕр те пĕрешкел çынсем, ялти чухăнсем пулнине кăтартса парас тетĕп.

— Ăна эп ахаль те пĕлетĕп.

— Пĕлни сахал, Энтри пичче, ăнланас пулать ăна... Эп те чухăн пулсан, эс те чухăн пулсан, пирĕн мĕн пирки пĕр-пĕрне хирĕç пымалла-ха? Сăлтав пур-и ăна валли?

— Сăлтав? Мĕн сăлтавĕ пултăр...

— Тĕрĕс! Пирĕн, чухăнсен, пĕрпĕрне хирĕç пымалла мар, пирĕн пĕрпĕринпе пĕрлешмелле, пĕр шухăшлă пулса—пĕр-пĕрне пулăшса пыма тăрăшмалла. Совет влаçĕ çапла тума вĕрентет. Сан шутпа мĕнле пек?

— Ара, пĕр шухăшлă пулни аван ĕнтĕ вăл. Ваттисем калашле, пĕччен сурать—типсе пырать, халăх сурать—кӳлĕ пулать...

— Çапла çав. Халь шутласа пăх ĕнтĕ: манăн сана усал тăвас шухăш пулма пултарать-и, çук-и?

— Çук пек те...

— Эс тӳррипе кала, мĕн шутланине.

Тараспа Хăмăт куçĕсем тĕл пулчĕç те, вĕсем пĕр-пĕрин çине пĕр минут пек пăхса тăчĕç.

— Ăнланмастăп эп,—терĕ Хăмăт,—тем кирлĕ сана...

— Эс мана ывăлу пирки айăпларăн, çавăн пирки калатăп. Апла та капла, улталанă, темскер эсремет ушкăнне çырнă, терĕн. Сан сăмахусем тăрăх, эп ĕнтĕ сан ывăлушăн сиенлĕ япала туса хунă. Анчах та апла мар вăл, Энтри пичче, эс çав сăмахсене тивĕçлипе шухăшламасăр каларăн. Çавăн пек туйăнмасть-и сана хăвна?

Хăмăт чĕнмерĕ. Çунса пĕтнĕ чĕлĕмне тепĕр хут тултарчĕ те каллех мăкăрлантарма пуçларĕ. Пăлханни халĕ унăн пĕтĕмпех иртсе кайрĕ.

— Сан сăмахусене тепĕр çын каланă пулсан, эп ăна тахçанах, хулĕнчен çавăтса, пӳртрен кăларса ямалла,—терĕ Тарас, Хăмăт сăнĕ епле улшăннине сăнаса.—Анчах сана ун пек тăвас килмерĕ, мĕншĕн тесен, эс ăнланма пултаратăн пуль тетĕп. Эпир çамрăксене пĕр ушкăна пухнăшăн хăрамалли те, ăна тиркемелли те çук, пире хирĕç пыма та кирлĕ мар. Мĕншĕнне каласа кăтартăп эп сана...

...Тараспа Хăмăт хушшинче лăпкă кăна калаçу пуçланса кайрĕ. Микиш те хутшăнчĕ. Хăмăт вара вăл кун нихçан илтмен тĕлĕнмелли япаласем çинчен пĕлчĕ. Тараспа Микиш пуçĕнче чăнах та аван шухăшсем иккен, ялта сарăлнă сăмахсем суя пулнăмĕн!

Кăнтăрла çитеспе килне тухса кайнă чух, вăл ырă кăмăлпах чăмăртарĕ икĕ йĕкĕт алливе:

— Ну, ан ятлăр эппин, ушипкă пулчĕ паян. Ывăла та пустуйранах пĕр-ик хут пушăпа туртса илтĕм. Эсир каланă пекех пулсан—валяй, ĕçлĕр. Чармастăп. Ялта хускатаканни кирлех вăл. Эсир çамрăк-ха, юн вĕри сирĕн, эсир пултармалла...

XVI

Икĕ кун çухалса пурăнчĕç Тараспа Микиш. Виççĕмĕш кунне кăнтăрлапа тин таврăнчĕç, анчах иккĕшĕ кăна мар: вĕсемпе пĕрле икĕ лавпа темле палламан çынсем килчĕç те, тӳрех шкула кĕрсе вырнаçрĕç. Кăштах тăхтасан, яла тата тепĕр лав пырса кĕчĕ, ун çинче ик енче икĕ милиционер, варринче Иливанпа Каçăр Куçма ларса килчĕç.

Кун пек çынсем килсе тулнинчен тĕлĕнсе, шкул тавра малтан вĕт-шак ачасем, унтан пысăкраххисем те, ваттисем те пухăна пуçларĕç. Тĕрлĕрен калаçрĕç кун пирки, вулăсри (кам пĕлет, тен уездри те пуль?) çынсем кун пек йышлăн мĕн тума килни тата Иливанпа Каçăр Куçмана мĕншĕн илсе килни çинчен апла та капла шухăшласа пăхрĕç.

— Ĕлĕк пулсан, халăх умне сарса хурса юн пĕрĕхиччěнех пĕçертетчĕç ĕнтĕ вĕсене,—терĕ сакăрвун çулхи Кириле Мучи, çамрăкраххисем калаçнине итлесе.

— Эс кам пирки калатăн?

— Иливанпа Куçма пирки ара...

Тараспа пĕрле килнĕ çынсем Энтриялĕнчи пурнăçа—чăн малтан ял совет ĕçне—пур енчен те тĕрĕслеме парти вулăс комитечĕпе вулĕçтăвком янă комисси пулнă. Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн—айăплисене патĕнчех, ял халăхĕ умĕнчех суд тума хушнă. Çул çинчи тусанран тасалсанах—комисси членĕсем ушкăнĕпех Мамун патне столовойне кайрĕç. Унта вĕсем шăпах ачасене апат çитернĕ тĕле пычĕç, хăшĕсем апатне те, çăкрине те тутанса пăхрĕç, ăçта епле пĕçернине сăнарĕç, унтан Мамуна халех шкула пыма хушса хăварчĕç.

— Асту, приход-расходсене çырнине манса ан хăвар,—асăрхаттарчĕ ăна Тарас, ыттисенчен каярах юлнăскер.

— Сансăрах пĕлетпĕр,—шур куçпа пăхса илчĕ ун çине Мамун. Унтан ăна хулĕнчен тытса пĕр самантлăха чарчĕ те:—Пирĕн çула урлă тăтăн эппин? Куратпăр-ха малашне, тен, тĕл пулма тӳр килĕ!—терĕ.

— Ан хăрат, Мамун пичче, эп ытлашши хăравăçах мар, куркаланă,—татса хучĕ Тарас.

Вăл тухса кайсан, Мамун сĕтел ещĕкĕнчен тĕрлĕ хутсем кăларса, чылайччен вĕсене майлаштарса ларчĕ. Унтан урамалла тухрĕ, анчах та малтан шкула мар, хăйĕн хунчăкăшĕ—Лява Уртемĕ патне кайрĕ, унпа пĕр çур сехет пек калаçса ларсан тин хăйне чĕннĕ çĕре утрĕ.

Шкула таврăнсанах, комисси председателĕ — типшĕм кăна сарă çын, кăштах сăмса витĕр калаçаканскер—Тараса каç пулнă вăхăталла пуху пухтарма хушрĕ. Хăй, комиссин ытти членĕсемпе пĕрле, Мамун илсе пынă хутсене тĕрĕслеме тепĕр пӳлĕме кĕрсе ларчĕ те, каçченех, халăх пухăниччěнех тухмарĕ унтан. Пӳлĕмрен ăнланмалла мар калаçу тата шут шăрçисем шаклатни çеç илтĕнчĕ.

Пухăва халăх вăхăтра пухăнчĕ. Çынсем паян, ытти чухнехинчен раснах, пуху пуçланасса шавламасăр кĕтрĕç, пĕрне пĕри хăйсен шухăшĕсене шăппăн пĕлтерчĕç. Ытти чухнехи пек нумай кĕтсе тăма та тӳр килмерĕ, шкул класĕ тулсанах, вулăсран килнĕ комисси председателĕ пухăва пуçласа ячĕ. Павăл пиччене, Хăмăт Энтрине, комсомолецсенчен Исая президиума суйланă хыççăн—вăл сăмах калама пуçларĕ.

— Эпир сирĕн пата пит пысăк ĕçпе килнĕ, юлташсем,—терĕ вăл.—Сирĕн ялти совет председателĕпе секретарĕ—халь хыçалти пӳлĕмре ларакан Каçăр Куçмапа Иливан—икĕ çул хушши вĕçĕмсĕр сăтăр туса пурăннă. Халăхшăн тăрăшас вырăнне, вĕсем халăха çаратса, хăйсен кĕсйисене тултарнă, тӳсме çук преступленисем тунă... Следстви ăна пĕтĕмпех кă-

тартса пачӗ. Халь эпир вӗсене суд умне тӑратса, совет законӗсем тӑрӑх айӑплатпӑр, вӗсене пысӑк наказани пама тивӗҫлӗ. Анчах та, суд тӑвиччен малтан, вӗсен ирсӗр сӑн-сӑпатне тата лайӑхрах палӑртас тесе, эпир сирӗнпе калаҫас, терӗмӗр. Тен, вӗсен тата нумай айӑпсем, путсӗр ӗҫӗсем палӑрмасӑр юлнӑ пулӗ. Эпир сирӗнтен паян ҫакӑнта вӗсем ҫинчен мӗн пӗлнине ним пытармасӑр каласа парассине кӗтетпӗр. Хӑраса тӑмалли нимӗн те ҫук кунта, преступленисене тӑрӑ шыв ҫине кӑларма пулӑшни— хисеплӗ ӗҫ вӑл...

— Эс малтан хӑвӑр мӗн пӗлнине каласа кӑтарт,—терӗ хыҫалта пӗр сасӑ.—Кайран вара эпир те хушса калӑпӑр, тен.

Пурте ку сасӑ еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Ку сӑмахсене Ҫӗтӗк Якку каланӑ иккен. Ял советра ӗҫленисем ӑна пит те тарӑхтарнӑ пулнӑ, ҫавӑнпа та вӗсем ҫинчен вӑл халь ҫирӗппӗн калама ӗмӗтленнӗ.

— Эпир пӗлни акӑ мӗн, — ответ пачӗ комисси председателӗ,—вӗсем тӗрлӗ вӑрӑ-хурахсемпе, бандитсемпе ҫыхланнӑ, вӗсене пулӑшнӑ... Вӑрланӑ лашасене сутмашкӑн суя хутсем туса панӑ. Совет влаҫӗ чухӑнсене пулӑшма паракан вӑрлӑхсене, тӗрлӗ таварсене ултавлӑ майсемпе хӑйсене валли ҫавӑрса илнӗ тата хӑйсен ҫывӑх ҫыннисене валеҫсе панӑ.

Итлесе ларакан халӑх сӗрлеме пуҫларӗ:

— Вӑт, эсрелӗсем!

— Хура юнсем...

— А эпир ним шарламасӑр пурӑнатпӑр.

— Персех пӑрахас пулать вӗсене...

Комисси председателӗ, пӗр хушӑ чарӑнса тӑнӑскер, малалла калама пуҫларӗ.

— Мӗнле ҫитменлӗхсем, кӑлтӑксем, йӗркесӗрлӗхсем ҫинчен пӗлетӗр, пӗтӗмпех каласа парӑр. Ун пек ҫитменлӗхсене пӗтермешкӗн—вӗсем ҫинчен пӗлес пулать вӗт. Сӑмахран каласан, столовӑй пирки каласа кӑтартма пултаратӑр, унта та ӗҫсем йӗркеллех мар пулас...

— Ачасен тӳпине вӗсем пӗрле ҫисе пурӑнчӗҫ!—илтӗнчӗ хыҫалтан.

— Какай вырӑнне шӑши пӗҫерессӗ!..

— Пӗр сӑмахпа, — терӗ комисси председателӗ,—каллех калатӑп: хӑвӑра ҫаратса, кӳрентерсе пурӑннӑ ҫынсене хӗрхенсе ан тӑрӑр, вӗсем сире хӗрхенмен...

...Шкулта пуху пуласси ҫинчен пӗлсен, Лява Уртемӗ те шкула кайрӗ. Унта пырсан—шала кӗмерӗ вӑл, шалта мӗн калаҫнине ҫенӗкри алӑк хыҫне хӗсӗнсе тӑрса итлерӗ. Шалтан илтӗнекен кашни сӑмах ун чӗрине пырса касрӗ, пырӗ патне темскер капланса пычӗ. Ирӗк пулсан, унта ларакансене вӑл ҫавӑнтах темскер те пӗр каласа, пӗрерӗн-пӗрерӗн лапчӑтма хатӗр пулӗччӗ, халӗ ним тума та ҫуккипе хытӑран хытӑ тарӑхса, йывӑррӑн сывласа тӑчӗ.

Комисси председателӗ чӗнсе калалани вырӑнсӑр пулмарӗ. Каҫӑр Куҫмапа Иливан ирсӗрлӗхӗсем ҫинчен пӗрин хыҫҫӑн тепри калама пуҫларӗҫ. Чӑн малтан паҫӑрах сас панӑ Ҫӗтӗк Якку калаҫма тытӑнчӗ, вӑл ял совет председателӗпе секретарӗ хӑйсене ӗҫтерменшӗн ҫуркунне ӑна вӑрлӑхсӑр хӑварни, ун тӳпине кайран сутни ҫинчен каласа пачӗ. Ун хыҫҫӑн Кулине ятлӑ тӑлӑх арӑм тӑчӗ.

— Эп те калам-ха,—терӗ вӑл чӗтрекен сасӑпа, халӑх умӗнче калаҫма хӑнӑхманнипе пӑлханса.—Эп ӗнтӗ тӑлӑх арӑм, ман старик Краснӑй гвардинче вилчӗ... Ман ик ача пур. Ну ӗнтӗ, мана пӗччен пуҫпа вӗсене пӑхса ӳстерме питех йывӑр, ҫавӑнпа та кӑҫал ачасене тырӑ пулнӑ вырӑнсене яраҫҫӗ тенине илтсен, пӗрине те пулин вырнаҫтарма пулмасть-ши, тесе шутларӑм. Хай, эпир тӗттӗм ҫынсем

те, йёркине-мĕнне пĕлместпĕр те, ыйтса пĕлес тесе, Иливан патне кайрăм. Çапла, çапла, терĕм, пĕр ачине те пулин ярасчĕ, терĕм. Атту выçăçке... Иливан мана—май кӳрĕпĕр, терĕ, анчах халь ним те калаймастăп-ха, председательпе калаçса пăхмалла, терĕ. Эс халь киле кай, каçхине хамах пырса калăп, терĕ. Ну ĕнтĕ, савăнсах кайрăм киле. Темле пулсан та, тăван ача-çке, усрас килет епле те пулин... Хайхискер каçхине пычĕ. Сисрĕм кăна—хĕрĕнкĕ. Ун çинчен калаçать, кун çинчен—ман ĕçе асăнмасть те. Унтан çулăхма тапратрĕ çак мана...

Халăх кулса ячĕ.

— Кулса мар, чăнах! — терĕ Кулине.—Ним тунмасăрах калатăп: кăмăлна çемçет, вара пурте пулĕ тесе, ыталамах тытăнчĕ, йĕрĕнчĕк. Çурăмĕнчен чышса кăларса ятăм вара... Тепĕр кунне кĕнцелере каллех кайрăм та,—манпа çак калаçмасть те. Темиçе ыйтсан тин—вырăн çук, тесе хучĕ. Спасибо, çавăнтах хуларан килнĕ çын пулнă, эп унпа калаçрăм та—вăл ман ачана пĕр сăмахсăрах çырса хучĕ. Ак ку шуйттанĕ пулсан—такки ямастчĕ... Мĕн каласси пур, яланах çапла пулса вĕсем: пĕр пĕчĕк ĕçшĕнех виç кун уттаратчĕç те, тата ялан хăйсене тутаран çу сĕртерме хăтланатчĕç. Тав турра, шалчисем тулчĕç! Хытăрах тыткалас пулать вĕсене!

Кулине каласа пĕтерчĕ те ларчĕ.

— Тĕрĕс каларăн, Кулине!

— Маттур!

— Çапла кирлĕ!—илтĕнчĕç ырлакан сасăсем.

Комисси председателĕ халăха шăпланма хушрĕ:

— Тата кам калас тет? — тесе ыйтрĕ.

Халăх хушшинче харăсах темиçе алă çĕкленчĕç. Ку ĕнтĕ пухăва пынисем малашне Каçăр Куçмапа Иливан тата вĕсемпе пĕр шухăшлă пулнă çынсем çинчен нумай калассине пĕлтерчĕ. Итленĕ хушăрах хăвăрт шухăшласа тăнă Лява Уртемĕ çавна сисрĕ те, шкултан часрах тухса шурĕ. Килне çитсенех, вăл садри мунча çенĕкĕнче çывăракан Махоркăна вăратса, ăна шкулта мĕн пулса пыни çинчен каласа пачĕ.

Паян ир енне тин таврăнса кунĕпех çывăрнă Махорка тăруках нимĕн те каламарĕ, арпашса кайнă çӳçне пӳрнисемпех чавса, пĕр хушă йывăррăн сывласа ларчĕ. Унтан мухмăрпа, нумай çывăрнипе тăртанса хĕрелсех ларнă пăтранчăк куçĕсене Уртем еннелле çавăрса:

— Лешсем килчĕç-и?—тесе ыйтрĕ.

— Камсем?

— Кам пултăр... Шишкăпа Чалăшкуç.

— Килмен

— Ну, апла пулсан—хамах тăватăп. Уртем ун çине ăнланмасăр пăхрĕ.

— Мĕн тăватăн?

— Вĕсен пуххине халех салатса яратăп.

— Пухха пырас тетĕн-и?—тĕлĕнчĕ Уртем.—Ан хăтланах. Вара хăвна та, мана та...

Анчах та Махорка ăна каласа пĕтерме памарĕ, аллине çĕклесе чарчĕ.

— Пухăва эс пĕчченех кайăн, ман унта ĕç çук. Эп акă мĕн тăватăп... Кил кунтарах.

...Вĕсем пичĕсене пĕр-пĕрин çывăхне илсе пычĕç. Махорка тем çинчен никама илтмелле мар шăппăн, хăрушă вăрттăнлăхпа темскер çинчен калама тытăнчĕ. Унăн сăмахĕсене итленĕ хушăрах, Уртем куçĕсемпе темиçе хутчен пур еннелле те пăхапăха илчĕ, кам та пулин пырса курасран, мĕн те пулин илтесрен сыхланчĕ курăнать. Махорка каласа пĕтерсен, вăл аялти тути хĕррине çыртса, пуçĕпе сулчĕ:

— Юрĕ...

Çавăнтах вара вăл картусне лайăхрах пусса лартса, садран пысăк утăм-

семпе утăмласа тухрĕ те каллех шкула кайрĕ. Кунта халĕ пуху питех те хĕрсе кайнă-мĕн. Ял çыннисем пĕрин хыççăн тепри тăра-тăра ялти йĕркесĕрлĕхсем, Каçăр Куçмапа Иливанăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен, вĕсен хӳттипе пуян тавраш ĕсем иртĕнни çинчен калаĕ... Уртем, шкул умне пырса тăрсанах, комсомолец Исай сассине илтрĕ:

— Пирĕн ялта вĕт çав Иливансене пула совет влаçĕ çукпа пĕрех пулма пуçларĕ. Ăçта ан пыр—пур çĕрте те пуянсем çавăрса илме тапратрĕç... Илĕр ака столовăйнех: мĕншĕн-ха эпир ăна пуян Уртемсен кĕрӳшĕ Мамун аллине панă?..

Хăй ятне асăннине илтсенех, Уртем шăлне çыртрĕ.

„Йĕксĕк, — шухăшларĕ вăл Исай çинчен,—тытса пăчăртатăп-ха эп сана пĕрре...“

Столовăй çинчен каласа пĕтерсен, Иса иртнĕ хĕлте совет ялти чухăнсем валли панă вăрман çурри ытла пуянсен аллине кĕрсе ӳкни çинчен калама пуçларĕ.

— Лява Уртемĕпе кĕрӳшĕ хĕлĕпе вăрман турттарчĕç, сахалтан та пилĕкшер çуллăх вутă хатĕрлерĕç, анчах пирĕн пеккисене 2—3-шер лав çеç тиврĕ. Мĕнле пулма пултарнă çав япала? Каçăр Куçмапа Иливан тунă çавна! Ахальтен мар Лява таврашĕсен кашни ĕçкинчех упаленеççĕ вĕсем...

— Тĕрĕс!

— Чăн сăмах!

— Нумай мăшкăларĕç ĕнтĕ...—илтĕнчĕ халăх хушшинчен темиçе сасă.

Çав тери хĕрсе, пĕтĕм чĕринчен калаçакан имшертерех шăмшаклă, кăвак куçлă Исая та, унăн сăмахĕсемпе килĕшсе кăшкăракансене те Уртемĕн çавăнтах тытса пăчăртасси, пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларса ывăтасси килсе тăчĕ, вăл пĕтĕм мăн сассипе питĕ усал сăмахсем кăшкăрса ярасси патнех çитрĕ, çапах та хăйне хăй чарчĕ. Халь ун пек тума май килменнине лайăх ăнланчĕ вăл...

Исай хыççăн председатель Тараса сăмах пачĕ.

„Ку ĕнтĕ тата... тепĕр кĕлмĕçи... мĕн калать-ши?—шухăшларĕ Уртем.— Паллах, пире хирĕç ĕнтĕ, тупнă пульха чакаланса...“

Кăштах шавлама пуçланă халăх, Тарас ура çине тăрсавах, шăп пулчĕ. Тарас хуллен кăна ӳсĕрсе пырне тасатрĕ, аллинчи хут татки çине пăхса илчĕ, анчах та пĕр сăмах та калама ĕлкĕреймерĕ...

Урамра сасартăк такам темле тискер, хăрушă сасăпа кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Пуша-ар!.. Çуна-ать!..

Пурте харăсах урамалла пăхрĕç. Чăнах та, ялăн анат вĕçĕнче çунать иккен... Лăпкă сывлăшра çулăм çӳлелле юпа пек тапса хăпарать, çулăм юпинчен пур еннелле хĕм сирпĕнет...

Пушара курни—шкулти халăх хушшиве бомба пăрахнă пекех пулчĕ. Çынсем ним йĕркесĕр алăк патнелле ыткăнчĕç, алăк хĕсĕккипе хĕсĕнсе ларчĕç, кунтан час тухма çуккине кура, нумайăшĕ чӳречесенчен сикме тапратрĕç. Пĕр-ик самантран шкулта никам та юлмарĕ, пурте пушар патнелле ыткăнчĕç, ял урамĕсем çынсем кăшкăрнипе, шавланипе, чупакансен ура сассисемпе тулса ларчĕç. Пĕр Лява Уртемĕ çеç чупмарĕ пушар сӳнтерме. Шкулти халăх тулалла ыткăннă чух вăл çенĕк алăкĕ хыçне юлчĕ те, çынсен сассисем инçетелле кайсанах, шалалла чупса кĕрсе, хыçалти пĕчĕк пӳлĕмĕн алăкне пĕтĕм вăйĕпе пырса тĕкрĕ.

— Куçма хăта! Иливан!—тесе кăшкăрчĕ вăл.—Тухăр часрах, никам та çук!.. Тарăр!

Анчах шалта çав самантрах винтовка затворне шакăлтаттарса илни илтĕнчĕ.

— Кам унта! Перетӗп!—терӗ Уртеме палламан сасӑ. Вӑл—Каҫӑр Кусмапа Иливана хураллакан милиционер сасси пулнӑ. Ӑна илтсенех, хӑйне паллаттарас мар тесе тата тухса тытасран хӑраса, Уртем часрах шкултан чупса тухса пахчаналла сикрӗ...

## XVII

Сасартӑк сиксе тухнӑ пушар, ҫитменнине тата ял хӗрринчи никам пурӑнман кивӗ пӳрт ҫунни пурне те питӗ тӗлӗнтерчӗ. Темӗн тӗрлӗ те шухӑшласа пӑхрӗҫ ял ҫыннисем ун пирки, анчах нимӗнле ответ те тупаймарӗҫ. Энтрияльӗнчи ӗҫсене тӗрӗслеме пынӑ комисси председателӗ — Каҫӑр Куҫмапа Иливана хураллакан милиционер пушар вӑхӑтӗнче шкула тавам пырса преступниксене ирӗке кӑларма тӑни ҫинчен каласа парсанах—пушар сӑлтавне тавҫӑрса илчӗ:

— Сисетӗн-и, ӗҫ ӑҫталла каять?—терӗ вӑл, пушара сӳнтернӗ хыҫҫӑн ирччене киле кайман Тараса. — Ку пушар вӑл—юри, ҫак ҫӑхансене хӑтарса тартас шутпа тунӑскер. Епле чее шухӑшласа хунӑ: халӑх пушар сӳнтерме чупать те, кусем хӑтӑлаҫҫӗ... Халь ӗнтӗ паллӑ: ялта Куҫмапа Иливансен тымарӗ тарӑн, вӗсен чи ҫывӑх ҫыннисем пур... Ҫавсене епле пулсан та тупса кӑклас пулать... Эс паянах ҫамрӑксене пухса калаҫ ҫавӑн ҫинчен. Пурин те куҫӗсем ҫивӗч пулччӑр!

— Юрӗ,—терӗ ӑна хирӗҫ Тарас.— Пӗтӗм вӑя хурсах тӑрӑшапӑр. Эпир те пӗлетпӗр вӗт: хамӑр ҫул ҫинчи тумхахсене пӗтермесӗр, пирӗн пурнӑҫ малалла тикӗссӗн каяс ҫук...

Пушар хыҫҫӑн следстви тата темиҫе кун хушши пулса пычӗ. Ялти нумай ҫынсене чӗнсе тӗпчерӗ комисси, пур вак ӗҫсем ҫинчен те пӗлме тӑрӑшрӗ. Анчах ҫӗнӗ сведенисем нумаях тупӑнмарӗҫ. Пушар пирки вуҫех те нимӗн те палӑрмарӗ. Каҫӑр Куҫмапа Иливанран пушар пулнӑ каҫхине шкула кам пыни ҫинчен темле тӗпчесе ыйтсан та, вӗсем Уртем сассине ун чухне лайӑхах уйӑрса илнӗ пулин те—нимӗн те каламарӗҫ.

— Эпир нимӗн те илтмен... Никам та пыман, пӗлместпӗр. Милицине хӑранипе ахаль ҫавӑн пек туйӑннӑ пуль,—терӗҫ...

Лява Уртемӗ, хӑйӗн ҫумне пырса ҫыпӑҫмашкӑн нимӗнле сӑлтав та ан пултӑр тесе, бандитсем вӑрласа пынӑ япаласенчен ку таранччен вырнаҫтарайманнисене тепӗр куннех пухса тиерӗ те, инҫетри пӗр пасара кайса сутрӗ. Пуху пулнӑ каҫхине кивӗ ҫурта вут тӗртсе тарнӑ хыҫҫӑн тӑваттӑмӗш кунӗнче Махорка каялла пырса тухрӗ. Уртем ӑна та „ҫанталӑк лӑпланиччен" аякра ҫӳреме хушрӗ.

Кунран кун сӑнсӑрланса, тискерленсе пынӑ Махорка ку каҫхине пушшех те хӑрушӑ сӑнлӑ пулчӗ. Куҫӗсем шыҫса тухнӑ, янах шӑммисем тата ытларах тулалла тухса палӑракан пулнӑ, ӳчӗ темле ҫӗр тӗслӗ пулса кайнӑ. Стакан хыҫҫӑн стакан тултарса ӗҫрӗ вӑл, анчах эрех те ӳсӗртмерӗ ӑна, куҫӗсем тата ытларах пӑтранчӗҫ ҫеҫ...

— Шишкӑпа Чалӑшкуҫ килмерӗҫ эппин?—ыйтрӗ вӑл, нумайччен чӗнмесӗр ларнӑ хыҫҫӑн,

— Ҫук.

— Ӑҫта ҫухалчӗҫ вӑл шуйттансем?..

— Пӗлместӗп ҫав.

Махорка урӑх ыйтмарӗ. Сӗтел урлӑ ним тӗлсӗр пӑхса, нумай вӑхӑт сӑмах хушмарӗ. Юлашки вӑхӑтра, ялан пӗччен пулнипе нумай шухӑшланӑскер, вӑл халь те шухӑша кайрӗ. Унӑн ӳсӗрӗлме пуҫланӑ, шавласа тӑракан пуҫӗнче пӗрин хыҫҫӑн тепри аса-илӳсем ҫуралма пуҫларӗҫ... Акӑ вӑл ҫамрӑк, вунсаккӑрти каччӑ, „пыл та ҫу пек" пурнӑҫпа пурӑнать. Унӑн ашшӗ пуян, вӑл никамран та хӑрамасть, мӗнле хӗре ҫавӑрас тет—ҫавна ҫавӑрать, хӗр-

ун еннелле çавранмасан—вăйпах парантарать. Праçниксенче ун пек чаплă тумланакан никам та çук, çимĕксенче пурте ун çине пӳрнепе кăтартса „Разумăх ачи" теççĕ шăппăн... Çаварниччен темиçе эрне малтан хура йăпăра кӳлмесĕр сĕлĕ çитерсе тăратнă, çаварни çитсен вара ăна кӳлсе, ялсем тăрăх çил-тăман пек çӳренĕ, сынсен çунисене çаклатса, вĕсене тӳнтеретӳнтере хăварнă... „Кур пире, палла пире!.." Кам та пулин кăмăла каймасан е ăна хирĕç сăмах чĕнсен—ăна хĕнемешкĕн тара тытмалăх кĕсъере укçа яланах пур... Унтан вăл—рекрут, пĕр эрне ытла çĕр çĕмĕрттерсе çӳрет, çапăçать, хăйне кăмăла кайманнисене хĕнет, кантăксене çапса ватать, икĕ хĕре тытса пусмăрлать... Станцине çынсем çурран утаççĕ, вăл тройкăпа... Пенза, Ростов, Псков... Вăл ĕнтĕ унтер-офицер... Ансăр, кукăрмакăр тăкăрлăк, унта, çӳлти хутра, проститутка Элла... Пĕринче, эрех кӳпсе тултарсан, ӳсĕр „кĕçĕн чинсем" хушшинче çапăçу пуçланса каять, ăна çӳлти хутран пусма тăрăх кутăн антарса яраççĕ... Кайран—фронт, хăруша та тискер кунсем, хуласенче тăнă чух—каллех ӳсĕр каçсем, каллех сутăнчăк хĕрарăмсем... Революци, митингсем, „война до победного конца", вăл мирлĕ хресченсене персе вĕлерет... Нумаях та вăхăт иртмест—тепĕр революци пулать, ун хыççăн шăпланма тивет, граждан вăрçи пуçлансан—тылра юлать... Укçа кирлĕ... Ăна темле вăрттăн пуранакан, ялан çухисене тăратса çӳрекен çынсемпе паллаштараççĕ, вăл çар хатĕрĕсене сутма тытăнать, каллех „сарлака пурнăç" пуçланса каять... Унтан сасартăк—терме. Шăршă, пăчă, тĕттĕм. Хăсăк килет... Кунтан тарса хăтăлсан — килсĕр йытă пурнăçĕ тапранать... Таттисĕр çаратусем, айăпсăр çынсен юнĕ, ĕçкĕ; пĕрмай, кашни кун, кашни самантра сыхланса, тытасран хăраса, тарса пуранмалла... Анчах—хăçанччен? Малашне ăçта каймалла? Пĕтĕмпех арканать, ĕмĕтсем сӳнеççĕ. çулсем татăлчĕç... Ĕнтĕ пурĕпĕр çĕнес çук коммунистсене, иртни—тавранас çук, вăл пĕтрĕ, яланлăхах, ĕмĕрлĕхех путрĕ... Таврара пурте пурнăç тума тăрăшаççĕ, пурин те ĕмĕт, тĕл, паллă çул пур...

— Манăн мĕн пур? Мĕскер? Нимĕн те, нимĕн те çук, пушă, тĕттĕм...

И я подохну где-нибудь
В канаве, под забо-ором,—

юрласа ячĕ Махорка хуллен, шала кайнă сасăпа. Унăн паçăрхинчен те ытларах пăтранса кайнă куçĕсем вăйсăррăн хупăнчĕç... Пĕр-ик минут пек вăхăт иртсен, вăл тăрук пуçне çĕклерĕ те, пĕтĕм вăйĕпе сĕтел çине чышкăпа çапрĕ.

— Пурпĕрех асăнтаратăп-ха хам çинчен!... Парăнмастăп-ха халех! Ман вилĕм хакла ларать вĕсене!..

Унтан хăвăрт пуçтарăнчĕ те, Уртеме ал пачĕ.

— Сывă пул!

— Ăçта каятăн ĕнтĕ халь?—ыйтрĕ Уртем.

— Хусана. Унта манăн пĕр тус пурччĕ. Çавна тупас,

— Килетĕн-и?

— Мĕнле пулĕ...

— Пĕр-ик эрнерен килсе пăхсан юратчĕ. Лăпланать унччен..

— Куранĕ унта. Эс çыру çыр.

Махорка Уртеме хăй каяс адреса хут татки çине çырса пачĕ те тухса кайрĕ. Ун хыççăн алăка питĕрсе кĕрсен, Уртем нумайччен çывăрса каяймарĕ. Вăл, тек-текех пĕр енчен тепĕр еннелле çавранкаласа, малашнехи çинчен, епле майпа ĕлекхи пек пуранасси, хăйне чăрмантаракансене путарса лартасси, каллех хăйне пăхăнмалла тăвасси çинчен шухăшласа выртрĕ... Анчах темле шухăшласан та, хăйĕн ĕмĕчĕсене пурнăçламашкăн

тӳрӗ, шанчӑклӑ мел шухӑшласа тупаймарӗ.

— Ниушлӗ ҫав этем усаллисене парӑнмалла пулать? Ниушлӗ ялта ҫав Тарас пеккисем, Ҫӗтӗк Яккусемех пуҫ пулса тӑрӗҫ? Ҫук, темле пулсан та, вӑй илме май пама юрамасть вӗсене... Пуҫӗпех пӗтереҫҫӗ вара.

## XVIII

Тӗлӗкре Уртеме темле пысӑк хура йытӑсем, йӗке-хӳресем—тем мурӗ те курӑнчӗ. Вӗсем пурте Уртеме сырса илсе, ӑна ҫурса тӑкма хӑтланчӗҫ. Уртем тем пысӑкӑш рычак тытсах ҫапӑҫрӗ вӗсемпе. Ҫав вӑхӑтрах ун умне нумаях пулмасть ухмаха ернӗ тӑлӑх арӑм хӑйӗн хӗр ачине ҫавӑтса пырса тухрӗ те, унтан ахӑлтатсах кулма тапратрӗ. Унччен те пулмарӗ—ҫав хӗрарӑм ӑна тӑпрапа сапма, чул таткисемпе пеме тытӑнчӗ. Таҫта параппан ҫапма тапратрӗҫ. Уртем ҫав тери хӑраса вӑранса кайрӗ.

Килхушшинелле тухакан чӳречерен шаккаҫҫӗ-мӗн. Вӑл кӑкӑрӗ ҫинелле пухӑнса ларнӑ ҫивиттине ҫилӗпе аяккалла ывӑтса ячӗ те, вырӑн ҫинчен тӑрса, чӳрече патне пычӗ. Килхушшинчен Мамун кӗрӗвӗн ывӑл ачи шакканӑ иккен.

„Ырра мар ку... Ахальтен килес ҫук вӑл кун пек ирхи вӑхӑтра...“—шухӑшларӗ те Уртем ҫенӗк алӑкне тухса уҫрӗ.

— Ма килтӗн?—ыйтрӗ вӑл ачаран.

— Аттене... тытса кайрӗҫ...—терӗ лешӗ йӗрсе яма хатӗрленсе.—Анне Басана пыма хушрӗ...

— Камсем? Хӑҫан?—кӑшкӑрса ячӗ Уртем, тӑруках пӗтӗм шӑмшакӗ сивӗннине туйса.

— Ара, судьясем... Шкула килнисем... Пычӗҫ, тет те, кӗлете уҫтарса, хӑйсен ҫӑраҫҫипе питӗрчӗҫ, тет, унтан аттене илсе кайрӗҫ, тет... Эп хам курман, анне калать. Атя-ха пирӗн пата...

Уртем, йӑпӑр-япӑр хулпуҫҫинчен сӑкман уртса ярса, йӑмӑкӗ патне кайрӗ те—ӗҫ мӗнле пулнине тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлчӗ. Чӑнах та, ӗҫ ача каласа панӑ пекех пулнӑ иккен. Яла килнӗ комисси председателӗ паян хӗвел тухнӑ чух Тараспа тата яла темле ҫӗнӗрен килнӗ ҫынпа пӗрле пынӑ та, государство выҫҫисене пулӑшма панӑ ҫимӗҫсене усракан кӗлет алӑкӗ ҫине пломба хунӑ хыҫҫӑн, Мамуна арестленӗ... Ку хыпар Уртеме калама та ҫук пӑлхатса, хаярлатса ячӗ. Ним тума пӗлменнипе, хӑйӗн аллине хӑй ҫыртса илчӗ. Унтан пӗр вӑхӑт ним шухӑшлама та пӗлмерӗ, унӑн пуҫӗнче пӗтӗмпех пӑтрашса кайрӗ. Вӑл Мамун арӑмне те йӗркеллӗн нимех те калаймарӗ, ниепле канаш та параймарӗ. Шӑлне ҫыртрӗ те, алӑка хыттӑн уҫса хупса, тухса кайрӗ.

„Мӗншӗн-ши? Мӗн пӗлчӗҫ-ши? Пӗтӗмпех яка тунӑччӗ-ҫке, нимӗн те палӑрмалла мар пекчӗ... Мӗн тумалла-ши халь? Махорка пулин—вӑл та кайрӗ, мур...“—шухӑшсем ҫаврӑнчӗҫ унӑн пуҫӗнче.

Анчах та пуҫра ҫуралакан ыйтусем ҫине ответ тупаймарӗ.

Ответне тупма чӑнах та йывӑр пулнӑ.

...Мамуна малтанах арестлеме ҫителӗклӗ сӑлтав тупӑнман. Комисси унӑн пур хучӗсене те тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн, пӗтӗмӗшпе илсен, государство панӑ ҫимӗҫсене кирлӗ пекех расхутланӑ пек курӑннӑ. Ҫавӑн чухлӗ илнӗ—ҫавӑн чухлӗ ҫитерсе пӗтернӗ. Балансне чиперех туса пынӑ вӑл,—„шито-крыто“. Мамун ҫимӗҫсене вӑрланине, ӗҫсем приход-расход кӗнекинче кӑтартнӑ пек пулса пыманнине комисси аванах туйнӑ, анчах тӳррипех айӑплама май килмен.

— Ним тума та ҫук вӗт, шывран типпӗнех тухать, прохвост,—тенӗ ун пирки комисси председателӗ тарӑхса.

Анчах сасартăк ĕç урăх майлă çаврăнса кайнă...

Шăпах çав кунсенче, уезд хулинчи пасарта пĕр ватăрах мăнтăр майра пит те тутлă сăнлă шурă булкăсем сутса ларнă. Кашни булкинех вăл икĕ пин тенкĕпе панă. Илекенни авантарах тумланнă пулсан, укçаллă çын пек туйăнсан, майра ăна шăппăн кăна маргарин, сахăр, песок, какао сĕннĕ... Çын илме килĕшсен, майра таçтан, хăйĕн майсăр сарлака юбки ăшĕнчен ăна та, куна та туртса кăларнă.

Пасарта сăнаса çӳрекен сар çӳçлĕ çамрăк чекист çакна асăрханă та — ыйтма тытăннă: кун пек лайăх çăнăх ăçтан тупрăн эс, мĕнле сахăр сутрăн? Майра ăна çав тери илĕртсе юптарма тытăннă: ывăл Мускавра пурăнать, çав ярса пачĕ, укça кирлĕ пирки сутатăп, тенĕ. Чекист ĕненмен. Майра тем пекех турра асăнса, сăхсăхса, ашшĕ-амăшĕ ячĕпе тупа тунă пулин те — ăна чекист хăйпе пĕрле илсе кайнă. Унтан, тепĕр юлташне чĕнсе майран килне кайса ухтарнă. Кунта вара, сад варринчи беседкăн урайĕ айĕнче, темĕн тĕрлĕ çимĕçсем те — шур çăнăх, сахăр, маргарин, банксемпе „çăралатнă сĕт“ тупнă...

Майран ним каламалли те юлман, ăна ĕнтĕ куçкĕретĕнех тытнă. Допросра тĕпчеме тытăнсан, вăл ку япаласене ăçтан тупни çинчен каласшăн пулман, анчах та следователь çине тăрсах „стена çумне“ хĕсме тапратсан — тунайман вара, çимĕçсене Энтриялĕнчи Мамунран илни çинчен, вăл кашни уйăхрах — столовăй валли çимĕçсем илме килсен — ăна сутă тума парса хăварни çинчен каласа панă. Çав кунах ку ĕçе малалла тĕрĕслемешкĕн Энтриялне çын янă, вăл унта çĕрле пырса тухсанах, комисси председательне ĕçпе паллаштарнă та, ирпе Мамуна арестлемелле тунă. Ăна мĕншĕн хупнине урăх никам та пĕлмен...

Виçĕ кунран Куçмапа Иливан сучĕ пулчĕ. Айăплисен тенкелĕ çинче вĕсемпе пĕрле Уртемĕн кĕрӳшĕ Мамун та ларчĕ.

Суда итлеме Энтриялĕнчи çынсем çеç мар, таврари çывăх ялсенчен те нумайăн пухăнчĕç, шкул çуртне халăх савăлпа çапса хĕснĕ пекех тулчĕ. Нумай вăхăт хушши халăх пурлăхне салатса, халăхран мăшкăлласа, выçă çынсен юлашки татăкне туртса илсе, ыр курса пурăннă тискер чĕреллĕ этемсем халăх куçĕ умĕнче юлашки хут мĕн каласси не пурин те итлесе пăхас килнĕ çав!

Вĕсем виççĕшĕ те палламалла мар улшăннă иккен! Ĕлĕкхи çивĕч, вăшт та вашт кăна çаврăнкалакан, çынсем çине яланах çиелтен, мăнкăмăлпа пăхакан этемсем — пачах та пусăрăнса ларнă-мĕн. Калаçасса та ерипен, айăпсăрах суда лекнĕ пек туйăнма тăрăшса калаçрĕç. Вĕсем пĕр усал ĕç те туман имĕш, яланах, пур чухне те халăхшăн тăрăшнă, çĕр çывăрмасăр ĕçленĕ... Пуринчен ытла, ку тĕлĕшпе Иливан пит ăста хăтланчĕ: пурнăçра нумай асап курнă çын пек, çинçе, вăрăмтуна сасси пек сасăпа, сăмахсене тăсса калаçрĕ, хăй айăплă маррине кăтартма — аллипе пĕрмай хăйне чĕринчен тытрĕ, час-часах турра асăнса сăхсăха-сăхсăха илчĕ. Малтанах халăх ăна шăппăн, тĕлĕнерех итлесе ларчĕ, анчах майĕпе унта та кунта тăрăхланисем илтĕнме пуçларĕç:

— Ай-уй, — ку турра пит ĕненекен çын иккен...

— Кулине патне те çапла сăхсăхсах пынă-ши вăл?

— Кам пĕлет, тен, кашни лаша вăрлаттарнă хыççăнах чиркĕве кайса çурта лартнă пуль...

— Епле, çветтуй жулик!

Иливан çине тăрсах турă ячĕпе витĕнме тăрăшни, пулчĕ-пулмарĕ хĕрес хывни судья вырăнче ларакан комисси председательне те култарса ячĕ.

— Итле-ха, подсудимый Иливанов,—терӗ вӑл ӑна,—кунта турра чӑрмантарма та кирлех мар пулӗ. Суд—чиркӳ мар, эпӗ—пуп мар...

Преступниксем виççӗшӗ те хӑйсен сӑмахӗсемпе судьясен чӗрисене çемçетме, халӑха — хӗрхентерме, унӑн кӑмӑлне хӑйсене майлӑ çавӑрма тӑрӑшрӗç, анчах никамӑн куçӗнче те вӗсене шеллени курӑнмарӗ, вӗсем майлӑ пулни палӑрмарӗ...

Свидетельсем—пӗрин хыççӑн теприн—пурте вӗсене хирӗçле, мӗн курнилтни, мӗн пулни-тӳсни çинчен ним пытармасӑр каларӗç. Лӑпкӑн ларма пултарайман Иливан, судья асӑрхаттарнисене пӑхмасӑрах, малтанхи вӑхӑтра свидетельсене хирӗç калаçма, вӗсемпе тавлашма тӑрӑшрӗ, анчах та, суда пынӑ халӑх пӗтӗмпех преступниксене хирӗçле пулнине кура, шарлами пулчӗ, тӗлӗннӗ пек пулса, пӗрмаях пуçӗпе сулкаларӗ, темшӗн пит час тарлакан куçлӑхне хыва-хыва шӑлчӗ. Куçмапа Мамун никама хирӗç те чӗнмерӗç, пачах чӗлхесӗр çынсем пек, шӑлӗсене çыртса, урайнелле пӑхса ларчӗç.

Суд пӗр кунрах пӗтмерӗ. Чылай свидетельсенчен—вӑл шутрах хуларан юри кайса илсе килнӗ, хайхи пасарта булкӑсемпе сутӑ тунӑ мӑнтӑр майраран та—тепӗр кунне ыйтрӗç. Ку та—те хӑранипе, те хӑй айӑпран хӑтӑласса шанса—пӗтӗмпех каласа пачӗ. Мамуна вӑл революцичченех палланӑ иккен, вӑл çав майран упӑшки патӗнче пӗр вӑхӑт приказчик та пулнӑ. Выçӑ çынсене çитермелли çимӗçсене Мамун ӑна хӑй пырса сӗннӗ, сутса илнӗ тупӑшсем пирки калаçнӑ чух мӑкӑриччи пит вӑйлӑ ӗçнӗ...

— Самогонкине те хӑех илсе пычӗ, эп закуска валли какай жарить турӑм çеç...—терӗ майра.

Ун сӑмахӗсем ку таранччен самаях йӗркеллӗ ларнӑ халӑха сасартӑках пӑлхатса ячӗç,—çынсем харӑсах хусканма, калаçма, сӗрлеме тапратрӗç...

— Хӑйне жарить тӑвасчӗ ӑна... вӗри хулӑпа!

— Ёлӗк халӑх ӗнси çинче пурӑннӑ та—халь те çаплах пурӑнасшӑн...

— Мамунӗ... Мамунӗ мӗн хӑтланнӑ!

— Пулать те çав намӑссӑр!

— Çынсем выçса вилеççӗ, а вӑл, халӑхӑн юлашки çӑкӑр татӑкне сутса, хӗрарӑмсемпе ашкӑнса çӳренӗ...

Судья — комисси председателӗ — сӗтел çине шаккаса, халӑха шӑплантарчӗ те, майрана тата темиçе ыйту панӑ хыççӑн — свидетельсене ыйтса пӗтерни çинчен пӗлтерчӗ.

— Айӑплисене юлашки сӑмах паратӑп,—терӗ вӑл унтан.—Хӑшӗн мӗн каламалли пур—калӑр.

Каçӑр Куçмапа Мамун пуçӗсене те çӗклемерӗç, анчах та Иливан тӳрех сиксе тӑчӗ.

— Эп калатӑп! Ман пур...

— Кала.

— Эпӗ... эпӗ, граждан судьясем, айӑплӑ... Чӑнласах калатӑп: айӑплӑ...—пуçларӗ Иливан, чӗтрекен аллипе куçлӑхне хывса.

— Ӑна эпир ху каламасӑрах пӗлетпӗр,—пӳлчӗ ӑна хыçалта ларакансенчен пӗри.

Судья карандашӗпе шаккаса илчӗ. Иливан малалла калама тытӑнчӗ:

— Хам айӑплине тинех ӑнланса илтӗм эпӗ... Туршӑн та... (вӑл хӗрес хучӗ) ӑнлантӑм ӗнтӗ...

Халӑх хушинче такам кулса ячӗ:

— Тур пулӑштӑр эппин!

— Чӑнах калатӑп, — терӗ Иливан тепӗр хут, çамки çинчи тарне шӑлса.— Ёненӗр мана... Эпӗ... эпӗ урӑх нихçан та апла хӑтланмӑп... Каçарӑр мана... Хӗрхенӗр!..

— Эс ху нумай хӗрхеннӗ-и халӑха?

— Эккей, кашкӑр сурӑх тирӗпе витӗнме пуçларӗ! — илтӗнчӗ каллех халӑх хушшинчен.

— Малашне эп те хĕрхенĕп... Туршăн та...

— Сан хĕрхенӳсĕр те пурăнма пĕлĕпĕр-çке!

— Шуйттана кайса пар чунна!

Судьян каллех халăха шăп ларма хушмалла пулчĕ. Шав чарăнсан, Иливана çĕнĕрен сăмах пачĕ.

— Кала малалла.

— Мĕн калам ĕнтĕ эп?—терĕ ăна хирĕç вайсăрлансах ларвă сасăпа Иливан, темле хутланса ларса.—Пĕтрĕм... Никам та ман майлă каламасть... хĕрхенмеççĕ мана, старике...

Çав самантрах такам арăмĕн сасси янраса кайрĕ:

— Чĕчĕ памалла мар-и тата сана, сар шуйттана?! Эккей, тупăннă! Хупасчĕ карланкуна, намăссăр!

— Вот, ку тĕрĕс! — çирĕплетрĕ тепри.

Судья Иливанран татах ыйтрĕ:

— Ну, тек каламастăн-и эппин?

Иливан пуçĕпе пăркаларĕ.

— Эсир тата?—терĕ судья Каçăр Куçмапа Мамуна.

Кусем те чĕнмерĕç.

— Апла пулсан, суд умне тăратнă çынсене халăх ячĕпе тухса айăплама, сăмах Николаев Тарас юлташа паратăп...

Сылтăм енчи чӳрече патĕнче çак таранччен ним чĕнмесĕр, аллинчи хут çине пĕрмай кĕттĕн-кĕттĕн çырса ларнă Тарас ура çине тăчĕ те, тараннăн сывласа илсе, хăйĕн сăмахне майĕпе пуçларĕ.

— Юлташсем, эп калас тенисене нумайăшне свидетельсем каларĕç ĕнтĕ,—терĕ вăл лăпкăн,—çак хăрушă çынсен (Тарас преступниксем çине кăтартрĕ) пур тискер ĕçĕсене те, вĕсен ирсĕр сăн-сăпатне те пур енчен те пит аван кăтартса пачĕç, çавăнпа та ман калаçмалли нумай мар. Çапах та, кăшт каласах пулать. Кама суд тăватпăр эпир паян? Халăхăн чи усал, чи тискер, чи хăрушă тăшманĕсене суд тăватпăр.

Тарасăн сасси кунта тăруках хăпарса кайрĕ. Унтан сăнĕ те темле улшăнчĕ: пичĕ хĕрелсе кайрĕ, куçĕсем сарăлса, ытларах ялтăртатма пуçларĕç.

— Халăх чи йывăр самантсене пурăнса ирттернĕ чух, халăх выçăпа аптăранă вăхăтра, пур юлашки вайсене пухса тытăнса тăнă кунсенче—вĕсем, çак виçĕ кашкăр, этем сăнсăпатне çухатнăскерсем—тискер кайăксем пекех халăх юнне ĕçсе пурăннă! Вĕсем халăхăн юнĕпе, халăхăн куççулĕпе, тарĕпе, халăхăн пурнăçĕпе сутă тунă!.. Акă мĕнле çăхансем лараççĕ пирĕн умра...

Тарас сывлăш çавăрса илчĕ те, Каçăр Куçмапа Иливанăн тата Мамунăн преступленийĕсене пĕрин хыççăн теприне, йĕркипе, васкамасăр тишкĕрме тытăнчĕ. Бандитсемпе туслашса, вĕсене халăха çаратма пулăшни, халăха валли панă вăрмана, акмалли вăрлăха, тĕрлĕ таварсене аяккалла салатни, выçă халăхăн юлашки çăкрине вăрласа сутни тата ытти те—нимĕн те палăрмасăр юлмарĕ. Суда пынă халăх ăна пит те тӗнкерсе, шăппăн, пĕр сăмахне те сиктермесĕр итлерĕ. Алăк патнерех хĕсĕнсе тăнă Варук, Тарас сăмахĕсене итленĕ май, сывламан пекех пулчĕ:

„Епле аван калать... Ăçтан кăна тупать сăмаххисене, кĕнеке çинчен вулана пек вĕт... Çитменнине пĕтĕмпех тĕрĕс тата..."

— Пуçĕпех, яланлăхах тĕп тумалла çакăн пек çынсене, вĕсен тĕсĕ мар—шăрши те ан пултăр пирĕн хушăра! Халăх пурнăçне вĕсем нимĕн вырăнне те хуман... Эпир те хĕрхенсе тăма пултараймастпăр вĕсене. Совет судĕнчен эпир çак хăрушă преступниксене персе пăрахма ыйтатпăр!—тесе пĕтерчĕ те Тарас, хăйĕн малтанхи вырăнне ларчĕ.

— Чăн калать...

— Пире хĕрхенмен вĕт вĕсем...

— Йытта йытă вилĕмĕ пулмалла та çав,—пăшăлтатса илчĕç халăх хушшинче.

Суд хыçалти пӳлĕме совещанине кайсан, çынсем нумайăшĕ килхушшинелле, урамалла тухрĕç. Шалта юлнисем те, тула тухнисем те—приговор епле пуласси, мĕнле тусан авантарах пуласси, преступниксем мĕнешкел наказанине тивĕçли çинчен калаçма, сӳтсе-явма тапратрĕç. Калаçакансем хушшинче вĕсене хĕрхенекенсем тупăнмарĕç...

Каçăр Куçмапа Иливана суд сакăршар çуллăха, Мамуна пилĕк çула хупмалла турĕ. Çав кунах, каçхи кӳлĕмпе, вĕсене ялтан илсе кайрĕç. Ăсатма Энтрияль çыннисем пит нумайăн тухрĕç, анчах та, паçăрхи пекех, хĕрхенсе-туса калаçни пулмарĕ,—çынсем ахальтен, „интересшĕн" çеç тухнă иккен. Каçăр Куçмапа Мамун арăмĕсем çеç юри, пĕтĕм халăха илттерме тăрăшса, çуйăхрĕç, хăйсен упăшкисене „тыттаракансене" те, судне тăвакансене те, халь „кураймасăр савăнса тăракансене" те темĕн те пĕр каласа, ал-урасăр пулма, ача-пăчасăр юлма, хăйсене те çавнашкалах тĕрмене кайса ларма сĕнсе ылханчĕç. Тата Иливана кăрчама ăсти Микстур Кĕтеринĕ тутăрпа çыхса пашалусем пырса тыттарчĕ те, куççулĕсене шăлкаласа, ал пачĕ. Куна курсан чылайăшĕ кула-кула илчĕç:

— Çӳпçи хупăлчине хĕрхенет...

— Ара вĕт, лешĕ ăна нумай ырă кăтартнă-çке!

Суд вăхăтĕнче халăх хушшинче палăрмасăр ларма тăрăшнă Лява Уртемĕ халĕ те хăйне ытлашшиех палăртмарĕ. Мамун кĕрӳшĕ патне пырса:

— Ытлах ан хуйхăр, — терĕ сиввĕн. — Кама кирлине — таварăпăр. Çемьешĕн — ан пăшăрхан, пурăнăпăр-ха...

Урăх нимĕн те каламарĕ, аяккалла пăрăнчĕ.

Преступниксене лартнă лавсем тапранса кайрĕç. Пĕр пилĕк минутран вĕсем уй хапхинчен тухса курăнми те пулчĕç, çул çинчи тусан çеç чылай вăхăт мăкăрланса тăчĕ...

## XXII

Киле таврăнсан Тарасăн темшĕн çывăрас килмерĕ. Амăшĕпе шăллĕне вăратас мар тесе, вăл хуллен кăна хыпашлакаласа „мигалка" тупса çутрĕ, сентре çинчен темле хутсем илчĕ те—сĕтел хушшине ларчĕ. Хутсене суйланă хушăра унăн аллине пĕр фотоӳкерчĕк кĕрех кайрĕ. Малтанах ăна вăл ытти хутсемпе пĕрле аяккалла хума тăчĕ, анчах та—хумарĕ, ăна лампа патнерех илсе пырса—тинкерсех пăхма тытăнчĕ.

Ку—Тарас пĕлтĕр çак вăхăтра Çĕпĕрти пĕр хулара хăйĕн икĕ юлташĕпе пĕрле ӳкерттернĕ карточка пулнă. Пĕри — Саранск çывăхĕнчи мăкшă каччи, тепри Чулхула вырăсĕ, Сормово заводĕнчи рабочи пулнă, вĕсем икĕ çулталăка яхăн пĕрле пурăннă, нумай çапăçусенче пулнă, пĕр хуйхăпа хуйхăрнă, пĕр савăнăçпа савăннă. Мăкши çак карточкăна ӳкерттернĕ хыççăнах пĕр çапăçура вилнĕ, вырăсĕ тепĕр çулталăкран Тараспа пĕрлех киле таврăннă. Атăл тăрăх Васильсурска çитсен—вĕсем пĕр-пĕринпе ăшшăн, тăвансем пекех уйрăлнă, пĕр-пĕринпе çыхăну тытма, çырусем çырма сăмах панă.

Карточка çине пăхса ларнă май Тарас пуçĕнче нумай асаилӳсем çуралса шуса иртрĕç...

„Мĕнле пурăнать-ши вăл халь? Çыру çырас-ха..."—шухăшларĕ вăл юлашкинчен. Çавăнтах хутпа карандаш илчĕ те çырма тытăнчĕ.

„*Тусăм Потап*, — çырчĕ вăл, — *иксĕмĕр уйрăлнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, анчах эпĕ вуçех*

*те сисмерӗм ăна, кунсем çав тери хăвăрт иртсе пыраççӗ... Киле çитсенех ӗçе кӳлӗнтӗм те (ним пысăклатмасăрах калатăп сана!) обоз лаши пекех ӗçлетӗп. Пирӗн ялти пурнăç питех те начармӗн, советра тăшмансем ларнă, пурнăçа юхăнтарсах янă,—манăн вара çӗнӗ шăпăр вырăнне пулса, чăн малтан çав шăршлă çӳп-çапа тасатма тӳр килчӗ. Халь ӗнтӗ ӗçсем юсана пуçларӗç, темелле. çамрăксене пӗрлештертӗмӗр—ячейка ӗçлеме тытăнчӗ, актив пур ӗнтӗ, хӗрарăмсене те вырăнтан хускатма тапратрăмăр. Пӗр пысăк субботник иртертӗм, çак кунсенче тата тепре тума шут пур-ха. Пуçра питӗ пысăк плансем çуралаççӗ, тусăм. Ял пурнăçне епле улăштарса, çӗнетсе пымаллине тӗкӗр çинчи пекех куратăп... Халь эпир ӗçе тин çеç пуçăнатпăр-ха вӗт, чăн-чăн пысăк ӗçсем, татăклă çапăçусем пӗтӗмпех малта. Анчах та—хăратмаççӗ вӗсем мана. пӗртте шиклентермеççӗ! Çав ӗçсем витӗр, çулсем урлă — чечеклӗ, телейлӗ, илемлӗ пурнăç курăнать вӗт, тусăм, çавă хаваслантарать мана, чӗрене çӗклет, малалла туртать... Çулсем иртӗç, хамăра чăрмантаракан тăшмансене пуçӗпех аркатăпăр, тӳснӗ йывăрлăхсем манăç пулӗç, ӗмӗтленнӗ ӗмӗтсем çитӗç... Çавăншăн, хамăрăн пуласлăхшăн, малашнехи телейлӗ пурнăçшăн ӗçлетпӗр те вӗт халь! Астăватăн-и. киле тухса килес умӗн военком калаçрӗ пирӗнпе? Вăл пирӗн çӗршыв вунă-вунпилӗк çултан мӗнешкел пуласси çинчен каларӗ... Пулатех вăл калани! Нумаях та вăхăт иртмӗ—пирӗн çӗршыв пек вăйлă çӗршыв та пулмӗ тӗнчере. Эсир хулара ӗçлӗр, эпир—ялта, хуçалăх кунран кун çирӗпленсе хăпарӗ, культура сарăлӗ, хулапа ял хушшинчи уйрăмлăх пӗтсе пырӗ... Хамăртан килет вӗт вăл, хамăр вăйран, хамăр тăрăшса ӗçленинчен! Аса илӗпӗр вара иртнӗ кунсене... тӗлӗкри пек... Çапах та, хамăр пурнăçа усăсăр пурăнса ирттермерӗмӗр, теме тивӗçлӗ пулăпăр. Çапла мар-и-мӗн, тусăм?*

*Анчах та, эпӗ ытлашши аяккалла пăрăнса кайрăм пулас. Политграмота вӗрентет, тейӗн тата.*

*Хамăн пурнăçра улшăнусем çук-ха. Елӗкхи пекех хусах. Леш хӗр... (астăватăн-и, Варук тенӗскерне асăнаттăм) улталаман мана, таврăнасса кӗтнӗ. Час-часах тӗл пулкалатпăр, майӗпе халăх хушшинчи ӗçе хутшăнтарма тăрăшатăп ăна. Аван çын. Ăсӗ те пур, кăмăлӗ те аван Тен, кӗркунне туя чӗнӗп сана... А эс мӗнле? Леш хут фабрикинчи Таня?*

*Анне пит чирлӗ пулнă та—сывалчӗ, халь чиперех çӳрет; шăллăм арçури пекех çивӗчленсе кайнă... Тата мӗн? Тупата—нимӗн те çук. Ыран пӗр пысăк ӗç хускататăп-ха; пӗр çирӗм-вăтăр хуçалăхран çӗре пӗрле ӗçлемелли юлташлăх тăвасшăн. Планӗ пит аван та-ха, мӗнле пулӗ ӗнтӗ. Кайран çырăп.*

*Халлӗхе сывă пулса юл. Çӗр хут салам!*

*Санăн тусу Тарас*".

Мӗн çырнине Тарас çӗнӗрен вуласа тухрӗ те хăйӗнчен хăй тӗлӗнчӗ.

Тулта çанталăк чăннипех пăсăлма пуçларӗ. Çил вăйланнăçемӗн вăйланчӗ, йывăççем кӗркуннехи пек кашларӗç... Тарас çырăва пуçтарса хучӗ те тула тухрӗ. Тӳпене пӗтӗмпех хăвăрт шăвакан çăра пӗлӗтсем хупласа илнӗ иккен, пăч тӗттӗм пулса тăнă. „Исай

мӗнле тӑрать-ши унта? Ҫыварса ан кайтӑр тата... Кун пек каҫсем усал вӗсем...“—шухӑшларӗ Тарас. Ҫавӑнтах пӳрте кӗрсе пиншак тӑхӑнчӗ те, урама тухса, пысӑк утӑмсемпе тӑвалла утрӗ.

## XXIII.

Ҫӗрле, пӗтӗм ял ҫыварса кайсан, Лява Уртемӗн кайри пӳртӗнче, кивӗ лутра сӗтел тавра тӑватӑ арҫынпа пӗр хӗрарӑм тем ҫинчен пит те вӑрттӑн, асарханса калаҫса ларчӗҫ. Кил хуҫи вӗсене валли ӗҫмелли те, ҫимелли те кӑларса хунӑ-мӗн, анчах ҫынсем вӗсем ҫине питех ҫаврӑнса пӑхмарӗҫ, вӗсем нимрен ытла турӑшсем айӗнче ларакан Махорка сӑмахӗсене итлерӗҫ...

... Пӗркунне, Уртемпе сывпуллашса тухса кайсан, вӑл Хусана ҫитсе тухнӑ, анчах унта хӑйӗн тусӗсене тупайман: вӗсенчен хӑшне хупса лартнӑ иккен, хӑшӗсем таҫта мурне кайса ҫухалнӑ. Ют хулара икӗ кун ҫапкаланса ҫӳренӗ хыҫҫӑн—вӑл выҫӑпа аптӑра пуҫланӑ. Атӑл пристанӗнчи касса умӗнче пӗр тутар арӑмӗн аллинченех укҫа туртса илсе тарнӑ, ӑна хӑваласа ҫитсе хӗнеме тапратнӑ, анчах та ку, темле майпа вӗҫерӗнсе, пристаньрен хускалса кайма пуҫланӑ пароход ҫине сикме ӗлкӗрнӗ. Козмодемьянска ҫитсен, вӑл малтанах сӑнаса пынӑ икӗ чемодана вӑрласа тухнӑ та—чемоданри япаласене ҫав кунах пасарта сутса, Энтрияльнелле утнӑ.

Лява Уртемӗ, пӗркунне ӑна сиввӗнтерех ӑсатса янӑ пулин те, халӗ хапӑл тусах йышӑнчӗ.

— Пит аван пулчӗ-ха эс килни,—терӗ вӑл ӑна.—Кӗтсех тӑраттӑм.

— Мӗн апла?

— Ӗҫ пур, тӑванӑм. Пысӑк ӗҫ...

Ҫур пулштух самогонкӑна ӗҫсе ларнӑ чух, Уртем Махоркӑна хӑй шухӑшласа хуни ҫинчен каласа паче. Питӗ вӑрттӑн,—пӳртре ҫын пулнӑ пулсан, вӑл та илтмелле мар каларӗ.

— Ҫынсем кирлӗ,—терӗ вӑл, Уртем чарӑнсан.—Шанчӑклӑ ҫынсем тупма пулать-и?

— А нумай кирлӗ-и?

— Виҫ-тӑват ҫын.

— Пӗрре пур...

— Кам?

— Ҫынни тӑмсайрах ӗнтӗ, анчах та—комсомолсене юратмасть, ҫавӑншӑн паха. Микстур Михали, теҫҫӗ.

— Калаҫса пӑх. Урӑх ҫук-и?

— Хамӑр пулӑпӑр эппин... Питех кирлӗ пулсан—хӗрарӑмсем пур.

...Вӗсен телейне, пачах та кӗтмен ҫӗртен, тепӗр каҫхине Уртем пӳрт алӑкне Чалӑшкуҫ пырса шаккарӗ. Ку бандит ҫак хушӑра нумай ҫапкаланса ҫӳренӗ иккен, пӗр вӑхӑт тӑван ялӗнче те пурӑннӑ, анчах та ялти ҫамрӑксем, вӑл камне чухласа илсе, ӑна тытса пама хатӗрленнине сиссен—часрах тухса шунӑ. Ниҫта кайма ҫуккипе, вӑл каллех Уртем патне пырса тухнӑ.

Махорка ӑна тӳрех пулас „ӗҫ“ ҫинчен ӑнлантарса пачӗ, Чалӑшкуҫ пӗр сӑмахсӑрах килӗшрӗ.

Микстур Михалине Уртем пит ӑста ҫаварса илчӗ. Вӑл сыпма юратнине астуса, кӗсйине ҫур пулштух чикрӗ те, ун патне ҫӑраҫҫи юсаттарас сӑлтавпа пычӗ. (Микстур тимӗр хатӗрсемпе кӑшт-кашт аппаланкаланӑ). Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах... Пурнӑҫ начарри, ялта халь комсомолецсем пуҫ пулса тӑни, Михалана вӗсем хисеплеменни ҫине кӗрсе кайрӗ Уртем. Пӗр сехет хушшинче ӗҫ пулса та тӑчӗ, Микстур комсомолецсене хирӗҫ хуть мӗн тума та хатӗр иккенни курӑнчӗ. Уртем ӑна тумлавма пулӑшасси ҫинчен каласан, вӑл антӑхсах кайрӗ вара.

— Шӑлавар ҫук-и сан?—терӗ тӳрех.

— Ма ҫук пултӑр? Пур... Халь тесен—халь пама пултаратӑп.

— Пар эппин!—сиксе тӑчӗ Микстур, пурин ҫинчен те манса кайса.

— Кăшт тăхтасан пыр. Шăлавар анчах мар, тен тата мĕн те пулин тупăпăр,—юри савăнăçлă пек пулса, куçне хĕссе илчĕ Уртем.—Манпа тусла пулсан, нихçан та аптăрас çук эс!

Хаваслансах кайнă Микстур тепĕр çур сехетренех персе çитрĕ Уртем патне. Ку ăна чăлантан темле кивĕ галифе (бандитсем вăрласа килнĕ янааласен юлашкине), тата çавнашкалах кивĕ сенкер подтяжка тупса пачĕ. Микстур вĕсене йăпăр-япăр тăхăнса ячĕ те, хăйне тăрăх пăхкаласа, пӳртре каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. Уртем ун кăмăлне çĕклентермешкĕн, юриех мухтарĕ:

— Э-э, ку сана калама та çук килĕшет! Шутсăр лайăх, офицер пекех!—терĕ вăл, Микстурăн çинçе те хыткан пĕççисем çинче галифе пуш михĕ пекех çакăнса тăнă пулин те. Çавăнтах чăлантан тата пиншак çĕклесе тухрĕ.

— Çакна тăхăнсан, татах капмар пулмалла та, анчах куна пама кăшт тăхтам-ха... Ĕçне тăвар, вара пурте пулĕ.

— Кала, Уртем пичче, хуть те мĕн тăватăп! — кăшкăрса ячĕ халь ĕнтĕ пуçне пĕтĕмпех çухатнă Микстур.

— Чăнах-и?

— Туршăн та, хĕвелшĕн те!

— Нимрен те хăрамастăн-и?

— Шуйттанран та хăрамастăп!

— Сăхсăх!

Микстур вăльт та вальт çеç хĕрес хурса илчĕ.

— Çĕр çăттăр мана!

— Апла пулсан—акă мĕн, шăллăм... Уртем Микстура кайри пӳрте кӳртсе сĕтел хушшине лартрĕ те, иккĕшĕ те пĕрер черкке самогонка типĕтнĕ хыççăн, ăна „ĕç“ çинчен ăнлантарма тытăнчĕ. Нумай ăнлантарчĕ... Вĕсем калаçнине çĕр çинчи пĕр чун та илтмерĕ... Уртемĕн сăмахĕсене Микстур малтан тĕлĕнсе, унтан хăраса тăнласа ларчĕ, анчах Уртем ăна паттăрлатма тата темиçе черкке пачĕ те,—вăл паçăрхи пекех хăй тем тума та пултарни çинчен ĕнентерме тытăнчĕ...

— Никам та нимĕн те пĕлмест, пĕлес те çук... Анчах эсĕ хăвна пысăк уса кӳретĕн, сана ахаль тăвас çук эпир. Укçа та, çипуç та. Сан пек маттур каччăна мĕн кирлĕ тата? — тесе пĕтерчĕ Уртем хăйĕн сăмахне.

Микстур темиçе самант чĕнмесĕр ларчĕ...

— Ну, ма ним те шарламастăн?— ыйтрĕ Уртем, хăйĕн çăмламас питне Микстурăн пичĕ патнех илсе пырса.— Ай, комсомолсене хĕрхенетĕн-и? Асту, халь тин каялла чакма юрамасть ĕнтĕ. Ăçта та пулин пĕр сăмах персе ярсан—пирĕнпе пĕрле эс те пĕтетĕн!

— Юрать,—пăчăртанса тухрĕ Микстур пырĕнчен.

— Пар аллуна!

— Ме...

— Халь ĕнтĕ Назар таврашнелле кайса çӳре... Каçхине вăл хулана тавар тиеме кайнă. Пĕлме тăрăш: мĕн илсе килнĕ, ăçта хураççĕ...

Микстур итлерĕ, Уртем хушнине кайса пĕлчĕ. Çĕрле пулсан, вара вăл Уртемпе, Махоркăпа, Чалăшкуçпа, Мамун арăмĕпе пĕрле каллех çав сĕтел хушшине ларчĕ. Махорка вĕсене Уртем тахçанах шухăшласа хунă „ĕçе“ мĕнле тумаллине вĕрентрĕ. Тĕрĕссипе каласан, кулаксемпе бандитсен шайки çак каçхине майсăр хăрушă, тискер çарату тума хатĕрленчĕ. Çурçĕр иртсен пĕр сехетре вĕсем Уртем пӳртĕнчен умлăн-хыçлăн тухрĕç те тĕттĕмлĕхре çухалчĕç. Никам куçĕ те курмарĕ вĕсене, пĕр чĕрчун та асăрхамарĕ. Энтриялĕ лăпкăн кăна сывăрчĕ, хĕвеланăç енчен çаплах чуна çӳçентерекен çил вĕрчĕ, урамри вата йăмрасем теме сиснĕ пек шавлăн кашларĕç...

## XXIV.

Павăл пиччерен пăшал илсе хăпарсан, Исай йăпăртлăха килне кĕрсе тухрĕ те каллех Варуксем патне пычĕ.

— Ну, эс çыврах ĕнтĕ, эп хурала тăратăп,—терĕ вăл Назара.—Пĕр-пĕр кашкăр тытăп-и-ха кĕçĕр...

— Асту, хăвна тытса ан çиччĕр,— кулчĕ Варук, крыльца çинче аллине çуса тăраканскер.

— А мĕн? Макăракан пулас çук вĕт, пурĕпĕр,—çавнашкалах кулса ответ пачĕ Исай.

— Ăçтан пĕлес, тен пулĕ?

— Никам та çук...

— Марине çинчен мантăн-и мĕн?

Капла калани Исая тӳрех такăнтарчĕ.

— Ан калаç кирлĕ мара...—тесе аллипе сулчĕ те урамалла тухрĕ.

Малтанах вăл лаç пуçĕнчи каска çине ларчĕ. Ытахальрен чĕлĕм чĕркесе чĕртрĕ (туртасса туртсах кайман вăл), Павăл пиччен берданкине çавăркаласа, гильзине кăларса, кĕпçи витĕр пăхрĕ, унтан каллех авăрларĕ... Çав вăхăтра пăчах тĕттĕмленсе çитрĕ, тӳпере пĕр çутă татăк та курăнми пулчĕ, çил татах вăйланчĕ. Исай вара лаç кĕтессинчен сулахаялла пăранчĕ те, хӳттерех кайса, кĕлет çумĕнчи каска çине вырнаçрĕ.

Этем пĕччен юлсан, никампа калаçмалли те çук чухне, унăн пуçĕнче яланах тĕрлĕ шухăшсем, аса-илӳсем çуралаççĕ, вăл хăйпе хăй калаçма тытăнать. Исайăн та çавнашкалах пулчĕ. Вăл хуллен кăна темле юрă кĕвви шăхăркаласа ларнă май шухăша кайрĕ...

Малтанах паян Маринепе калаçнине, сăмах хушсанах Марине епле именсе хĕрелсе кайнине, ăна куçран пăхма хăяйманнине аса илчĕ. Чăн та çав, Марине питĕ аван хĕр... Санĕпичĕ хитре, кĕлетки—пĕчĕкрех пулин те—илемлĕ, ăсĕ-пуçĕ лайăх, хут пĕлет, ял хушшинче—ыр ятлă... Ун кăмăлне çавăрса, унпа пĕрле ăçта та пулин вĕренме кайсан — мĕнешкел аван пулĕччĕ! Çамрăк-ха вĕт вăл, вĕренме пĕртте кая юлман... Унтан, вĕренсе пĕтерсен, пĕрлешес те киле таврăнас... Вĕренессине — вĕренмеллех, епле пулсан та вĕренмелле, нумай пĕлекен çын пулмалла. Ун çинчен икĕ çул шухăшласа пурăннă ĕнтĕ, анчах ку таранччен май килмерĕха. Малашне пурăнма кун пек йывăр пулмасть ĕнтĕ, халь кайма май пулать. Тырпулсене пуçтарса кӳртсен, кăçал кĕркуннех каясчĕ... Маринене те илсе каясчĕ, вăл ялавах çывăхра пултăрччĕ.

Исай çапла шухăшланă май хăйĕн ĕмĕчĕсем епле пурнăçа кĕнине те кура пуçларĕ. Акă ĕнтĕ—кĕркунне те пулнă. Маринепе калаçса татăлнă вĕсем, пĕр сывлăмлă ирхине, хĕвел халь çеç тухса сарăлма пуçланă чух, çурăмĕсем хыçне кутамккасем çакса, ялтан тухса каяççĕ, унтан хурăнлă çул тăрăх хуланалла утаççĕ. Исай темĕн çинчен каласа кăтартать. Марине ăна итлесе чунтан кулать, çул çинче тĕл пулакансем вĕсем çине кăмăллăн пăхса юлаççĕ. Епле аван!

— Исай! Ăçта эс?—тени илтĕнчĕ сасартăк лаç кĕтессинчен.—Эй, хуралçă!

— Кунта!—сас пачĕ Исай.—Кам ку? Ун патне Тарас пырса тăчĕ.

— Эп юри килтĕм-сан патна,—терĕ вăл.—Çывăрас килмерĕ, килте лартăм-лартăм та, сана килсе курас, терĕм.

— Юрать, ара... Лар.

— Çывăрас килмест-и?

— Çук. Так, шухăшласа лартăм.

— Мĕн çинчен вара?

— Пурнăç çинчен... Вĕренме каяс килет.

— Аван шухăш. Эпĕ те вĕренесшĕн-ха та, анчах манăн кăçалах пулмасть пуль, малтан пурнăçа йĕркене кӳртес пулать пăртак...

Туссем чĕлĕм чĕртсе ячĕç. Унтан чылай вăхăт калаçса ларчĕç иккĕшĕ. Яланхи пекех, сăмах-юмах каллех пулас пурнăç, пулас ĕçсем тавра

çавранчĕ. Тарас Исая кăçал вĕренме каймашкăн пулăшма пулчĕ, ăна ял хуçалăх техникумне кайма сĕнчĕ.

— Ялти пурнăçа çĕнетмешкĕн вĕреннĕ çынсем нумай кирлĕ... Агрономсем, учительсем, тухтăрсем... Çав ĕçсене пирĕн пĕтĕмпех хамăрăн тăвас пулать.

— Паллах ĕнтĕ,—килĕшрĕ Исай.

— Анчах та... Маринене епле пăрахса хăваратăн-ха? Шел вĕт хĕр ачана? — чавсипе айăкĕнчен тĕкрĕ ăна Тарас.

Тусĕ кулнине сиссе, Исай та кулса ячĕ.

— А мĕн... Арăм мар вĕт вăл ман.

— Çапах ара! Урăххисем тытса илме пултараççĕ. Эс мана ним те пĕлмест, тетĕн пуль! Ăна курсанах, вилсе каятăн вĕт. Паçăр та асăрхарăм-ха... Ну, хлынсем, терĕм çав. Тен, иксĕр те каятăр вĕренме?

— Апла та юрать, ара.

— Во, ку аван пулать! Çавăр эс ăна.

— Хам та шухăшлатăп-ха!..

— Шутла, шутла. Эп те пулăшăп.

Тата пăртак ларкаланă хыççăн, Тарас каска çинчен тăчĕ те вăйлăн карăнса илчĕ.

— Ну, юрĕ... Каям-ха киле. А эс тул çутăличчен тўскеле ĕнтĕ, ан çывăр. Тем курса ларăпăр тата—пĕри килсе вут тĕксен. Пĕлетĕн вĕт, пире курайманнисем нумай-ха...

— Çук, çывăрмастăп...

— Асту çав. Сивĕ мар-и? Пиншак парса хăварам...

Исай пиншака илесшĕн пулмарĕ, анчах Тарас вăйпах тăхăнтарса хăварчĕ. Вăл кайсан, Исайăн пуçĕнче каллех паçăрхи шухăшсем çуралчĕç, Тараспа калаçнă хыççăн вĕсем тикĕсрех, йĕркеллĕрех пулчĕç, Исай хăйĕн пулас пурнăçне уççăнах кура пуçларĕ...

Çанталăк çаплах пăсăлса пычĕ, халь ĕнтĕ пачах тĕттĕм пулса тăчĕ, çил татах вăйланчĕ, таврари йывăçсем кашланисĕр пуçне урăх нимĕн те илтĕнмерĕ. Исай аллинчи берданкине çурăм хыçне çакрĕ те, ыйхă ан килтĕр тесе, майĕпе каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. Хăйĕн пуçĕнче çаплах шухăшсем савăнăçлă, хаваслă, чĕрене тата вăйлăрах ĕçлеттерекен шухăшĕмĕтсем шурĕç, вăл хуллен кăна темле вăйă кĕввине шăхăрма пуçларĕ. Лаç пуçне çитрĕ те темиçе самантлăха чарăнса тăчĕ, унтан каллех каялла çаврăнса утрĕ. Анчах—виçĕ утăм та тăваймарĕ вăл, сасартăк хыçалтан такам сиксе пычĕ те, ун пуçне михĕпе хупласа лартса, малалла тирĕнтерсе ячĕ. Пĕрре сывласа та илеймерĕ Исай,—çав самантрах ăна пуçран темле йывăр япалапа çапрĕç. Урăх пĕр сас та пулмарĕ, кĕтес хыçĕнче этем кĕлеткине çĕр тăрăх кăштăртаттарса сĕтĕрсе кайни çеç илтĕнчĕ пĕр хушă...

Пĕлĕтсем малтанхи пекех таçта хăяматалла васкаса шурĕç, çил çаплах вĕрчĕ, йывăçсем кашларĕç.

Энтриялĕ лăпкăн çывăрчĕ...

...Тул çутăлнă чух вăранна Назар нимрен малтан кĕлете хураллакан çинчен аса илчĕ те, хулпуççинчен сăкман уртса ярса, тула тухрĕ.

— Исай!—чĕнчĕ вăл, крыльца çинчен анмасăрах. Хирĕç никам та сас памарĕ.

„Киле кайнă-ши вара ку?"—шухăшларĕ Назар. Картлашкасем тăрăх анса, килхушши урлă каçрĕ, кĕлет алăкĕ патне пырса çăраççине тытса пăхрĕ. Çăраççи каçхине питĕрнĕ пекех çакăнса тăнине курсан, вăл каллех Исай киле кайнă пуль тесе шухăшларĕ.

„Çапах та, урама тухса пăхас-ха, каска çинче çывăрса кайман-и..."

Васкамасăр, ирхи сивĕ пирки çўçенкелесе, вăл хапхаран тухрĕ те, лаç кĕтессинчен пăрăнса, кĕлет хыçнелле пăхрĕ... Вара çавăнтах ăна чĕререн такам çĕçĕпе чиксе пек пулчĕ...

Кӗлет хыҫӗнче пӗр купа улӑм сапаланса выртать иккен, ҫав тӗлтех кӗлет ҫине пусма тӑратнӑ... Пӗр самант хушшинчех вилнӗ ҫын пек шурса кайнӑ Назар, пусма патне чупса пырса, ун тӑрӑх хӑпарса кайрӗ. Кӗлет тӑрринче ҫын кӗмелӗх шӑтӑк пуррине курчӗ.

— О-ахх!—темле тискер сасӑпа йынӑшса ячӗ те вӑл, пусма ҫинчен тӳрех ҫерелле татӑлса анчӗ.

— Пӗтрӗм! Пӗтрӗ-ӗм!..

Чӗтрекен аллисемпе пусмаран тыткаласа, ура ҫине тӑчӗ, унтан, пӳрте чупса кӗрсе, ӑнран тухса кайнӑ ҫын пек кӑшкӑрма тытӑнчӗ:

— Пӗтрӗмӗр! Пӗтрӗмӗр!.. Ҫаратнӑ!.. Карчӑк, Варук, тухӑр часрах, пӗтрӗмӗр!.. Чупӑр часрах, чӗнӗр! Совета чӗнӗр, Тараса!..

Хӑй ҫавӑнтах кӑмака ҫумнелле тайӑнса кайрӗ те, пӗтӗм кӗлеткипе чӗтресе, темле ӑнланмалла мар сӑмахсем кӑшкӑрса, макӑрма тапратрӗ:

— Пӗтерчӗҫ... Пусса хучӗҫ... Тӗрмене лартрӗҫ...

Вилес пек хӑраса ӳкнӗ Варукпа амӑшӗ ҫара уранах килхушшине сиксе тухрӗҫ. Кӗлет ҫӑраҫҫиве уҫса—шалалла пӑхрӗҫ. Ӗнер хуларан илсе килнӗ ҫимӗҫсенчен унта пӗр типӗтнӗ кӑмпа ҫыххисем ҫеҫ юлнӑ, ыттисене такамӑн тискер алли пӗтӗмпех шӑлса тухса кайнӑ...

## XXV

Урам енчи чӳречерен питӗ хытӑ кӗмсӗртеттерсе шаккарӗҫ. Тарас вырӑн ҫинчен вӑштах сиксе тӑрса пӑхрӗ те—кантӑк витӗр Варукӑн калама ҫук пӑлханса кайнӑ сӑнне курчӗ.

„Темскер пулнах!" — ҫиҫӗм пек вӗҫсе илчӗ шухӑш ун пуҫӗнче.

— Тух-ха часрах! Пыр пирӗн пата! – кӑшкӑрчӗ Варук.

— Мӗн пулнӑ, ара?—ыйтрӗ Тарас.

Анчах Варук мӗн тавӑрса каланине илтеймерӗ,—йӑпӑр-япӑр аттине тӑхӑнса ярса, урама сиксе тухрӗ: Варук ҫара уран иккенне, ҫӳҫне-пуҫне те пуҫтарманнине курсан, мӗнле те пулин ырӑ мар ӗҫ пулнине тӳрех ӑнланса илчӗ. Варукӗ, ун патнелле чупса, макӑрса ячӗ:

— Ҫаратса кайнӑ пире...

Ку хыпар Тарасшӑн пуҫран темпе ҫапнӑ пекех пулчӗ. Тӑруках шурса кайрӗ вӑл, калас тенӗ сӑмахӗ пыра пырса пӳлӗнчӗ, тӑнлавӗсене сасартӑк юн тулчӗ.

— Ним те хӑварман, тӗппипех шӑлса тухнӑ,—терӗ Варук малалла, куҫҫулӗпе чыхӑнса.—Атя часрах... Ним тума та пӗлместпӗр!

Вӗсем часрах тӑвалла чупрӗҫ...

— Исай ӑҫта?—хыттӑн ыйтрӗ Тарас.

— Пӗлместӗп. Ҫук вӑл...

— Хурала пӑрахса кайнӑ-и-мӗн?

— Кайнӑ пулас ҫав...

— Каларӑм вӗт эп ӑна!.. Ҫӗрле юри кайса асӑрхаттартӑм! Ну, пулать те халӑх!

...Варуксем патне ҫынсем пухӑнма пуҫланӑ та ӗнтӗ. Ниҫта кайса кӗме пӗлмен Назар арӑмӗ кӳршӗсене тӑратса пынӑ, вӗсем килхушшинче шавлӑн калаҫнӑ, кӗлет тавра пӑхса ҫӳренӗ, шала та кӗрсе пӑхнӑ, анчах нихӑшӗ те нимӗнле лӑплантаракан сӑмах та калама пӗлмен. Тарас ҫитсе кӗрсенех, чӑн малтан ҫынсене кӗлет патӗнчен сирсе, текех ун ҫывӑхне пыма чарчӗ. Унтан, хӑй пӑлханнине пур майсемпе те пусарма тӑрӑшса, пухӑннӑ ҫынсенчен хӑшӗ-хӑшӗсене совет членӗсене чӗнме, хӑшӗсене комсомолецсене хӑвӑрт пухма хушрӗ, пӗр шур пуҫлӑ ачана Исайсем патне чуптарчӗ. Хӑвӑрт, татӑклӑ ҫапӑҫу умӗнхи командӑсем пек илтӗнсе тӑчӗҫ унӑн сӑмахӗсем.

Кусем тухса кайсанах, вӑл килхушшине хӑйӗн шӑллӗ Микуль пырса кӗнине курчӗ. (Тарас тухса кайнӑ чух вӑраннӑ амӑшӗ ӑна юриех мӗн пирки чӗнтернине пӗлме янӑ-мӗн.)

— Атя-ха манпа,—тесе чĕнчĕ те вăл ăна, пӳртелле чупса кĕчĕ. Кунта хут татки тупса, ун çине хăвăрт кăна темскер çырчĕ, унтан çавăнтах шăллĕне тыттарчĕ.

— Ак сана çыру,—терĕ вăл,— Варуксен лашине утлан та çил пек вĕçтер вулăса! Çитсен тӳрех çак хута е волком секретарьне Петрухина, е милици начальникне Скворцова пар... Асту, çынсем урлă ан пар, хăвăн аллупа тыттар. Сăмахпа та кала: ачасене тăрантмалли çимĕçсене кĕçĕр пĕтĕмпех çаратса кайнă, те. Халех пыма чĕнеççĕ, те... Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм,—пуçĕпе сулчĕ Микуль.

— Яра пар хăвăртрах!

Темиçе минутран Микуль ялтан тухса, пучах кăларма пуçланă ыраш хушшипе авкаланса выртакан çул тăрăх сиккипе ыткăнтарса пычĕ, хĕвĕнчи çырăва епле пулсан та часрах çитерсе парас ĕмĕтпе, Назарăн лашине таттисĕр хăваларĕ...

Лайăх хыпар—çуран çӳрет, усал хыпар—утпа чупать, теççĕ. Чăнах-мĕн. Çур сехет те иртмерĕ пуль, Назар килхушшине халăх лăнках тулчĕ. Совет членĕсем те, комсомолецсем те часах пухăнчĕç, анчах та Исая чĕнме янă ача: вăл килте çук, тесе пĕлтерчĕ.

— Кам каларĕ сана?—ыйтрĕ Тарас, ку хыпара илтсен тата ытларах пăлханма пуçласа.

— Амăшĕ каларĕ. Каçхине кунта хурал тăма килнĕренпе киле таврăнман, тет...

„Ку мĕне пĕлтерет-ха тата?.. Ăçта кайма пултарнă вăл?.. Ниушлĕ вĕлернĕ ăна?..“—вĕлтлетрĕ те Тарас пуçĕнче, чĕри темле пăчăртанса илчĕ.

Кĕлет тавра халăх пухăннăçемĕн пухăнса пынине кура, палăрса юлма пултарнă йĕрсене çынсем таптаса пĕтересрен, Тарас вĕсене тăкăрлăкран кăларма, кĕлет çывăхне пымашкăн чарма хушрĕ.

— Эпĕ милицисем патне ятăм, вĕсем киличчен ним тума та юрамасть, мĕнле пулнă—çаплах пултăр...

Совет членĕсем—Хăмăт Энтри, Павăл пичче, вĕсемпе пĕрле комсомолецсем те Тарас хушнипе халăха урамалла чакарма тытăнчĕç.

Халăх ерипен каялла чакса, тăкăрлăкран та, килхушшинчен те урамалла тухма пуçларĕ. Анчах çав хушăрах унта та, кунта та кăмăлсăр сасăсем илтĕнчĕç.

— Кăшкăрма анчах вĕсем... Сыхлама пĕлмен!

— Ачасене выçă хăварчĕç халь, усалсем...

— Ытла час пуç пулса тăчĕç...

Унтан тăруках тахăшĕ хыттăн кăшкăрса ячĕ:

— Хăйсем çаратнă вĕсем! Çавăнпа пытарма хăтланаççĕ, никама та çывăха ярасшăн мар!

— Паллах, хăйсем тунă! Кам пултăр тата?—янраса кайрĕ тепĕр сас.

— Ухтарас пулать вĕсене!..

Халăх тăпах чарăнчĕ. Çак темиçе сăмах çынсене иккĕлентерсе, вĕсен ăсне-пуçне пăтраштарса яма пуçларĕ... Кам пĕлет, тен чăнах та хăйсем тунă? Çыннăн шухăшне-кăмăлне ăçтан пĕлетĕн? Каçăр Куçмапа Иливана та шанса пураннăччĕ те вĕт, кайран вĕсем чи усал хурахсем пулни курăнчĕ... Çитменнине ытла час пулнă-çке ку: таварне ĕнер каçалапа çеç илсе килнĕ—анчах кĕçĕр çаратма та ĕлкĕрнĕ. Паллах ĕнтĕ, ютран килсе туман куна. Ютри çын ăçтан тăруках пĕлтĕр ăна?

Малашнехи ĕççем пит те хăвăрт сарăлса пычĕç. Шухăшсем вĕçленме те ĕлкĕрейменччĕ—урам варринчи çăл енчен тепĕр çын кăшкăрни сывлăша çурса кайрĕ:

— Халăх!.. Мĕн пăхса тăратăр?!.

Пурте пуççене çăл еннелле çавăр-

чӗҫ. Ҫӑл пури ҫине мӑн галифеллӗ Микстур Михали хӑпарса тӑнӑ иккен, ку сӑмахсене вӑл кӑшкӑрнӑ.

— Ултalaççӗ вӗт сире, куç кӗретӗнех ултaлaççӗ, элле сисместӗр ҫавна?!—кӑшкӑрма тытӑнчӗ кӑвак хут пек кӑвакарса кайнӑ Микстур, сарлака ҫӑварӗнчен сурчӑк сирпӗтсе.— Ҫак ӗҫе никам та мар, советрисемпе комсомолецсем хӑйсем тунӑ!.. Хӑйсем вӑрласа валеҫнӗ! Кам килсе вӑрлатӑр ҫак хуҫӑра? Тӑнлӑр-ха эсир лайӑххрах! Хӑйсем пулмасан, вӗсем паҫӑрах йӗрлесе шырамалла, атту вӗт—вырӑнтан та хускалмаççӗ... Хӑйсем валеҫнӗ те—ӑҫта шырас? Айтӑр, часрах ухтарма тытӑнар вӗсене!..

Микстур сиккелекен куҫӗсемпе урамри халӑх ҫине сунарҫӑсенчен тарса хӑтӑлнӑ кашкӑр пек пӑхса илчӗ те ҫӗрелле сиксе анчӗ. Анчах ун вырӑнне ҫав самантрах Шӗвӗрпуҫ Хоми хӑпарса тӑчӗ, Микстуртан та хытӑ ҫухӑрма тапратрӗ.

— Мӗншӗн ним те чӗнместӗр? Чӑн каларӗҫ вӗт сире: Тарас шайкки тунӑ ҫакна! Урӑх никам та мар! Халех веҫ ухтарас пулать...

Вӑл каласа пӗтерейменрӗ,—халӑх хушшипе хӗсӗнсе тухса, Микиш ӑна ҫӑл пури ҫинчен пӗррех туртса антарчӗ.

— Юлташсем! Лӑпланӑр, юлташсем!—аллине ҫӗклесе пур вӑйпа кӑшкӑрчӗ вӑл.—Микстурпа Шӗвӗрпуҫ путсӗр сӑмах каларӗҫ... Эпир бандитсем мар! Кун пек каланӑшӑн суда паратпӑр эпир вӗсене!

Анчах та Микиш сӑмахӗсене итлекенсем сахал пулчӗҫ,—халӑх пӑлханса кайрӗ, шавлама тытӑнчӗ, унта та кунта кӑшкӑрма тапратрӗҫ...

— Эсир пурне те судпа хӑрататӑр!..

— Ыр ҫынсене хуптартӑр та, халь хӑвӑр ҫаратма тытӑнтӑр эппин?

— Кулач ҫиес килчӗ пуль?

— Халӑх ҫӑкрине!

— Кӑтартӑпӑр сире суд!

— Айтӑр, айтӑр! Ухтара-ас!..

Халӑха чарма Микиш татах кӑшкӑрчӗ, анчах усси пулмарӗ, пӑлханса кайнӑ ҫынсем ӑна итлемерӗҫ. Вӗсем, Микстур Михали кӑшкӑрса чӗннипе вырӑнтан хусканса, Назар килхушшийӗ еннелле сулӑнчӗҫ. Шӑп ҫав вӑхӑтра хапхаран Тараспа пӗрле ял совет членӗсем тухрӗҫ, анчах халӑх вӗсем патӗнче чарӑнса тӑмарӗ, малтисем вӗсене темскер кӑшкӑрчӗҫ те— шалалла кӗпӗрленсе кӗрсе кайрӗҫ, Микиш та, халӑх хушшине хӗсӗнсе кӗрсе, хулпуҫҫийӗпе хӑйне валли ҫул уҫма тытӑнчӗ.

Килхушшине кӗрсен, Микстур каллех кӑшкӑрма тытӑнчӗ.

— Ухтарӑр!—ҫухӑрчӗ ун хыҫҫӑн Шӗвӗрпуҫ.

Микстур крыльца патнелле ыткӑнчӗ, анчах картлашка умӗнче ӑна такамӑн вӑйлӑ алли ӗнсерен тытса чарчӗ. Ку Тарас пулнӑ.

— Ухтарма кам право панӑ сана? Халӑха мӗншӗн пӑлхататӑн?—хӗмленекен куҫӗсемпе ҫисе ярас пек пӑхса, хӑвӑрт ыйтрӗ вӑл.

— Хам панӑ!—терӗ те Микстур, сасартӑк Тараса пур вӑйпа кӑкринчен чышса, ҫенӗкелле чупса кӗчӗ. Сулӑнса кайнӑ Тарас ун хыҫҫӑн чупма ӗлкӗриччен—картлашкасем ҫынсемпе тулса та ларчӗҫ, унӑн ҫулӗ картланчӗ.

Пуҫланчӗ вара ухтару... Ҫынсем кӗрсе пӑлхатман вырӑн та юлмарӗ Назар килӗнче. Пӳртре, тӗпсакайӗнче, мачча ҫинче, ҫенӗкри чӑланра—пур ҫӗрте те ҫын йӑшӑлтатрӗ. Варукӑн арчине, амӑшӗн ҫӳпҫиве ним йӗркесӗр арпаштарчӗҫ, тулта та ухтарман кӗтес хӑвармарӗҫ, ӑҫта ан пӑх—вырӑх картинче, витере, аслӑк ҫинче, нӳхрепре—шатах чакаланчӗҫ, ҫухалнӑ ҫимӗҫсене шырарӗҫ... Пӗр уйӑх малтан Тарас хӑваласа тытнӑ бандита яла илсе пынӑ чухнехи пекех шавларӗ халӑх... Назар хӑй, пачах ҫухалса кайса, пур ҫӗрелле те сапаланчӑк ку-

куçĕсемпе пăхса çӳрерĕ çынсем хушшинче.

— Шырăр... Лайăх шырăр, тăвансем... Пур çĕрте те...—терĕ вăл пĕрмай, сӳрĕк сасăпа.

Унăн арăмĕ кĕлет умĕнче ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр макăрса ларчĕ, Варукпа Марине—хăйсем те макăрас патнех çитнĕскерсем—ăна чунтан лăплантарма тăрăшрĕç. Сасартăк вĕсем патне калама та çук хаяр сăнланса кайнă Мамун арăмĕ пырса тăчĕ.

— Мĕн ухмахла супса ларатăн тата?—шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ вăл, аллисемпе пилĕкĕнчен тытса.—Хăвăр çаратнă та, хăвăрах макăратăр пулать... Намăса пĕлесчĕ, кĕççе пит!.. Тьфу!

Лач! сурчĕ Назар арăмĕн пуçĕ çине...

— Кай кунтан, инке!—пĕтĕм вĕчĕхсе çитнĕ чĕринчен кăшкăрса ячĕ Варук.

Ку сăмахсем хыççăн—ялан йăваш пулнă Марине те тӳссе тăраймарĕ,—пĕррех Мамун арăмĕ умнелле сиксе пырса тăчĕ.

— Çăварна хуп, бандит хăраххи!.. Хăвна пĕл малтан!

Вăл çавăнтах Мамун арăмĕ çине кушак пек сиксе ларма хатĕр пулчĕ, анчах вĕсем патне Микиш пырса тухрĕ.

— Мĕн калаçатăр унпа пустуй! —терĕ вăл хĕрсене.—Пӳрте кĕрĕр...

— Исай пирки мĕнле?—ыйтрĕ Варук.

— Нимĕн те паллă мар. Ниçта та çук,—таръннăн сывласа илчĕ Микиш.—Ним калама та, ним шутлама та пĕлместпĕр ĕнтĕ...

Хĕрсем çине салхуллă куçĕсемпе пăхса илчĕ те, аллипе сулса, выльăх карти еннелле кайрĕ. Хĕрсем Назарăн халран кайса çитнĕ арăмне ик енчен çавăтса пӳрте илсе кĕчĕç.

...Кил таврашĕнче нимĕн те тупăнмарĕ. Вара Микстурпа Шĕвĕрпуç, вĕсем хыççăн ытти çынсем те анкартине кĕпĕрленсе тухрĕç. Чипер çумласа, купаласа лартнă çĕрулми кассисене те, Варук аллипе тунă тирпейлĕ купăста-хăяр йăранĕсене те хĕрхенсе тăмарĕç,—ерĕхсе кайнă выльăх кĕтĕвĕ пекех таптаса иртрĕç вĕсене.

Анкарти вĕçĕнче, вату çĕмĕрт йывăççисем хушшинче Варуксен мунча пулнă. Микстур Михали ун патне никамран малтан чупса çитсе, çенек алăкне пĕррех урипе тапса уçса ячĕ.

— Айтăр-ха, çакăнта тĕрĕслесе пăхар!—кăшкăрчĕ те вăл халăх еннелле, çавăнтах шалалла кĕрсе çухалчĕ. Темиçе самантран тата пилĕкултă çын чупса çитрĕç,—унтан юлашкисем те. Микстур тӳрех мунча урайне хăйпăтма тытăнчĕ. Хăма пуçесене çĕкле-çĕкле, аяккалла пăрса хучĕ вăл. Унтан аллине шалалла чикрĕ те сасартăк, сарлака çăварне мĕн тери карăннă таран карăнтарса, кăшкăрса ячĕ.

— Тупрă-ăм! Тупрă-ăм...

Халăхшăн ку „пушар" тесе кăшкăрнă пекех пулчĕ... Кар-р! пухăнчĕç мунча патне. Виççĕн-тăваттăн мунча урайне хăвăрт кăна сӳтсе пăрахрĕç. Хăмасем айне чăнахах та такам алли пĕр михĕ шур çăнăхпа тепĕр михĕ сахăр пырса чикнĕ иккен... Микстурпа тепĕр çын вĕсене йăпăртах тулалла çĕклесе тухса пăрахрĕç.

— Халăх! Курăр ĕнтĕ, мĕн хăтланаççĕ вĕсем!..—паçăрхинччен те хытăрах çухăрса ячĕ Шĕвĕрпуç.—Акă ăçта вăл бандитсем!.. Пăхăр, курăр!..—тесе, пӳрнипе михĕсем çине тĕллерĕ.

Калама çук тĕлĕнсе, пĕр вăхăт хытнă пек тăнă халăх ним майсăр пăлханса, шавласа, кĕрлесе кайрĕ...

Анкартинчи шава илтнипе, унта Назарпа Тарас, вĕсем хыççăн Хăмăт Энтрипе Микиш чупса пычĕç. Мунчаран тупса кăларнă михĕсене курсан, вĕсем ытти çынсенчен кая мар тĕлĕнчĕç,—анчах вĕсене нихăшне

те сăмах чĕнме памарĕç. Чăн малтан вĕсем тавра Микстурпа Шĕвĕрпуç, шуйттансем пек сиккелесе, чи усал сăмахсемпе вăрçма тапратрĕç, каламанни те хăвармарĕç, унтан ыттисем те кăшкăрма тапратрĕç вĕсем çине.

— Бандитсем, намăссăрсем!

— Мĕнле куçпа пăхатăр халăх çине?

— Çапса пăрахас пулать сире!..

— Чимĕр-ха, ыттисем патĕнче ухтарар!

— Айтăр Тарасĕ патне!

— Айтă-ăр!..

Лăплантарма тăнинчен усси пулас çуккине кура, халăха хирĕç Тарас хăй те нимĕн те каламарĕ, Микиша та чарчĕ.

„Питĕ чее тунă... Малтанах тĕплĕн шухăшласа тунă ку ĕçе“... шухăшларĕ вăл, тутисене çыртса. Каллех Исая аса илчĕ. „Ăçта кайса кĕме пултарнă-ха вăл, мĕн тунă-ши ăна вĕсем? Ах, вулăсрисем часрах килчĕрччĕ!“

Микстурпа Шĕвĕрпуç чĕннипе, анкартинчи çынсем çав вăхăтра, картасем урлă сике-сике, урамалла тухрĕç те—Тарассем патне чупрĕç. Халăх пĕтĕм урам анлăшĕпех çурхи шыв хумĕ пек йăванса пычĕ. Назар патĕнче Тараспа Микиш, хăмăт Энтри, Павăл пичче тата ик-виç çамрăк çеç юлчĕç.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ, Тарас Петрович?—Тарас çывăхнерех пырса, ăна куçĕнчен пăхрĕ Павăл пичче.

— Кĕтес пулать вулăсран килессе...

— Санăн килне каяс пулатчĕ,—хушса хучĕ Хăмăт Энтри,—тем туса хурĕç тата.

— Ытлашшиех мĕн тума пултарччăр вĕсем?

— Назара туса хунă вĕт...

— Ним те мар... Лăпкăрах пулăр. Паллă вĕт, ку ĕçе çав çухăракансем тунă... Кĕтĕр пăртак, лекеççĕ...

Чăнах та, Хăмăт Энтрийĕ йăнăшман. Тарассен килне çил-тăвăл пек чупса çитсенех, Микстурпа Шĕвĕрпуç тата Мамун арăмĕ хĕтĕртсе пынипе пăлханса кайнă çынсем вĕсем патĕнче урнă пек арпаштарма тытăнчĕç. Малтан пӳрте кĕрсе, пĕтĕм хатĕрсене кутăн-пуçăн çавăрттарчĕç, унтан кĕлете çĕмĕрсе кĕрсе, пур катка-пичкесене тӳнтерсе йăвантарчĕç, тĕк хутаççисене салтса силлерĕç, çĕмĕрлекен япаласене çĕмĕрсе, ватса тухрĕç. Ку ĕнтĕ чăн-чăн погром пулса тăчĕ... Тарас амăшĕ малтанах тĕлĕннипе хытнă пек пулчĕ, çынсем çине ним ăнланмасăр пăхрĕ. Мĕн пирки, мĕн сăлтавпа авраштарать ун килне халăх—нимĕн те пĕлмерĕ вăл, ним калама та аптăрарĕ... Ун патне тăрук Мамун арăмĕ сиксе пычĕ.

— Кала часрах, вăрланă япаласене ăçта пытартăр?!—кăшкăрса ячĕ вăл.

— Мĕнле япаласене?—чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ Тарас амăшĕ.

— Ха! Пĕлмĕш пулать тата!.. Çăнăх ăçта пытартăр?! Сахăр! Çу!

— Ним те пĕлместĕп эпĕ...

— Епле пĕлместĕн пулать? Сан ывăлу кĕлет çаратнă вĕт кĕçĕр!

— Чипер калаç... Вăл килтех çывăрчĕ.

— Курăпăр ака!—Мамун арăмĕ ăна чышкипе юнарĕ те, ун çине çав тери усал куçсемпе пăхса илсе, лупас айнелле, халăх уйрăмах хытă шавланă çĕрелле чупса кайрĕ. Вăл Тарас амăшĕпе ятлаçнă вăхăтра çынсем аслăк çинчен икĕ михĕ çăнăх туртса антарнă иккен... Назар патĕнче тупнă михĕсем пекех—пысăк кăвак пичетлĕ, ĕнер хуларан илсе килнĕскерсем пулнă вĕсем. Михĕсене çавăнтах килхушши варринелле йăтса тухрĕç, халăх вĕсем тавра пухăнса тăчĕ, халь ĕнтĕ паçăрхинчен те вăйлăрах пăлханса кайса кăшкăрашма тапратрĕç... Анчах пуринчен ытларах—каллех Микстур сасси янрарĕ:

— Куртăр-и ĕнтĕ, халăх, куртăр-и, мĕн хăтланаççĕ çĕнĕ советсем? Кĕлете

хайсемех çаратса валеçнĕ иккен, юри, халăха выçăпа вĕлересшĕн!.. Мĕн тăвас пулать ĕнтĕ вĕсене куншăн?! Калăр ĕнтĕ!

— Çапса пăрахас пулать!—кăшкăрчĕ тахăшĕ.

Çавăн хыççăнах тапранса кайрĕ вара...

— Халех тытса пăвас!

—Çăнăхне çĕклеттерсе, урам тăрăх питлĕх çапса уттарас!

— Айтăр! Тарĕç тата!

— Вĕлерес!..

Урнă пекех пулса кайнă çынсем каялла, Назар патне ыткăнчĕç... Çенĕк умĕнчи картлашка çинче пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, вилнĕ çын пек шурса кайнă Тарас амăшĕ аялалла анма тăчĕ, анчах та—тăрук сулăнса кайрĕ те килкушшинелле пĕрене пек йăванса анчĕ... Ун çине никам та çаврăнса пăхакан пулмарĕ, вăл пусма вĕçĕнче пĕр пĕчченех выртса юлчĕ, унăн ÿкнĕ чух аманнă янахĕнчен çăра юн сăрхăнчĕ...

XXVI

Халăх ним йĕркесĕр шавласа хăпарни инçетренех илтĕнчĕ. Варуксен килхушшинче тăракансем хапхаран тухса анаталла пăхрĕç.

— Пушшех урса кайнă пулас,—терĕ Павăл пичче.—Темскер туса ан хуччăр, Тарас Петрович. Вулăсран киличчен пăрăнмалла мар-ши?

— Эс мĕн, ухмаха ертĕн-и?—таврăнчĕ ăна хирĕç Тарас.—Мĕншĕн пăрăнмалла? Эп айăплă мар пулсан—ма пытанас ман?

— Ăна-куна пăхса тăмĕç, тетĕпçке...

— А-а, ним те мар... Тепĕр тесен—пуçа чиксех тăмăпăр, ун пеккине мар курнă. Килхушшине кĕрĕр те—лăпкăрах пулăр...

Халăх хумĕ çывхарсах пычĕ. Микстурпа Шĕвĕрпуç, пуринчен малта чупаканскерсем, халăха çаплах хĕтĕртрĕç, çынсене тата ытларах хумхатма, вĕсене пăлхатма тăрăшрĕç...

— Выçă çынсен юлашки татăкне вăрлаççĕ!

— Лайăхрах тыткалас пулать вĕсене!

Çаплах хаярран шавласа, намăс сăмахсем кăшкăрса, алăсемпе сулкаласа, халăх темиçе самантран Назар тĕлне кĕрлесе çитрĕ те, килхушшинелле шыв юххи пек шарласа кĕрсе кайрĕ. Совет членĕсемпе комсомолецсем кĕлет умне пĕр çĕрелле пухăнса, пĕр ушкăн пулса тăнă-мĕн. Халăх ултава пула пăлханса кайнипе халь хуть те мĕн туса тăкма хатĕр пулнине пĕлсе, вĕсем ăна сиввĕн, куçхарши айĕпе пăхса кĕтсе илчĕç.

„Мĕн хăтланатăр эсир? Пирĕнте нимĕнле айăп та çук вĕт, ултав хыççăн каятăр“,—тенĕ пек пулчĕ вĕсем пăхни...

Малтисем тăпах чарăнчĕç. Çавăн пирки кайрисен те чарăнмалла пулчĕ. Темиçе самантлăха шăпах пулчĕ. Анчах та халь ĕнтĕ калама çук вĕриленсе çитнĕ Микстур малалла хĕсĕнсе тухрĕ те тăруках кăшкăрса ячĕ:

— Акă ĕнтĕ вăл бандитсем! Çаксем çаратнă!.. Тытăр вĕсене, çыхăр!

Хăй çавăнтах, аллипе совет членĕсемпе комсомолецсем еннелле сулса, пĕр-ик утăм малалла утрĕ. Халăх каллех хумханма пуçларĕ, хыçалта хĕтĕртекен темиçе сасă илтĕнчĕ. Микстур хыççăн тата темиçе çын малалла тухрĕç. Ĕнтĕ кĕлет умĕнчи пĕчĕк ушкăна халăх кĕç-вĕçех тытса лутăркас, таптаса тăкас пекех туйăнчĕ...

— Шăпланăр!..—янраса кайрĕ çав вăхăтра Тарас сасси.—Мĕн тăвас шут пур? Кама хăратас тетĕр?—Тарас ик утăм малалла ярса пусрĕ.—Ай пуççене пĕтĕмпех çухатрăр-и-мĕн? Э? Калăр-ха! Чăнах та пире вăрă тесе шутлатăр-и? Хăш енчен вăрă

пулнă-ши эпир? Çапла намăс курмашкăн виçĕ çул хушши Совет влаçĕшĕн, халăхшăн юн юхтарнă-ши эпĕ? Шутласа пăхăр-ха пăртак!..

— Мĕн шухăшламалли пур, хамăр куçпа куртăмăр, вăрласа валеçнĕ вĕт!—илтĕнчĕ Шĕвĕрпуç сасси.

— Куçран тусан сапас тетĕн-и тата?—терĕ тепри.

— Ан итлĕр ăна!

— Çап ăна!

— Хĕне-ес!..

Халăх каллех йĕркерен тухса кайрĕ... Халĕ ĕнтĕ ăна чарасси çинчен шухăшламалли те пулмарĕ. Таçтан, хыçалти ретсенчен илсе пенĕ чул пĕррех Тарас тăнлавĕнчен пырса тиврĕ, ун хыççăн—кĕлет умĕнче тăракансем еннелле чул катăкĕ, хытă панкра катăкĕсем, патаксем вăркăнма тапратрĕç.

— Стой! Чарăнăр! Хăвăрах пĕтеретĕр!—пĕтĕм ӳпке вăйĕпе кăшкăрчĕ Тарас юлашки хут, анчах çав самантрах ăна пуçĕнчен темле йывăр япала пырса тиврĕ, тахăшĕ хыçалтан пырса, ăна малалла тирĕнтерсе ӳкерчĕ.

— Хĕнĕр!

— Вăрăсене вĕлерсен те нимĕн те пулмасть,—Микстур сасси кĕчĕ Тарасăн хăлхине. Пĕр самант вăл пичĕпе çĕр çине тăрăнса выртрĕ, унтан сиксе тăчĕ те, совет членĕсемпе комсомолецсене кĕлет умне хупăрласа лартса хĕнеме тытăннине курса, çавăнталла ыткăнчĕ. Хăйĕн çулĕ çинчи çынсене хулпуççисемпе сирсе пырса, кĕлет умнерех çитсен—çапăçакансене пĕрерĕн аяккалла ывăтма тытăнчĕ. Хăйне тек-текех чулпа патаксем пырса тивни çине те, такам аллисем çурăмĕнчен тӳпелени çине те пăхмарĕ вăл,—пĕрмай аяккалла сирпĕтрĕ çынсене... Вилес пек хăраса ӳкнĕ Варукпа Марине, вĕсем хыççăн Кулине те, пӳртрен крыльца çине чупса тухрĕç, анчах вĕсене курсанах—килхушшинчен вĕсем çинелле те чулсемпе патаксем вăркăнма тапратрĕç.

Килхушши енчи чӳрече чăнкăртатса сирпĕнчĕ... Халăх пĕтĕмпех пăтранса кайрĕ... Сывлăшра темиçе тĕрлĕ ылханни, намăс сăмахсем, ыратнипе кăшкăрни илтĕнсе тăчĕ, çынсем пĕрпĕрин çинелле сикрĕç, ӳкрĕç, пĕрне пĕри таптарĕç, каллех сиксе тăрса çапăçма тытăнчĕç.. Тарас чылай вăхăт парăнмарĕ, хăйĕн çинелле пыракансене аяккалла сирпĕтрĕ; унпа юнашар тăракан Микиш та унтан кая мар ĕçлерĕ ал-урипе, Хăмăт Энтри те, пысăк куçĕсене ялкăштарса, çынсене çĕрелле пуса-пуса антарчĕ... Анчах çынсем хаярланнăçемĕн хаярланса, урнăçемĕн урса пычĕç... Тарас хăй тавра хăрушă та тискер сăнсем çеç курчĕ... Акă Микстур темле мăн патакпа Микиша хыçалтан пырса çапрĕ те, леш кăкран каснă йывăç пек, тайăлса кайса ӳкрĕ. Сылтăм енче Лява Уртемĕн чĕрĕ какай пек сăмсипе кăпăклă çăварĕ курăнчĕ. Вăл, хăрушă сасăпа темскер кăшкăрса, Тарас çинелле пысăк чукмарпа сулса ячĕ... Малалла мĕн пулнине вăл курмарĕ те, илтмерĕ те...

Сасартăк çав самантра тахăш хĕрарăм, урамран чупса кĕрсе, хăлхана çуракан çинçе сасăпа хыттăн çухăрса ячĕ:

— Милици!.. Утлă милици килет! Чарăнăр!..

Вăл кăшкăрни килхушшинчи пĕтĕм халăх пуçĕ çине кĕтмен çĕртен пăрлă шывпа сапнă пекех пулчĕ. Çапма çĕкленнĕ алăсем аялалла усăнчĕç, алла тытнă чулсемпе алтуйисем çĕрелле ӳкрĕç, унта та кунта çынсем хашлатса, тарăннăн сывласа яни илтĕнчĕ... Хумханнипе чĕтремех ернĕ çынсем—куçĕсене тискеррĕн çавăркаласа—хăйсем çĕмĕрсе тăкнă совет членĕсем патĕнчен каялла чакма тытăнчĕç. Пурте куçĕсемпе хапха еннелле тăрăнчĕç; хĕнекенсенчен хăш-

пĕрисем, кунтан часрах тухса тарас шутпа, икĕ енчи хӳмесем ҫинелле пăха-пăха илчĕҫ. Микстур Михали, халăх хушшинелле пуринчен ытларах чакса кĕрсе, Шĕвĕрпуҫăн хĕрелсе кайнă шывак куҫĕсемпе тĕл пулчĕ.

— Шăвăнас пулать!—терĕ вăл ăна шăл витĕр.

— Ăмма?

— Ырри пулас ҫук...

Ҫавăнтах ун умне таҫтан Лява Уртемĕ тухса тăчĕ те, аллинчен ҫавăрса тытрĕ:

— Ним те пулмасть, эсир анчах мар... Тарсан, пушшех палăртатăр. Тăрăр вырăнта!

Ҫакăнта каланисем пĕтĕмпех питĕ хăвăрт, пĕр ҫур минут хушшинче пулса иртрĕҫ. Лява Уртемĕ юлашки сăмахĕсене каласа пĕтернĕ-пĕтерменех, Назарăн хапхи умне икĕ милиционерпа Тарас шăллĕ—Микуль юланутсемпе ҫитсе чарăнчĕҫ. Вĕсем хыҫҫăнах—икĕ ҫӳрен лаша кӳлнĕ тарантас пырса тăчĕ. Ун ҫинче ямшăксăр пуҫне—волком секретарĕ Петрухин юлташ, тата темле хура типшĕм ҫын килнĕ; хура ҫын умĕнче кашкăр тĕслĕ пысăк йытă пăхса ларать.

Петрухин юлташ милиционерсене ҫĕре анма хушрĕ, унта типшĕм ҫынна пуҫĕпе сулса, килхушшинелле чупса кĕчĕ. Типшĕм ҫын тарантас ҫинчен анса, йыттине сăнчăрĕнчен туртрĕ.

— Альма, за мной!

... Хапхаран кĕрсе ик утăм ярса пуссанах, Петрухин юлташ чарăнса тăчĕ. Выльăх карти еннелле сулăнса тăнă ҫынсем пурте ним чĕнмесĕр ун ҫине—хăшĕ куҫхаршисем айĕпе хаяррăн, хăшĕ хăравҫăн, куҫĕсене мăчлаттарса пăхни, килхушши варринче виҫĕ ҫын алли-урисене урлăпирлĕ саркаласа, ним хускалмасăр выртни, унта та кунта чулсем, патаксем йăваланни, пӳрт чӳречине рамимĕнĕпех ватса тăкни — кунта мĕн пулса иртнине самантрах ăнланса илме май пачĕ ăна. Вăл ҫавăнтах 1918 ҫулхи кĕркунне, кулаксен пытарнă тыррисене ухтарса ҫӳренĕ чухне, хăйсене кулаксем ҫакнашкалах вĕлерме тапăннине аса илчĕ. Унăн чĕркуҫҫисем сăрлатса кайрĕҫ... Кулаксен, бандитла этемсен ĕҫĕ пулмасан, кам ĕҫĕ пултăр ĕнтĕ ку?..

Вăл, хăйĕн пырĕ патне темскер тулса хăпарнине туйса, хуллен кăна ӳсĕрсе илчĕ те, тата виҫĕ утăм малалла ярса пусрĕ. Куҫĕсемпе — пăрапа шăтарнă пек — тепĕр хут пăхса ҫаврăнчĕ килхушшинчи халăха... Унтан — пурне те илтĕнмелле, хыттăн ыйтрĕ:

— Мĕн хăтланатăр, эсир?..

Никам та пĕр сăмах чĕнмерĕ. Ун умĕнче икҫĕр ҫын ытла тăнă пулин те, килхушшинче тупăкри пекех шăп пулчĕ. Темиҫе ҫĕр куҫ Петрухин юлташпа ун хыҫĕнчи йытăллă ҫынна витĕр курма тăрăшнă пек, вĕсем ҫитес самантра мĕн тума шутланине пĕлесшĕн пулса пăхса тăчĕҫ. Кусем — хăйсен майĕпе — ҫак юпа пек хытнă ҫынсем ҫине ҫавăн пекех шăтарасла пăхрĕҫ...

Пĕр-ик минут иртрĕ ҫапла.

— Ну, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? — ыйтрĕ Петрухин юлташ татах. Халăх каллех нимĕн те чĕнмерĕ, вăл халĕ вулăсран килнисем мĕн каласса кĕтрĕ... Петрухин юлташ чăнах та тем каласшăн пулчĕ, анчах сасартăк килхушши варринче тусан ҫинче выртакансенчен пĕри хускалма пуҫланине курчĕ. Ун патĕнчерехре тăракан ҫынсем — вăл каллех сиксе тăрса тем тăвасран хăранă пек — тата каялла чакрĕҫ...

— Никам та вырăнтан ан хускалтăр! — хаяррăн кăшкăрчĕ Петрухин юлташ.— Ларăр! Ăҫта тăнă — ҫавăнтах ларăр! — Милицисем еннелле ҫаврăнса аллипе сулчĕ. — Никама та ан кăларăр, никама та ан кӳртĕр!..

Халăх хускалкалама, пĕр-пĕрне тĕрткелеме тытăнчĕ. Темиçе кăмăлсăр сасă илтĕнчĕ:

— Мĕнле апла вăл?

— Пурте айăплă мар вĕт...

— Айăплисене тупас пулать...

— Ан кӳренĕр! — терĕ волком секретарĕ, халăх çывăхнерех пырса. — Айăплисем тупăнĕç! Никам та хăтăлаймĕ! Ларăр тавай, ларăр!

Майĕпе, пĕр-пĕрипе кăмăлсăртараххăн калаçса, килхушшинчи çынсем ларма пуçларĕç. Петрухин юлташ çĕрте выртакансем патне пычĕ... Хускалма пуçлани — Тарас пулнă. Тата иккĕш — Назарпа Микиш иккен. Вĕсем виççĕшĕ те палламалла мар пулса кайнă, пичĕ-куçĕсем шыçса ларнă, суранĕсенчен сăрхăннă юн тусанпа хутăшса, сăнĕ-пичĕсене хуплаcа лартнă... Петрухин юлташ Тарас пуçне çĕклесенех — ун патне шăллĕ, Микуль, шариех кăшкăрса макăрса чупса пычĕ:

— Пичче-е!

— Килĕр кунта! — аллипе хăй еннелле туртрĕ Петрухин юлташ.— Пӳрте çĕклесе кĕрĕр! Ак кусене те! — Вăл Тарас пекех аран йынăшса выртакан Назарпа Микиш çине кăтартрĕ. — Ну! Хăвăртрах! Эх, тискер кайăксем!

Пӳртре вăл чăн-чăн тухтăр пекех ĕçлеме тытăнчĕ: суранлисен тумтирĕсене хывтарчĕ, халь çеç лăпланма пуçланă Варукпа тата Маринепе пĕрле суранĕсене çуса çыхма тапратрĕ.

Питне сивĕ шывпа çуса тасатса суранĕсене çыхсан, Тарас пĕр вăхăт шăппăн выртрĕ те — хуллен кăна куçĕсене уçрĕ. Волком секретарьне курни ăна тăруках тĕлĕнтерчĕ, анчах вăл çавăнтах астуса илчĕ курăнать.

— Килтĕр-и? — ыйтрĕ вăл вăраххăн.

— Килтĕмĕр, Тарас... Вăхăтра çитрĕмĕр пулас.

— Никама та... вĕлермен-и?

— Çук. Ĕлкĕреймен.

— Вĕсем... ăçта?

Тарас кам çинчен ыйтнине Петрухин юлташ тӳрех ăнланчĕ те, пуçĕпе килхушши еннелле сулчĕ.

— Пурте кунта, эпир киличчен тарса пĕтмен пулсан... Кĕтеççĕ,— терĕ вăл, Тарас çине пăхса. Кăштах шарламасăр ларнă хыççăн, çапла хушса хучĕ:— Пĕтĕм халăха тытса тăма аван мар, эс кама-кама тытса юлмаллине каласа пар... Паллах, çапакансене çеç мар, вĕсен аллисене çĕклеттернисене те...

Тарас хăй асăрхама ĕлкĕрнисене йĕркипе каласа тухрĕ.

— Тата çав Мамун арăмне те хупас пулать. Вăл шуйттан пекех сикрĕ паян,— хушса хучĕ Варук, Тараспа Петрухин калаçăвне итлесе тăнăскер.

— Тĕрĕс, тĕрĕс,— çирĕплетрĕ Марине.

— Ну, эс выртха халлĕхе, эпир ĕçе тытăнатпăр,— терĕ Петрухин юлташ, паянхи бандитла тискер ĕçе тăвакансен ячĕсене çырса пĕтерсен.— Паян сирĕн ялти сывлăша тĕппипех тасатса çитеретпĕр пуль ĕнтĕ.

— А эсир пĕлетĕр-и тата...— пуçларĕ Тарас, волком секретарьне Исай çухални çинчен калас шутпа, анчах килхушшинче тăрук шавлама пуçлани илтĕнчĕ.

— Стой! Ăçта каятăн?! — кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Пăрăн унтан!

— Каланă сире — юрамасть!

— Назад!..

Петрухин юлташ чӳречерен пăхса илчĕ те, пиçиххийĕ çинчи кобурне тӳрлетсе, тулалла чупса тухрĕ.

— Мĕн унта? — ыйтрĕ Тарас хăй пуçĕ вĕçĕнче нăшăклатса тăракан Микульрен.

— Такамсем хӳме урлă каçса тарма тăчĕç...

— Хăтăласшăн пулас, сволочь-

сем...— мăкăртатса илчĕ Тарас. Унтан, шăллĕ çине пăхса, сасартăках амăшĕ çинчен аса илчĕ.

— Килте пултăн-и эс?

— Пулман,— терĕ Микуль.

— Апла пулсан, акă мĕн... Киле кайса кил-ха эс... Анне мĕнле унта.

Микуль тухса чупрĕ. Пӳртре халь кутник çинче выртакан Назар тата Варук çеç юлчĕç. (Микиша çенĕкри вырăн çине хунă пулнă). Назар, вăхăтран вăхăт тарăннăн сывласа, йынăша-йынăша илчĕ, Варук пĕрехмай ун патне пыра-пыра, ăна канлĕрех вырнаçтарма тăрăшрĕ. Урам енчи чӳречесем витĕр урайне хĕвел çутти ӳкрĕ, ку ĕнтĕ кăнтăрла çитнине пĕлтерчĕ. Чӳрече умĕнчи акаци тураттисем çинче салакайăксем хăйсен чĕвĕлти чĕлхипе калаçса сиккелеме тытăнчĕç.

Кантăк çумĕнче таçтан килсе лекнĕ пыл хурчĕ нăйлатма тапратрĕ. Вăл Тараса тарăхтармаллах йăлăхтарчĕ, унтан хурт сасси такам пĕр майлăн шăпăр калана пек туйăнчĕ, кунпа пĕрлех пӳрт маччи темшĕн хускалчĕ, çаврăнма тапратрĕ, юлашкинчен таçта хăямата кайса путрĕ...

— Тарас, Тарас... Мĕн эс? Вăранха...— илтрĕ вăл тĕлĕк витĕр такамăн çинçе сассине.

— Мĕн? — ыйтрĕ Тарас, куçĕсене уçса.

Ун умĕнче Варук тăрать иккен...

Тарас хăйне мĕн пулнине, хăй ăçта выртнине аса илчĕ те, шăмшакĕ ыратни çине пăхмасăрах, тăрса ларчĕ.

— Çынсем ăçта? — ыйтрĕ вăл, чӳречерен пăхса илсе.— Мĕн пулчĕ унтан кайран?

— Тытса хупрĕç,— терĕ Варук.

— Кама-кама?

— Микстурпа Шĕвĕрпуçа, Уртеме, Мамун арăмне тата темиçе çынна — вĕсене асăрхаймарăм... Ку, вулăсран килни, пӳртрен тухсанах, вĕсене ятпа чĕнсе пухрĕ... Халăх хушшинчен тухасшăн пулмарĕç вĕсем... Анчах та çынсем кăтартса пачĕç вĕсене...

— Камсем?

— Павăл пиччç унта, Кулине...

— Хăюлăх çитрĕ пулать?

— Çапла пулас çав... Вара милицисем пурне те хурал пӳртне илсе кайса хупрĕç...

## XXVII

Петрухин юлташ Тараса „сирĕн ялти сывлăша тĕппипех тасатса çитеретпĕр" тесе ахальтен каламан. Юлашки икĕ эрне хушшинче вулăсри бандитла элементсен ушкăнĕсене икĕ çĕрте хупăрласа тытма май килнĕ,— уголовнăй розыск сотрудникĕсен аллине таврари ял çыннисене куллен хăратса пурăннă шултăра „çарттансемех" лекнĕ. Анчах та вĕсен хушшинче Махорка пулман. Петрухин юлташа Махорка кирлĕ пулнă: вăл, тĕрлĕ майсемпе йĕрлесе,— хăйĕн йăмăкне Махорка персе пăрахнине чухланă, çавăнпа та ку бандита епле пулсан та хам алăпах тытатăп, тесе сăмах панă. Ăçта та пулин вăрă-хурахсем алхасни çинчен хыпар илтсенех — Петрухин юлташ унта хăй кайнă.

... Паян ирпе Тарас çыруне илсен те, вăл нумай шухăшласа тăмарĕ. Угрозыск начальникĕпе — типшĕм питлĕ украинец Челомбитько юлташпа темиçе сăмах калаçсанах, вĕсем икĕ милиционер илчĕç те, Энтриялне тухса кайрĕç. Çул çинче Петрухин юлташ Челомбитькона хăйĕн шухăшĕсене каласа пачĕ.

— Махорка яланах çак таврара çӳренĕ... Эп пĕлнĕ юлашки сведенисем тăрăх, унăн Энтриялĕнче темле тăван пур. Унпа çыхăннах вăл. Çитменнине, пĕр виçĕ эрне каялла унта Махоркăн пĕр çыннине тытнăччĕ, анчах та вĕсем ку „чĕлхене" пит хăвăрт тирпейлесе хунă. Ман шутпа,

кӗҫӗрхи ӗҫ те Махоркӑсӑр пулман... Эс мӗн тейӗн, э?

Украинец, сӑмах-юмаха питех ваклама юратманскер, ӑна хирӗҫ нимех те каламарӗ, чӗркуҫҫисем хушшине лартнӑ йыттине пуҫӗнчен ачашласа илчӗ ҫеҫ.

— Н-да... Це дило треба разжуваты...,— терӗ вӑл пӗр ҫур ҫухрӑм пек кайсан тин. — Побачимо, як вин будэ. Пошукаемо...

Петрухин юлташ Энтриялӗ патнелле ҫывхарнӑҫемӗн ытларах пӑлханса пычӗ. Унӑн пуҫӗ пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлерӗ, вӑл бандитсене тытмалли тӗрлӗрен тӗрлӗ меслетсем ҫинчен шухӑшларӗ...

— Пире эсӗ тӳрех леш ҫаратнӑ кӗлет патне илсе кай, шӑллӑм,— терӗ Петрухин юлташ милиционерсенчен пӗр шит те юлмасӑр пыракан Микуле.

— Акӑ вӑл, кунтах, икӗ кил урлӑ кӑна,— аллинчи хулӑпа кӑтартрӗ Микуль.

— Атя! Хӑвӑртрах!— ямшӑка ҫурӑмӗнчен пӳрнипе тӗртрӗ волком секретарӗ. — Илтетӗн-и епле шавлаҫҫӗ... Чорт пӗлет!..

Тепӗр минутран вӗсем Назар хапхи умне пырса чарӑнчӗҫ. Ку истори пуҫламӑшӗнчен вӗҫне ҫитиччен кулаксен провокацийӗ пулнине пӗлнипе — активистсене ҫакӑн пек ҫӗмӗрсе тӑкнинчен те тӗлӗнмерӗҫ вӗсем. Пӗр-пӗрин ҫине хулпуҫҫисем урлӑ пӑхса илсе, сӑмахсӑрах ӑнланчӗҫ.

Вара хӑйсем иккӗшӗ тунӑ плана пурнӑҫлама тытӑнчӗҫ.

Суранланнисене майласа вырттарсан, Гарас кӑтартса панӑ ҫынсене арестлесен („Ан тив, вӗсем хушшинче айӑпсӑррисем те пулччӑр, вара палӑртатпӑр“,— терӗ Петрухин юлташ),— Челомбитько хӑйӗн йыттине йӗр шыраттарма пуҫларӗ.

— Шукай! Шукай,[1] Альма!..

Альма — питӗ опытлӑ ищейка пулнӑ. Ӑна пула Челомбитько ниепле тытмалла мар пек туйӑннӑ преступниксенех йӗрлесе тупнӑ. Ахальтен мар вӑл йытта такамсем темиҫе хут та вӗлерме тӑнӑ — наркӑмӑшпа йӗплӗ ҫӑкӑр та парса пӑхнӑ, пӗрре пӑшалпа персе те суранлатнӑ. Унӑн хуҫи паян та вӑл йытӑ пысӑк ӗҫ тӑвасса шаннӑ.

... Кӗлет патӗнче шӑршласа чупкаласан, Альма пӗр вырӑнта чарӑнса найкӑшма тапратрӗ, малти урисемпе ҫӗре чавса илчӗ.

— Стой, нельзя! — кӑшкӑрчӗ ун ҫине Челомбитько. Унтан йапӑр-япӑр кӑкӑрӗ ҫинчи кӗсйинчен ҫаврака кантӑк кӑларчӗ те йытӑ чавма тӑнӑ вырӑна пӑхса упаленме тытӑнчӗ. Тӗлӗннӗ халӑх — сасартӑк чӗлхесӗр пулнӑ пекех — унран темиҫе чалӑшра ним чӗнмесӗр, шӑппӑн сывласа пӑхса тӑчӗ.

— Юн,— терӗ Челомбитько Петрухин юлташа.

Йытӑ анаталла туртӑнма пуҫларӗ.

— Шукай! — терӗ те ӑна хуҫи каллех, хӑй ун хыҫҫӑн чупнӑ пекех утса кайрӗ. Юпа пек тӑнӑ халӑх та хускалчӗ, шавлама тапратрӗ.

— Ан шавлӑр! Ҫывӑха ан килӗр!— кӑшкӑрчӗ халӑх еннелле Петрухин юлташ, Челомбитькопа юнашар утса. Вӑл хытӑ пӑлханса кайрӗ халь: куҫӗсем темле пит хӑвӑрт ҫаврӑнкаларӗҫ, ҫамки ҫине шултӑра тар пӗрчисем тапса тухрӗҫ, сылтӑм аллипе тек-текех кобурне тыта-тыта тӳрлетрӗ. Пӑлханма сӑлтавӗ те пулчӗ ҫав: Альма преступниксен йӗрне тупни уҫҫӑнах курӑнчӗ... Анчах та — вӗҫне ҫитиччен илсе пырӗ-ши вӑл?

Акӑ Альма, ҫырма патнелле чупса анса, Карас кӳлли патнелле чупрӗ, унтан сӗвек сӑрт ҫинелле хӑпарчӗ,

---

[1] Шукай — шыра (украинла).

ишӗлчӗк ҫатан карта урлӑ сиксе каҫса, ыраш ӑшнелле кӗрсе кайрӗ. Ансӑр йӑран тӑрӑх пӗр ана пӗвӗ пек кайсан — тӑрук сылтӑмалла пӑрӑнса, анасен пуҫӗпе каллех аналалла, Юрпаш шывӗ еннелле ыткӑнчӗ...

Янкӑр уяр тӳпери хӗвел ним хӗрхенмесӗр пӗҫертрӗ, таҫта ҫӳлте, ӑша сывлӑшра тӑрисем каҫса кайсах юрларӗҫ, ыраш ӑшӗнче шӑрчӑксем чӗриклетни илтӗнчӗ...

Челомбитькопа Петрухин юлташ йытӑ хыҫҫӑн аран ӗлкӗрсе пычӗҫ. Вӑл ҫаплах малалла туртӑнчӗ. Хыҫалтан пыракан халӑх та юлмарӗ вӗсенчен. Чи малтан — йытӑран пӗр-ик чалӑшра ҫеҫ Павӑл пичче, Хӑмӑт Энтри, Кулинепе Марине, комсомолецсем утрӗҫ, вӗсем хыҫҫӑн — Назар килхушшинче пулнӑ пӗтӗм халӑх,— ватти-вӗтти мӗнӗпех... Вӗсем пурте кӗҫ-вӗҫех пит те пысӑк, тӗлӗнмелле ӗҫ пуласса кӗтрӗҫ, чӑн-чӑн вӑрӑсем — выҫӑ ҫынсен юлашки ҫӑкӑр татӑкне туртса илекенсем тупӑнасса шанчӗҫ... Шанчӗҫ те — ҫав хушӑрах ӗненмерӗҫ те... Сасартӑк, ку таранччен лупашкаллӑ йӑран тӑрӑх пынӑ Альма сулахаялла пӑрӑнса, анасем урлӑ — тӳрӗрен тӳрӗ — Качака-варӗ пуҫнелле чупса кайрӗ. Хушӑран вӑл йӑпӑртлӑх чарӑнса тӑчӗ, пӗрик хут вӗрсе илчӗ, унтан каллех чупрӗ. Йытӑ кун пек хӑтланни ҫынсене тата ытларах тӗлӗнтерсе пӑлхатрӗ,— вӗсем хытӑран хытӑ малаллах чупрӗҫ.

Альма, ыраш хушшинчен ухӑ йӗппи пек сиксе тухса, Качака варӗ хӗррине ҫитсе тӑчӗ те тӳрех хаярран верме тапратрӗ. Петрухин юлташпа Челомбитько пӗрре пӗр-пӗрин ҫине, тепре ҫырма тӗпнелле пӑхса илчӗҫ. Иккӗшӗ те вӗриленсе ҫитрӗҫ вӗсем, йывӑррӑн хашкаса сывларӗҫ, пичӗсем тӑрӑх шултӑра тар юхса тӑчӗ...

— Треба пошукаты! — терӗ те украинец, вӗтӗ ҫӳҫе тӗмӗсем ӳсекен ҫырма тӗпне, унтан ҫыр хупаххисемпе витӗннӗ чӑнкӑ ҫырансене куҫӗсемпе сӑнама тытӑнчӗ. Альма вӑл хушӑра чарӑнма пӗлмесӗр, ҫаплах вӗрчӗ. Ҫур минут та иртмерӗ пулӗ — Челомбитько пӗр вырӑнта ҫыранти хупахсем лутӑрканнине асӑрхарӗ те, ним шухӑшласа тӑмасӑрах — аялалла сикрӗ. Альма йынӑша-йынӑша ун хыҫҫӑн анса кайрӗ. Ҫыран хӗррине ҫитсе тӑнӑ ҫынсем: „ах! айтурух! пӗтрӗ ку!" — теме анчах ӗлкӗрчӗҫ — украинецпа йытӑ ҫырма тӗпӗнчи ҫӳҫе тӗмӗсем ӑшӗнче ҫухалчӗҫ. Тепӗр самантрах аялтан, йытӑ вӗрнипе пӗрле, хыттӑн кӑшкӑрни илтӗнчӗ:

— Петрухин! Сюда-а!..

Ҫӳлте тӑракансем ӑнланчӗҫ: украинец темскер тупнӑ унта. Малтан Петрухин юлташ, ун хыҫҫӑн ыттисем те ҫырманалла пӑрҫа пек тӑкӑнчӗҫ. Вӗсем ҫырма тӗпне ҫитиччен — Челомбитько ҫӳҫе тӗмӗсем хушшинчи лупашкаран темле этем кӗлеткине ҫӗклесе тухса, курӑк ҫине хучӗ те, унӑн пуҫӗ ҫине тӑхӑнтарнӑ миххе салтса хывма тытӑнчӗ.

Михӗпе хупласа ҫырмана ыватнӑ ҫын — Исай пулнӑ. Унӑн сӑн-пичӗ кӑвакарса ҫӗр тӗслех пулса ларнӑ, куҫӗсем хупӑннӑ,— чӑн-чӑн вилнӗ ҫын пекех...

Ҫынсен кӑкрисенчен пӗр харӑс хӑрушӑ сас пӑчӑртанса тухрӗ:

— А-ахх!..

— Тур ҫырлахтӑрах! Вӗлернӗ!..

— Исая!

— Эх, мӗскӗн...

— Кам-ши? Кам тискерӗ-ши?

— Аҫа ҫапасчӗ...

— Куртӑр-и ӗнтӗ кам айӑплине?— хулӑм сасӑпа кӑшкӑрса ячӗ халӑх ҫине Хӑмӑт Энтри, пӗтӗм кӗлеткипе чӗтренсе илсе.— Советсем тунӑ-и ҫакна? Комсомолсем-и? Эх, ҫынсем мар эсир...

Вӑл каласа та пӗтереймерӗ — халӑх хушшинче пӗр хӗрарӑм калама ҫук хыттӑн, ӑнран тухса кайнӑ пек:

— А-ай! — тесе кăшкăрса ячĕ...

Куна Марине кăшкăрнă, хăйĕн савнийĕ вилнĕ пек выртнине курсассăн, хĕр чĕрийĕ тӳсеймен; унăн ăс-пуçĕ пăтраннă пек пулса кайнă... Вăл пĕр утăм ярса пусрĕ те, Исай кĕлетки патне ӳксе, ăна хулпуççинчен ыталаса илсе, пĕтĕм халăх илтмелле, ăнтăхса кайса, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чĕтренсе макăрма тапратрĕ:

— Вĕлернĕ-ĕ!.. Вĕлернĕ сана... Пире курайман çынсем вĕлернĕ. Чунăм!.. Мĕн тăвас халь ман, кама ӳпкелес...

Татах та тĕрлĕрен тĕрлĕ ачаш сăмахсем каласа йĕчĕ вăл, хăйĕн таса çамрăк чĕринче мĕн пухăннине каласа пачĕ,— унтан çавăнтах ăнран кайрĕ... Пăхса тăракан çынсенчен никам та пĕр сасă кăларма хăймарĕ,— çырмара хăрушă шăплăх пулса тăчĕ... Хыçалта темиçе хĕрарăм нăшăклатса илчĕç... Пурнăçра темĕн тĕрлĕ хăрушлăх та курнă Челомбитько та тӳсеймерĕ, çамрăк хĕр асапланнине кура, унăн пысăк кăвак куçĕсем шывланчĕç.

— Обморок,— терĕ вăл Петрухин юлташа.— До дому надо...

Хăй çавăнтах Исай патне чĕркуçленсе, унăн юн тымарне тытрĕ. Унтан, пуçне кăкри çине хурса, чĕри тапнине итлесе пăхрĕ.

— Сывлать. Халех тухтăр кирлĕ...

— Тухтăр патне янă,— терĕ Петрухин юлташ.

## XXVIII

Хурал пӳртне хупса лартнă Лява Уртемĕпе Мамун арăмĕ, Микстур Михалипеле Шĕвĕрпуç ĕç кун пек çаврăнса килессине ниепле те кĕтменччĕ. Пĕр сехет каялла кăна хĕрсе кайнă автансем пек сиккеленĕскерсем, тăруках шăпланчĕç вĕсем, хастарлăхĕ таçта хăямата кайса кĕчĕ. Пурин те ăшчиккисем вăркама тытăнчĕç, вĕсем палăрмаллах пăлханчĕç, пурте харпăр тĕллĕн шухăша кайрĕç...

Пуринчен ытла Микстур пăлханчĕ. Пурнăçра яланах хăравçă пулнăскер, ĕнерпе паян Лява Уртемĕн сăмахĕсене суккăр çын пек ĕненнипе çеç хавхаланнăскер, халь тĕксĕм хурал пӳрчĕн алăкне тул енчен шанчăклă çăрапа питĕрнине илтсен, кăшт çеç макăрса ямарĕ. Малти кĕтесселле иртрĕ те — чĕлĕм чĕркесе, çăра тĕтĕме çăтма тытăнчĕ.

— Тĕрме пулчĕ-çке ку, Уртем пичче,— терĕ Микстур ӳкнĕ сасăпа, чылай вăхăт ним чĕнмесĕр ларнă хыççăн.

— Тĕрме çав! Эс мĕн — сана советсем пуçран ачашласа тăрĕç, терĕн-и? — татса хучĕ Уртем сиввĕн.

— Мĕнле-ха апла... Эс ним те пулмасть, терĕн-çке...

— Мĕн пултăр? Айăпсăр çынна мĕн туччăр? — терĕ Мамун арăмĕ, „айăпсăр" сăмаха юриех палăртса. Хăй çавăнтах урай варрине тăсăлса выртнă Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамĕ çине пăхса илчĕ. Кусем иккĕшĕ те нимĕн те пĕлмен, вĕсем — ахаль чух та çапăçма юратаканскерсем — паян активистсене, чăнласах айăплă пуль тесе хĕненĕ, камсемпе ларнине те чухламан.

— Вĕсен пире виноват тума ниепле право та çук, эпир анчах мар, пĕтĕм халăх хĕнерĕ...— мăкăртатса илчĕ Шĕвĕрпуç, Микстуртан чĕлĕм тĕпне илсе хыпса.— Раз вăрă — значит вăрă, и ĕçĕ те çав кăна!

— Çапах та, айăпламах тапратсан, мĕн тăвăпăр-ха эпир? — Уртем патнерех пырса ыйтрĕ Микстур.

— Сĕлекӳне ан юхтар ĕнтĕ! — тăрук кăшкăрса пăрахрĕ лешĕ, Микстур çине шур куçĕсемпе пăхса.— Мĕн... чĕчĕ ачи пек! Эс ним те курман, илтмен, ним те пĕлместĕн... Ăнлантăн-и? Миçе хут каламалла сана?!

— А... а, тупсан тата?— мăкăртатса илчĕ куна хирĕç Микстур, асăрханасси-мĕнне манса кайса.

Ку ĕнтĕ ытлашши пулчĕ.

— Мĕн тупсан?— кăшкăрса пăрахрĕ те Уртем, ответ кĕтсе тăракан Микстура сасартăк пĕтĕм вăйпа çупса ячĕ. Микстурăн пит çăмартийĕ вут пекех пĕçерсе кайрĕ, вăл ăна ывçипе хупларĕ.

— Мĕншĕн ку?..

— Çавăншăн! Мĕн кирлĕ мара лăркатăв? Тепре çаварна уçсан, эп сана çакăнтах пăвса пăрахатăп!

— Чĕлхене ăна шăлпа çыртма пĕлес пулать!— хушса хучĕ Мамун арăмĕ, ĕç малалла кун пекех пырсассăн, Микстур тем те пĕр каласран хăраса.— Вăрăм чĕлхе çынна ыр тумасть!

— Эп... эп нимĕн те каламарăм вĕт, ма çапрĕ вăл мана?— мăкăртатса илчĕ Микстур, юнпа сурса.— Пăх-ха, юн тухиччен çапрĕ!..

Урайĕнчи Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамĕ, пуçĕсене çĕклесе, вĕсем çине ним ăнланмасăр пăхса выртрĕç... Çав вăхăтрах пӳртри сасăсене илтнĕ милиционер, чӳрече тĕлĕнче чарăнса, кантăкран шаккарĕ.

— Шăп ларăр! Шавлама юрамасть!

Пӳртре каллех шăп пулчĕ, шăнасем кайлатса вĕçсе çӳрени çеç илтĕнчĕ. Лява Уртемĕ алăк патĕнчи сак çине месерле выртрĕ те ним тĕлсĕр хура маччана пăхма тытăнчĕ. Унăн пуçĕнче тăхлан пек йывăр шухăшсем çаврăнчĕç.

„Йытă илсе килчĕç... Неушлĕ тупĕ вăл? Армана кайса пăхма пултараймаççĕ вĕсем... Никамăн та ăс çитес çук,— арман икĕ çул ĕçлемест ĕнтĕ... Махорка унтах выртать-ши? Тарсан, аван пулатчĕ те... Ну, вăл парăнас çук-ха. Лешĕ, сарă туталли... Исай вилмеллипех вилчĕ-ши? Ăна çеç мар, ыттисене те тирпейлесе хумаллаччĕ. Шел, ĕлкĕреймерĕмĕр... Мĕн хăтланаççĕ-ши халĕ? Йытăпа йĕрлеççĕ пулĕ-ха... Чорт пĕлет... Ку ухмах Микстурне пустуй çапрăм. Пĕр те пĕр темскер персе ярсан — пĕтерчĕ вара. Ытлашши вĕрилентĕм... Вăл, тăмпуç, пире малашне те кирлĕ пулать-ха. Йăпатас пулать..."

Микстур чӳрече янахĕ çине чавсаланса, чикаркка хыççăн чикаркка йăсăрлантарса ларать.

Вăл та халь малалла мĕн пуласси çинчен шухăшлать... Пĕр енчен, ăна Уртем çупса яни хытă кӳрентернĕ, пĕр вăхăтра вăл, урамри милиционера чĕнсе илсе, ĕнертенпе мĕн-мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех каласа парас патне çитрĕ.— „Мĕн тивĕçпе çапрĕ вăл мана? Хăй темĕн тĕрлĕ илĕртрĕ те, халь хĕнеме пуçларĕ! Мăшкăлать манран!" Анчах та темиçе самантрах пусăрăнчĕ.— „Апла тусан, хам та пĕтетĕп... Как-нибудь хăтăлас пулать..."

Лява Уртемĕ ун çумне шăппăн кăна пырса ларчĕ те хулпуççинчен тĕкрĕ.

— Туртмалли пур-и сан? Ăш çунать,— терĕ Уртем. Чĕлĕм чĕркесе чĕртсен, питне Микстур хăлхи патне илсе пырса, васкавлăн пăшăлтатса калама тытăнчĕ.— Эс каçар мана, Михали... Ăнсăртран пулчĕ ку, сана кӳрентерес тесе мар...

## XXIX.

... Исая, çӳçе тураттисенчен тунă носилка çине хурса, яла ăсатрĕç. Пуçне шывпа йĕпетсе, питне çуса, куçне уçса тăна кĕнĕ Маринене те Кулинепе икĕ хĕр ача киле çавăтса кайрĕç. Челомбитькопа Петрухин юлташ, вĕсене ăсатсан, чăн малтан Исайăн пуçĕ çинчен хывса илнĕ миххе пур енчен те пăхса тухрĕç. Миххи икĕ çĕртен çĕтĕлнĕ пулин те, çирĕп лапрашки пиртен çĕленĕскер пулнă, унăн пĕр енче тахçан тикĕт-

пе ҫырнӑ икӗ саспалли: „Л“ тата „А“ кӑшт ҫеҫ паларса тӑнӑ.

— Це гарно! — куҫӗсене ялкӑштарса илчӗ Челомбитько.— Це же карты в руки!

Петрухин юлташ пуҫӗпе ҫеҫ сулса илчӗ.

Унтан вӗсем, ҫырана улӑхса, паҫӑр сикнӗ вырӑна тухрӗҫ. Хыҫҫӑн пыракан ҫынсем те вӗсенчен юлмарӗҫ.

— Кунтан бандитсем хӑш еннелле кайма пултарнӑ?

Ҫак ыйту ҫине ответ тупма тӑрӑшса, вӗсем ҫырма хӗррипе анаталла, Юрпаш шывӗ еннелле утрӗҫ. Альма каллех пӑлханма пуҫларӗ, йӗр ҫухалнипе вӑл тек-текех йынӑшрӗ, ыраш ӑшнелле те кӗрсе пӑхрӗ, ҫырманалла та туртӑнчӗ... Челомбитько ӑна пӗрмай лӑплантарса, хуллен кӑна: „Шукай, Альма, шукай...“ тесе пычӗ. Пӗр ҫирӗм-вӑтӑр чалӑш пек кайсан, вӗсем пӳрт лаптӑкӗ пысӑкӑш лупашкана анчӗҫ. Альма кунта тата хытӑрах пӑлханса чупкалама тытӑнчӗ. Петрухин юлташ пӗр вырӑнта курӑк лутӑрканнине асӑрхарӗ. Челомбитько, ҫавӑнтах чӗркуҫленсе ларса, курӑк ӑшӗнче темскер шырама тытӑнчӗ...

Халӑх каллех, ҫавара шыв сыпнӑ пек пулса, пӑхса тӑчӗ ун ҫине.

— Курили, холеры!— терӗ Челомбитько, курӑк ӑшӗнчен икӗ ҫунӑк спичка тата пӗр чикарккӑ чӗркемелӗх хут татӑкӗ тупса кӑларса.— Во! Нам и це пригодится... А ну, Альма, пошукаемо еще трошки!

Унӑн куҫӗсем уйрӑмӑнах савӑнӑҫлӑн ҫутӑлса илчӗҫ,— украинец каллех преступниксен йӗрӗ ҫине ӳкнине Петрухин юлташ сӑмахсӑрах ӑнланчӗ. Вӑл ҫеҫ те мар, куна ыттисем те сисрӗҫ. Ҫырма хӗррипе пӗр ҫур ана пӗвӗ пек чупса ансан, Петрухин юлташӑн чавсинчен Хӑмӑт Энтри ҫитсе тытрӗ.

— Мӗнле-ши, юлташ, тупӑр-ши?

— Тупӑпӑр!— илтӗнчӗ ответ.

— Мӗн терӗ вӑл?— ыйтрӗ Энтрипе танлашнӑ Павӑл пичче.

— Тупатпӑр, тет...

... Ялӑн анатри хапхинчен ҫак вӑхӑтра Тарас юланутпа чуптарса тухрӗ. Килӗнче суранлатнӑ амӑшне чипер вырнаҫтарса, ӑна пӑхмашкӑн Павӑл пиччен арӑмне — Марфа инкене хушса хӑварсан, вӑл часрах йытӑпа йӗрлекенсене тупас тесе тухнӑ. Унӑн хӑйӗн те пӗтӗм шӑмшакӗ ыратнӑ, хушшӑн-хушшӑн ӑшӗ пӑтрanса, пуҫӗ ҫаврӑнса кайнӑ,— анчах епле пулсан та тӑшмансене тупса тытас кӑмӑл — ӑна халь ним тусан та килте лартма пултарайман... Ытла мӑшкӑлларӗ вӗт тӑшман, ытла та тӳсме ҫук ирсӗр ӗҫ туса хучӗ. Тем пулсан та, тӑшман тем пек чееленсен те — ӑна тупса тӗппипех кӑкласа пулать! Тымарӗ мар — шӑрши те ан юлтӑр, ан варалатӑр вӑл пирӗн сывлӑша,— ӗҫлеме ҫеҫ мар, сывлама та ҫӑмӑл пултӑр! Курӑпӑр — кам ҫиеле тухӗ!

Хапхаран тухсанах, Тарас лашана сулахаялла, Лява таврашӗсен кивӗ шыв арманӗ патнелле каякан ҫулпа тытрӗ. Лаша сиккипе ыткӑнчӗ, ҫаран ҫинче ӳсекен сарӑ, хӗрлӗ, кӑвак чечексем вӗлтлетсе кӑна юлаҫҫӗ.

Хурама кукринелле пӑрӑнсан, Тарас хӑйне хирӗҫ икӗ арҫын ача мӗнпур вӑйран чупса пынине курчӗ.

— Ҫаксенчен ыйтас-ха, йӗрлекенсене курман-и вӗсем,— шухӑш вӗҫрӗ Тарасӑн. Анчах та ачасемпе танлашсан, вӗсем хӑйсемех кӑшкӑрса ячӗҫ:

— Тарас пичче! Тарас пичче!

— Мӗн?— ыйтрӗ Тарас, хӗрсе кайнӑ лашана аран чарса.

— Мӗн ҫав... Мӗн ҫав... ҫавӑнта, арманта... — сывлӑш ҫавраймасӑр, ӑнтӑха-ӑнтӑха, аллипе арман еннелле кӑтартрӗ пӗр ачи.

— Таркӑн куртӑмӑр!— персе ячӗ тепри.

— Мĕнле таркăн?! — чĕри кăртах турĕ Тарасăн. Ачасен кăвакарса кайнă сăнĕсемпе сиксе тухас пекех чарăлса кайнă куçĕсене курсан, вăл ку ачасем чăнах та темскертен хăранине ăнланчĕ. — Мĕнле таркăн, ăçта?! — татах ыйтрĕ вăл, лашине пĕр вырăнта ташлаттарса.

— Арманта! — хашкаса сасă кăларчĕ малтан калама пуçланă ачи. — Эпир Митюкпа Насвартан, кукамайсем патĕнчен таврăнаттăмăр та, арман пĕви пуçне пулă тытма антăмăр... Чулсем айĕнче йăмпăлтак пулă нумай, алăпа тытма пулать...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп. Эс кама курни çинчен кала! Иĕркипе кала!

— Калатăп-иç... Пулă тытрăмăр-тытрăмăр та, киле килес терĕмĕр. Арман кĕлечĕ патне хăпартăмăр та — кайăк чĕпписем чĕриклетнине илтрĕмĕр. Митюкпа иксĕмĕр те çӳлелле пăхрăмăр...

— Вара мĕн? — васкатрĕ Тарас.

— Пăхрăм та, кĕлет пуçĕнчи шăтăкран... хай, çӳлте, мачча патĕнче, чавкка шăтăкĕ тăваççĕ вĕт... çав шăтăкран тĕтĕм тухнине куртăм... Митюка „пăх-ха!“ тесе айăкĕнчен тĕкрĕм çеç... унччен те пулмарĕ, çав шăтăкра хура уссиллĕ çын сăнĕ курăнчĕ. Курăнчĕ те самантранах пытанчĕ... Чĕлĕм туртрĕ пулмалла... Митюка эпĕ: ку çын никам та мар — таркăн, терĕм те, часрах кунталла чупрăмăр...

— Вăл хăй сире курчĕ-и? — ыйтрĕ Тарас, ниçта кайса кĕрейми пăлханса.

— Пĕлместĕп... Курайманрĕ пуль, эпир тӳрех тартăмăр.

— А эсир ку таврара çынсем нумайăн çӳревине курмарăр-и?

— Мĕнле çынсем?

— Хамăр ялсем те, ют çынсем те... йытăпа.

— Çук, курман, — пуçĕсемпе сулчĕç ачасем.

— Ну, юрать эппин!..

Тарас урăх нимĕн те каламарĕ, лашана чĕлпĕртен карт! туртрĕ те, ик енчен харăс тапса, çул тăрăх малалла тапăртаттарчĕ, — тусан çеç мăкăрланса юлчĕ ун хыçĕнчен. Ачасем ун çине тĕлĕнсе кăна пăхса юлчĕç...

Арман патне çитесси пĕр çĕр чалăш пек юлсан, Тарас сулахай енчен улăхалла, ыраш хушшипе 50—60 çынлă ушкăн кĕпĕрленсе аннине курчĕ. „Çавсем!“ — шухăшларĕ те вăл, лашине çул çинчен пăрса, ыраш урлă тӳрех вĕсем çинелле тытрĕ. Пĕр-ик минутран çитсе те тухрĕ вĕсем патне.

— Чимĕр-ха! — лаша çинчен сиксе анчĕ вăл.

Хирĕç анакан халăх тăпах чарăнчĕ, Петрухин юлташпа Челомбитько ун патнелле чупса пычĕç.

— Мĕскер?

— Мĕн тата?

— Пĕр сăмах пур.

Ытти çынсенчен темиçе утăм аяккалла кайса тăрса, Тарас вĕсене ачасенчен халь çеç пĕлнĕ хыпара васкавлăн каласа пачĕ.

— Унтанпа пĕр çирĕм минут кăна иртрĕ, унтан ытла мар. Тен, вăл халь те унтах-ха, каç пуласса кĕтет пулĕ...

— Пит аван! Ку питĕ аван!.. — чышкисене чăмăртарĕ Петрухин юлташ. — Эппин пире Альма тĕрĕс илсе килнĕ.

— Зараз треба окружить! — терĕ Челомбитько, Юрпаш хĕрринче курăнакан арман çурчĕсем çине пăхса. — С флангов и с тылу... А мы з Альмой побежимо прямо, в лоб!.. Нэ спасеться!

Ку шухăшпа Петрухин юлташ та килĕшрĕ.

— Тĕрĕс! Пур енчен те çавăрса илес, эпир ăна чĕррĕн тытатпăр!

Çавăнтах хăвăрттăн, вăхăта пĕр

минут та çухатмасăр, вăл кун çинчен халăха пĕлтерчĕ те командовать тума тытăнчĕ.

— Эсĕ çирĕм çынпа сулахай енчен, ав çав çырма хĕррипе çавăрса пыр,— хушрĕ вăл Хăмăт Энтрине.— Эсĕ çирĕм çынпа сылтăмран, ав çав йывăççем патĕнчен çаварса ил,—кăтартрĕ Павăл пиччене.—Тарас, эс халех леш енчи сăрт çине кайса тăр, наблюдатель пул. Хăвпа пĕрле пĕр икĕ ача илсе кай. Эпир кунтан тӳрĕн пырăпăр... Ăнсăртран пире курсан — вăл леш еннеле çеç тарма пултарать, вара эпир ун хыççăн йытă яратпăр... Ăнлантăр-и?

— Ăнлантăмăр!— илтĕнчĕ ответ.

— Вĕçтерĕр!

Халăх чупрĕ... Пĕрисем пĕр еннелле, теприсем тепĕр еннелле. Çак самантра хирти çынсен пурин те пĕр шухăш, пĕр кăмăл пулчĕ: епле пулсан та тытасчĕ ку бандитсене! Пасăр ирхине Варуксен килхушшинче вумайăшĕ иккĕленчĕç, кĕçĕрхи ирсĕр ĕçе чăнах та совет членĕсемпе комсомолецсем хăйсем тунă пулĕ, тесе шутларĕç, анчах та халĕ, Качакаварĕ тĕпĕнче Исай вилнĕ пек выртнине курсан, шухăшĕсем пачах улшăнчĕç, халĕ ĕнтĕ кашниех ку ĕçе бандитсемпе вĕсем майлисем тунине ăнланса, вĕсене пĕр çын юлмиччен тытса лапчăтас ĕмĕтпе çунчĕç.

Тарас, лаши çине утланса, халăхран уйрăлчĕ те, Петрухин юлташ хушнă пек, Юрпаш леш енчи сăрт патнелле ыткăнчĕ. Арман патĕнчен курăнмалла ан пултăр тесе, унтан чылай тăварахра тăракан ушкăн йăмрасем хыçĕпе пăрăнса каçрĕ. Ун хыççăн икĕ çамрăк каччă каçрĕç.

... Юрпаш урлă каçса, сăрт çине çурри таран хăпарсан, Тарас хашкама ернĕ лашине самантлăха чарса тăратса, улăхалла пăхрĕ. Армантан анатарах та, тăварах та, арман патнелле пыракан çулпа та тарăн курăк ăшĕнче, лупашкапа тĕмескесем хыçĕнче пытана-пытана, çынсем шуса пыраççĕ иккен.

— Фронтри пекех... Наступлени,— шухăшларĕ те Тарас, тавралăха тата лайăхрах курмалла вырăн йышăнас шутпа, лашине хускатрĕ.

Пĕр виçĕ минут иртрĕ...

Унтан сасартăках сулахай енче, Хăмăт Энтри ертсе пыракан ушкăнта, тахăшĕ пур вăйран кăшкăрса ячĕ.

— Тарать! Тарать! Авă, авă!

— Тытă-ă-ăр!— илтĕнчĕ çав самантрах теприн сасси.

— Сто-ой!

— Тытă-ăр!

— А-а-а...— янраса кайрĕç сасăсем çырма тăрăх.

Сăрта хăпарса çитнĕ Тарас лашине тепĕр еннелле карт туртса çавăрчĕ те, аллинчи тăлăпа ăна урлă та пирлĕ туртса çапса, сăрт хĕррипе, ним çине пăхмасăр, сасăсем илтĕннĕ çĕрелле ыткăнтарчĕ. Анчах çав вăхăтра арманăн сылтăм енче те — Павăл пичче ушкăнĕнче çавнашкалах кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Эхе-е-эй!

— Сто-ой!..

— Ан та-а-ар!..

— Тытă-ăр!

— „Урăххи пуль унта... Пĕрнех хăвалас пулать...“— шухăшласа илчĕ те Тарас, малаллах вĕçтерчĕ.— „Икке хăваласан — пĕрне те тытаймăн...“

Çур минутран вăл хăйĕнчен пĕр аллă чалăшра, çырма тĕпĕнче, Хăмăт Энтрипе унăн ушкăнĕ чупнине, вĕсенчен тепĕр утмăл чалăш малта — темле кăвак пиншаклă, аталлă çын каялла пăха-пăха ыткăнса пынине курчĕ. Тарасăн чĕри тата пăлханулларах тапма тапратрĕ...

„Çавă! Çавă! Бандит!“

Лашине таттисĕр хăвалама тытăнчĕ...

Акă ĕнтĕ, бандитпа Тарас хушши çирĕм чалăшран ытла юлмарĕ. Çыранран çырманалла анмалла çеç, вара ăна çитсе таптать вăл...

— Сто-ой! Ан тар!— кăшкăрса ячĕ Тарас. Анчах та, кăшкăрма кирлĕ мар-мĕн. Бандит, ăна курсан, тăпах чарăнса тăчĕ те — револьверне кăларса, икĕ хутчен печĕ... Пульăсем Тарас хăлхи çумĕпех шăхăрса иртсе кайрĕç.

— А-а-а!.. Çавах тытатпăр! — кăшкăрчĕ Тарас татах, лашине çырманалла пăрса.— Тарайман!

Самантран вăл, çырма тĕпне анса, лашине шыв урлă сиктерчĕ. Бандит çав хушăра тепĕр еннелле хăпарса, Шемертен вăрманĕ патнелле чупрĕ. Тарас та ун хыççăнах сиктерсе хăпарчĕ... Бандит пăшал пеме тытăнсан, тăруках чарăнса тăнă Хăмăт Энтри ушкăнĕ—бандита Тарас ним шиксĕр хăваланине кура—каллех чупма пуçларĕ.

— Тытă-ăр!..

— Ан тартă-ăр!..— янраса тăчĕ таврара.

Бандитпа Тарас хушши кĕскелсех пычĕ. Çирĕм чалăш, вунпиллĕк, вуннă... Çывăх ĕнтĕ, çывăх! Халех, халех çитсе таптать ăна вăл... Анчах сасартăк калама çук хăрушă япала пулса тăчĕ: бандит вăрт! каялла çаврăнчĕ те, хăвăрт чĕркуçленсе, хăйĕн çинех пырса кĕме тапратнă Тараса револьверпа тĕллесе, икĕ залп турĕ. Тарас айĕнчи лаша тăрук кайри урисем çине тăрса аяккалла сикрĕ, Тарас çав самантрах хăлаçланса илсе, çĕрелле татăлса анчĕ... Куна кура, бандит ун патне хăвăрт чупса пырса, ăна ĕнсинчен пăчăртаса лартрĕ... Анчах унăн вĕри пÿрнисем Тарас карланки патне çитиччен, ку пĕтĕм кĕлеткипе çĕкленчĕ те—ăна хăйĕн çийĕнчен сирсе пăрахма ĕлкĕрчĕ. Бандит ăна çавăнтах сухинчен ярса тытрĕ... Вара вĕсем, урса кайнă аçа кашкăрсем пекех кĕрешсе, йăванма тапратрĕç вăрăм курăк ăшĕнче...

— А-а-а!...

— Э-е-эй!.. Сто-ой!..—паçăрхинчен те вăйлăрах кăшкăрма тапратрĕç хыçалтан чупакансем, вĕсем патне часрах çитме юлашки вăйсене пухса.

Никамран малтан Петрухин юлташ чупса çитрĕ. (Вăл малтанхи сасса илтсенех, арман патĕнче Челомбитькона хăварса, хăй Юрпаш хĕррипе Хăмăт Энтри ушкăнĕ хыççăн чупнă иккен). Чупса çитрĕ те, Тарас аллине çыртса лартнă бандита пĕррех тапса ывăтса, ун çине хăпарса выртрĕ.

— Йытă!..—пăчăртарĕ вăл ăна пырĕнчен.

— Ярр...—хăрăлтатрĕ бандит.

— Кам эс?—курайманлăхпа тулнă куçĕсемпе çисе ярас пек пăхса ыйтрĕ Петрухин юлташ.—Кала, кам? Халех вĕлеретĕп...

— Махорка...

Халăх чупса çитрĕ. Петрухин юлташ сиксе тăчĕ те Хăмăт Энтрине пуçĕпе сулчĕ:

— Çыхăр!

Унтан Тарас патнелле çаврăнчĕ:

— Сана суранланă-и вăл?

— Çук пулас,—терĕ Тарас.—Сисĕнмест...

Чăнах та, бандит пульлисем ăна тивеймен иккен, пĕри унăн пиншак аркине çĕтнĕ те, тепри Варуксен лаши пĕççине шăйăрнă çеç. Револьверте урăх пуля пулман. (Кун çинчен çынсем кайран пĕлчĕç.) Арман енчен çав вăхăтра Павăл пичче ушкăнĕ çывхарса килни курăнчĕ. Çынсем хăвăрт утни, аллисемпе сулкаласа шавлăн калаçни тăрăх—вĕсем савăнăçлăн пăлханни палăрчĕ...

— Тытнă!

— Кусем те тытнă!..

— Илсе килеççĕ!—çĕкленнĕ кăмăлпа шавлама тапратса ячĕç Хăмăт Энтри ушкăнĕнчисем.

Ку тĕрĕс пулнă. Арман хыçĕнчен

сиксе тухса, Юрпаш тăрăх анаталла тарма тапратнă тепĕр бандита курсанах, Альма Челомбитько аллинчен вĕçерĕнсе—бандита вăтăр-хĕрĕх чалăшран ытла та тарма паман, унăн ĕнси çине сиксе ларса, ăна çĕре пусса антарнă.

— Ну, халь вĕсем пурте пирĕн алăра пулас!—терĕ Петрухин юлташ, йывăррăн сывласа тăракан Тараса чавсинчен чăмăртаса.—Тинех вĕсем пирĕн алăран вĕçерĕнес çук!..

## XXX

Ялта çаплах шавларĕç...

— Эс илтнĕ-и?.. Тарасĕ епле маттур вĕт, э! Пĕр сехет те выртмарĕ, ут утланса, йĕр йĕрленĕ çĕре кайрĕ, тет... Мана Варук каларĕ.

— Лешсем мĕнле-ши тата?

— Кам çинчен çак эс?

— Назарпа Микишĕн пуçĕсене çапса çурнă, темеççĕ-и?

— Çу-ук, апла мар... Назарĕ ăна кĕчĕ, тет ĕнтĕ, калаçать, тет. Микишĕ йывăр-ха...

— Исайне халь те тупăйман пулмалла?

— Пĕлмеççĕ.

— Ăçта кайса кĕнĕ-ши вăл?

— Шалккă, ачи пит аванччĕ...

— Милицисене кам чĕнсе килнĕши?

— Микуль, теççĕ...

— Тарас шăллĕ-и? Пăх-ха эс ăна. Пиччĕшĕ пекех çивĕч пулать, эппин...

— Вĕсен амăшне те çĕмĕрсе тăкнă, темеççĕ-и?

— Хăрушах мар, тет, Павăл хăта арăмĕ каларĕ.

— Вăт мĕскĕн хĕрарăм! Ăнмасть унăн пурнăçĕ, йĕпе çине сапа тупăнсах пырать!

— Хупнисем мĕнле-ши тата?

— Лараççĕ ĕнтĕ... Никама та сывăха ямаççĕ, тет, вĕсем патне.

— Çав кирлĕ-ха вĕсене. Çав кирлĕ! .. Исая яла илсе пырсан, ăна ăçта тата мĕнле тупни çинчен пĕлсен—çынсем тата пăлханулларах, тата шавларах калаçма тапратса ячĕç. Халь ĕнтĕ Варуксен пÿртĕнче çеç мар, килхушшинче те тăвăрланса çитрĕ. Активист-арçынсенчен никам та çуккипе, кунта Кулинепе Варук хуçа пулса тăчĕç. Ытлашши çынсене Кулине пÿртрен тухма хушрĕ. Исайăн пуçĕпе кăкăрĕ çинче пĕрмаях сивĕ шывпа йĕпетнĕ алшăлли тытрĕ (Каплла тума Петрухин юлташ хушса ячĕ.). Исайăн пуç вĕçĕнче унăн амăшĕ—кăшт çеç куракан пĕчĕк карчăк, хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшипех нушапа асапланса пурăннăскер, пĕтĕм вăтă чĕрипе хурланса йĕрсе ларчĕ. Чăланта Варук ниепле те лăпланса çитеймен Маринене ÿкĕтлерĕ.

— Ан хумхат ĕнтĕ хăвна ху, мĕн усси пур? Авă, пирĕн атте те саван пекехчĕ те, калаçа пуçларĕ вĕт... Исай та çаплах пулать акă, курăн. Часах тухтăр килмелле, паçăрах кайрĕç хулана.

— Çук ĕнтĕ, сывалас çук вăл...

— Сывалать, тетĕп сана. Асăнăн ман сăмаха!

Сасартăк Варуксем патне çиçĕм пек хыпар çитсе тухрĕ:

— Икĕ бандита тытнă!..

Ку вара кунта пухăннă халăха хумхантарса, пăтраштарса, çавраçил пек çавăрттарса, çĕклентерсе, урам тăрăх анаталла, хурал пÿрчĕ патнелле ыткăнтарчĕ...

— Тытнă!.. — çак сăмах кашнин хăлхинчех чан сасси пек янраса тăчĕ. Кашниннех вĕсене хăйĕн куçĕпе курас, май пулсан хăйĕн аллипех тытса пăвас килчĕ...

Анчах Петрухин юлташпа Челомбитько бандитсене çурса тăкма мар—пÿрнепе тĕкме те памарĕç. Халăх вĕсене инçетрен çеç курса юлчĕ: иккĕшне те шкула илсе кайса питĕрчĕç. Кĕçех хурал пÿртĕнче ларакансене те унта илсе кайрĕç.

— Допрос тăваççĕ, тет...
— Япалисене тупман-ха вĕт...
— Пурпĕрех туптараççĕ ĕнтĕ!— терĕç халăх хушшинче.

Халĕ ĕнтĕ, чăнах та, кaçхине Назар кĕлетĕнчен çаратса кайнă çимĕçсене тупасси çеç юлнă. Бандитсене тытнă хыççăнах Петрухин юлташпа Челомбитько Юрпаш çинчи армана—çимĕçсене тен унта пытарнă пуль тесе— пит тĕплĕн ухтарнă, анчах нимĕн те тупайман. Ăçта кайса хунă вăл çимĕçсене бандитсем? Ăçта ăсатнă? Вĕсене тупса, Энтрияль халăхне каялла тавăрса пама пулĕ-ши? Çак ыйтусем ыраттарнă çынсен пуçĕсене, çак ыйтусене епле пулсан та татса памалла пулнă Петрухин юлташпа Челомбитькон.

— Эс ялтисене допрос ту, а эп ку „гастролёрсене" хыпашлам. Манăн Махоркăпа куçа-куçăн калаçмаллаха...—терĕ Петрухин юлташ.

— Юрать,—килĕшрĕ Челомбитько. Вăл яланах çамха пек пăтранса ларнă ĕçсене тĕрĕслеме юратнă. Тем тĕрлĕ меслетпе те шыранă вăл преступлени йĕрĕсене, анчах çапах та, ĕç темле пăтраннă пулин те, вĕçне шыраса тупнă. Çавăнпа та халь вăл хапăл тусах тытăнчĕ Лява Уртемĕн ушкăнне пĕрерĕн-пĕрерĕн чĕнсе каларса тĕпчеме... Петрухин юлташ, тепĕр пӳлĕме питĕрĕнсе ларса, Махоркăпа калаçу пуçласа ячĕ. Питĕ вăрăм пулчĕ вăл калаçу, пĕрре хĕрсе, тепре сӳнсе, унтан каллех хăпарса пычĕ,—алăк патĕнчи милиционер икĕ хутчен чейникпе шыв илсе пырса пачĕ. Анчах вĕсен калаçуне никам та илтмерĕ.

Халăх кĕтрĕ...

Питĕ вăраххăн шурĕ вăхăт. Минутсем сехетсем пек туйăнчĕç. Çапах та шкул патĕнчен никам та кайма шутламарĕ. Çынсем, шкул тавра ушкăнăн-ушкăнăн вырнаçса, шакăл-шакăл сăмах вакласа ларчĕç. Пĕр сехет пек иртсен, тахăшĕ пырса пуриншĕн те савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ.

— Хăмăт Энтри ачи хуларан тухтăр илсе килнĕ... Пурне те пăхрĕ, тет, вăл, хăрамалли нимĕн те çук, тесе каларĕ, тет...

— Исай... Исай... Исай мĕнле-ши тата?

— Исай та аптăрамасть, тет, сывалать, тесе каларĕ, тет. Ăнран анчах кайнă, тет вăл, унăн вимĕнех те аманман, тет.

— Тур патăрччĕ!..

— Тен, вăл хăйне кам çапнине астăвать пуль...

— Тем-çке...

— Вăл тарам-ха, хăй пурăнтăрччĕ!

— Ачи ытла аван...

Калаçу татах ăнса кайрĕ. Вăхăт шурĕ...

Тата тепĕр сехет иртрĕ. Иккĕ иртрĕ. Виççĕ...

Халăх çаплах кĕтрĕ, шкулта çаплах допрос тăсăлчĕ, унта Челомбитькопа Петрухин юлташ, тăшмансене хĕснĕçемĕн хĕссе, утăм хыççăн утăм каялла чакарса, преступленисен çăмхине сӳтсе пычĕç...

... Кун-каçипе ĕшеннĕ хĕвел Сăр вăрманĕсем еннелле сулăнсан, шкултан Челомбитькопа пĕр милиционер, Тараспа Хăмăт Энтри Микстур Михалине илсе тухрĕç. Никама ним каламасăрах, вĕсем халăх хушшинчен ик-виç çынна чĕнсе илчĕç те, шкул çумĕнчи тăкăрлăкалла кĕрсе кайрĕç. Ăçта кайрĕç вĕсем, мĕн тума кайрĕç—ăна никам та пĕлмерĕ. Каллех тĕрлĕрен тĕрлĕ шут тытса калаçма сăлтав тупăнчĕ шкул патĕнче кĕтсе ларакан çынсене валли.

— Вулăсах илсе кайрĕç-ши?

— А мĕншĕн ăна çеç? Ыттисене тата?

— Килĕнче мĕн те пулин пур-ши?..

— Амăшĕ патне пуль...

— Вăл килте çук, таçта кайнă...

— Мур пĕлет!

Анчах ку ыйтусем çине те ответ часах тупăнчĕ. Çур сехет ытларах çеç иртрĕ пуль—шкул тĕлне михĕсем, єщĕксем тиевĕ икĕ тулли лав нырса чарăнчĕç...

— Ака вăл, пирĕн çăкăр!—кăшкăрса ячĕ малти лавĕ çинче тăрса килнĕ Хăмăт Энтри.—Тупăнчĕ!..

Карр! сырса илчĕ халăх лавсене...

— Ăçта тупрăр?!

— Мĕнле?

— Кам патĕнче?

— Ак çак шуйттанăн нӳхрепĕнче!—тĕллерĕ Хăмăт Энтри пушă аврипе, çынсем çине пăхма хаяймасăр тăракан Микстур çине.—Самăй çака, никамран хыта сикекенни патĕнчен тиесе тухрăмăр!

Темĕн тĕрлĕ ылхану, темĕн тĕрлĕ хаяр сăмах сирпĕнчĕ Микстур еннелле... Ирĕк пана пулсан, халăх ăна çавăнтах татăкан-татăкан çурса тăкма пултаратчĕ, унан çӳç пĕрчисене те тупма пулмастчĕ!

— У-у, çĕлен!..

— Хура юн эс, этем мар!—тесе юлчĕç çынсем, ăна шалалла илсе кĕнĕ чух хыçалтан пăхса.

Кун хыççăн тата чылай вăхăт иртрĕ...

Халăх çаплах саланманнине кура, малтанхи допроса пĕтернĕ Петрухин юлташ урама тухрĕ.

— Ну, тăвансем, куртăр-и, ĕçсем ăçталла çавранса кайрĕç?—ыйтрĕ вăл, халăха пăхса çавранса. Унăн сăнĕ çинче çемçе кулă палăрса тăчĕ.—Халь ĕнтĕ кам айăплине пĕлтĕр-и?

— Ара, пĕлетпĕр çав ĕнтĕ...—терĕ тахăшĕ.

— А эп ăна малтанах пĕлнĕ! Мĕншĕн тесен, кун пек тискер ĕçсене Махорка пек бандитсемпе сирĕн Лява Уртемĕ пек кулаксем çеç тума пултараççĕ!..

Халах шăп тăчĕ...

— Тĕрĕссипе ĕç мĕнле пулнине пĕлес килет-и?

— Килет! Пĕлес килет!—харăссăн илтĕнчĕ çирĕм-вăтăр сасă.

— Каласа кăтартма пултаратăп сире...

Петрухин юлташ пĕрене купи çине çӳлерех хăпарса ларчĕ те чĕлĕм чĕркесе чĕртрĕ. Ăна кура ыттисем те вырнаçа-вырнаçа ларчĕç, кĕçех чĕлĕмсем йăсăрланма тапратрĕç. Каллех шăп пулчĕ.

Вара Петрухин юлташ пуçларĕ...

Халĕ хупса лартнă çынсем кам иккенни, вĕсем ку таранччен мĕн-мĕн туни, ĕлĕкхи совет председателĕпе секретарĕ—Каçăр Куçмапа Иливан вĕсене мĕнле пулăшса пыни, иртнĕ каçхи çаратăва мĕнле хатĕрлевни пĕтĕмпех, пĕтĕмпех тухса тăчĕ Энтрияль çыннисен куçĕ умне... Петрухин юлташ каланăçемĕн вĕсен тĕлĕннипе куçĕсем чарăлчĕç, чĕрисенче çилĕ хăпарчĕ, унта та кунта ылханса илни илтĕнчĕ... Пит те усал, этем сăнне çухатнă хăрушă тăшмансем пурăннă иккен вĕсен хушшинче!

— Мĕншĕн пулаççĕ-ха çакăн пек япаласем?—терĕ Петрухин юлташ.—Мĕншĕн тесен, Лява Уртемĕ пек этемсем пире пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм юнĕпе курайманççĕ... Совет влаçĕ вĕсен çунаттисене çапса хуçрĕ, чухăнсен юнĕпе, тарĕпе пурăнса пуйма чарчĕ, малти вырăна ĕлĕкхи пек кулак эрешменĕсем мар, чухăнсем, хăйсен ĕçĕпе тăранса пурăнакансем йышăнса тăчĕç! Çавăн пирки вĕсем кашни утăмрах çапса хуçасшăн пире... Анчах та вĕсен ĕмĕрĕ иртрĕ ĕнтĕ, текех темле чееленсен те, темле тискерленсен те, вĕсем пирĕн ĕнсе çине утланса лараяс çук!..

Тата нумай каларĕ Петрухин юлташ...

Унăн сăмахĕсем—темле ăшă, çывăх, ăнланмалла, чĕре патне вырнаçса лармалла сăмахсем пулчĕç. Вăл калама чарăнсан, ăна ыйтусем нумай пачĕç. Петрухин юлташ пурне те

ответлерӗ. Махорка мӗнле-мӗнле тискер ӗҫсем туни ҫинчен ыйтсан, сӑмах майӗн хайӗн хуйӑхне те аса илчӗ.

— Мана та хытӑ кӳрентерчӗ вӑл кашкӑр... Пӗр виҫ-тӑват эрне каярах вӑл манӑн йӑмӑка вӑрманта персе пӑрахнӑ... Каласа пачӗ халь... Ним айӑпсӑр ҫамрӑк ҫынна пӗтерчӗ.

— Эх, мӑнтарӑн...—хуйхӑллӑн сывласа илчӗҫ хӗрарӑмсем.

— Мӗн тӑвас тетӗн! Таварма ҫук... Анчах та, текех асаймаҫҫӗ ӗнтӗ, ҫулӗ татӑлчӗ, шӑпи тулчӗ... Хамӑра валли телейлӗ ҫӗнӗ пурнӑҫ тумашкӑн пире никам та чарма пултарас ҫук, чӑрмантарасшӑннисем пулсан—эпир вӗсене ҫавӑнтах ҫапса аркатӑпӑр. Ҫыхланччӑр кӑна! Вӑй кӗчӗ ӗнтӗ пире халь...

Итлесе ларакансене Петрухин юлташ сӑмахӗ питӗ кӑмӑла кайрӗ. Сисӗнмесӗрех хӗвел анчӗ...

— Ну, кайса ҫывӑрӑр ӗнтӗ,—терӗ вӑл юлашкинчен.—Ыран пирӗн сирӗнпе ытларах калаҫмалли пулать-ха. Юрататӑп эпӗ пурнӑҫ ҫинчен калаҫма!

Ҫынсем лӑпкӑ кӑмӑлсемпе килӗсене саланчӗҫ.

* * *

Паллах ӗнтӗ, вулаканӑн малалла мӗн пулни ҫинчен пӗлесси килет...

Кӗскен кӑна каласа пама пултаратӑп.

Тепӗр кунне бандитсене хулана ӑсатнӑ. Пӗр-ик эрнерен суд пулнӑ вӗсене. Махоркӑна персе пӑрахнӑ, ыттисене тӗрлӗ сроклӑха хупса лартнӑ. Пакарта Ҫеменӗпе Автан Упрамне хытӑ ятланӑ та киле янӑ.

Хӑвӑрах астӑватӑр пуль, выҫлӑх хыҫҫӑн тепӗр ҫулхине тырӑ питӗ вӑйлӑ пулчӗ, ҫынсем тулли кӑкӑрпа сывлама тытӑнчӗҫ. Ун пек чух ҫынсен ӗмӗчӗсем ҫунатланаҫҫӗ, пурнӑҫ малтан мала кайса пырать.

Пурнӑҫ юсансах пырасса ӗмӗтленсе, авӑнсем ҫапса пӗтерсен, Тарас туй турӗ, Варука хӑй патне илсе пычӗ. Ватӑ амӑшӗ тинех, пурнӑҫа ӳпкелеме пӑрахса, ӑслӑ ывӑлӗпе илемлӗ кинӗ ҫине пӑхса, ватлӑхра савӑнса пурӑнма пуҫларӗ... Астуман та: Тарасӑн туйне, ял-йышсемсӗр пуҫне, Петрухин юлташпа Челомбитько та пырса кайрӗҫ. Ҫынсем каласа панӑ тӑрӑх, Челомбитько хӑнасене купӑс каланипе тата украинла пит ӑста ташланипе шутсӑр тӗлӗнтерчӗ, тет.

Исай, уйӑх ытла чирлесе пурӑннӑ хыҫҫӑн, ура ҫине чиперех тӑчӗ те хӗл каҫа вуламалли ҫуртра ӗҫлерӗ, тепӗр кӗркунне вӗсем Маринепе иккӗшӗ те вӗренме тухса кайрӗҫ. Ку чухне ҫавӑн пек вӗт: мӗне ӗмӗтленетӗн, ҫавна тума пултаратӑн... Микиша хӗлле Укомола суйларӗҫ те, ӗҫ нумай пирки киле пит сайра пычӗ вӑл...

Ыттисем ҫинчен мӗн калас?

Паллах, пурте пурнӑҫ тума тытӑнчӗҫ! Сахал мар тумхахсем те, чӑрмавсем те тӗл пулчӗҫ пурнӑҫ ҫулӗ ҫинче, анчах та—хӑвӑрах пӗлетӗр—пирӗн халӑхшӑн ҫӗнми йывӑрлӑхсем ҫук.

Сирӗн хӑҫан та пулин вӑл тавраналла лекмелле пулсан, эсир никамран та:—Энтрияльне ӑҫтан каймалла?—тесе ан ыйтӑр. Усӑсӑр пулать. Сире никам та ҫул кӑтартса памӗ.

— Сталин колхозне епле каймалла?—тесе ыйтӑр эсир. Вара сире тӑхӑрвун ҫулхи старик те, вунӑ ҫулхи пионер та тӗп-тӗрӗс ҫул кӑтартса ярӗ.

1938—39.

# 33 № СТАРИК

Тăватă уйăх хушши тăтăшах çапă-çусенче пулнă хыççăн пирĕн дивизие малти ливирен канма илсе кăларчĕç. Ку апрель уйăхĕн юлашки кунĕсенче пулчĕ. Çанталăк питĕ начарччĕ, кашни кунах юр та çумăр, çумăр та юр çăватчĕ. Смоленск тăрăхĕнче ахаль те шурлăхсем пит нумай та, халь çулсемпе йĕрсем пачах иртсе çÿремелле мар пулса тăчĕç. Пылчăк, шыв, лачака... Пусмассеренех урасем чĕркуççи таран анса лараççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе лашасем çур хырăм таранах путрĕç, вара пирĕн — шĕвĕ кĕсел пек сивĕ лапра ăшне керсе кайса, — орудисемпе лавсене хамăр вăйпа сĕтĕрсе кăлармалла пулчĕ.

Вăтăр километра виçĕ-талăк ытла пытăмăр. Çынсем те, лашасем те калама çук ывăнса çитрĕç. Вырăна çитмешкĕн тата вунă километр ытла каймаллаччĕ, çавăнпа та пире Вишни ялĕнче çĕр каçма хушрĕç.

Тĕрĕссипе, Вишни ялĕ çĕр çинче пулман ĕнтĕ. Картă тăрăх унта 237 кил шутланнă, анчах хĕлле чакса кайнă нимĕççем вĕсене пурне те пĕтĕмпех çунтарса янă, тахçан садсем хушшинче илемлĕн йĕркеленсе ларнă çуртсем вырăнне, халь унта-кунта кăмака тăрписемпе çунăк хапха юписем кăна тăрса юлнă.

Эпир, юлташпа иксĕмĕр, ял хĕррипе юхса выртакан шыв урлă пĕренесем тăрăх каçрăмăр та ишĕлсе аннă чиркÿ еннелле хăпартăмăр. Ниçта та пĕр çын та курăнмарĕ. Килхушши вырăнĕсенче, пахчасенчи йывăççем айĕнче алтса тунă çĕрпÿртсенчен кăвак тĕтĕм тухни çеç — çак çĕрпе танлаштарнă ялта çапах та çынсем пурăннине систерчĕ. Пит те кичемленсе, йывăр шухăшсемпе уйрăлтăмăр эпир... Менешкел тискер чĕреллĕ пулас пулать илемлĕ, чечекленсе ларнă ялсене çак таран пĕтерсе хума! Пĕр нимĕççем кăна пултараççĕ çавăн пек чарусăр ашкăнма! Совет çыннисем, пур вăйне хурса, нумай çулсем хушши тар юхтарса тунă пĕтĕм ырлăх-пурлăха вĕсем ик-виç сехетрех кĕлпе кăмрăк туса хунă вĕтха... Чĕререн нимĕç хурахĕсем çине тарăхасси татах ÿссе хăпарать, кăкăра вĕри курайманлăх пĕçертет.

— Чимĕр акă, ытлашшипех тавăрăпăр сире çаксемшĕн, хаяррăн асăнтарăпăр!.. — тетĕн хăвна ху, шăла çыртса.

Майĕпе çумăр çума пуçларĕ те, эпир, хÿтлĕх шыраса, унăн-кунăн пăхкалама тытăнтăмăр.

— Ав, темле çурт пур çавăнта, — терĕ ман юлташ, вата йăмрасем айнелле кăтартса. — Атя çавăнта!

Эпĕ пĕр сăмахсăрах килĕшрĕм, мĕншĕн тесен эпир ахаль те аялти кĕпесем таранах йĕпеннĕччĕ те, татах шĕвес килмерĕ. Çур минутран çав çурт патне çитсе те тăтăмăр. Шалтан сасăсем илтĕннипе, кунта çынсем пурăнни паллă пулчĕ.

— Ку пырать-ха, тен унта ăшă пуль, — шухăшларăм та эп, кивĕ чус хăмаран çапса тунă алăка уçса: — Кĕме юрать-и? — тесе ыйтрăм.

— Кĕрĕрех, кĕрĕрех... — терĕç шалтан харăсах темиçе сасă.

Нихçан та пĕр пÿртре çакăн чухлĕ çын пурăннине курман вара эпĕ! Пÿрчĕ те — пÿрт мар, темле кĕлет пулнăскер кăна. Çутă кĕме стенана пĕрик çĕртен шăтарса, кантăк куçĕсем лартса янă. Йĕри-тавра икĕ хутлă нар туса тултарнă, пурин çинче те тăп-тулли çын: хĕрарăм, ача-пăча, стариксем. Çавăнтах — чĕрке-чĕрке çыхнă япаласем, тумтирсем; маччаран тăвата сăпка çакнă, урайĕнче, вĕт-шак ачасемпе хутăш, икĕ йытă çури, темиçе путек, тата сак çумне пĕр пăру кăкарнă. Нимĕнпе те тан-

лаштарма пулмарĕ ку çынсен йăвине — ни казарма мар, ни вокзал, ни пароход çинчи тăваттăмĕш класс теме çук. Пичкери пулăсем пек,—теççĕ тепĕр чух. Чăн та çавнашкал тулса ларнă çав! Калаçу, шав, çуйăху — нимĕн те ăнланмалла мар, хăлхасем янраса тăраççĕ кăна.

Тултан тата тепĕр ватă карчăк кăштăртатса кĕчĕ те, эпир алăк патĕнче ура çинчех тăнине курса, тĕттĕм кĕтеселле кăтартрĕ:

— Ма лармастăр, ывăлăмсем? Ав çавăнта пĕчĕк тенкел пур...

— Эпир ывăнман-ха, çумăртан çеç кĕтĕмĕр, халех каятпăр,—терĕм эпĕ, ăна урăх нимĕн калама аптăраса.

— Ывăнманни курăнсах тăрать, çара лаптах ав, пĕр çирĕм-вăтăр çухрăм утнă пулĕ-ха,—пире тăрăххăн пăхса илчĕ карчăк...—Э-эх, мăнтарăнсем... Темле йывăр пулсан та, тӳсес пулать çав! Манăн хамăн та сирĕн йышшисем виççĕ те, кашни салтака курмассеренех, аса килеççĕ. Пуçĕсем сывах пулсан, вĕсем те çакăн пекех çӳреççĕ пуль çав! Чипер йышăнса ăшă сăмах калакансем пурши хуть, тетĕп...

— Пире пур çĕрте те аван йышăнаççĕ, асанне,—терĕ ăна ман юлташ.—Хуть те хăçан та!

— Ара, сире йышăнмасан — кама йышăнас пулать тата?—карчăк пире тинкеререх пăхрĕ. Эпĕ унăн куçĕсем шывланнине асăрхарăм. — Хамăрăн вĕт эсир, хамăрăн... хамăр юн! Пĕтĕм пурнăçа та сирĕн çине шанса çеç пурăнатпăр та...

Карчăк пире валли тенкел пырса лартрĕ те куçĕсене çанни вĕçĕпе шăлса илчĕ.

— Пилĕк уйăх тамăкра пурăнтăмăр вĕт,—эсир хăтарса кăлартăр. Аса илсенех куççуль тухать...

— Иртни — иртнĕ ĕнтĕ вăл, текех таврăнмасть, халь пурнăçа юсасси çинчен шутлас пулать çеç,—лăплантарчĕ ăна ман юлташ.

— Çаплах ара, çаплах,—килĕшрĕ карчăк.—Халĕ те çавăн пирки çеç хыпкаланатпăр. Колхоз каллех ĕçлеме пуçларĕ ав, вăрлăх пуçтарать, çуртырри акасшăн...

— Акас пулать çав, тăшманран хăтарнă çĕре ахаль вырттарма юрамасть. Хамăр юнпа шăварнă эпир ăна!

Юлташ çак карчăкпа пуплешсе кайнă хушăра эпĕ, пӳрт ăшчиккине тата лайăхрах сăнаса, пĕр кĕтесре, пĕчĕк çеç сĕтел хушшинче икĕ хĕр ача тата вĕсене хирĕç шĕвĕртерех кăвак сухаллă, куçлăх тăхăннă старик ларнине куртăм. Вĕсем хăйсем хушшинче хуллен кăна калаçса ларатчĕç. Старик ыйтрĕ, хĕр ачасем ăна ответ пачĕç, унтан хĕр ачисем хăйсем ыйтрĕç унран... Эпĕ тинкеререх итлерĕм, çапах та, пӳртре питĕ шавлă пулнипе, вĕсен уйрăм сăмахĕсене çеç илтме пултартăм:

— Имя существительное... прилагательное... Глагол...

Кăшт тăрсан, пĕр хĕр ачи çинçе кăна сасăпа калаça пуçларĕ:

— Сложным предложением называется...

— Миçе çемье пурăнать вара ку пӳртре?—ыйтрĕ çав вăхăтра ман юлташ хайхи карчăкран.

— Вунпĕр çемье,—терĕ карчăк,— питĕ тăвăр, анчах нимĕн тума та çук.

— А çав старик — кам вăл?—ыйтрăм эпĕ те çав хушăрах, кĕтесри сĕтел хушшинчи калаçусенчен тĕлĕне пуçласа.

— Яков Иванч, теççĕ ăна. Учитель вăл.

— Кунта пурăнать-и?

— Çук, вăл уйрăм çĕрпӳртре пурăнать, кунта çав хĕр ачасене вĕрентме килнĕ. Нимĕçсем пирĕн шкула та çунтарса ячĕç те, халь Яков

Иванч ачасене вӗрентме килтен киле ҫӳрет.—Карчӑк хурлӑхлӑн сывласа илчӗ.—Ӑна та ҫӑмӑл мар, ватӑлӑхра пӗр-пӗччен тӑрса юлчӗ. Хуйхи тем пекех пысӑк пулин те, хӑй ӗҫне пӑрахмасть, ҫӳрет кӑштӑртатса...

— Ну, ыранччен ҫак виҫӗ параграфа вӗренӗр эппин. Ыран вара иксӗртен те ыйтатӑп,—илтӗнчӗ ҫак самантра старикӗн сасси,—хутлӑ тата хутсӑр предложенисене лайӑхрах уйӑрма пӗлес пулать... Унтан тата—хутламалли таблица. Эс ӑна пачах манса кайнӑ, Тамара. Аса илес пулать, унсӑр арифметика малалла каймасть пирӗн.

— Эп вӗренетӗп ӑна,—терӗ ҫинҫе саслӑ хӗр ача.

Старик куҫлӑхне хывса хучӗ те, хут татки ҫурса илсе, кӗсйинче табак шырама пуҫларӗ. Анчах табакӗ пӗтнӗ пулмалла, ниепле те чӗлӗм чӗркемелӗх пухӑнаймарӗ. Ҫавна курса, эпӗ вырӑнтан тӑтӑм та, ун патне пырса, табак сӗнтӗм:

— Туртӑр...

— Ой, спасибо, командир юлташ!—ман ҫине йӑвашшӑн пӑхрӗ вӑл.—Табак пирки пит начар пурӑнатӑп-ҫке! Ытти енчен аптӑрамастӑп, пулӑшаҫҫӗ мана. Табак ҫук вара.

Унпа пӗрле эпӗ те чӗлӗм чӗртсе ятӑм. Алӑк патӗнчи карчӑк ун ҫинчен кӗскен каласа паниех мана питӗ интереслентерсе ячӗ, ҫавӑнпа та ку старикпе ҫывӑхрах паллашас килчӗ. Старикӗ те калаҫма юратаканскер пулнӑ мӗн, ҫавӑнпа та пирӗн паллашу хӑвӑртах йӗркене кӗчӗ.

— Вӗрентетӗр эппин?—сӑмах пуҫларӑм эпӗ.

— Майӗпе вӗрентетпӗр ҫав,—терӗ Яков Иванч.—Ҫамрӑк вӑхӑта сая яма юрамасть вӗт. Ахаль те пилӗк уйӑх ытла вӗревмесӗр пурӑнчӗҫ...

— Куна мӗнле... районран хушрӗҫ-и, е...

— Эпӗ нихҫан та хушнипе ӗҫлемен, юлташ командир. Мӗн тумаллине, хӑш вӑхӑтра тумаллине эпӗ хамах пит аван пӗлетӗп,—хӗрӗх виҫӗ ҫул ӗнтӗ ачасене вӗрентме пуҫлани. Ман ученииксенчен халь учӗнайсем те, генералсем те, поэтсем те, орден илнисем те, темлисем те пур. Пӗлетӗп вӑл ӗҫе. Пуринчен хакли—вӑхӑт. Ҫынна вӗрентессине нихҫан та кая хӑварма юрамасть. Пахчаҫӑ хӑйӗн ӳсен-тӑранӗсене епле вӑхӑтра шӑварса, ҫӗре ҫемҫетсе пырса ҫитӗнтерет, учителӗн те ҫавнашкалах пулмалла. Нимӗҫсем пулнӑ вӑхӑтра эпӗ пуринчен ытла ачасем вӗренмесӗр юлнишӗн хуйхӑртӑм,—вӗсене хӑваласа ярсан вара ик-виҫ кунранах хам ӗҫе тытӑнтӑм. Хӑшӗ мана: тӑхта, ӑҫта васкан, кӑштах лӑпланар-ха, пурнӑҫ кӑштах йӗркене кӗтӗр, терӗҫ. Анчах эпӗ никама та итлесе тӑмарӑм. Шкул ҫурчӗ ҫук пулсан—килтен киле ҫӳретӗп, терӗм. Малтан темле тӗлӗнмеллерех пекчӗ те, халь—ним те мар, ачасем те хӑнӑхрӗҫ, хам та...

— Ӗҫ чиперех пырать апла?

— Пырать-ха. Тӑрӑшатпӑр, йывӑр пулин те...

— Кӗнекесем пирки мӗнле-ха сирӗн?

— Ҫителӗклех мар та—пур. Эпӗ вӗсене упраса хӑварма пӗлтӗм. Микроскоп та пур, ытти хӑш-пӗр приборсем те. Чӑнах та, вӗсемшӗн эпӗ чутах хам пуҫа хураттӑм, ҫапах та ҫӑлтӑм-ҫӑлтӑмах... Вӑхӑтӑр пулсан, нума-ай каласа пама пултаратӑп сире ун ҫинчен!

Эпӗ юлташ ҫине пӑхса илтӗм. Вӑл, ӗшенсе ҫитнӗскер, ларнӑ ҫӗртех тӗлӗрсе кайнӑ иккен.

— Вӑхӑчӗ пур-ха пирӗн, ыран иртчен ку ялтах пулатпӑр,—терӗм эпӗ.—Анчах тем тумалла...

— Хваттер ҫук-и?

— Шыраман-ха...

Старик кӑмӑллӑн кулса илчӗ.

— Шырасан та тупас çук. Çак амбар—пĕртен-пĕр „гостиница“ пирĕн. Пĕркун полковниксем те çĕр выртса кайрĕç. А эсир—айтăр ман пата, çĕрпӳрте. Канлех пулмасть ĕнтĕ, анчах ăшши—пулать вара. Хуть те мунча кĕр.

Ку сĕнӳ пирĕншĕн питех те майлă пулчĕ.

Темиçе минутран эпир, Яков Иванчпа пĕрле, икĕ вата улмуççи хушшине алтнă çĕрпӳрте пырса кĕтĕмĕр.

— Ан тиркĕр ĕнтĕ,—терĕ вăл,—вырнаçăр. Халех кăмака хутса ярăпăр та, ăшă пулĕ пире. Хăвăра тишĕнме те аван пулĕ...

Вăл алăк патĕнчи тимĕр кăмакапа тăрмашма тытăнчĕ. Эпир, шинельсене хывса, хăрах куçлă пĕчĕкçеç чӳрече умĕнчи сĕтелĕн ик енне лартăмăр. Мана çĕр пӳртри тирпейлĕх тĕлĕнтерчĕ. Стенисене, тăпра тăкăнасран, сап-сарă таса улăмпа картланă, сĕтел çине шурă çитти сарнă, унтах чечек, тĕкĕр, çырмалли хатĕрсем лартнă. Шăп чӳрече тĕлĕнче—Сталинпа Горький сăнĕсем, кĕтесре Пушкин скульптури тăрать.

— Сирĕн çĕрпӳрт чăн кабинет пекех-çке, питĕ аван,—тесе ятăм эпĕ, йĕри таврах пăхса çаврăнсан.

— Йĕркелĕхе юрататăп,—ответ пачĕ Яков Иванч.—Этем хуть епле условисене лексен те, унăн этемле пурăнма тăрăшас пулать.

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ.

— Эпир нимĕçсем мар вĕт. Вĕсем, ав, хайсен культурипе тем пекех мухтанаççĕ пулин те, сыснаран та сысна. Куртăмăр ĕнтĕ вĕсен „культурине“—тăраничченех! Выльăхпа та, тискер кайăксемпе те танаштарма çук вĕсене...

---

... Сĕтел çине Яков Иванович пăсланакан чейник пырса лартрĕ те, эпир апатланма тытăнтăмăр. Хайĕн хăнисем хаçатра ĕçлекен çынсем пулнине пĕлсен, вăл тата ытларах хавасланса калаçма пуçларĕ.

— Историре пулман кун пек тискерлĕх, ывăлăмсем... Хам куçпа курман пулсан, хам тӳссе ирттермен пулсан—тупата, ĕненессĕм те çук çав, мĕншĕн тесен чипер ĕçлекен ăстăн этем çав тери тискер ĕçсем тума пултарнине ниепле те йышăнма пултараймасть,—терĕ вăл.—Ну, Чингисхан пулнă, Батый... Виççĕр çул тутарсен пусмăрĕнче пурăннă пирĕн халăх. Феодализм вăхăтĕнче инквизиторсем пулнă... Анчах вĕсем пĕри те нимĕçсемпе танашма пултараймаççĕ. Культура! Пуртăпа çулăм культури кăна вĕсен!

— Тен, йĕркипе каласа парăр эсир пире?—ыйтрăмăр эпир, старик чĕринче нимĕçсене хирĕç нихçан сӳнмелле мар кураймалăх вĕресе тăнине кура.

— Пĕтĕмпех каласа паратăп, итлĕр кăна. Каласа памасăр тӳсме те çук. А эсир ман калава пичетлесе кăларăр, пурте пĕлччĕр нимĕçсен чăн-чăн сăн-сăпатне, ватти те, вĕтти те, пулас ăрусем те пĕлччĕр!

Акă мĕн каласа кăтартрĕ вара нимĕçсем çинчен пирĕн çĕнĕ тус.

— Малтанах питĕ чееленсе хăтланчĕç вĕсем... Шăп кăнтăрла мотоциклетсемпе килсе кĕчĕç те çавăнтах халăха илĕртме тытăнчăç. Çынсем унта-кувта пытанса пĕтнĕччĕ, нимĕç салтакĕсем вĕсене тупа-тупа урама кăларчĕç. Эпĕ те лекрĕм вăл шута. Çур сехетрен пĕр çĕр çынна яхăн пухрĕç. Çавăнтах пĕри, вырăсла пĕлекенскер, митинг тума тытăнчĕ.

— Ан хăрăр пирĕнтен, ан пытанăр. Эпир—сирĕн тусăрсем, сире ырă пурнăç паракансем пулатпăр!—Тӳсмелле мар ултавлă демагоги пуçласа ячĕ! Мухтанать, суять, çынсен пуçне пăтраштармалли меслетсем шырать çав—ăш лĕкленет, ниçта кайса кĕмелли те çук... Вăл каланă хушăрах

темиçе салтакĕ ачасене конфетсем, печенисем валеççе пачĕç, хĕрарăмсене—темле тутăрсем, лентăсем, шăрçасем. Пĕрисем параççĕ, теприсем çав хушăрах фото-аппаратсемпе чаклаттараççĕ—ӳкере-ӳкере илеççĕ. Хăйсен хаçачĕсене валли ĕнтĕ, паллах...

— Çук, ултавлă вăйă кăна ку,—терĕм эпĕ тӳрех.—Сарасса çемçе сараççĕ те, çывăрма питĕ хытă пулать...

Чĕре тĕрĕсех сиснĕ çав манăн. Урăхла пулма та пултарайман! Тăшман пирĕн пата ырă ĕмĕтпе килменнине, вăл пире валли епле „ырă пурнăç" хатĕрленине кашни ăслă-пуçлă çынах ăнланнă ĕнтĕ.

Ик-виç кунранах пит лайăх кăтартрĕç ăна нимĕçсем.

Малти частьсем иртсе кайсан, гестаповецсем çитсе кĕчĕç те хайсен шуйттанла „çĕнĕ йĕркине" тума тытăнчĕç. Пуçланчĕ вара этем тӳсмелле мар мăшкăл, çарату, никам шухăшласа кăларма пултарайман тискерлĕх...

Чăн малтан, ялти „власть" валли хăйсене юрăхлă çынсем суйласа тупрĕç. Пĕр прохвоста—виç-тăват хут тĕрмере ларса тухнă бандитла çынна староста турĕç, — ăна пирĕн ялта Кузьма Битый тесе чĕнетчĕç. Мĕншĕн тесен, ăна çамрăк чухнех темиçе хут та вăрăпа тытса, пĕтĕм халăхпа хĕненĕ. Писарь пулма мана чĕнчĕç.

— Германи командованийĕ сире шанать, çавăнпа та сирĕн эпир паракан ĕçе савăнсах тытăнас пулать ..—терĕ мана гестапо пуçлăхĕ тăлмачă урлă, ман ума ĕçмелли-çимеллисем кăларса лартса.—Сирĕншĕн ниепле хăрушлăх та пулмасть, эпир сире те, çемйĕре те хамăр хӳтлĕхе илетпĕр! Пирĕн кăтартусене тĕп-тĕрĕс пурнăçласа пырăр кăна...

Чĕре тапми пулчĕ çав манăн кун пек сĕнĕве илтсен!

Хĕрĕх çул вырăс халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçленĕ хыççăн, çирĕм çул совет ачисене вĕрентсе социализм строителĕсене хатĕрлесе пурăннă хыççăн—нимĕçсен тарçи пулма ниепле те пултарайман ĕнтĕ эпĕ,—хăвăрах ăнланатăр! Гестапо сĕнекен ырлăхсенчен çавăнтах пăрăнма тытăнтăм. Ватта петĕм. Вăй çук, куçсем курмаççĕ, çырма—алăсем чĕтреççĕ... Пултараймастăп, урăххине шырăр.

— Хăратăр эсир,—терĕ мана фашистсен начальникĕ.—Большевиксем каялла таврăнасси çинчен шухăшлатăр курăнать. Анчах вăл шухăша пуçран кăларса ывăтăр—сирĕн совет влаçĕ пĕтнĕ ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар çук, икĕ эрнерен эпир Мускаврa пулатпăр! Пурĕпĕрех пирĕн йĕркесемпе килĕшмелле пулать, темле кутăнлансан та...

Хăй çаплах эрех черккине ман паталла шутарать. Пĕр тумлам та сыпмарăм.

— Эпĕ нимĕн çинчен те шухăшламастăп,—терĕм ăна хирĕç.—Анчах манăн сирĕн патра ĕçлесси пулмасть—пултараймастăп. Хăвăрах куратăр—ватă эпĕ, утмăлтан та иртнĕ.

— Астăвăр, кайран ӳкĕнмелле пулать сирĕн...—куçĕсене хĕссе илчĕ вăл.—Хирĕçле ĕçлекенсемпе эпир урăхла калаçатпăр! Ан манăр: эпир завоевательсем, власть—пирĕн алăра!

— Хуть те мĕн тăвăр...

Гестаповец, сĕтел хушшинчен тухса, калле-малле уткаларĕ те, сасартăк ман умма пырса тăрса, кăкăртан тытрĕ.

— Учитель! Эсĕ хăвна та, çемйӳне те хĕрхенместĕн. Ыранччен шухăшласа пăх. Ирхине ман пата урăхла шухăшсемпе килессе шанатăп.

Вĕри тамăкран хăтăлса тухнă пекех пулчĕ маншăн хама киле кайма ирĕк пани. Киле епле çитнине те астумастăп. Анчах кунта мана çĕнĕ инкек кĕтсе тăнă...

Манӑн аслӑ хӗр Вера—хампа пӗрлех шкулта ӗҫлекенскер—эп алӑкран кӗрсенех, ман паталла макӑрса чупса пычӗ.

— Шкула аркатрӗҫ пирӗнне... Ним те хӑвармарӗҫ!—терӗ вӑл.

— Епле?

— Партӑсене кӑларса пӑрахрӗҫ, вӗсен хӑмисенчен лашасене валли кормушкӑсем тӑваҫҫӗ, шкулта вите пулать пулмалла... Шкафсенчи кӗнекесемпе кӑмака хутаҫҫӗ!

Ӑшчик вутла пӗҫертнӗ пек пӗҫерсе илчӗ. Кӗнекесем маншӑн—пурнӑҫри чи хаклӑ пуянлӑх пулнӑ. Эп вӗсене ҫирӗм ҫул ытла пухнӑччӗ, пирӗнни пек пуян библиотека районӗпе те ҫукчӗ...

— Пӗтӗмпех ҫунтарса ячӗҫ-и?— тесе ыйтма ҫеҫ пултартӑм эпӗ.

— Кӑштах юлнӑ пулас та, нумай ҫунтарчӗҫ ҫав,—терӗ Вера.

— Атя эппин, юлашкисене кайса ҫӑлар!

Хӗр хӑраса ӳкрӗ:

— Юрамасть пуль унта пыма... Курсан—тем тӑвӗҫ!

Эп пурӗпӗр килӗшмерӗм. Вара Вера тумланчӗ те, часрах шкула кайрӑмӑр. Каҫ пулнӑччӗ ӗнтӗ, урамра тӗттӗмччӗ, хӳме ҫуммипе йӑпшӑнкаласа шкула пырса кӗтӗмӗр те, манӑн куҫ-ҫульсем шӑпӑрах юхса анчӗҫ... Шкулӑн стенисем ҫеҫ тӑрса юлнӑ: ыттине пӗтӗмпех кӑларса ывӑтнӑ. Партӑсем, сӗтел-пукансем, класри доскасем—шкул умӗнче шанкӑ пек выртаҫҫӗ, ӑҫта ан пӑх—пур ҫӗрте те кӗнеке, хут, картӑсем, картинсем сапаланнӑ...

Мӗн тӑвас? Ку пуянлӑха пӗтӗмпех аркатса ҫунтарса яриччен кӑшт та пулин хӑтарас пулать вӗт. Анчах ӑҫта чикес ӑна? Вӗсем пур ҫӗрте те ухтарма, тупма пултараҫҫӗ,—пытарнӑ япалана тупсан пушшех аркатаҫҫӗ!

Сасартӑк аса илтӗм: шкул картинче пирӗн питӗ пысӑк пусӑ шӑтӑкӗ пурччӗ, унта эпир кашни ҫулах шкулӑн ҫӗрулмине хываттӑмӑр.

— Тултарар ҫав шӑтӑка!

Вера та ырларӗ ку шухӑша. Вара эпир ҫӗрӗпе ӗҫлерӗмӗр. Шкафсенче хӑтӑлса юлнӑ кӗнекесене пӗтӗмпех ҫав шӑтӑка леҫсе хутӑмӑр, ҫиелтен улӑм сарса, тӑпра сапса лартрӑмӑр. Пирӗн телее, ку таврашра нимӗҫ часовойӗсем пулман-мӗн, ҫавӑнпа та пире никам та кансӗрлемерӗ.

Каялла таврӑннӑ чух, шкул уборнӑйӗ хыҫӗнче, эпӗ тӑрук темле хытӑ япаларан такӑнтӑм. Темскер шуррӑн курӑнса кайрӗ. Хыпашласа пӑхрӑм та— Пушкин выртать. Ак ҫакӑ... (Яков Иванч ҫӗрпӳрт кӗтессинче тӑракан скульптура ҫине кӑтартрӗ). Темле ҫӗмӗрӗлмен вара! А вӑл маншӑн — питӗ хаклӑ япала, ӑна мана Ленинградран килнӗ пӗр художник ятарласа хамӑр патрах туса парса хӑварнӑччӗ. Эпӗ ӑна часрах ҫӗклерӗм те килелле тата хӑвӑртрах утрӑм.

— Мӑшкӑлаттармастӑп вырӑс генийӗнчен!—тесе, Александр Сергеевича пит тӗплӗ вырӑна пытарса лартрӑм.

Ирхине мана татах чӗнтерчӗҫ. Гестапо начальникӗ каллех ӗнерхи пекех калаҫма тапратрӗ.

— Тупӑшлӑ вырӑнтан пӑрӑнатӑн! — тет.

Эпӗ ҫаплах хамӑн вӑй ҫукки ҫине петӗм.

— Ватӑ ухмах!—тесе кӑшкӑрчӗ те вара вӑл мана, сӗтел ҫине чант! ҫапрӗ.—Тинех пирӗнтен ҫӑмӑллӑх ан кӗт, тем пулсан та хӑвна ҫеҫ ӳпкеле!

— Пурӗпӗр сан умна чӗркуҫленсе ларассӑм ҫук, — терӗм куна хирӗҫ хамӑн ӑшӑмра.—Вӗлерӗр, анчах парӑнтараймӑр!

Калама та ҫук тарӑхса кайрӑм ҫав. Манран чип-чиперех предатель тӑвасшӑн! Эп вӗрентсе ӳстернӗ ҫӗршер ывӑлсем фронтсенче тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ, манӑн нимӗҫсемпе юнашар ларса, вӗсен халуйӗ пулса, тӑшмана майлӑ ӗҫлемелле-и? Ӗмӗрте пулас ҫук ку япала!

Эпĕ киле таврăннă вăхăта—район салинче фельдшерица пулса ĕçлекен кĕçĕн хĕрĕм Соня çитсе ларнă. Алăк патĕнче унăн япалисен çыххине курсанах, вăл ырă мар сăлтавпа килнине туйрăм...

— Больницăра нимĕçсем казарма тăваççĕ, пире хăваласа кăларса ячĕç. Хамăр япаласене те ретлĕ пуçтарса тухма памарĕç,—терĕ вăл.

— Çапла пулмалла та ĕнтĕ вăл,—терĕм ăна.—Кун пеккине мар курăпăрха малашне...

Ĕнертенпех çименччĕ те эпир, аслă хĕр апат хатĕрлеме пикенчĕ. Кĕçĕн хĕр нимĕçсем район центрĕнче мĕнле ашкăнни çинчен калама тытăнчĕ. Больницăра выртакан çынсене, вăл шутрах халь çеç ача çуратнă хĕрарăмсене те, нимĕçсем прикладсемпе чыша-чыша кăларса янă иккен, аслă тухтăр вĕсен хутне кĕме тăрсан—ăна çавăнтах персе пăрахнă. Магазинсене çаратнă, кайăк-кĕшĕк фермине пырса кĕрсе пин хур-кăвакала автоматсенчен персе вĕлернĕ, кашни нимĕç вуншар кайăк çĕклесе чупнă...

Çаксене итлесе, тĕлĕннипе хытнă пек пулса ларнă вăхăтра пӳлĕме хайхи Кузька Битый—староста—пырса кĕчĕ. Сӳ! туса илчĕ чĕре... Унччен малтан эпĕ ăна ĕмĕрте хам кил çывăхне яманччĕ, мана куçран пăхма та пултарайман вăл, анчах халь нимĕн те шарлаймарăм—власть!

Кĕрсе тăчĕ те—сывлăх та сунмарĕ, вăрă куçĕсемпе йĕри-тавралла пăхса илчĕ кăна. Унтан кĕсйинчен хут кăларса, тӳрех темскер çырса хучĕ.

— Эсир виççĕн эппин халь...—терĕ унтан.

— Ма вара?—ыйтрăм эпĕ.

— Ялта миçе çын пурринe шутлатăп. Мана точнăй сведени кирлĕ.

— Çук, эп хăнана çеç килнĕ,—терĕ Соня.

— Нумай ан пурăнăр эппин. Юрамасть халь ялсем тăрăх сулланса çӳреме! А эсир... (вăл Верăпа ман çине пӳрнипе тĕллерĕ) тоже ниçта та ан кайăр. Тепĕр сехетрен ялта клуб вырăнне каллех чиркӳ уçалать... Ăна уçнă çĕре пурин те пырас пулать. Ак çак списока лекнисенчен кам та пулин пымасан—вăл влаçсене хирĕç тăнине пĕлтерет... Ăнлавма тăрăшăр çавна, эсир вĕреннĕ çынсем!

— Турра ĕненесси вăл ирĕклĕ япалаçке,—сăмах хушрĕ ăна ман Вера.

— Эсир, мадам, „ирĕк" сăмаха манма тăрăшăр. Сирĕн диктатура мар халь, законсене эпир тăватпăр.—чалăшшăн пăхрĕ те ун çине Кузьма, шăл витĕр йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ.—Пăхăнмалли кăна юлать сирĕн. Тепĕр сехетрен—шăп вуниккĕре чиркĕве пынă пултăр. Паллах, лайăхрах тумланас пулать, чиркӳ уçни—пысăк праçник. Хотя эсир пирĕн пек тĕттĕм çынсем мар, турра ĕненместĕр, анчах—закон, ним те тăваймăн. Тата... комендантăн алли йывăр, теççĕ...

Хирĕç ним те калаймарăмăр. Вăл хĕрлĕ уссисене шăлкаларĕ те, пирĕн çине тата тепĕр хут çав тери мăшкăллăн пăхса илсе, тухса кайрĕ.

— Йытă... сутăнчăк... Ирсĕр! Çакăн пек йĕрĕнчĕксен аллинче ĕнтĕ халь пирĕн пурнăç!—терĕ те пĕтĕм чĕре çиллипе ман Соня, ĕсĕклесе макăрса ячĕ.

— Мана çав йыттăн помощникĕ тăвасшăнччĕ,—пĕлтертĕм эпĕ хĕрĕме.

— Вара эп сана нихçан та „атте" тесе чĕнмен пулăттăм.

Соня хытăран хытă макăрма пуçларĕ. Çамрăк чунĕ ытла та тулса çитрĕ пулас унăн.

— Пĕтĕмпех пĕтрĕ... Пур ĕмĕтсем те татăлчĕç!—терĕ вăл куççуль витĕр.—Халь эпир чĕлхесĕр выльăхсем çеç пулатпăр, чурасем...

— Емĕрлĕх мар ку, тӳссе ирттерес пулать... Пирĕннисем таврăнаççех, хăтараççех пире, курăн!

Унтан эпир малашне мĕн тăвасси çинчен канашлама пуçларăмăр. Пал-

лах, чиркĕве пирĕн каяс килмен. Çирĕм çул ытла чиркÿ паперчĕ çине ура ярса пусман хыççăн паян сасартăк, такам шуйттанĕ хушнипе, кайса тăрас пулать! Кайтăр—камăн пит каясси килет. А ман ачасем вуçех те пулса курман унта...

Вуниккĕ çите пуçларĕ. Пĕртен-пĕр пĕчĕк чан сасси илтĕнчĕ. (Вăл пирĕн пушар дружининче çакăнса тăратчĕ). Вера урамалла тухса пăхрĕ те:

— Халăх чăнах чиркÿ еннелле утать,—тесе пĕлтерчĕ. Ун хыççăнах пĕр ачапа нимĕç салтакĕ кĕрсе тăчĕç.

— На церков,—терĕ нимĕç.—Марш. Бох, бох...

Ним тумалли те юлмарĕ пирĕн. Конвойпах кайрăмăр чиркĕве! Соняна çапах та килте хăваркаларăмăр—кил пăхма, текелесе. Ăна та илсе каясшăнччĕ нимĕç.

Эпир пынă çĕре халăх самаях пухăннăччĕ ĕнтĕ. Пурте кĕтсе тăраççĕ—ватти, вĕтти. Чиркĕвĕнче вунă çул ытла клуб пулнăччĕ пирĕн, питĕ аванччĕ унта, анчах халь çара стенасем çеç тăрса юлнă—сарай манерлех пулса тăнă. Пăхас та килмест. Тата кунта халех тÿсмелле мар чепуха пуçланассине пĕлни пушшех ăшчике таварса кăларать!

Çур сехет иртрĕ, пĕр сехет... Никам та нимĕн те пĕлмерĕ-ха. Ни пуп тавраш çук, ни турăш. Шăнса кайнă çынсем килсене саланасси çинчен те калаçма пуçларĕç.

— Улталанă пире... Тахăшĕ юри калана!

— Мĕн чиркĕвĕ уçăлтăр!

— Халăха салтаксемех пухса çÿрерĕç çке...

Çав вăхăтра урамран нимĕç салтакĕсем пĕр çирĕмĕн кĕрсе тăчĕç. Хура каскăсемпе, винтовкăсемпе — халь çапăçма каяс пек. Алăкран кĕрсенех, вĕсем халăха çурма ункăпа çавăрса илчĕç те, клубран никам тухса каймалла мар туса лартрĕç.

— Итлĕр, турра ĕненекенсем!—тесе, хыттăн кăшкăрчĕ пĕр нимĕç вырăсла.—Эсир кунта турра кĕл тума килнĕ... Çапла-и?

— Ним те пĕлместпĕр...—илтĕнчĕ такамăн сасси.

— Пире салтаксем хăваласа килчĕç...

— Чиркĕве пухăннипе—питĕ тĕрĕс тунă эсир,—терĕ нимĕç малалла.—Сирĕн халь турă ячĕпе Германи çарне пулăшас пулать. Ăна ăшă япаласем кирлĕ. Çавăнпа та, ним тытăнса тăмасăрах, çири тумтирсене, урари çăматăсене халех çакăнта хывса хурăр. Хирĕçсе тăнинчен усси пулмасть, ăна малтанах калатпăр. Тумтирне Германи çарĕ валли парнелемесĕр пĕр çын та тухса кайма пултараймасть кунтан. Халех хывăр! Турă манмĕ сире уншăн!

Çынсем пĕр хушă юпа пек хытса тăчĕç... Никам та хускалмарĕ. Ытла та ăнран кăларса ячĕ вĕсене ку приказ! Турра кĕл тума мар, çаратма пухнă иккен...

— Ну, мĕн кĕтсе тăратăр? Хывăр!—тата хаяртараххăн кăшкăрчĕ çав нимĕçех.—Хамăр хывма пуçласан—вуçех çарамас юлатăр!

Халăх халь те хускалмарĕ. Вара нимĕçсем чăнах та халăха хăйсем çарамаслантарма тытăнчĕç. Кĕрĕксем, пальтосем, атăсем, чосăнкăсем, çĕлĕксем, ăшă тутăрсем—пĕр кĕтесселле ывтăнчĕç кăна. Мĕн хывса илме май пуррине тăпăлтарса илсен, çынсене алăкран тулалла вăркăнтарса ячĕç. Хĕрарăмсем çуйăхрĕç, ылханчĕç, ачасем макăрчĕç, анчах усси пулмарĕ,—ытлашши шавлакансене нимĕç салтакĕсем прикладсемпе çапа-çапа ăсатрĕç...

Черет мана çитрĕ. Пăтранчăк пулă куçлă нимĕç пĕрре туртсах кĕрĕклĕ пиншака сĕвсе илчĕ, тепри çав хушăрах ураран тытса ўкерчĕ те атта хыврĕ. Чăлхана та пулин хăвармарĕ

бандит,—пĕрре ура ҫине тăнăскер, ҫав чăлхашăн, тепĕр хут ӳкерсе тăпăлтарчĕ вĕт. Верăнне, пальтопа пĕрле, ăшă кофтипе юбкине те хывса илчĕҫ, аялти кĕпепе ҫеҫ юлчĕ вăл. Ҫаплипех хăваласа ячĕҫ. Тулта ун чух сивĕччĕ ĕнтĕ—ноябрь вĕҫĕ.

Ҫапла улталанса, мăшкăл тӳссе таврăнтăмăр вара киле.

Анчах ку пуҫламăш кăна пулчĕ-ха...

Халăха турă ячĕпе ҫаратнă хыҫҫăн тата хăрушăрах ĕҫсем тапранса кайрĕҫ. Ҫынсенне пĕтĕм тырпулне, выльăх-чĕрлĕхне, кайăк-кĕшĕкне ним юлмиччен туртса илнине каламастăп та ĕнтĕ. Ку пĕтĕмпех хăй йĕркипе пулса пычĕ. Вĕсем—нимрен ытла!—пирĕн ҫынсене выльăхпа танаштарса хучĕҫ! Итлĕр акă...

Пĕр ирхине ҫавнашкал—тул ҫутăлнă-ҫутăлманах—пĕтĕм халăха ял варрине хăваласа пухрĕҫ те темиҫе сехет тытса тăчĕҫ. Сивĕ—тӳсмелле мар, ҫав тери витĕр ҫапакан ҫил вĕрет. Шăнса хытаттăмăр чутах. Унтан кăнтăрла ҫитеспе тин пирĕн пата комендантпа унăн помощникĕсем тухрĕҫ. Тăлмача сăмах каларĕ:

— Паянтан пуҫласа кашни ҫыннăн хăйĕн номерĕ пулать. Паспорт выранне. Вăл номерсĕр урама тухма та юрамасть.

Список тăрăх чĕне-чĕне, ҫынсен мăйĕсенчен хăма татăкĕсем ҫакса ячĕҫ. Ун ҫине хамăр ял ятне ҫырнă та—цифра лартнă. Мана та ҫакса ячĕҫ ăна. Ҫавăнтан вара эпĕ ятлă-хушаматлă ҫын мар, вăтăр виҫҫĕмĕш номерлĕ чура пулса тăтăм. Арестант... Ĕмĕрте те манас ҫук ҫав вăл мăшкăла! Халь те усратăп вăл хăмана—ҫынсене кăтартма усратăп! Пурте пĕлччĕр нимĕҫсем пирĕвтен епле выльăх тăвасшăн пулнине, яланах пĕлччĕр!..

Яков Иванч сĕтел айĕнчи ещĕкрен чылай пысăк фанер татăкĕ тупса кăларчĕ. Ун ҫине хура сăрпа, нимĕҫле саспаллисемпе ҫырнăччĕ:

Wischni—33

— Тăвата уйăх ытла ҫакса ҫӳрерĕм вĕт ҫак йытă номерне!—терĕ Яков Иванч.—Мăйра пĕрмай мăйкăҫ ҫакăнса тăнă пекех туйăнчĕ вăл мана... Ҫакăнпа пĕрлех пире ытти енчен те хĕссе лартрĕҫ. Ăҫта ан пыр—пур ҫĕрте те вывеска ҫакăнса тăрать. Шкул умĕнчи пысăк ҫăл ҫине „Германи салтакĕсем валли кăна, вырăссен ҫывăха пыма юрамасть“, тесе ҫырнă. Часах ялти чи лайăх ҫуртсенчен хуҫисене хăваласа кăларчĕҫ, кашни ҫинех „нимĕҫсен ҫурчĕ“ тесе ҫырчĕҫ. Кайран кунпа та ҫитмерĕ: ял халăхне пĕтĕмпех хыҫалти урама, кашни киле 4—5-шер ҫемье тултарчĕҫ, мăн урама йĕплĕ пралукпа карталарĕҫ. Урам вĕҫĕнче таҫтанах курăнмалла ҫырса ҫапнăччĕ: „Германи урамĕ. Вырăссен кĕме юрамасть. Аллă метра ҫывхарнисене—систермесĕрех переҫҫĕ!“ Чăнах та, урамăн ик вĕҫне те вышкăсем туса лартрĕҫ,—тĕрме картинчи пек, вĕсен тăрринче кунĕн-ҫĕрĕн часовойсем тăчĕҫ.

... Вĕсем мĕн пирки кун пек хăтланнине каярахпа тин тавҫăрса илтĕм эпĕ. Питĕ хытă хăранă иккен вĕсем. Хăйсен урисем айĕнче ҫĕр ҫунса тăнине сиснĕ. Кашни утăмрах пуҫ ҫине тавăру чукмарĕ пырса лекессе кĕтнĕ. Халăх хăйсене мĕн тери курайманнине, ăна ним тусан та парăнтарма ҫуккине туйнă.

Халăхра „партизан“ сăмах сарăлма пуҫларĕ. Нимĕҫсем пирĕн таврана пырса кĕрсенех, районри коммунистсемпе ытти активистсем вăрмансене партизана кайнă иккен. Вĕсен командирĕ райисполком председателĕ Уваров юлташ пулнă. Малтанах партизансем сахаллăн пулнă, анчахик -виҫ эрнерен унта пилĕкҫĕр ҫын таран пухăннă. Вара нимĕҫсен чугун ҫул эшелонĕ-

сем. çырманалла вăркăнма, станцисенчи складсем çунма тытăннă, пострри часовойсем çухалнă, обозсем вырăна çитеймен... Ку ĕнтĕ нимĕçсене калама та çук хăратса янă. Вĕсем урсах кайрĕç. Пурăнма мар, сывлама та пулмарĕ тек.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче кам кăшт та пулин активлăрах пулнă—пурне те тытса хупма тапратрĕç. Кĕçĕр пĕри çухалать, ыран каç—тепри. Урăх никам та курмасть вара вĕсене—йĕп пекех çухалаççĕ ыр çынсем.

Часах эпĕ те лекрĕм...

Ĕçĕ çапла пуçланчĕ. Çĕнĕ çул ыран тенĕ чух нимĕçсем килтен киле çӳресе, ялти мĕнпур хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсене комендатура умне пухрĕç. Вăл шутрах манăн кĕçĕн хĕре—Соньăна та тытса кайрĕç. Кун пек ĕç ахалтен пулас çуккине сиссе, хĕрсем хыççăн ашшĕ-амăшĕсем те пычĕç. Эпĕ те килте лараймарăм,—мĕншĕн тесен ытти ялсенчен çамрăксене Германие хăваласа кайнă сас пурччĕ.

Пурĕ пĕр аллă хĕр таран хăваласа пынă иккен. Вĕсене салтаксем пĕр шеренгăна тăратсан, комендатурăран виçĕ офицер тухрĕç те, кашни хĕр тĕлĕнчех чарăна-чарăна тăрса, пăхкалама тытăнчĕç. Пасарта вырьăх сутăн илнĕ чухне пăхнă пекех пăхаççĕ—питне-куçне, кĕлеткине, станне... Хĕр илемлĕрех пулсан, кĕлетки килĕшӳллĕрех пулсан—ăна çавăнтах стройран кăларса, аяккарах тăратаççĕ. Йĕркипе пăхса пырсан, ман Соньăна та уйăрса тăратрĕç. Пурĕ çапла çирĕм хĕр суйласа илчĕç вĕсем.

— Мĕн пулать-ши ĕнтĕ, мĕне пĕлтерет-ши ку?—тесе, ним ăнланмасăр, хăраса пăхса тăтăмăр эпир.

Тĕреклĕ самăр офицер, çăварĕнчи хулăм сигарне чăмласа, хĕрсене тата тепĕр хут пăхса тухрĕ. Ним намăса пĕлмесĕрех, вăл хĕрсене тĕрткелетĕрткеле илчĕ. Хĕрсем ни чĕрĕ, ни вилĕ пулса тăчĕç, хăйсен хутне кĕрекенсем пуласса ырана пек, унăнкунăн пăхкалама пуçларĕç. Анчах эпир вĕсенчен чылай аякра пултăмăр (çывăха ямарĕç), вĕсем тавра чул сăнлă нимĕç салтакĕсем тăчĕç...

Офицер малтанхи вырăнта тăрса юлнă хĕрсем еннелле çаврăнчĕ те, аллипе сулчĕ.

— Шлехт! Плохо! Нах хауз... Домой уходить!—терĕ.

Унтан каллех хăйсем суйласа илнисем патнелле пычĕ.

— Ну-с, мы з вами поехать...

— Ăçта илсе каясшăн эсĕ пире?

— Ялтан ниçта та каймастпăр...—шавлама пуçларĕç хĕрсем.

— Хулана, çĕн çул каç офицерсене савăнтарма илсе каятпăр сире!—илтĕнчĕ ответ.—Хăрамалли нимĕн те çук, çĕр каçатăр та—таврăнатăр. Эрех пулать унта. Музыка, танцы...

Офицер çав тери усаллăн кулса ячĕ.

Хĕрсем халь хăйсене мĕншĕн пухнине тавçăрса илчĕç те ниçта кайса кĕрейми пăлханса кайрĕç, шавлама тытăнчĕç. Пĕрисем макăрса ячĕç, теприсем ĕсĕклеме пуçларĕç. Читлĕхе хупнă кайăксем пекех пулчĕç вĕсем.

Унччен те пулмарĕ, çав вырăна хура брезентпа витнĕ грузовик пырса тăчĕ.

— Ладен! Садись!—кăшкăрчĕ офицер.—Скоро!

Салтаксем хĕрсене машина çине лартма тапратрĕç. Эпир, ашшĕ-амăшĕсем, офицер патне чупса пытăмăр.

— Тархасшăн илсе ан кайăр...

Итлеççĕ-и мĕн? Прикладсемпе, чышкăсемпе çапа-çапа хăвалама тапратрĕç пире. Сасартăк Соня сассине илтех кайрăм:

— Ан çулăх, йытă!.. Яр!..

Куратăп—шуйттан тĕслĕ нимĕç ăна пилĕкĕнчен ыталаса тытнă, машина çине йăтса пăрахасшăн, Соня пур вăйĕпе тапкаланать, ун аллинчен вĕçернесшĕн—тĕртет ăна, чышать. Тутри салтăннă, çӳçĕ-пуçĕ арпашса кайнă, куççулĕсем юхаççĕ. Тахăш самантра

чупса пытăм вара эпĕ ун патне—астумастăп. Темскер хаяррăн кăшкăрса ярса, Соньăна нимĕç алливчен вĕçертме пикентĕм. Мана çавăнтах тĕксе ячĕ те—ӳкрĕм. Унтан Соня: „Сывпул, атте! Пĕтрĕм эпĕ...“ тесе кăшкăрнине çеç илтсе юлтăм. Туллиех хĕр тиенĕ грузовик вырăнтан хускалса кайрĕ.

Çав тери тарăхса, хурланса, хам ним тума пултарайманшăн кӳренсе, ватă пуçпах макăрса ятăм çавăнта. Куççулĕсемпе пĕрле, вĕçĕмсĕр ылхан сăмахĕсем тăкăнчĕç манăн.

— Чуниллисем... Урвă йытăсем! Тавăрĕç-ха сире пирĕн куççулĕшĕн!—терĕм эпĕ.

Ман çывăхрах хайхи сутăнчăк Кузька Битый—староста тăрать иккен. Вăл ман çине сиввĕн кăна пăхса илчĕ.

— Асту, чĕлхӳне чар!

Ăна хирĕç тем те пĕр калама хатĕрччĕ, анчах çав вăхăтрах тӳсме çук йĕрĕнтĕм эп унран. Ик сăмах çеç калярăм вара:

— Спасибо сана! Халăх ĕмĕр тав тăвĕ...

— Мана тав тăвиччен сирĕн пурсăрăн та пыршăсем тухаççĕ!—татса хучĕ вăл мана хирĕç.

Тек чĕнмерĕм, килелле утрăм.

Аслă хĕрпе иксĕмĕр çĕрĕпех çывăраймарăмăр. Вăл макăрчĕ, эпĕ пӳлĕм тăрăх таттисĕр калле-малле утрăм. Хăлхара çаплах Соня юлашки хут кăшкăрни янраса тăчĕ.

„Сывпул, атте... Пĕтрĕм эпĕ!“

— Ăçта-ши вăл халь? Епле тискер йытă асаплантарать-ши ăна?..

Чĕре тӳсмелле мар ыратрĕ, тăнлавсенчи юн тымарĕсем мăлатукпа шакканă пек тапса тăчĕç, ал-урасем чĕтреççĕ. Паллах ĕнтĕ, хытă пăлханвă. Кун пек хуйăха никам та лăпкăн тӳссе иртттерме пултарас çук. Тăван ачине камăн кашкăр аллине парас килтĕр?

...Çурçĕр тĕлĕнче пĕтĕм яла сасартăк калама та çук хăватлă взрыв кисрентерчĕ. Унтан уйрăм пăшал сассисем илтĕнчĕç, ял варринче такамсем кăшкăрма пуçларĕç, пулемёт шатăртатма тапратрĕ. Темскер пулса иртрĕ, анчах мĕнне ăнланма пулмарĕ. Эпир Верăпа иксĕмĕр те, сиксе тăрса, урамри шава тинкерсе итлерĕмĕр.

Унччен те пулмарĕ, хамăр урам енчи хӳме çине такам пит хăвăрт чакаланса хăпарни, унтан килхушшинелле этем кĕлетки ӳкни илтĕнчĕ. Кĕçех çенĕк алăкне шаккарĕç.

Хытă хăранă пулин те, ăна хирĕç тухрăм.

— Мĕн кирлĕ?

— Уç-ха, Яков Иванч,—илтĕнчĕ тулти сасă.

— Кам эс?

— Ăна кайран калăп, эс уç часрах!

— Палламан çынна епле кӳртем вара эпĕ?..

— Эпĕ сире лайăх паллатăп, Соньăна та паллатăп, вăл та пĕлет мана... Тархасшăн уç?

Соня ятне асăннине илтсен, ку ытла ют çынах мар пуль-ха, тесе, уçса кӳртрĕм çавна.

— Лампа пур-и сирĕн? — нимрен малтан ыйтрĕ хайхискер.—Çутасчĕ часрах...

— Мĕн тума?

— Юн юхать манăн... Çыхасчĕ!

Чĕре сиксе тухас пек тапма пуçларĕ. Вăрçă ман пӳртех килсе кĕчĕ вĕт! Юн! Перевязка... Ман пек мирлĕ çын хăçан шухăшлама пултарнă ун çинчен? Васкасах пĕчĕк мигалка çуткаларăм та хам умра çамрăк кăна тĕреклĕ каччă тăнине курах кайрăм. Çара пуçăн, çăмăл фуфайкăпа, пиçиххийĕ çинче—граната. Сылтăм аллипе сулахайне тытнă, унăн пӳрнисем тăрăх шăпăртатса юн юхать... Вера часрах шурă пир татăкĕ тупса çыхма тапратрĕ. Пуля шăпах чавса тĕлĕнчен шăтарса кайнă пулмалла. Çыхнă

чух каччă шăлĕсене ҫыртса тăчĕ,— питĕ хытă ыратрĕ пулмалла,—анчах пĕрре йывăшса илесчĕ хуть! Сас та кăлармарĕ.

— Шыв парăр-ха,—терĕ вăл аллине ҫыхса пĕтерсен тин, пукан ҫине ларса.

Вера ăна шыв пырса пачĕ. Вăл шыва ик-виҫ секундăрах ҫăтса ячĕ.

— Тата...

Вера тепĕр кружка пачĕ. Каччă ăна та ҫавăн пекех ҫăтрĕ.

— Палламастăр эппин мана?—тесе ыйтрĕ вара.

— Таҫта курнă пек туйăнать...— терĕ Вера, ун ҫине питĕ тинкерсе пăхса.—Комсомол райкомĕнче ĕҫлемен-и эсир?

— Ҫапла, ҫавăнта ĕҫленĕ. Сирĕн Соня пит лайăх пĕлет мана, мĕншĕн тесен вăл нумай пулмасть комсомола кĕчĕ, эп ăна рекомендаци патăм. Ăна паян нимĕҫсем илсе кайнă вĕт?

— Эсир ăҫтан пĕлетĕр?

— Пурне те пĕлетпĕр эпир, хуть ăҫта та хамăрăн ҫынсем пур пирĕн,— пĕлтерсех тăраҫҫĕ... Паллах, сирĕн нимĕҫсене хирĕҫ тархă пуррине пĕлмен пулсан—сирĕн пата килсе кĕместĕмччĕ эпĕ.

— Сире мĕн пулчĕ вара? Ăҫта амантăр?

— Взрыв пулнине илтрĕр пуль? Комендатура турпас пулса тăчĕ. Ҫунать халь. Кайран вĕсем те пеме тапратрĕҫ. Анчах партизансене тытма аллисем кĕске-ха вĕсен!

— Эсир—партизан эппин?—питех те тĕлĕнсе кайрăмăр Верăпа иксĕмĕр те.

— Халь кашни совет ҫынни партизан,—терĕ вăл лăпкăнах.—Сире те партизан теме пулать, мĕншĕн тесен эсир партизанăн суранне ҫыхса ятăр, ăна пулăшрăр...

Пĕр вăхăта лăпланнă пек пулнă пăшал сассисем тепĕр хут илтĕнме пуҫларĕҫ. Ҫывăхран ҫывăха килсе пычĕҫ вĕсем, уҫăран уҫă янрарĕҫ. Пирĕн тĕлпе иккĕн-виҫҫĕн юланутсемпе тăпăртаттарса иртсе кайрĕҫ. Автомат черечĕсем шатăртатрĕҫ, таҫта каллех взрыв пулчĕ.

Партизан йăпăртах ура ҫине тăчĕ.

— Ҫавсем мана шыраҫҫĕ. Пытансан—лайăхрах пулать пуль... Ир енне тухса кайăп, халлĕхе хире те тухма юрамасть. Вĕсем ĕнтĕ пур ҫĕрте те чупаҫҫĕ, шур юр ҫинче—пĕтĕмпех палăрать...

— Ăҫта пытарас?

Этем йĕп мар-ҫке, ăна йăпăр-япăрах палăрми туса хума ҫук, ҫитменнине—нимĕҫсем килесех пулсан—пур ҫĕрте те ухтараҫҫĕ ĕнтĕ!

Апла та, капла та шут туса пăхрăмăр. Ҫав вăхăтра урамри шав татах вăйланчĕ. Пирĕн васкамалла пулчĕ. Ҫавăнпа та партизана часрах сив чăлан урайне уҫса пытартăмăр та, ҫиелтен питĕрсе лартрăмăр! Хамăр каллех пӳрте кĕрсен, Вера урайне тумланнă юна шăлса тасатрĕ. Опытлă конспираторсем пекех ĕҫлерĕмĕр!

Ҫаксене туса ҫитерсеттĕмĕр ҫеҫ— хапхаран шанлаттарма тапратрĕҫ.

— Уҫ! Уҫ халех!—Ҫĕмĕрттереҫҫĕ кăна.

Кам тата мĕншĕн килнине чухласа, эпĕ васкамасăр, кăштăртаткаласа тухрăм.

— Мĕн кирлĕ, ара? Тĕттĕм-ҫке, ним те курмастăп,—текелесе пытăм хапха патнелле.

— Эпир сана халех ҫут тĕнче кăтартăпăр ак! Вата сысна!—кăшкăрса пăрахрĕҫ мана.

Хапхана уҫсанах, пĕрисем мана ҫавăрса тытрĕҫ, теприсем пӳртелле кĕмсĕртеттерсе чупса кĕрсе кайрĕҫ.

— Кам пур сан патăнта?

— Ăҫта пытартăн, кала халех! Халех пуҫна ҫапса салататпăр, вата анчăк!..

„Кусем ним те пĕлмеҫҫĕ, «на мушку» илесшĕн мана“, терĕм хам. Вара шăт та пат тунса лартрăм.

— Никама та курман, никам та килмен, нимĕн те пĕлместĕп...

Кăкартан тытса силлерĕç мана, револьверпа юнарĕç—эпĕ пурĕпĕр хамăннех петĕм:

— Ĕненместĕр пулсан—шырăр...

Вĕсем чăнах та унталла-кунталла пăхкаларĕç, анчах эпĕ хама хам питĕ çирĕппĕн тыткалани ĕнентерчĕ пулас. Епле пырса кĕнĕ çавăн пекех шавласа, кĕмсĕртеттерсе тухса кайрĕç.

— Сана эпир пурĕпĕр лектеретпĕр-ха!

— Ăна валли сăлтав кирлĕ,—терĕм эпĕ.—Айăпсăр çынна ăçтан тивен?

— Молчать, ан чĕннĕ пултăр, анчăк!

— Юрĕ, вăхăчĕ çитиччен шарламăпăр...

Ĕненетĕр-и, — çакăн хыççăн чĕре темле çирĕп кăмăлпа тулса ларчĕ, хамра çителĕклĕ вăй пуррине туйрăм эпĕ! Улттăн-çиччĕн ним те тăваймарĕç вĕт—партизана чиперех хăтарса хăвартăм! Тепрер сехетрен вара, урамри шăв-шав лăплансан, каччăна чăлантан илсе кĕрсе, кăмака çинчех ăшăтса çывратрăм. Ир енне тин, пире тав туса, хăй çулĕпе тухса кайрĕ вăл. Юлашкинчен питĕ лайăх сăмахсем каласа хăварчĕ:

— Нихçан та парăнтарас çук пире нимĕç. Хамăр ирĕке эпир каллех таврăтпăр!

Ирхине вăрансанах, каллех Соня ăша кĕрсе кайрĕ. Мĕн пулнă-ши ăна? Чĕрĕ-ши вăл? Таврăнать-ши?

Çук, таврăнмарĕ манăн хĕр. Ялтан машинăпа тиесе тухса кайнă хĕрсенчен нихăшĕ те каялла килмерĕ. Пĕр кун иртрĕ, виççĕ, пиллĕк... Шăпах пулчĕ. Никам та, нимĕн те пĕлмерĕ вĕсем çинчен. Чĕрери хуйхă çеç йывăр чул пек пусса тăчĕ.

...Çĕнĕ çул кас партизансем нимĕçсен комендатурине йывăр гранатăсем пăрахса сиктернĕ иккен. Нумай нимĕçсене вĕлернĕ. Комендантне — хăй пирĕн Соньăна вăйпах хулана ăсатаканнине—питĕ хытă амантнă, вара ăна пирĕн патран самолётпах илсе кайнă. Анчах икĕ кунранах пирĕн яла хура шинеллĕ, хура калпаклă салтаксем — гестапо йыттисем пырса тулнă. Вĕсем айăплисене шырама тытăннă.

Çур ял тӳрех пушанса юлчĕ—пĕр каçрах тытса хупрĕç. Мана та тытса кайрĕç...

Верăпа сывпуллашсах тухрăм эпĕ,— темшĕн эпир пĕр-пĕрне текех курас çуккăн туйăнчĕ. Чĕре улталаман мĕн, эпĕ ăна чăнах та урăх кураймарăм вара. Анчах ун çинчен кайран калăп-ха.

Çĕр аллă метр тăршшĕллĕ колхоз сарайĕнче эпир тăватçĕр çын ытла лартăмăр. Пирĕн ялтан çеç мар, ытти ялсенчен те сĕтĕрсе пырса тултарнă иккен.

Шартлама сивĕ... Вут хутса ăшăтма мар, чӳрече шăтăкĕсене те питĕрмен, çил шăхăрать кăна. Пырать, кунта кивĕ улăм юлкаланă-мĕн те, çавăн ăшне чакаланса кĕре-кĕре выртрăмăр. Ни çăкăр, ни шыв памаççĕ. Паллах, тытса хупнисен тăванĕсем кашниех ĕçмелли-çимелли илсе пынă унта, анчах вĕсенчен нимĕн те илеймерĕмĕр. Мĕн чухлĕ йышăннă апат-çимĕç те пирĕн пата çитмерĕ, хуралти нимĕç салтакĕсем вĕсене хăйсемех хыпса янă...

Допроса икшер-виçшер çын пĕрле чĕнтерчĕç. Вĕсем вара яланах палламалла мар пулса таврăнатчĕç: е чĕпчĕр юн, е куçĕ-пуçĕ хуралса шыçса ларнă, е аллине пăрса хуçнă. Çурăмĕсем çине пилĕк вĕçлĕ çăлтăр касса кăларнисем те пулнă. Тӳсме çук хăрушла япаласем каласа пачĕç çав „вилĕм пӳлĕмĕнче" пулса курнисем...

Кашниех хăйĕн черетне кĕтрĕ. Сывă юласси çинчен никам та шухăшламарĕ.

Икĕ талăк сивĕ сарайĕнче пĕр тĕпренчĕк çăкăр ăша ямасăр ларса, шăнса вилес патне çитнĕ хыççăн ман хушамата кăшкăрчĕç:

— Просветов, Яков!

Тăрса утрăм... Тĕлĕнсе каймалла: те нимĕн туйми пулса çитнĕ эпĕ, те урăх сăлтавпа—ним хăрани те пулмарĕ манăн çав самантра! Лăпкăнах пырса кĕтĕм „вилĕм пӳлĕмне".

— Вĕлерччĕр, анчах пурпĕр парăнтараймаççĕ вĕсем мана. Эп никама та сутас çук, ман чĕрене вĕсем улăштарас çук,—терĕм хама хам.

Сĕтел хушшинче хайхи пĕркун мана писарь тума тăрăшнă гестапо пуçлăхĕ ларать! Мана тӳрех палларĕ.

— Аха-а, эс те лекрĕн, эппин! Пит аван,—терĕ вăл шăл витĕр.—Каллех тĕл пултăмăр иккен, а? Халь ĕнтĕ пĕркунхи пек ман кăмăллă пулмăн, тетĕп...

Унăн куçĕсем çав тери усал çутăпа йăлтăртатса илчĕç.

— Пĕтерет ку мана,—шухăш вĕçрĕ пуçăмра.—Çăлăнăç кĕтмелли çук...

Çав вăхăтра коридорта, алак хыçĕнче, темиçе çын кĕрешни, такама çапни илтĕнчĕ. Тахăшĕ хыттăн кăшкăрса ячĕ:

— Айăплă мар эпĕ, мĕншĕн хупса усратăр мана? Çав-çавах нимĕн те каламастăп сире!..

Унтан алăк петлерен тухса вăркăнас пек уçăлса хупăнчĕ те, „вилĕм пӳлĕмне" хура сухаллă пĕр лутака çынна мечкă пек ывăтса кĕртрĕç. Çын стена çумне пырса çапăнчĕ, урайне ӳкрĕ.

— Чуниллисем эсир!.. Мĕншĕн асаплантаратăр? Вĕлерĕр пĕреххут,—йынăшса макăрса ячĕ вăл.

Ун хыççăн сиксе кĕнĕ офицер ăна тимĕрленĕ аттипе янахĕнчен тапрĕ. Çыннăн çăварĕнчен юн юхса анчĕ.

— Мĕн?—хаяррăн пăхса илчĕ ун çине гестапо пуçлăхĕ.

— Эп айăплă мар, господин...—урмăшса кайнă куçĕсене çавăркаласа, юхсах тăракан юнне сура-сура калама пуçларĕ сухаллă çын.—Ма çыпăçаççĕ весем ман çумма? Кунне пилĕкшер хут допроса сĕтĕреççĕ, кашнинчех хĕнеççĕ, пуçа çапа-çапа шăтарса пĕтерчĕç... А эп нимĕн те пĕлместĕп. Халь персе вĕлерĕр—ним те калаймастăп. Курман эп партизансене!

— Пăлхавçă вăл, господин обер-лейтенант,—йăрстах тăсăлса тăчĕ пуçлăх умĕнче халь çеç кĕнĕ офицерĕ.—Большевиксен агитаторĕ. Хам хăлхапах илтрĕм—фюрера урнă йытă, терĕ, ытти арестованнăйсене Хĕрлĕ Çар каялла килессипе лăплантарать...

— Эп тĕрĕссине çеç каларăм!—кăшкăрчĕ сухаллă çын.—„Пурĕпĕр вел.ерĕççĕ..."—терĕ пулмалла.

Гестапо пуçлăхĕ нимĕн те каламарĕ. Кабурĕнчи револьверне кăларчĕ те тӳрех ăна пуçĕнчен печĕ. Çын аллисемпе хăлаçланса ӳкрĕ, анчах вилмерĕ. Нимĕç ăна тепре печĕ—каллех пуçĕнчен. Çын çаплах тапаланчĕ. Ун пичĕ тăрăх темиçе йĕрпе юн юхрĕ, вăл хăрăлтатма тапратрĕ. Çапах та, çын вилсе çитмерĕ-ха. Кашни сывламассеренех унăн çăварĕнчен юнлă кăпăк тухрĕ. Ун тавра урайĕнче юн кӳлленчĕкĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ. А вăл çаплах хускалчĕ-ха. Вара нимĕç ун патне сиксе пырса, ăна çăварĕнчен печĕ, пуля çыннăн ĕнси витĕр тухса кайрĕ. Юн фонтан пекех тапма тапратрĕ кунтан. Халь ĕнтĕ çыннăн пĕтĕм кĕлетки юн ăшĕнче выртрĕ. Текех хускалмарĕ вара вăл.

— Кăларса пăрахăр! — кăшкăрчĕ гестапо пуçлăхĕ.

Ике салтак сухаллă çынна аллисенчен тытса сĕтĕрсе тухса кайрĕç. Ун хыççăн аршăн сарлакăш юнлă йĕр хурал.са юлчĕ.

— Халь ĕнтĕ мана.. —шухăшларăм эпĕ.—Мана та çавăн пек тăваççĕ...

Анчах темле телей çаврăнса тухрĕ ман тĕле. Допрос тумарĕç. Гестапо пуçлăхне васкавлăн таçта чĕнсе кайрĕç те, „вилĕм пӳлĕмĕнче" манпа пĕрле пĕр салтак çеç юлчĕ. Çур сехет

пек вăхăт иртсен, ним каламасăрах каялла сарайне кайса хупрĕç. Çĕрле пулсан, пире пурне те урама илсе тухса, мăн çул тăрăх хула еннелле хăваласа кайрĕç.

Хăрушла путешестви пулчĕ вăл! Выçăпа, асаплантарнипе вăйсăрланса çитнĕ çынсем ретлĕн утаймарĕç, аран сулланса пычĕç. Юланутлă нимĕçсем вĕсене пĕрмаях хыçалтан хӳтерчĕç, кам та пулин çултан пăрăнсан е кая юлма пуçласан, çавăнтах хулăм резин патаксемпе хĕнерĕç, прикладсемпе чышрĕç, лашасемпе таптарĕç. Пачах халран тухса урисене шутарайми пулнисене—пĕр вунă çынна пуль—çул çинчех пере-пере пăрахса хăварчĕç. Эпĕ те лекеттĕм ĕнтĕ çак шута, анчах мана икĕ çамрăк çын çул тăршшипех икĕ енчен пулăшса пычĕç те—çывăнпа çеç хăтăлса юлтăм. Атту халиччен шăмăсене те йытăсем кышласа янă пулĕччĕç.

Тул çутăлнă чух пире хулари тĕрмене çитерсе хупрĕç.

Уйăха яхăн арестант пулса пурăнтăм вара эпĕ. Мĕн кăна тӳссе ирттермерĕм пуль çав хушăра! Анчах этемĕн чунĕ час тухмасть иккен—вилме патне çитнескерех чĕррĕн юлтăм вĕт.

Пĕчĕкçеç камерăра эпир утмăлăн ытла пултăмăр. Выртма мар, ларма та вырăн çук. Вуçех ларайми-тăраими пулнисем çеç выртрĕç, ыттисем, пĕрперин çине тĕртĕнсе, е ура вĕççĕнех, стена çумне тайăнса, çывăрчĕç. Апат выранне—ирпе каç пăтранчăк шыв, пĕр воçмушка тăм пек çăкăр татăкĕ. Шыва та хĕрхенчĕç вĕт, ăна та кунне пĕр кружкăран ытла памарĕç, çăхансем! Пур майсемпе те туллин каласа пама çук пирĕн асапсем çинчен. Мĕн чухле паха халăх пĕтрĕ пуль унта!

Кашни ир камерăсенчен темиçешер виле сĕтĕрсе тухатчĕç.

Кашни каç коридор вĕçĕнчи „асап камеринчен“ çынсем чĕрене çурса ямалла йынăшса кăшкăрни илтĕнетчĕ. Пĕр каç арçынсен сасси илтĕнет, теприн че—хĕрарăмсен...

„Асап камеринчен“ сассем илтĕнме пуçласанах, тĕрме шăп пулатчĕ,—тĕрмерисем паян кама черет çитнине тавçăрса илме тăрăшатчĕç. Нумайăшĕ хăйсен çывăх çыннисене палласа илетчĕç вара. Ирсерен, вĕсене тимĕрлесе пĕтерне хура хупă грузовикпа (ăна пирĕн „душегубка“ тетчĕç) хула хыçне илсе кайса тăкатчĕç—вăл машинăра совет çыннисене газпа вĕлерне...

Пĕр каçхине, çавнашкал асаплăн кăшкăрни пĕр сехет ытла таттисĕр хăлхана хупласа тăнă хыççăн, коридорта ура сассисем илтĕвчĕç. Тата шăпрах пулса тăчĕ тĕрмере.

Сасартăк çав хăрушла шăплăхра çăлкуç шывĕ пек таса çамрăк сасă янраса кайрĕ:

— Юлташсем! Пире вĕлерме илсе каяççĕ... Сывă пулăр! Ан парăнăр! Пурне те вĕлерсе пĕтерейместĕç... Ĕненĕр, юлташсем: Сталин манман пире! Сталин çарĕ килет, Сталин çарĕ Совет çĕрне фашистсенчен тасатать! Ĕненĕр...

Урăх кăшкăрма памарĕç ăна. Тăруках кĕрешни, çапни илтĕнчĕ, ура сассисем хăвăртланчĕç—конвоирсем часрах хăвалама тытăнчĕç курăнать. Çапах та, темиçе самантран, коридорăн тепĕр вĕçĕнчен юлашки хут янраса илчĕ çамрăк сасă:

— Сывă пултăр пирĕн ирĕклĕх! Сывă пултăр Сталин!..

Çавăнтах пăшал сасси кĕрслетсе илчĕ. Паллах ĕнтĕ, çав вĕри чĕреллĕ, вилес умĕн те парăнман совет çыннине тĕрмерен тухиччен персе пăрахрĕç...

Тахăш камерăра темиçе çын пĕр харăс юрласа ячĕç:

— Вы жертвою пали в борьбе роковой,
Любви беззаветной к народу...

Кĕçех вĕсен сассисем çумне юнашар камерăри сасăсем хутшăнчĕç. Юрă вăйланчĕ.

— Вы отдали все, что могли, за него—
За жизнь его, честь и свободу...

Унтан пур камерăсем те, пĕтĕм тĕрме юрлама тапратрĕ. Надзирательсем ухмаха ернĕ пек чупкалама тытăнчĕç коридор тăрăх.

— Шăпланăр! Халех чарăнăр! Пурне те карцера лартатпăр!..

Вĕсем камерăсен алăкĕсенчен шаккарĕç, пырĕсене çурас пек кăшкăрчĕç, темле те хăратма тăрăшрĕç—ним те пулăшмарĕ. Юрă пур камерăсенче те янрарĕ... Халь ĕнтĕ хупса лартнă çынсем мар, тĕрме çурчĕ хăй, стенари кашни кирпĕч юрланăн туйăнчĕ.

Нимĕн те тăваймарĕç нимĕçсем çакăн хыççăн, мĕншĕн тесен уйрăмăн никама та айăплама пулмарĕ. Икĕ кун апат памасăр, прогулкăна кăлармасăр усрарĕç кăна.

...Талăк хыççăн талăк иртрĕ. Эпĕ хама мĕн пулассине пачах та пĕлмесĕр пурăнтăм. Вăй пĕтрĕ, ĕнтĕ аран сывлакан пулса çитрĕм.

— Çак тамăкрах вилмелле пулĕши?—хурлăхлăн пăчăртанатчĕ чĕре.

Çирĕм виççĕмĕш кун, вĕçне çитсен тин, допроса чĕнчĕç мана. Камерăра сывăхрах паллашнă çынсемпе сывпуллашсах тухрăм.

— Асаплантараççех пулсан—тӳсеймест ман чĕре,—терĕм.

Шăп кăнтăрлаччĕ. Тахăш камерăри хĕрарăмсене прогулкăна кăларнă мĕн те, вĕсем аллисене каялла тытса тĕрме килхушшинчи унка тăрăх утатчĕç. Манăн конвоир тусне курчĕ пулас та, мана чарсах унпа калаçма пикенчĕ. Ман тĕлпе, пĕрин хыççăн тепри, хĕрарăмсем утса иртрĕç... Халь çеç хурăмланса çитме пуçланă çамрăк хĕрсем те, 50—60 çула çитнĕ карчăксем те пурччĕ вĕсем хушшинче. Анчах пĕрин те чĕрĕ этем сăнĕ çук, пурте начарланса, сарăхса, тăпра тĕслĕ пулса ларнă.

— Мĕншĕн асапланаççĕ çак мĕскĕнсем?—тесе тăтăм вĕсем çине хурлăхлăн пăхса.

Унтан сасартăк куççене чарса пăрахрăм... Темиçе самант хушши сывлăш та тухаймарĕ пулас манăн...

Ансăр сукмак тăрăх умлăн-хыçлăн утакан хĕрарăмсем хушшинче эпĕ хамăн хĕре, Соньăна, куртăм! Малтанах ĕненес те килмерĕ, улăшу куратăп пуль, терĕм, çавăнпа та шывланакан куççене чăсрах шăлкаласа илтĕм. Çук, чăнах иккен, манăн хĕрех!

Çĕрелле пăхса, тарăн шухăша кайса утаканскер, вăл мана курмарĕ. Хампа танашсан вара—эпĕ малтан чĕнтĕм ăна:

— Соня!

Вăл пуçне çĕклесе мана курчĕ те—тап! чарăнса тăчĕ.

— Атте! Епле ку? Эсĕ те кунта-и!—тесе ячĕ те, çавăнтах аллисене тăсса ман паталла чупса пычĕ, мана пăчăртаса вĕлерес пек ыгаласа илчĕ, макăра-макăра, ниçта кайса кĕрейми пăлханса чуптума тапратрĕ...

Анчах темиçе самант хушши çеç тăсăлчĕ пирĕн телей. Харăсах пур енчен темиçе салтак чупса пычĕç те пире туртса уйăрчĕç. Соньăна вырăнтах пуçĕ урлă резина патак лекрĕ, мана хамăн конвоир темиçе хут чышса сывлайми турĕ. Вара эпир пĕрпĕрин çинчен нимĕн те пĕлеймерĕмĕр.

Допроса илсе çитерсен, конвоир офицера тӳрех çак килхушшинче пулса иртнĕ ĕç çинчен каласа пачĕ пулмалла, мĕншĕн тесен нимрен малтан çавăн пирки ыйтма тапратрĕç.

— Кам вăл? Мĕнле хĕрарăма тĕл пултăн?

— Манăн ученица пулнăскер,—тесе тыттартăм эпĕ, вĕсем Соня ман

хĕр иккенне пĕлсен ăна тата йывăртарах айăплама пултарасран шикленсе.

— Суятăн пуль-ха?

— Тĕп-тĕрĕс калатăп. Суймавагă эпĕ.

— Тен тăвану вăл санăн?

— Çук...

— Е хĕрӳ пулĕ?

— Ман хĕр килтех пурăнать...

Офицер кĕтесре ларакан хĕрлĕ питлĕ салтака темскер каларĕ. Вара мана, çавăнтах тумтире хывтарса, сак çине тăсса хучĕç те, шалавара туртса антарчĕç. Шомполпа пĕр вунă-вуникĕ хут çапнине астăватăп, унтан вара тăна çухатнă. Темĕн чухлĕ выртнă—пĕлместĕп, анчах тăна кĕрсен хам йĕп-йĕпе пулнине туйрăм. Мана тăна кӳртме пуç çине шыв сапнă иккен.

Эпĕ куççене уçсанах, мана çĕклесе тăратрĕç.

— Ну, тăн кĕчĕ-и пăртак?—куç харшисем айĕн пăхса илчĕ офицер.—Малашне тĕп-тĕрĕс ответсем парасса кĕтетĕп... Кала, партизансене епле пулăшса тăтăн?

— Никама та пулăшман эпĕ...

— Çĕн çул каçхине кама пытартăн хăвăн патăнта?

— Куçпа та курман...

— Суятăн, йытă! Çынсем курнă вĕт!

— Курнă пулсан—ма тытман?

— Эс чипер калаçкала, халех тепĕр хут лектеретпĕр!

— Сирĕн ирĕк.

— Кала, теççĕ сана, кама пытартăн? Миçе çынна?

— Пĕрне те курман...

— Ан суй, выльăх! Çаплах тунатăн пулать? Чунна кăларатăп эпĕ санăнне, илтетĕн-и?

— Вăл сирĕн ĕç ĕнтĕ, эсир ăна пит ăста пултаратăр!—тӳссе тăраймарăм тек.—Çăмăл ĕç... Тата эсир хăнăхнă ăна...

— А-а, эс калаççа тăратăн-и тата?!—Офицер сиксе тăчĕ те сĕтел урлă кармашсах мана янахран чышрĕ. Унпа пĕрлех салтак сиксе пырса хăлха урлă çапрĕ. Эпĕ сулăнса кайса ӳкрĕм. Салтак ман çине хăпарса сикрĕ. Çавăнтан вара нимĕн те астумастăп,—тĕпсĕр тĕттĕм шăтăка путнă пекех пулнă.

... Ир енне темле çырмара тăна кĕтĕм. Пурпĕрех вилет, тесе, тĕрмерен кăларса пăрахнă пулмалла мана. Тăруках ăçтине те тавçăрса илеймерĕм, ниçталла кайма та пĕлмерĕм. Çутăла пуçласан тин сăртра тĕрме стенисене куртăм та, тем пекех хĕн пулсан та, тĕрмерен аяккарах кайма тăрăшрăм. Пĕтĕм шăмшак, алурасем, пуç—-тӳсмелле мар ыратаççĕ, пĕр тумлам вăй та юлман хамăн, анчах шалти сасă çаплах хăваларĕ мана:

— Ут, çапах та ут... Çăлăн... çăлăнатăн!

Çырма тăрăх хула хĕррине тухсан, малалла тек ниçта та кайма пултарас çуккине туйса, пĕр пĕчĕкçеç пӳрт алăкĕ патне пырса шаккарăм. Мана хирĕç хам пекех ватă хĕрарăм тухрĕ.

— Мĕн кирлĕ?—ыйтрĕ вăл, ман çине тĕлĕнсе пăхса.

— Каштах канасчĕ манăн...—терĕм.

— Эс тĕрмерен мар пуль-çке?

— Ма апла ыйтан?

— Сăну çавăн пек...

— Ан та ыйт эппин,—алăпа султăм вара эпĕ.

Карчăк пит аванскер пулчĕ. Эпĕ ăна хам кам пулнине, мĕн-мĕн тӳссе ирттернисене кĕскен кăна каласа патăм та, мана вăл макăра-макăрах пăхма тытăнчĕ.

— Манăн ывăла та тытса кайрĕç çавăн пек,—терĕ вăл,—çĕр варринче, тăрук килсе кĕрсе... Анчах та тарса хăтăлнă хыпар тухрĕ-ха... Вĕсене, кунтан урăх çĕре хăваласа кайнă чух, вăрмантан темле пăшаллă çынсем

сасартăк сиксе тухса хăтарнă, тет. Тĕрĕс пултăрах çав сăмах!

Хама тем пекех йывăр пулнă пулин те, эпĕ ăна лăплантарма тăрăшрăм.

— Нумая пымасть ку шуйттансен ĕмĕрĕ, пĕтерессĕх вĕсене. Пурĕ-пĕр хăтарассĕ пире...

Çавăн майлă калаçкаласан, карчăк татах ырă кăмăлланса кайрĕ. Ывăлĕ çинчен калама пуçларĕ. Районра комсомол енĕпе ĕçлене, тет. Хăш районра ĕçленине ыйтсан, вăл шăпах пирĕн район ятне каларĕ. Вара эпĕ унăн ывăлне вăл каланă сăн-сăпат тăрăх пĕлме пуçларăм.

— Çÿллĕ, сарă çÿçлĕ, кăвак куçлăскер—пит маттур çав,—терĕ карчăк.

Эпĕ увăн фотографине ыйтрăм.

— Кăтарт-ха, тен эпĕ мĕн те пулин пĕлетĕп пуль ун çинчен...

Карчăк часах тĕттĕм кĕтесрен, урай хăми айĕнчен пĕр çыхă фотографи кăларса пачĕ. Вĕсенчен пĕр-иккĕшне пăхсанах, каялла тыттартăм. Эпĕ шухăшлани тĕрĕсех пулнă!

— Сан ывăлу сывах, çĕн çул кaç ман патра çĕр выртса кайрĕ,—терĕм ăна.

Карчăк ку хыпартан калама та çук тĕлĕнчĕ, ниепле те ĕненесшĕн пулмарĕ. Ĕç мĕнле пулвине йĕркипе каласа парсан, вара, савăнни-мĕнĕпе макăрса ячĕ:

— Ыр çынсем нумай иккен-ха пирĕн...

Виçĕ талăк пурăнтăм эпĕ ун патĕнче. Хăйĕн ывăлне эпĕ нимĕçсенчен хăтарнине пĕлсен, вăл мана хăйĕн тăванĕ пекех усрарĕ. Самаях вăй кĕчĕ, ыратнисем те майĕпе ирте пуçларĕç. Тăваттăмĕш кунĕнче ирхине киле тухса утрăм, мĕншĕн тесен хулара ниçта çырăнмасăр пурăннă пирки мана каллех тытатчĕç пулĕ. Хампа пĕрле çак ырă карчăка та пĕтерсе хума пултарнă эпĕ.

Анчах килте мана тата пысăкрах хуйхă кĕтсе тăнă.

Эпĕ таврăннă çĕре манăн кил пушпушах тăрса юлнă. Хама тытса кайсан, икĕ эрнерен нимĕçсем ман аслă хĕре çакса вĕлернĕ, кил таврашĕнчи мĕнпур япаласене çаратса тухса кайнă...

Кÿршĕсем çапла каласа пачĕç мана.

Хуйхи-мĕнĕпе Вера питĕ хытă чирленĕ. Кунран-кун хавшаса пынă вăл. Кăшт та пулин вăй кĕтĕр тесе, вăл кÿршĕ хĕрарăмне хамăрăн юлашки виçĕ чăхран пĕрне пустарнă. Çав чăх пирки çакнă та вара ăна.

Комендантпа староста ялта юлнă мĕнпур выльăха, кайăк-кĕшĕке шута илсе, çакăн пек приказ кăларнă пулнă:

— Кам пĕр путеке те пулин, пĕр чăх чĕппине те пулин пытарать е пусса çиет—çавсене, Германи командованине хирĕç тăракан вырăнне шутласа, судсăрах çакса вĕлерессĕ.

Вера, чирлĕ пирки ниçта тухса çÿременскер, çав приказ çинчен нимĕн те пĕлмен. Шăпах апат çисе ларнă çĕре староста—çав йытă, Кузька Битый—пырса кĕнĕ (вăл тĕрмене кайса хупнисен çемйисене кашни кунах тĕрĕслесе çÿретчĕ, тет).

— Мĕн çиен?—тÿрех тăрăннă вăл Вера çине.

— Çимелли нимĕн те çук та—чăх пусрăм,—тенĕ Вера.

— Кам ирĕк пачĕ?

— Хамăр чăх пирки камран ирĕк ыйтса тăратăп вара?

— Приказа пĕлетĕн-и?

— Мĕн çинчен?

— Нимĕн те пусма юраманни çинчен!

— Пуçласа илтетĕп...

Староста ăна ĕненмен.

— Эс вĕреннĕ çын, эс пур приказсене те никамран малтан пĕлетĕн, кăна эс закона пахăнас мар тесе юри тунă...—тем те пĕр каласа пĕтернĕ Верăна. Çавăнтах акт çырнă та комендавта панă. Паллах ĕнтĕ—кун çумне вăл ытти сăлтавсене те хушнă: ашшĕне партизансемпе çыханнăшăн

хупнă, шанчăксăр çын, тенĕ. Ун пек чух çынна пĕтерсе лартма çăмăл вĕт!

Комендант хăйĕн приказне «çирĕплетмелли» май тахçанах шыранă мĕн. Вăл Верăна çав кунах хăй патне сĕтĕрсе пыртарнă, допрос тăванçи пулса, ăна тем тĕрлĕ асаплантарса пĕтернĕ, унтан—тепĕр ирхине—çакса вĕлернĕ. Хăй епле чунилли пулма пултарнине питĕ чаплăн кăтартма тăрăшнă вăл: çакса вĕлермелли патне ялта юлнă пĕтĕм халăха хăваласа пынă, гарнизонри салтаксене парадри пек тăратса тухнă, оркестр таттисĕрех çуйăхулла маршсем вылянă, тет...

Пилĕк кун çакăнса тăнă Вера... Кайран вара ăна таçта кайса пăрахнă—никам та пĕлмест.

Эпĕ пĕр-пĕччен тăрса юлтăм. Ниçта тухмарăм, никампа та тĕл пулса калаçмарăм. Ку хуйхă мана татах халран ячĕ. Кунне пĕрре вут хуткалаттăм та, выртаттăм вара кăмака çинче. Анчах шухăшсене чарма çук вĕт, пуç чиперех ĕçлерĕ-ха манăн. Хама тытса кайнă чух Верăпа сыпуллашни, вăл мана куççуль тулли куçĕсемпе пăхса ăсатни, унтан Соньăна тĕрме килхушшинче тĕл пулни—куç умĕнчех тăчĕç. Тĕлĕкре те пĕрмай кураттăм вĕсене...

Унтан шухăшсем майĕпе сарăлса пырса ыттисем çине те куçатчĕç.

Епле вара пирĕн пурнăç çаплипех вĕçленĕ? Чурасем пулсах вилетпĕр-ши?—теттĕм. Кун пек пулас шухăш пуçра ниепле те шăнăçмастчĕ.

— Çук, ун пек пулма пултараймасть!—тетчĕ чĕре.—Россия нихçан та, никам умĕнче те чĕркуççи çине тăман, халь пушшех—тăрас çук!

Кун пек вăхăтсенче вара яланах тĕрмере пĕр каçхине пулса иртни—пĕрисем хăйсене вĕлерме илсе кайнă чух та: „Сталин манман пире! Сталин çарĕ Совет çĕрне фашистсенчен тасатать... Ĕненĕр!" тесе кăшкăрни аса килетчĕ.

Тĕнчере мĕн пулса иртнине нимĕн те пĕлмерĕм, фронт ăçтине те пĕлмерĕм, нимĕçсем пирĕн ял çыннисене хытăран хытă хĕснине, пĕрин хыççăн теприне тытса вĕлернисене çеç илтеттĕм,—çапах та чĕрере шанчăк сӳнмерĕ. Тĕлĕнмелле япала!

— Эпир тăшман чури пулман, пулас та çук...—теттĕм ăшăмра.

Уйăх ытла пурăнтăм çапла, упа пек. Пĕрмаях темле телейлĕ самант килсе çитессе кĕтрĕм...

Мĕн тетĕр? Çитрĕ вĕт çав самант!..

Пĕр питĕ теттĕм каç пулчĕ вăл. Эпĕ, алăксене питĕрсе, кăмака çине улăхса, тăрпара çил выçă кашкăр пек ӳленĕ май тахçанчченех хамăн шухăшсемпе пăтрашса выртрăм. Унтан тĕлĕрсе кайнăччĕ çеç—сад енчи чӳречерен шăкăртаттарни илтĕнчĕ. Малтан эпĕ ăна çилпе темскер чĕтрет пулĕ, терĕм, анчах шакканă сас вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Вара, ерипен çĕре анса мигалка çутрăм та чӳрече патне пытăм:

— Кам унта?—тесе ыйтрăм.

— Эпĕ...—илтĕнчĕ хĕрарăм сасси.

Ку мана тата ытларах тĕлĕнтерчĕ. Епле хĕрарăм пыма пултарнă тата ман пата çак вăхăтра?

— Кам эс?

— Эпĕ, Соня, ну...

Хам ума çав самантра пĕр-пĕр калаçакан кайăк вĕçсе пынă пулсан, эпĕ çав тери тĕлĕнместĕмччĕ пулĕ.

— Соня! Соня!—асăрханмалли çинчев пачах манса, кăшкăрса ятăм та эпĕ, çенĕкелле чупса тухрăм.—Хĕрĕм, чунăм!..

Алăк урлă каççанах ыталанса илтĕмĕр. Иксĕмĕр те макăртăмăр, пĕрнепĕри чуптурăмăр... Хăвăрах ăнланатăр ĕнтĕ: Соня пырса кĕни маншăн—вăл масар шăтăкĕнчен тухса килнĕ пекех пулчĕ-çке!

— Епле хăтăлтăн? Хăйсемех кăларса ячĕç-и?—ыйтса тĕпчеме пуçăнтăм унран.

— Асту, хӑйсем ярӗҫ вӗсем!—терӗ Соня.—Пире Германие илсе кайма тапраннӑччӗ, — ҫаксем ҫӑлчӗҫ!—Вӑл алӑк еннелле кӑтартрӗ. Эп хумханнипе асӑрхаман та,—Соньӑпа пӗрле арҫын килнӗ мӗн.

— Камсем—вӗсем?

— Партизансем...

— Ой, тавах вӗсене! Тем парӑттӑм... Спасибо, юлташ!—Эпӗ алӑк патӗнчи ҫыннӑн аллине часрах тытса чӑмӑртарӑм, ӑна малалла ирттерсе лартрӑм.

— Эсир мана паллаймастӑр пулас?—куларах ыйтрӗ вӑл манран.

— Палласах ҫитейместӗп ҫав...

— Ҫӗнӗ ҫул каҫне астӑватӑр-и?

— Астӑватӑп... Вара мӗн?

— Мана ҫӑлтӑр вӗт эсир ун чухне!

— Чӑвах-и?!

— Ҫавӑ, ҫавӑ вӑл, атте!—ҫирӗплетрӗ Соня.

— Юмахри пекех пулса тухать ку...—терӗм вара эпӗ.—Пурнӑҫ мар—приключенилле повесть, тупата!

Халь вӗсем эпӗ мӗншӗн кун пек калани ҫинчен ыйтма пикенчӗҫ. Эпӗ вара нимӗҫсем хама тӗрмерен йытӑ вилли пек кӑларса ывӑтнӑ хыҫҫӑн мӗн-мӗн пулнисене, хама ҫав Соня юлташӗн амӑшӗ епле пӑхса усранине каласа патӑм. Ман калав вӗсене тӗлӗнтерчӗ те, култарчӗ те.

Соня хӑй пирки ҫапла каласа пачӗ: иксӗмӗр тӗрме кил хушшинче тӗл пулнӑ хыҫҫӑн ик-виҫ кунранах вӗсене—200 ҫамрӑка—тӗрмерен кӑларса чугун ҫул станцинелле илсе кайнӑ. Партизансем кун ҫинчен пӗлнӗ те вӑрманти ҫул ҫинче засада туса, нимӗҫ-конвоирсене пурне те вӗлерсе тӑкнӑ, заключеннӑйсене хӑтарнӑ. Анчах вӗсенчен пысӑк пайӗ ниҫта та кайман—партизансен отрядне кӳнӗ. Ҫав шутрах манӑн Соня та пулнӑ. Партизансем вӗсемпе кашнипе уйрӑмӑн паллашма тытӑнсан—Соньӑпа ҫак манӑн ҫӗнҫул каҫӗнчи „хӑна“ пӗр-пӗрине палласа илнӗ. Ӑнсӑртран пулнӑ тӗлпулу вӗсене питех те савӑнтарнӑ. Хамӑр районалла килсен, вӗсем хӑйсен командирӗнчен мана килсе пӑхма ирӗк ыйтса илнӗ...

Телейлӗ каҫ пулчӗ вӑл пирӗншӗн. Вера пирки вуншар хут та асӑнса хуйхӑртӑмӑр ӗнтӗ, анчах ӑна халь пурӗ пӗр тавӑраяс ҫук та—хамӑра хамӑр ҫирӗпрех тытма тӑрӑшрӑмӑр. Ун пирки ҫамрӑк партизан пит аван каларӗ:

— Вилнисемшӗн тавӑрӑпӑр, чӗррисемшӗн кӗрешӗпӗр!—терӗ.

Ку сӑмах мана калама та ҫук килӗшрӗ. Эпӗ хальхи вӑхӑтра фронтра мӗн пулса иртнисем ҫинчен пӗлме тытӑнтӑм. Тата ытларах савӑнтарса ячӗҫ мана ҫамрӑксем: фронт пирӗнтен пурӗ те аллӑ-утмӑл ҫухрӑмра ҫеҫ иккен. Совет Ҫарӗ нимӗҫсене Мускав патӗнче питӗ хытӑ тӳпкенӗ те, халь кунталла, хӗвеланӑҫнелле хӑваласа килет мӗн!

— Темиҫе кунран Совет Ҫарӗ пирӗн патра пулать,—терӗ Соня.—Кӗтсех тӑр. Ҫавӑн пирки пирӗн отряд кунталла тухрӗ, нимӗҫсен чакмалли ҫулне пӳлсе лартатпӑр. Вара икӗ енчен те лекет ӑна: ҫар—лерен ҫапать, эпир—кунтан. Ниҫта кайса кӗмелли пулмасть унӑн!

— Анчах сирӗн асӑрханас пулать,—хушса хучӗ унӑн юлташӗ.—Чакнӑ чух нимӗҫсем питӗ ураҫҫӗ. Аяккалларах пӑрӑнни кансӗрлемест...

— Тӗрӗс, тӗрӗс, атте, тархасшӑн сыхлан,—ӳкӗтлерӗ Соня та.—Ҫӑлӑнӑҫ ҫывӑх ӗнтӗ, анчах та чи юлашкинчен сана тем туса ан хӑварччӑр!

Ир енне вӗсем тухса кайрӗҫ.

Ҫавӑнтан вара эпӗ пачах урӑхланса тӑтӑм! Каллех вӑй кӗчӗ мана, кӑмӑлӑм ҫӗкленчӗ, ҫӗр ҫинче вӗҫӗмсӗр пурӑнас килекен пулчӗ. Кунӗн-ҫӗрӗн хамӑрӑн ҫӑлӑнӑҫ—Совет Ҫарӗ килсе ҫитессе кӗтме тытӑнтӑм. Тӳссе ирттернӗ асапсем те манӑҫ пулчӗҫ пӗр хушӑ.

— Сталин çарĕ килет...

Кĕтни сая каймарĕ! Фронт пирĕн паталла çывхарсах килни уççăнах сисĕнчĕ. Нимĕçсен вĕçĕ-хĕррисĕр обозĕсем хĕвеланăçнелле туртăнма пуçларĕç,—пирĕн çынсенчен çаратнă япаласене пĕтĕмпех темĕн те пĕр турттарса кайрĕç. Сывлăшра нимĕç самолĕчĕсем мар, пирĕн самолĕтсем ытларах вĕçрĕç. Унтан таврари ялсем çунма тапратрĕç—çĕрĕ-çĕрĕпе пĕлĕт вутпа хĕртĕнсе, хĕрелсе тăчĕ... Орудисем кĕмсĕртетни çывăхран çывăх илтĕнчĕ...

Тата хаваслăрах тапа пуçларĕ чĕре!

— Халь çитсе тухаççĕ хамăра хăтаракансем,—тесе тăтăм çеç. Эпĕ кăна мар, пурте çавăн пекех пулнă ĕнтĕ, анчах çынсем хăйсен туйăмĕсем, шухăшĕсем çинчен калама хăраса тăчĕç-ха. Ҭелей çитес умĕн юлашки самантсенче никамăн та ним усăсăр вилсе выртас килмест.

... Хĕвелтухăçĕнчи ялсем тăтăшах çунни, пушар çуттисем кулленех хамăр паталла çывхарни çеç хăрата пуçларĕ пире.

— Пирĕн яла та çунтарĕç-ши?.. Хăтăлса юлаймăпăр-ши епле те пулин?

Çук, хăтăласси пулмарĕ. Пĕр каçхине, орудисем ытла та пит çывăхра кĕмсĕртетме тапратсан, урамра калама та çук хыттăн, хăрушла кăшкăрни янраса кайрĕ:

— Пуша-ар!.. Çунатпăр!..

Эпĕ хăпăл-хапăл урамалла тухрăм. Унталла пăхрăм, кунталла... Ял харăсах виç-тăват çĕртен çунма тапратнă. Кĕçех урамра кăнтăрлахи пек çутă пулса тăчĕ. Мĕн тăвас пулать?

Тăван киле епле та пулин çăлса хăварас шухăш мар, нимĕçсем шкула та хыптарса яма пултарас шухăш пырса çапрĕ пуçа.

— Вĕсемшĕн пурĕпĕр... Вĕсем пирĕнне нимĕн те хĕрхенсе тăрас çук!

Хам тем тума пултарас пекех, часрах шкул еннелле утрăм. Ялта çав вăхăтра тата темиçе кил пĕр харăс хыпса илчĕç—нимĕçсен тискер алли юри, килтен киле вут тĕксе çӳрени питĕ аван паллă пулчĕ.

Утта татах хăвăртлатрăм. Пур çĕрте те кăшкăрчĕç, йытăсем вĕрчĕç, выльăхсем мĕкĕрчĕç, çунакан йывăç шатăртатрĕ, унта та кунта çуртсем ишĕлсе анни илтĕнчĕ.

Эпĕ çав тамăк варрипе çаплах малалла васкарăм..

Сасартăк, каласа памалла мар вăйлă взрыв пулчĕ. Пĕтĕм тĕнче чĕтренсе илнĕн туйăнчĕ, сывлăш хумĕ мана пĕр хӳме çумне пырса çапрĕ. Пуç çийĕпе йывăр чулсем шăхăрса иртсе кайрĕç, унтан пĕр хушă пĕтĕмпех тĕтĕм хупласа илчĕ. Мĕн пулнине тăруках ниепле те ăнланаймарăм. Тепĕр урамалла тухсан тин куртăм мĕн пулса иртнине: нимĕçсем пирĕн чиркĕве сывлăшалла сиктернĕ иккен. Питĕ чаплăччĕ пирĕн чиркӳ. Вăрçăччен ăна Мускавранах комисси килсе пăхса кайнăччĕ, тивме юрамасть, архитектура искусстви енĕпе питĕ хаклă, тенĕччĕ. Халь ман умра йăсăрланакан чул купи çеç выртрĕ.

Чĕре тата хытăрах пăчăртанчĕ манăн.

— Шкула та пĕтереççĕ... Шкулсăр тăрса юлăпăр...

Чăнах çапла пулнă çав. Шкул килхушшине пырса кĕтĕм çеç—ун умĕпе пысăк факел тытнă этем мĕлки чупса иртнине курах кайрăм.

Хама астăвайми пулнă вара эпĕ çавăнта. Кайран-малтан мĕн пуласси не шутламасăрах, факельщик патнелле чупрăм! Вăл ĕнтĕ шкул кĕтессине бензин сапса, ăна факелĕпе хыптарма пуçăнчĕ. Хăйĕн тискер ĕçне çав тери тăрăшса тăваканскер, мана асăрхамарĕ пулас вăл. Çитменнине, эпĕ ун патнелле хыçалтан, тĕттĕм çĕртен пытăм-çке.

Шкул кӗтесси кӑштах хыпса илчӗ те ҫавӑнтах сӳнчӗ. Нимӗҫ каллех тивретме тытӑнчӗ. Эпӗ тек тӳссе тӑраймарӑм. Ал айне лом еверлӗ темле тимӗр кӗрсе кайрӗ. Пур вӑя пухса султӑм та факельщика пуҫ урлӑ ҫапрӑм. Ых! терӗ кӑна нимӗҫ,— ҫавӑнтах ӳппӗн тӑсӑлса выртрӗ... Унӑн ҫунакан факелне часрах таптаса сӳнтертӗм...

Анчах пурӗпӗр ҫӑлма пулмарӗ шкул ҫуртне. Нимӗҫ ӑна малтан шал енчен хыптарса тухнӑ иккен. Пур чӳречесенчен те ҫулӑм чӗлхисем шуса тухрӗҫ. Тумтире хывса ҫапкаларӑм, юрпа сапрӑм—усси пулмарӗ. Куҫ умӗнчех хыпса кайрӗ вара вӑл... Шӑпӑртатса куҫҫулӗ юхрӗ манӑн, ун ҫине пӑхса тӑрса. Ман пурнӑҫри чи хаклӑ япала пӗтрӗ вӗт!

Ялти пушар сарӑлнӑҫемӗн сарӑлчӗ. Пур урамсем те ҫунчӗҫ. Эпӗ тавӑрниччен манӑн кил те ним юлми ҫунса кайнӑ мӗн...

Тепӗр кунне, кӑнтӑрла ҫитеспе, пирӗн яла хамӑр Совет Ҫарӗ пырса кӗчӗ. Анчах ял выранне кӗлпе кӑмрӑк ҫеҫ куралса юлнӑччӗ.

Хамӑн чи пысӑк хуйхӑ—шкул ҫунса кайни ҫинчен пӗр командира каласа патӑм.

— Ытлах ан кулян,—терӗ вӑл мана.—Нимӗҫе ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн каллех пурте пулӗ пирӗн,—шкулӗ те, завочӗ те, колхозӑн ҫурчӗсем те... Эпир вӗсене нимӗҫсене хӑйсене тутаратпӑр. Ишӗлтерме пӗлнӗ—ҫӗнӗрен тума пӗлччӗр!

Ҫав тери лӑплантарчӗҫ мана ун сӑмахӗсем.

Икӗ кунран яла йӑпӑртлӑха кӗрсе тухнӑ Соньӑпа унӑн юлташӗ те ҫавнах каларӗҫ мана.

— Телее тавӑратпӑрах!

Вӗсем хӑйсен ирӗкӗпех Совет Ҫарне кайрӗҫ, эпӗ ҫынсем пулӑшнипе ҫак ҫӗрпӳрте туса кӗтӗм те—хамӑн ӗҫе тытӑнас, терӗм. Вӑрҫӑ пӗтессе кӗтсе ларас мар, терӗм. Ачасене вӗрентме тытӑнтӑм вара. Мӗнле условисенче ӗҫлеме тивнине хӑвӑрах куртӑр, анчах халь ун ҫине пӑхса тӑма юрать-и?

---

... Ирхине эпир Яков Ивановичпа уйрӑлтӑмӑр. Ҫул таршшӗпех калаҫса пытӑмӑр ун ҫинчен. Нихҫан манмалла мар асра юлчӗ ҫав „33 № старик". Темӗн тӗрлӗ асап, хурлӑх, мӑшкӑл витӗр тухнӑ ку ҫын, анчах хӑйӗн таса чӗрине нихӑш енчен те варалаunion ҫутӑ ӗмӗтсене ҫухатман, хӑюллӑн малалла пӑхнӑ.

— Совет ҫыннисем ҫеҫ ҫакӑн пек ҫирӗп пулма пултараҫҫӗ ҫав,—терӗмӗр эпир.—Ун пек ҫынсене нихҫан та, никам та парӑнтарас ҫук.

1944.



## ИЛЬЯ ТУКТАШ

### ПУРНĂÇ ПУÇЛАМĂШĔ

I

Хусан еннелле тăсăлса каякан хурăнлă çул тăрăх виçĕ çын утнă. Вĕсем виççĕшĕ те юнашарах пынă. Аякран пăхсан, вĕсем инçе çула кайма тухнă пĕр пекрех кĕлеткеллĕ этемсем пек туйăннă, виççĕшĕ те, ни ытлашши васкамасăр, ни ытлашши кая юлмасăр, енчен-енне сулкаланарах утнă. Анчах та вĕсем хыçĕнчен тусанлă çул çинче юлса пыракан ура йĕрĕсем пĕр пек пулман: икĕ енĕпе пыракан этемĕсем тимĕр таканлă йывăр сăран атă йĕрĕсем хăварса пынă, варрипеле—çара ура йĕрĕсем кăна вĕттĕн-вĕттĕн ылмашăнса выртса юлнă. Кунсăр пуçне тата эк çакна курма пулнă вĕсем çине катаран пăхсан: ик айккипеле пыракан çынnисен хулпуççийĕсем çинче хĕвел пайăркисем ўкнипеле темĕнле тăруках тавçăрса илме çук çутă япаласем хутран-ситрен йăлтăртатса çуталкаланă; унтан этем кĕлеткисем, каллех вăраммăн тăсăлса пыракан салху мĕлкесем пулса, пĕр-пĕринпе хутшăнса кайнă та, ни вĕсем епле çынсем иккенне, ни епле тумтирсем тăхăннине уйăрса илме пулман.

Хĕвел чылай çўлелле хăпаричченех çакăн пек пĕр васкамасăр утса пычĕç çак виçĕ çын хурăнлă çул тăрăх Хусан еннелле. Кайсан-кайсан вĕсен çулĕ пĕр сарлака улăх хĕррине çаврăнса тухрĕ те, вĕсем пысăк юханшыв хĕррине канма ларчĕç. Хыçалтан пырас-тăвас çыншăн халĕ ĕнтĕ кусем камсем иккенне çывăхранах сăнама май пулчĕ: иккĕшĕ — кăвак мундир тăхăннă сарлака хулпуççиллĕ конвоирсем иккен, варрин-

чи — хĕр, çара пуçăн, çара уранскер, çинçе пилĕклĕ пĕвĕ çине килте тĕрт-се тунă улача кĕпе тăхăнса янă-скер.

Сăнран пăхмашкăн хĕрĕ çирĕм — çирĕм икĕ çулсенчен ытла мар. Анчах та унăн чечен пиçĕ çутă ӳкмен вырăнти чечек пек шурăхса кайнă, тӳрĕ те тăваткалтарах çамки тăрăх сăмса сыппи тĕлĕнчен çӳлелле икĕ çинçе йĕр йĕрленсе юлнă, — ахăрт-нех ăна çамрăклах йывăр хуйхă хуç-са кайнă пулмалла; чĕкеç çунатти евĕр куçхаршийĕсем айĕнчи çĕмĕрт пек йĕпхĕм-хура куçĕсем пăлханчăк-лăн вылянса пăхаççĕ. Шупкарах мă-кăнь чечекĕ тĕслĕ çӳхе тути хĕрри-сене хĕр çăтах чăмăртаса тытнă.

Конвоирсем куçĕсене хĕр çинчен пĕр самант та вĕçертмеççĕ. Çапах хĕр ăна-кăна туймасть, мăн шыв ур-лă катара-катара, кăвак тĕтре пек сĕмленекен инçетре сапаланса лара-кан ялсемпе саласем çине, ярăмăн-ярăмăн ярăмланса выртакан ешĕл уй-хирсем çине тинкерсе пăхать. Мĕн чухлĕ ытларах тинкерсе пăхнăçемĕн унăн кăкăрĕ хăвăрт-хăвăрт çĕкленет, чĕри хăвăрт-хăвăрт шаккать, пуçра йывăр шухăшсем пăтранаççĕ. Ав ле-ре, çинçе хура хăю пек çеç курăна-кан пĕчĕк ката ярăмĕн леш енче, тайлăк-тейлĕк чăваш ялĕ пулма ти-вĕçлĕ... Çавăнта çуралнă вăл, çавăн-та ӳснĕ, çавăнта хĕр пӳне çитнĕ. Ça-вăнта унăн тăван çĕршывĕ, тусĕ-тан-тăшĕсем. Анчах ăна вĕсенчен хура ăшчиклĕ этемсем вăйпах уйăрчĕç. Тен нихăçан та кураймĕ вăл урăх хăйне çуратса ӳстернĕ çĕршыва, ял-йыша, тăванĕ-хурăнташĕсене...

Хĕр хăй сисмен хутранах вăрăм-мăн сывласа илчĕ. Унăн чунĕ çав тери кӳтсе çитрĕ, чĕрене çурса ту-хакан сасăпала кăшкăрса йĕрсе ярас килчĕ; çурхи чĕкеç пулса, халех, çак самантрах ĕмĕрлĕхех чĕрене кĕрсе вырнаçнă тăван ялне вĕçсе ӳкес килчĕ. Анчах çăра уссийĕсене сикке-лентерсе, ĕне пек мăшлатса ларакан конвоир çине пăхрĕ те вăл, шăлĕсе-не кăна çыртрĕ тата пĕчĕк чышки-сене çилĕллĕн чăмăртарĕ. Конвоир-сене мĕнпе те пулин тарăхтарса вĕ-чĕрхентерес шухăш пырса кĕчĕ ун пуçне. Урăх нимĕн тăвайман енне вăл сасартăк ури çине сиксе тăчĕ те икĕ аллине ĕнси çине хуçлатса хучĕ, ирхи сывлăша пĕтĕм кăкăр туллин сывласа илчĕ, унтан, пĕтĕм кĕрнеклĕ кĕлеткипе йăрст тăсăлса, пуçне мăн-кăмăллăн хыçалалла ывăтрĕ те çинçе уçă сасăпа юрласа ячĕ:

И, çилсем вĕрет, вичкĕн çил вĕрет,
Вăйлă çумăрсем капланса килет...

Хĕр пĕр çавра юрлама та ĕлкĕрей-мерĕ, — конвоирсем, çавăнтах унăн икĕ енне пырса тăрса, хĕçĕсене йĕн-нисенчен яштах туртса кăларчĕç.

— Ну, ну, çаврăнкала. Ут малал-ла! — кăшкăрса пăрахрĕ пĕри.

— Юрамасть сана юрлама! — хă-тăрса илчĕ ăна тепри, çутă шашкине хулпуççи çине тытса. Конвоирсен сă-махĕсем хĕрĕн хăлхине те кĕмерĕç тейĕн, — вăл пуçне татах та мăнкă-мăллăраххăн çĕклесе, малтанхинчен те хытăрах юрлама тытăнчĕ:

Ултавах тĕнчи, йывăр самани
Пирĕн пурнăçа тыткăна илет...

— Молча-ать! — тесе кăшкăрса ячĕ пĕрремĕш конвоир, чĕн пиçиххи çу-мĕнчи кĕске саламат аврине ярса тытса.

— Хушман сана юрлама!

Ку хаяр сăмахсем те хĕре хăнк та тутармарĕç. Вăл вырăнтан та тапранмарĕ, вĕсем çине пуçне те çĕклесе пăхмарĕ, сассине пĕр тат-масăр тата малалла кĕвĕлесе кайрĕ:

Пахчари чечек, сарă-ях çеçке
Кĕрхи сивĕпе шăнса кайрĕ-çке.
Маттурах каччи оарă-ях ачи
Халăх ĕçĕшĕн сая кайрĕ-çке...

Юррӑн ку ҫаврӑмне илтнӗ хыҫҫӑн иккӗмӗш конвоир пушшех темӗне аса илчӗ пулас, куҫхаршийӗсене хӑрушлӑн шӑмарса, пӗтӗм вайӗпе тулхӑрса ячӗ те аллинчи нухайккипе хӗре тӳрех хулпуҫҫи урлӑ туртса ҫапрӗ.

— Молча-а-ать! Пӑлхавҫӑсен юррине юрлама-и-ха тата?! Ут малалла!

Хӗр кӑшт кӑна сикленчӗ. Саламат йӗрӗ касса хӗретнӗ аллине ӗнси ҫинчен илсе тепӗр аллипе пӑчӑртаса тытрӗ, хӑйне асаплантаракана куҫӗнчен ҫав тери сиввӗн пахрӗ, анчах, нимӗн те тӑваяс ҫуккине кура, шалне кӑна тата хытӑрах ҫыртрӗ те, пуҫне усса, хӑвӑрт малалла утса кайрӗ. Конвоирсем каллех унӑн икӗ енне чунлӑ чул юпасем пек пырса тӑчӗҫ.

Нухайкка тивнӗ вырӑнтан чӑртах юн сирпӗнчӗ пулин те, хӗр пӗр сасӑ та кӑлармарӗ, чӑтрӗ. Ҫак шыҫмак этемсене хӑйӗн асапӗсене кӑтартни нимӗнле пулӑшу та парас ҫуккине лайӑх ӑнланчӗ вӑл. Ку этемсен чӗрине куҫҫуль те, ахлату та хускатма пултарас ҫук. Закон ячӗпе вӗсем чӗрӗ ӳте хӗреслӗн-мӗреслӗн ваклама та, чӗрӗ чӗрене тимӗр таканлӑ йывӑр атӑсемпе тусанлӑ ҫул ҫине таптаса хӑварма та пултараҫҫӗ. Вӗсем— патша законӗн хуралҫисем...

Анчах та мӗншӗн, мӗншӗн татрӗҫ-ха вӗсем ҫамрӑк хӗрӗн юррине? Мӗншӗн вӗҫлеме памаҫҫӗ-ха вӗсем таса ҫанталӑкра уҫӑн янтракан кӗвве, хуйхӑ чухне савӑнӑҫ, хур пулнӑ чухне шанчӑк, асап килсе вӑраннӑ чухне тӳсӗмлӗх паракан юрра?

Хӗрӗн пуҫӗнче татӑкӑн-кӗсӗкӗн кӑна пӑтраннӑ шухӑшсем пӗр-пӗринпе пӗрлешсе кайрӗҫ. Вут ҫине ҫакса янӑ хуранти шыв пек вӗреме пуҫларӗҫ вӗсем. Хӗр пӗтӗмпех ҫав вӗри шухӑшсем ӑшне путрӗ. Ун умне иртнӗ кунсен чӗрӗ мӗлкийӗсем шӑвӑна-шӑвӑна тухма пуҫларӗҫ...

II

...Шӑппӑн-шӑппӑн шӑвӑнать ҫуллахи лӑпкӑ каҫ. Шупкалать, сӗмленет, хуралса ҫӑралать, тексӗм пурҫӑн явлӑкпа тӗнчене хупӑрлать, анаслан ҫӗр ҫине тутлӑ ыйӑх сапалать, тӗрлӗрен ялсене ҫупӑрлать, ачашлать, ҫепӗҫ юрӑ юрласа, канӑҫлӑха пепеклет.

Шӑппӑн-шӑппӑн шӑвӑнать ҫуллахи лӑпкӑ каҫ. Бархат пек тӳпере ҫӑлтӑрсем йӑлкӑшаҫҫӗ: вӗлтлетеҫ-мӗлтлетеҫ, пинӗн-пинӗн ҫиҫеҫҫӗ вӗҫӗмрен куҫ хӗссе, пӗр-пӗрне илӗртеҫҫӗ.

Шӑппӑн-шӑппӑн шӑвӑнать ҫуллахи лӑпкӑ каҫ. Йӑпшӑнса-йӑпшӑнса тулли уйӑх тухать, чӳхенет, ҫуталать, тӳпене кармашать, ыйӑха путнӑ ҫӗр ҫине шупка ҫутӑ тӑкать, хӗрсемпе каччӑсен вӑййине хураллать.

Епле чӑтса тӑрӑн ҫакӑн пек каҫсенче хӗрсемпе каччӑсен уявне тухса вӑйӑ-кӗвӗ каламасӑр? Мӗнле хӗрупраҫӗ, мӗнле йӗкӗт килте ларса юлма пултартӑр кун пек илемлӗ вӑхӑтра? Вӗсем пурте уявра, хӑйсен тусӗ-тантӑшӗсемпе пӗрле, вӑйӑ картинче алӑран-алӑ тытса юрӑсем шӑрантараҫҫӗ, ташӑсем ташлаҫҫӗ; хӑйсен чун савнийӗсемпе ӑшӑ-ӑшӑ сӑмахсем калаҫаҫҫӗ, ҫамрӑк чӗрисене савӑнтараҫҫӗ. Выляҫҫӗ, юрлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ ҫамрӑксем канӑҫлӑ вӑхӑтра ӗмӗр-ӗмӗртенех тухнӑ йӑлапа.

Анчах та шӑп вӑйӑ пуҫаруҫи— юрӑ ӑсти Ульяна вӑхӑтра вӑйя тухаймарӗ кӗҫӗр. Уй хӗрринчи тӑйлӑк-тайлӑк пӗчӗк пӳртре амӑшӗпе иккӗшӗ калаҫса лараҫҫӗ вӗсем. Кутник ҫинче Ульянан йӑмӑкӗ тутлӑн ҫывӑрать.

Пӳртре пачӑ, тӗттӗм. Таҫта кӑмака хыҫӗнче шӑрчӑк чӗриклетет. Амӑшӗ шӑрчӑк кӗввине пӗр тапхӑр шӑппӑн итлекелесе ларать те, каллех мӑкӑр-мӑкӑр мӑкӑртатса, малалла тӑсать хӑйӗн татти-сыпписӗр халлапне:

— Эх, ачам, аçу чунне пӳлĕхçĕ упраса усраймарĕ. Аçу пуранна пулсан, эпир те капла пулман пулăттăмăр.. Ак халь камăн вăй çитет — пурте пирĕн çине тăрăнаççĕ. Юлашки анана, аçун ят анине Салакайăк хуторне касса пачĕç. Эх, ачам, епле пурăнăпăр ĕнтĕ...

— Ан кулян, анне. Сывă пулсан, пурăнăпăр епле те пулин. Кĕрĕшсе тырă вырма, утă çулма, авăн çапма çӳрĕпĕр, пăхăсăн — так çаплах ĕçлесе те çынсенчен катăк-пăсăк пулмăпăр, — лăплантарать амăшне Ульяна.

— Эх, хĕрĕм, калама кăна...— татах тутисене чĕтрентерсе мăкăртатать амăшĕ.— Епле пурăнăн вара çын ĕçне ĕçлесе? Çăкăр-тăварĕ, çийĕ-пуçĕ, вутти-шанки, — пурте кирлĕ вĕт пурнăçра. Ак паян та шушчăксем хырçă тӳлемелле тесе килсе пĕлтерчĕç. Ăçтан тупăпăр ĕнтĕ эпир вăл укçана?

Калаçнă май карчăкăн кăкăрĕнчен йывăр хашлатусем татăла-татăла тухаççĕ, пĕркеленчĕк пичĕ тăрăх кĕмĕшке шăрçа пек çутă куççуль тумламĕсем юха-юха анаççĕ. Хăй шавах хыткан пӳрнисемпеле хĕрĕн пуçĕнчен шăла-шăла ачашлать. Салхуллăн итлесе ларать Ульяна амăшĕн хурлăхлă сăмахĕсене. Вăл сисет унăн чĕрине йывăр хуйхă, пурнăç хуйхи канлĕх памасăр шĕкĕлченине, анчах каçхи тĕттĕм витĕр курмасть амăшĕн мĕскĕн куçĕсенчен мĕн тери вĕри куççулĕ юхнине. Хĕрхенет Ульяна ватă амăшне, анчах унăн чуяне лăплантарма ăша сăмахсем тупса калаймасть.

Çак самантра Ульянан алли çине сасартăк пĕр пысăк куççуль тумламĕ татăлса ӳкрĕ. Ульяна шартах сикрĕ, амăшне мăйĕнчен ыталаса илсе, унăн пичĕ çумне сĕртĕнчĕ. Пурнăç нуши йăранлантарнă вĕри питçăмартинчи куççуль тумламĕсем Ульяна чĕрине çурсах ячĕç. Халь вăл хăй ĕнте амăшне çупăрла-çупăрла йăпатма тытăнчĕ.

— Ан йĕр, анне, ан йĕр, пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕп сирĕншĕн. Пĕр кун та выçă лартмăп сире... Ан йĕр, лăплан, анне.

Хĕрĕн ăшă сăмахĕсем кӳтсе çитнĕ чĕрене пушшех те ыраттарса кайрĕç. Карчăк тӳсеймерĕ, вăрттăн куççулĕсене пыгараймасăр сасăпах ӳлесе йĕрсе ячĕ.

— Эх, хĕрĕм! Хăть сана та пулин арçын чунĕ паман-çке турă...

Халĕ ĕнтĕ Ульянан кăмăлĕ хуçăлмаллипех хуçăлчĕ. Арçын пулас çĕртен хĕр пулни ăна темĕнрен те йывăр шăпа пек туйăнчĕ. Таван амăшĕнчен çак ӳпкеве илтнĕ хыççăн, вăл ăна икĕ аллипе те питĕ хытă ыталаса тытрĕ те шариех кăшкăрса макăрса ячĕ.

— Ах, аннеçĕм, аннеçĕм... Мĕншĕн çуратнă-ши мана эсĕ пĕреххут çут тĕнчене? Ах, аннеçĕм, аннеçĕм... Ăçта-ши ку хурлăхлă пурнăçăн пуçламăшĕ, ăçта-ши вĕçĕ?

Хĕрĕн кăмăлне ытлашши хуçас мар тесе шутларĕ пулас карчăк: йĕрме чарăнчĕ.

— Е, çитĕ ĕнтĕ... чарăн. Пурнăçăн ун ни пуçламăшĕ, ни вĕçĕ çук. Тĕнчере хурлăх куракан пĕр эпир çеç мар. Пӳлĕхçĕн ирĕке çапла, ун ирĕкĕнчен никам та иртеймен. Çырни çапла пулнă-тăр пирĕн тĕллĕн.

Ульяна, нумайччен ĕсĕклесе йĕрнĕ хыççăн, тулли куççуллĕ куçĕсене амăшĕ çине çĕклерĕ те çилĕллĕн кăшкăрса ячĕ:

— Çук, анне! Пӳлĕхçĕ никама та пĕр-пĕринчен ни мала, ни кая туман. Пӳлĕхçĕ хушман ĕнте вăрçăра вилнĕ аттен ят çĕрне Салакайăк хуторне касса памашкăн! Турă хушман пирĕн юлашки...

Вăл хăйĕн сăмахне каласа пĕтереймерĕ: шăп çак самантра тахăшĕ вĕ-

сен чӳречинчен пырса шаккарӗ те, тултан хӗрарӑм сасси илтӗнчӗ:

— Ульяна килте-и? Мӗн эсӗ ку вӑхӑтченех пӳртре супса ларатӑн? Сансӑр пуҫне ни вӑйӑ кӗрнекӗ, ни ташӑ ҫаврӑнӑҫӗ килмест пирӗн, Атя хӑвӑртрах!

— Е, ҫитӗ ӗнтӗ... Ав вӑйя чӗнме килчӗҫ, пуҫтарӑн тата.

Ульяна шывлӑ куҫӗсене кӗпи аркипе шӑлса типӗтрӗ те, сапаланчӑк ҫӳҫ-пуҫне майлакаласа, урама тухрӗ.

Вӑйӑ картине ҫитсессӗнех ӑна хӗр-тантӑшӗсемпе йӗкӗтсем сырса илчӗҫ.

— Акӑ Ульяна та ҫитрӗ!

— Эпир пур, сансӑр пуҫне пӗр путлӗ юрӑ та пуҫлаймастпӑр вӗт ӗнтӗ.

— Кил, Ульяна, хам пата. Ан тӑр сарӑн атӑллӑ йӗкӗт ҫумне, темӗн курӑн!

— Пуян йыттин хӳри кукӑр, теҫҫӗ.

— Ха-ха-ха! Хи-хи-хи!

Маттур йӗкӗтсемпе хӗр-тантӑшӗсен хавaслӑ вӑййи-кулли Ульяван кӑмӑлне самаях уҫӑлтарса ячӗ. Вӑл хӑйсен кӳршинчи икӗ хӗр хушшине кӗрсе тӑчӗ те уҫӑ та янравлӑ сассипеле юрӑ пуҫарчӗ:

Хурӑн варта хур пусрӑм та,
Хурӑн варта хур пусрӑм, —
Вӑрӑ тесе ан калӑр.
Вӑй пуҫласа вӑй калап та,
Вӑй пуҫласа вӑй калап, —
Шухӑ тесе ан калӑр...

Пӗтӗм каҫхи шӑплӑха хумхантарса, тӳлеккӗн-тӳлеккӗн тӗлӗрекен лӑпкӑ ялӑн ыйхине хускатса, Анаткасран тӑва ҫитиччевех пин-пин саслӑн янраса кайрӗ хӗрсемпеле каччӑсен юрри. Вӑйӑ карти ҫаврӑннӑ май, Ульяна ҫӗнӗрен ҫӗнӗ кӗвӗсем пуҫарать, ыттисем пурте, сассисене пӗрпеке килтерсе, ун хыҫҫӑн харӑс-харӑс кӗвӗлесе пыраҫҫӗ. Виҫ-тӑват ҫавра юрланӑ хыҫҫӑн Ульянан кӑмӑлӗ пӗтӗмпех лӑпланчӗ. Вӑл халӗ, мӗнпур хуйхисуйхине манса, пӗтӗм чунӗ-чӗрипе уяв савӑнӑҫӗ ӑшне путса ҫухалчӗ.

Хура шӑрҫа хушшине те
Йӗпкӗн мерчен ан тирӗр;
Пуян хӗрӗ теейсе те
Пуҫа ывӑтса ӑн тӑрӑр,
Чухӑн хӗрӗ теейсе те
Пуҫа усса ан тӑрӑр...

Шавлать, кӗрлет ҫамрӑксен уявӗ. Анатран пуҫласа тӑвалла, туран пуҫласа анаталла ылмашӑн-ылмашӑн калле-малле хумханса тӑраҫҫӗ хитререн те хитре юрӑсемпе кӗвӗсем.

И, ту чипер, ту чипер те
Ту айӑкки ҫул чипер:
Сӗрсе ҫиме пыл чипер те
Пуҫса ҫиме ҫу чипер:
Вылямашкӑн, кулмашкӑн та
Кӑвак куҫлӑ хӗр чипер.

Шавлать, кӗрлет ҫамрӑксен уявӗ. Шухӑ чуна ҫӗклентерсе, ҫемҫе кӑмӑла вылянтарса янӑраҫҫӗ уяв юррисем. Турикас ҫамрӑкӗсем те пӗр-пӗринпе ӑмӑртмаллах вӑйӑ калаҫҫӗ иккен. Вӗсен вӑййи — тури укӑлчан леш енче, Салакайӑк хуторӗпе ял хушшинчи ҫеремлӗхре. Каҫхи лӑпкӑ сывлӑшра вӗсен юррин кашни сӑмахӗ уҫҫӑнах янраса килет ялӑн вӗҫнелле. Акӑ пӗр ҫамрӑк арҫын сасси халиччен илтмен юрӑ тӑсса ячӗ:

Хрансуски кӗпе, пурҫӑн читтӗк —
Курсан курӑп пуянсем ҫийӗнче.
Юсӑнӑп-юсӑвмӑп тесе ан калӑр,
Юсӑнтарать иккен ҫут тӗнче...

Ульяна юрӑ пуҫараканӑн сассине ҫавӑнтах уйӑрса илчӗ: Ваҫҫук, терӗ хӑй ӑшӗнче. Анчах та вӑл мӗншӗн кӗҫӗрхи каҫ кун пек салхуллӑ юрӑ юрлать-ха? Элле пурнӑҫ ҫине мӗнле те пулин ӳпкев пур-и ун чӗринче?

Ульяна сывлама чарӑнсах итлеме пуҫларӗ. Юррӑн малтанхи ҫаврӑмне лайӑхах ӑнланса юлчӗ вӑл, анчах малалли сӑввисене, пӗтӗм ушкӑнӗпех юрлама тытӑннӑ пирки, аванах уйӑрса илеймерӗ. Пӗлмен юррӑн малалли

сăмахĕсем ăна питĕ хумхантарса ячĕç. Юхса пыракан вăйă картине картах татрĕ те мала тухса тăчĕ.

— Итлĕр-ха, тантăшсем, мĕн эпир кĕçĕр пĕр вырăнтан хăпма пĕлместпĕр? Ав Турикасри çамрăксем çĕнĕрен-çĕнĕ кĕвĕсем калаççĕ. Айтăр вĕсен уявне кайса курар.

Ульяна сăмахне пурте хапăл турĕç. Вĕсем çавăнтах ретĕн-ретĕн карталанчĕç те, лăпкă урама янăратса, тăвалла улăхса кайрĕç.

Ĕнтĕ чĕкеç вĕçет,
Чĕкеç вĕçет,—
Юхăм шывăн çулне пӳлеймест.
Ĕнтĕ савни кĕтет,
Савни кĕтет, —
Сарă хĕре кĕтсе илеймест.

Пĕр самантрах Турикаспа Анаткас çамрăкĕсем пĕрлешсе те кайрĕç. Халĕ ĕнтĕ вăйă карти темĕн пысăкăш пулса тăчĕ. Кĕввисем те малтанхинчен темиçе хут хаваслăрах, янравлăрах шăранма пуçларĕç.

Ульяна, ăна кăна пăхмасăрах, нимĕнрен малтан куçĕпеле Ваççука шыраса тупрĕ. Унăн илемлĕ пичĕ çине шупка уйăх çути ӳкнĕ те темĕнле çемçе салхулăхпа çутатса тăрать. Ульянан ăна ăшă сăмах каласа йăпатасси килчĕ, анчах вăйă ретне пăсса урăх вырăна куçса тăма аван мар пек туйăнчĕ. Çавăнпа та вăл меллĕ самантчен хăй вырăнĕнчен хускалма шутламарĕ...

Мĕн çурçĕрччен шавларĕ икĕ кас çамрăкĕсен вăййи-кулли. Çурçĕр иртсен çанталăк сулхăнлатрĕ. Тӳлеккĕн кăна чӳхенсе выртнă тӳпе тăрăх татăк-кĕсĕк лĕмсĕркке пĕлĕтсем шăвăнма пуçларĕç. Юмахри сĕтлĕ кӳлĕре ишсе çӳрекен ылттăн кăвакал евĕр уйăха тапхăрăн-тапхăрăн пĕлĕтсем хупласа хураççĕ. Ун пек чух çав ылттăн кăвакал шыва чăма-чăма кĕрсе кайнăн туйăнать. Вара каçхи асамлăха путнă çĕр çийĕпе сĕм аваллăхăн масарĕнчен тухнă улăпсем майлă хура мĕлкесем шăва-шăва иртеççĕ.

Çамрăксене килĕсене саланма вăхăт çитрĕ. Хуткупăс сасси шăпланчĕ, вăйă карти кĕтмен çĕртенех арканса кайрĕ. Ульянапа хăйсен кӳршĕ хĕрĕ, Санюк, алăран ала тытрĕç те, ял хушшине илсе тухакан тăкăрлăка пырса кĕчĕç. Анчах, вун-вунилĕк утăм кайсанах, Ульяна темшĕн чарăнчĕ:

— Чим-ха, Санюк, кăшт тăхтар.

— Элле кама та пулин кĕтетĕн-и эсĕ? — ыйтрĕ лешĕ нимĕн те ăнланаймасăр.

— Ав хыçалтан ура сассисем илтĕнеççĕ. Хамăр кас хĕрĕсем мар-ши? тетĕп, — тавăрчĕ Ульяна. Хăй ăшĕнче урăхларах шутларĕ: „Мĕншĕн ăсатса яма кăмăл тумарĕ-ха вăл?“.

Ура сассисем чăнах та çывăхрах илтĕнме пуçларĕç. Ульяна, хăйне ăсатма Ваççук килет пуль тесе, хумхансах кĕтме тытăнчĕ. Хыçран килекенсем часах вĕсене хăваласа та çитрĕç.

— Мĕн иксĕр кăна сĕмленсе тăратăр, сар хĕрсем? Ай, хăвăра валли теветкел йĕкĕт тупаймарăр-и? Апла пулсан, хамăр питĕ лайăх ăсатăпăр,— шавласа калаçма пуçларĕ хутор хуçи ывăлĕ Элеçук, Ульянасемпе танашнă-танашманах.

— Куçу курать пулĕ те, шăлу витеймĕ çав, — витлесе илчĕ ăна Ульяна.

— Мăйăра катса пăхмасăр шăл витнипе витменнине пĕлме çук. Ăçта-ха, хулăнтан ункăлам эппин, — терĕ те Ульяна хулĕнчен пырса уртăнчĕ Элеçук. Ульяна ăна пĕрех аяккалла тĕртсе ячĕ.

— Сăпсаланса ан çӳре! Хурчăкапа акăш нихăçан та пĕрле вĕçмеççĕ.

— Питĕ çӳлтен вĕçетĕн-çке эс, Ульяна. Анчах епле турат çине пырса ларăн-ха, — кăмăлсăрланчĕ Элеçук.

— Сирĕн хуторăр хӳми урлă вĕç-

се касса ларас çук çав ĕнтĕ, — касса татрĕ ăна Ульяна, хăвăрт малалла утма тытăнса.

— Вăйпа тытса лартас пулсан мĕн тăвăн? — шăртлаима пуçларĕ Элеçук, Ульянапа Санюкран пĕр пусăм та юлмасăр. — Ăмăрткайăк епле çӳлте вĕçет те, пурĕпĕр сунарçăсем унăн çунаттине персе хуçаççĕ.

— Сан пеккисем мар çав вĕсем. Санăн халь аннӳ сĕчĕ те типсе çитмен-ха туту çинчен, мĕн калаçасси пур, — питлесе хучĕ ăна Ульяна, сăмахран пĕртте такăнмансктер.

Ахальрен пулсан Элеçук тен хăех те урăх çыпçăнман пулĕччĕ-и ун çумне, анчах çак мăшкăллă сăмаха илтнĕ хыççăн унăн çилли çавраçил пек çĕкленчĕ те, вăл Ульянана çавăнтах, кашкăр хăраххи, пилĕкĕнчен ярса тытса, хулпуççийĕ çине çавăрса хучĕ. Унтан, вартах каялла çаврăнса, пĕррех такăрлăк пусĕнчи тип çырма еннелле танса сикрĕ.

— Хура-ах! Çăлăрах-а-ах! — кăшкăрса ячĕ Ульяна чĕрене çурса тухакан сасăпала. Санюк, юлташне çăлма тесе, вĕсен хыçĕнчен чупма пикенчĕ, анчах та ăна тепĕр тĕреклĕ арçын хăрах аллипеле хулĕнчен пăчăртаса тытрĕ, тепĕр аллипеле çăварне хупласа хучĕ.

— Хура-ах!... Çăлăра-аах!.. — илтĕнчĕ тепĕр хут вăйсăр сасă тĕттĕм тип çырма хутлăхĕнчен. Унччен те пулмарĕ, çав мĕскĕн сасă илтĕннĕ еннелле вичкĕн юртăллă этем мĕлки ыткăнса иртсе кайни курăнчĕ. Çав самантрах тип çырма тăрăх шаплатса чупакан ура сассисем шăпланчĕç те тачка ӳт çине сулмаклă чышкă ик-виç хутчен нăчлатса çапăнни илтĕнчĕ.

— Ак сана, выçă кашкăра! Ак сана, выçă кашкăра!

Элеçук юлташĕ кунта мĕн пулса иртнине пĕр шухăшласа тăмасăрах туйрĕ. Вăл, хăйĕн аллинчи хĕре вĕçерсе ярса, тусне пулăшма чупрĕ.

Пĕччен тăрса юлнă хыççăн Санюк малтанах нимĕн тума та аптăрарĕ, унтан, тип çырма тĕпĕнче сасăсем çуйăхашма тытăнсан, вăл та, хашкаса, унта чупса çитрĕ те çакна курчĕ: Элеçукпа юлташĕ тапчан кĕлеткеллĕ маттур йĕкĕте иккĕн икĕ енчен çавăрса илнĕ те çĕре персе ӳкересшĕн тĕрмешеççĕ; Ульяна, çӳçнепуçне сапалантарса янăскер, нимĕн тума пĕлмесĕр вĕсем тавра кускаласа çӳрет. Çывăхарах пырсан, Санюк леш маттур йĕкĕт кам иккенне те уйăрса илчĕ: вăл Ваççук иккен.

— Мĕн пăхса тăратăн, Ульяна? Пар чулпала пуçĕсенчен! — кăшкăрса ячĕ Санюк, хăйĕн юлташне хулĕнчен тытса лăкаса. Ульяна çавăнтах мĕн тумаллине тавçăрнă пек пулчĕ те, Элеçука çӳçĕнчен ярса тытса, каялла сĕтĕрме пуçларĕ. Çав вăхăтрах Ваççук, пĕррех вăртлатса çаврăнса, имшеркке йĕкĕтсене иккĕшне те таçта çитиех ывтăнтарса ячĕ.

— Ан çнхланăр, сĕлĕхсем! Иксĕрĕнне те пуç мимисене нимĕрлентерсе хăварăп! — терĕ вăл хаяррăн, пысăк тукмак пек чышкисемпе юнаса. Элеçукпа юлташĕ, ку теветкел каччă хăйсен вăйĕсемпех çĕнес çуккине кура, айăк пĕрчийĕсем сывă пек чухне, ним чĕнеймесĕрех аяккалла шăвăнчĕç.

— Ан мухтан, Ваççук, вăюпала. Хăçан та пулсан пурĕпĕр лекĕн пирĕн серепене! — илтĕнсе юлчĕ вĕсем хыçĕнчен вĕчĕллĕ сасă. Вăл сасă Ваççукăн хăлхине кĕмерĕ.

Ваççук Ульянапа унăн тантăшне килне çитиччен ăсатса яма килĕшрĕ.

— Чип-чиперех сĕтĕрсе каятчĕ вĕт, Ульяна, сана арлан хăй шăтăкне? — терĕ вăл, кăштах кулан пекки туса.

— Вăл усала пурĕпĕр чĕррĕн парăнмастăм. Халĕ те питне-куçне чĕпчĕр юн пуличченех тăрмаласа пĕтертĕм. Пайтахчен шутлас çук ĕнтĕ

текех ман çумма çыпçăнма, — терĕ Ульяна, Васçук кусĕнчен кăмăллăн пăхса.

— Эх, тантăшăм, ун пек ан кала: пуян йыттин хӳри кукăр, теççĕ, ăна пĕртте шанма каламан. Пуян ывăлне те нихçан та ан шан, — асăрхаттарчĕ Ульянана юлташĕ.

— Тĕрĕс, Санюк. Хура ăшчиклĕ этемĕн чĕри — пăрçа хутаççи мар: ăна пĕр тытса, пĕр уçса пăхаймăн. Тен вăл ирсĕрĕн кăкринче тавăру вĕччипе пăчăртатса йӳçекен çилĕ ыранах çиеле тапса тухĕ. Асăрханарах çӳрĕр, — çирĕплетрĕ Ваççук Санюкăн сăмахне.

Ваççукпа Ульяна Санюка килне кĕртсе хăварчĕç те, хăйсем Ульянасен тĕлĕнчи тăлăх хурăн айне, пĕрене купи çине, пырса ларчĕç. Пĕр самант хушши вĕсем пĕрне-пĕри нимĕн сăмах та тупса калаймарĕç, кашни харпăр-хăй ăшĕнчи шухăшĕсене кăна вылянтарса, хумхантарса ларчĕç. Ластăкăн-ластăкăн иртекен пĕлĕт хушăкĕсенчен тулли уйăх чăма-чăма тухать, Ульянапа Ваççук çине хутран-ситрен шупкарах çутă сапалать. Уйăх çути ӳксен Ваççукпа Ульяна пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхма иментĕ пек пулаççĕ, анчах уйăха тĕксĕм пĕлĕт хупăрласан, каллех вĕсен куçĕсем пĕр-пĕрин патнелле туртăнаççĕ.

Ваççук хăйĕн чĕри мĕншĕн ачашшăн хĕсе-хĕсе килнине те, кăкăрĕ мĕншĕн хăвăрт-хăвăрт çĕкленнине те ăнланма пултараймасть. Çакна çеç туять вăл: питех те аван иккен Ульянапа юнашар ларнă чух, унăн çемçе те ăшă аллисене чăмăртанă чух, чĕре çапла хĕсе-хĕсе килнине, кăкăр çапла хăвăрт-хăвăрт çĕкленнине туйса тăмашкăн. Ульянана татах та çывăхрах туясси килсе кайрĕ. Вăл Ульянана ыталарĕ те хăй çумне чăмăртарĕ...

Ульяна Ваççукăн аллине хăй çинчен сирсе ячĕ.

— Çук... Ан тив, Ваççук, — терĕ вăл.

— Ан хăра, Ульяна. Эпĕ сана тивес çук... — терĕ ăна шăппăн Ваççук.

Унтан вĕсем тепĕр самант хушши каллех пĕрне-пĕри сăмах хушма хăймасăр, каçхи шăплăха тӳлеккĕн итлесе ларчĕç. Анчах Ульянана капла ларни аван мар пек туйăнчĕ. Тусне тунсăхлаттарас мар тесе, вăл ăнсăртран татăлнă калаçăва татах хускатса ячĕ:

— Итле-ха, Ваççук, эсĕ пасăр вăйă картинче темĕнле çĕнĕ юрă юрланăччĕ, камран илтнĕ эс ăна?

— Ăна-и? Ăна мана ача чухнех асатте юрласа панăччĕ. Тахçан ĕлĕк, утмăл-çитмĕл çул ĕлĕкрех, пĕр пуç янă çын юрланă тет ăна. — ответлерĕ Ваççук шăппăн.

Ульяна вăрăммăн сывласа илчĕ те Ваççук çумнелле тайăлчĕ. Ерипен утрĕç вĕсем малалла.

## III

Юрату — уяр çанталăкра вăштăртатакан ăшă çил евĕрлĕ: пĕлейместĕн хăш енчен вĕçсе килнине те. Анчах та уяр çанталăкри çав ачаш çил лăпкăн-лăпкăн вĕрет, ăшшăнăшшăн варкăшать, çулçăсене çупăрлать, чечексене хумхатать. Лăпкă çилпеле хумханакан чечексем пекех хумханма пуçларĕ Ульянан чĕри те Ваççукпала каçхине пĕрене куписем çинче çумма-çуммăн ларса ирттернĕ хыççăн. Темĕн çитмест пек, темскершĕн ăшчик çуннă пек ун паян. Темшĕн хăй çине ӳпкелешес килнĕ пек туйăнать тата...

— Эсĕ, аппа, мĕншĕн паян пит салху? — сасартăк ыйтрĕ унран пĕчĕк йăмăкĕ, шухăш çăмхийĕ таттисыпписĕр чăлханнă самантра.

— Çук-çке... — тавăрчĕ ăна хирĕç Ульяна. Хăйĕн пичĕ çавăнтах хĕрел-

се кайрĕ. Йăмăкĕ ăнсăртран панă ыйту пушшех пăлхантарнă пек пулчĕ пĕве çитнĕ хĕрĕн чĕрине, пушшех темĕнле вĕрирех сисĕмлĕхсем выляни çинчен туйтарнă пек пулчĕ. Анчах та вăл çак сисĕмлĕхсене пайăркаласа тĕпчесе, ăшчике варкăштаракан тупсăма тупма пултараймарĕ. Ун çинчен шухăшласа аппаланма вăхăчĕ те пулмарĕ унăн: халь кăна пурçăн çип илсе, пĕчĕк чӳрече умне тĕрĕ тума ларнăччĕ — çавăнтах теçетник пырса шаккаса, ял пуххине пымалли çинчен пĕлтерсе хăварчĕ. Ульяна пахчана чупса тухрĕ.

— Анне, пухха кайма килсе чĕнчĕç, — терĕ вăл улма йăранĕсем хушшинче çум çумласа тăракан амăшне.

— Эпĕ вараланчăк питĕм-куçăмпа ăçта тухам? Пыр, хăвах кайса итле эппин, — терĕ ăна амăшĕ. Вара ялта çара пуçăн çӳрекен Ульяна çара уранах хурал пӳрчĕ патне тухса утрĕ.

Ял варринчи пĕчĕк хурал пӳрчĕ умне хуллен-хуллен халăх пуханать. Пурте тенĕ пекех арçынсем, камăн килте пĕр арçын чунĕ те çуккисен кăна хĕрарăмсем пынă. Ульяна унăнкунăн пăхкаласа илчĕ те хăйне тантăш хĕр ача курмарĕ. Вара, хĕр пуççăнах ваттисен куçĕ умĕнче пулас мар тесе, хурал пӳрчĕ умĕнчи ватă йăмра çумне пытанарах тăчĕ.

Халăх майĕ-майĕпелен пухăнса çитрĕ. Таçтан, çынсем хушшинчен, пустав халатлă, кăкри çине пысăк çаврака çутă медаль çакса янă, хулăм кĕлеткеллĕ старшина, ун хыçĕнчен — çут тӳмеллĕ мундир тăхăннă стражник тата качака сухаллă, лутака мăнтăр староста малалла хĕсĕнсе тухрĕç. Вĕсем тӳрех сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç. Старшини, кĕреçе пек сарлака хура сухалне шăлкаларĕ те, сăмса витĕр темĕн мăкăртатса, староста еннелле аллине сĕлтрĕ.

— Ну, ял-йышсем! Сире çак хыпара пĕлтерме пуçтартăмăр: камăн куланай-хырăç укçисем тӳлесе татман — паян юлашки срок. Акă вулăсран килчĕç пирĕн пата куланайшăн. Паян татмасан, заклад йăтмалла пулать. Ăнлантăр-и? — терĕ староста мăнкăмăллăн.

Пуху халăхĕ кăшт хумханса илчĕ, çапах та çăвар уçса пĕр сăмах калани те илтĕнмерĕ.

— Тӳлемесен, заклад йăтатпăр. Ăнлантăр-и, тетĕп эпĕ сире? — терĕ староста тепĕр хут, халăха кушак куçĕсемпе пăхса çавăнса.

— Ара, çаплах ĕнтĕ вăл... Раз закон хушать-тĕк, нимĕн те тăваймăн, тӳлесех пулать, — илтĕнчĕ кăштах тăнă хыççăн хыçалтан пĕр урмăш саса.

— Камăн пуррисем тӳлеччĕр. Пиртен нимĕн те илме çук! — хупласа хучĕ ăна пĕр çамрăк йĕкĕт сасси. Ульяна çав сасă илтĕннĕ еннелле çавăнса пăхрĕ те Турикасри çамрăксем хушшинче куçĕсене йăлкăштарса Ваççук тăнине курчĕ.

— Кам сӳсленки лĕкĕртетет унта? Тух малалла! — кăшкăрса тăкрĕ староста, сассине хăпартса. Ваççука хăйĕн юлташĕсем малта тăракан çынсен куçĕнчен хӳме пек картласа хучĕç.

— Кам калаçать, тух! — кăшкăрчĕ староста тата тепĕр хут.

Пуху шавлама тытăнчĕ. Малта тăракан куштансем, кăркка аçисем евĕр хĕремесленсе кайса, кăшкăрма пуçларĕç.

— Кĕлмĕçсемшĕн ял халăхĕ виноват мар!

— Эпир тахçанах татнă хамăр парăмсене!

— Вĕреннĕ вĕсем ял çинче йытăлла, янтă пурнăçпа пурăнмашкăн.

Халăха шавлама чарас тесе, староста мĕнпур вăйпала йывăр чышкипе сĕтел çине çапрĕ. Умра выртакан симĕс папкă темиçе хутчен çӳлелле

сиксе илчӗ. Старшина яштах ура ҫине сиксе тӑчӗ.

— Молча-ать! Молча-ать! — вӑкӑр пек мӗкӗрсе ячӗ вӑл, чышкипеле сывлӑшра хӑмсаркаласа.

— В чем дело? В чем дело?—нимӗн ӑнланаймасӑр сӳсленчӗк уссине вылянтарма пуҫларӗ стражник.

Староста, халӑха кӑшкӑрса лӑплантарма ҫуккине кура, симӗс папкине ҫӳлелле тытса силлерӗ, унтан ун ашӗнчен пӗр хут листи туртса кӑларчӗ.

— Шӑпланӑр! Шӑпланӑр! Ак хамӑр вуласа парӑпӑр камӑн-камӑн мӗн чул юлнине... Ӑнлантӑр-и?—терӗ вӑл, хут листине старшинана тыттарса.

Ку меслет халӑх шӑв-шавне хаяр кӑшкӑрнинчен те, чышкӑпа юнанинчен те хӑвӑртрах чарса лартрӗ. Пурте шӑп пулчӗҫ.

— Вула,—терӗ старшина, аллинчи хутне хӑйпе юнашар тухса тӑма ӗлкӗрнӗ писаре тыттарса. Хуратут пусса илнӗ типшӗм пит-куҫлӑ писарь, куҫлӑхне сӑмси вӗҫӗ ҫине утлантарса лартрӗ те, хӗрарӑмӑнни пек ҫинҫе сасӑпа вулама пуҫларӗ:

— Курпун Левентейӗн виҫ манит* те вӑтӑр ҫичӗ пус...

— Тимӗрҫӗ Ванькийӗн икӗ манит...

— Сӑвӑр Куҫмийӗн манит та хӗрӗх пус.

— Ваҫли салтак маткийӗн икӗ манит те ҫитмӗл икӗ пус.

— Алсатуль Эрхипӗн, ӗм... ӗм... виҫӗ манит...

„Ваҫли салтак маткийӗ“ тенине илтсен Ульяна чӗри кӑлтах турӗ, анчах вӑл хӑй тӑнӑ вырӑнтан нимсталла та хускалмарӗ. Ҫав самантрах питӗ хулӑм сасӑ хаяррӑн ҫӗкленсе тухрӗ:

— Суятӑн! Виҫӗм кун кӑна манит килсе хывайрӑм. Сирӗн тӗпсӗр кӗсйӗре тултараймӑн.

* *Манит* —тенкӗ.

— Ман ҫинче те икӗ манит пулма тивӗҫ мар. Хайсен кӗсйине чикеҫҫӗ вӗсем!—илтӗнчӗ тата тепӗр сасӑ.

Ульяна каллех ҫаврӑнса пӑхрӗ те, Ваҫҫук аллине сула-сула юлташӗсене темӗн ӑнлантарса танине асӑрхарӗ.

— Э-э... тю-тю тюты!.. Тӳле-ха малтан укҫуна,—шӑлне йӗрсе илчӗ писарь, ҫип кантраллӑ куҫлӑхне ҫамки ҫине улӑхтарса лартнӑ хыҫҫӑн халӑх ҫине пӑхса.

— Кам унта халӑха пӑтрататать? Тух кунта!—кӑшкӑрса пӑрахрӗ хаяррӑн старшина.

Халӑх тата тепӗр хут, тӑвӑлпа хумханакан тинӗс пек, хумханса кайрӗ. Вӑйлӑ хумсене ҫурса, мала Ваҫҫук тухса тӑчӗ. Ульянан чӗри серепене лекнӗ пек тапӑлтатма пуҫларӗ.

— Эпӗ! Анчах эпӗ мар халӑха пӑтрататаканни,—эсир!—терӗ Ваҫҫук, пуҫне мӑнкӑмӑллӑн тытса. Мӗн тӑвас тетӗр манпала, тӑвӑр, эпӗ сирӗн умӑрта.

Старшина стражник ҫине пӑхса куҫ хӗсрӗ. Лешӗ ҫавӑнтах чӗн пиҫиххи ҫумӗнчи нухайккине вӗҫертсе илчӗ те, нимӗн сӑмах каламасӑрах, Ваҫҫука пуҫ урлӑ туртрӗ:

— А-а, бунтовать!

— Ай...—илтӗнчӗ хыҫалтан хӗрарӑм сасси. Ваҫҫук куҫхаршине те сиклентермерӗ. Вӑл стражник умне тата ҫывӑхарах пырса тӑчӗ те килте тӗртсе тунӑ кӗпе ҫухавине туртса татса ячӗ.

— Ҫап! Татах ҫап! Нухайккупа хӑвна кӑна ан тиврет...

Стражник татах та аллине ҫӳлелле ҫӗклерӗ, анчах шӑп ҫак самантра Вуҫҫук пӗррех кушакла ун ҫине сиксе ӳкрӗ те икӗ аллипе те ӑна пырӗнчен ярса тытрӗ...

Кӗтмен-туман ҫӗртен сиксе тухать ҫавраҫил. Сиксе тухать те хӑйӗн ҫулӗ ҫинчи тусана, ҫӳп-ҫапсене айӗнҫийӗн ҫавӑрттарать. Ҫавӑн майлӑ ҫавраҫил килсе хускатнӑ пекех пӑл-

ханса кайрĕ пуху халăхĕ те. Малти ретре тăракан çынсем siксе ларчĕç никамран малтан Ваççук çине. Ăна хăйсен ури айне тĕркелесе чиксе, таптама, лăскама, тӳме тытăнчĕç. Анчах ку пĕр самантра та пыраймарĕ: çавăнтах хыçалта тăракан маттур йĕкĕтсемпе çилĕллĕ стариксем, малти халăха кĕпĕрлентерсе кăларса, хăйсем тӳпелешĕве хутшăнса кайрĕç. Ĕç чĕрре кĕнине кура, старшинапа писарь, хучĕсене пăрахса хăварса, таçталла тарса çухалчĕç. Староста та вĕсем хыçĕнченех шăвăнчĕ. Пĕр стражник кăна, нимĕн тума пĕлмен енне, çутă хĕçне хăй пуçĕ тавра вылянтарса çуйăхашать:

— В чем дело? В чем дело?

Хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ пуянсемпе чухăнсем хушшинче.

Çапăçура каçару ан кĕт.

Камăн аллине мĕн лекет, çавăнпа иле-иле çапаççĕ пĕрне-пĕри урса кайнă çынсем. Нăч та нăч çапăнаççĕ чышкăсем, чăрт та чăрт çурăлаççĕ кĕпесем, чăл та пар вĕçеççĕ тăрмаланчăк çӳçсемпе сухалсем,—калăн хур тĕкĕнчен тунă минтер пичĕсене улăштараççĕ, тесе. Темĕнччен тӳпелешнĕ хыççăн хыçалти маттур йĕкĕтсен ушкăнĕ çиеле тухрĕ. Малта тăнă карма-çăварсемпе куштансем пĕрерĕн-пĕрерĕнех ăçта куç курнă унталла тара-тара пĕтрĕç. Вара хĕрсе кайнă йĕкĕтсемпе урса кайнă стариксем йĕпе йытă пек ислентернĕ стражникĕн хĕçне татăкăн-татăкăн хуçкаласа пĕтерчĕç те, хăйне, кĕрт йыттине ĕрлентернĕ пек пĕсĕрлентерсе, ялтан хăваласа кăларса ячĕç.

Шăлт юнланса, суранласа пĕтнĕ Ваççука юлташĕсем килне леçсе пăрахрĕç.

* * *

Каç сĕмĕ вăрăм мар. Çапах та çуллахи сĕмсĕр каç куçне-пуçне уçиччен темĕн тума та вăхăт пур, темĕнле хăрушă кавара та амалантарма шанчăк пур.

Ял çине хура тăхлан пек йывăр пĕлĕтсем капланса тулчĕç. Таçта-таçта инçетре аслати кĕмсĕртетет.

Çанталăка тĕксĕм çĕрĕн хура явлăкĕ хупăрласанах, ялтан пĕр этем мĕлки хирелле тухрĕ те Салакайăк хуторĕ еннелле васкарĕ. Вун-вунпилĕк минутранах хутор чӳречине тăкăртаттарни илтĕнчĕ.

— Кам унта?

— Эпĕ... Элеçук килте-и?

— Мĕтри, эсĕ-и ку?

— Тух-ха хăвăртрах.

Пӳрт алăкĕ чĕриклетсе сасă пачĕ. Унтан Элеçук калинкке алăкне шăлтлаттарса уçрĕ.

— Мĕн эсĕ, кашкăр хăраххи, каçхине çӳретĕн çак?—ыйтрĕ хутор хуçи ывăлĕ, хăйĕн ăшă ыйхине татнипе кăмăлсăрланнă сасăпа.—Мĕн пулнă?

— Кунта мар, шалта калаçăпăр.

— Ну, кĕр эппин.

Вĕсем хыçалти пӳрте кĕрсе, лампă çутмасăрах, çумма-çуммăн ларчĕç.

— Пĕлетĕн-и, Элеçук, хайхи Ваççук лекрĕ пирĕн серепене. Стражник çине малтан Ваççук алă çĕкленĕ. Вăл пăлхатнă халăха. Халех лаша çине утлан та—вĕçтер вулăса. Ульянан йĕвенĕ те санăн аллунта пулĕ вара...

Автансем шарлаттарса авăтнă вăхăтра тусанлă çул çинче вичкĕн урхамах ури сассисем илтĕнсе юлчĕç.

Каç сĕмĕ вăрăм мар. Çапах та темĕн тума та вăхăт пур çуллахи сĕмсĕр каç куçне-пуçне уçиччен.

## IV

„Юратнă тантăшăм!

Чĕрем хĕрӳ вутри пек çуннă вăхăтра манăн кăмăлăма пусарас çын пĕр эсĕ кăна, çавăнпа та эпĕ никам патне те мар, сан патна çыратăп. Мана кăвар пек вĕри хуйхă çине тăратса хăварчĕç... Пĕрне-пĕри ĕмĕр манмасла сăмах панă хыççăн, Ваççука манран

уйăрчĕç. Уйăрчĕç, тантăшăм, хĕрхенмерĕç. Халăх ĕçĕшĕн, чухăнсене хўтĕлесшĕн пулнăшăн ăна, икĕ аллине хыçалалла çыхса, вăрра намăслантарнă пек намăслантарса, илсе тухса кайрĕç. Пĕтĕм ял халăхĕпе ăсатса ятăмăр эпир ăна...

Ах, пуçăм, пуçăм! Ăçта кайса чикем-ши эпĕ хамăн пуçăма, тантăшăм?..“

Ульяна çырма чарăнчĕ, йывăррăн сывласа илчĕ. Мĕн çырнине вуласа тухрĕ, пĕр самант хушши куçне ниçталла вылянтармасăр пăхса ларчĕ.

— Мĕн тума çыратăп-ха эпĕ ку сăмахсене!—тĕлĕнсе хăйĕнчен хăй ыйтрĕ вăл ларсан-ларсан.—Кам патне? Кам манăн тантăшăм? Вăл çук, ăна, хурчăка килсе чăх чĕппине тытса кайнă пек, тытса кайрĕç. Эпĕ пĕччен, тăр-пĕччен тĕнчере...

Çапах та çавăнтах астурĕ вăл ку çырăва кам патне тата мĕн сăлтавпа çырма тытăннине. Астурĕ, аса илчĕ. Çаплах, çаплах... Хĕр тантăшĕ пур вĕт унăн, Санюк пур. Иртнĕ эрнере хăйĕн тетĕшĕсемпе пĕрле сулă юхтарма кайнăччĕ. Ăçта халь вăл? Мĕншĕн килмест Ульянан хуйхине пусарма, Ульянан чĕрине лăплантарма?

Паян сулă çине кўршĕ ялсем каяççĕ, терĕç. Çавăнпа та хăйĕн хуйхине, мерчен куççуль тумламĕсем витĕр юхтарса, шурă хут çине тĕрлет иккен вĕри чĕрелле Ульяна. Анчах ăçтан каласа парăн хăвăн пуçăнти хурлăхлă вĕçĕмсĕр шухăшусене чунсăр та чĕлхесĕр хут татăкĕ урлă?

Ульяна татах темĕн-темĕнсем çыркаларĕ те татах чарăнчĕ. Тепĕр хут вуласа пăхрĕ мĕн çырнине. Унтан хутне тăваткалласа хутларĕ те аллине чăмăртаса тытрĕ, сĕтел çинчи çыру хатĕрĕсене пуçтарса хăвармасăрах, васкаса тулалла тухрĕ.

„Тепĕр тесен, мĕн тума кирлĕ чĕрен кашни таппине çынна уçса памашкăн? Мĕн тума кирлĕ хуйхă çинчен çынна каласа парса салхуллантармашкăн? Элле вĕсен хăйсен хуйхи-суйхи çук-им?“—терĕ те Ульяна, çавăнтах çырувне татăкăн-татăкăн çуркаласа çилпеле вĕçтерсе ячĕ.

Нимĕн тĕлсĕр-сăлтавсăрах, хăйсен ялĕнчен çухрăм çурăра ларакан вăрмана çитиччен утрĕ Ульяна. Хĕвел çуттинче вĕлтĕртетсе хумханакан ластăркка йывăççем хушшине çитсе кĕрсессĕн чарăнчĕ.

Сĕвек сăртăн айккине симĕс пустав пек витсе тăрать пысăкрах мар вăрман. Сăрт лапамĕ тăрăх улăх тăсăлса выртать. Улах тўремлĕхĕн ярăмĕнче унта-кунта ялсем сапаланса лараççĕ. Ульяна хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. Акă унăн çуралса ўснĕ тăван ялĕ аллапти çинчи пек курăнса ларать. Авă вĕсен урамĕ, авă вĕсен пўрчĕ умĕнчи кăтра хурăн. Пĕччене ларать вăл, мĕскĕн, салхуллăн темĕн çинчен шухăшласа, хăйĕн хуйхине пĕтĕм çут тĕнчерен пытарса. Шăп, Ульяна пекех... Акă авкартисем хыçĕпеле тулли шывлă пĕчĕк çырма авкаланса юхса выртать,—вăл çырмара Ульяна пĕчĕк чухне шак-чулсем пухма юрататчĕ. Акă Турикас çекĕл пек кукăрăлса тăсăлать тăвалла,—унта пурăнатчĕ унăн тусĕ,—теветкел чĕреллĕ* Ваççук. Текех ĕнтĕ ăна нихçан та, нихçан та кураяс çук...

Хăйĕн тусĕпеле хăнăхса çитме ĕлкĕрićченех вĕсене ирĕксĕр уйăрни çинчен шухăшласан, Ульянан чунĕ темĕн пек кўтсе килчĕ. Кăмăла лăплантарас тесе, вăл пĕрер çавра мĕнле те пулин юрă юрлама пикенчĕ, анчах нимĕнле кĕвĕ те килмерĕ ун чĕлхи çине. Пайтах асаплăн шухăшлакаласа тăнă хыççăн çеç çаврăнса тухрĕ ун пуçĕнчен чăвашсен авалхи-авалхи, тахçанах манăçа юлнă такмакĕ: „Улăхрăм эпĕ çўллĕ ту çине—телейĕм сўнĕ самантра. Манран çўлте, ман тĕлте, кăвак пĕлĕт айĕнче, ăмарт-

* *Теветкел чĕреллĕ*—хăюллă, хастар чĕреллĕ.

кайӑкӗ вӗҫет ярӑнса. Мӗншӗн вӗҫетши ҫав кайӑк, хӑй йӗри-тавра ҫаврӑнса, ҫӳлтен аялалла вирхӗнсе? Йӑвама тустарма улӑхман-ши, чӗппӗмсене тытма хӑпарман-ши? тет пуль, мӗскӗн, хуйхӑрса. Эпӗ ун йӑвине тустарма улӑхман, чӗпписене тытма хӑпарман. Улӑхрӑм эпӗ ҫӳллӗ ту ҫине—ҫӳлтен аялалла пӑхмашкӑн, хамӑн савнӑ тусӑма курмашкӑн...“

Ульянан ҫунса хуралса кайнӑ тути хӗррисем хӑйсем тӗллӗнех ҫак такмакӑн сӑмахӗсене пӑшӑлтатма пуҫларӗҫ. Юлашки сӑмахӗсене вӑл татах та шӑппӑнтараххӑн, хӑйӗн чӗрине илтӗнмелле сасӑпа кӑна, ик-виҫ хутчен асӑна-асӑна илчӗ. Такмакӑн юлашки сӑмахӗсемпе пӗр самантрах тата тепӗр юррӑн сӑмахӗсем эшкерленсе* тухрӗҫ Ульяна чӗринчен:

Юхрӗҫ пӗлӗтсем, юхрӗҫ,
Шерпет ҫуса;
Юртрӗҫ кунсем, юртрӗҫ,
Ахах тӑкса...
Эпех кӑна ӗҫеймерӗм
Ҫав шерпете,
Эпех кӑна пухаймарӑм
Ҫав ахаха.
Кайрӗҫ тангӑшсем, кайрӗҫ,
Алла сӗлтсе.
Тарчӗҫ телейсем, тарчӗҫ,
Ҫунат хывса.
Эпех кӑна каяймарӑм
Хам савнипе,
Эпех кӑна тараймарӑм
Хам телейпе...

Ал-арманӗ чулӗ хушшине хӗсӗнсе ларнӑ пек хӗсӗнсе ларчӗ Ульянан чунӗ ҫак икӗ юрӑ хушшине. Вӑл юрӑсем айлӑ-ҫийлӗн пулса, йывӑррӑн ҫаврӑнса кайрӗҫ те ҫамрӑк хӗрӗн суранланнӑ кӑмӑлне ҫӑнӑх пек авӑртса кӑларчӗҫ. Ульяна урӑх чӑтса тӑраймарӗ. Питне икӗ аллипе те хупласа, хытӑ-хытӑ, пӗчӗк ачалла ӗсӗклесе йӗрсе ячӗ.

Куҫҫуль хуйха пусармасть, ӑшчике кӑна лӑплантарать. Ульянан та нумайччен татӑлса йӗнӗ хыҫҫӑн хуйхи пусӑрӑнмарӗ, ҫуламлӑн вӑркаса тӑракан чӗри кӑна лӑпланнӑ пек пулчӗ. Кӑкӑра йывӑррӑн пусарса выртакан арман чулӗ пӗр самантлӑха арканса тӗпреннӗн туйӑнчӗ,—вӗри куҫҫуль тумламӗсемпе ирӗлсе пӗтрӗ, тейӗн. Ульяна пуҫне ҫӗклерӗ те, вӗриленсе кайнӑ питне саппун аркипеле шӑлса типӗтрӗ, ура ҫине тӑчӗ.

— Ҫук, йӗме кирлӗ мар, йӗме кирлӗ мар!—терӗ вӑл хӑйне хӑй йӑпатса. Унтан хӗрсӑри хӗрӗсем пек капӑр тумланнӑ лутра тӗмӗсем хушшипе шалалла, вӑрман ӑшнелле утса кӗрсе ҫухалчӗ. Пӗр тапхӑртанах таҫта лере, катари уҫланкӑра, Ульянан уҫӑ та вӑйлӑ, ҫилӗллӗ те ҫӗкленӳллӗ юрри янӑраса тухрӗ:

И, ҫилсем вӗрет, вичкӗн ҫил вӗрет,
Вӑйлӑ ҫумӑрсем капланса килет;
Ултавах тӗнчи, йывӑр самани
Пирӗн чунсене тыткӑна илет.

Чӑнахах та вӑрманта ҫил кашлама пуҫларӗ, таҫтан ахрамат шӑтӑкӗнчен, аслатиллӗ ҫумӑр пӗлӗчӗ хупланса килчӗ, тӗксӗмленнӗ вӑрмана ҫутатса, чӑлт-чалт ҫиҫӗм ҫиҫме пуҫларӗ. Ҫанталӑк куҫӑн-кӗретӗнех хаярланма, айкашма тытӑннӑ пулин те, Ульянан пӗр ҫавӑра юрри вӗҫленсенех, чӑтлӑх ӑшӗнчен шӑпчӑк тӗрӗлтетсе кӗвӗлени илтӗнчӗ.

Усала-ши е ырра-ши хаяр аслатие хирӗҫ шӑпчӑк юрлани?

## V

Ешӗл вӑрман хӗрринчи пысӑк уҫланкӑра сарӑлса ларать Салакайӑк хутор хуҫин аслӑ утарӗ. Чаранмасӑр сӗрлеҫҫӗ пыл хурчӗсем: чечекрен чечек ҫине вӗҫсе ӳкеҫҫӗ, ылттӑн майракисене вылянтарса, этем куҫне курӑнми тумламсемпе пыл пуҫтараҫҫӗ. Вӗсен пылне ыр ҫын ҫисе ыр курать, килен-каян хӑна активсе сӑй* пулать.

* *Эшкерленсе*—ушкӑнпа.

* *Сӑй пулать*—хӑна пулать.

Çĕр те вăтăр вĕлле пуян хутор хуçийĕн çак утарта. Çĕр те вăтăр хурт çемйи пĕр татти-сыпписĕр сĕрлесе, нимĕнле этем хайласа тупас çук ĕç тăвать. Пыл хурчĕсен хăйсен „хуçи" пур: Хветут мучи. Хура çўçĕ кăвакаричченех пурăннă вăл утарсенче, ылттăн пыл хурчĕсене хăйсен пурнăçне йĕркелеме пулăшса. Ăнланать Хветут мучи пыл хурчĕсем, нăрласа вĕççе çўресе, мĕн çинчен калаçнине. Лешсем хăйсем те ăнланаççĕ ватă мучи сăмса айĕн темĕнле ытарлă кĕвĕсем мăрăлтатса шухăшсем вылянтарнине: ун алли çине, сăмси çине, йĕтĕн сўсĕ пек сухалĕ çине пырапыра лараççĕ, анчах нихçан та сăхмаççĕ.

Пурăнать Хветут мучи Салакайăк утарĕнче, пайтах çынсем ăнланман расна тĕнче хуçи пулса. Пурнăçĕ кăна унăн хуçанăнни пек чаплă мар: çиййĕнче хĕлле те, çулла та—саранланса кайнă хытă кĕрĕк, уринче—саплăк çине саплăк лартса сăрталанă çăматă. Çапах та ўпкелешмест Хветут старик. Пурăнать хăйĕн мехелĕпе кăштăртатса, пур чух пылпала, çук чух шывпала тенĕ пек.

Паян Хветут мучи патĕнче икĕ çамрăк хăна: хутор хуçи ывăлĕ Элеçук тата унăн юлташĕ Мĕтри. Вĕсене чыс тумашкăн çĕр айĕнче виçĕ çул йўççе ларнă сим-пылне кăларчĕ Хветут мучи, халь кăна вĕллерен татнă ăшă карасла тутлă пыл илсе кĕрсе хучĕ сĕтел çине.

— Еçĕр-çиййĕр, теветкел йĕкĕтсем! Хветут мучăрăн сăйне ĕмĕр ан манăр.

Çамрăк хăнасем шаклаттара-шаклаттара ĕçеççĕ сарă куркасемпеле Хветут старикăн хаяр та тутлă симпылне, çара аллисемпе тытса çинчĕклесе çиеççĕ ăшă карасла пылне.

Виçшер курка ўпĕнтерне хыççăнах Элеçукăн пуçĕ кашлама пуçларĕ. Вăл вĕçме, мухтанма, пуклак чĕлхине урлă-пирлĕ вылянтаркаласа калаçма тытăнчĕ.

— Эй, старик! Сип ту хăнусене майлăрах. Мĕн сухална сўслентерсе таратăн? Элле курмастăн-им, кам ларать хăвăн умăнта?

Старик татах тултарать сарă куркасене сим-пылне, татах илсе кĕртсе хурать уксах ураллă сĕтел çине ăшă карасла çамрăк пыла. Сайлать, чыслать Хветут мучи çамрăк хăнасене, анчах вĕсен кăмăлне çаварма кăна майне-шутне тупаймасть.

— Эй, старик! Кăларса ларт хăнусем умне хăватлă эрехне. Элле курмастăн-им эс, кам ларать сан умăнта?!

— Ну, ан айаплăр, ывăлăмсем, кăна паян ниепле те тупма пултараймастăп,—тет вăл, хуçа ывăлĕ пуçтахланнипе кўренме тытăнса.

— Мĕн терĕн эс? Мĕн терĕн эс?—сухалĕнчен ярса илчĕ Хветут старике Элеçук.—Сўс тылли витĕр кăларап сана, хытă кăрăça! Чуп хăвăртрах казĕнкăва!

— Ан тĕлĕнтер ха, ывăлăм. Ай сĕтел çинчипе çитмест-им сире? Халь те, шĕкĕр турра, тайкаланакан пулнă ĕнтĕ.

— Кам? Кам тайкаланать? Эп тайкаланатăп-и? Эс тайкаланатăн, хытă кăрăç, авăк çилпеле. Çĕр тайкаланать ман ура айĕнче... Эп... эп... Хе-хехе-хе!..

Нĕрне çухатнă Элеçук, арçури пек ахăлтатса илчĕ те, пĕрех çутăлтарса ячĕ нимĕн айăпсăр старике пĕркеленчĕк питçăмартиййĕнчен. Ик куçĕнчен хĕлхем сирпĕнсе тухрĕ çитмĕл çулхи мучин. Кăкринчи çилли пăлхатнă вĕллери пыл хурчĕсем майлă çĕкленчĕ. Анчах вăл чĕнмерĕ, пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Пуçне мĕскĕннĕн усрĕ те, утар пўртĕнчен тухса ансăр, анчах та тўрĕ сукмакпа ял еннелле уттарчĕ.

Старикăн кăвак çўçне тăрмаласа çил вĕрет, пĕтĕм çĕре кĕмсĕртеттерсе аслати авăтса килет.

— Эй, старик! Ăçта каятăн эс аслатиллĕ çумăра хирĕç, пуян хутор хуçи ывăлĕн сăмахне итлесе. Эй, старик! таврăн каялла!

Çук, Хветут мучи каялла таврăнмарĕ...

* * *

Чӳречине уçса янă пулин те, утар пӳртĕнче пăчă, сывлама сывлăш çитмест. Аслатиллĕ çумăр çитсе çапас умĕн яланах çавăн пек пулать вăл.

Сĕтел çинче çисе яман пыл, карас çинчĕкĕсем сапаланса выртаççĕ. Сим пылпала йĕпенсе пĕтнĕ çыртăк татăкĕсене хура шăнасем сырăнса илнĕ. Пĕр тулли карас куçĕ çине ылттăн мамăклă пĕччен пыл хурчĕ пырса ларчĕ. Элеçук ăна çавăнтах кăварланса тăракан пирус тĕпĕпе пыл ăшне пусса, лапчăтса лартрĕ. Унтан сĕтел урлă чăртлаттарса сурса пăрахрĕ.

— Мĕтри! Митюк! Эп сан тусу-и, е тусу мар-и?

— Тус-ĕçке, Элеçук.

— Пулăш мана Ульянана хам алла лектерме.

— Э-е, юлташ, йĕвенсĕр лашана тытма хĕн, теççĕ. Çапах саншăн тăрăшма пултаратăп. Анчах асту: типĕ кашăк çăвара çурать.

— Эх, Митюк! Нимĕн те хĕрхенмĕп саншăн. Пу... пулăш эс мана, ăс пар.

— Малтан авалхи парăмна парса тат-ха. Унтан Ульяна çинчен те калаçма пулĕ,—терĕ Элеçук юлташĕ, тахçанхи „пару-илӳсем“ çинчен систерсе. Лешĕ ăна ăнланаймарĕ.

— М.., мĕ... мĕнле парăм, Мĕтри? Мĕнле парăм?—çыхланма пуçланă чĕлхипе ыйтрĕ Элеçук. Мĕтри тутине ун хăлхи патне илсе пычĕ те пăшăлтатса темĕн каларĕ. Анчах Элеçук, ку сăмахăн вăрттăнлăхне нимĕн вырăнне те хумарĕ пулас та, ахăлтатса кулса çеç ячĕ.

— Хе-хе-хе-хе! Кам лектернĕ-ши ăна серепене? Эсĕ-ши, е эпĕ-ши? Эх, Мĕтри, Мĕтри, култаратăн эсĕ мана.

— Эп ăс паман пулсан, Ваççук паян кун та сан çулу урлă тăнă пулĕччĕ-ха,—астутарчĕ Мĕтри кӳренчĕклĕн.—Ун пек калаçатăн пулсан, хăтлан мĕнле пултаратăн—çавăн пек. Эп урăх санăн тусу мар.

Мĕтри ура çине тăчĕ, тухса каян пек туса, алăк патнелле утрĕ. Анчах Элеçук ăна хыçалтан ярса тытрĕ те каллех хăй вырăнне лартрĕ.

— Мĕтри, ман çук тетĕн-им? Пирĕн çук терĕн-им?! Акă, ку мĕн, куратăн-и?—кĕсйинчен пĕр пачкă хут укçа туртса кăларса кăтартрĕ хутор хуçи ывăлĕ. Укçана курсан, Мĕтри куçĕсем кăвар пек çутăлса кайрĕç. вăл чĕтреме ернĕ аллисене Элеçук енне кăнтарчĕ. Анчах лешĕ укçине çавăнтах калла кĕсйине персе чикрĕ те пылпала вараланнă пӳрнипе тусĕн сăмсинчен пырса тĕртрĕ.

— Ак сана Ваççукшăн! А Ульянашăн—çирĕм пилĕк тенкĕ. Ĕçне тунă хыççăн. Мĕтри, Митюк, эс ман тус-и, е тус мар-и?

— Тус-ĕçке, Элеçук.

— Пар аллуна...

Ӳсĕрĕлсе анкă-минкĕленме пуçланă икĕ тус пĕр-пĕрин аллисене чăмăртарĕç. Çак вăхăтра ялтлатса çиçĕм çиçсе илчĕ те кĕмсĕртетсе аслати авăтса ячĕ.

Утар пӳртĕнчи икĕ тус чӳречерен тулалла пăхрĕç.

— Тăвăлла çумăр килет, Мĕтри, аслати кĕмсĕртетрĕ. Хуп хăвăртрах чӳречене!

Мĕтри çийĕнчех ответлемерĕ. Вăл, пĕрер самант пуçне чӳречерен кăларса итлесе выртнă хыççăн тин, Элеçук сăмахне хирĕç тавăрса каларĕ.

— Çук, аслати çеç мар, хĕрарăм юрлани сас илтĕнет.

— Ăçта? Мĕнле хĕрарăм?

— Ав, итле.

Элеçук икĕ хăлхине те чăнк

тăратса итлеме тытăнчĕ. Чăнах та, урăм-сурăм кашлакан вăрман чăтлăхĕнчен хĕр юрлани илтĕнсе кайрĕ:

И. çилеем вĕрет, вичкĕн çил вĕрет,
Хаяр аслати капланса килет.
Кĕмсĕртет, кисрет, тĕнчене чĕтрет!
Патша тĕрмине аркатса тĕпрет!

Юррăн сăмахĕсене çил таткаласа вĕçтерсе ячĕ. Çапах та Мĕтри лайăх ăнланса юлчĕ вăл сăмахсене. Ăнланса юлчĕ çеç те мар, ăна кам юрланине те тавçăрса илчĕ. Вара çавăнтах чӳречене шалтлаттарса хупса хучĕ.

— Тавăллă çумăр çывхарать, Элеçук. Çавăнпа хупрăм чӳречене.

Утар пӳртĕнче пĕр самант шăп пулчĕ. Вăрманти йывăçсем тăвăлпа хумханса урăм-сурăм кашлани кăна шавласа тăрать икĕ хăлхара.

Элеçук мухмăрлама пуçларĕ, хĕрелсе кайнă хĕсĕк куçĕсем унăн хăйсемех хупăнасшăн. Хаяр та тунă иккен Хветут мучи хăйĕн сим-пылне!

Мĕтри, ĕнтĕркенĕ юлташне хавхалантарас тесе, хулпуççинчен тытса лăскарĕ:

— Эх, каччă! Виçĕ курка пылпала кĕлеткӳне йăтаймастăн. Ху авланас тетĕн тата. Ăçта санăн Ульянана алла ӳкересси?

Элеçук пуçне йывăррăн çĕклерĕ. Тусĕ умĕнче паттăр пулма тăрăшса, мухтанчăклăн калаçма тытăнчĕ.

— Пирĕн пулĕ, Мĕтри. Пирĕн пурте пулĕ. Пирĕн пур чухне эсĕ те мĕскĕне юлмăн!

Вăрман чăтлăхĕнчи юрă сасси татах илтĕнчĕ. Анчах та вăл ку хутра утартан инçе те мар пек туйăнчĕ.

— Илтетне? — чавсипеле тĕртрĕ юлташне Мĕтри. — Епле илемлĕ юрлаççĕ вăрманти шăпчăксем каçа хирĕç.

— Мĕнле шăпчăксем? — ыйтрĕ Элеçук, нимĕн те илтмесĕр, нимĕн те ăнланаймасăр.

— Эх, тăмсай! — вăрçса тăкрĕ ăна Мĕтри. — Çавна та чухлаймастăн пулсан, кăларса хур çирĕм пилĕк текнӳне сĕтел çине. Харсăр Ульяна сан аллунта пулать.

— Чăнах-и? Ме, ил!

Мĕтри тепĕр хут чӳрече витĕр кармашса пăхрĕ те, утар пӳрчĕ умĕнченех улача кĕпеллĕ çамрăк хĕр иртсе пынине асăрхарĕ. Вăл çавăнтах, укçине илме ĕлкĕреймесĕрех, тулалла чупса тухрĕ.

Çиçĕм çиçет.

Аслати аватать.

Шарлаттарса çумăр çăвать.

Вăрман шăв-шавĕ витĕр тулта çăри-çари сасăсем çуйхашса илчĕç. Унччен те пулмарĕ, Мĕтри пĕчĕк те тăвăр хурал пӳртне йĕп-йĕпе исленнĕ çамрăк хĕре сĕтĕрсе кĕрсе пăрахрĕ.

— Ме, Элеçук, хăвăн пикӳне! Эпĕ хамăн ĕçĕме вĕçне çитиех туса пĕтертĕм...

* * *

Ăçтан сисет иккен этемĕн чĕри епле те пулин инкек пуласса? Утартан тухсассăнах Хветут мучин кăмăлĕ кăна хуçăлнăччĕ, а халĕ, каяллла таврăннă чух, ăшчик хыпса тухас пек çунать, темĕне туйса, чун пăчăртана-пăчăртана ыратать. Вăл ывăнса çитнĕ ĕнтĕ, анчах çапах васкать вăрман уçланкинчи утара хăвăртрах çитесшĕн.

Чĕреслетсе çумăр çăвать, чăрсăрланса çил туллашать, — Хветут мучин шурă çӳçĕпе сухалне лăскаса арпаштарать, сăранланса кайнă çĕтĕк кĕрĕкне çуркалать. Утма çăмăлтарах пултăр тесе, старик исленнипе йывăрланса кайнă çăматтисене хывса аллине тытрĕ. Кашни çиçĕм çиçмессеренех сăхсăха-сăхсăха утать халь вăл çатрака йывăçсем хушшипе, йĕпе сухалĕ айĕн темĕнле асамлă сăмахсем мăкăртатса. Йĕплĕ шăлан туратсем старикĕн çулне пӳле-пӳле хураççĕ. Вăл çаплах утать, такăна-

такăна ўксе, сирсе сирĕлми тĕмĕсене икĕ чавсиñеле уçа-уçа çул хывса утать малалла. Шалти туйăмсем хăвалаççĕ ăна хăвăртрах пĕчĕк утар пÿртне.

Васка хăвăртрах, старик! Унсăрăн кая юлатăн!

Хветут мучи чупма тытăнчĕ. Тăвăл çаврăнать ун кăкринче. Çанталăкра та тăвăл, ăшра та тăвăл,—хăрушă. Анчах мĕншĕн? Мĕншĕн çапла? Татăклăн чухлаймасть ăна старик. Ват пек йўçĕ туйăмĕпе кăна туять: кўрентерчĕç, мăшкăл турĕç ăна паян. Ăна, никам нихăçан алăпа сĕртĕнменскерне, утар хуçин ачаш ачи мăшкăл турĕ. Мĕнле çĕкленчĕ унăн алли пурнăç хуçниpеле çурăмĕ курпунланнă ватă çине?

— Тавăр, тавăр вăл хаймука*!— пăчăртатса йўçет çилĕ мучи чĕринче.

Йалт халран кайса сĕтĕрĕнсе çитрĕ Хветут старик утар пўртне. Алăка тĕксе пăхрĕ,—питĕрнĕ.

— Уç!—чышкипеле çапрĕ старик алăка.—Уç, казĕнка эрехне илсе килтĕм.

Никам та уçманнине кура, Хветут мучи пĕррех пырса тĕртрĕ сарлака хулпуççийĕпе утар пўрчĕн хăлтăрхалтăр алăкне. Алăк, мĕнле пырса тĕртнĕ çаплипех, хăйĕн тăпси çинчен тухса кайрĕ пулмалла та, шалалла хĕнтĕртетсе ўкрĕ. Хветут мучие хирĕç пĕтĕмпе çуркаласа пĕтернĕ çипуçлă Ульяна макăрса тухрĕ.

Хветут мучи пылчăк ăшне таптаса тăкнă чечек пек Ульяна çине пăхрĕ те пĕтĕмпех ăнланчĕ. Унăн куçĕсем юн тулнă пек хĕрелсе кайрĕç, ватă кăкăрĕ çĕкленчĕ, çамки çине сивĕ тар тухрĕ.

Вăл пĕтĕм кĕлеткипе малалла ўпĕнсе, ерипен Элеçук патне йăпшăнса утса пычĕ те, сылтăм аллинчи эрех кĕленчине ун еннелле тăснă пек турĕ:

— Акă, илсе килтĕм...—терĕ вăл аран-аран сывлăш çавăрса.—Хама валли тупăк тутарма пухнă юлашки укçапа илтĕм...

Старик эрех кĕленчине Элеçук сăмси умне тăсрĕ, анчах та, лешĕ ăна тытма тăрсанах, Хветут сасартăк, тискеррĕн урса кайса, аллине çўлелле çĕклерĕ те пĕтĕм вăйпа хутор хуçи ывăлне тулли эрех кĕленчипе çамкинчен туртса çапрĕ.

— Ме, чых!

Чанкăр! туса арканса кайрĕ тулли пулăштух. Элеçук енчен-енне сулăнса илсе, утар стариккин ури умне тĕшĕрĕлсе ўкрĕ...

Тултан Мĕтри чупса кĕчĕ.

## VI

Ульяна утартан ўсĕр çын пек тайкаланса тухрĕ. Мĕн пулни-иртнине пĕтĕмпе туйса илнĕ хыççăн унăн кĕлеткинче пĕр чĕрĕ вăй та юлмарĕ. Пăчăртаса йўççе тăракан шăршлă лачакана чиксе кăларса, пуç тăрăх мăшкăлтăк шывĕ сапнă пек туйăнать халь ăна. Унăн тăп-тăрă çăл куçĕ пек хĕр тивлетне вăйпах туртса илчĕç, нихçан кирĕк тивмен ыр ятне варалараĕç, çутă ĕмĕчĕсене татрĕç. Мĕне кура пурăнĕ-ши ĕнтĕ Ульяна малашне çакă тĕнчере?

Хĕвел тахçанах анса ларнă ĕнтĕ. Аслатиллĕ çумăр хыççăн çанталăк сулхăнлатрĕ. Вăрманта пăч тĕттĕм.

Çарамас, çарапуçăн, çара уранах утать Ульяна сивĕ çумăрпа шўсе кайнă лăпсăркка йывăççем хушшипе. Туратсене пырса тĕртĕнмелли те çук,—кăшт хускатнипех шăпăртатса тумламсем тăкăнаççĕ вĕсенчен. Çумăр айне пулнинчен те ытларах ислетет. Анчах та Ульяна ăна-кăна нимĕн те сисмест. Кўтсе çитнĕ чунĕ унăн ниепле чăтма çук мăшкăл ăшне путса çухалнă...

* Усал эсеме.

„Ах, мăшкăл-çке, мăшкăл! Епле йатса çӳрес ман ăна хĕр пуçăмпа, епле курăнас тĕнче куçĕ умне, юлташсемпе тантăшсен куçĕ умне?— çĕпре пек пăтранать шухăш Ульянан пуçĕнче.—Кама кирлĕ эп хамăн хур пулнă тивлетĕмпе, пылчăк ăшне таптаса тăкнă ăрăскалампа?"

Армак-чармак йывăççем хушшипе пайтахчен аташса çӳренĕ хыççăн, Ульяна темĕнле тарăн вар хĕррине çитсе тăрăнчĕ. Каçхи тĕттĕмлехре хăрушшăн курăнакан йывăççем кашниех ăна юнанан туйăнаççĕ,—хăйсем чăртмах тураттисемпе ун çине тĕллесе кăтартса ахăрашаççĕ, тейĕн. Таçта катара, ахрамат шăтăкĕ пек курăнакан тĕпсĕр çырма пуçĕнче, пĕчĕк ача макăлăн нăйкăшса ӳхĕ кăшкăрса ячĕ.

Сӳ-ӳ-ӳ! çӳçенсе кайрĕ Ульяна чунĕ каçхи тискер сасса илтнĕ хыççăн. Вăл сирсе сирĕлми тĕттĕме шăтарса малалла тинкерсе пăхрĕ, анчах та унта тĕпсĕр тип çырмасăр пуçне урăх нимĕн те курăнмарĕ.

„Ăçта каятăп эп, мĕскер шыратăп?—сасартăк шартах сиксе илчĕ Ульяна.—Телейĕме шыратăп-и эпĕ, пурнăçăма-и? Телейĕме манне, вăйпах тытса илсе, тимĕр сăнчăрпа сăнчăрласа лартрĕç, чунăма пуш-пушă туса хăварчĕç. Пушанса юлнă чуншăн нимĕнле пурнăç та кирлĕ мар"...

Ульяна вăртах каялла çаврăнчĕ те васкаса сылтăмалла утса кайрĕ. Пĕр вăтăр-хĕрĕх утăм утса кайсан, вăл темĕнле уçланкăна пырса тухрĕ. Йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ,—анчах хăй ăçта иккенне тавçăрса илеймерĕ.

„Ăçта эпĕ?—шутларĕ вăл хăй ăшĕнче.—Ну, юрĕ-çке тата... Кирек ăçта пулсан та пурĕпĕр халь маншăн. Пурĕпĕр малалла кайма çулсем петсе çитрĕç, каялла каймашкăн халăм юлмарĕ. Пурĕпĕр халь маншăн, мĕншĕн тесен пĕтĕмĕшпех йышăнатăп эпĕ хамăн телейсĕр шăпама...

Ульяна аяккалла пăхрĕ те хăйĕн çывăхĕнчех пĕр чармак туратлă хурама айĕнче тунката лараине курчĕ.

— Çакăнта...—терĕ вăл хăй ăшĕнче шăппăн.—Çакăнта лăплантаратăп эпĕ хамăн мĕнпур хуйхăм-суйхăма, çакăнта пытарăп ӳкĕте кĕми тĕнче умĕнчен хамăн мăшкăлăма...

Вăл хăварт тунката çине хăпарса тăчĕ. Пилĕкĕнчен шерепеллĕ пиçиххине салтса илчĕ. Пĕр вĕçне мăйкăчла ункăласа тĕвĕлерĕ, тепĕр вĕçне хăрăк туратран кармашса çыхса хучĕ. Унтан пĕр самант хушши куçне хупса шухăшласа тăчĕ те мăйкăч ункинчен аллине тытрĕ.

— Сывă пул, мана мăшкăл тунă çут тĕнче...

Ак халь-халь пуçне мăйкăч ăшне чиксе яратчĕ Ульяна, анчах шăп та шай çак вăхăтра лăстăркка пĕлĕт хушшинчен тулли уйăх шăвăнса тухрĕ те пĕтĕм уçланкăна шупка-кăвак çутăпа çутатса ячĕ. Ульяна куçне уçрĕ, йĕри-тавралла тинкерсе пăхрĕ.

„Ăçта эпĕ? Мĕн хăтланатăп эпĕ? Э-е, апла иккен. Паçархи уçланкă... Анчах мĕн тума килсе тухнă эп кунта?"

Ульянава сасартăк, пуçĕнчи шухăшĕсене вĕçлевме памасăр, паçархи юррăн сăмахĕсем аса килчĕç:

> Улăхри лаши, çӳренех лаши,—
> Унăн уринче тимĕрех такан,
> Маттурах каччи, сарăях ачи,—
> Унăн уринче тимĕрех тăлă.
>
> Тимĕрех тăлă, улаях çулĕ...
> Ĕмĕрĕ иртет Çĕпĕр çĕрĕнче.
> Çĕпĕр çĕрĕнче, патша тĕрминче
> Читлĕхе хупнă ăмăрткайăк пек.

Çак сăмахсем тăнлава çитсе çапăнсанах, Ульяна сасартăк, хăрушă тĕлĕкрен вăранса кайнă пек пулса, шартах сиксе ӳкрĕ. „Мĕн хăтланатăп эпĕ? Элле тĕнче мăшкăлĕ ман пуçăм çийĕнче кăна-им? Мĕн тума çĕклетĕп эпĕ çамрăк ĕмĕрĕм çине аллăма хамăн ирĕкĕмпех?"

Вăл аллинчи майкăчне кăртах туртрĕ те çурмаран татса аяккалла ывăтрĕ. Унтан хытă сасăпах хăйне хăй çапла каларĕ:

— Çук, вилме кирлĕ мар! Мăшкăла вилĕмпе нихăçан та парăнтараймăн. Тавăру, тавăру кăна витĕмлĕ пулĕ ирсĕр этемсен тарăхăвĕшĕн.

Халĕ вăл хăйĕн кӳренӳне çеç мар, Ваççукăн инкекне те, пĕтĕм ял халăхĕн хурлăхне те аса илчĕ. Ун умне юлашки ял пуххинче пулнă мантăр майлă старшинапа стражник, пĕрпĕринпе асар-писер тӳпелешекен халăх, шăлт юнланса суранланса пĕтнĕ Ваççук тухса тăчĕç.

Ульянан чышкисем хăйсемех чăмăртанчĕç.

— Тавăрăп, тавăрăп эп сире пуриншĕн те! Тавăрăп хамшăн та, тавăрăп Ваççукшăн та!—çĕкленсе хăпарчĕ унăн çилли.—Анчах мĕнле? Кам мана пулăшĕ сирĕн шалчăрсене тултарма? Кам пулăшĕ?

Çак ыйтусене хирĕç Ульянана хăйĕн шалти туйăмĕсем те ответ параймарĕç. Вара вăл урăх майлă шухăшлама тытăнчĕ.

„Пĕрерĕн-пĕрерĕн тип шара ӳкерсе пырăп эпĕ вĕсене. Вăйăм çитеймесен—шăлпала, шăлăм витмесен—вутпала. Çапах та пĕлĕп камран тытăнса кама пĕтермеллине“.

Ульяна, тепĕр еннелле çаврăнса пăхрĕ те, сайра йывăççем хушшипе утар пӳртĕнче шăши кусĕ пек мĕлтлетсе лампа çуннине курчĕ. Пĕрре сывлăш çавăрмасăрах чупса çитрĕ вăл утар пӳрчĕ умне. Чӳрече витĕр шалалла йăпшăнса пăхрĕ. Кайнă иккен... Ульяна васкаса пӳрте кĕчĕ. Кутник çинче Хветут мучи найкăшса выртать. Пичĕ-кусĕ шыçса тухнă унăн.

— Хветут мучи, сана хĕнерĕç-и вĕсем?..

— Хветут мучу ура çине тăраймасть ĕнтĕ, хĕрĕм... Çĕмĕрчĕç ват шăмшакка.

— Мучи, спичка кирлĕ мана...

— Спичка? Ил, ав—пичурккăра. Çапла, хĕрĕм, мăшкăлларĕç...

* * *

Кĕçех хутор хуралти хыçĕнчен утă купи пек тĕтĕм çĕкленсе хăпарчĕ те вут ялкăшма тытăнчĕ.

— Пушар! Çунатпăр!

— Эй кам тарать унта?

— Ан тарт ăна, ан тарт!

## VII

Çĕпĕр çулĕ вăрăм, пит те вăрăм. Анчах унтан та вăрăмрах этем ĕмĕрĕ... Утать Ульяна икĕ конвоир хушшинче пуçне мăнкăмăллăн çĕклесе. Ун пуçĕнче хăйĕн кĕске хĕр ĕмĕрĕнче пулса иртнĕ ĕçсем пĕтĕмпех вĕçленсе çитрĕç, тусанлă çул кăна çаплах вĕçленмест. Вĕсене хирĕç тулли лавсем ирте-ирте каяççĕ, çуран çынсем тĕл пулаççĕ. Мĕн хирĕç пулниех Ульяна çине мĕскĕнĕн пăха-пăха юлаççĕ.

Кайсан-кайсан Ульянасене пĕр чăптапа витсе хунă лав тĕл пулчĕ.

— Тыт лашуна аяккалла!—кăшкăрса тăкрĕ лавăça катаранах Ульянан пĕр конвоирĕ. Анчах лавăçи, урапа хĕррине урине усса салхуллăн ларса пыраканскер, пуçне те çĕклесе пăхмарĕ. Конвоир, хăйне хисеп туманнипе çиленсе кайнăскер, вăштах тутарса илчĕ старик лашине хыткан çурăмĕнчен. Лаша аяккалла сиксе ӳкрĕ, анчах старик ăна çавăнтах тилхепинчен туртса чарчĕ.

— Çылăха пĕлĕр, ыр çынсем. Эпĕ вилнĕ çынна турттарса таврăнатăп, а эсир çĕлĕке хывса иртес чух, ун çине сурса хăварасшăн...

— Мĕнле çын вилнĕ тата? Ишь образовался!—старик сăмахне пӳлчĕ пĕр конвоирĕ.

— Ну-ка-с... ăçта çынни?—урапа çинчи чăптана туртса уçрĕ тепри.

Ульяна урапа ҫинче выртакан вилĕ ҫине пăхрĕ те, шари ҫухăрса ячĕ.

— Ваҫҫук! Ваҫҫук!.. Вĕлерчĕҫ пулĕ сана та, тантăшăм, татрĕҫ-ҫке санăн пурнăҫна... Ваҫҫук... Ваҫҫук!

— Ăҫтан тупнă эс кăна?—ыйтрĕ пĕрремĕш конвоир, Ульяна татăлса йĕни ҫине сивĕ куҫĕпе пăхса.

— Уезд хулинчен парса ячĕҫ. Ҫĕпĕре ямалли ҫын пулнă, тет, пулас та, уездрисемпе питĕ хытă хирĕҫнĕ имĕш. Алли-урине тимĕрлеттересшĕн мар пулса... Ав ҫав сăлтавпала пăшал лушипе пуҫне ҫапса ватнă шеремете... Йывăр тăпри ҫăмăл пултăр ĕнтĕ мĕскĕнĕн...

— Ваҫҫук, Ваҫҫук! Халăх ĕҫĕшĕн пуҫна ҫухатрăн-ҫке эс, тусăмҫăм... Чĕрене кĕрсе вырнаҫнă хыҫҫăнах уйăрчĕҫ-ҫке пире иксĕмĕре ҫак тĕнчери тискер этемсем...

Ульяна умри чунсăр кĕлеткен юнланса пĕтнĕ ҫӳҫĕсене икĕ аллипе те шăла-шăла якатма тытăнчĕ.

— Ан ӳпкелеш, Ваҫҫа... Чĕрĕ чух ман сана чуптума та хăюлăх ҫитмерĕ, а халĕ... мĕн тăвам ĕнтĕ халĕ?.. Сана манран ĕмĕрлĕхех уйăрчĕҫ.

— Ну, ну, ут малалла!—чăртмаххăн айăккинчен чышкипеле тĕртрĕ конвоир Ульянана.—Мĕн нĕшкесе тăратăн? Е хăвăн пурнăҫун вĕҫĕ кунтан мала кайĕ тетĕн-им?..

— Суятăн! Суятăн!—хаяррăн кăшкăрса пăрахрĕ Ульяна икĕ чышкине те ҫӳлелле ҫĕклесе.—Ку манăн пурнăҫ вĕҫĕ мар, пуҫламăшĕ кăна!

1939.

---

**КĔСКЕ КАЛАВСЕМ.**

## ПУРНĂҪПА ВИЛĔМ.

Ватă старик хĕвелавăҫĕнчен хĕвелтухăҫнелле утнă. Вăл ҫав тери ывăнса халран кайнă. Пĕкрĕлсе тухнă ҫурăмĕ ҫинче унăн пир кутамкка ҫакăнса пынă, сылтăм аллинче чĕрĕ туя пулнă.

Старик нимĕн ҫулсăр-сукмаксăр тӳрех, хир-хир урлă, варсем урлă васкаса утнă, мĕншĕн тесен ăна хыҫалтан хăрушă вутлă тăвăл йĕрленĕ. Унăн, ватти ҫитнĕ пулин те, вилесси килмен.

Акă вăл пĕр юханшыв хĕррине килсе тухрĕ те канма ларчĕ. Кутамккине ҫурăм ҫинчен хывса хăй умне салтса хучĕ, анчах унта кăвакарса кайнă ҫăкăр татăккисĕр пуҫне нимĕн те тупаймарĕ. „Ах, пурнăҫăм, пурнăҫ! Ăҫта-ши ун пуҫламăшпе вĕҫĕ?—пăшăлтатма пуҫларĕ старик, ассăн сывласа.—Пайтах ҫулсем пурăнтăм эпĕ ҫак ҫĕр ҫинче, пайтах йĕрсем йĕрлерĕм, ҫапах хама пӳрнĕ тертĕмрен тарса ӳкеймерĕм. А халĕ акă ман хамăн кунҫулăмсем те вĕҫленсе ҫитеҫҫĕ. Мĕн хăварăп эпĕ хам вилнĕ хыҫҫăн ҫак хура ҫĕр ҫине? Ни мулăм ҫук манăн, ни ятăм ҫук...“

Старик тата тепĕр хут йывăррăн сывласа илчĕ. Унтан унăн сӳнме пуҫланă куҫĕсем, аллинчи чĕрĕ туя ҫине ӳксе, ҫутă хĕлхемпе ҫиҫсе йăлкăшса ҫунма пуҫларĕҫ.

Старик аса илчĕ. Аса илчĕ вăл епле кашни ҫул ҫуркуннепе чĕрĕ йăмра тураттисене каса-каса илсе юханшыв хĕррине лартса тухнине, аса илчĕ епле ҫав йăмра тураттисем, ик-виҫĕ кунранах чĕрĕ хунавсем кăларса, шуххăн ӳсме пуҫланине. Аса илчĕ те ҫаксене, хăй аллинчи туйине ҫак юханшывăн хăйăрлă ҫыранĕ хĕррине лартса хăварас тесе, ура ҫине тăчĕ. Анчах хĕвел ҫинче ҫутă кĕмĕл пек чĕрпĕкленсе выртакан шыв еннелле

пĕр утăм тусанах, вăл шартах сиксе, юпа пек хытса тăчĕ. Унта, пуçне шыв çинелле усăнтарса, палламан салтак выртнине курчĕ вăл. Салтакăн гимнастёрки пĕтĕмпех юнпала вараланса пĕтнĕ. Сулахай аллине вăл вăйсăррăн кăна малалла кăнтарнă, сылтăммине винтовка чăмăртаса тытнă. Мĕскĕн салтак ахăртнех чи юлашки самантченех пурнăç сыпписене сыпăнтарасшăн кĕрешнĕ пулас.

Старик ут патне çывăхах пырса тăчĕ, суран асапĕпе нĕрсĕрленнĕ питкуç çине нумайччен тинкерсе пăхса тăчĕ, унтан сасартăк кăкăра çурса тухакан сасăпа ăнран кайнă пек çухăрса ячĕ:

— Ой, ывăлăм! Ой, пурнăçăм!..

Пайтах вăхăтчен старик палламан салтака пăрахса каяймасăр тăчĕ. Вăл темиçе хутчен унăн сивĕнсе кайнă кĕлеткине хăйĕн кăкăрĕ çумне ыталаса чăмăртарĕ, юнпа пĕвеннĕ çӳçĕсене яката-яката майлаштарчĕ, ик-виçĕ хутчен ăна тутинченех чуптуса илчĕ. Хĕвел анас умĕн çеç старик кăштах лăпланса, хăйне хăй алла илчĕ. Алăпа кăна вăл хăйăр çине шăтăк чаврĕ те палламан салтакăн ӳтне çав шăтăка вырнаçтарса хăйăрпа витсе хучĕ. Унтан, салтакăн винтовкине алла илсе, хăйĕн чĕрĕ туйине масар çине чиксе лартрĕ:

— Çывăр лăпкă ыйхăпа, ятсăр ывăлăм. Эсĕ хăвăн пархатарлă пурнăçна çапăçу хирĕнче вĕçлерĕн, а эпĕ вăл пурнăçа тавăру çиллипе чечеклесе илемлетĕп. Юншăн—юн, вилĕмшĕн—вилĕм!

Старик çирĕп утăмсемпе малалла утса кайрĕ. Анчах та вăл хĕвелтухăçнелле мар, хĕвеланăçнелле çул тытрĕ.

---

## Ш Ă П Ч Ă К.

Ку вырăнта чечекленсе чие пахчи ӳсетчĕ, чие пахчинче кашни каç, кашни ир шăпчăк юрă шăрататчĕ.

Хавасланса тухатчĕ çамрăк хĕр пахчана, лăпкă кӳлĕ хĕррине, шăпчăк юррине итлеме.

Анчах хура инкек килсе çапăнчĕ кĕтмен самантра. Хаяр аслати кĕрлерĕ те çĕр çурăлса вут тухрĕ. Тĕнче тӳпинчен çĕр çине вутлă сăнăсем çума пуçларĕç.

Кĕвви тatăлчĕ пахчари сарă кайăкăн, урăх илтеймерĕ çамрăк хĕр унăн илемлĕ юррине. Вара вăл, алла ашшĕ пăшалне илсе, хаяррăн çапла тупа туса сăмах пачĕ:

— Тавăрăп! Хамшăн та, пурнăçшăн та, шăпчăкшăн та тавăрăп!

---

## ПĔЧĔКÇĔ ХĔР АЧА.

Полустанокра поезд çур минут кăна тăрать. Эпир хĕвеланăçнелле каятпăр. Кашнин çинчех — хĕвелпе тĕссĕрленнĕ шупка гимнастёрка, пуçсем çинче—çăлтăрлă пилоткăсем.

Чугун çул хĕрринче палламан хĕрарăм ларать. Ун умĕнче çӳçе хуллинчен авса тунă пысăк корзинка, корзинкинче—туп-тулли лайăх пиçсе çитнĕ хăмла çырлв. Тĕссĕр гимнастёркăллă çынсем, вагонсенчен васкавлăн сике-сике анса, хĕрарăм патне чупаççĕ. Вăл вĕсене кашнинех пĕрерикшер стакан хăмла çырли тултаратултара парать.

Эпĕ те салтаках, анчах ман пĕр пус та укçа-тенкĕм çук.

Хĕрарăм ăна-кăна пăхмасть, тулли стакана ман еннелле те çавăн пек ăшă кăмăллăнах сĕнет:

— Ме, юлташ, ак ку сана. Тутанса пăх колхоз çырлăхне!

Поезд вӑраммӑн кӑшкӑртса ячӗ. Шупка гимнастёркӑллӑ ҫынсем вагонсем еннелле чупрӗҫ. Манӑн хамӑн та пӗрешкелех васкамаллаччӗ. Ан чах шӑп та шай ҫак самантра таҫтан, тӗмӗсем хыҫӗнчен, пӗчӗкҫӗ-пӗчӗкҫӗ хӗр ача чупса тухрӗ. Тӗрексӗр аллисемпе хӑй тулли стакан хӑмла ҫырли йӑтнӑ. Мана курсанах пӗчӗкҫӗ хӗр ача, хавасланса ӳксе, ик аллине те малалла кӑнтарчӗ те савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Папа! Па-почка!

Манӑн ҫав пӗчӗкҫӗ хӗр ачана алла илсе кӑкӑрӑм ҫумне чӑмӑртассӑм килчӗ, анчах вагон буферӗсем васкавлӑн чӑнкӑртатса илчӗҫ те, манӑн поезд ҫине ларма васкасах чупмалла пулчӗ.

Вагон картлашки ҫине улӑхса тӑрсан каялла ҫаврӑнса пӑхрӑм та эпӗ ҫакна куртӑм: пӗчӗкҫӗ хӗр ача ман паталла вӗтелеңсе чупнӑ чух сасартӑк такӑнса ӳкрӗ. Такӑнса ӳкрӗ те, ҫырлине тӑкса ячӗ.

— Папа! Ан кай! Па-почка!—илтӗнчӗ унӑн ҫепӗҫ сасси.

— Ан йӗр, хӗрӗм, ан йӗр,—тесе кӑшкӑртӑм эпӗ ӑна хирӗҫ.—Папа таврӑнӗ, папа часах таврӑнӗ!

---

## ПОЛКОВОДЕЦ СТАЛИН.

1

Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ, тӑвӑл хыпрӗ,
Аслати кисренчӗ.
Сӑхӑ нимӗҫ шухӑш тытрӗ,
Вӑрҫӑпа ҫӗкленчӗ.
Ман тӑван ҫӗршыв хускалчӗ,—
Ҫирӗп ун вӑй-халӗ,
Ҫӗнтермешкӗн шанчӑк пачӗ
Полководец Сталин.

2

Амакланчӗ вӑрҫӑ вучӗ
Тамӑк пек тискеррӗн;
Тӑшманпа вӑрҫса пуҫ хучӗҫ
Паттӑрсем пиншерӗн...
Чаплӑ ӗҫшӗн вилекенӗн
Пӗтмӗ чун-хавалӗ,
Ӑна чыслӗ аслӑ гений—
Полководец Сталин.

3

Пире парти хурҫӑлатрӗ
Пурнӑҫа кӗмешкӗн,
Пире Сталин ҫул кӑтартрӗ
Тӑшмана ҫӗнмешкӗн.
Ирӗк халӑх чура мар тек,—
Ҫирӗп ун вӑй-халӗ.
Сывӑ пулччӑр аслӑ парти,—
Полководец Сталин!

4

Кар тӑрса, пӗр ҫын пек эпӗр,
Вутлӑ ҫумӑр витӗр,
Тӑшмана шав ҫӗмӗретпӗр,—
Вилӗмӗ ун ҫитрӗ.
Хӗрлӗ Ҫарӑн чаплӑ ячӗ
Иксӗлми ҫуталӗ.
Ӑна хурҫӑ хӑват пачӗ
Полководец Сталин.

5

Ян-янрать тӑван Мускавӑн
Гимн пек йыхравӗ.
Аслӑ халӑхӑн мухтавӗ—
Парӑнми йӑхра вӑл.
Пирӗн юрӑ—хурҫӑ маршлӑ,
Ҫӗнтерӳ ялавӗ.
Сывӑ пултӑр аслӑ маршал —
Полководец Сталин!

1945.

---

## ÇĔНТЕРӲ ЮРРИ.

Сар хĕвел çине пăхса савăнăр!
Çĕнтерӳ юрри шăранать ян-ян.
Ĕмĕрне сӳнми чап-мухтавăмăр
Çутатса тăрать тĕнчене паян.

Çут тĕнче çине пăхса савăнăр!
Ешерсе выртать ирĕкри Çĕршыв.
Тăшмана нихçан пурнăç памăпăр,
Тек ан пултăр ун шăрши-марши.

Паттăрсем çине пăхса савăнăр!
Мăн уяв кунне саламлаç вĕсем.
Чĕресем тулли—пирĕн тавăмăр,
Чыс-салам сире, çĕнтерӳçĕсем!

Сар хĕрсем çине пăхса савăнăр!
Питсенче çиçет кĕтнĕ савăк кун.
Хуйхă иртрĕ халь,—тунсăхламăпăр,
Вĕресе тăрать пирĕн çамрăк юн.

Черккесем çĕклер аслă Сталиншăн,
Çулпуçне паян мухтаса юрлар,
Вилĕме çĕнме хăват панăшăн
Чĕререн ăна тав туса пурăнар.

Тавтапуç сана, ыр Çĕршывăмăр!
Эс нихçан пулман çичĕ ют кулли.
Сан çинчен эпир юрă хывrăмăр,
Ĕмĕрне манми çĕнтерӳ юрри.

1945.

---

## СЫВĂ ПУЛТĂР ÇĔНТЕРӲ!

Кĕр хĕвелĕ тараватлăн шăранать.
Пит те капăр çутçанталăкăн кулли!
Сасă кайрĕ, савăк хумлăн, таврана,
Умри праçник—пирĕн чунăмăр тулли.

Аслă Сталин, çут хĕвелĕмĕр, çак ир
Саламларĕ ăшă кăмăллăн пире;
Пархатарлăн черкке йăтрăмăр эпир,—
Çĕнĕ ĕмĕр! Саншăн уçăлчĕ чĕре!

Тăвăл иртрĕ. Кĕрлемест тек аслати.
Кĕтнĕ куншăн ярăмланчĕ асамат.
Чечеклентĕр лăпкă пурăнăç калчи,
Ылттăн хумлăн çĕкленейтĕрччĕ
самант!

Канăç çитрĕ пĕтĕм çутă тĕнчене,
Ырлăх пултăр сана, Ирĕклĕ Эгем!
Юмахри пек Улăпа эс чĕнсенех
Халăх тупĕ ĕмĕр кĕтнĕ тивлете.

Тек ураймĕ самурайĕ тухăçра,
Сăхă вимĕç сăхланаймĕ анăçран.
Шурăмпуç пек паттăр улăп-çынсене
Мухтаса эп юррăма халь çĕнетем.

Ирĕк куншăн хĕлхемленнĕ хĕвеле
Вупăр çимĕ, хур тăваймĕ нихăçан.
Çутă хĕç пек хурçăланнă телее
Ăмсанаймĕ вилĕм кайăкĕ—çăхан.

Ялтăрать тăван Çĕршывăмăр паян.
Ĕмĕт çутă. Вăй-хăватăмăр хĕрӳ.
Эпир паттăрăн янратăпăр ялан:
— Сывă пултăр пирĕн чаплă çĕнтерӳ!

Тав тăватпăр аслă Сталина эпир:
Чыс-салам, тăван çулпуçăмăр, сана!
Эсĕ пирĕн полководец, командир,—
Сывă пурăн ĕмĕр-ĕмĕр, яланах!

1945.



## КУЗЬМА ПАЙРАШ

### СЕСТРА.

Ку каç больницăра хитре сăн-питлĕ, хăйне тирпейлĕ тыткалакан сестра дежурить тунă. Пуçне шурă калпак тăхăннăран тата çиййĕнчи халат çан нисене чавса таранах тавăрса хунăран, вăл сестра хирурги уйрăмĕнче ĕçленине часах уйăрса илме пулна.

Акă вăл, палаткăсем тăрăх çаврăнса, тухтăр хăварнă назначенисене туса çитерчĕ те, кĕçĕр ытлашшиех йывăр чирлисем çуккине кура, хăй пўлĕмне кайса, вуласа пĕтереймен кĕнекене тытса ларчĕ.

Вулама пуçларĕ çеç, больница кил картинчен машина кăшкăртнă сасă илтĕнчĕ.

— Васкавлă пулăшу!—уйăрса илчĕ вăл сасăранах.—Анчах хăш уйрăма илсе килеççĕ-ши?

Сестра, кĕнекине хупса ура çине тăрсан, чўрече витĕр васкавлă пулăшу карети хирурги корпусĕ умĕнче чарăнса тăнине курчĕ.

— Марье! Клавдя!—кăшкăрчĕ сестра санитаркăсене,—тухăр халех, йăтса кĕме пулăшăр!

Темиçе минут иртсен, чирлĕ çынна носилкăпа йăтса кĕчĕç. Ку çын йывăр чирлине сестра пĕрре пăхсах уйăрса илчĕ; сăнĕ унăн, хăй çамрăк пулсан та, хут пек шуралса кайнă, куçĕсем хупă, чĕнсен те уçса пăхмасть, костюмĕ хырăмĕ тĕлĕнчен юнпа вараланса пĕтнĕ.

— Ай-й... о-ох!..—аран-аран йынăшать çын.

Сестра малтанлăха камфора уколĕ турĕ те санитаркăна часрах хирург патне чуптарчĕ. Хăй, вăл киличчен, больницăри йăла тăрăх, чир историйĕ

çине аманнă çыннăн адресне çырма шутларĕ.

— Юлташ, ăçта аманнă эсир?

— О-ох...

— Калаçма йывăр-и-мĕн сире?

Хирĕç ответ пулмарĕ.

Сестра, аманнă çын калаçма пултарайманнине кура, урăх ыйтусем памарĕ.

— Мĕн пулнă?

Палатăна икĕ хирург кĕчĕç. Пĕри—аслă тухтăрĕ, сарăрах тăваткал питлĕ, мăнтăртарах хырăмлă вăтам çулхи çын, тӳрех сехет кăларса, аманнă çыннăн алтымарне шутлама пуçларĕ. Тепри—çамрăк ординатор, чĕрĕ, васкавлă çын, суранне уçса пăхрĕ.

— Да, операцисĕр ĕç тухмасть, Вениамин Иванович, мĕн те пулин хырăмри орган аманнă.

Аслă хирург—Вениамин Иванович, алтымарне шутласа пĕтерсен, суранне пăхрĕ, унтан ăшне трубкăпа итлерĕ.

— Тӳсейĕ-ши, пульс вăйсăр...

— Ă-ăх...

— Юлташ, ăçта амантăр?

Аманнă çын пĕр сăмах та ăнланмалла каласа параймарĕ.

— Халех операци тăвас пулать!

— Петр Ермолаевич,—ăнлантарчĕ аслă хирург,—касма ан васкăр, вăл тармасть, сĕтел çине хуриччен вăйне пухас пулать унанне, унсăрăн, çĕçĕпе пĕрре касса илсенех, сывлама чарăнать.

— Тĕрĕс, анчах мĕнле?

— Юн ярас пулать, ун хыççăнах операци пуçламалла. Халех сăнаса пăхăр, мĕнле группа? А эсир, сестра, вăхăтлăха физиологи растворне ярăр!

Вениамин Иванович, мĕн тумаллине çирĕп йышăнса, тепĕр пӳлĕме кайса аллине çума тытăнчĕ.

— Пĕрремĕш группа, Вениамин Иванович!

— Пăхăр ледвике, консервланă юн пулас пулать.

Сестра физиологи растворне ярса пĕтерсен, чирлĕ çын, юн давленийĕ пăртак хăпарнипе, пĕр хушă тăна кĕнĕ пек пулчĕ. Анчах вăл нумая пымарĕ. Сестра сăнаса тăна çĕртех, тем калас килнипе çăварне карма пуçларĕ.

— Вилет! — шутларĕ сестра хăй ăшĕнче.

Вилекен çынсене сестра пĕрре кăна мар курса пăхнă. Виçĕ çул ĕçленĕ хушăра мĕн тĕрлĕ чирпе, мĕнле вăхăтра тата кам вилсе кайнине те лайăх астăвать. Хăш çынсен вилĕмĕсене хăнăхса та çитнĕ ĕнтĕ вăл, тепĕр чух çавăн пек пулмалла пекех туйăнать. Вилмелле вĕт кашни çыннăн хăçан та пулсан. Анчах кун пеккине, чир лекмесĕр, кĕтмен çĕртен, вилме вăхăт çитмен çĕртен вилекен çамрăк çынна шел, тем тесен те. Пăхса тăнă чух пушшех хурлăхлă ун пек чухне.

— Пĕрремĕш группа юн консервлани çук!—илтĕнчĕ Петр Ермолаевич сасси.

— Мĕншĕн ирхине каламарăр? — вăрçса пăрахрĕ Вениамин Иванович. — Вилет вĕт ĕнтĕ, çăлаймастпăр! Эх!

Вениамин Иванович çиленсе кайса, темĕнле япалана урайне ӳкерни илтĕнчĕ.

— Ирхине пурччĕ, хăвăр ярса пĕтертĕр вĕт, Вениамин Иванович.

— Хирĕç ан чĕннĕ пултăр! Халех чĕнĕр донор[1].—Петр Ермолаевич аптранипе сестрапа канашласа пăхма палатăна пычĕ.

— Кама чĕнетпĕр?

— Çăлать-и юн? Кая юлман-и?

Петр Ермолаевич чирлĕ çыннăн сывлăхне тепĕр хут тĕпчесе сăнарĕ.

— Халех пулсан çăлать, а... донор киличчен...

— Çăлать пулсан... хам паратăп юн, манăн пĕрремĕш группа!

---

[1] *Донор*—больницăна валли хăй юнне паракан çын.

Кун пек кĕтмен инкексем килсе тухнă чух хирурги практикинче çынна икĕ япала кăна çăлма пултарать: ĕçе пĕлни (вăл пур çĕрте те кирлĕ)—пĕр енчен тата ĕçе хăвăрт, вăхăта ирттерсе ямасăр туни,—тепĕр енчен. Ку тĕлĕшрен пирĕн хирургсем, мухтамасăрах калас пулать, хăйсен вырăнĕнче çирĕп тăракан çынсем пулнă. Чăн, Вениамин Иванович, ĕç майлă пулмасан, яланах нервничать тунă тата ятлаçма юратнă. Анчах, тепĕр тесен, унăн помощникĕсем унпа чылай ĕçлесе курнă май (хирург ĕçĕ çавнашкал, лăпкă мар ĕнтĕ вăл), аслă хирург вăрçкаланине хăнăхса çитнĕ, ун çине çиленмен. Ĕç майлă пырсан е кирлĕ инструментсем пурте ал айĕнче пулсан, Вениамин Иванович урăхла, савăнса, култарса тата хăвăрт ĕçленĕ. Петр Ермолаевич та хăйĕн черечĕпе, операцисенче пулăшнă чух (хăй тунă чух та çавах), хăвăртлăх енчен аслă хирургран кая юлса пыман.

Вениамин Иванович ятлаçма чарăнчĕ. Сестраран хăвăрт юн илсен, чирлĕ çынна операци сĕтелĕ çине хучĕç. Сывлăшĕ пĕтсе килнĕрен, ăна пĕрикĕ хутчен вăйпа сывлаттарса илме лекрĕ. Ку ĕçе Петр Ермолаевич турĕ. Çак вăхăтра Вениамин Иванович вена шыраса тупса, йĕпне чиксе лартрĕ. Ĕненĕр, çĕр грамм кайрĕ-и, каймарĕ-и,—чирлĕ çыннăн пичĕ çине кăшт хĕрлĕ сăн тухрĕ. Пĕтĕмпе ярса пĕтерсен, куçĕсене уçма пуçларĕ.

— Ха-х... алех!

— Халех! халех! Ан кăшкăрăр, калаçма юрамасть сире!—чарчĕ Вениамин Иванович.—Сестра, тăрăр пуç умне, ан калаçтарăр!

Юн ярасси ăнăçла иртсен, операци пуçланчĕ. Ĕç пăртак та пулин эфир шăршлаттармасăр пулаймарĕ. Вениамин Иванович, чирлĕ çыннăн хырăмне касса уçсан, сестраран ыйтрĕ:

— Сывлать-и?

— Лайăх сывлать, пичĕ кăна тарланă.

— Апла пулсан çăлтăмăр, суран вилмеллех хăрушă мар: брыжейка юн тымарĕ татăлнă та, пĕр çĕртен пăртак варĕ шăтнă.

— Да, — килĕшрĕ унпа Петр Ермолаевич та,—юн кайнипе çеç тăнран кайнă.

Операци ăста алăсенче нумай тăсăлмарĕ. Юн та урăх тăкăнмарĕ. Мĕншĕн тесен, аманнă юн тымарĕ хырăма юхса тулнă юн çăракĕпе хăех чарăннă, питĕрĕнсе ларнă пулнă. Çав майпа малтан юн яни, Вениамин Иванович каланă пекех, пит вырăнлă пулчĕ. Юн пĕр çĕртен кĕрсе, тепĕр вырăнтан (аманнă юн тымарĕнчен) юхса тухни пулмарĕ.

— Малтан юн кайнипе аптăранă, халь ĕнтĕ шанчăк çук мар, — терĕ Вениамин Иванович, операцине пĕтернĕ хыççăн перчаткисене хывса.— Но... сестра, малашнехи сирĕнтен те нумай килет, юн парса çăлтăр пулсан, вĕçне çитичченех тăрăшăр, сывăрма ни-ни!.. Çĕрĕпех ун çумĕнче ларăр: назначенисене вăхăтра туса пырăр, кĕтмен çĕртен хăрушăлăх килсе тухсан, хама чĕнтерĕр. Ăнлантăр-и?

— Пĕлетĕп, Вениамин Иванович.

Операци журналĕ çине çырса пĕтерсен, тухтăрсем чирлĕ çынна тепĕр хут пăхса тухса кайрĕç. Сестра пукан илсе ларса ларчĕ.

## II

Халăх çинче сестра пĕчĕк çын шутланать. Культурăллă çынсем хушшинче вăл паллах мар. Инженер, тухтăр, агроном, преподаватель—ак камсен виçипе виçме вĕреннĕ эпир ку чухне уйрăм çынсен культурăлăхне. Анчах ĕненĕр. Çын ăнăçлă сывалса тухассинче сестра тӳпи пĕртте пĕчĕккĕ мар. Кĕтмен инкек вăл яланах сасартăк килсе тухать. Хирурги уйрăмĕсенче, ĕç хăйне расна йывăр пул-

ниле, ку вара пуринчен те ытларах паларать. Кунта опытлă сестра тепĕр чух çамрăк та практики сахал тухтăртан ытларах усă парать. Ахаль мар ĕнтĕ, нумайтарах ĕçлесе курнă тухтăрсем нихçан та сестрана улăштарма килĕшмеççĕ.

Çак тĕлешрен халь дежурить тăвакан сестрана Вениамин Иванович ятласа курнине никам та астумасть. Ытти тухтăрсене—помощниксене тивкеленĕ е тивкелет пулсан, ку сестра çинчен сăмах пулман. Мĕнле ятлăн? Иртнĕ Октябрь праçникĕнче ăна вăл хăех преми панă. Унтан вара сестра татах лайăхлатнă хăйĕн ĕçне, уншăн сахал мар тав та илтсе курнă сывалса тухса каякан çынсенчен. Питех ĕненмесен, алăк патĕнче çакăнса тăракан сĕнӳсен кĕнеки çине çеç кайса пăхăр, унта сахал мар çырнă ăна мухтаса. Тĕрĕс ĕнтĕ, нимĕн иккĕленмесĕрех шанчĕ ку сестрана Вениамин Иванович.

— О-ох!

Чирлĕ çын йынăшса илчĕ. Анчах паçăрхи пек тискеррĕн, хăрамалла мар, яланхи пек—ыратса йынăшакан çын пек.

— Мĕн?

— Пачă!

Сестра таса марля илсе, чирлĕ çын пичĕ çинчи тар тумламĕсене шăлса илчĕ.

— О-ох! Ыратать!

— Мĕн ыратать?

— Хырăм.

Сестра тухтăр хăварнă назначени тăрăх, морфи уколĕ тăвас тесе, шприц илме тепĕр пӳлĕме тухрĕ.

— Ĕçме! Шыв! Шыв!

Чирлĕ çын сăмахĕсене тĕрĕс калама пуçларĕ, эфир мухмăрĕ иртме пуçлать пулас. Анчах пĕтĕмпех мар-ха, унăн халь тăнĕ пăтранать, организм ыйтнă япаласене çеç аса илкелет вăл.

— Шыв!

Сестра таврăннă çĕре юнашар выртакан çын, хĕрхеннипе, аманнă çынна шыв ĕçтерме хатĕрленсе тăнă. Стакание тултарса çăварĕ патнех илсе пынă.

— Мĕн тăватăр эсир, Кириллов?—кăшкăрса тăкрĕ сестра.—Вĕлеретĕр вĕт çынна, юрамасть ĕçтерме!

Тепĕр минут иртнĕ пулсанах е сестра хăй пĕлмен пулсан, чирлĕ çынна шыв ĕçтернĕ пулĕччĕç. Çакăнтан вара тепĕр инкек килсе тухнă пулĕччĕ. Пурăнĕччĕ-и ун хыççăн вăл çын, пурăнмĕччĕ и—ăна калама хĕн. Çапах, кайранхине хăвăртрах кĕтмелле пулĕччĕ. Анчах вăл пулмарĕ, опытлă сестра вăхăтра çăлса хăварчĕ.

— Шыв! Шыв!

Тепĕр хут физиологи растворĕ парсан, чирлĕ çын пĕр хушă лăпланса выртрĕ. Морфи те пулăшрĕ пулас пăртак. Сестра ал тымарĕ йĕркеллĕ тапнине сăнаса пăхрĕ те, хăй те, ыйхă пусса килнипе, ларнă çĕртех тĕлĕрме пуçларĕ.

— Хă-ăк-к!

Кĕтмен çĕртен чирлĕ çын хăсма пуçларĕ. Опытлă сестра кунта та хăраса ӳкмерĕ. Операци хыççăн хăсăк мĕнрен килнине пĕлсе, хырăмĕ çине сивĕ хучĕ, уçăрах сывлăш пыма утиялне кăкăрĕ çинчен пăртак уçрĕ, çăварне çине-çинех марльăпа тасатса тăчĕ.

Çиелтен пăхсан, вĕсем нимĕн те мар пек курăнаççĕ. Анчах сестра вĕсене, çухалса каймасăр, вăхăтра, пĕлсе туни йывăр чирлĕ çынна операци хыççăнхи вăхăта, тем тесен те, ăнаçлăн чătса ирттерме пулăшрĕ. Сăмахран, ĕçес килни е хăсма пуçлани хăйĕн вăйне чакарнисĕр пуçне, вĕсемпе кĕрешмен пулсан, хырăмри çĕленĕ суранăн та сиенлĕ пулнă пулĕччĕ. Вăл çеç те мар, вăхăтра пулăшу пани ыратнине те лăплантарчĕ.

— Сестра!—чĕнчĕ чирлĕ çын, тăна кĕрсе çитсен,—мĕнле хушамат сирĕн?

— Розова.

— Ят?

— Нина Михайловна.

— Эпӗ ӑӑштах сисрӗм, эсир мана хӑвӑр юна патӑр...

— Кайран! — чарчӗ сестра. — Шӑп выртӑр халь, калаҫма юрамасть сире.

— Нина Михайловна!—алӑка уҫса чӗнчӗ санитарка.—Тумтирӗсене ӑҫта хурас унӑнне, ытла юнланса пӗтнӗ.

— Халиччен ӑҫта хунӑ, ҫавӑнтах хурӑр. Анчах, чим! Кӗсйинчи документсене кӑларса илӗр, тен, укҫи те пулӗ, кунта илсе килӗр, шкапа питӗрсе хуратӑп.

Аякра, ҫӗрлехи сменӑна йыхӑрса, завод ӑӑшкӑрни илтӗнчӗ.

— Часрах! Хӑвӑртрах, Нина Михайловна.

— Мӗн пулчӗ?

— Часрах тетӗп!

Чирлӗ ҫын кӗтмен ҫӗртенех тапкаланса кӑшкӑрма пуҫланӑран, Нина Михайловна хӑраса ӳкрӗ.

— Кӑшт кӑна тӑхтӑр, тархасшӑн кӑшт кӑна! Халех килет тухтӑр!

— Тухтӑр мар, милици кирлӗ халь. Часрах, тетӗп! Хӑвӑрт!

— Мӗн? Аташма пуҫларӑр эсир, юлташ!

— Аташмастӑп эпӗ, тӑна кӗтӗм эпӗ халь. Часрах! Тархасшӑн, пӗтеҫҫӗ вӗт, пӗтеҫҫӗ...

— Камсем пӗтеҫҫӗ?

— Пӗтеҫҫӗ. Пилӗк пин ҫын пӗтет. Халех сывлӑша вӗҫсе каяҫҫӗ!

Нина Михайловна урӑхла ӑнланма пултараймарӗ, аташать тесе, чарма хӑтӗрленчӗ, чармасан майӗ те ҫук. Чирлӗ ҫын ӳкме пултарать. Суранне уҫса парахать. Акӑ, бинтсем илсе килсе, унӑн аллине, урисене ҫыхма пуҫларӗҫ.

— Ан ҫыхӑр! Итлӗр! Аташмастӑп эпӗ! Телефон! Телефон!

Вӑйпа тытса ҫыхса лартсан, чирлӗ ҫын текех тапкаланаймарӗ. Кӑшкӑрса ытти чирлисене чӑрмантарнӑран, сестра ӑна вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе тутинчен те хупласа тӑчӗ.

— У-у-у... Пилӗк... пп-ин... яр-рӑр!

— Нина Михайловна, хучӗсене кӑларса илтӗм, мейӗр!

Сестра чирлӗ ҫынӑн документсене тӗрӗслеме тытӑнчӗ. Укҫи нумаях мар. Паспорт пур. Унта—Строилов Сергей Сергеевич, ҫирӗм пилӗк ҫулта, инженер, тесе ҫырнӑ. Сестра, малалла уҫса пӑхсан, паспорт ӑшӗнче тепӗр хут тупрӗ. Ак мӗн ҫырнӑ пулнӑ унта:

„Террора хирӗҫ террор! Эсир большевиксем, ман юлташсене арестлерӗр, вӗсем урлӑ мана та тытма шутлатӑр пулӗ. Парӑнмастӑп сирӗн алла чӗррӗн. Вилетӗп чикӗнсе хама-хам! Анчах хам ҫине илнӗ ӗҫе организацири юлташсем умӗнче пурнӑҫласах каятӑп: завод—сывлӑшра".

— Бандит!—сурчӗ сестра чирлӗ ҫын ҫине,—бандит! Мӗн тума патӑм-ха юн? Хама кирлӗ юна патӑм ҫав бандита.

Сестра палатӑран пуҫне тытса тухрӗ. Анчах мӗнле завод, мӗнле сывлӑшра? Мӗнле организаци? Ӗҫ тӗттӗм, вӑхӑта сая яма юрамасть.

— Часрах! Пилӗк пин ҫын пӗтет! Хӑвӑртрах!—Сестра телефон трубки патне пычӗ.

III

Сестра чӗннипе килнӗ капитан—НКВД сотрудникӗ, Строилов тӑна кӗрсе ситсен, унтан чи кирлӗ сведенисене ҫырса илме пултарчӗ.

— Апла пулсан, халиччен кирлӗ ҫӗре мӗншӗн пӗлтермен?

— Ӗненӗр, каласа пама ман алӑра пӗр татӑклӑ материал та пулман. Но... эпӗ ун хыҫӗнчен малалла сӑнаса пыма шутларӑм. Ну, ун ҫинчен кайран тӗплӗрех каласа парӑп, халь сирӗн ҫынсене, завода хӑвӑртрах ҫӑлмалла".

Капитан, палатӑран тухса, телефонпа калаҫса килчӗ.

— Мӗнле амантнӑ сире?

— Вăл кĕтмен çĕртен пулчĕ. Эпĕ каçхине, уçăлмалла тесе, заводран вăрман урлă килме тухрăм. Чечексем илĕртнипе çулран пăрăнарах утрăм. Сасартăк такăнтăм. Пăхатăп—провод, завод патнелле тăсăлать. Инçех мар, хайхи, Шуллера курах кайрăм. Мана курсан, чечек татма пуçларĕ. Мĕнле проводне пĕлме тытса пăкас тесе, пуçа кăна пĕкрĕм, хыçалтан такамсем куçа, çăвара темĕнпе хупласа илчĕç те пĕр сăмах та кăшкăраймарăм, таçталла сĕтĕрсе илсе кайрĕç мана. Çанçурăм туратсем çумне çапăнса ырат нине сисрĕм, унтан нӳрĕ пек туйăнчĕ. Хăйсем чĕнмерĕç пĕр сăмах та. Кайран, такăшĕ. сылтăм аларан тытса, темĕскер çыртарчĕ. Астăватăп, малтанхи саспалли Т саспалли пек туйăнать. Унтан инçех мар урапа сасси илтĕннĕ пек туйăнчĕ. Çак вăхăтра яшт! хырăм ыратса кайрĕ. Юн юхса аннине тата чупса тарнине астăватăп, вара ăнран кайнă. Кам илсе çитерне хулана—пĕлместĕп халĕ те.

— Мĕншĕн çĕçĕпе чикнĕ? Ма пăшалпа пемен? Мĕншĕн хырăмран чикнĕ?

— Пăшал сасси инçете илтĕнет, çĕçĕ сасă памасть, çавăнпа пулĕ, тетĕп ăна. А... мĕншĕн хырăмрам чикнĕ—вăл та паллă. Пуçа çĕçĕ чиксе кĕртме шăмă чăрмантарать, хырăм — çемçе. Тĕрĕссипе, вĕсем чĕрене чикесшĕн пулнă пуль, урапа сасси илтĕннипе васкаса хырăмран лектернĕ.

Ыйтса пĕлесси малалла тăсăлман. Вăхăт васкамалла пулнăран (тен, операци хыççăн пурне те тĕпчеме йывăррине те шута илнĕ пулĕ), тĕпчев çав вырăнта татăлнă. Ку вăхăтра аслă тухтăр пырса кĕчĕ. Капитанпа шăппăн калаçса илнĕ хыççăн, вăл сестрана çыххисене салтма хушрĕ.

— Хăвăртрах! Часрах, юлташ капитан!

Питĕ васкатса кăларса ячĕ Строилов тĕпчеме килнĕ капитана. Хăй пуçне чӳрече еннелле çавăрса хурса, урамалла пăхрĕ.

Тул çутăласси инçе халĕ. Аманнă хыççăн нумай иртнĕ пулĕ виç-тăват сехет, ытла мар. Анчах халь çынсем хытă çывăрнă вăхăт. Палатăра та хăрлаттарсах çывăраççĕ. Çапах çуллахи çĕр ним курăнмиех тĕттĕм мар. Инçех мар шыв юхса выртни курăнать. Леш енче, вăрман ăшĕнче, завод трубисем палăраççĕ. Çавăнта ĕнтĕ, Строилов шучĕпе, халех тискер ĕç пулса иртмелле. Мĕнле чăттăр чĕре çавна пăхса выртсах ирттерме? Ху вилсен те, чупса каяс килет хăвăртрах! Çук вĕт, çитес çук, ура çине тăма та вăй çитмест. Строилов ача пек макăрса ячĕ.

— Ну... лăпланăр, мĕн кирлине сирĕнсĕрех тăваççĕ, — чарчĕ тухтăр.

— Тархасшăн, Вениамин Иванович, минтер хурса парăр çурăм айне... пăхса хăть ларам!

— Ларма юрамасть, ăнланăр, суран çăмăл мар сирĕн.

Пу-пу-ппу!.. илтĕнчĕ сасартăк шыв çинчен, уçнă чӳрече витĕр.

— Ох! Ох! Пĕтрĕç! Пĕтрĕ-ĕĕĕç!..

Строилов труках тăнран тухрĕ. Сестра, тухтăр хушнипе, нашатыр спирчĕ пырса шăршлаттарчĕ.

— Моторка вĕт вăл!

— Чăн? Пăхам-ха, пуçа çĕклеме пулăшăр-ха!

Сестра ăна пулăшрĕ. НКВД формине тăхăннă пилĕкултă çын моторкăпа леш еннелле каçнине курсан, Строилов аллине хуçлатса, чӳрече çине хучĕ те малалла аллисемпе тата пĕвĕпе сулăнса илме пуçларĕ.

— Хо-оп. Хо-оп!

— Мĕн тăватăр эсир?

— Пулăшас тетĕп. Хăвăртрах çитчĕр!

— Сирĕнсĕрех çитеççĕ, выртăр лăпкă, хăвăра сиенлетĕр.

Сестра Строилова каялла выртарса, тӳшекне çемçетсе пачĕ. Унтан,

пĕр çур сехет пулĕ, чĕнмесĕр ларчĕ. Шăнкăр! тутарчĕ юнашар палатăра. Сестра унта кайсан, Строилов, тӳсейменнипе, каллех тăрса ларчĕ.

— Çитрĕç-ши?

Моторка леш енче тăрать, çыннисем çук, завод та çав маях ларать.

— Каллех тăнă эсир, выртăр!

Тепĕр сехет яхăн татах асапланса выртма лекрĕ Строиловăн. Хăйшĕн мар, çынсемшĕн, питĕ вăрăм туйăнчĕ çĕр. Ак, арантан çитрĕ кĕтнĕ вăхăт. Чӳречĕ витĕр хĕвел пайăрки ӳксен, моторка сасси çĕнĕрен илтĕнчĕ. Анчах паçăрхи пек мар, сасси унăн çывхарнăçемĕн çывхарса пычĕ.

— Ак, пăхăр ĕнтĕ! — терĕ сестра халĕ хăех.

Моторка варринче Строилова вĕлерме тăнă çынсем лараççĕ. Хĕвел çуттинче, шыв çап-çутах сарăлса выртнипе, Шуллер сăнĕ питех те уççăн курăнать. Пуçне уснă вăл, аллисене каялла çыхнă. Йĕри-тавра НКВД сотрудникĕсем лараççĕ.

— Тин! Тин лăплансчĕ ман ăш, Нина Михайловна. Кайма пултаратăр ĕнтĕ халĕ, ан татăр текех ыйăха ман пирки. Ыратмасть ман нимĕн те.

Строилов кăшт çеç тĕлĕрсе кайма пуçланăччĕ, сестра каллех пычĕ.

— Савăнмалли хыпар, Строилов юлташ, телефон тăрăх пĕлтерчĕç: бандитсене те тытнă, провода завод сиксе кайиччен икĕ минут малтан татма ĕлкĕрнĕ. Сире хăвăртрах сывалса тухма ыр сунчĕç.

— Тав, Нина Михайловна. Сывăратăп ĕнтĕ эпĕ халĕ... лăпкăн; хăвăр та канăр, чăрмантартăм çĕр каçипе!

— Килĕр, çыхса ярам, пушанса кайнă сирĕн çыхни.

Сурана çыхнă чух Нина Михайловнăн Строилов çине куççулĕ шăпăртатса юхса анчĕ.

— Каçарăр, Строилов юлташ!

— Мĕншĕн?

— Тархасшăн каçарăр, çав тери тӳрĕ, чĕререн парăннă патриота — сире эпĕ каçхине чăтма çук сăмах каласа хурлантартăм.

— Каçарăр хăвăр та, чăрмантартăм çĕрĕпех. Сирĕн пек патриота та — хăй юнĕпе пилĕк пин рабочи пурнăçне сыхласа хăварнă çынна — эпĕ пĕрремĕш хут куратăп.

## IV

Чирлĕ çынна сыватнă чух унăн чун-хавалне хăпартма пĕлни те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пурте пĕлеççĕ, тухтăрсем хăйсем эмелленĕ çынна вилетĕн, тесе нихăçан та каламаççĕ. Шухăшласа пăхăр-ха ĕнтĕ хăвăр та, йывăр выртакан çынна вилетĕн тесе каласан, мĕн пулать унпа? Çав çынах, унăн кăмăлне хăпартма пĕлсен, вăл кĕтмен çĕртенех (пур чухне те мар ĕнтĕ) ура çине тăрать. Чирлĕ çын кăмăлне хăпартмалли майсем тĕрлĕрен пур: чи малтан йĕркеллĕ, пĕлсе эмеллени; унтан лайăх, ачашшăн пăхни; лăплантарса тăни е, урăхла каласан, унăн чирĕ çинчен çемçетсе, çăмăллатса ĕнентерӳллĕн каласа пани. Çаксем вĕсем, кирек хăшĕ пулин те, организм вăйне хăпартма пулăшаççĕ. Организм вăйĕнчен, хăйĕн черечĕпе, ăнăçлăн сываласси килет. Нихăçан та манма кирлĕ мар, чирпе организм хăй кĕрешет, эмел пулăшать кăна. Çакăнтан курăнать ĕнтĕ, хирург операци кăна тума пĕлет пулсан, ун хыççăн пăхма пĕлмест пулсан — хакĕ унăн пĕр пус анчах. Çакăнтанах тата акă мĕн курăнать: сестра тухтăр хушнисене тунисĕр, эмелсем леçсе панисĕр пуçне, хăйĕн ĕçĕпе чирлĕ çын кăмăлне хăпартма пĕлмест пулсан, — хакĕ ăна çур пус. Унтан та ытларах нумай чирлĕ çынсемшĕн сестра сăнĕ, вăл хăйне хăй тирпейлĕ тытни тата йăваш пулни те пустуй япала мар. Ахаль мар ĕнтĕ, Вениамин Иванович хăй патне ялавах çавăн пек сестрасем пухма тăрăшнă, ан-

сăртран урăх тĕрли килсе лексен (апла туни тĕрĕс мар пулин те), ăна вăл хăй патĕнчен урăх çĕре, ну... калăпăр, инфекци уйрăмне ăсатма васканă.

Вулакан пĕлет, тен хăшĕ-пĕрисем хăйсем те пулса курнă пулĕ унта, Вениамин Иванович пуç пулса тăракан хирурги уйрăмĕ операци енчен клиникăсенчен кая юлмасть. Анчах мĕнле тăрать ĕç чирлĕ çынсене пăхас, вĕсен кăмăлне хăпартас тĕлĕшрен?

Кирек кам мĕн каласан та, пирĕн сестра вăл енчен питĕ кăмăллă. Вăл Строилов инженера çак эрне хушшинче çав тери тăрăшса пăхрĕ: малтан, йывăр вăхăт иртсе кайиччен, час-часах ун çумĕнче ларса, мĕн кирлине вăхăтра туса пычĕ. Акă пĕр тĕслĕх: виççĕмĕш кунĕнче Строилов кĕтмен çĕртен вĕриленсе кайрĕ. Тухтăр çук тĕлте пулнипе, Строилов хăрама пуçларĕ. Нина Михайловна чи малтан суранне салтса пăхрĕ. И... чăн. Строилов малтанхи çĕрĕнче тапкаланса суран вырăнне пăртак вараланăран, пĕр çĕвĕ тĕлĕнче ӳт хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе ларнă. Нина Михайловна ăна, çав çĕвве, вăхăт çитиччен илсе, суран айне купаланса ларнă пӳрне каларса, шалалла каясран чарчĕ. Нумай мар ĕçĕ. Анчах пĕр çиппе кăна илни температурăна чакарса, чирлĕ çын кăмăлне хăпартма пулăшрĕ. Кайран, Строилов ура çине тăма пуçласан та, Нина Михайловна пурĕ-пĕр ăна пăхма пăрахмарĕ; кашни чирлĕ çыннăн аппетичĕ расна, урăх тĕрлĕ пулнине кура, ирхине килнĕ чух, хăй аллипе мĕн те пулин çемçерех çимĕç илсе килсе пачĕ; ак паян ирхине те иçĕм çырлипе пĕçерне шурă булка илсе килнĕ. Вулас киле пуçласан, Нина Михайловна Строилова каллех савăнмалла çырнă кĕнекесем тупса килсе панă. Пушă вăхăтра ăна савăнмалла япаласем çинчен каласа катартнă. Суйни çинчен калас пулсан... ăна эпир лайăххăн пĕлместпĕр, анчах паллă, Строилов ура çине тăриччен хырăмĕ аманни çинчен пĕлмен.

Калас пулать, çавăн пек пăхни Строиловшăн ахаль иртмен. Кунсем иртнĕ май вăл Нина Михайловна ăна çав тери хăнăхса çитнĕ, ăна курмасан, унăн ăшĕ вăркама пуçланă. Паян каçхине те акă, хăйне ыран больницăран кăларассине пĕлсе, вăл Нина Михайловнăпа (телейве кура, паян каллех вăл дежурить тунă) чĕререн калаçма ун пӳлĕмне пычĕ. Ку вăхăтра Нина Михайловна юн хатĕрлесе тăнă пулнă.

— Каçарăр, пушă мар пулас эсир?

— Да, Строилов юлташ, сире юн янă пек, халех юн ямалла пулать!

— Кама?

— Язва пирки юв кайнă çынна илсе килеççĕ. Кайран... ыран тухатăр эсир!

— Тухиччен сирĕнпе ларсах калаçса пăхас тенĕччĕ эпĕ.

— Юрать, кайран...

Часах чирлĕ çынна илсе пычĕç. Анчах ку хутчен ĕç нумая тăсăлмарĕ. Вениамин Иванович пырса çур сехет хушшинчех ĕçе пĕтерсе кайрĕ.

— Татах тепĕр çынна чĕртрĕр?

Нина Михайловна ăшшăн кулса илчĕ.

— Телей çавăн пек пулас сирĕн, Нина Михайловна, çынсене чĕртмек çуралнă эсир, пĕркунне—мана, халь—ăна. Пĕлместĕп эпĕ, темĕнпе ырă пулмалла ĕнтĕ сире.

— Нимĕнпе те мар.

— Çук, Нина Михайловна, тав тума, темле, манăн сăмах çитмест: вилнĕ çынна чĕртрĕр, пилĕк пин çынна вилĕмрен хăтартăр, государствăн темиçе миллион тенкĕлĕх пурлăхне—заводри пурлăха çăлса хăвартăр.

— И-и... эпĕ мар вĕт, тухтăрсене тав тумалла уншăн. Эпĕ... пĕчĕк çын.

— Эпӗ те ҫаплах шутлаваччӗ малтан, Нина Михайловна. Сестрасем пур тенине кӑна илтнӗ. Халӗ... куртӑм, ҫын чӗрӗлессинче ҫурри сиртен килет. Инженер эсир хӑвӑр ӗҫӗрте.

— Ан мухтӑр ӗнтӗ, ӑҫтан ҫитӗпӗр эпир инженера!..

— Пӗр мухтамасӑр калатӑп, Нина Михайловна: эсир хӑвӑр вырӑнта пысӑк, мухтава тивӗҫлӗ инженер. Чӑнах, ҫакӑнта килсе курсан... тӗлӗнмеллех ҫав: завод ҫӗнӗ машинӑсем кӑларнӑ пек, ҫирӗп ҫынсем юсанса тухаҫҫӗ сирӗн патӑртан. Мӗн пур ӗнтӗ ҫавӑнтан хакли? Мӗн пур ҫын сывлӑхӗнчен хакли?

— Пурте мар!..

— Конешнӑ, но... ӗненӗр, пурнӑҫра чи хакли—сывлӑх—сирӗнтен нумай килет! Ак илӗр донора. Мӗншӗн инженер мар вӑл хӑй вырӑнӗнче? Нимӗнле эмел пулӑшайман ҫӗрте—донор ҫынна вилӗмрен ҫӑлса хӑварать. Мӗн тери паха ӗҫ ӗнтӗ Совет Союзӗнче донор пулни. А... вӑрҫа вӑхӑтӗнче? Хӗҫпӑшалпа пӗрлех кирлӗ пулать донор. Вӑй кӗрсе ҫитсен, эпӗ те донор пулатӑп, тем тесен те.

— Илтме аван!

Чирлисене ҫывӑрма вӑхӑт ҫитнипе, санитарка ҫутӑсене сӳнтерсе тухрӗ. Часах палаткӑсенче калаҫусем чарӑнчӗҫ.

— Ну, калӑр ӗнтӗ, мӗние ырӑ пулас сире, Нина Михайловна?

— Нимӗнпе те мар, эсир кӑмӑллӑ кайни маншӑн та, больницӑшӑн та ырӑ пулнинчен темиҫе хут хаклӑ.

Строилов час ҫывӑраймарӗ. Мӗнпе кӑмӑл тӑвас сестрана?—тухмарӗ ун ӑшӗнчен шухӑш. Кинона чӗнес, подарок илсе парас,—ҫителӗклӗ мар пек туйӑнать. Вӗт Нина Михайловна ӑна хӑйӗн таса юнне панӑ. Халӗ те вӑл юн ӑшчикре юн тымарӗсем тӑрӑх ҫанҫурӑма ӑшӑтса, ачашласа чупнӑ пек туйӑнать. Ҫамрӑк юн пуҫ мимине те ҫӗнетсе улӑштарса ячӗ. Парне сахал, тем тесен те. Сахал япалапа ӑш выртмасть. Юратас килет сестрана, вӗҫӗмсӗр юратас килет Строиловӑн. Хӑй пулӑшма пултарнӑ таран, хаклӑ юна парса вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑшӑн сестрана, ҫав тери хаклӑ донора, пӗтӗм организма, малашнехи мӗнпур пурнӑҫа кӑмӑлпа халалласа парас килет. Ҫак вӑл, больницӑран ыран тухакан Строилов шучӗпе, нимрен хаклӑ парне пулмалла ӗнтӗ. Анчах килӗшӗ-ши ӑна илме Нина Михайловна?

Шухӑшне хӑй ӑшӗнче татса хунӑ вӑхӑтра Нина Михайловна лӑпах палатӑна пырса кӗчӗ. Анчах хальхине Строилов патне пымарӗ, ҫывӑрать тесе, чӑрмантарма шутламарӗ пулас. Ҫӗнӗрен юн янӑ ҫын мӗнле выртнине тӗрӗслерӗ те, палатӑран тухнӑ чух, Строилов ҫине пӑхса илмесӗр пурпӗрех тӳсеймерӗ.

## V

Паян Нина Михайловна ҫӗнӗ хваттере куҫнӑ. Кунӗпе япала турттарнӑ, калла-малла темиҫе хутланӑ, хытах ывӑннӑ. Ҫапах та, каҫ пулнӑ ҫӗре пӳлӗме хатӗрлесе ҫитерме вӑхӑт ҫитеймен. Ҫавӑнпа вӑл паянлӑха терраса ҫинчех ҫывӑрма шут тытрӗ. Тепӗр тесен, ҫу вӑхӑтӗнче тулта ҫывӑрма усӑллӑ та: ӑшӑ ҫанталӑк, уҫӑ сывлӑш. Юнашарах чие ҫырли йывӑҫҫисем, шултӑра ҫырлисене тӳсеймесӗр, тураттисене усса ларнӑ, пӗр-икӗ ҫырли пуҫ вӗҫнех тӗкӗнет; леререхре, пахча тӑсӑлнӑ май, ытти сад йывӑҫҫисем сарӑлса ларнӑ; аялтан, симӗс курӑк ӑшӗнчен, чечексем хитре пуҫӗсемпе ҫӳлелле кармашнӑ.

Нина Михайловна вырӑн сариччен, чӑтаймасӑр, пахчана тухса утса ҫӳрерӗ. Паллашса ҫитсен, ҫӗнӗ вырӑн ӑна ытлашшипех кӑмӑла килчӗ.

Ҫак вӑхӑтра, тепӗр вӗҫӗнчи симӗс листаллӑ пӳртӗн балконӗ ҫинчен,

Нина Михайловнăна пĕр çамрăк çын пăхса тăнă. Ăсталла утнине, мĕн тунине шăппăн сăнанă. Ак, Нина Михайловна ун еннелле çаврăнса йывăç тураттинчен çырла татса илме тăрсан, çамрăк çын балкон çинчен васкаса кĕрсе кайрĕ те тумланма тытăнчĕ. Шурă туфли, çўхе çăм брюки, йĕрлĕ шурă кĕпе тăхăнчĕ, пурçăн галстук çакрĕ, çўçне тураса каялла выртгарчĕ, юлашкинчен хаклă йышши духипе пĕрхĕнчĕ те пахчана васкаса тухрĕ. Çырлаллă йывăç тĕмĕ тĕлне çитсен, чарăнса тăчĕ, йĕри-тавра пăхкалама пуçларĕ.

— Нина Михайловна!

Шăппăн чĕннине илтмерĕ Нина Михайловна. Вара çамрăк çын унăн умнелле тепĕр утăм ярса пусрĕ.

— Нина Михайловна, эпĕ...

— Ух! Кам ку? Кам эсĕ?

— Ан хăрăр,—эпĕ, Нина Михайловна.

— Мĕн кирлĕ сире?

— Курас килчĕ. Эпĕ—Строилов.

Нина Михайловна ун çинелле пăхрĕ.

— Ниепле те палламалла мар.

— Эсир пулăшнипе паллайми тўрлентĕм. Чăтаймарăм, тавтума килтĕм...

— Анчах сире курорта кайнă, терĕç вĕт.

— Ĕнер таврăнтăм.

— Но... ăнланмастăп эпĕ, мĕнле эсир кунта?

Строилов хĕре чечек çыххи тыттарчĕ, хăй ăçта пурăннине каласа пачĕ. Унтан, ăçтан сăнаса тăнине, хăш çĕртен палласа илнине пўрнипе тĕллесе кăтартрĕ.

— Ăнланăр, Нина Михайловна, сире курсан, пĕтĕм кăмăл, мĕнпур çанçурăм çĕкленсе кайрĕ манăн.

Нина Михайловна кун пек пулассине ниепле те кĕтме пултарайман. Сывалнă, тухса кайнă, ĕçĕ те пĕтнĕ, тенĕ вăл хăй ăшĕнче. Сахал-и пулать ун пек чирлĕ çынсемпе? Донор пулса пĕр çынна кăна юн паман ĕнтĕ Нина Михайловна. Анчах çав темиçе çын хушшинчен хăйне çавăн пек юратса пăрахни Строилов пĕртен пĕр çын пулнă. Тен, Нина Михайловна чăнах çав тери юратмалла хитре пулнă, тен юн янă хыççăн Строиловăн пуçĕнче хăйне майлă çакнашкал психика ултавĕ пулса иртнĕ. Кирек мĕнле пулсан та, Нина Михайловна ун пуçĕнчен тухма пĕлмен, курортра та асран кайман.

— Мĕншĕн апла?

— Пĕлместĕп, Нина Михайловна, но... ăнланăр, çавăн пек вăл.

Нина Михайловна, хăй черечĕпе, ăшра ăна пĕркуннех хирĕç пулман. Çав тери тўрĕ инженера (сăнĕ те начар мар унăн) больницăра выртнă чухнех кăмăл туртнă. Анчах мĕн тăвас тетĕн? Чĕрери вăрттăн юратăва çиеле кăларнăшăн хальхи вăхăтра вăл айăплă мар.

— Чиперленсе кайнă эсир, палламалла та мар, çутă сăнлă.

— Курортран килтĕм ĕнтĕ, ятарласах каннă.

— Апла, апла...

— Суймастăп, Нина Михайловна, чăн калатăп, хам тўрленнине те... ну... хамăн мĕнпур пурнăçа сирĕн валли илсе таврăнтăм. Калăр ĕнтĕ: килĕшетĕр-и эсир манпа?

Нина Михайловна Строилов уншăн тĕрĕссипех çуннине часах ăнланса илчĕ. Чăн та, мĕн интерес пултăр ĕнтĕ Строилова хăйĕн пурнăçне çăлса хăварнă Нина Михайловнăна ахальтен кăна йăпатма? Сăмахран кăна мар, сăнран та курăнать вăл ăна юратни.

— Хирĕç мар эпĕ, анчах тăхтăр пĕр-икĕ кун, шухăшласа пăхам.

— Чăнласах-и?

— Чăн, шанма пултаратăр.

— Ырă каç пултăр, апла пулсан, Нина Михайловна. Каçарăр.

## VI

Теменле те юратаççĕ, темĕн çинчен те калаçаççĕ пулĕ. Çĕршыв аслă, юратакансем нумай, мăшăрланакансем сахал мар. Çывăх юлташсем каласа пană тăрăх, пирĕн геройсем те çав кунсенчех пĕрлешнĕ. Пулĕ те, ĕненме йывăр мар.

Вулакан, калав кĕске пулнăшăн ан çиленĕр, ун вырăнне эпир çĕнĕ мăшăра телейлĕ пурăнма сĕнĕпĕр.

---

# ТĂВАН УЙ-ХИР.

## I

— Ну, вăхăт ĕнтĕ тапранма,—терĕ ман юлташ, çар лĕтчикĕ капитан Лунин, юлашки стакана ĕçсе пĕтерсе.

Тăвансем, пире текех чарса тăраймасăр, лав пирки калаçма пуçларĕç.

— Кирлех-ши?—ыйтрăм эпĕ Лунин çине пăхса илсе.—Япаласем пирĕн çук, сывлăхсем иксĕмĕрĕн те тĕреклĕ!..

— Мĕн сĕнетĕр апла эсир?—каласа пĕтерме памасăрах ыйтрĕ Лунин.

— Манăн тăван уйсем, улăхсем урлă çуранах утас килет. Мĕнле пек сирĕн шутпа?

Лунин ура çине тăчĕ те урамалла пăхса илчĕ. Уçса пăрахнă чӳрече умĕнчи сирень йывăççин çулçисем хушшинче улăхакан хĕвел пайăркисем, ылттăн шăрçасем чĕтреннĕ пек, йăлтăртатса выляççĕ.

— Тĕлĕнмелле ырă çанталăк!—терĕ Лунин, савăнăçлăн кулса илсе.—Эсир тĕрĕс калатăр: аван, питех те ырă çакăн пек ирхине уйсем тăрăх утма! Çуран каятпăр!

— Мĕн эсир?—тĕлĕнме хăтланчĕç пирĕн тăвансем.—Эпир районран килекен çынсене те çуран яман, эсир—хамăр çынсем... хулана çитиччен çуран!

— Эпир çуранах каятпăр!—теменле иксĕмĕр те пĕр харăс татса хутăмăр эпир татах тепĕр хут.—Уйсем урлă! Мăн çул çине тухсан вара, тен, машинăсем тĕл пулма пултаратпăр.

Эпир, тăвансене хăна тунăшăн тавтуса тата телейлĕ юлма ырă сунса, аллисене чăмăртаса илтĕмĕр те часах ялтан тухрăмăр.

Тахçанах пулман ĕнтĕ эпир ку вырăнсенче. 15—20 çулсем те çитеççĕ пулĕ. Анчах вĕсем пирĕншĕн пĕрре те ют мар. Кашни утăмах ача чухнехине, унтан çамрăк чухнехине аса илтернипе вĕсем татах та çывăхрах, илемлĕрех пек туйăнаççĕ. Эх, асаилӳсем! Вĕсем нурте умри уйсем хушшинчен, сулахайра юлакан улăхран, сылтăмри уйсем хушшинчен, аякра курăнакан вăрмантан хирĕç чупса тухса кĕтсе илме васканă пекех, пуçтарăвса килсе, чĕресене лăстăр-р! çемçетсе яраççĕ. Ытларах тытăнса тăрас килет, ытларах ларас килет кунта. Улăхĕ чечеклĕ. Хĕрлĕ, симĕс, кăвак—тем тĕрлĕ хитре куçлă ӳсен курăксем, пире тĕл пулнипе савăннă пекех, пуçĕсене васкамасăр пĕке-пĕке илеççĕ. Вĕсен ырă шăршисем тата, кучченеç парса яма васканă пек, кашни сывласа илмессеренех кăкăра уççăн та çăмăллăн кĕре-кĕре каяççĕ. Сылтăмри вăрманĕ, эпир астăвасса вĕтлĕх кăна пулнăскер, сип-симĕс тумпа витĕнсе ларнă. Ун хĕрринчен теменле кайăк юрă шăрантарни илтĕнет.

— Пăхăр-ха эсир, пăхăр!—аллипе тĕллесе кăтартрĕ Лунин.—Ачасем утаççĕ, çырла татма!

Ялăн тепĕр вĕçĕнчен эпир палламан ачасем, пиллĕкĕн-улттăн пуçтарăнса, вăрманалла утаççĕ. Аллисенче хăшĕн хурăн хуппинчен тунă пурак, хăшĕн—чĕрес.

— Эпир те çавăн пекех çÿренĕччĕ, астăватăр-и?—чарăнса тăчĕ Лунин.— Çулĕ те çавах пулас...

— Çук, вĕсем тÿрĕрех утаççĕ пулас. О, çĕнĕ ăру!

Умри уй, çын çÿллĕш çитĕнсе ларнă ыраш уйĕ, пире путене юррипе кĕтсе илчĕ. Çÿллĕ тунисем кăшт шупкаланма пуçланă, пучаххисем шăркана ларса иртнĕ.

— Астăватăр-и?—ыйтрăм эпĕ Лунинран, ыраш хушшине кĕрсен,— çакăнта пирĕн анасем те юнашарах пулнăччĕ мар-и çак?

— Астăватăп, анчах вĕсем кăшт маларах пулас-ха.

Маларах кайсан, Лунин чарăнса тăрса, йĕри-тавра пăхса илчĕ.

— Акă ĕнтĕ вăл вырăн!

— Мĕнле вырăн?—ăнланса илеймерĕм эпĕ.

— Астумастăн-и мĕн лашасемпе выртнине?

Ман пуçăмра, тĕлĕкри пек, пĕр каçхине ун чухнехи хура пусăра ачасем лашасемпе выртни аса килсе кайрĕ. Каçпала, лашасем çине утланса тухнă чухне, çанталăк хальхи пекех тăрăччĕ. Лашасене тăлласа ярса, ик-виçĕ хутчен вăййăсем те выляса илме ĕлкĕрнĕччĕ пулас эпир. Сасартăк таçтан, çав сылтăмри вăрман хыçĕнчен, хура пĕлĕтсем хупăрланса тухса, тăруках сĕм тĕттĕм пулса тăчĕ. Лашасем курăнми пулчĕç. Хамăр та пĕр-пĕрне çиçĕм йăл-ял! çиçсе кайнă хушăра кăна куракан пултăмăр. Часах шултăра çумăр, витререн сапнă пек, тăкăнма пуçларĕ. Ачасем, килĕсене кайма васкаса, кашни хăйсен лашисене шырама пуçларĕç. Хĕр ачасем— уринесем, укçинесем кăшкăраççĕ, çухăраççĕ. Эпир вĕсене утланма пулăшса пĕтерсен, хамăр лашасене шырама пуçларăмăр. Хамăнне часах тупрăм эпĕ, анчах Лунин лаши çук. Çиçĕм çиçсе илнĕ вăхăтра иксĕмĕр те икĕ еннелле тăрса пăхатпăр—çук, курăнмасть! Ашшĕ лаши пулсан, Лунин тен шырама пăрахса, çуранах таврăннă пулĕччĕ. Лаши çыннăн, пăхма илнĕ лаша. Хăрать вăл ăна çухатма, ятласран кăна мар, çăкăра çухатасран та хăрать. Таçтан тата вăхăчĕ те ун чухне, çĕнĕ тырă пулас умĕн, пĕтсе çитнĕ вăхăт пулнăччĕ. Мĕскĕн Лунина, кунĕпе выçăллă-тутăллă чупнă ачана, каççенче парса янă çăкăр чĕллипе çăмарта нимрен те паха пулнă. Лунин çавна пула хăраса ÿкрĕ те ĕнтĕ. Аçта çухалчĕ-ши вăл лаша? Вăрласа каймарĕç-ши? Тепĕр хут çиçĕм çиçсе ярсан, эпĕ Лунин пичĕ тăрăх çумăр тумламĕсемпе пĕрлех куççуль юхса аннине те куртăм. Хăй, пĕччен шырама хăранипе, мана чĕнет, тархаслать. Эпĕ вара килĕшрĕм. Пирĕн лашана чĕлпĕртен çавăтрăмăр та, çумăр айĕпех уй урлă утрăмăр. Лаша пурпĕр çук. Татах шыратпăр. Хамăр йĕп-йĕпех. Анчах, пирĕн телее пула, çумăрĕ пĕр çур сехетрен-мĕнренех чарăнчĕ, унтан, пĕлĕтсем иртсе кайсан, кăшт кăвак шуçăм та киле пуçларĕ. Утрăмăр вар урлă—тепĕр енчи сĕлĕ пуссине. Пăхатпăр, Лунин лашине хамăр ялти усламçă Тарас Макарч тытнă та—пире кĕтсе тăрать. „Килĕр, килĕр!"—тесе чĕнет пире. Хăй шăлне йĕрсе кулать. „Сан лаша-и, Васли?"—тет. „Манăн!"—тет Лунин лашине илме пырса. Тарас Макарч, унччен те пулмарĕ, Лунина хулĕнчен ярса тытрĕ те, тапкăпа та чышкăпа хĕнеме пуçларĕ. Çынсем вăрçнине курман мар ĕнтĕ эпĕ, анчах кун пек хĕненине урăх курман. Тарас Макарч, темĕнле ăша вырттаракан пысăк ĕç тунă пек, юратса чышать, кашни çапса илмессеренех çÿлелле çĕкленсе илсе—о-ох! а-ах! тесе кăшкăрать. Мана, чарма вăй çитмесĕр пăхса тăракан çынна, вăл çухăрашни хăйĕн мĕнпур вăйне шалтан пăчăртаса кăларнă пекех туйăнать. Лунин ураран ÿксен вара Тарас Макарч сăмахпа ятлаçма

тытăнчĕ:—„Çын пулмасть санран, канальĕ, ĕмĕрне те! Кам тӳлет ĕнтĕ мана сĕлле таптаса тăкнине, шуйттан çури?"—терĕ те, лач! сурса хурса, аяккалла утрĕ. Эпĕ йынăшса выртакан Лунина аран-аран килне çавăтса çитертĕм, вара вăл икĕ эрнене яхăнах чирлесе выртрĕ, урăх лашасемпе тухса курмарĕ. Тарас Макарч çав кунах лаша хуçи патне те кайса вăрçма ĕлкĕрнĕ, кĕркунне вара унăн аннне хăй вырса илнĕ.

— Вот ĕнтĕ, эпĕ сире çавăнтанпах юрататăп!—терĕ Лунин, шутласа тăнă хыççăн.—А... Тарас Макарч... пулнă, вĕт, кашкăр!

Эпир иксĕмĕр те унăн сăнне астуса илтĕмĕр. Сарлака, çӳллĕ кĕлеткеллĕ çын, НЭП çулĕсенчĕ пушшех мăнтăрланса кайнăччĕ. Ялта лавка тытатчĕ, базарсенче те унăн таварĕсемччĕ. Çитместчĕ çапах. Çынсенчен анасем тара илсе акатчĕ, ытлараха хапсăнса юнашар йăрансене хăйне сухаласа илсе, çынсене хĕсетчĕ, унтан, вырнă чух вара, çынсене тара тытса, шанмасăр хыçалтан хăй тухса, татах ятлаçса çӳретчĕ...

— Сывă-и? Ăçтан эсир кунта?

Çӳллĕ ыраш хушшинчен пирĕн ума хамăр ял çынни Нилов Якур тухса тăчĕ. Пуçĕнче унăн хĕвелпе шупкаланнă картус, кăкăрĕ тĕлĕнчи тулти кĕсйинчен карандаш курăнса тăрать. Галифе, сăран атă тăхăннă.

— Ăçта васкатăр, Якур пичче?

— Тыră пăхса çӳретĕп. Бригадир вĕт-ха!

— Кăтартăр, апла пулсан, пире те!

— Пăхăр!—аллипе аяккалла сулса илчĕ Якур.—Пĕтĕмпех пирĕн уй ку, колхоз уйĕ!

Уй сарлака, куçсем виçейми таçта инçетелле тăсăлса выртать. Талккишĕпех ыраш пĕр тикĕс ӳсет. Хăмăлĕсем унăн çын çӳллĕшех çитĕнсе ларнă; шултăра пучахĕсем, тĕшши тулса пынă май, усăнса аннă. Хушăран, ăшă çил килсе вĕрнипе, вĕсем çийĕнче илемлĕ хум вылянса, таçталла кайса çухалать. Пирĕнтен инçех те мар, ыраш хушшинче, путене чарăнма пĕлмесĕр аватать.

— Мĕнле пек халĕ?—ыйтрĕ Якур, малалла сăмах пуçарса.—Манман пулсан, астăватăр пулĕ, мĕнлеччĕ кунта ĕлĕк?

Лайăх астăватпăр. Йăрансемпе картласа пĕтернĕ анасем, хăшĕ темиçе утăм кăна, хăшĕ—пысăкрах. Тыррисем—пĕрин сайра, маянпа хутăш; теприн, тислĕк тăкма вăй пуррин, çăрарах та, çӳллĕрех те.

— Курăнать ĕнтĕ, коллективлă хуçалăх!

— Вăл тĕрĕс!—терĕ Якур, ăшĕнче кулса илсе.—«Пĕрлешӳре—вăй», тени тахçанах паллă ĕнтĕ пирĕншĕн!

— Мĕн тата?

— Ĕçĕ! Мĕн чухлĕ тар тăкнă кунта! Вăт эсир, çӳлтен кăна мар, аялтан та пăхăр! Суперфосфатпа çемçетнĕ, икĕ хут сухаланă, сӳренĕ, акнă, каллех сӳренĕ!

Куратпăр: пĕрчĕсене тӳрĕ шăтса тухма чаракан хытă е пысăк çĕр муклашкисем çук, çавнашкалах, сухапуçпе сухаланă чухнехи пек, тислĕк таткисем те çĕр айне пулмасăр выртни курăнмасть. Кашни тĕлех, вырăнах пĕр тан тăрăшса, юратса сухаланă, сӳренĕ, кăпăш çĕр хăй çине ӳкнĕ кашни пĕрчех вăйлăн шăтарса кăларнă. Çавăнпа та ĕнтĕ, хăмăлĕсем арканчăксăр, пĕр-пĕрин çине чыхăнмасăр, хăйсем вырăнĕнче ирĕклĕн ӳсеççĕ.

— Калăр тӳррипе, Якур пичче,—ыйтрĕ Лунин, ĕненмен пек пулса,—тыра тенинче ӳсен-тăрансем пулаççех ĕнтĕ, ну, хăть утмăлтурат! Çумланă-и мĕн эсир вĕсене?

— Çук!—терĕ Якур мăнкăмăллăн.—Тыра пуссинче тыра кăна пулма тивĕçлĕ, урăх нимĕнле турат та! Çумламан эпир, анчах леш çум курăксен вăррине хăварман вара!

Эпӗ ытараймасӑр пӗр пучах татса илсе пӑхма пуҫларӑм. Пучах шупкаланнӑ, кӑшт сарӑ сӑн та ҫапнӑ пек. Йӗри-тавра унӑн уйрӑм клеткӑсем, кашнинчех вӗсенче, йӑвари пек, уйрӑм пӗрчӗсем пытанса лараҫҫӗ. Пӳрнепе шӗкӗлчесе илме пӑхатӑп. Ҫук, тухмаҫҫӗ. Акӑ мӗнле иккен! Чӗрӗ чунсем кӑна мар, ӳсен тӑрансем те сыхланма пӗлеҫҫӗ. Ҫитӗнсе ӗлкӗреймен, пиҫсе ҫитмен,—ан тӗкӗн! Мӗнле-ха унсӑрӑн! Апла пулсан, ҫилпе-мӗнпе тахҫанах, пиҫсе ҫитмесӗрех, тӑкӑнса пӗтнӗ пулӗччӗҫ.

— Мӗнле? Хӑвӑрӑн анатомиех интереслет-и? — кулса илчӗ Якур. — А вот... Шутласа пӑхӑр-ха эсир содержани ҫинчен!

— Мӗнле содержани?

— Шутласа пахӑр-ха: миҫе пӗрчӗ пучахра, миҫе пучах анара, уйра?

— Ой, ӑҫтан шутласа кӑларӑн ӑна? Цифрӑсем ҫитмеҫҫӗ вӗт, Якур пичче!

— Миллиард! Миллиард! Пӗрер пӗрчӗрен — пучах, пучахран — ывӑҫ, ывӑҫран—пӑт, пӑтран—вуннӑ, ҫӗр, пин, миллион, миллиард пухӑнать! Кашнинчех ӗҫ, хресчен ӗҫӗ, юратса тунӑ ӗҫ!

О, вӑл хресчен ӗҫӗ! Ӗмӗртенпе асаплӑ пулнӑ. Тин кӑна ӗнтӗ вӑл хӑй тивӗҫне кӗчӗ, чӑн таса ӗҫ пулса тӑчӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ, Якур пиччен пичӗ кӑна мар, куҫӗсем те савӑнӑҫлӑн вылямa пуҫларӗҫ. Курӑнать ӗнтӗ, вӑл хӑй ӗҫӗшӗн пӗтӗм чунран кӑмӑллӑ. Ӑна таса, тӳрӗ ӗҫ тивлечӗ ҫӗклет, Ой, мӗн тери телейлӗ Якур пичче!

— Эсир, пӗлетӗр пулсан, вӑл пучахсемпе, ку тырӑпа эпир аяккалла та тухса курма пултаратпӑр-ха, — ял хуҫалӑх выставкинех! Мӗнле пек сирӗн шутпа?

— Тӗрӗс, Якур пичче, тӗрӗс!

Эпир, пирус кӑларса туртса пӗтернӗ хыҫҫӑн, малалла тапрантӑмӑр. Якур пичче пире, ҫул майӑн кӑтартакӑтарта, уй вӗҫне ҫичичченех ӑсатса ячӗ.

## II

Пирӗнаслӑ тракт ҫине тухмалли ҫул Покрышкино ялӗ витӗр тухать. Эпир, хӗвел пӗҫертме пуҫланӑран пиншаксене хывса алла тытрӑмӑр та, ӗлӗкхи вырӑнпа—ача чух шкула ҫӳренӗ ҫулпа утрӑмӑр Малтан ял хӗрринчи йывӑҫсем курӑнчӗҫ. Унтан, пӑртак кайсан, ял варринче ларакан икӗ хутлӑ шкулӑн симӗс листисем те палӑрма пуҫларӗҫ. Вӗренсе тухнӑранпа иксӗмӗр те пулса курман ӗнтӗ эпир унта, сӑмахсем тӑрӑх кӑна пӗлетпӗр: халӗ вӑл икӗ класлӑ шкул мар, вӑтам шкул пулса тӑнӑ, учителӗсем те ҫӗнелнӗ, нумайланнӑ, киввисенчен, пире вӗрентсе кӑларнисенчен, пӗр Галина Ивановна кӑна тӑрса юлнӑ.

— Кӗрсе курар мар-и хамӑр шкула?—терӗм эпӗ Лунина, ял патнерех ҫывхарсан.

— Вӑтанатӑп эпӗ унран!

— Камран?

— Галина Ивановнӑран.

— Мӗншӗн?

Анчах сисетӗп: хамӑн та манӑн чӗре пӑлханма пуҫларӗ. Чӑн ӗнтӗ, вӑтанни вӑл юратнине пӗлтерет. Анчах эпир ун пек мар, пысӑкрах ҫынсем—профессорсем, академиксем патӗнче те вӗренсе курнӑ. Вӗсене те юратнӑ, халӗ те саватпӑр. Анчах мӗншӗн-ха вӗсен умӗнче вӑтанса курман? Мӗншӗн вӗсен умӗнче кӑкӑрта ҫакӑн пек хумханни туйӑнмасть? Ҫапла, Галина Ивановна питӗ нумай тӑрӑшнӑ пирӗншӗн. Никам та мар, вӑл кӑна пирӗн ӑс-тӑна, кайӑк хӑй чӗппине пахса ӳстернӗ пек, пуҫласа аталантарнӑ, малашлӑх шанчӑкне панӑ, пурнӑҫ ҫулӗ ҫине аларан тытса кӑларнӑ. Паха ӗнтӗ ҫавӑ, пуҫламӑшӗ. Малаллине эпир вара хамӑрах шыраса тупма пултарнӑ. Да, Галина Ивановна пирӗншӗн пурне те тунӑ. А эпир? Халиччен ӑна тав тума та кӗрсе курман.

— Мĕнле кун пек, пушă алăпа? Намăс вĕт!

— Татар, эппин чечек!

— Сахал!

— Мĕн тата?

— Юрĕ ĕнтĕ, — килĕшрĕ Лунин, ним тума çукран.—Малтанах шутламаллаччĕ!

Эпир улăхалла çаврăнса антăмăр та, чечексем татса, çыхăсем турăмăр. Начар мар тухрĕç пек вĕсем—хĕрли, кăвакки... сарă тĕсли кăна çук.

— Малтан эсĕ ут ĕнтĕ!

— Çук, эсĕ малтан кĕр!

Тавлашса тăрса вăхăта ирттермерĕмĕр, иксĕмĕр те алăка уçса юнашар утса кĕтĕмĕр.

Галина Ивановна пахчаран ерипен утса тухать. Тумне вăл пĕртте улăштарман иккен. Çине, ĕлĕкхи пекех, çутă вăрăм платье тăхăннипе пĕвĕ кăшт çинçерех тата çўллĕрех курăнать. Çавна майăн вăл халĕ те ўсме пăрахман пек туйăнать. Уринче унăн чăлт шурă туфли. Пуçне шăтăкла çыхса тунă чепчик тăхăннăран, çўçĕсем ретлĕн çыпçăнса выртаççĕ, анчах вĕсем халĕ ылттăн тĕслĕ сарă мар, шупкаланса, шуралса ларнă. Эпир астăвасса Галина Ивановнăн пичĕ тулличчĕ, яланах йăваш кулăллăччĕ, янах айĕ тата пăртак хутланарах тăратчĕ. Халĕ вĕсем вырăнне çамка çинче те, пичĕ тăрăх та типĕ хутланчăксем курăнаççĕ. Унăн сăнпичĕ типшĕрнĕ, ăна ватăлса çитнĕ тĕс çапнă. Куçĕсем те витĕр курмаççĕ пулас ĕнтĕ унăн, ахальтен куçлăх тăхăнман пулĕччĕ. Сылтăм аллине Галина Ивановна пĕчĕк çутă витре тытнă, унта шултра, хĕп-хĕрлĕ çырла купаланса выртни курăнать.

— Ырă кун, Галина Ивановна! Мĕнле пурăнатăр?

Вăл, витрине лартса, пирĕн çиве тĕлĕннĕ пек пăхса илчĕ.

— Мĕнле пурăнатăр, Галина Ивановна?

Галина Ивановна куçлăхне хывса пирĕн патарах утса пычĕ, пăхрĕ-пăхрĕ, каллех куçлăхне тăхăнчĕ.

— Чупатпăр хуллен! — терĕ вăл вăрах сассипе.—Анчах, каçарăр мана палласа илейменшĕн. Камсем нултăр эсир?

Эпир, хамăрпа паллаштарнă хушăрах, Галина Ивановнăна чечек çыххисене тыттартăмăр.

— Ой, батюшка! Мĕнле çынсем пулса кайнă эсир? Ой, ачамсем, ăçта çухалса пурăнатăр халиччен?

— Ятарласа сире курма кĕтĕмĕр, Галина Ивановна!

— Ой, питĕ нумай пулать вĕт, питĕ нумай! Тав ĕнтĕ куншăн та, ну... атьăр, атьăр!

Галина Ивановна пире хăй хăваттерне ертсе кайрĕ. Вăл виçĕ пўлĕмлĕ. Малтанхи—кĕрсенех саланмалли пўлĕмĕ—кăшт тĕттĕмрех, урамалла пĕр чўрече кăна тухать. Пахча енчи пўлĕмре тип-тикĕс сарса хунă çутă кровать ларать. Уçса пăрахнă чўречисене шăтăклапа витсе хунă, ун витĕр пўлĕмелле пĕрмаях пахчаран уçă та тутлă шăршă кĕрсе тăрать. Виççĕмĕшĕ, эпир ларнă пўлĕм—зал. Чўречисем умĕнче чечексем ўсеççĕ, стенасем çинче картинăсем, портретсем. Çакăнтах, пĕр кĕтесре, тĕкĕр айĕнче, рамăланă хут çакăнса тăрать, ун çинче эпир Галина Ивановнăна республикăн тава тивĕçлĕ учителĕ ятне пани çинчен вуласа тухрăмăр.

— Агриппина!—чĕнсе илчĕ Галина Ивановна,—а Агриппина! Лартса яр, тархасшăн, самовар!

Чей пиçсе тухиччен Галина Ивановна пире карточкăсем, альбомсем кăтартма пуçларĕ. Акă, хамăр класс карточкине те тĕл пултăмăр. Эпĕ ларатăп çăпатапа, хăрах çанă —çĕтĕк. Лунин çара уран, шăлапиртен тунă кĕпе-йĕмпе.

— Паллатăр-и ĕнтĕ хăвăра? —ыйтать Галина Ивановна, кăмăллăн кулса.

— Паллах, хальхипе танлаштарма çук, Галина Ивановна, уншăн сире кăна тавтума тивĕç.

— Ну-у... Мухтама пуçларăр, кирлĕ мар ун пек!

Карточкăсене малалла пăхатпăр. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... вунпиллĕк те ытла çавăн пек вĕрентсе кăларнă хыççăн ушкăнпа ӳкернĕ карточкăсем. Кашнин çинчех çирĕмшер-вăтăршар çамрăк пуççем—арçын ачасем, хĕр ачасем.

— Пурте вĕсем çитĕнсе çитсе çын пулнă ĕнтĕ,—ăнлантарать Галина Ивановна,—ĕçлеççĕ тĕрлĕ çĕрте. Ку вăт халь профессор, ку—хирург, çав хĕр ача—хамăр шкулти преподаватель, Семёнов—колхоз председателĕ, халĕ ывăлĕ вĕренет. Ох, батюшки!—вăрăммăн сывласа илчĕ Галина Ивановна,—кирек ăçта пулччăр та, анчах лайăх ĕçлеччĕр.

Татах интересленсе пăхнă хушăра таçтан пĕр уйрăмăн ӳкернĕ хĕр карточки сиксе тухрĕ. Мĕн тери хитре вăл: ылтăн çӳçлĕ, тулли питлĕ, тутине кăшт кулса тăп тытнă...

— Ку—эпĕ вăл, çамрăк чух!

— Калăр-ха, Галина Ивановна,—ыйтрăм эпĕ пуçа шухăш килсе кĕнĕрен,—хăвăр ĕмĕре мĕнле ялта ирттерме пултарнă эсир? Неушлĕ...

— Ăнланатăп сирĕн ыйтăва, эсир хула пурнăçне мухтасшăн. Ĕлĕк интеллигенцишĕн чăнах та хулара аванрах пулнă: культура, канăç, тасалăх... Анчах, тав уншăн, пире хамăр учительсем çăмăл пурнăçа хапсăнма вĕрентмен, ытларах халăха юратма, уншăн ĕçлеме вĕрентнĕ. А халăхĕ пирĕн, тӳрех калатăп сире, питĕ ырă, пĕрре ун хушшине лексен, тухаймастăн вара!

Сасартăк тулта ачасем шавлани илтĕнчĕ.

— Ăçтан пăрахăн вĕсене? Вĕсем вĕт манăн!

— Камсем?—ыйтрăмăр эпир, Галина Ивановна шкулалла тухакан алăка уçма тăнине курса.

— Ачасем килчĕç!

— Халĕ каникул-çке?

— Вĕсем библиотекăна çӳреççĕ, кĕнекесем вулаççĕ. Каçарăр ĕнтĕ хăвăра пĕр самантлăха пăрахса хăварнăшăн, халех эпĕ, кĕнекесем кăна парса яратăп.

Сăмавар вĕресе çитнĕ çĕре, пĕр вунă минутран, вăл таврăнчĕ. Ун хыçĕнченех ачасем шавласа тухса кайни илтĕнчĕ.

— Сире кичем пулмарĕ-и? Каçарăр, пăрахса кайнăшăн!

— Çук, эпир халĕ те пăхса пĕтереймен-ха.

— Ну-ну...

Агриппина чĕнсен, эпир чей ĕçме куçса лартăмăр. Сĕтел çинче пурте пур, анчах вĕсем пуринчен ытла килте тунă çимĕçсем. Çуллă кукăльсем, çăра сĕт-турăх, тутлă сырласем.

— Каçарăр-ха эсир мана ыйтнăшăн,—терĕ Галина Ивановна чей стаканĕсене тултарса,—ăçта ĕçлетĕрха ĕнтĕ эсир, мĕнле сирĕн ӳсĕмсем?

Эпир хамăр çинчен кĕскен каласа парсан, Галина Ивановна пирĕн çитĕнӳсемшĕн савăнса кайрĕ.

— Сирĕн пирки лăпкă ĕнтĕ эпĕ халĕ, а пулнă вĕт хумханупл вăхăт та: эсир,—ман еннелле пăхса илчĕ Галина Ивановна, — переписчикра юлма тăнăччĕ, а эсир тата,—Лунин еннелле пуçне çавăрчĕ,—тăн улталамасть пулсан, вообще вĕренме пăрахасшăнччĕ пулас.

Мĕнле астăвать вăл! Вăтă пулин те, пуçран никама та çухатмасть. Эпир, намăс пулнăран, хĕрелме пуçларăмăр. Чăн ĕнтĕ. Хама илсен, эпĕ ку шкултан вĕренсе тухсан переписчика кайса кĕнĕччĕ. Хĕрлĕ кĕпепе, çурмалла галифепе, такамран йӳнĕрехе тупса илнĕ кивĕ атăпа çӳреттĕм. Переписчик ун чухне маншăн тем пекех паха пулнă. Анчах, Галина

Ивановна ӳкӗтлесен,—ҫӗнӗрен вӗренме тытӑнтӑм вара. Ҫавнашкалах вӑл Лунина та пулӑшнӑ. Инҫетрен ҫӳрекен ачасем валли шкулта сивӗ ҫанталӑксенче ҫӗр выртмалли общежити пекки уҫсан, Лунин унта никамран малтан вырнаҫнӑ.

— Мӗншӗн хӑналанмастӑр эсир?—эпир шухӑша кайнине сиссе илчӗ Галина Ивановна.—Килти пек пулӑр: сахӑрне стакана ярӑр, ҫырлине илӗр.

— Эпир халь те ӗнтӗ...

Тултарнӑ стакансене ӗҫсе пӗтернӗ хыҫҫӑн, Галина Ивановна пирӗн ҫине татах ӑшӑ кӑмӑлпа пӑхса илчӗ.

— Ну, вот, ачасем,—терӗ вӑл васкамасӑр,—эсир ӗнтӗ ҫитӗнсе ҫитнӗ ҫынсем, тӑн та сирӗн аталанса ҫитнӗ. Сирӗн,—Лунин ҫурӑмӗнчен хӑрах аллипе тытрӗ,—ҫӳлерех те хӑвӑртрах вӗҫме тӑрӑшас пулать, а сирӗн,—ман ҫине тепӗр аллине хучӗ вӑл,—пачах урӑхла: хӑвӑр ӗҫре васкама кирлӗ мар!

— Тав ырӑ сӗнӳшӗн, Галина Ивановна, пурнӑҫлама тӑрӑшӑпӑр.

— Ах, мӗнпе савӑнтарас ӗнтӗ сире?—шутласа илчӗ Галина Ивановна, чей ӗҫсе пӗтерсен.—Нимӗн те хатӗрлеме ӗлкӗреймерӗм-ҫке.

Эпир кайма хатӗрлентӗмӗр.

— Каҫарӑр ӗнтӗ, кӗрсе чӑрмав тунӑшӑн. Хӑна тунӑшӑн калама ҫук тав!

— Мӗншӗн васкатӑр?

— Каҫчен ҫитес тетпӗр!

— Хӑвӑра паллӑрах ӗнтӗ, ачамсем,—килӗшрӗ вӑл эпир ҫине тӑнӑран.—Чипер кайӑр апла пулсан, ҫул телейлӗ пултӑр!

Эпир, Галина Ивановна аллине тепӗр хут чӑмӑртаса илнӗ хыҫҫӑн, хамӑр ҫулпа тухса утрӑмӑр. Вӑл ӑсатма алӑкранах тухрӗ. Уйрӑлнӑ чух чӑтаймарӗ, хурланчӗ. Куҫӗсем унӑн шывланса илчӗҫ. Эпир те хамӑр чӗресене аран-аран пусартӑмӑр. Пӑртак кайсан, тӳсеймесӗр каялла ҫаврӑнса пӑхрӑмӑр. Галина Ивановна ҫаплах пирӗн хыҫран пӑхса тӑрать. Ҫухатас килмест пулас унӑн пире хӑй куҫӗнчен. Анчах ҫул—мӗнле пӗрлештернӗ, ҫавнашкалах уйӑрса ярать. Часах эпир пӗр-пӗрин куҫӗнчен ҫухалтӑмӑр, анчах пирӗн ӑшран хаклӑ учительница нихҫан та ҫухалассӑн туйӑнмасть.

III

Аслӑ ҫул ҫине тухсан эпир, канав хӗрринчи ешӗл курӑк ҫинче, кӑшт ларса канма шутларӑмӑр. Урасем ывӑннишӗн мар, пуҫа килнӗ шухӑшсем чарӑнса тӑрса татса пама ыйтнӑшӑн.

— Усӑллӑ пулчӗ вӗт ҫуран утни? Мӗнле сирӗн шутпа, Лунин?

— Питӗ!—тет вӑл ҫамкине аллипе тытса.

Шухӑшсене пӗрлештерме пуҫларӑмӑр.

— Итле-ха, Лунин, колхозниксем тырӑ тухӑҫлӑхне хӑйсемшӗн кӑна мар, государствӑшӑн та ӳстерме тӑрӑшаҫҫӗ. Ӑна пурнӑҫлаҫҫӗ те вӗсем. Мӗнпе? Тӳрӗ, таса ӗҫпе. Ҫӑмӑл теме ҫук ӗнтӗ вӑл хура ӗҫе, анчах ҫутҫанталӑк мӗн тери тупӑшпа парнелет ӑна! Таса ӗҫ ҫутҫанталакшӑн та кӑмӑллӑ иккен!

— А Галина Ивановна?—тет Лунин тавӑрма хӑтланса.—Мӗн пултӑр унинчен паха ӗҫ! Часах хӑй вӑл ҫӗр ҫинче пулмӗ, анчах миҫе ҫын чӗринче, ҫынсем ҫинче юлӗ унӑн сӑнӗ, характерӗ, ӗҫӗ!

— Якур тата!—тетӗп эпӗ калаҫӑва малалла тӑсса,—вӗт унӑн ятне хаҫатсем ҫинче пӗлтереҫҫӗ. Ҫӑмӑл ӗҫшӗн мар, йывӑр ӗҫе ҫине тӑрса, ыттисенчен лайӑхрах туса панӑшӑн!

Палла ӗнтӗ, никампа та тавлашмалли ҫук: тӳрӗ, таса ӗҫ—ӑна кирек кам туна пулсан та, вӑл нихҫан та ҫухалмасть. Ӑна пурте хисеплеҫҫӗ, саваҫҫӗ, сараҫҫӗ. Начар ӗҫ хӑй хуҫинчен те аяккалла иртмест. Вӑтам ӗҫе

истори нимĕнпе уйăрмасăр, палăртмасăр шăлса хăварать. Юлать таса ĕç кăна, вăл кăна мухтавлă пулма тивĕç!

— Эпир мĕнле?—ыйтрăмăр эпир хамăртан хамăр.

Вĕреннĕ, государствăна тăкак кӳнĕ, ак халĕ хамăра хушнă ĕçе тăватпăр. Анчах мĕнле?

— Кала-ха ĕнтĕ, Лунин, тӳррипе: нумай пулнă-и санăн пурнăçунта çылăхсем?

— О-о!—ĕнсине хыçса илчĕ Лунин,—вăрлани те пулнă!

— Манăн хăть вăл пулман, анчах çынна улталави пулнă...

Мĕншĕн-ха ĕнтĕ? Çĕр çинче ытлах усал çынсем пулман-çке-ха эпир! Сăлтавĕ акă мĕнре пулнă иккен: эпир те, ытти нумай çынсем пекех, хамăр кăна лайăх пурăнма тăрăшнă. Çавна пула, час-часах йывăр ĕçрен пăрăнса, хамăра ытларах усă параканнине тытăнса пăхнă. Халăха усăллă тӳрĕ ĕçсем пирĕн умра та нумай ĕнтĕ, анчах унта та эпир хамăрăн харпăрлă пурнăç валли хăйпăтса илме тăрăшатпăр. Пирĕн ăшра харпăрлăх çирĕп ларать-ха, ăна пула эпир хапсăнатпăр. Паллă ĕнтĕ, пурăнма, ĕмĕр ирттерме пулать кун пек те, анчах мĕн усси унашкал пурнăçран? А çут тĕнче паха, пуян! Кашниех хăйĕн ĕçне тӳрĕ, таса туса пырсан, мĕн чухлĕ татах ӳснĕ пулĕччĕ унăн хитрелĕхĕ, пуян лăхĕ!

— Ну, мĕнле, Лунин?

— Патăмăр вĕт сăмах: эпĕ çӳлерех тата хăвăртрах вĕçем, тăшмансемпе вирлĕрех кĕрешем, а эсир... хăвăранне хăвăр пĕлĕр!

— Анчах вăл пурте мар-çке-ха!

— Мĕн тата?

— Малалли пурнăçра, хамăр хушăри отношенире тӳрĕлĕхе, чăнлăха кăна пĕлĕпĕр, уншăн кăна тăрăшăпăр!

— Вăл хăйне хăех паллă, çавăн пек кăна телейлĕ пулма пулать те ку тĕнчере!

— Калăр ĕнтĕ, мĕн чул вăхăт? Тапранма çитмест-и пире?

— Шăп вуниккĕ.

Аслă çул тап-такăр, тӳрем тăсăлса выртать. Ик енĕпе—уйсем. Ыраш пусси, тулă пуссисем. Вĕсем çинче вĕçеççĕ кайăксем, çунаттисемпе варкăшаççĕ, юрлаççĕ. Инçетре, инçетре кăвак пĕлĕт çĕрпе пĕрлешни курăнать.

Эпир алла-аллăн тытăнса малалла утрăмăр.

---

## ПАРТБИЛЕТ

Çамрăк çулçăсемпе симĕсленсе ларнă сопкăсем хушшинче, чикĕрен 10—15 çухрăмра, 5—6 палаткă вырнаçнă. Патне пымасăр та курма çук вĕсене: йĕри-тавра чăтлăх йывăçсем хупăрласа тăнă, çӳлтен курăнасран турат-çапăсемпе витсе хунă. Таçта, инçетре тупă сасси илтĕннĕ, вăхăтран вăхăта пулемёт кĕске черетпе чавкаса илнĕ, çывăхрах винтовкăсем шатăртатнă. Çанталăк тăрă, уяр тăнă пулин те, кунти вĕçĕмсĕр сопкăсем хушшинчи ĕмĕрхи лăпкăлăха çав улшăнуллă сасăсем сирсе янă: е тĕмĕсем хумханнă, çулçăсем силленнĕ, е тупăран хăранă пек, пысăк йывăçсемех чĕтренсе илнĕ, е тата тискер сĕм вăрман витĕр ян каякан сасă, канма вырăн тупман пекех, каяллалалла чупса çӳренĕ. Анчах çак шавсем хушшинче çын сасси пĕртте илтĕнмен. Чăннипе илсен, сахал мар пулас вĕсем кунта, тен, вуншар пин. Ăçта та пулин çакăнтах, сопкăсем хушшинчех, курма кăна çук вĕсене. Çавнашкалах лăпкă медсанбат палат-

кисенче те. Пĕр „Операционная“ тесе ҫырса ҫапнă палаткăра кăна йытă ерипен йынăшса вĕрни илтĕвнĕ.

Ҫакăн пек, пĕр ҫур сехете яхăн иртнĕ хыҫҫăн, палаткăран вăтам ҫулсенчен кăшт кăна сулăннă арҫын ерипен утса тухрĕ те, тахҫан йăванса аннă йывăҫ ҫине кайса ларчĕ. Пуҫĕнчи пилотка хĕррипе кăшт хура ҫӳҫĕсем курăнаҫҫĕ, вĕсем хушшинчех пăч-пăч шурă пĕрчĕсем те палăраҫҫĕ. Куҫĕсем ҫавнашкалах хура, сарлака ҫамки ҫинче тата ҫаврака пичĕ ҫинче кăшт хутланчăксем пур. Анчах вĕсем, вата ҫынсенни пек, ытлашши тарăн тата типĕ пĕркеленчĕксем мар, ҫиелтен ҫеҫ йĕрленсе илсе, ҫул майĕпе сăн-питне хăйне ăрасналăх парса тăраҫҫĕ. Пĕвĕ ҫинчи гимнастĕрки унăн нимĕнпе те уйрăм мар,—йĕтĕн пирĕнчен ҫĕленĕ; хулпуҫҫисем ҫинчи икшер просветлă погонĕсем тата хĕвел ҫуттинче йăлкăшса тăракан пĕрер ҫăлтăрсемпе медицина эмблемисем кăна ăна боецсенчен уйăрма май панă. Ҫавăн тĕслех тата ҫав пиртенех ҫĕленĕ брюкийĕ хĕрлĕ кантовкăсăр пулнă, ҫитменни ҫине вăл тăвăртарах курăннă. Анчах аттисем вара, тепĕр майлă, ытлашшипех пысăк пулнă, пуринчен ытла урисемпе кунча хушшинче пушă тăни ăна хăтсăр кăтартнă. Халатпа тухнă пулсан, ун ҫине пăхма илемлĕрех пулнă пулĕччĕ. Ҫук, ăна вăл палатăрах хывса хунă. Часах туйса илме пулать ĕнтĕ, вăл—кадровăй командир мар, запасран илнĕ врач.

Акă вăл аллисене пĕҫҫисем ҫине хутлатса хучĕ те куҫĕсемпе сопкăсем ҫинелле пăхма пуҫларĕ. Таҫта, турат ҫинче, пĕр кайăк юрлани илтĕнет. Йĕри-тавра сип-симĕс курăк ӳсет, ун ҫинче пăч-пач сывлăм тумламĕсем кĕмĕл пек ҫутăлса тăраҫҫĕ. Ав, вĕсем хушшипе ҫухалма пуҫланă утма ҫул таҫталла пăрăнса каять, ҫĕнĕ йĕр ҫук, кăҫал никам та утман пек. Унтан, тепĕр енче, сопка тайлăмĕнче, чечексем ӳсеҫҫĕ. Мĕн тери чечек! Пĕлме ҫук пурне те, мĕншĕн тесен Инҫетри Хĕвелтухăҫĕ вĕсемпе питĕ пуян. Чăн, Российăри пек тутлă шăршăллă чечексем питĕ сайра кунта, анчах уншăн куҫпа пăхма унтинчен эрешлĕрех те, туллирех те. Ҫын вĕсене курсан, куҫсене илмесĕр, шухăша кайса ларчĕ. Мĕншĕн? Тен, чăнах кăмăла илĕртеҫҫĕ вĕсем! Тен, ытараймасăр татса ҫыхă тăвас килет вĕсенчен! Ҫук пулĕ. Чечексемпе интересленме ҫул иртнĕ ĕнтĕ унăн. Анчах чечексем ăна иртнине аса илтерчĕҫ.

Вăл, ун чухне больница пуҫлăхĕ, Курск облаҫĕнчи районри больницăсенчен пĕринче ĕҫленĕ. Виҫĕ ҫул тăрăшнă, тар кăларнă, нервăсене пăснă. Юлашкинчен унăн чăн-чăн совет больници пулса тăнă: илемлĕ, аслă корпуссене йĕри-таврах ҫамрăк чăрăшсем симĕс тумпа эрешлесе тăнă. Хыҫалта, кӳлĕ тавра (ăна та ятарласах тунă) хитре парк тăсăлса выртнă. Корпуссенче рентген, лаборатори, ҫутăпа сыватмалли кабинет—пурте, пурте пулнă. Хăй вăл хирурги уйрăмĕнче ĕҫленĕ. Ҫакăн пек услови ĕнтĕ ăна чирлисене ăнăҫлăн сыватма кăна мар, ăслăлăх ĕҫне туса пыма та пулăшнă. Юлашки ăслăлăхлă ĕҫĕ унăн мимепе нерв хирургийĕ тăрăх пулнăччĕ. Материал кунран кун купаланса пынă, ҫитменнисене Мускавран ҫырса илнĕ пулнă, ик-виҫĕ хут Бурденко академикпа та канашласа пăхнă. Вăрҫă пуҫланман пулсан, паллах, вăл халиччен медицина докторĕ пулнă пулĕччĕ. Вăрҫă унăн шанчăкĕсене, ытти совет ҫыннисенни пекех, вăтаран татса хучĕ. Акă, икĕ ҫул ҫитет ĕнтĕ вăл килтен тухса кайни. Хăй фронта кайма кĕтсе тăнă чух, ăна военкомат Инҫетри Хĕвелтухăҫне янă. Киле унăн арăмĕ (хăйĕнчен чылай ҫамрăкскер) тата пилĕк ҫулхи

ывăлĕ тăрса юлнă, вĕсене вăл хăйĕн мĕнпур материалĕсене сыхлама парса хăварнă.

Икĕ тапхăрта йывăр пулнă ăна килтен кайна чух: пĕре—чирлисене юлашки хут пăхса тухнă чухне кăмăлĕ хытă хумхавнă, тепре—арăмĕпе ывăлĕ станцăран шур тутăрпа сулса ăсатнă чух куççулĕсем тухнă. Ун чухне, чăннипе, кампа мĕн пулассине никам та пĕлме пултарайман, пуринчен ытларах, килтен каяканнине, ăна хăйне те мĕн те пулин инкек пуласса кĕтнĕ. Çавăнпа ăна арăмĕ те, ывăлĕ те шелленĕ. Анчах пурнăçра урăхла килсе тухрĕ. Çур çул иртсен, нимĕçсем, вĕсем пурăнакан вырăна йышăнса, пĕтĕмпех, çав шутра больвицăна та çунтарса янă. Паллă ĕнтĕ, ăслăлăх материалĕсем те унăн çавнашкалах вутра çунса кайнă, арăмĕ вĕсене çăлса хăварайман. Тĕрĕссипе, вăл хăй те, нимĕç фашисчĕсенчен тискер мăшкăл тўснĕ хыççăн, аран-аран тарса çăлăннă, ывăлне, нимĕн айăпсăр мĕскĕне, офицер пистолетран персе вĕлернĕ. Çак хуйхă уншăн пурнăçра чи йывăр вăхăт пулнă ĕнтĕ, ун çинчен çыру тăрăх пĕлсен, вăл пĕр уйăха яхăн тăна кĕрсе çитеймесĕр госпитальре выртнă. Анчах çакăнпа пĕрлех, ун чĕринче нимĕçсене хирĕç çивĕч курайманлăх ўссе пынă. Унччен, ĕлĕк вăл нимĕçсене культурăллă, малта пыракан халăх тесе шутланă пулсан, тата нимĕç чĕлхипе çырнă кĕнекесене юратса вуланă пулсан, халĕ вĕсене тайгара чупса çўрекен тискер кайăксенчен те кĕçĕне хунă, курайман. Пуриншĕн те, хăй çемйишĕн кăна мар, мĕнпур совет халăхĕн инкекĕшĕн, куççулĕшĕн, юнĕшĕн, вилĕмĕшĕн курайман.

— Майор юлташ!

— Майор Красницкий!

— Доктор! Николай Георгиевич!

Шур халатлă çамрăк сестра палатă алăкне уçса ик-виçе хут чĕнсен, юлашкинчен хыттăн кăшкăрсан тин, илтрĕ шухăша кайнă Красницкий.

— Мĕн, Лиза?

— Операци тунă йыттине ăçта хума хушатăр?

— Пăхмалла, чирлĕ çын пекех; сирĕншĕн—вĕренў, опыт вăл!—кĕскен татса каларĕ Красницкий.

— Юраты! Наркозран урăличчен, çумĕнче хамах ларатăп.

— Тĕрĕс, Лиза!

Пĕр самантлăха шухăшран уйрăлнă Красницкий каллех чечексем çине пăхма пуçларĕ. Ăшра темĕнле йывăр, çитменлĕх пурри сисĕнет, чĕре темĕнле çав чечексем пек хитре те йăваш япалана ыйтнăн туйăнать. Чăн та, икĕ çул ĕнтĕ пырать çакăн пек пурнăç: хĕлле—землянкăра, çулла—сопкăсем хушшинче, палаткăсенче. Ĕçĕ те пĕр манерлĕ: пĕрмай вĕренў, кадрсем хатĕрлесси. Пĕрисем кайсан, теприсем килеççĕ. Каллех вара çĕнĕрен пуçла—асептика, антисептика... Практика—йытă. Мĕн чул касна ĕнтĕ вĕсене,—хурине, хĕрлине, улине те! Эй, пĕр уйăх кăна ĕçлесе пăхасчĕ халĕ хăй тунă больницăра е çавăн пек условире. Çук вĕт! Вăрçă опычĕ уй-хирте вĕренме, çĕр айĕнче ĕçлеме тĕрлĕ çанталăка хăнăхса çирĕпленме хушать. Вăл аван, Красницкий хăнăхса çитнĕ: хăть шăрăх е эрни-эрнипе çумăр, хăть çуркуннерен пуçласа хĕле кĕричченех (кунта çакăн пек) нăйлатакан хаяр вăрăм тунасем е ўпресем, хăть хĕллехи шартлама сивĕре е асар-писер çил-тăмансем—пурте ĕнтĕ ăна çавăн пек пулма тивĕçлĕн туйăнаççĕ. Анчах майор Красницкий çав вăхăтрах çын вĕт-ха! Ăшра унăн пур туртăм та пур. Чун, çав хаярлăхсем хушшинчех, хăйне пусаракан йăвашлăх ыйтать. Икĕ çул курман ăна вăл, курса пăхма вăхăт та ĕнтĕ, кирлĕ те.

Красницкий кăкăр çумĕнчи кĕсъерен пĕчĕк кĕнеке кăларса листисене

уçма пуçларĕ. Акă вăл,—юратнă мăшăр, ларать хăйпе юнашар, пуçне унăн хулпуççи çине тайнă. Çав майпа тата илемлĕн кăтралатнă çемçе çӳçĕсем кăшт хăрах енчен унăн питне витсе хунă. Кăвак куçĕсем йăвашшăн та кăмăллăн пăхаççĕ, пичĕ кăпăш, хăрах тути хĕрринче кулă палли пур. Çăмăл çӳхе пальто витĕр сылтăм кăкăрĕ палăрать, сулахайри унăн пĕвĕ çумне çыпçăнса пытаннă. Сехет çакнă хăрах аллине хутлатса хунă, тепринпе ăна кăшт çурăмĕнчен ыталанă. Картăчкине вĕсем икĕ çул каялла, май уйăхĕнче, çутçанталăк ытамĕнче ӳкерне пулнă. Карточки çине унăн сăнĕ те кăшт лекнĕ: хыçалта—йывăç тĕмĕ, хăшпĕр çулçисем пуç çинех усăнса тăраççĕ. Малта—чечексем, хăшĕ-пĕрисем вĕсенчен—кунти пексисемех.

— Хаклă Розочка, чунăм!—хăй ăшĕнче шутларĕ Красницкий, картăчкă çине пăхса.—Мĕнле юрататăп, мĕн тери хаклă эсĕ маншăн çак тĕнчере! Утса кайнă пулăттăм сана хулран тытса çав чечексем патнелле ерипен, хуллен. Татса парăттăм чилайăх, хăвна кăмăла килекен чечек çыххи! Ларăттăмăр вара пĕр çĕре шăкăлтатса калаçма. Ух, мĕн чул калаçмалли! Пĕр кун çитмĕ! Ачашлăттăм сана, Розочка! Мĕнле ырă, хаваслă пулнă пулĕччĕ тунсăхланнă ăшчикшĕн эсĕ кунта пулни!

Çук, Розочка тахçанах çырмасть, хăй темиçе хут ӳкĕтлесе ыйтса янă пулин те. Юлашки çырура вăл пĕр хулара заводра (мĕнлине каламан) ĕçлени çинчен пĕлтернĕччĕ. Каярахпа вăл хула та нимĕççен аллине лекнĕччĕ, анчах ăна пĕр-икĕ эрнеренех каялла тавăрнă. Тен, вилнĕ; тен, тыткăна лексе тахçанах мăшкăл тунă ăна фашистсем; тен, Германие илсе кайса чура туса хунă,—тĕрлĕ шухăшсем килеççĕ пуçа. Анчах уççи çук. Кирек-мĕнле пулсан та, çын сăнсăпатне çухатнă фашистсенчен никам та нимĕнле ырлăх курман, кураймĕ те. Курма мар, шухăшлама та йывăр.

Красницкий карточкăна, аллипе ерипен ачашласа илчĕ те, тути патне илсе пычĕ:

— Эх, Роза! Чунăмçăм. ăçта эсĕ?

Карточкă çинчи хитре Роза çине куççуль тумламĕсем шăпăр-шăпăр-р-р юхса анчĕç.

## II

Письмоносец почтăран таврăннине кашни чаçрех хаваслăн кĕтсе илеççĕ. Кашни кун вăл çĕнĕ хыпарсем, хаçат-журналсем илсе килет, çывăх юлташсем, мăшăрсем е савнисем çырнă çырусене валеççе парать. Яланхи пекех вара, медсанбат вăхăта пĕр сехет хушши почтăна пăхса тухнипе ирттерет. Анчах Красницкий хаçатсене çынсенчен кайран, канас умĕн, койка çинче вулама хăнăхса çитнĕ. Çавăнпа вăл почтальона, ыттисем пек, васкаса кĕтмен. Тепĕр тесен, почтальон вăл кĕтнĕ хыпара пурĕпĕрех илсе килмен. Хăй черечĕпе вара почтальон та ун çине сисĕмсĕррĕн пахма хăнăхса кайнă: ямалли çырусем пурри çинчен ыйтман, конвертсем те сĕнмен. Анчах паян вăл Красницкий умне татăклăн, красноармеец утăмĕпе утса пычĕ те, аллине козырĕк çумне тытрĕ:

— Сире çыру пама ирĕк парăр, майор юлташ!

— Хм, ăçтан вара?

— Полевой почтăран. Хирĕç ответ пама, тен, конверт кирлĕ?

— Тем пекехчĕ!

Почтальон аллине каллех козырĕк çумне тытса уйрăлсан, Красницкий хĕрлĕ конверта уçса, 5—6 листа çине çырнă вăрăм çырăва вулама тытăнчĕ.

„Хаклă Коля, манăн савăвăçăм! Тахçантанпах çыраймарăм, каçар!..“

— Розочка! ангел!—савăнса кайнипе илтĕнмеллех калаçса илчĕ

Красницкий.— Неушто эсĕ? Чунăмçăм! чăнах та вĕт, сан почерку! Аçтан çыратăн, мĕскĕн?

„...Фронтра пулать ун пекки, анчах вăл эпĕ сана мавнине пĕлтермест. Пачах урăхла, хушшăмăр пиншер çухрăм пулин те, эпĕ хама хам сан патна çак вăхăтра нихçанхинчен те çывăх, тесе шутлатăп. Ăнлан: чĕрĕ, сывă чух эпĕ—санăн, эпĕ—пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле...“

Малалла Роза мĕншĕн çырайманни çинчен ăнлантарать, хăй пурнăçĕ çинчен пĕлтерет. Ĕç ак мĕнле пулса пынă иккен унăн.

Фашистсен тискерлĕхне хăй тӳссе курнă хыççăн, юратнă ывăлне çухатсан, ун ăшĕнче тăшмансене хăй аллипе таврăс тăвăллă хаярлăх çуралса тухнă. Çавăнпа вăл хăйĕн унччен виçĕ çул ĕçленĕ специальноçне—учитель ĕçне вăхăтлăха пăрахса, оборона заводне кайса кĕнĕ. Ун çинчен Красницкий малтанхи çыру тăрăх пĕлет ĕнтĕ. Оборона заводĕнче Розăна пулемёт цехне ĕçлеме лартнă. Ĕç вăхăтĕнче вара Роза мĕнпур детальсене вĕренсе çитнĕ. Кайран, фашистсем хулана вăхăтлăха илнĕ чух, Хĕрлĕ Çар ретĕнче кĕрешсе окружение лекнĕ, унтан... партизансен отрядне куçма тивнĕ: Роза виçĕ уйăх хушши партизанра çӳренĕ. Шел, ун çинчен сахал çырать вăл хăй çырăвĕнче. Пĕтĕмĕшпе кайран пĕлтерме пулса, 5 эшелон сывлăша сиктерсе яни çинчен кăна пĕлтерет. Анчах, юлашкинчен, отряд каллех Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрлешнĕ чухнехи çапăçу çинчен вара тĕплĕн чарăнса тăрать:

„...Пĕр ялшăн юнлă çапăçу пычĕ. Икĕ енчен те танксем, самолётсем нумай пулчĕç, ытти хĕç-пăшалсем çинчен асăнмастăп та. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем сылтăмран тапăнса пыраççĕ, пирĕн отряд сулахай флангран хĕсет. Нимĕçсем вăйлă вут тăкрĕç. Питĕ тискер, хăрушă! Вĕт çĕр чăтмасть,— çӳлелле сирпĕнет. Анчах эпир, большевиксем, тӳсрĕмĕр... Эпĕ хамăн юратнă пулемёт çумне выртрăм. Фашистсем сасартăк контратакăна тăрсан, пĕр кассине пулемётран çулса тухрăм. Пирĕн наступлени кăшт малалла тăсăлса, эпир Хĕрлĕ Çар чаçĕсем патнерех çывхарсан, фашистсем ăна тытса чарма татах вăйлăн атакăна тухрĕç. Каллех пулемётран черет хыççăн черет кăларса яма тытăнтăм. Хам куратăп: çынсем йăванаççĕ, значăт, тĕл перетĕп. Сасартак, сасартăк ман тĕлте минăсем çурăлма тытăнсан, сулахай хул айĕнче, кăкăр шăммиянче, тирсе ыратса кайнине туйрăм. Юхма тытăнчĕ юн. Алăпа та тытатăп, хула та пăчăртаса пăхатăп—çук, чарăнмасть. Лăстăр-р! темĕнле ывăнса кайнă пек туйрăм, куç та хуралма пуçларĕ. А сывлăш тата? Пĕр çавар та уççăн сывлама çук, тултан ыратать, шалтан пăвать. Сисетĕп, çан-çурăма вилĕм ыталать: тăн пĕтсе пырать, чĕре вăрахăн тапать, урасем çыварса ларма, хытма пуçлаççĕ. Çак вăхăтра ман пата хулпуççи урлă хĕрлĕ хĕреслĕ сумка çакнă сестра шăвăнса килет. Ш-ши-и!—турĕ ман хăлха çумĕнчех. Ик-виç утăм хыçалти сестра пĕр сасă кăлараймасăрах тăсăлса выртрĕ. Коля, мĕн тери шел ăна, э! Вĕт маншăн çамрăк пуçне пачĕ вăл!

Çук, урăх пултараймастăп эпĕ. Вилĕм ĕнте чĕренех тытма пуçларĕ. Улшăнуллă, питĕ вăрахăн тапать вăл, хăш-пĕр вăхăтра, чарăнса илнĕ минутра, хăвна ху вилсе выртнăнах туйăнать. Акă, куç хупаххисем хупăнма пуçларĕç, тăн çухалса килчĕ. Анчах,—ой çут тĕнчерен уйрăлма пит йывăр!—татах, пĕр секунд та пулин, пăхса илес килет ун çине. Çак вăхăтра, шывлă куçăмсемпе юлашки хут пăхса илнĕ чух, хама хура мĕлкесем çаварса илнине курах кайрăм. Нимĕçсем мана чĕррĕн çавăрса илес-

шӗн иккен. Пӗр самантра таҫтан, мана хамӑн сулахай кӑкӑр умӗнчи кӗсъере, чӗре патӗнче, партбилет пурри аса килсе кайрӗ“.

— Вон што?—тӗлӗнчӗ Красницкий, вулама чарӑнса.— Хӑҫан кӗме ӗлкӗрнӗ вара? Ну-ну!..

„..Да, хаклӑ мӑшӑрӑм, эпӗ—парти членӗ ӗнтӗ, ман ҫумра—партбилет. Вӑл билет мана ирсӗр фашистсене ҫӗнтерме пулӑшрӗ, хама вилӗмрен ҫӑлса хӑварчӗ. Ӗнен—партбилет кӑна. Чӑн-чӑн коммунист фашист аллине чӗррӗн паранмасть, партбилет ӑна ӳкиччевех ҫапӑҫма хушать. Унтан тата, мӗн вӑл фашист аллине лекнӗ коммунист? Ӑна е ҫакса вӗлереҫҫӗ, е чӗррӗн пытараҫҫӗ, е ҫын тӳсми урӑх асап кӑтартаҫҫӗ. Ҫаксем аса килсе кайрӗҫ. Халиччен айӑплӑ пулманскер, юлашки самантра та ҫӗршыв умӗнче намӑслӑ пулас мар тесе, алла пулемӗт патне ҫӗнӗрен кӑнтарма тӑтӑм. Ах, тамаша! Пӳрнесем манӑн вылямаҫҫӗ. „Рус, сдавайся!“—штыксене тӑратса, хам патах ҫывхараҫҫӗ хура мӗлкесем. Аран-аран, алӑпа кӑшт тӗртсенех манӑн пулемёт шатӑртатма тытӑнчӗ. Пӗр черет ҫавӑрса илнине астӑватӑп, тӗлӗкри пек, кайран мӗн пулнине пӗлместӗп... Эпӗ халь госпитальре выртатӑп, мана питӗ лайӑх пӑхаҫҫӗ. Ӗнер тата ман шут ҫинче—150 нимӗҫ тесе пӗлтерчӗҫ, наградӑлама хучӗ Мускава кайни ҫинчен каласа савӑнтарчӗҫ“.

— Ох, мӗн тери эсӗ! Матту-ур!

„...Да, хаклӑ мӑшӑрӑм! Хамӑр юратнӑ ывӑлӑмӑршӑн, хамӑр уйрӑлмалла пулнӑшӑн тата мӗнпур совет халӑхӗн инкекӗшӗн кӑшт таварма телей тупрӑм эпӗ те. Малашнехи ӗмӗтсем тата пысӑк-ха. Ӑна тума пултарассӑн туйӑнать мана, мӗншӗн тесен, хам специальноҫе пӗлетӗп эпӗ лайӑх, тата, чи пахи, эпӗ вӗревсе ҫитрӗм, тӑшмана питӗ, питӗ кураймастӑп. Эпӗ халь хаяр, ман пит ҫинче пӗр чӗптӗм те кулӑ кураймӑн (май килсен, карточкӑ ярӑп), ӑшра пӗр шухӑш—нимӗҫсене ытларах пӗтерес ӗмӗт кӑна. Ой, мӗн тери хаяр ӗмӗт вӑл? Анчах кирлӗ вӑл, кирлӗ мана та, сана та, мӗн пур совет ҫыннисене. Кирлӗ—хамӑр ҫӗршывра пӗр нимӗҫ юлмиччен!“

Красницкий арӑмӗн ӗлӗкхи йӑваш характерне халь хӑй ҫырнипе танлаштарса пӑхрӗ те, пуҫне пӑрса кулса илчӗ.

„...Да, хаклӑ мӑшӑрӑм! Нихӑҫан та шутламан эпӗ ҫынна вӗлерме. Хӑвах пӗлетӗн, килте чухне автан та пусма хӑранӑ. Манӑн ӗмӗт ун чухне ачасене ырра, тӑва вӗрентесси кӑна пулнӑ. Анчах халӗ, паян фашистсене вӗлерни—нимрен паха та ырӑ ӗҫ. Ӑна зарплата виҫипе виҫме ҫук. Вӑл иксӗмӗршӗн кӑна мар, уйрӑм ҫынсемшӗн те мар, тӗнчери мӗнпур чипер ӑстӑнлӑ этемлӗхшӗн, унӑн малашнехи пурнӑҫӗшӗн ырӑ. Ҫавӑнпа паян кам та кам, май килнӗ ҫӗртенех, фашиста вӗлермесӗр иртет, вӑл этемлӗхе усал кӑна тӑвать, вӑл унӑн тӑшманӗ пулса тарать“.

— Анчах ӑҫтан тухнӑ унӑн ҫав тери паттӑрлӑх?!.—тӗлӗнчӗ Красницкий.

Хайӗн вӑрӑм ҫырӑвӗнче Роза кун ҫине те ответ парать:

„...Ну, чунӑм, пӗтӗм ӑшах уҫса патӑм ӗнтӗ сана, анчах та сан арӑму, хӗрарӑм, ҫавӑн пек пулнӑшӑн, хаяр шухӑшланӑшӑн ан тӗлӗн. Ӑнланмалла марри нимӗн те ҫук кунта. Фронтра нумай ман пеккисем. Вӗт хӑвах шутла,—равноправи. Мирлӗ вӑхӑтра нумай калаҫатчӗҫ ун ҫинчен, часчасах эпир унпа тата хамӑрӑн, хӗрарӑмсен, хӗсӗк интересӗсемшӗн те усӑ курнӑ. Анчах вӑл йӑнӑш, равноправи сӑмаха хӑй уссишӗн кӑна калакан хӗрарӑм, ман шутпа, ҫын та мар. Вӗт, ҫӗршыв хӑрушлӑх умӗнче тӑнӑ вӑхӑтра арҫынсемпе пӗр ретре тӑрса (хӑть тылра, хӑть фронтра) ӗҫлени, кӗрешни тата, кирлӗ пулсан, юн тӑкма, пуҫа

хума хăраманни—чăн чăн равноправи. Ман шутпа Ленинпа Сталин юлташсем, пире равноправи панă чух, çакна асра тытнă.

Малалла, Сталин Конституцийĕ пире, хĕрарăмсене, арçынсемпе пĕр танах вĕренме, ĕçлеме, канма право пачĕ. Виçĕмçул Сочире иксĕмĕр пулнине халĕ те манмастăп эпĕ. Сыхлама кирлĕ мар-и-ха ĕнтĕ вĕсене? Конституцире „Тăван çĕршыва сыхласси—кашни гражданинăн тивĕçĕ“ тесе çырнине ылттăн саспаллисемпе вулама кирлĕ. Мирлĕ вăхăтра эпир вăл правасем çине савăнса е ун пек пулма тивĕçлĕ тесе кăна пăхнă пулсан, халь вĕсене пурнăçлассишĕн ĕнтĕ чĕре çунать, пурнăçа парас килет.

Ну, чунăм, ывăнтăн пулĕ вуласа, пĕтеретĕп ĕнтĕ. Юлашкинчен фронтри опытран çакна çеç калатăп: хĕрӳллĕ, татăклă çапăçусем малалла-ха, юн сахал мар тăкăнĕ. Сире те çитĕ черет, тен унна та çитмĕ, çĕнĕ кадрсем вĕçлĕç. Анчах паллă, çĕнтерӳ—пирĕнте. Резервсем пирĕн вĕçĕмсĕр, сталинла индустри çĕнĕрен-çĕнĕ, вăйлă хĕç-пăшалсем çителĕклĕ парса тăрать, колхозсем фронта тутă тытаççĕ, Хĕрлĕ Çара пирĕн аслă полководец Сталин хăй ертсе пырать. Вăхăт пулсан, хăвăн пĕлӳсене тепĕр хут тĕрĕслесе тух, çĕнтерме отлично пĕлни кирлĕ. Тăшманпа хаяр курайманлăхпа кĕрешме вĕренмелле. Кăна тума партбилет питĕ пулăшать. Çапаçăва партбилетпа кĕретĕн пулсан—эсĕ çĕнтерĕн. Шухăшласа пăх кун çинчен,—ӳкĕтлетĕп, мăшăру сăмахĕ вырăнлă пулĕ.

Ну, хытă чуптăватăп. Санăн—Роза“.

III

Вăтам шкулта вĕреннĕ чух Красницкий комсомолец пулнă, анчах вăл ытти çамрăксенчен политикăпа философи ыйтăвĕсем тăрăх шухăшлама, дискуссилеме, тавлашма юратнипе раснах уйрăлса тăнă. Маркспа Энгельс ĕçĕсемпе паллашнă, Ленин цитатисене пĕлнĕ, Гегель, Юм, Кант философийĕсене вĕреннĕ. Çавăнпа нумайăшĕ Красницкирен лайăх партработник е педагог пулать, тесе шутланă. Красницкий хăй те ун чухне хăйĕн пулас специальноçне суйласа илмен пулнă.

Çакăн çинчен Красницкий халĕ асăнас та çукчĕ пулĕ. Анчах ăна арăмĕн çырăвĕ ирĕксĕр астутарчĕ, çĕнĕ шухăша ячĕ.

Сасартăк, çак вăхăтра, пуç тӳпинчен истребительсем кĕрлесе вĕссе кайрĕç. Леререхре, çул çинче пулас, тата танксем кĕрлесе тухни илтĕнчĕ. Оруди, миномĕт, хĕç-пăшал сасси вăйланса пычĕ. Вĕренӳ вĕçне çывхарать, атака пуçланать.

— Ăçтан тухать çав тери хĕç-пăшал?—тĕлĕнсе илчĕ Красницкий.— Вĕт кунта вăрçă та çук, а фронтра мĕнле пулĕ?

Ответне хăех тупрĕ. Ăна хамăр индустри, социализмлă промышленность парса тăрать.

— А чĕрĕ тавар?

Ăна коллективла ял хуçалăхĕ тăратать, лав хыççăн лав, машина хыççăн машина, вагон, эшелон... Пирĕн ял хуçалăхĕ фронт заданийĕсене, промышленность пекех, ăнăçлă пурнăçласа пынине икĕ çулхи вăрçă опычĕ нимрен те лайăх кăтартса пачĕ ĕнтĕ.

„Мĕн пулнă пулĕччĕ,—хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Красницкий,—çавсем пулман пулсан? Мĕн курнă пулĕччĕ Совет çĕршывĕ кивĕ экономикăпах юлнă пулсан?“

Нимĕçсем тĕрĕссипе хăйсенне кăна мар, пĕтĕм Европăри малти техникăна, хĕç-пăшала тытса илсе, Совет Союзне хирĕç тăратрĕç. Сисĕмсĕр, ултавпа тапăннипе нимĕçсене пирĕн чи лайăх çĕрлĕ вырăнсене, промышленноçлĕ территорисене вăхăтлăха тытса илме май килчĕ. Пысăк хă-

рушлăх тухса тăчĕ пирĕн ума, халиччен курман йывăр испытани тытма лекрĕ. Çав вăхăтра, халăх тăшманĕсем хушнă пек, вак хуçалăхлă экономика çинче тăнă пулсан, эпир (вăл шутрах Красницкий те) тахçанах нимĕççен пăявĕ çинче çакăнса тăнă е асаплă чуралăха лекнĕ пулăттăмăр, а Совет çĕршывĕ тăршшĕпех вут айенче çуннă пулĕччĕ. Аса илме йывăр. Анчах вăл пулмарĕ, пулмĕ нихçан та. Фашистсем хăйсем кăна мар, ытти капиталистла патшалăхсем те кĕтмен çĕртен, Совет государстви, социализмла держава, Европăри пĕр патшалăх та тӳсеймен испытание çирĕп тытса, вăрçă вăхăтĕнче пушшех, нихçанхинчен те хытăрах çирĕпленсе пычĕ. Халь ĕнтĕ аслă Сталин тата унăн партийĕ çĕршыва мĕншĕн çав тери кĕске срокра индустриализацилени, ял хуçалăхне коллективизацилени пуриншĕн те питĕ паллă, тĕкĕр çинчи пекех уçă. Халь ĕнтĕ кашни çын хăй пултарулла, вăйлă, фашизма пĕтерме телей тивнĕ Совет державин членĕ пулса геройлăх кăтартать. Паян Сталин ячĕ фронтри боеца тăшманпа хĕрӳллĕн, хаярран тата виличченех кĕрешме, тылри рабочипе колхознике фронта пулăшассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хавхалантаракан вăй-хал пулса тăчĕ. Да, Сталин вăл пурнăç, ырă ĕмĕтлĕ пурнăç! Унпа эпир граждăн вăрçинче çĕнтертĕмĕр, Сталин ăсĕпе социализм турăмăр, Сталин ертсе пынипе фашизма та ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хурăпăр. Çулсем иртĕç, ĕмĕрсем улшăнĕç, анчах Сталин ятне этемлĕх ĕмĕр-ĕмĕр чĕрере, ăшă кăмăлра усрĕ.

Мĕн пултăр ĕнтĕ паян Сталин партинче тăнинчен, унăн ретĕнче кĕрешнинчен чаплăраххи?

Çак ыйту тивĕçлипе тухса тăрсан, Красницкие хăйĕнчен хăйнех намăссăн туйăнса кайрĕ. Пичĕ унăн хĕрелсе илчĕ, куçĕсем хăйне хăй кăмăлсăр пулнине кăтартрĕç. Анчах пуçра çав тери нумай шухăшсем! Халех татса парас килет вĕсене, кампа та пулин калаçас кăмăл туртать, шухăшсене каласа парас килет. О, фронт çырăвĕ! Мĕн чул вăл шутлаттарать, тĕрĕслĕх кăтартать, туртăм парать!

Красницкий тăрса палатăналла утрĕ.

## IV

— Лиза! Лиза!— кăшкăрчĕ Красницкий, пиртен тунă алăка уçса,— итле, мĕнле çыру илтĕм эпĕ!

— Çук вăл!— илтĕнчĕ хирĕç пĕччен тăрса юлнă санитар сасси.

— Ăçта кайнă?

— Собрани пулас вĕсен!

— А эпĕ? Мĕншĕн мана чĕнмен?

— Пĕлместĕп, майор юлташ!

Красницкий тухса тепĕр палатăналла, комбат заместителĕ пурăнакан çĕре, утрĕ. Вăл çын, звани тăрăх капитан Петров, малтанхи çул фронтра пулнă, аманнă, унтан кунта, Инçетри Хĕвелтухăçне, килнĕ. Вăл ĕçре хăйĕн виçсе калакан сăмахĕсенчен нихçан та чакман, дисциплинăна яланах малтанхи вырăна хунă, анчах пĕр суймасăр чунран калаçнине е каласа панине ăшă кăмăлпа йышăннă, юратнă. Çавăнпах пулĕ, тен, Красницкин тулса килнĕ кăмăлĕ те ун патнелле туртрĕ.

— Юрать-и кĕме, капитан юлташ? Эпĕ нумайлăха мар.

Сасă илтĕнменрен Красницкий пуçне чиксе пăхрĕ. Çук, никам та...

— Ăçта кайса пĕтнĕ вара?

Красницкий йывăç çумне тăрса йĕри-тавра пăхрĕ. Пĕлĕт тăп-тăрă, кăнкăвак. Тин кăна анса ларнă хĕвел çутти сылтăм енчен тухакан уйăх çине пулнипе, лешĕ хĕп-хĕрлĕн шуса улăхать. Инçетре-инçетре йăл-йăл! çăлтăрсем çуталаççĕ. Лăпкă, пĕр варкăш та çук. Йывăç çулçисем тапран-

маççĕ, сопкăсем çинчи ўсен-тăрансенчен чĕрĕрех уçă сывлăш килет, хĕç-пăшал сассисем чарăнвă ĕнтĕ. Таçта, шурлăхра пулас, шапасем кăшкăрни илтĕнет. Кунта вĕсем Российăри пек татăклăн мар, пĕрмай тата вăрăммăн юрлаççĕ, сасси те вĕсен темĕнле, кăвакалсен ушкăнĕ нăрклатнă пек туйăнать. Çывăхрах, чăтлăх тĕмĕсем хушшинче, кайăксем те тĕрлĕ сасăпа юрлани илтĕнет. Анчах инçетрен килнĕ çынна йывăр вĕсене сасă тăрăх уйăрма: те фазан, те урăх кайăк. Пур вĕсенчен каçхине юрлаканнисем те, йывăç хупписене çĕрĕпе шаккаканнисем те, ирхине вăратаканнисем те. Унтан, тĕлĕнмелле тата, унта-кунта хĕç-пăшал сасси илтĕнни кунти кайăксене пĕртте хăратмасть, сопкăсем хушшинче пурăнакан боецсене вĕсем килти кайăксем пекех хăнăхса çитнĕн туйăнаççĕ. Кирек мĕнле пулсан та, çанталăк ырă кунсем сĕннĕ, чăн-чăн çу вăхăчĕ пуçланнă. Пурте вĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, чуна савăнтармалла, çĕклентермелле ĕнтĕ. Анчах Красницкий чунĕ вăл хитрелĕхпе кăмăлланса çитме пултарайман, ăна темĕн ăша вырттаракан япала кирлĕ пулнă. Мĕн вăл? Юратнă арăм? Чăн, ăна курас килет, ытларах та. Анчах халь кăна çыру илнĕ хыççăн, ун пирки ăшчик пăртак лăпланчĕ тата тивĕçлипе кăштмăнкăмăлланчĕ те. Ак часах хирĕç ответлесе вăрăм çыру çырать, вара унăн кăмăлĕ пĕтĕмпех çырлахать. Çапах унпа та çитмен пек туйăнать, шалта — мимере те, чĕре патĕнче те, çĕнĕ ыйту хăйне татса пама васкани сисĕнет, канăç памасть.

Сортировочнăй палата умĕпе иртсе пынă чух хăлхана калаçни илтĕнсе кайрĕ:

— Сталин юлташ хăйĕн Майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕнче тăшмана çĕнтерме çĕнĕ çулсем кăтартса парать...

Красницкий, чарăнса тăрса, кам калаçнине уйăрса илме тăрăшрĕ. Комбат мар, капитан сасси те ун пек мар. Политотделтан килнĕ командир пулас.

— Кăçал, юлташсем, Хĕвеланăç фронтĕнче юлашки, татăклă çапăçусем пулса иртмелле. Çаплипех виççĕмĕш çула юлăпăр, тесе ан шутлăр, кирек хăш минутра пултăр та, пĕрре пире те чĕнме пултараççĕ!..

Красницкий кĕме тăрсан, тахăшин сасси чарса хучĕ:

— Пуху... хупă, — партиецсемпе комсомолецсем кăна!

Мĕн тери кăмăлсăрлăх! Докладчик темĕн çĕнĕ япала çинчен калать, хатĕрленме хушать. Аванччĕ, тем пекехчĕ пĕрле, çынсемпе тан итлеме. Красницкий, палата тулашĕнче тăрса, татах итлерĕ.

Докладчик хăй ăшĕнче çынсене каласа панинчен ытларах пĕлет пулас, анчах сăмахсене тўрĕ, уççăн мар, сисĕнмелле кăна калать. Да, ыйту — çĕнĕ япала, улшăну пулмалли çинчен пырать, итлеме, пĕлме питĕ интереслĕ. Анчах ăна, Красницкие, вăрттăн итлесе тăма ирĕк кам панă? Тепĕр тесен, хăйне хăй тивĕççĕр аяла хуни пулмасть-и вăл?

Çакна тĕрĕссипе тавçăрса илсе, Красницкий майĕпе пасăрхи çĕре кайса ларчĕ. Куçĕсем хăйĕн çав çавах унталла пăхаççĕ. Итлес, пĕлес килет унăн та. Унтан ытларах, сăмах тухса калас килет. Хăй шучĕпе ăна çак вăхăтра унран ытла çунтаракан сăмах никам та калама пултарас çук пек туйăнать. Каласа кăтартнă пулĕччĕ фронтран илнĕ çыру çинчен, уçса панă пулĕччĕ хăйĕн тăвăнса çитнĕ шухăшсене, чĕннĕ пулĕччĕ çав юлашки çапăçусене хатĕр пулма. Ыран вăл хастарлăх иртсе кайма пултарать, пĕтĕмĕшлĕ пухусене кĕтсен, вĕсем тепĕр чух уйăхра та пĕрре çеç пулаççĕ.

— Ах, мĕншĕн çук ун пек право,— тарăхса илчĕ Красницкий,— кирлĕ вăхăтра калаçма?..

Чăннипе вăл çынсенчен пĕртте кая мар, хăшĕсенчен маларах та. Аслă командир, унтан тата батальонри чи паха взвода — хирурги взводне ертсе пырать. Икĕ çул хушшинче фронт валли мĕн чухлĕ хаклă кадрсем хатĕрлесе панă. Унăн ученикĕсем, фельдшерсемпе санинструкторсем, Карели вăрманĕсенче те, Кубань çеçен хирĕсенче те — аманнă геройсене пуля айĕнчен çăлса кăлараççĕ, хăйсем те геройсем. Акă Салмин — 120 çын хăтарнă, ун çинчен хаçатра та çырнă. Ав Шилов — кăкăрĕ çине икĕ орден çакнă ĕнтĕ. Тепĕр тесен, инçете шыраса кайма та кирлĕ мар, Лизăнах илер. Вăл вĕт кĕске курс кăна пĕтернĕ, халĕ — операци сестрӳ. Ахаль мар ĕнтĕ, Красницкий командовани енчен тав хыççăн тав илнĕ.

Паçăр Красницкий хăйне хăй мăшăр çукран, чун йăпанса курманран пурнăç çитменнине туйнăччĕ, ăна кичем пулнăччĕ. Часах вăл тупăнчĕ, анчах çак вăхăтра çумра çукки — инкек мар. Вăхăтлăх уйрăлу, тепĕр тесен, пĕр-пĕрин патне туртăннине, юратнине вĕрилетет кăна. Нумай иртмĕ вăхăт, фашизм пуçĕ татăлсан, çĕр çинче каллех телейлĕ пурнăç çĕкленĕ, юрату сарăлĕ. Çапах Красницкий халĕ хăйшĕн пурнăç туллимар пулнине сисет. Обществăллă пурнăç уншăн çителексĕр пек туйăнать. Да, вăл пĕччен,— хăйĕн мĕнпур шухăшĕсене кирек хăш вăхăтра та коллективпа пĕрле сӳтсе-явма пултараймасть. Анчах мĕншĕн тин кăна сиснĕ ăна вăл, тесе ыйтасшăн пулĕ вулакан. Пулать вĕт тĕрлĕрен мирлĕ граждăн пурнăçĕ — хăйне тĕл: унта çын хăйне ирĕклĕрех, уйрăмрах тытма пултарать, унтан тата, Красницкий чирлисем хушшинче кăна ĕçлевĕ, урăх ыйтусем ăна питех интереслентермен. Çар пурнăçĕ — урăхларах: дисциплина, пĕрлехлĕ интерес, пĕр ĕмĕт, тачă коллектив— кашни чаçĕн чăмăрĕ пулса тăрать. Кам та кам ăна пăхăнмасть е килĕшмест, вăл хăйне хăй ирĕксĕрех пĕччен, уйрăм, тусăнчăкла туять. Красницкий пирки вĕсем пĕтĕмĕшпех çапла тесе калама пултараймастпăр ĕнтĕ эпир, анчах унăн çитменлĕхĕ те çук мар. Тен, ун çинчен, çав ăшри çитменлĕх çинчен паян арăмĕн çырăвĕ астутарчĕ ăна; тен, пулас çапăçусене кĕрес умĕн хăех сиссе илчĕ. Кирек мĕнле пулсан та, пĕр япала яланах паллă: çынсем çапăçăва кĕрес умĕн пур енчен те пĕр-пĕринпе тачăрах пулма, пĕтĕçме тăрăшаççĕ. Çапла туни вĕсене çĕнтерме кăна пулăшать.

## V

Учени хыççăн нумай та иртмерĕ вăхăт, батальона ура çине тревогăпа тăратрĕç. Командирсемпе боецсем линейка çине пĕр рете пухăнса тăрсан, командирпа унăн заместителĕ кĕске сăмахсем тухса каларĕç. Комбат каларĕ:

— Мирлĕ условире эпир икĕ çул вĕрентĕмĕр, хамăр ĕçре аслă çулпуç Сталин юлташ кăтартса панисемпе тата фронт опычĕсемпе усă куртăмăр, юлашки учевире пирĕн батальон пысăк хак илме тивĕç пулчĕ: эпир çапăçăва хатĕр. Халĕ ĕнтĕ Сталин юлташ, юратнă çĕршыв пире фронта чĕнет. Тăшмана çĕнтерме, хамăр вăя кăтартма тивĕçлĕ пулар! Сталиншăн, Тăван çĕршывшăн, совет хĕç-пăшалĕ çĕнтерессишĕн!

— Урра! Ур-ра-а!..

Комбат заместителĕ Сталин юлташ приказĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешме, хаяр тăшмана хирĕç пĕр утăм чакмасăр çапăçма, аманнă боецсен сывлăхĕсене кĕске срокра тӳрлетес-

сишĕн мĕнпур вăя, ăс-тăна хурса ĕçлеме чĕнчĕ.

Боецсен сăн-питне, пĕр енчен хаяр тĕс çапрĕ. Вăл — тăшманшăн. Тепĕр енчен — вĕсенче уйрăм çĕкленӳ, телейлĕх, савăнăçлăх пурри палăрать. Мĕншĕн? Тен, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем ал-урасăр тăрса юлĕç, теприсем нихçан та каялла таврăнмĕç. Инкек мар çапах та, вăрçă çухатусăр пулманни вĕсемшĕн çĕнĕ япала мар. Тĕнче çĕленне — фашизма пĕтерме çĕкленни, хаклă çĕршыва çапăçу хирĕнче сыхлани, этемлĕх пурнăçĕшĕн, çынсен малашнехи ĕмĕчĕшĕн кĕрешĕве кайни — вăт çаксем ĕнтĕ паян нимрен те паха пулса тăраççĕ. Ак вĕсем те икĕ çул хушши вĕреннĕ, ĕçленĕ, çав вăхăтрах кунран кун çапăçава кĕрессе кĕтнĕ. Хăть пĕр фашиста та пулин вĕлерме май килни е аманнă боеца сыватса çĕнĕрен фронта таврăрни — çаксем ĕнтĕ телей мари-ха паян? Кашнин чĕри çунать çавна тăвассишĕн. Митинг майĕпе малалла тухса каланă юлташсен сăмахĕсенче паян уйрăмăнах çав тери хĕрӳллĕх, çĕкленӳллĕх пулиинчен нимĕн те тĕлĕнмелли çук. Халиччен сайра калаçнă Красницкий те (тинех телей пулчĕ) тĕлĕнмелле, чĕрене тивекен сăмахсемпе çĕклентерсе ячĕ. Чăннипе, унăн сăмахĕсем нихăшинчен те лайăхрах пулчĕç, кĕтменччĕ ăна никам та. Хăйне кăна ăна темĕншĕн, каласа пĕтереймен пек тата каланипе те ăшра çавах тем çитменни юлнă пек туйăнчĕ. Мĕн-ши вăл?

Чаçрах япаласене пуçтарма хушрĕç, машинăсем те кĕрлеме пуçларĕç.

Красницкий чемодана пĕр мăшăр кĕпе-йĕм, пит шăлли чикрĕ, çиелтен кĕнекисене йĕркелесе хучĕ.

— Мĕн юлать-ши тата?

Йĕри-тавра, полка çине, кровать айне пăхрĕ. Э, шăл порошокĕ юлнă. Чикрĕ ăна та. Анчах тата темĕн илмен пек туйăнать.

— Мĕн манса хăваратăп-ши?

Чӳрече умĕнче килтенех илсе тухнă, чечексемпе тĕрлесе пĕтернĕ стакан тăрать.

— Акă мĕн юлать иккен!

Стакана, ванасран хаçат хучĕпе чĕркесе, пĕр кĕтессе чикрĕ те татах йĕри-тавра пăхрĕ. Урăх çук нимĕнле япала та. Çар çынни, пуринчен ытла вăрçă вăхăтĕнче ку тĕлĕшрен пуян мар, ытлашши япала — инкек кăна, ăна сыхлама хăтланса пуçа хума çеç пулать. Кирек мĕнле пулсан та, темĕн çитмест, тем илмен пек, манса хăварнă пек туйăнать.

— Мĕн-ши вăл? Мĕн манса юлать-ши?

Алăсем мĕн пуррине пурне те пуçтарчĕç ĕнтĕ, куçсем те урăх япала пуррине курмаççĕ. Вĕсем пурте чемоданра. Анчах, чун улталамасть, вăл пысăк япала манса хăварни çинчен систерет,васкатать.

— Майор юлташ! — терĕ чупса кĕрсе пĕр боец. — Пурте пухăнса çитрĕç, сире кĕтеççĕ, комбат халех тухма хушрĕ!

Машина çине ларсан, Красницкие хăй маннă япала землянкăрах юлнăн туйăнчĕ. Пĕр минутлăха унăн каялла анса тепĕр хут шыраса пăхас кăмăлĕ килсе кайрĕ, анчах машина вырăнтан тапранни ăна чарса лартрĕ.

Станцăна батальон тĕп тĕрĕс, йĕркеллĕ тата вăхăтра çитрĕ. Эшелон хатĕр тăрать, паровозĕ тĕтĕм кăларать. Боецсем пĕр шавсăр вырнаçма пуçларĕç, ларчĕç сестрасем те. Красницкий кăна ларма чарăнса тăчĕ.

— Эсир мĕншĕн лармастăр? — ыйтрĕ ăна курсан, комбат заместителĕ. — Е мĕн те пулин манса хăвартăр?

— Мĕнле капла, капитан юлташ! — салхуллă сасăпа каларĕ Красницкий. — Мĕнле каятăп капла?

— Как мĕнле? — тĕлĕнсе сассине çĕклерĕ капитан, — ларăр та, каятпăр, пурте пĕрле!

— Эпĕ вĕт бес...

— Мĕн? Ну, часрах калăр, вĕт дежурнăй ăсатма тухрĕ!

— Эпĕ вĕт беспартийнăй!

— Ну, мĕн вара, кунта партиецсем кăна каяççĕ-им?

— Çу-ук! — хурлансарах каларĕ Красницкий. — Манăн та çапăçăва сиреппе пĕрле, ну, партиец пулса каяс килет.

— Вот мĕн иккен! — кулса илчĕ капитан. — Шухăш ырă, питех те тĕрĕс. А сире эпир пĕлетпĕр, çавăнпа, пожалуй, çул çинчех татса пама пулать ăна!

— Чăнахах та-и?

— Конешнă, чăн! — çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ капитан. — Ну, ларăр, ларăр, тапранатпăр!

— Ту-у! Ту-ту-у-у!..

Эшелон Хĕвеланăçнелле тапранчĕ.



# ЯКОВ УХСАЙ

## ТУТИМĔР.

*Пилĕк актлă трагеди**

„Чăваш ялĕсене вăрçа юрăхлă тимĕр-тăмăр япаласем сутма чарас".

*Пĕрремĕш Петр патша указĕнчен.*

ВЫЛЯКАНСЕМ:

| | |
|---|---|
| **Тутимĕр** | **Офицер** |
| **Чемей** | **Иван** |
| **Асамат** | **Тяпук** |
| **Курак** | **Ӳсĕр çын** |
| **Эрпике** | **Евчĕсем** |
| **Галахов** | **Салтаксем** |
| **Полина** | **Вăйăри çамрăксем** |

**Халăх.**

Ĕç XVIII-мĕш ĕмĕрĕн юлашки сыпăкĕнче Пушкăртстанри чăвашсем хушшинче пулса иртет.

### ПĔРРЕМĔШ АКТ

Асаматăн хура пӳрчĕ. Тĕпелте те, алăк патĕнче те саксем. Кăнтăрла. Курак кĕрĕ илсе ларать.

**Курак**

Паян каçпа килет-ши евчĕ?
Кĕтсе шăп иртрĕ пĕр эрне,
Çапах та çук. Элек таврашĕ,
Хура кушак пек, çул çинчен
Иртмерĕ пулĕ, хăямат?

* Кĕскетсе пичетленĕ.

Эрпике сасси

Анне! Анне! Чӗппе тытса
Каятчӗ хурчӑка. Инкекӗ
Каймасть, пӗр майӑн явӑнать.
Кӑшша!

Курак

Ан ҫухӑр, Эрпике!

(*Хӑй тӗллӗн шӑппӑн.*)

Тытса каймарӗ хурчӑки.
Ку ырра мар. Ватти сӑмахӗ
Каларӗшле, кӑҫал хӗре
Нимле те вӗҫереймӗп эпӗ.
Пӗр-пӗр чун мурӗ хурчӑка
Чӗппе тытсан, вӗри ӑшчикӗм
Лӑпланнӑ пулӗччӗ. Эх, турӑ,
Итле йӳтенӗ чуруна,
Качча пама та пысӑк хулӑм
Илме антӑрччӗ ҫӑмӑллӑх!
Чӗнсе кӳртем-ха. Хурчӑки
Пӗр чӗппине тытса тен кайӗ.

(*Кӑшкӑрса.*)

Хуралласа ыратӑн пулӗ,
Кансан та юрӗ, Эрпике!

Эрпике сасси

Типме кӑларнӑ ыраша
Сӑхаҫҫӗ ҫерҫисем. Кӑшша!

Курак

Пӗрре те итлеместӗн-ҫке.
Кӗме калана. Ан лӑрка!

Эрпике сасси

Атте килет.

Курак

Эппин шыв кӳр!
Апат та кирлӗ кӑнтӑра.
Чӗппӳсене хамах хураллӑп.

(*Килкартинче витресем янрани илтӗнет.*)

Тинех тасалчӗ. Хурчӑка
Тӳп-тӳрӗ антӑр килкартне!

Унта пӗри, уксах шим-шимпе
Ҫӳрет, ӑна тытса кайсан та,
Шеллемӗттӗм. Хӗре килтен
Ӑсатайсан, чӗре асапӗ
Иртетчӗ ман.

(*Чӑхсем ҫуйӑхни илтӗнет.*)

Асамат сасси

Кӑшша! Ӑръях!

Курак

Тепри, вилмен ийе путекӗ,
Хурчӑкана хӑратрӗ. Тьфу!
Инкек ҫине сикет синкекӗ.
Килмест евчи те, ҫӗр ҫӑтман.

(*Асамат кӗрет.*)

Курак

Ытла карма ҫӑварлӑ эсӗ,
Вӑрра хӳтернӗ пек саспа
Чуна сиктертӗн.

Асамат

Ав хӗрен
Йӑтса та кайрӗ пӗр чӗппе.
Аҫу-аннӳ пӗлсе ят панӑ:
Тӑмсай хура курак ҫав эсӗ.

Курак

Хӑшне вара, имшеррине-и?

Асамат

Арҫын пӗлет-и? Тух та кур!

Курак

Ҫӳлти аттемӗр ҫырнинчен
Иртеймӗпӗр. Тытсан та юрӗ.
Чӗп пек каять пуль Эрпике.

Асамат

Ялан юрри пӗрре куракӑн:
Кӑранк! кӑранк! Ҫава ҫине
Каясчӗ сан, тӑрӑ ухмахӑн.
Пуҫу ҫатан пек шӑтӑк-шатӑк,
Ҫилсем вӗҫтернӗ мимӳне.

**Курак**

Чипер калаç-ха, Асамат!

**Асамат**

Пĕлтĕр тукмак пĕр пăрăва
Тытсан та, эсĕ савăнтăн,
Евче кĕтсе сăра вĕретрĕн.
Каллех çав юрă, çав сăмах.
Суха туса тертленнĕ хыççăн
Анат çиесчĕ тутлăрах.

**Курак**

Уйран та çăкăр çеç. Тутли
Лере, улпут кĕрекинче.

(*Хатĕрлесе сĕтел çине лартать.*)

**Асамат**

Кăçал Юманлăх леш енче
Начар ырашăн усăмĕ.
Ытла сайра — хушши пĕр шит.

**Курак**

Ăна акма кайма тухсассăн,
Кам хирĕç пулнăччĕ сана?

**Асамат**

Ара, кам пултăр-ха? Чемей,
Тутимĕр ашшĕ.

**Курак**

И, чĕлхесĕр!
Чĕлхесĕре курсан, ыраш —
Пуçахсăр, тетчĕ ман атте.

**Асамат**

Пĕр канăçсăр сăмах арманĕ
Ĕçлет мĕн санăн, аварать.
Кăтра çынна çулта тĕл пулăн,—
Тырру та хĕвĕнĕ, ачам! —
Çапла калатчĕ асатте.
Чемей кăтра.

**Курак**

Кăтра пулсан та,
Кукши çап-çуттăн курăнать...
Хăвах куратăн, пирĕн усăм
Лĕпки пек çап-çара.

**Асамат**

Кулса
Пыра ларатчĕ пĕр тĕпренчĕк...
Кăçал пӳрте сиплемелле,
Пир-аварна хыпаланса
Пĕр ан сутсан — укçа пулатчĕ.

**Курак**

Пĕртен-пĕр шанчăк — Эрпике.
Укçа килетчĕ, çураççан.
Кăçал вăл нарăсра вунçиччĕ
Тултарчĕ,— вăхăчĕ кайма.
Ун пек илемлĕ хĕрупраçшăн
Çĕр тенкĕ парĕç.

**Асамат**

Ых, çăвар!
Хура курак! Çаплах пĕр юрă!

**Курак**

Вăрçса калартăн тинкене.
Сана вĕт ывăл кирлĕччĕ.
Хĕре çĕр ячĕ çук. Кайсан,
Ӳпкев илтсе хăлхам янрамĕ.
Эрпикене çуратсанах,
Хĕнерĕн, калăппа çапса
Пуçа шăтартăн. Мантăн-им?

**Асамат**

Вăтма та тивĕç пур. Çынсен
Килте — виçшер сап-сарă ывăл,
Хирте — виç ят, ĕçре — улт алă.
Вилсен, кам тупăк тăвĕ маншăн?
Пĕр ывăл та тумарăн эсĕ.
Хĕрарăм-и? Хĕсĕр курак!

**Курак**

Турри хушман-тăк, айăпĕ
Манра-и?

**Асамат**

Ыттисемшĕн турă
Пĕрре те хирĕç мар, Курак!

**Курак**

Вĕрӳçĕ патĕнче те пултăм,
Киремете те асăннă,
Чӳкне те хывнă çулленех.

Ах, турă, мĕншĕн чуруна
Памарăн ывăл? Ан çилен,
Каçар мана!

(*Килкартинче чăхсем кăтăклатни илтĕнет.*)

**Асамат**

Кăшша! Ăрьях!
Каллех те тепĕр чĕп çухалчĕ.
Миçе хĕр парăн, хăямат!

**Курак**

Эрпикивне çўç тунине
Çăлаччĕ! Кайрĕ те çухалчĕ.
Шыва кайсан вăрах çўреç-и?
Утма — виç утăм.

**Асамат**

Çухрăм пур-тăр.

**Курак**

Çăл куçĕ ав!

**Асамат**

Ĕнертенпе
Тĕне кĕменнисем ăсаççĕ
Ял вĕçĕнче.

**Курак**

Кунти типмен-и?

**Асамат**

Типмен. Унта Ахрумкă пуп
Тăвата чăваша тĕне кўртнĕ.
Унтан тумлам та шыв ĕçме
Хушман тĕне кĕменсене.

**Курак**

Ытла йĕркесĕр тамаша.
Пире кўртмеççĕ-и?

**Асамат**

Пуп килĕ,
Пĕрре хĕстерĕ — макăрăн.
Хĕрес чиксе кăларнă шывăн
Витри виç тенкĕ. Пуянсем
Тĕне кĕреççĕ, унсăрăн
Хĕстерĕ Кĕтерин патша.
Хире каяс!

**Курак**

Мĕлкў çич утăм
Пулсан, киле васка каçкўлĕм.
Кĕрмеслĕ яленчен пĕр евчĕ
Килес пек сас-хура çўрет.

**Асамат**

Лаша
Мĕн калĕ сухара...

**Курак**

Ан ўкĕн,
Кĕтсе тăмасăрах çураçăп.

**Асамат**

Çапах та çыннине пĕлмесĕр,
Ан килĕш. Хĕрĕмĕр тăван,
Ан пултăр ĕмĕрĕ куççуллĕ.

(*Асамат каять.*)

**Курак**

Каларăн та... Хăвна пĕлесчĕ!
Мана, хĕр чух, çураçнă чух
Яка чĕлхеллĕ вата евчĕ
Мухтаннине итлерĕм эпĕ:
Пуян киле улпут майри пек
Кĕрсе, çемçе минтер çинче
Ларатăн, тенĕччĕ. Анчах
Пĕркенчĕке уçсан, тин куртăм:
Итем çинче ултшар уралла
Урпа капанĕсем пулман,
Сап-сарă мăянсем кашлатчĕç.
Туя та çыннăн тумтирне
Илсе ху пынă; тепĕр кун
Ĕнсў çинче чупатчĕ пыйтă.
Мана ку каччă та юрарĕ,
Хама мĕн çырнине тўссе,
Курса хуллен-хуллен ирттертĕм.
Пуян килкартине кĕме,
Инке пулма илемлĕ марччĕ,
Тата çитменнине кура
Тĕл-тĕл кĕсенлĕччĕ пит-куçăм.
Çеçке пек Эрнике, — хитре.
Такам куçне те хĕртмелле,—

Ăна парасчĕ пуяна.
Килет!

(*Чӳречерен пăхса.*)

Эп те, хура курак,
Тăпра урайлă йăвара
Епле илемлĕ кăвакарчăн
Ӳстернĕ. Паттăр çав Курак!
Ун евĕр ывăлăм пулсан,
Çĕрме пуян та хăй хĕрне
Кине паратчĕ, тупата!

(*Эрпике кĕрет.*)

**Эрпике**

Чĕп амăшĕ ăçта, анне?

**Курак**

Пĕр хурчăка-и, е хĕрен-и
Çаклатрĕ чĕппине, анчах
Унтах пуль амăшĕ.

**Эрпике**

Çынсем
Каларĕç,— ăмăрткайăк
Йăтса çĕкленĕ пĕлĕте.

**Курак**

Ах, турă! Амăшне тытсан,
Ватти каларĕшле, мана,
Кил хуçине, тивет инкекĕ.

**Эрпике**

Хураллăп, терĕн, — хутерсе
Кӳртертĕн шыв.

**Курак**

Ан асăн ĕнтĕ.
Ахаль те чĕрене хускатрăн,
Чуна силлерĕн, Эрпике.
Ыйткалакан пек çĕтĕк-çурăк
Çӳретĕн; урама тухсан,
Умна тевет çаксан, аванччĕ.

**Эрпике**

Чечен тумтир, тевет-нухрат
Çакса тухма—сĕрен уявĕ

Çитмен. Çынсем те ман пекех
Çӳреççĕ.

**Курак**

Эсĕ, çын тесе,
Чемей старик пек пилĕк урлă
Çĕрĕк пăяв çыхасшăн мар-и?

**Эрпике**

Çыхсан та, çылăх мар, анне.
Нумай пулмасть-ха, пурçăн тутăр
Çыхса çĕрле вăйя тухсан,
Шăлна çыртса сĕтел çапаттăн.
Тăр кăнтăрла, ĕç çийĕнче
Тевет çакма хушатăн халĕ.
Каллех те çураçас пирки
Чĕлхӳ кĕçтет-им?

**Курак**

Чăн сăмахăн
Суйи çук çав, ачам. Сисетĕн
Таçтан та ырлăх килнине.

**Эрпике**

Ăçтан?

**Курак**

Кĕрмеслĕ ялĕнчен.
Каччи — йĕри-тавра мухтавлă.
Кăçал хĕлле кăрлай таварĕ
Сутатчĕ, пыршăсем пухатчĕ.
Çитес телейĕн тутине
Туятăн çичĕ çухрăмран.

**Эрпике**

Чăнах та, пыршăсен шăрши,
Инçе пулсан та, питĕ паллă.
Çураç кăна, кайран ан ӳкĕн,
Çӳçӳ пуса пекех шуралĕ.

**Курак**

Малтан хăрушă çил-тăман
Кĕрлет вăл çамрăк-кĕрĕмĕн,
Кайран килет уяр çанталăк.
Яштак пӳ-силлĕ хурама,
Чи малтанах пуртта курсан:
— Алла лекместĕп, хуçăлмастăп,—
Тесе пĕччен шавлать, тет имĕш.

Вутпа пĕçерттерсе аваççĕ;
Вара вăл, хурама, каппайчăк,
Этем пĕкки пулать, çӳрет
Шăнкăравсем янтăратса.

Эрпике

Мана пуян пĕкки çине
Çакасшăн шăнкăрав туса,—
Хăвна епле пайта илесшĕн?

Курак

Пăхса ӳстернĕшĕн укçа.

Эрпике

Пушмак пăру пекех сутма
Ӳстертĕн-и?

Курак

Авалтанпа
Йăла пырать. Хĕрĕм, ан макăр!

Эрпике

Эп макăрăп-и? Асту, çураçăн...
Туй умĕн черккӳне йăтсан,
Хам аллăмпа хама вĕлерĕп,
Вара тип-шар ӳкни çинчен
Ху ĕмĕрне ялан асилĕн,
Ылханлă манăн чун сана
Хăратĕ тăмана пулса,—
Пӳртӳ çинче çĕрле хăрушă
Ӳхлетĕ; хуп-хура кушак
Пулса тăрмалĕ алăкна.
Тĕлĕкӳнте çумна эп килĕп,
Укçа пек, çылăхла чуна
Сар çăпала çине хурса
Пырса тыттарăп аллуна.
Асту, анне!

Курак

Епле хаяррăн
Сăмах калатăн аннӳне.
Сава хам аркăм çийĕнче
Ачашласа ӳстертĕм эпĕ,
Мăян çисен те, кăкăрти
Сĕте ĕмтертĕм.

Эрпике

Мĕншĕн-ха
Çуралсанах тытса çапмарăн
Юпа çумне? Пуç мимисем
Саланĕччĕç, паян сана
Кăтартмăттăм усаллăха.

Курак

Ĕне пекех ĕнерсĕр эсĕ.
Пурне те манăн, çимĕкре
Шап-шур пĕркенчĕк пĕркенсен,
Ухмах-и эсĕ? Вунçичче
Çитсен те амăш хӳттинче
Ларать-и хĕр? Пиçсе çитсен,
Ялан татаççĕ çырлана.
Кайран тути те ун йӳçенчĕк.

Эрпике

Тĕкленнĕ кайăк та, анне,
Тăмасть çуралнă йăвинче.
Анчах каять чĕри тĕлленĕ,
Чĕри юратнă евнелле.

Курак

Ăнкар, ачам! Сана телейлĕ
Тăвасшăн эпĕ, пурлăхра
Хаваслă утнине курасшăн.
Типтерлĕ ырă евчĕсем
Вунçиччĕри хитре хĕрсемшĕн
Анчах çакаççĕ шăнкăрав.
Ватта юлсан, хăпса килеççĕ
Шăрт пек сухаллă урçасем...
Чăвашсене Ахрумкă пуп
Ĕнер тĕне кӳртни пирки
Пĕлме кӳрше каям-ха эпĕ.

(*Тухать.*)

Эрпике

Тĕне кӳртни çинчен-и? Евчĕ
Хыпарĕ илĕртет ăна.
Вăрçсан та, тулашсан та, пурпĕр
Анне каланинче пурах
Тĕрĕслĕхсем: пике хĕрсенĕн
Шăпи хавассăр та тивлетсĕр.
Йăмра çинче ӳсет-и çулçă,—
Кĕрхи кунта çилсем вĕреççĕ,
Татса каяççĕ инçене,
Çаплах хĕр ĕмĕрĕ. Ӳсетĕн,
Тытса илеççĕ çич юта,

Шап-шур пĕркенчĕк айĕнче
Йĕретĕн те пулатăн арăм.
Ытла хăрушă шутлама.
Анчах та чăн. Унтан иртеймĕн.
Паян çураçĕç, çимĕк çитĕ,
Туй пулĕ, иртĕ ĕмĕрĕм.
Ак çакă вăхăтра, паян
Ăçта-ши, сывă-ши Тутимĕр?
Никамшăн паллă мар çĕрте
Пĕр тĕмеске тăпри пĕчченçĕ
Çĕкленмерĕ-ши инçетре?
Е вăл тарса çӳрет-ши халĕ
Сĕм-сĕм хура вăрмансенче?
Мана аса илсе, асаплăн
Сывлать-ши вăл?
Вилмен пулсан,
Хĕвел хăяккăн пăхнă чух
Хăйĕн мĕлки пекех, ниçта
Юлмастăп эп унтан... Ялан мана
Хăй асĕнче тытса çӳрет-тĕр.
Ик çул та иртрĕ, икĕ хут
Пĕр май хаваслă çутçанталăк
Ем-ешĕл тумтирне хывса
Юрпа пĕркенчĕ çĕнĕрен.
Каллех ту тăррисем ешерчĕç,
Юркан пек курăк çийĕнче
Сикеççĕ путексем. Тутимĕр
Хăй мар, хыпар хăнарĕ те
Кунта пĕрре те çитеймерĕ.
Шур Атăл хĕрринчи хумсем
Ыраççĕ, тепĕр хĕррине
Каçмасăрах сӳнеççĕ, тет.
Çапла Тутимĕрĕн хыпарĕ.
Ик çул ĕлĕк кунта пăлхавăр
Çурхи шыв пек тапса тухсан,
Тутимĕр ячĕ таврара
Кăвак хуппи пек туйăнатчĕ.
Майра патша салтакĕсем
Эрне хушши юнпа хĕретрĕç
Ем-ешĕл пирĕн хирсене,
Тăвата сухрăм хушшинче
Пĕр утăмран пĕрер çынна
Çакса вĕлерчĕç, çăхансем
Сăха-сăха унта хăрушă
Кăранклатса нумай вĕçетчĕç.
Тутимĕр тарчĕ Пушкăрта,
Çеçен хирсен кĕмĕл кăлканĕ
Ăна хăтарчĕ вилĕмрен.
Анчах Чемей пичче, ун ашшĕ,
Тертленчĕ, курчĕ асапне.
Ăна тытса ялтан-яла
Çӳретрĕç, çурăмĕ çине
Кăварлă тимĕр пуснине,
Ун чĕлхине касса йытта
Çитернине хамах эп куртăм.
Çунтарнă çурчĕ вырăнне
Лартса хăварнă пĕр юпа.
Хура юпа,—Чемей сехмечĕ...
Тăрна сасси! Епле янтрать вăл!
(*Чӳречерен пăхать.*)
Пĕлтĕр çапла, пĕр уçă ир,
Тутимĕре кĕте-кĕте
Эрленнĕ вăхăтра пĕр ушкăн
Тăрнасене курсан, эп юрă
Хам ăсăмпа кăларнăччĕ.
(*Юрлать.*)
Ан васкăр, тăрнасем, çунат сулма!
Çĕрте мăнтарăн эпĕ, Эрпике.
Кăварлă юрату ман куçăма
Çунтарчĕ, хуçрĕ тӳрĕ пилĕке.

Шур Атăл хĕррине çитме халь ир,
Унта тĕтреллĕ сывлăш уçăлман,
Хурчăкасем кĕтеççĕ вĕçĕмсĕр.
Ан кайăр! Пĕр хыпарăм пурччĕ ман.

Кăштах тăрсан, çанталăк тап-таса
Уяртĕ. Итлĕр-ха мана унччен.
Çунаттăрсем çине çыру çырса
Тутимĕре пĕлтерĕр ман çинчен.

Тутимĕре çитерĕр салама,
Умне хăяккăн ӳкчĕр тĕкĕрсем.
Тархасшăн чарăнăр çунат сулма
Эсир, кикак сассиллĕ тăрнасем!

Савни килсен, çутатăп куçăма,
Тӳрлетĕп эп хăва пек пилĕке.
Тутимĕре çитерĕр салама,
Вара лăпланăп эпĕ, Эрпике.
(*Курак кĕрет.*)

**Курак**

Тутимĕре текех ан асăн.
Иртни иртнех, юрри те иrттĕр!
Ухмахланса савни çинчен
Юрланă чух, мăшăр лашалла

Иртсе пыратчĕç евчĕсем.
Тутимĕр паттăр йĕкĕтчĕ.
Хастар чĕреллĕ, теветкел.
Ун ячĕпе усал сăмахăм
Пулманччĕ, пулмĕ те, ачам.
Çухалчĕ вăл, вилес пулсан,
Тăпри çăп-çăмăл, канлĕ пултăр.
Ăна кĕтсен те—усăсăр.
Хырсем те çулçăсем тăкмасăр
Килеймĕ хăйĕн çĕршывне.
Çӳлти аттемĕр—пӳлĕх тура
Илемлĕ пӳ-сине пама
Пĕрре те ӳркенмен, анчах
Телей валеçнĕ самантра
Шăпасăр юлнă вăл—Тутимĕр.

Чĕлхем чараксăр, çĕрçăтман!
Кунта вăй-шайăн калаçса
Аҫаль ирттертĕм вăхăта.
Нумай та тăмĕ, евчĕ килĕ.
Тумлан, тумлан эс, Эрпике,
Кĕлет уçма сана ак уçă.
Çӳпçӳ унтаччĕ.
(*Курак евчĕсене кĕтсе илме хатĕрленет. Евчисем килсе çитеççĕ.*)

**Курак**

Ирех сире кĕтсе хаваслă
Çилсем уçатчĕç хапхана.
Пире хисеп сунса кĕнишĕн
Мерттес!*

ИККĔМĔШ АКТ

**Аслă урам. Уйăх çути. Ватă йăмрасем айĕнчи пĕренесем çинче çамрăксем лараççĕ. Выляççĕ. Ташлаççĕ. Кĕслеçĕ кĕсле калать.**
**Çамрăксем Эрпикен ыран пуçланас туйĕ çинчен калаçаççĕ, тата вĕсен шухăшĕ шав Эрпикен савнийĕ—Тутимĕр çинче.**

**Пĕр хĕр**

Мăнтарăн тантăш Эрпике...
Ыран пуçланĕ туй. Ăсанĕ.

**Пĕр каччă**

Пире Тутимĕр тĕл пулсан:
Шап-шурă манăн акăша
Эсир тыттарнă куçкĕрет,—
Тесен, мĕн калăпăр вара?

**Тепĕр хĕр**

Ирхи тăм евĕр каччă куçĕ
Пĕрре ӳкет те ирĕлет.
Ăсанчĕ Пушкăрта, çухалчĕ.
Унта хĕрсем сахал-и уншăн?

**Пĕр каччă**

Тим шывĕ хĕрринче пăлхавăр
Пыни çинчен çӳрет хыпар.
Пĕр пушкăрт пĕлĕш пасарта
Ĕнер каларĕ. Тен, Тутимĕр
Вăрах та тăмĕ, пĕрхĕнсе
Килсе те çитĕ, тепĕр хут
Тапранĕ-ха Чемей сехмечĕ.

**Пĕр хĕр**

Каять-и халăх ун енне?
Каллех те юпасем çине
Çакнисене курма тивет-и?

**Пĕр каччă**

Хĕлхем ӳксен, тăрать те халăх
Тытать те çанă тавăрать.
Пире калатăр çеç Тутимĕр,—
Çавасенчен тăватпăр хĕç.

**Тепĕр хĕр**

Иртсе те кайĕ çимĕк каçĕ,
Кайран калаçăр, ирхине.
Çеçкеллĕ çĕмĕрт пек шап-шурă
Тукас вăййи кунта килет.

(*Картипе тăрса юрлаççĕ.*)

**Пĕри**

Лере, малта, пĕлĕт хĕрелчĕ.

**Тепри**

Унта вăрман улпучĕн çурчĕ
Çунать пулас.

* Тавтапуç.

**Виççĕмĕш**

Чăнах та çавă.
Капан пек пысăк çулăмсем
Вĕçеççĕ.

**Тăваттăмĕш**

Паçăрах каларăм.
Куратăр-и, Чемей сехмечĕ
Пуçланчĕ ĕнтĕ тепĕр хут.

**Пиллĕкмĕш**

Тинех тăван ялне Тутимĕр
Килсе кăтартĕ тамаша,
Хăй ашшĕн чĕлхине каснишĕн
Улпутсемпе тиексене
Вĕри çатма çинче ташлатĕ.

**Пĕри**

Ыран туйра çăп-çăмăллăн
Ташлас, тесе апат çименччĕ.
Епле пĕркенчĕк пĕркенме
Манман-ши эсĕ, Эрпике?

**Эрпике**

Пĕркенчĕк çĕлемен. Хĕвел
Ирех пĕлтерĕ чăннине.

**Тепри**

Пуса каччи пуласшăн эпĕ
Чĕн саламат ярапине
Хур çăвĕпе çемçетнĕччĕ.
Хапхасене çапса пулмарĕ.

**Виççĕмĕш**

Ан ÿкĕн! Кирлĕ саламат!
Унпа пĕрре Тутимĕр каччă
Авкалĕ-ха.

**Тăваттăмĕш**

Кама?

**Виççĕмĕш**

Э... эр...
Калас-и?

**Тепри**

... пи...

**Виççĕмĕш**

... кене.
(*Кулаççĕ.*)

**Пĕри**

Ан тăрăхлăр! Эпир Тутимĕр
Ятне илтсен те асăнсан,
Нумай хурланнă, тантăшсем.
Сахал-и юрăсем юрланă?

*Юрă*

Утна йĕнерлесе, Тутимĕр,
Сиктертĕн аслă çул çинче.
Ăçта иртет сан паттăр ĕмĕр,
Ăçта, хăш çăлтăр айĕнче?

Шур Атăл хĕрринче пулсассăн,
Хĕвел хĕртсессĕн, çумăр пул!
Аслатилле хăватлă саслăн
Пире пăхса, юлташăм, кул!

Пĕлĕт пулса çуса эс ирт те,
Шăвар çеремлĕ хирсене,
Тăр кăнтăрла, каçпа та, ир те
Ÿстер çăра çарансене.

Çемçе кăлкан çулса çитерĕр,
Туссем, йĕнерлĕр утсене!
Сана кĕтсе эпир, Тутимĕр,
Йăтатпăр çиçĕм хĕçсене.

Кунта килсем, килсем, Тутимĕр!
Йĕнер хуратпăр утсене.
Сан сассуна эпир кĕтетпĕр,
Хăйратпăр хамăр хĕçсене!

**Пĕри**

Уй хапхинчен пĕр юланут
Кĕрет. Куратăр-и? Пăшаллă.

**Тепри**

Пăшалĕ уйăх çутинче
Çап-çутă курăнать.

**Виççĕмĕш**

Тарар-и?
Улпут-и, е тиек-и?

**Пĕри**

Эй, хĕрсем,
Тарса пытанăр! Хăвăртрах!

(*Хĕрсем чупаççĕ. Тутимĕр кĕрет.*)

**Тутимĕр**

Тутимĕр эпĕ! Хăвăрăн!

**Сасăсем**

Салам, салам—Тутимĕре!

**Тутимĕр**

Авланнисен хур тĕк минтерĕ
Çемçен хăпартăр! Тутлă ыйăх—
Сухал ÿстерне çынсенне;
Сире, пĕр танташ юлташсем,
Сар уйăх—куçăрсем умне,
Шеп юрă—чĕлхĕрсем çине!

(*Вăйă пухăнать. Пурте Тутимĕре
алă параççĕ.*)

**Пĕри**

Ĕçленĕ-тĕр. Аллу пит хытă.

**Тутимĕр**

Çăтмах çĕрне кайманччĕ эпĕ.
Кăлканлă Пушкăрт хирĕнче
Карланкă пур, тесе, атьсемĕр,
Никам та кашăк тыттармасть.

**Тепри**

Кунта чухне манпа пĕртанччĕ.
Кашта пек ÿснĕ, яштака.
Хăлхи таран та пулмăп эпĕ.

**Тутимĕр**

Кĕсре сĕчĕ çăра хăймаллă,
Сипетлĕ çынна пÿ-сине.

(*Эрпикене алă парса.*)

Хăяккăн тайăлса кăна
Мана пăхатăн, Эрпике...

**Эрпике**

Ахаль, сисмесĕр, ăнсăртран...

**Пĕр каччă**

Ан вăлт, ан тун—уру çине
Ют ял мăкла ĕни таптавă.

**Тепри**

Хĕрпе кайран та ачашланăн.
Ик çул ăçта çÿренине
Йĕркипеле, тĕрĕс-тĕкеллĕн
Кала пире, кала, Тутимĕр.

**Сасăсем**

Кала! Пĕлесшĕн çамрăк халăх.

**Тутимĕр**

Эппин пĕлтерĕп, тантăшсем.
Çич ял çĕкленĕ пăлхава
Майра патшан салтак эшкерĕ
Кассан та хытă пусарсан,
Пĕччен турпас пек эпĕ юлтăм,—
Турпас пĕтет-и кăлăхах?
Шыва ÿксен те—вăл путаймĕ.
Ниçта та хÿтлĕх çуккипе
Вăрмансенче тарса çÿрерĕм,
Çырла та курăксен тымарĕ—
Яра кунхи апатчĕ ман.
Лаша йĕнерĕ—ман минтерĕм,
Хăйă чикки—сап-сарă уйăх.
Кĕрхи çанталăк сивĕтсен,
Çул тытрăм Пушкăрт хирнелле.
Шăнтсан—хуркайăк кăнтăра!
Çаплах ман евĕр таркăнсем
Епле пулин те канлĕ вырăн
Тупасшăн пухăннă унта:
Пĕр ватă пушкăрт-аксаккал*
Тара тытсан—кĕтÿçĕ пултăм,
Тăватçĕр лашана пĕччен
Çеçен хирте кĕтсе çÿрерĕм.

**Пĕри**

Унта мĕн ирĕк, чăн тĕнче!

**Тутимĕр**

Чăваш пекех тÿсмест-и пушкăрт
Çăхан сăмси пек пусмăра?
Хирсем нумай, анчах çăраллă,—

---

*Шурсухал, пуян çын.

Уççи—харамăн аллинче.
Унта та улпутсем пыраççĕ.
Нихçан та сухапус тивмен
Кĕмĕл кăлканлă çĕрсене
Касаççĕ те, мăнтарăн пушкăрт.
Çарансăр юлнă, çап-çара,—
Ачусене тĕве çине
Тие те кай,—салтак пăшалĕ
Персе ӳкерĕ унсăрăн.
Асапĕ пушкăрт халăхĕн
Турта пек хытă тыттарать,
Парать хăлха чиккисенчен.
Улпут тиек тата сутуçă
Майран çаклатнă та ăна,
Антрана пушкăрт сывлаймасть.
Çавна кура унта, кунта та
Хутран-ситрен пăлхав хĕлхемĕ
Пĕр май сикет, ĕнер улпут
Юпа çинче; паян тиекĕн
Çуртне çуланă вут-кăвар;
Ыран сутуçă пĕверне
Тивретĕ ухă çĕмĕренĕ.

Тепри

Сутуçă—суттăр. Ун таварĕ
Йĕплет-и пушкăрт çурăмне?

Тутимĕр

Сутуçă-и? Улпут кукашшĕ,
Тиекĕн йыснăшĕ. Пĕрех!
Кунта пĕр пуртăшăн пĕр сум
Тӳлетпĕр-и? Унта ун хакĕ
Пĕр лайăх çеç лаша.

Сассем

Ай! Ай!
Епле сĕвеççĕ пушкăрта!

Тутимĕр

Сар тилĕ евĕр пушкăртăн
Тирне сĕвеççĕ те, хăйне
Карта хыçне çеç ывăтаççĕ,
Тытса хупаççĕ тĕрмене.

Пĕр сас

Унта йĕп хакĕ пĕр ĕне-и?

Тутимĕр

Унта кĕпе çĕвви çинче
Пĕрре те сӳс хӳрелле йытă
Вĕрсе, сĕвемĕ чупнине
Курмарăм, выльăх шăнăрĕ
Çĕлен-çип выранне пырать,
Унпа çĕлеççĕ тумтирсем.
Чӳречесем те кĕленчесĕр,
Лаша хăмпийĕ—карăнтăк.

Тепĕр сас

Эрех ĕçеççĕ-и унта?

Тутимĕр

Эрех сутма хавас сутуçă.
Эхер те пушкăрт ĕçсенех,
Çири кĕпи те юлмиччен
Тулласçĕ, темĕн те суйса
Çĕрне илеççĕ, урăлсан,—
Параççĕ мухмăр выранне
Чĕн саламат,—çаралнă пушкăрт
Каять вара хăй çĕрĕнчен.
Уç кăмăллă, пит лайăх халăх!
Юратрăм эпĕ вĕсене.
Усал ĕçсен шалçи тулать мĕн:
Сире пĕлтерĕп ыр хыпар,—
Асаплă пусмăр тӳснĕ хыççăн
Çиленнĕ пушкăрт халăхĕ
Тапса çĕкленчĕ вирелле.
Пăлхавçăсен хĕрӳ кăварĕ
Вĕçтерчĕ улпутсем çине
Пăлхав пырать вĕçĕ-хĕррисĕр.
Вĕсен юратнă утаманĕ—
Юлай агайăн ывăлĕ—
Çап-çамрăк паттăр Салават—
Чăвашсене салам каларĕ.

Сассем

Сыв пултăр паттăр Салават!

Тутимĕр

Ĕнсе çинче харампырсем
Юлмиччενех пурте пĕр харăс
Кĕрешĕр!—терĕ.

Сассем

Утăрья!*)
Сыв пултăр пушкăрт утаманĕ!

* „Урра" кăшкăрни; авалхи чăваш самахĕ.

**Тутимӗр**

Хӳмеллӗ Ӗренпур хули
Енчен пурне те тылласа,
Чӑн-чӑн патшамӑр Пӑкачав
Килет. Хресчен патши саккунӗ
Кунта вӑл!
*(Хӗвӗнчен кӑларать.)*
Халӑх умӗнче
Ӑна вуласчӗ, ӑнланасчӗ,
Анчах пурте эпир сӗм-суккӑр,
Хут пӗлекен ҫынсем пӗрре те
Тупма ҫук хамӑр хушӑра.

**Пӗр сас**

Тутар-и, вырӑс-и патша?
Кала, Тутимӗр!

**Тутимӗр**

Хам курман.
Ӑна тӗл пулнӑ пӗр тутар
Мана каларӗ: вырӑс, тет,
Хура сухаллӑ, яштака.

**Тепӗр сас**

Тутар суйман-ши?

**Тутимӗр**

Чӑн-чӑнах,
Патшамӑр пирӗн Пӑкачав.

**Сассем**

Шеп пултӑр хамӑрӑн патшамӑр,
Ҫӗре валеҫтӗр. Утӑрья!

**Тутимӗр**

Пӗр тиеке хушсан, вӑл вулӗ
Ыран патшамӑр ҫырнине.

**Пӗр сас**

Тиек вулать-и чӑннине?

**Тутимӗр**

Пуҫне каска ҫине хурсан,
Эсрел манифестне те вулӗ.

**Тепӗр сас**

Ахрумкӑ пуп пӗлет. Чӗнер-и?

**Урӑх сас**

Чӗнес! Вулатӑр! Ирхине
Майне пӑватпӑр.

**Сассем**

Кайрӗ уйӑх,
Пытанчӗ пӗлӗт хушшине.
Вулаймӗ. Юлтӑр ырана.

**Тутимӗр**

Саккун ялавӗ вӗҫтерме
Чӗнет пире чӑн-чӑн патшамӑр.
Лашӑрсене ыран йӗнерлӗр,
Ирхи хӗвелӗн ҫуттинче
Хӗрелччӗр халӑх хӗҫӗсем.

**Пӗр сас**

Тӑпра айне пытарнӑччӗ.
Хӗҫ тутӑхнӑ.

**Тутимӗр**

Ҫава та пуртӑ
Улпут майне касма тиркемӗҫ.
Ыраш кӗлти пек, пупсене
Сиктерӗ сенӗк.

**Сассем**

Утӑрья!
*(Вӑйӑ кӗрлет. Юрӑ янӑрать.)*

*Юрӑ*

Хир-хир урлӑ, ял-ял урлӑ
Ярӑн, пирӗн юррӑмӑр!
Сӗм вӑрман пекех хӗн-хурлӑх
Тӳсрӗмӗр те куртӑмӑр.

Ан ҫӳре хирте, сухаҫӑ,
Вӑхӑт мар суха тума,
Вӑхӑт мар халь ирӗн-каҫӑн
Ҫурӑмран тарна тӑкма.

Ӗмӗрех эпир ӗҫленӗ.
Пӗттӗр пусмӑр панӑ ӗҫ!

Хăвăртрах суха тĕренĕ
Çивĕч пултăр, пултăр хĕç!

Çамрăксем хирпе пыраççĕ
Вылятса сăннисене,
Учĕсем вĕсен таптаççĕ
Улпутсен тыррисене.

Тимĕрçсем хĕçсем тăваççĕ
Тăшмансен пуçне касма.
Йĕнерле утна, сухаçă,—
Вăхăт мар суха тума!

*(Вăйă каять. Шавлани илтĕнет. Пĕр вăхăта урам пушанать. Пилĕк-ултă каччă кĕреççĕ.)*

**Пĕри**

Тинех мĕн самана сакки
Сăпка пек сиктерме пуçларĕ,
Тыттарчĕ хĕç. Шеллеттĕм эпĕ
Çунатсăр çамрăк ĕмĕре.

**Тепри**

Хресчен патши чăнах пулсан,
Хăрушă марччĕ, шанчăклă.
Палханăпăр. Вăл килмесен,
Апшур салтакĕсем кайран
Ăшалĕç, вĕсене касма
Пуç пулĕ купăста кучанĕ.

**Виççĕмĕш**

Апла сехрӳ хăпсан, ан хутшăн,
Кел çиййĕнче пăрça суйла.
Е кай та кӳлĕ хĕррине,
Чулсем пăрах, хум унка пулĕ.
Пăхма хитре.

**Тепри**

Ан кул! Санран
Начар-и эпĕ?

**Виççĕмĕш**

Иксĕмĕр
Пĕрех, эпир—айван айванĕ.
Шикли шикленнĕ, кĕрекне
Пĕркеннĕ, хамăр халиччен
Чĕрне çинче шăрка вĕлернĕ.

**Тепри**

Халех кайсан, Ахрумка пуп
Тĕне кӳртеймĕ ирхине.

**Тăваттăмĕш**

Ан тив! Ыран ăна Тутимĕр
Патша саккунĕ вулаттарĕ.

**Пĕри**

Тарсан?

**Тепри**

Чăнах, Ахрумка тарĕ.
Тытар та мунчана хупар.

**Виççĕмĕш**

Васкар, эппин. Ун лашисем
Хура çилхеллĕ, чăп-чăпар.
Пурте йĕнерлĕ те таканлă.
Утланăпăр, э-эх, тӳп-тӳрĕ
Улпут çине!

**Тăваттăмĕш**

Ăслă калană.
Чавка пекех Ахрумкăшăн
Варланмăпăр, кăштах пĕр-иккĕ
Çапсан, хупатпăр мунчана.
Улпут чăнах та пысăк кайăк,
Тĕкне çăлсан та—кăмăллă.
Вĕçер!

**Тепри**

Тăрар та алла-аллăн,
Иртер-ха вăйă умĕнчен.

*(Ташласа каяççĕ. Пăртакçă тăрсан, Тутимĕрпе Эрпике кĕреççĕ, пĕрене çине лараççĕ.)*

**Тутимĕр**

Куç-куçăн курасса шанманччĕ.
Инкен пекех, телейĕм манăн
Кĕтмен çĕртен те ăнсăртран
Хама тĕл пулчĕ, Эрпике.

**Эрпике**

Пĕртак кая юлса, Тутимĕр...

**Тутимĕр**

Варли виç çул хушши кăвар
Тытать, тет, ывăçĕ çинче.
Ик çул кăна кĕттертĕм эпĕ.

**Эрпике**

Мана çураçнă, хулăм илнĕ.
Тул çутăлсан, пуçланĕ туй.

**Тутимĕр**

Савса-и?

**Эрпике**

Каччине те эпĕ
Çураçиччен малтан ал-хапăл
Пĕрре çеç курнă, калаçман.

**Тутимĕр**

Эс пулмасан, килместĕмччĕ.
Пăлханнă Пушкăрт çĕрĕнче
Юлаттăм. Çук, чĕре чăтать-и?
Усал пулсан та, хамăн килĕм,
Тăван çĕршывăм илĕртет.

**Эрпике**

Пĕр чĕптĕм айăп та çук манăн.
Атте-анне канашĕнчен
Тухсан, хаяр ял-йыш элекĕ
Хура курак пек явăнĕ
Телейсĕр пуçăм çийĕнче,—
Тата атте-анне ылханĕ.

**Тутимĕр**

Пĕрне-пĕри пăрахмасса
Тупа туни çухалчĕ пирĕн.

**Эрпике**

Илтмен-и эсĕ пĕр халлап?
Çурхи кунта кăвак чечек:
Ялан сана пыл çеç çитерĕп,—
Тесе калать тет пыл хуртне.
Кĕр кунĕнче чечек сап-сарă
Хăрать. Пыл хурчĕ макăрать.
Кам айăплă? Кăвак чечек-и?

**Тутимĕр**

Кĕр кунĕ.

**Эрпике**

Кĕр кунĕ—самана.
Чечекĕ—эп. Пыл-хурчĕ—эсĕ.

**Тутимĕр**

Пăлхав çĕнтерне хушăра
Хĕвеллĕ самана çĕкленĕ.

**Эрпике**

Хресчен патши саккунĕнче
Хĕрсем çинчен сăмах çырман-и?

**Тутимĕр**

Пурне те ирĕк, тенĕ.

**Эрпике**

Вăл вырăс та, чăвашсене
Саккун та памĕ, ютшăнĕ.

**Тутимĕр**

Ун çумĕнче пулать чăвашăн
Хăйĕн патши.

**Эрпике**

Эппин, эп санăн.
Çĕр тенкĕ хулăмне калла
Парасчĕ.

**Тутимĕр**

Ик çул хушши пĕр пуслăн
Пуçтартăм эпĕ хулăмшăн.

*(Сурпан сырнă Курак кĕрет, темĕн те пĕр каласа пĕтерсе, Эрпикене пĕркенчĕк айне, туй пуçлама сĕтĕрет.)*

**Курак**

*(Ӳсĕр çынна курать те хĕре илсе кайма пулăшма чĕнет.)*

Туй умĕн хĕрĕме Тутимĕр
Çаклатнă. Пулăш-ха илме!

**Ӳсĕр çын**

Мана мĕн? Туйĕ пултăр çеç.
Те çăпала, те йываç алтăр,—
Пулать эрех—мана пĕрех.

Хисеп, манран тавъсе, Тутимĕр!
Авлан та, пултăр арăмун
Пĕр пичĕ—уйăх та, теприХевел. Ача-пăчаллă пулăр,
Капанăрсем ултшар уралла
Çĕкленччĕр, куркăрсем çинче
Урпа сăри хăмăр хăмлаллă.
Пехил, Тутимĕр!

**Курак**

Ах, шуйттан,
Манран ыйтмасăр пехиллет.
Така шăмми карланкуна!
(*Чемей—Тутимĕр ашшĕ кĕрет.*)

**Курак**

Чемей пичче, чар ывăлна!

**Тутимĕр**

Атте, аван-и? Сывă-и?
Çÿçÿ хураччĕ, халь—кăвак,
Чĕнместĕн. Хăвăн ывăлна
Паллатăн-и?
(*Хулĕнчен силлесе.*)

Тутимĕр—эпĕ.
Атте! Атте!

**Чемей**

А-а.
(*Çăварне уççа кăтартать.*)

**Тутимĕр**

Чĕлхесĕр...
Кам касна чĕлхине?

**Сассем**

Улпут.

**Тутимĕр**

Атте, ан макăр! Ывăлу
Чĕлхеллĕ, çакă хĕçĕмпе
Калаçăп эпĕ улпутпа.

(*Хĕçне кăларса сулласа.*)

Туссем, йĕнерлĕр утсене!

**Ÿсĕр çын**

Пуçланчĕ туй. Шап-шур пĕркенчĕк
Юнланĕ-ха, Курак инке...

(*Халăх кĕрлет. Курак ĕсĕклесе макăрни илтĕнет.*)

ЧАРШАВ.

## ВИÇÇĔМĔШ АКТ

Галахов воевода çурчĕ. Стена çинче пăлан мăйракисем. Урайĕнче упапа тилĕ тирĕсем. Кăнтăрла. Галахов арăмĕ—Полина уралла сăмка сиктерсе ларать.

**Галахов** (*воевода*)

(*Кĕрет.*)

Ача пăхаканни ăçта?

**Полина**

Хуллен калаç.

**Галахов**

Ăçта эппин?

**Полина**

Тăвата кун хушши супса
Çÿретĕн те, тарçу-тĕрçÿ
Мана пĕрре те итлемест.
(*Макăрать.*)

**Галахов**

Чечекĕм, чунăм... Кам? Хăçан?
Кушак чĕрниллĕ хăрчăкпа
Çан-çурăмне тăрмалăп эпĕ.
Лăплан, чечекĕм, ан эрлен.

(*Çамкинчен чуптăвать.*)
Ача пăхаканни ăçта?

**Полина**

Ача кипки пĕрре йĕпеччĕ.
Киревсĕр няньăна кăштах

Вӗтесшӗнччӗ, анчах ман алă
Тытма пӗлет-и саламат?

Галахов

Хушас пулатчӗ пӗр тарçа.

Полина

Пӗрре мар, виççӗ те каларăм.
Мана итлеççӗ-и мурсем?
Их те их, лахăл-лăхăл çеç.
Шăмартăм та, усал йытта
Вӗçертрӗм сăнчăртан.

Галахов

Вара?

Полина

Ёсси!—çеç терӗм. Сикрӗ йытă,
Какай çеç юлчӗ няньăран.

Галахов

Чӗрӳ çемçеччӗ-çке, Полина?
Йăви çинчен сап-сар сăмсаллă
Çерçи чӗппи персе ӳксен,
Йӗреттӗнччӗ. Шухăшламан
Эс паттăр пуласса. Ха-ха!

Полина

Ан ахăр. Çывăртăр ачамăр.

Галахов

Хăй амӗш пек хастарлă пултăр,
Çерçи чӗппишӗн макăртăр:
Çынна курсан—йытпа ӗçлеттӗр.
Ха-ха! ха-ха!

*(Каçса кайса кулать. Хашкаса Курак кӗрет.)*

Курак

Вайпут* хăта!

Полина

Ку пӗрене кукамайне
Кам кӳртнӗ-ши?

Галахов

Ан аптăраш!

*Вайпут—воевода.

Асавлă йытă хăррăм-хам.
Паллашӗ кайнă чух. Ха-ха!

Курак

Пирте инкек.

Галахов

Мӗскер?

Курак

Тутимӗр...

Полина

Ах турă...
(*Чӗркуççи çине ларса кӗлтăвать.*)

Галахов

Тепӗр хут пăлхав-и?
Чемей сехмечӗ-и?

Курак

Чемейӗ
Чӗнмест, чӗлхесӗр чӗмере.
Çураçнă хамăн хӗрӗме
Вăрларӗ йăпалти Тутимӗр.

Галахов

Хунямăшӗ апла эс унăн?

Курак

Каска çинче мăя кассан та,
Куçа чавса ӳпне хуплу
Лартсан та—килӗшместӗп эпӗ.

Пӗри çураçнă,—теприне
Парсан, çиленнӗ пӳлӗх турă
Асаплă манăн чунăмран
Шăши тăвать, вайпут хăта.

Галахов

Эппин пăлхатăр, сивӗтӗр.

Курак

Тутимӗре ăçтан пăсатăн?
Ятне илтсен, чӗлхи вӗрӳçӗн
Сырлан пырши пек тăлланать.
Вӗрме-и? Хăй те сывлаймасть.

Галахов

Китай патши пин çул авал
Кăларвă эмелсен эмелĕ
Сана эп парăп шеллесе.
Апатпала-и, сăрапа-и
Парсан, ăна тутаннă çыннăн
Чи çывăх тусĕ майракаллă
Тата хӳреллĕ курăнать.

Курак

Турран пехил, вайпут хуçа.
Манран парне,—чĕп амĕш хур
Юри пустартăм, тап-таса.
Чăваш тесе ахаль ан тиркĕр.

(*Пукан çине хурать.*)

Галахов

Пĕр кун тытсан—эмел хăвачĕ
Юлмасть.

(*Парать.*)

Асту-ха, кинемей!
Эмел арçыншăн çеç, хĕрарăм
Еçсен, кача пӳрни хуралĕ,
Анчах пĕрре те сивĕнмĕ.

Курак

Тутимĕре епле ĕçтерĕп?
Чĕнсен те пымĕ,—вăрçрăмăр.

Галахов

Кĕрӳ тăватăп, те, куç хĕс!

Курак

Кайран ял кулĕ-çке. Кĕрӳшĕ
Пăрахнă, тейĕç.

Галахов

Вăрттăнрах:
Ял çывăрсан...

Курак

Канашăршăн
Пехил, пехил, вайпут хăта!

(*Курак каять.*)

Полина

(*Урайне пуççапса.*)

Хăватлă туррăмăр, сыхла!
Шуйттан чĕреллĕ çын Тутимĕр
Çухалтăр пирĕн çĕр çинчен.

Галахов

Сахал ылханнă-и ăна?
Çапах вăл сывă, пĕтĕм халăх
Ун хыççăн çĕклĕ çивĕч пуртă.
Эпир—вăрман.

Полина

Инкеклĕ вилĕм.

Галахов

Пуçна чулпа çапса ватсан та,
Сассу çитеймĕ пĕлĕте,
Чараймăн пăлхава.

(*Полина ура çине тăрать.*)

Ытла ан пăшăрхан, Полина!
Чăваш пуртти çапăниччен
Чи лайăх акăр утсене
Халех кӳлетпĕр.

Полина

Пĕтрĕмĕр...

Галахов

Ан макăр, ан хурлан, чечекĕм,
Вĕçсе çунаттуна ан хуç.
Юратнă чунăм, кăвакарчăн.

Полина

Пуç ыратать.

Галахов

Кайран тӳрленĕ,
Укçа тата чипер тумтир
Илер те... Пăраслан енне...
Пуç хаклă. Ăпăр-тапăр юлтăр,
Хушам-ха эпĕ, кӳлтерем.

(*Тухать.*)

Полина

Эсрел çури иккен Тутимĕр!
Аçа çапасчĕ ун пуçне,

Ытла талантлă чунилли!..
Ик çул ĕлĕк вунçич çултаччĕ,
Анчах епле хаяр пăлхавăр
Çĕклерĕ çакă таврара.
Хапха юпи çине çакса
Вĕлерчĕ манăн аттене,
Кÿлле путарчĕ аннене.
Пыра-киле тĕреклĕ чул та
Тăпра айне юлса пĕтет
Е чĕлпĕр-чĕлпĕр саланать,
Хăш чух çырма та сăрханать.
Хура чăваш ачи пулсан та,
Пĕтмен, каллех кунта Тутимĕр.
(*Макăрать. Галахов васкаса кĕрет.*)

**Галахов**

Хура пĕлĕт пек ушкăн халăх
Кунта куçать. Пытар, Полина!

**Полина**

Хама ăçта?

**Галахов**

Эп—воевода,
Патша çынни—мана хăрушă.
Сана мĕскер? Эс—арăм çеç.

**Полина**

Пăлхавçăсем кунта мана
Киревсĕр намăс кăтартсан?

**Галахов**

Апла пулсан та, тиркесе
Пăрахмăп, уйăрмăп сана.

**Полина**

Юрать, эппин.

**Галахов**

Çав арчана
Мана халех пытар та питĕр!

**Полина**

Унта сывлайăн-и?

**Галахов**

Унта
Шăши кышлана вырăн пур.

**Полина**

Йăтса кайсан?

**Галахов**

Вара—аминь.
Чун кайĕ ырă çăтмаха.
Тăпра айне пытанĕ ÿт.
Васкавлă пул-ха, арчаран
Калаçăп.
(*Полина уçать. Галахов кĕрсе выртать.*)

**Полина**

Мăшкăллă пулсан,
Чăнах мана пăрахмăп, те.
Тупа тусан, сана ĕненĕп.

**Галахов**

Ак турă та çÿлти хĕвел.
(*Сăхсăхать. Полина арчана хупса çăрапа питĕрет.*)

**Полина**

Киле килмерĕ, тейĕп эпĕ,
Ан ÿсĕр эсĕ, ан шавла.

**Галахов сасси**

Чĕлĕме манса хăварнă,
Сĕтел çинчеччĕ. Пар кунта.

**Полина**

Туртмасăр тÿс. Тĕтĕм шăрши
Пÿртре пулсан, суйма та йывăр.

**Галахов сасси**

Кун пек асаплă вăхăтра
Йăпанасси те чĕлĕмре.
Пĕр сăвăрсан—чĕре лăпланĕ.

**Полина**

Ме, чыхăн! Ме!

(*Арчана уçса чĕлĕмне парать те питĕрет.*)

**Галахов сасси**

Табакĕ юлнă.

Полина

Хуп ҫăварна. Илтместĕн-и?
Пăлхав кĕрлет.

(*Урамра халăх шавлани илтĕнет.*)

Галахов

Ăшчик ҫунать.
Хĕртет карланкă... Пар табак.

(*Полина уҫса парать те питĕрет.*)

Полина

(*Чӳречерен пăхса.*)

Сăхманлă, ҫăпаталлă халăх
Вĕҫĕ-хĕррисĕр хутшăнать.
Кунта килеҫҫĕ... Пĕтрĕмĕр.

(*Полина чупкалать. Тулта ахăрашни илтĕнет. Чӳречесем ванаҫҫĕ. Алăкран пĕр ушкăн хресчен кĕрет. Ача макăрать.*)

Пĕри

Вайпут ăҫта?

Тепри

Майне—пăяв!
Айне шалҫа!

Виҫҫĕмĕш

Кала, ăҫта хăй?
(*Полинăна чыша-чыша яраҫҫĕ.*)

Тăваттăмĕш

Кала! Эхер те пытарсан,
Пуҫ хĕрлĕ ҫакăп маччаран.
Кала, майра!

Полина

Килте пулман.
Ăҫти те паллă мар.

Пĕри

Сукмакĕ
Юлман-им? Капкăн хурăпăр.

(*Пуртă йăтнă Асамат чӳречерен кĕрет.*)

Асамат

Тытма пĕлместĕр вайпута!

Пĕри

Эс ватă ҫын. Вĕрент тархасшăн.

Асамат

Усал йыт несĕлĕ-тымарĕ
Кăклантăр, пĕттĕрчĕ, тесен,
Малтан кăнтаҫҫĕ ҫурине.
Ан вĕртĕр. Акă!

(*Пурттипе сулать. Ача сасси чарăнать.*)

Полина

Тискерсем...
Ҫĕр ҫăттăр. Ай...
(*Йăванать, ăнсăр пулать.*)

Асамат

Ҫуртне ухтарăр!
Ҫанна шит тăршшĕ таврăр!

Пĕри

Тилли, упи, пăши-пăланĕ—
Пурте хресчен вăрманĕнче
Ҫӳреҫҫĕ. Тирĕсем пире!
Майракисем ҫатан ҫине.

(*Сĕтĕрме тытăнаҫҫĕ.*)

Асамат

Ҫаратăр! Хытă ҫĕмĕрĕр!
Кăварла, хĕрлĕ киккириклĕ
Инкек автанĕ авăттăр!
Кĕл варкăштăр!

Тепри

Тытса ҫакасчĕ
Ватсупнă вайпутне малтан.

Виҫҫĕмĕш

Шырас!

Тăваттăмĕш

Унта-кунта пăлхатăр!
Кĕрсе ларман-ши нӳхрепе?

Пиллӗкмӗш

Патшалӑх хамӑрта чухне
Майне пӑвасчӗ, тӑвансем!
Хӑварӑпӑр,—кайран хӑех
Пиртек пӑчӑр тӗкне ҫӑлтарӗ.

(*Чупкаласҫӗ.*)

Пӗри

Ха, мерекке! Арча ҫунать-и?
Вӗлермелли ӑсталӑх мар-и?
Тетӗм мӑкӑрланать, атьсемӗр.

(*Арчана пырса шӑршлать.*)

Ак турӑ, чӗлӗм тӗтӗмӗ!
Вайпут кунта!

(*Пуртӑсемпе хӑйӑрса уҫаҫҫӗ.*)

Тепри

Ха-ха!

Виҫҫӗмӗш

Ых-ха!

Пурте

Ха-ха!

Асамат

Аа... кунта иккен
Мухтавлӑ ҫимӗкӗн автанӗ.
Пӗсехинче тӗк вырӑнне
Майра патша сӑнлӗ ӳкерчӗк.

(*Галахова арчаран сӗтӗрсе кӑлараҫҫӗ.*)

Пӗри

Пусас!

Асамат

Малтан тӗкне ҫӑлатӑп.
Сӑмси мана!

(*Чӗлӗмне туртса илсе хӑй хыпать.*)

Табакӗ тутлӑ.
Вырт!—тенӗ. Ҫук-и? Ак сана!

(*Ҫапса ӳкерет.*)

Пӗри

Умне мӗн чухлӗ ҫутӑ ҫӑлтӑр
Ҫӳлтен антарнӑ, хӑямат.

Тепри

Вайпут пул, Асамат пичче!
Кунта эс пуринчен те ватӑ,
Сухал та санӑн икӗ шит.
Сана суйлатпӑр. Йышӑн!

Асамат

Юрӗ,
Патша пулма та хирӗҫ мар.
Вайпут тумтирӗ—ман ҫине!

Виҫҫӗмӗш

Ҫаплана Асамат сӑхманӗ
Ӑна.

Асамат

Вайпут пулма эп хатӗр!

(*Галахов тумне хывса, Асамата тӑхӑнтараҫҫӗ.*)

Пӗри

Сӑхман Калахӑн. Тӑхӑнтӑр!

(*Галахова Асамат сӑхманне тӑхӑнтараҫҫӗ.*)

Пӗри

Хисеплӗ Асамат вайпут,
Саккун кӑлар, сулла хӗҫне.
Хӗстер! Ха-ха!

(*Асамат Галахов умне тӑрать.*)

Асамат

Калах!

Галахов

Итлетӗп.

Асамат

Куланаю нумай-ха санӑн.
Тӳлемесен, лекет чӗр хулӑ.
Тӑпра ҫинче ҫӳренӗ эсӗ,
Эрех те ӗҫнӗ, ҫӑкӑр чыхнӑ,

Çапах пĕр сум та тӳлемен.
Чăваш вайпучĕ халĕ эпĕ,
Хресченĕ—эс.

Галахов

Тарçу пулатăп.
Юласчĕ сывă, майкăççăр.

Пĕри

Хресчен пулма пĕлетĕн-и?
Вĕрент-ха, Асамат пичче!

Асамат

Алла суха, çие сăхман.
Чăн-чăн хресчен çынни пулсан,
Ӳтне кышлатăр шурă пыйтă,
Шăрка саралтăр çӳç çивче.

Тепри

Урпа акма вĕрент.

Асамат

Урпа-и?
Акатăн кăмака çине.

(*Сасартăк Тутимĕр кĕрет,*
*Асамат умне пырать.*)

Тутимĕр

Мана нумай шырарăн эсĕ.
Хам килтĕм сан пата, Галахов.

Сасăсем

Ха-ха!

Тутимĕр

Кушак пек мăрлатса,
Ыран эсир шăши ан пулăр.

Пĕри

Вăл Асамат пичче, Тутимĕр,
Вайпут тумтирĕ ун çинче.
Вайпут сăхманлă, акă вăл.

Тутимĕр

Анрав куккук пек иртерех
Юрлатăн, Асамат пичче.
Çаратнă чух малта чупатăн,
Хĕç тытнă чух ялан кайра.
Мана паллатăн-и, Галахов?

Галахов

Чемейĕн ывăлĕ Тутимĕр.

Тутимĕр

Чĕлхесĕр турăн аттене,
Анчах чĕлхеллĕ ывăлĕ.
Тăпра çинче çӳрерĕн, çитĕ!
Паян ăсанăн пĕлĕте.
Сыв пул!

(*Пăлхавçăсене.*)

Ăна юпа çине!

(*Сĕтĕрсе каяççĕ.*)

Тутимĕр

Мĕншĕн кая юлатăн эсĕ?
Уттар!

Асамат

Халех пыратăп эпĕ.

Тутимĕр

Çăхан пек выçă куçлă эсĕ,
Çаратнă. Чĕлĕмӳ те çыннăн.
Хул айĕнче мĕнле арча?

Асамат

Ахаль.

Тутимĕр

Ан суй, укçа арчи.
Пуçна кастарăп, пытарсан.
Вăл санăн мар, вăл халăхăн.
Сана пуйма-и хирсенче
Тăкатпăр юн?

Асамат

Кăштах тăхта.
Пукан çинчи хура илем-ха.
Паян çименччĕ.

Тутимĕр

Чых, карланкă!

Асамат

Уксах уравлă хамăн хур!

Хам пусрăм. Анкă-минкĕ арăм
Шуйттанĕ, панă вайпута.

**Тутимĕр**

Хайлу та пур, выççу та пур,
Атя!

**Асамат**

Сан хыççăн эпĕ.

**Тутимĕр**

Пĕрре калана.

(*Хĕç йĕннине кăтартса.*)

Куртăн-и?

(*Иккĕшĕ те тухса каяççĕ.*)

(*Чылай тăрсан. Полина тăна кĕрсе, аран-аран утать.*)

**Полина**

Арчи те уçă. Лекнĕ мĕн.
Тĕп турĕ пăхăр чĕлĕмĕ.
Кĕрлет урса пăлханнă халăх.

(*Чÿрече патне пырать.*)

Хăрушă... Ай... Юпа çинче...
Çилсем вĕреççĕ... Силленет...
Кăвар... Кăвар... Çунатăп эпĕ.

(*Пĕренесенчен тытса хуллен йăванать. Чÿречесенчен палкаса тĕтĕм кĕрет.*)

ЧАРШАВ.

## ТĂВАТТĂМĔШ АКТ.

Асамат пÿрчĕ. Курак пĕччен ларать. Унăн умĕнче лакăм.

**Курак**

Тутимĕр килчĕ те пуçланчĕ
Хăрушă юнлă самана.
Пуçа кассан та ăнланмастăп:
Кам айăплă? Кама мĕн кирлĕ?
Асаплă пурнăç пĕттĕр, теççĕ.
Анне те, эпĕ те ялан
Тертленнĕ, пирĕн ĕмĕр пулнă
Хура вăрман пекех хĕн-хурлă.
Кама вăрçатăн? Турă хушнă.

(*Турчăкасем тата ытти тимĕр япаласем йăтса Эрпике кĕрет.*)

**Эрпике**

Сурса ылхантăн, алăк урлă
Нихçан ура пусма хушмарăн,
Çапах та килтĕм.

**Курак**

Хам ачамçăм,
Хам çулçăм хамăн хÿттĕме
Килет, кÿрет мана хаваслăх.
Пĕлетĕн манăн кăмăла:
Таканари шыв пек ман çиллĕм:
Пĕрре сикет те тăкăнать.
Ку йышлă тимĕр-тăмăр камăн?

**Эрпике**

Хĕçсем тума пухатăп эпĕ.

**Курак**

Ухвачĕсем нумай. Пĕрне
Киле хăвар-ха, Эрпике!

**Эрпике**

Мĕншĕн?

**Курак**

Апат-мĕн пĕçерме.

**Эрпике**

Никам та çимĕ, вăхăт мар.
Васкатăп, пирĕн турчăка
Паян хĕç пулмалла, анне.

(*Тĕпелтен турчăкана илет.*)

**Курак**

Пĕртен-пĕр турчăка. Ăна
Илетĕн-и?

**Эрпике**

Хушать Тутимĕр.
Итлемесен—леш тĕнчене!

Пур тимӗр япала та хаклӑ,—
Хӗҫ шӑратаҫҫӗ тимӗрҫсем.

**Курак**

Турчӑкасем пуҫтарасси
Хӗр ӗҫӗ-и? Лар тӗпелте!
Эс мар, киле патша килсен те,
Турчӑкана памастӑп эпӗ.

(*Ярса тытать.*)

**Эрпике**

Сан турчӑку хитре хӗҫ пулӗ.
Хастарлӑ паттӑр аллинче
Ҫуталӗ ялкӑшса, кустарӗ
Ҫӑмха пекех улпут пуҫне.
Ан тив, анне, ан тыт—илеймӗн.

**Курак**

Туту ҫинчен сар сӗт кайман.
Ҫапах та ҫын пуҫне касма
Шутлатӑн, ӑҫти-ҫук ача!
Турчӑкапа пӗрре ак парӑп,—
Чӗлхесӗр пулӑн.

(*Турчӑкине туртса илме тӑрать.*)

**Эрпике**

Туртӑшма
Санран пулать-и вӑл, анне.
Пӗрре ҫеҫ эх-хем! ӳсӗрӗп.
Хӑранипе сар шӑлусем
Кашта ҫинчи чӑхсем пекех
Пӗр харӑс тӑкӑнӗҫ. Ан чар!

(*Турчӑкине туртса илет.*)

**Курак**

Тӗп турӑн аннӳне, пӗтертӗн.
Таҫтан, тӑпра шӑтӑкӗнчен
Тутимӗр килчӗ, яваҫрӗ.

**Эрпике**

Каҫар, анне!

**Курак**

Эппин каҫарӑп,
Кунҫул кӗперӗ пулӑп савшӑн.
Ватсупнӑ хӑрӑк шӑммӑмсем—
Кӗпер юпи. Каҫ, хӗрӗм, каҫ!
Каҫартӑм, Эрпике, ан ҫун.

**Эрпике**

Ытла та теветкел Тутимӗр,
Ҫемҫе чӗреллӗ те маттур.

**Курак**

Ҫемҫе?.. Каларӑн ҫуккине.
Тутимӗр хушнипе вайпут
Пӗтмерӗ-и? Ахрумка пуп?
Пӑлхавӑн ырӑ пархатарӗ
Ҫитессине шанмастӑп эпӗ.
Ман ӗмӗрте пӗрре кӑна-и
Пӑлханнӑ халӑх! Ҫӗнеймерӗ.

**Эрпике**

Ку тапхӑрта ҫӗнет. Тутимӗр
Ертсе пырать. Чӑн-чӑн патша
Каларнӑ вирлӗ манихвес,
Улпутсене ҫакма хӑй хушнӑ.

**Курак**

Майра патша ҫавар карать-и?
Нумай салтакӗ те пӑшалӗ.
Пӗрре ҫапсан, Тутимӗр сисмӗ—
Хӑй ҫулҫӑ пек сирпӗннине.

**Эрпике**

Тутимӗр-и? Юман кӗреш пек
Тӗреклӗ, хулӗсем кервен*.

**Курак**

Хӑюллӑ, ӑслӑ, чип-чипер...
Илемлине пӑхмасть патша,
Пӗртте хӗрхенмӗ пӑявне,
Ҫактарӗ—унӑн хӳхӗм ҫӳҫӗ
Силленӗ сивӗ ҫил ҫинче.

**Эрпике**

Тутимӗр паттӑр та вӗри.

**Курак**

Ун пек вӗри чӑпар чӗреллӗ
Ҫынсем тӳсмеҫҫӗ ҫӗр ҫинче,
Е вилӗм е телей шыраҫҫӗ.

---

* Кервен—тӗреклӗ.

Телейĕ çук. Çеçен хирте
Курман-и эсĕ, лĕпĕшсем
Вĕçеççĕ тĕксĕм каçсенче,
Шыраççĕ çута? Çавăнпа
Вучах çине кĕрсе ĕнеççĕ.
Çаплах Тутимĕр.

**Эрпике**

Ан хăрат!
Каяс-ха турчăка пухма.

**Курак**

Ята ярса çӳре, эппин.
Тутимĕр тиллĕрен çитернĕ,
Антратнă ухмаха, сана,—
Çавна кура сиксе çӳретĕн.
Асту, кайран пуçу ыратĕ,
Тăрантĕ турчăка вăрçи,
Юн хăсăн, Эрпике ачам.
Хăвар,—ялта тата та тупăн,
Пит кирлĕ хамăр турчăка.

**Эрпике**

Епле-ха, хамăрăн юлсан,
Ыттисенне илетĕп эпĕ...

(*Каять.*)

**Курак**

Пĕччен чухне, эмел хăвачĕ
Саланиччен вĕрсе хурам-ха.
Тухатмăш йăлине пĕлместĕп,
Çапах та, туррăмăр хушсан,
Йĕркеллĕ пулĕ-ха, çырлахĕ.
Юлхав кушакăм, пĕр шăши
Тытмарĕ, çавăнпа паян
Анкартинче ларса ирттертĕм,
Ярă кунах шăши сыхларăм,
Арăскала кура сасартăк
Тĕл пулчĕ çамрăк çеç çура,—
Лектертĕм, çăмĕ вăрăм çеç.
Шăши çăмне ĕнтсе сапсан,
Çын хăвăрт сивĕнет, тесе
Калатчĕ ĕлĕк асанне.
(*Хăйă çутса килет, ĕнтет, хул айне ухват тытса такмаклать.*)

Çичĕ тинĕс леш енче
Йĕс тăпраллă пĕр утрав.
Çав утравăн варринче
Йĕс вăрман ӳсет шултра.

Йĕс вăрманăн ăшĕнче
Çаврăнать пĕр йĕс пукан.
Çывăрать пукан çинче
Ылттăн çӳç—Ашапатман.

Ылттăн çӳçлĕ карчăка
Эп калатăп кăмăлтан:
Пулăш вата Куракa!
Сиктĕр, сиктĕр йĕс пукан!

Сиктĕр, сиктĕр йĕс пукан!
Уйрăм пултăр ик чĕре,
Хĕрĕмрен Ашапатман
Сивĕттĕр Тутимĕре.

Сиктĕр, сиктĕр йĕс пукан,
Килтĕр иккĕш хушшине,
Савăнса юратакан
Туйтăр хĕрĕн сиввине.

Манăн хĕрĕн куçхарши
Курăнтăр çĕлен пулса,
Савнă ик чĕре хушши
Тăтăр ĕмĕр пăрланса.

(*Вĕрет, сурать.*)

Шăши çăмĕ начар пулсан,
Хăватлă пул, вайпут эмелĕ!

(*Лакăма ярать.*)

Тинех ăш канчĕ. Пулăш, турă!

(*Пилĕк салтак кĕрет.*)

**Пĕри**

(*Саламатне силлесе.*)

Ку мĕн-ха, вата кинемей?
Пĕлетĕн?

**Курак**

Саламат, тăванăм.

**Пĕри**

Мĕскер тăваççĕ унпала?

**Курак**

Хĕнеççĕ çынсене.

**Тепри**

Çапсассăн,
Канать-и ӳт?

**Курак**

Кăвакарать.

**Пĕри**

Унтан мĕн?

**Курак**

Юн та пĕрхĕнет.

**Пĕри**

Çапсан, аван-и?

**Курак**

Тĕл пулман.

**Пĕри**

Кучченеçе тутан эппин.
Ытла та лайăх саламат,
Юппи те виççĕ, кинемей.
(*Çурăм тăрăх çапать.*)
Пырать-и?

**Курак**

Ыратать, тăванăм.

**Пĕри**

Пире—сăра та чăх какайĕ.
Астив тепре.
(*Çапать.*)

**Курак**

Ан хĕвĕр, шеллĕр.
Ахаль те упăшка патакĕ
Куллен лекет. Чăххи çук манăн,
Сăри кăшт пулĕ.

**Тепри**

Хăвăртрах!
Çап-çамрăк пăрчăкан хӳри пек
Выляччăр вата урусем.

**Виççĕмĕш**

Пĕр куç анчах хĕрĕх чăвашăн.
Куç витĕр-и?

**Курак**

Тур пулăшнипе
Куратăп.

**Тăваттăмĕш**

Пыл сăра—кунта!
Кайран калаçăн.
(*Курак вăрах тăмасть, чĕрес килсе лартать.*)

**Пиллĕкмĕш**

Чăх какайĕ?

**Курак**

Чăххи çук.

**Пĕри**

Кӳршĕ-аршăн пур-тăр.
Сыхла та тыт—ăшалăпăр.
Ку лакăмра мĕскер?

**Курак**

Каяшĕ,—
Çĕпреллĕ.

**Тепри**

Ну, чее чăваш!
Тутли пулать вăл лакăмра.

**Курак**

Ăна кĕлтунă. Ырă мар.

**Виççĕмĕш**

Пире чăвашăн киремечĕ,
Тухатнă ăнишăрчĕ тивмест.

**Тăваттăмĕш**

Пăлханнă-и эсир?

**Курак**

Çук, эпĕ
Пĕрре те пăлханман.
Пур халăх хытă тĕркĕшет.
Хĕçсем туптаççĕ.

**Пĕри**

Пилĕк чăх
Тытса кил халĕ кӳршĕрен.

Каланă! Марш! Ĕçсе хĕрсен,
Чĕре вĕри, касма хăюллă.
Каймастăн-и?

(*Курака саламатпа вĕтет.*)

**Курак**

Çапсан та çук. Вăрлас-и манăн?

(*Макăрать.*)

**Тепри**

Туя тытса тĕлле тӳп-тӳрĕ,
Яра пар чăххăн уринчен.
Ахаль килсен—юпа çине!

(*Курак каять.*)

**Пĕри**

Ĕçер те, пит асăрханар.
Пăлханнă халăх унсăран
Пире тытса пырша кăларĕ.

**Тепри**

Тавсъе! Ан тив, пуç сывă
пултăр!
Тайма пуçа хĕççем ан витчĕр.
(*Ĕçеççĕ.*)

**Виççĕмĕш**

Сăра хăмлаллă, кăпăклă.
Чĕлхешĕн тутлă, пуçшăн йӳçĕ.

**Тăваттăмĕш**

Паян чăвашăн Çимĕкĕ,
Алран кайми суха уявĕ,
Çапах та ӳсĕр çын курмарăм.
Ăçта вĕсем? Ырра-ши ку?

**Пилĕкмĕш**

Галахов воевода çурчĕ
Çунать, тет. Çавăнта пулас.

**Пĕри**

Ĕçер те—йĕнерсем çине.

**Тепри**

Камран хăрамалла? Чăвашăн
Пуртти те сенĕкĕ анчах.
Пăшал пĕрре çеç кĕрлесен,
Çатма çинчи пăрçа пекех
Саланĕç.

**Виççĕмĕш**

Салансан, юратчĕ,—
Хĕç юнсăр, чун та тап-таса.
Сăхманлă мĕскĕн çынсене
Курсан, асра—тăван хам ялăм.
Иван пĕрре тăван килне
Кайса патша хĕçне вылятнă.
Хăй ашшĕне те шеллемен.
Çак куркана тӳнтер, Иван,
Хĕн-хурлă юра пурччĕ санăн.

(*Иван ĕçет те юрлать.*)

*Юрă*

Асапран кĕпе çĕлерĕм,
Хурлăхран ман—аттăмсем.
Инкекрен—лаша йĕнерĕ,
Пусмăртан—таканĕсем.

Патшаран илсе хаярлăх
Шăраттартăм хĕçĕме.
Ай, каçар, тăванăм-халăх,
Пылчăк витрĕ чĕреме.

Сарлака хиртеччĕ утăм,
Кĕçенетчĕ ирхине.
Инкекрен çĕлерĕм, хутăм
Йĕнере лаша çине.

Манăн аттăм—манăн хурлăх,
Асапран—çири кĕпе.
Хир-хир урлă, ял-ял урлă
Кайрăм хурăн çулĕпе.

Хир-хир урлă, ял-ял урлă
Çитрĕм хамăн çĕрĕме,
Патша хушнă,—эпĕ урнă.
Ай суллатăп хĕçĕме.

Ман чĕре те, чун та пур та,
Ирĕк çук калла кайма.
Мач аттеçĕм тытнă пуртă
Улпутсене турама.

Эп тăван ачу пулин те,
Хушрĕçĕ сана касма.
Ай, аттемçĕм, йышăн ĕнтĕ
Патша янă салама.

Макăрса турарăм хамăн
Шур сухаллă аттене.
Куççульпе те тасатаймăп
Хура юнлă чĕрене.

Пĕри

Юрру чăнах-и, тĕрĕс-и?

Иван

Ак çакă ирсĕр аллăмпа
Пĕтертĕм хамăн аттене.

Тепри

Чуну ăçтаччĕ?

Иван

Чĕререччĕ.
Атте пĕр пуртă йăтнăччĕ,
Çири тумтирĕ çĕтĕк-çатăк,
Шĕвĕр сухалĕ кăн-кăвак.
Кун пек хăрушă пурнăçа
Ан куртăр, терĕм те хĕçпе
Вакларăм.

Виççĕмĕш

Хытă чунлă эсĕ.

Иван

Чăвашсене ху касăн-и?

Виççĕмĕш

Касмасăр! Хамăрăн патшамăр
Хусшан, итлетĕп сăмахне.

Иван

Чăваш та ман атте пекех
Хресчен, çаплах асапĕ пысăк.
Патшамăр хушнине тума
Пăлханнă хамăн ялăма
Мана ярсан, хĕçпе каласрăм.

Пĕри

Чĕрес пушанчĕ.

Тепри

Лакăма

Уçас эппин.

(*Уçаççĕ.*)

Виççĕмĕш

Чăваш чее.
Çĕпреллĕ-и? Чăн-чăн сăра.
Ытла та лайăх.

Тăваттăмĕш

Ĕрехмет!
Чĕлхе вĕçне хĕртет. Ку ыра!

Пиллĕкмĕш

Хĕç пек тивертрĕ чĕрене.
Чăваш тĕп турĕ. Наркăмăш!

Тепри

Вилетĕп, тăвансем...

(*Йăванать.*)

Виççĕмĕш

Ай... ай...
Сĕтел те, пÿрт те çаврăнать.

Тăваттăмĕш

Хам виличчен, пĕрне пулсан та
Тиретĕп хĕç çине.

(*Хĕçне кăларса тăрса утать, алăк патĕнче чикеленсе каять.*)

Ӑ-ах...

(*Пурте йăванса пĕтеççĕ. Чылай тăрсан, чăхсем йăтса Курак кĕрет.*)

Курак

Нумай та ĕçеймен. Çапах
Шăлтах йăваннă ÿсĕрсем.
Курак çав эпĕ! Ман сăра
Шерпетлĕ те ытла хăватлă.
Пуçран çапать те урайне
Тĕреклĕ çын та йăкăлт çеç.
Вĕсемшĕн тарăхса кунта

Кӳрше кайса тăвată чăх
Варларăм, йывăр çылăх тупрăм.
Карта хыçне пытантăм та,
Туратлă вăрăм туяпа
Пĕрерĕн чăхсене шаккарăм,
Майĕсене пăра-пăра
Вĕлертĕм, халь те алă юнлă.
Пĕлес пулсан, ытла та намăс,
Мана вĕлерĕç хĕнесе.
Çапаççĕ ыйăха. Пĕрин те
Сăмси те шăхăрмасть.
Вилмен-и?
(*Пĕрне тытса пăхать*).

Сип-сивĕ, пăр пекех. Ах, турă,
Шуйттан вайпучĕ наркăмăш
Тыттарнă ухмаха... мана.
(*Воевода тумтирĕпе Асамат кĕрет*).

**Курак**

Эп çылăхлă, вайпут хăта.
Вилмен-и эсĕ, чĕрĕ-и?

**Асамат**

Мана вĕлерчĕç. Чунăм юлчĕ.
Масар çинчен тăрса юри
Эп килтĕм сан пата, инке.

**Курак**

Туятăп çав, сассу та урăх,
Ӳссе мăкланнă сухалу.
Кунта тăпра çинче вăрах-и
Çӳресшĕн? Тепĕр хут, калла
Масар çине каятăн-и?

**Асамат**

Çĕр айĕнче выртма кичем,
Çӳретĕп çĕр çинче, усаллăх,
Инкек-синкек, кĕсен-çăпан
Саратăп та, чăвашсене
Пĕрре те ыра хăвармастăп.

**Курак**

Пире ан тив.

**Асамат**

Сан упăшку
Пăлхавçă мар-и?

**Курак**

Ухмаха
Чаратăн-и? Ватсупнă йытă.

**Асамат**

Упăшкуна эппин, чирлетĕп,
Вĕлерĕп кăçалах.

**Курак**

Ан çулăх,—
Усал пулсан та пурăнтăр.

**Асамат**

Мана хур турĕ, каçармастăп.
Вал манăн тумтире хывса
Тумланчĕ хăй, мана çактарчĕ.

**Курак**

Мана та кулленех хĕнет.

**Асамат**

Мана эс патăн кучченеç.
Така пек пысăк, çулла хурччĕ.
Ăна та илнĕ упăшку.

**Курак**

Йытăран та çăткăнрах карланкă,
Пĕре ларсан—пĕр тирĕк пăтă
Лекмест те хырăмĕ тĕпне.

**Асамат**

Юхан-шăтанлă пӳрлĕ чир
Яратăп ун çине, инке.

**Курак**

Ан яр! Килте çын çук. Хам
ватă,—
Епле-ха пăхăп эп ăна!

**Асамат**

Сана хĕнет, мана вĕлерчĕ.
Тӳрех ăна масар çине
Туртатăп, çунтăр тамăкра.
Ку салтаксем çаплах выртаççĕ.
Вилмен-и, чĕмере тытман-и,
Хăнтăрамак таврашĕ мар-и?

**Курак**

Мана Китай патши эмелĕ
Эс патăн сивĕтме тесе,
Тутимĕре валли чăмтартăм
Сăраллă лакăма. Сасартăк
Тĕл пулчĕç çакă салтаксем,
Саламатпа хĕне-хĕне
Хăпартрĕç сехрене. Кӳрше
Чăх вăрлама мана ярсан,
Тип-типĕ юлнă манăн лакăм.
Хăйсем пĕри те чĕрĕ мар.
Китай эмелĕ вырăнне
Мана эс наркăмăш паман-и?

**Асамат**

Тутимĕр вилтĕр, тенĕччĕ.
Патша салтакĕ—пилĕк чун
Вĕлернĕ эсĕ,—çылăхна
Арку айне хуратăн-и?
Упăшкупа пĕрле хăвна та
Пĕтерĕп, тупăк хатĕрле!

**Курак**

Ах, турăçăм!.. Каçар, вайпут,
Каçар... Пăртакçă пурăнам.

**Асамат**

Салтаксене юри кăнтман.
Апла пулсан, сан çылăхна
Пĕрех мăскалĕ юлмиччен
Илер те упăшку çине
Куçарăпăр. Вара ун чунĕ
Тертлентĕр ĕмĕр-ĕмĕрех.

**Курак**

Юрать эппин.

**Асамат**

Курак шуйттанĕ,
Ман вилĕме кĕтетĕн-и?
Вайпут çимерĕ—акă хур!

(*Хурпа пуçĕнчен перет*).

**Курак**

Чăнах та эс-и, Асамат?
Куç витĕр мар.

**Асамат**

Куçу çĕкленĕ
Çамку çине. Ы-ых сана!

(*Урипе тапать*).

**Курак**

Вайпут тумтирĕ тăхăнсан,
Сана кам паллĕ? Ан хĕне!

**Асамат**

Пăлхав иртсен, салтак
виллишĕн
Сана ăсатăп Çĕпĕре,
Çăпан пек кĕлеме çаптарăп.

**Курак**

Ху арăмна хăвах хĕрхен.
Яла хыпар сарăличчен,
Ăçта пулсан та вăрттăнрах
Чикесчĕ вĕсене.

**Асамат**

Пуçран ачаш шăлса каçармĕç.
Тĕпсакайне ярар-ха, карчăк.
Тыт уринчен.

**Курак**

Усал шăрши
Çитет, тет, çитмĕл çухрăма.

**Асамат**

Тĕттĕмленсен, карта хыçне
Чикетпĕр.

**Курак**

Çичĕ пăт та пур-тăр
Пăшалла сăхăмсем Патша
Епле çитернĕ вĕсене...
(*Пĕрверĕн-пĕрерĕн сĕтĕреççĕ.*)

**Курак**

Вăйхал юлмарĕ.

**Асамат**

Ăш чикет.
Эрне хушши хулсем ыратрĕç.
Сăра ăсса кил нӳхрепрен.

**Курак**

Ҫапла, пыр типрĕ, Асамат.

(*Чĕрес йăтса каять.*)

**Асамат**

Пăлхав пĕтсен, телей мехелĕ
Килетчĕ, ырă кайкăраш
Вĕҫсе кĕретчĕ килĕме.
Ҫынсем ҫĕклеччĕр ҫивĕч пуртă,
Турчăкаран шăратчĕр хĕҫ.
Йăванччăр юнлă хирсенче,
Чĕрисенчен шуйттан хупахĕ,
Ĕмĕр-ĕмĕр ҫеҫкесĕр курăк,
Шăтса хумхантăр ҫил ҫинче.
Мана мĕскер? Палхав пуйтарчĕ.
Вайпутăн пĕр арча укҫи
Паян ак манăн, Асаматăн,
Сахманлă мăшалти чăвашăн.
Пăлхав иртсен, кăтартăп эпĕ
Ҫара каска мăкланнине:
Улпут кермене пек мăн ҫурт
Ял варрине лартса мухтанăп,
Тӳшек ҫинче хăяккăн выртăп,
Килте вăйпитлĕ ҫичĕ тарҫă
Ĕҫленине ҫеҫ пăхăп эпĕ.
Хăнасенче илем кӳме
Татах та тепĕр хут авланăп.
Вунҫиччĕри ҫап-ҫамрăк арăм
Кăвак сухалăн мухтавне
Ҫĕклетĕ, юнашар тăрса
Вăл иртĕ халăх умĕнчен.

(*Чĕрес йăтса Курак кĕрет.*)

**Курак**

Пасар пек халăх кĕр-кĕрлет
Хăватлă аслати пекех.
Мĕн пулнă ҫав-тери?

**Асамат**

Мĕн пултăр!
Улпутăн вăрманне касма
Пуҫласшăн.

**Курак**

Эсĕ те унта,
Кăн-кан пăхсан та йĕрлесен,
Юратчĕ. Пĕрене илсен,
Вите пекки лартаттăмăр.

**Асамат**

Хам укҫапа хамах ларттарăп.
Улпутăн вăрманне касса
Хам пуҫăма кайран кастармăп.

**Курак**

Суя-ши ял сăмахĕ? Эсĕ
Вайпут килне ухтарнă, тет,
Чылай укҫа та илнĕ, имĕш.

**Асамат**

Эп илмесен, тепри илетчĕ.
Ҫынсем ыйтсан, ҫăвар ан кар.

**Курак**

Илтмен. Курман...

**Асамат**

Салтаксене
Вĕлернине те хытă тун.
Калаҫ анчах, ҫапса ăсатăп
Масар ҫине, аннӳ патне.

**Курак**

Кăвар ҫине ҫарран пуссан та,
Сăмах кăлармăп, Асамат.

**Асамат**

Сана пĕр юрă: ҫук та ҫук!
Пăлхав иртсен, шаль тутăр илĕп
Хура сăмсаллă куракран
Чечен саркайăк пулăн эсĕ,
Пуян телейлĕ йăвара
Хушса ҫеҫ ларăн; ҫичĕ тарҫă
Куян пек хăлхине таратĕ.

**Курак**

Пĕрре те хамăн ĕмĕрте
Ҫынна хушман—хамах
танкканă.
Пултарăп-ши?

**Асамат**

Пыра-киле
Вĕренĕн, умăнта ташлатăн.
(*Тутимĕрпе Эрпике кĕреҫҫĕ.*)

Тутимӗр

Усал сӑмах—тула! Ӑшши—
Сире! Аван-и, ватӑсем?

Курак

Улма ҫулҫи пек силленсе
Кӗтетпӗр хӑнана, Тутимӗр.

Тутимӗр

Курак инке—сип-симӗс ҫулҫӑ,
Анчах та Асамат пичче:
Пӗр турата пуҫу ҫине
Ӳкерӗп, тенӗ ват юман пек
Пӑхса ларать, сӑн-пичӗ сулхӑн.

Асамат

Пӗр чӗптӗм ҫиллӗм ҫук,
Тутимӗр.
Паян шалт ыртӑм, ват шӑм-шак
Сурать,—те ҫумӑра кӗтет.

Тутимӗр

Хулна хитре вайпут тумтирӗ
Туртса пусмасть-и, йывӑр
мар-и?

Эрпике

Миталлӑ, ҫутӑ ҫӑлтӑрлӑ
Ан лар, атте; кӑлар та ывӑт!

Курак

Юмах патши кукша Иван пек
Сасартӑк манӑн Асамат
Килсе кӗрсен, хӑранипе
Шари ҫеҫ ҫурӑлчӗ чӗре.

Асамат

Сиртен малтан ҫӑкӑр чӗлли
Ҫекленӗ эпӗ—ан вӗрентӗр!
Кӑкӑр ҫине ҫут ҫӑлтӑр мар,
Шапа ҫаксан та ӗҫӗр ҫук.

Курак

Чӑкӑлтӑшла та урлӑ-пирлӗ
Сӑмах ан ҫап, йӗркеллӗ пул.
Куян тискер сӑр кашкӑр тирӗ
Тупсан та тӑхӑнсан, ҫапах
Ӑна пӗрре те килӗшмест.
Сунар йытти пек харкашса
Ан хирӗҫ, кӑмӑлна яр уҫ.

Эрпике

Сӑра сыпсан, усаллӑх иртӗ.
Тавту, анне!

Курак

Тавсъе, Тутимӗр!
Телейлӗ пул. Ҫӳренӗ чух
Ҫӗрле ҫулна ҫутаттӑр уйӑх,
Тӑр кӑнтӑрла хӗвел вӑй патӑр.
Аксан—тырру тип-тикӗс ӳстӗр,
Ҫӗлен шуса тухми ҫӑра,
Турпас пек шултӑра пуҫахӗ,
Хӑмӑш пек хулӑм хӑмӑлӗ.
*(Ӗҫет, куркине тултарса
Тутимӗре парать.)*

Тутимӗр

Эс калани, Курак инке,
Ман чӗрене кӗнӗ пекех,
Тӑпра ӑшне кӗрсе чӑн пултӑр,
Тырра ӑнса ӳсме калатӑр.
Тӗппи курка ҫитес телейшӗн!
*(Ӗҫет.)*

Курак

Курка тип-типӗ,—хамӑрла!
Ҫурхи тӳпе пек кӑмӑлӗ
Тӗтресӗр, витӗр янкӑр уҫӑ,
Мӗскер ларатӑн, Асамат,
Ҫӑра пӗлӗт пек хуралса?

Эрпике

Капланнӑ ҫумӑр пӗлӗчӗ.
Пире аҫа ҫапасшӑн мар-и?

Асамат

Эп алӑк хӑлӑпӗ-и сирӗн?
Килен-каян пурте мана
Хыпаласа пӑхасшӑн-мӗн.

Курак

Ӗнерлӗ пул! Кӑрчанкӑ пек
Кӗҫтсе ан лар. Курка йатса
Тутимӗре тав ту!

**Асамат**

Ман ирĕк!
Хĕре ахаль пама ухмах-и?
Мана малтан тӳлетĕр хулăм!

**Тутимĕр**

Çураçсанах—укçи умна.

**Асамат**

Çĕр тенкĕ хур сĕтел çине.

**Тутимĕр**

Пăхса ӳстернĕшĕн хисеп,
Ыр ĕмĕр, Асамат пичче.
Укçа та хатĕр, кĕсъерех.
(*Сĕтел çине хурать.*)

**Асамат**

Капла юрать. Сыв пул,
Тутимĕр!
(*Ĕçет.*)

**Тутимĕр**

Вăйпут укçин арчи санраччĕ.
Ăна пăлханнă халăха
Валеçĕпĕр.

**Асамат**

Ман айăп пысăк.
Вăйпут çуртне çунтарнă чух
Ытла та питĕ тĕркĕш пулчĕ.
Ют ял çынни, сухалсăрскер,
Кĕтмен çĕртен ура хурса
Мана сасартăк такăнтарчĕ,—
Хул хушшинчи арча çухалчĕ.

**Тутимĕр**

Ан суй! Йĕрлерĕм санăн
хыççăн.
Лаша утлантăн та тӳрех
Яла кустартăн,—çăп-çăра
Тусан çĕкленчĕ çул çинче.
Ан хапсăн халăх укçине!

**Эрпике**

Пуп куçĕ пек ху ĕмĕтне
Сӳнтер, атте!

**Асамат**

Эп сан аçу-и?

**Эрпике**

Атте.

**Асамат**

Шуралнă манăн çӳçĕм,
Санран ыйтмастăп. Хамăн ăс!

**Тутимĕр**

Ăсу çитет пулсан, ăнлан:
Ан сур эс халăх кӳллине.
Кăлар!

**Асамат**

Чăнах та çук, Тутимĕр.
Тăпра çыртса тупа тăватăп.

**Тутимĕр**

Çыртах!

**Курак**

Ту çӳллĕш ылттăн пар,
Анчах асту, ан сут чунна.
Укçу пирки мана каларăн.
Ан тун.

**Асамат**

Кар-кар, хура курак!
Шăммусене йытта кышлатăп.

**Курак**

Кышлат!—çапах та чун таса.

**Асамат**

Манра укçа, манра, Тутимĕр!
Пытарнă çĕр айне, шыра!

**Тутимĕр**

Мăю çинчен пуçна вĕçтерĕп.
Туптарăп халăх пурлăхне,
Çич чулăн айĕнчен кăларăн.

**Асамат**

Ӳпре çеç эсĕ. Савăнăн,
Нумай пулсан та, ик эрне.

**Тутимӗр**

Пӑлхав чухне таратӑн эсӗ,
Вӑрланӑ чух малтан мала.

**Асамат**

Суратӑп пӑлхаву ҫине,
Укҫа пулсан, телейлӗ эпӗ.

**Тутимӗр**

Салтаксене кӗтетӗн-и?
Пуҫсем сутса укҫа пухасшӑн.
(*Хӗҫне кӑларать.*)

Пуҫу-и хаклӑ е укҫа?
Кӗрхи сар ҫулҫӑ евӗр, халӑх
Кӗрешӳре йӑваннӑ чух,
Тӑван килне—ху шӑтӑкна
Эс ылттӑн мӑйӑрсем пухма
Шутлатӑн-и, чӑваш арланӗ?
Сана каларӑм чӗлхене,
Юлашкинчен хӗҫпе калаҫӑп.

(*Эрпике хӗҫӗнчен тытать.*)

**Эрпике**

Ан кас, ан тив ӑна, Тутимӗр...

**Тутимӗр**

Аҫу-и ку? Ҫӗлен-калта!
Хӗҫрен сыхлатӑн, Эрпике.
Анчах та, йывӑрлӑх килсен,
Сана вӑл шеллӗ-ши, тӑванӑм?

(*Хӗҫӗ ҫине тайӑнса пуҫне усать*).

ЧАРШАВ

## ПИЛЛӖКМӖШ АКТ

### Пӗрремӗш сыпӑк

Ҫуннӑ ял. Кӑмрӑклӑ пӗренесем выртаҫҫӗ. Малта хура юпа, анчах тӑрри курӑнмасть. Асаматпа Чемей кӗреҫҫӗ.

**Асамат**

Сехмет сехечӗ ҫапрӗ-и,
Янрарӗ-и, Чемей пичче?
Пӗрре пӑлханнӑшӑн патшамӑр
Кастарчӗ вӑрӑм чӗлхӳне,
Ӑна йытта парса ҫитерчӗ.
Хальхи пӑлхавшӑн, ватӑ тусӑм,
Пуҫна касаҫҫӗ пулӗ. Э?
Сан ывӑлун, Тутимӗрӗн
Лаши таканӗ айӗнче
Вут чулӗ катӑлса ванатчӗ,
Ак халӗ ӗнтӗ вӑрманта—
Куян пекех хӑравҫӑ таркӑн.
Тутимӗр манӑн ват пуҫа
Ҫиесшӗнччӗ,—тарса ҫӳрерӗм,
Тӑватӑ кун хӗлхем ҫӑкӑр
Мана лекмерӗ, вӑрманта
Хура ҫӗрле эп выҫ ҫӑварлӑн
Пӑхаттӑм шурӑ чӑкӑт пек
Пӗччен те тутлӑ уйӑха.
Ахаль пӗтет-и Асамат?
Юс пек чее те яп-яка.
Вилмерӗм, килтӗм хам яла.
Ӑна вут пенӗ салтаксем.
Ҫилсем вӗреҫҫӗ. Кӗл вӗҫет.
Арча тулли укҫамӑм манӑн
Ҫӗр айӗнче ҫунман, телейӗм
Сиксе ташлать. Телейӗм сывӑ!
Кӗлленнӗ ҫӗр ҫинче ҫӗкленӗп
эпӗ,
Пӑлханнӑ ҫынсене пытарнӑ
Масар ҫинче актарӑп тырӑ,
Тутимӗр чӗринчен шӑтса
Кашлана тулӑран кулачӑ
Пӗҫерӗп, куҫӗнчен хӑмла
Ӳстерӗп,—йӳҫӗ сӑрине
Ӗҫе-ӗҫе хаваслӑ ларӑп,
Мухтанӑп эпӗ, ял пуянӗ.
Ӑнлантӑн-и, Чемей пичче?
(*Хулӗнчен тытса силлет.*)
Чемей пичче, ӑнман хӑта,
Чӗлхесӗр эсӗ, янавар!
Хура юпа, Чемей сехмечӗ,
Ларать те ним те шарламасть.

Каллех кунта хаяр пӑлхавшӑн
Патша ларттарӗ пӗр юпа.
Чемей пичче, чӗлхесӗр эсӗ.
Ҫапах хӑрушӑ, шанчӑксӑр,
Аллусене апла-капла
Туса вӑл-ку ҫинчен калаҫӑн,
Тутимӗр хӑтӑлса юлсан,
Пӗлтерӗн ӗмӗтӗм ҫинчен.
Сана пӑвас килсе ман алӑ
Питех кӗҫтет, Чемей пичче.
(*Чемее пусса выртать, пӑвма тытӑнать.*)

Ан тапалан!
(*Курак кӗрет.*)

**Курак**

Ах, ҫылӑх... Ҫылӑх...
Пӑватӑн мар-и хӑтана?
Ҫӳлти аттемӗр, пӳлӗх турӑ,
Юнланнӑ ахӑрсамана
Хускалнине курать-ши,
ҫук-ши?
Сана ҫӗр ҫӑттӑр, Асамат!
(*Уринчен сӗтӗрет.*)

**Асамат**

Ан ҫыпҫӑн, аллӑма ан лек!
Сана та парӑп апапап.
(*Тапать. Курак ӳкет.*)

**Курак**

А-ах... Пӗтерчӗ кӑкӑра.
Чемей хӑта та хӑрлатать.
Чӗлхесӗр ватӑ мӗскӗне
Вӗлернипе сана мӗн усӑ?
Хӑех вилетчӗ, Асамат!
(*Асамат тӑрать.*)

**Асамат**

Хӑту тӳрех леш тӗнчене
Ӑсанчӗ, ман ҫинчен элек
Калаймӗ турӑ умӗнче,
Чӗлхесӗр явавар. Ха-ха!

**Курак**

Тем каласан та, ху чунна
Укҫашӑн сутнӑ эсреле.
Аташнӑ, ҫавӑнпа усаллӑн
Урса ҫӳретӗн кӑлӑхах.
Кӗлту, пуҫҫап, йӗркеллӗ ӳкӗн.

**Асамат**

Эсрелӗ те, турри те маншӑн—
Иккех айкки те тӑвайкки.
Ҫынсем кипек мимиллӗ
пулччӑр.
Калаҫчӑр чунӗсем пирки,
Мана укҫа арчи ҫӗклетӗ
Ҫӳлтен ҫӳле; сентре ҫинчен
Суратӑп ҫылӑхсем ҫине!
Нумай ҫӗрсем куҫа хупмасӑр
Шутлаттӑм эпӗ мул ҫинчен.
Кӑвак-хуппи пек ӗмӗтӗм
Кӗтмен ҫӗртен мана
тӗл пулчӗ,—
Тин акӑ эпӗ ӑнсӑртран
Пулатӑп хамӑр ял пуянӗ,
Укҫасенчен карта тытса
Чӑвашсене ҫаклатӑп эпӗ.

**Курак**

Ҫапла ҫав, пысӑк эрешмен.
Санпа ирттертӗм ӗмӗре.
Анчах аллу пӗрре тӳп-тӳрӗ
Ӗҫленине курмарӑм эпӗ.
Хиртен ялан юри ҫӗрле
Килеттӗн, пӗр кӗлте пулсан та,
Илеттӗн эсӗ ҫынӑнне,
Ютран ҫеҫ мар, тӑван килтен те
Вӑрлас йӑла пӗтмерӗ санӑн.
Килте ху пӗр пӗччен чухне
Чӑх йӑвинчен ҫӑмартасем
Вӑрттӑн илсе, кушак пекех
Ӗҫеттӗнччӗ; карланкуна
Чармарӑн, ҫирӗн, чыхӑнтӑн.
Сар ҫу вӑрлаттӑн нӳхрепрен.

**Асамат**

Хирти чӗтренкӗ шӑрчӑк пек
Илемсӗр купӑс сӑрлатма
Тӑхтатӑн-и, таса ухмахӑм?
Итле-итле хӑлха тарларӗ.
Туту ҫине ҫӑра ҫакасчӗ.
Уҫҫи манра пуласчӗ ун.
Вӗренсӗр ут пек сӑмахна
Ҫӑварӑнтан ан яр пӗрре те,

Кайран калла хуса кӳртеймӗн...
Чӗлхесӗр Чемее пӑвса
Вӗлернине каламӑн-и?

Курак

Тӳссе пулмасть. Укҫа пирки,
Чемей хӑта вилли ҫинчен те
Тӗрӗс-тӗкелӗн, пытармасӑр
Пӗлтерӗп пӗтӗм ялӑма.
Тарраймӑн халӑх вӗччинчен.
Пӗр-пӗр ҫӗрле тӳр ҫын чукмарӗ
Сӳнтерӗ выҫӑ ӗмӗтне.

Асамат

Апла эппин, сыв кай, Куракӑм!
Чемей шӑпи санран та иртмӗ.

Курак

Вӗлер!

Асамат

Ку яхӑнта касарӑп.
Хӗн-хурлӑ чухӑн пурӑнса
Тертлентӗмӗр; юлашкинчен
Юр-варлӑ, муллӑ та укҫаллӑ
Пулса курар-ха иксӗмӗр.

Курак

Ҫынна вӗлернӗ аллупа
Пуҫтартӑн мул, ҫӑткӑн карланкӑ!
Ӑна ан куртӑр манӑн куҫӑм.
Вилсен, чун уҫӑ, тап-таса.

Асамат

Леш тӗнчене мӑшӑр лашаллӑ,
Иӗс шӑнкӑравлӑ эпӗ пырӑп,
Вара ҫӑтмахӑн алӑкне
Яр уҫ! Мана кӗтсе турамӗш
Пӗҫертӗр хуплупа икерчӗ.

*(Курака пӑвать, хускалмасӑр пӑхса тӑрать. Салтаксем кӗреҫҫӗ.)*

Пӗри

Хисеплӗ господин, тавах!

*(Асамата чыс парать.)*

Тепри

Кама чыс патӑн, апӑрша!

Тумтирӗ воеводӑн ун,
Хӑй вӑл чӑваш ҫынни, пӑлхавҫӑ.
Курмастӑн-и, ик уринче
Ҫӑпатисем, вӗсем те ҫӗтӗк.

Виҫҫӗмӗш

Ури—чӑвашӑн, кӑкӑрӗ—
Улпутӑн. Ҫӑлтӑрлӑ! Ха-ха!

Тӑваттӑмӗш

Чӑваш воеводине салам—
Малтан калатӑр саламат.
*(Тӑваттӑн-пиллӗкӗн хӗнеме тытӑнаҫҫӗ.)*

Асамат

Тутимӗре сире тыттарӑп.
Ӑн-пуҫ ҫухаличчен ан ҫапӑр.
Чим, тетӗп, чим!

Пӗри

Итлер!

Тепри

Кайран
Йӗмне хывса вӗтелӗпӗр.

Асамат

Пӗрре те эпӗ пӑлханман.

Пӗри

Кун пек хитре сысна тумтирӗ
Ӑҫтан лектертӗн, йӗрӗнчӗк?

Асамат

Пӑлхавшӑн ҫичӗ ют, тесе,
Мана пуҫа касма тӑратчӗ
Эсрел пек утаман Тутимӗр.
Вара ҫӗрле ҫап-ҫарамас
Тарса пытантӑм вӑрмана,
Ҫире ҫӳхе кӗпе анчахчӗ.
Пӗрре шӑнса ӗнтӗркесе
Кушак ҫури пек пулнӑ хыҫҫӑн,
Сехре хӑпсан та, ӑшанма
Вут ҫуттине тӗлле-тӗлле
Аран ҫеҫ вӑйсӑр утрӑм эпӗ.
Вайпутӑн ҫурчӗ ҫуннӑ мӗн.
Юпа ҫинче тумтирлӗ ҫын

Силленнине курсан, шеллерĕм,
Ăна антартăм çĕр çине:
Вилсен, мĕн тутăр тумтирпе?—
Тесе шутларĕ манăн пуçăм,—
Хывса илсе хам тăхăнтăм,
Шăнман пулсан, пĕлетĕр хăвăр,
Тивместĕмччĕ.

**Пĕри**

Суйма ăста.
Пĕр-иккĕ хытăрах вĕтсен,
Кăвар пек харăс ăшăнĕ
Чăваш ухмахĕн çурăмĕ.
(*Çапаççĕ. Офицер кĕрет.*)

**Асамат**

Юп кур, ыр çыннăм офицер!

**Офицер**

Мĕскер?

**Пĕри**

Тутимĕре тытма
Пире ертесшĕн çак чăваш.

**Офицер**

Тăнлас.

**Асамат**

Мана вайпут тумтирĕ,
Ак турă, лекрĕ инкекрен.

**Офицер**

Итлерĕм. Малалла кала!

**Асамат**

Чĕрем çунать патша йĕркишĕн.
Тутимĕр ашшĕне хамах
Шаккарăм, ку хĕрарăма
Наркăмăшлă сăра парса
Салтаксене вĕлернĕшĕн
Пăвса пăрахрăм, тӳсеймерĕм.
Патшамăрăн усал тăшманĕ,
Пăлхавлă утаман Тутимĕр
Çухалтăр çĕр çинчен, сире
Халех ертсе каятăп эпĕ.

**Офицер**

Инçе-и?

**Асамат**

Сĕм вăрман варри.
Ахрат çырми, Упалăх варĕ.
Унта кайма сукмак та çук,
Этем йĕррисĕр тĕксĕм вырăн.
Эсир çеç хăвăр тĕпчесен,
Аташăр.

**Офицер**

Салтаксем, рете!
Лере, мала тăр эс, ертӳçĕ!

**Асамат**

Авал сунарçă пулнă эпĕ,
Сĕм-сĕм вăрман çăра пулсан та,
Пӳрне пек паллă.
(*Салтаксем умне пырса тăрать.*)

**Офицер**

Команда: марш! Хаваслă юрă!
(*Салтаксем юрласа утаççĕ.*)

*Юрă*

Ахалех пăлхантăн, халăх.
Юнлă пулчĕ хирĕмĕр.
Пуççене сулса касмалăх
Çивĕч пирĕн хĕçĕмĕр.

Хир çинче хавaслă явăн,
Куççене сăха-сăха
Апатлан та ирĕк ярăн,
Кăранклат, хура çăхан!

Мĕскĕн хĕр, ӳстертĕн кантăр
Пир çинче тĕрĕ тума.
Пăявсем унтан яватпăр
Савнă каччуна çакма.

Ан хурланăр, ан эрленĕр,
Чип-чипер хитре хĕрсем!
Сирĕн çумăра иленĕç
Йĕс таканлă салтаксем.

Акăш пек хĕрсем, шыв парăр
Çӳллĕ валак пуçĕнчен,
Пирĕн алсене тасатăр
Каччăрсен юнĕсенчен.

ЧАРШАВ

## Иккĕмĕш сыпăк

Ҫăра та тĕксĕм вăрман. Пăлхавҫăсем вучах умĕнче лараҫҫĕ.

Пĕри

Ăҫта каяр-ши, тăвансем?
Кĕрхи ҫанталăк ҫитиччен
Хура вăрман пире пытарĕ.
Кайран?..

Тепри

Эс ҫамрăк та вăйпитлĕ.
Ăҫта кайсан та—вырăн пур.
Ача-пăчамсăм саккăрăн,
Сăпка ҫинче тепри, пепекĕм!
Сĕм суккăр карчăк. Самана
Сакки ҫинчен пире антарчĕ.

Виҫҫĕмĕш

Пăлхав кĕрлерĕ те телейĕ
Ҫумарĕ пирĕн пуҫ ҫине.
Миҫе хутчен салтаксене
Салатрăмăр, юлашкинчен
Майра патша юри хăй янă
Пин ҫынлă пысăк утлă ҫар
Пире тапта-тапта турарĕ,
Ут ҫулнă пек йăванчĕ халăх.

Тăваттăмĕш

Турчăкаран шăратнă хĕҫ,
Ҫава та пуртă пулчĕ пирĕн.
Ҫапах кĕрешрĕмĕр пит вирлĕ.
Йк уйăх ҫакă таврара
Хаваслăхчĕ, хуҫаччĕ хамăр.
Кăкларăмăр улпутсене:
Алла лекни—юпа ҫинче;
Сахалĕш тарнă, хăтăлнă.

Пиллĕкмĕш

Улпут пĕтет-и ҫĕр ҫинче?
Пĕри вилсен, тепри сып-сывă.
Каллех кунта хăпса килеҫҫĕ.
Пăлхантăмăр, ак халĕ тўс,
Ташла вĕри ҫагма ҫинче.
Е вилĕм е ҫамка ҫине
Пустарĕҫ тимĕр кĕлеме.

Улттăмĕш

Пĕрре те ўкĕнместĕп эпĕ.
Мăнтарăн хамăн ĕмĕрте
Пĕрре пулсан та питĕ хытă
Тылларăмăр улпутсене.
Пĕрне ак ҫакă аллăмпа
Ҫакса вĕлертĕм, кăмăл тулчĕ.
Мана тытсан, пĕр хĕнемесĕр,
Ал-урана ватмасăр тўрĕ
Пĕрре персе ҫеҫ вĕлерсен,
Аванччĕ; курăксен тымарĕ,
Йĕлме хуппи ҫие-ҫие
Пăхмастăм выҫлăх кусĕнчен.

Ҫиччĕмĕш

Мăян ҫисен те хам килтеччĕ.
Тутимĕр айăплă кунта.
Пăлхав ҫĕклемесен, сăлтавсăр
Ҫунмастчĕ ял.

Саккăрмĕш

Ан вăрҫ ăна!
Пурте эпир Тутимĕр пек
Хастарлă тытăнсан, пăлхавăн
Тĕшши юлатчĕ ҫĕр ҫинче.
Чи юлашки ҫапăҫура
Пăхатăп: йышлă юланут
Килет, мăкăрланать тусан.
Сехрем юлмарĕ, тартăм эпĕ.
Юман ҫине кушак пекех
Хăпартăм, ҫулçă хушшинчен
Тинкер кăна пăхса ларатăп.
Сасартăк пĕрхĕнсе Тутимĕр
Тухать те—хум пекех лаши,
Хирте тип-тикĕс ярăнать.
Чупни-юртни те сисĕнмест.
Хăватлă кăйкăр кайăк пек
Мала кăшт ўпĕннĕ Тутимĕр,
Шап-шурă утлă ахвитсер
Салтаксенчен малта пыратчĕ,
Хăяккăн тытнă хĕҫĕ унăн
Ҫунатчĕ ялкăшса.

Тутимĕр

Сасартăк пўлчĕ ун ҫулне,
Хĕҫне пĕррех сулса ярсассăн,
Йăванчĕ чаплă ахвитсер.
Пĕр ушкăн юланут салтак,
Лашисене чĕввĕн тытса,

Шак сиккипе вĕççе пырсассăн
Çут çиçĕм пек хĕçне Тутимĕр,
Сулмаклă сулласа, пуçларĕ
Касма, касма... сахал тесен те,
Тĕп пулчĕ вун салтак унта.
Кĕтмен çĕртен аманнă учĕ
Йаванчĕ, унăн пуçĕ урлă
Çăмха пек сирпĕнчĕ Тутимĕр.
Çухалчĕ ĕнтĕ,—терĕм эпĕ.
Анчах сиксе тăрса, хĕçне
Ямарĕ аллинчен, каллех
Тапратрĕ хытă турама,
Унтан пĕр салтака сасартăк
Йĕнер çинчен туртса антарчĕ,
Утне утланчĕ, хăтăлчĕ.
Кайран, пăлхав саланнă хыççăн,
Тăпра çинче пĕччен, чĕнмесĕр
Выртсан-выртсан, ача пекех
Йĕрме пуçларĕ.

**Тăххăрмĕш**

Паттăр вăл.
Асап курса исленнĕ халăх
Телейĕ кĕлленсе вĕçнишĕн
Чунне татса йĕрет Тутимĕр.

**Вуннăмĕш**

Йĕрет, çапах вĕри куççулĕ
Пире хĕртмест.

**Вунпĕрĕмĕш**

Кĕрхи çанталăк
Тĕтреллĕ сивĕ куçĕпе
Пăхсан, эпир ăçта, атьсемĕр?

**Вуниккĕмĕш**

Чĕре кăварĕ сӳнтĕр-ха.
Шыв выраннe пур пирĕн юрă.
(*Юрлама тытăнать, ыттисем хутшăнаççĕ.*)

*Юрă*

Тăван çĕршыв, çĕршывăм, эсĕ,
Анне пулсан та, пит хаяр.
Пире çуратрăн шеллемесĕр.
Чĕре çунать: унта—кăвар.

Кĕр çитĕ те кикак хуркайăк
Асанĕ ăшă кăнтăра.
Йăви услап упан та лайăх,
Шăтăк пур сăрă кашкăрăн.

Хĕлле валли пур тиллĕн тирĕ,
Асанăн—сарлака çунат.
Ним те, ним те юлмарĕ пирĕн.
Ăшра кăвар. Чĕре çунать.

Тăван çĕршыв пуриншĕн усă,
Пире усал çĕршывăмăр.
Пиртен тăвасчĕ сарă çулçă—
Кĕрхи çилпе каяттăмăр.

Пире çеç вырăн çук. Хуркайăк
Асанĕ ăшă кăнтăра.
Йăви услап упан та лайăх,
Шăтăк пур сăрă кашкăрăн.
(*Тутимĕрпе Эрпике кĕреççĕ.*)

**Тутимĕр**

Кĕрхи пиçен çеçки çинче
Тĕкĕлтура йĕнĕ пекех
Илемсĕр, шанчăксăр ку юрă.
(*Йывăç çумне тайăнса.*)
Пăртак пулин те, ĕмĕте
Çĕклекенни, тепри пур манăн.
(*Юрлама пуçлать. Малтан Эрпике, каярах ыттисем те хутшăнаççĕ.*)

*Юрă*

Уй-хирте вăрă-хураххăн
Хураллаççĕ çăхансем.
Хурчăкамăр ырнă ахăр,
Усăннă çуначĕсем.

Ыратать йывăр суранĕ,
Сăрхăнать хĕп-хĕрлĕ юн.
Пирĕн хурчăкамăр канĕ,
Вăй-хăвачĕ ӳсĕ ун.

Тепĕр хут вĕççе хăпарĕ,
Кăн-кăвак пĕлĕт патне,
Вăркăнса анса тустарĕ
Хуп-хура çăхансене.

Чĕрнине тăсса вăл анĕ
Пĕтерме тăшмансене.

Хурчăкамăр халĕ канĕ
Пухĕ пысăк вăй-халне.

Пирĕн савнă хурчăкамăр
Çĕнĕрен пĕр çĕкленсен,
Вилĕç халĕ, вилĕç самăр
Вăр-хурахлă çăхансем.

**Пĕри**

Юрру чипер, яка, Тутимĕр!
Анчах çулсем тумхахлă пирĕн.
Ăçта кайсан та—сулăнкă.

**Тутимĕр**

Çатма пекех тап-такăр пулĕ.

**Тепри**

Чăрăш лăссийĕ тăкăнсан-и?

**Тутимĕр**

Чăрăш лăсси ем-ешĕл ларĕ.
Хăçан пулсан та самана
Пĕрре çĕкленĕ пирĕн май.
Пире таптарĕç салтаксем.
Кунта çанталăк халĕ лăпкă,
Эпир юн тăкнă çĕр çинче
Чĕркуç таран çĕкленчĕ курăк.
Анчах йĕри-тавра палхав,
Хĕçсем янраççĕ, юланут
Сикет те çăп-çăра тусанĕ
Мăкăрланать çулсем çинче.

**Виççĕмĕш**

Ăçта патшамăр Пăкачав?

**Тутимĕр**

Вăл Аслă Атăл таврашне
Çул тытнă, çавăнта кăварĕ
Хĕртет паян улпутсене,
Мускав хули çине кĕресшĕн
Хăлат пекех вĕçет ялавĕ.

**Тăваттăмĕш**

Ăна—Мускав, хур тĕк минтерĕ,
Пире—майран пăяв йăлмакĕ,
Айран—шалçа...

**Тутимĕр**

Чуралăх саманин çĕленĕ
Чăнах та вилтĕрччĕ тесен,
Пуçне касмасăр ĕç тухмасть.
Ун пуçĕ Мускавра. Ăна
Касса ура айне хурасшăн
Васкать Аслă Пăкачав.

**Пиллĕкмĕш**

Ăна кĕтсе хĕлле шартлатĕ,
Салтак пăшалĕ тивмесен,—
Тăманлă юр пире пĕтерĕ,
Витсе хăварĕ; çуркунне
Мăнтарăн пирĕн ӳтсене
Выçса алхаснă кашкăрсем
Çыртса турткалĕç.

**Тутимĕр**

Çут тĕнче
Яр уçă, сарлака, хапхасăр.
Чăнах та ирĕк пулмасан,
Тăван тăпра çинчен куçса
Каятпăр пушкăртсем патне.
Хул авăнтăр, тата ик алă
Тарлатăр çеç—харавçă вилĕм
Ĕнсе çине килсе ларăймĕ.

**Улттăмĕш**

Тăван хиртен каймастăп эпĕ.
Вилсен те, тунката пекех
Ларатăп асатте пилленĕ,
Суха тыттарнă çĕр çинче.

**Тутимĕр**

Асаттесем, пăлханнă хыççăн,
Хăйсем те Атăл леш енчен
Кунта куçса авал ларман-и?

**Çиччĕмĕш**

Тăван çĕртен куçассине,
Ку инкеке пĕлес пулсассăн,
Мĕншĕн пăлхатрăн халăха,
Хĕçсем тыттартăн эс, Тутимĕр?

**Тутимĕр**

Кунта пĕтсен те, таврара
Сиксе шавлать пăлхав хăвачĕ.
Илемлĕ Пушкарт хирĕнче
Халь Салаватăн урхамахĕ
Юртать, пĕрре те такăнмасть.
Пăлхав кунта юнпа путнишĕн

Сирте те пысăк айăп пур.
Эсир малтан ытла хĕрӳччĕ,
Анчах улпутсене çакса
Çĕрне илсен те çаратсассăн,
Пăрахрăр хĕçсене, хире—
Васкав кăлартăр сухапуçĕ;
Салтаксене курсан, пĕрерĕн
Тарса пытантăр вăрмана.

**Саккăрмĕш**

Ялан хĕç-сăнă вылятсан,
Çаран ути пек пуçсене
Касса тăксан, ачасене
Кам пулĕ çакăр параканĕ?

**Тăххăрмĕш**

Хресчен патши килет, тесен,
Сана шанса çĕклентĕмĕр.
Пире пĕтертĕн эс, Тутимĕр!

**Тутимĕр**

Суймарăм эпĕ, Пушкăртран,
Пăлханнă халăх хушшинчен,
Патша манифестне илсе
Юри васкарăм ялăма.

**Вуннăмĕш**

Пăлхав ăнмарĕ çав, Тутимĕр.
Сана мĕскер! Çунатлă кайăк;
Ăçта кайсан та, пурăнма
Çăп-çăмăл та питех ансат.
Ача-пăчамçăсем саккăрăн,
Пĕри сăпка çинче сикет,
Çапах карланкă. Арăм суккăр.
Ăçта тарса кайсан та—выçлăх
Çухатмĕ манăн сукмака,
Пăлхав çĕклерĕн. Салтаксем
Кĕлпе вĕçтерчĕç ман çурта.
Сана ак çак инкек-синкекшĕн
Чиксе пăрахăттăм, Тутимĕр.

**Тутимĕр**

Мана чиксен, Тяпук пичче,
Чĕрӳ канать-и?

**Тяпук**

Тен ун чух
Сана вĕлернĕшĕн пире
Патша хăй парĕ çăмăллăх.

**Тутимĕр**

Эппин вĕлер, ман юн çинче
Чарлан пек вĕçĕ çăмăллăх.

**Пĕр сас**

Çыхас ăна!

**Тепĕр сас**

Пире те уншăн
Патша хăварĕ çĕр çинче.

**Эрпике**

Çынна сутса пайта илесшĕн!
Тутимĕрпе мана вĕлерĕр.
Ӳте сутсан та, чунсене
Ан парăр!

**Пĕр сас**

Тăвансем, çыхар!

**Тутимĕр**

Мана сутсан та, каçару
Илессине пĕртте ан шанăр.
Сана укçа-и тĕнчере
Хакли? Кала, Тяпук пичче?

**Тяпук**

Укçа пулсан хаваслă эпĕ,
Ача-пăча та, хам та тутă.

**Тутимĕр**

Ыттисене мĕскер?

**Сассем**

Çиме!

**Тутимĕр**

Улпутсене çаратнă чух
Сире валли пухса хам пытăм.
Тăшманăрсен укçисене
Сире пĕр пек тĕрĕс-тĕкеллĕн
Паратăп валеççе.
(*Кашнинех пама тытăнать.*)

**Пĕри**

Тутимĕр,
Мана каçар усал сăмахшăн.

**Тутимĕр**

Мĕнле сăмах?

**Пĕри**

Сана çыхма
Чĕнекенни вăл—эпĕччĕ.

**Тутимĕр**

Мана çыхас текеннисем
Нумай та, эпĕ—пĕр пĕччен.

**Тепри**

Ак çакă тĕнчере пурте
Сан пек пулсан, э-эх, Тутимĕр!

**Тутимĕр**

Ачу-пăчу нумай, ху вата.
Çавна кура, Тяпук пичче,
Укçи те ытларах сана.

**Тяпук**

Тутимĕр, ан кўрен тархасшăн.
Сана чикес тесе каларăм.
Ухмах çав эпĕ,—вата пуç.

*(Макăрать.)*

**Тутимĕр**

Ачу-пăчушăн ан хурлан.
Эхер те Пушкăрта кайсан,
Хамах тăрантăп вĕсене.

**Эрпике**

Кĕписене çĕлетĕп эпĕ.

**Тутимĕр**

Пурте укçалла, сапăр пулăр.
Пĕр-пĕринне ан хапсăнăр.
Вăрлакана суд тăвĕ хĕç.

**Сассем**

Вăрламăпăр.

**Тутимĕр**

Пуян тесе, ан лартăр пуртă
Ман май çине. Пĕр пус та çук.
Пурте сирте.

**Пĕр сас**

Тутимĕрсĕр
Вилетпĕр хамăр.

**Тепĕр сас**

Ылттăн çын,
Тутимĕр—пирĕншĕн чĕрĕ.

**Тяпук**

Тутимĕр хыççăн кăвара
Кĕме, шыва путма та хатĕр.
Пурте вĕçетпĕр Пушкăрта.

**Сассем**

Каятпăр.

**Тяпук**

Сан юрру, Тутимĕр,
Аванччĕ.

**Тутимĕр**

Эрпике, пуçла!

*(Эрпике хыççăн пурте харăссăн юрлама тытăнаççĕ.)*

Уй-хирте— вăрă-хураххăн
Хураллаççĕ çăхансем.
Хурчăкамăр ырнă ахăр.
Усăннă çуначĕсем.

*(Пăшал сассисем. Тутимĕр йăванать. Салтаксем курăнаççĕ.)*

**Тяпук**

Мĕскер тăратпăр, тăвансем?
Вилер Тутимĕрпе пĕрле.

**Сассем**

Мала!..
*(Хĕçсем сулласа чупаççĕ.)*

**Эрпике**

Тăратăн-ши, Тутимĕр!

**Тутимĕр**

Вилетĕп, Эрпике...
*(Асамат кĕрет.)*

**Эрпике**

Атте...

**Асамат**

Пăлхавçă таркăн хĕрĕме—

**Салам.** Çĕнтертĕр-и? Ха-ха!
*(Каçса кайса кулать.)*

**Эрпике**

Арча укçа сана çитмерĕ,
Пире те сутрăн-и, аттеçĕм?
Ман мулăм çук, çапах та эпĕ
Сана парне паратăп. Ме!

*(Эрпике Тутимĕрĕн хĕçне илет те сулать. Асамат ӳкет. Салтаксем хупăрлаççĕ.)*

ЧАРШАВ

---

## ПĔР ДИВИЗИРИ ЧĂВАШ БОЕЦĔСЕМПЕ КОМАНДИРĔСЕМ ЧĂВАШ ХАЛĂХНЕ ÇЫРНĂ ÇЫРУ*

Тăван халăх, савнă халăх,
Чаплă кунсене ялан
Ĕмĕр-ĕмĕр ăсанмалăх
Чĕререн сана салам!

Ăмăрткайăк, тăван халăх,
Вăрçăри ачусенчен
Йышăн эсĕ чун-хавалла
Çырăва Дон хĕрринчен.

Дон пек çутă, Атăл евĕр
Сарлака кăмăлпалан
Çырнă сăмахсем кĕрлеччĕр,
Сарăлтăр хĕрӳ салам!

Ял-ял урлă, хир-хир урлă
Янăратăр ян та ян!
Салама итлетĕр улăх,
Аслă хир, хура вăрман!

Пирĕн çакă юрă ирттĕр
Çичĕ пĕлĕт хушшинчен,
Кăнтăрла та, каç та, ир те
Пултăр халăх умĕнче!

Çакă çырăва вуланă
Манайми сехетсенче,
Тăван халăх, вĕçтĕр санăн
Ялаву çил çиййнче.

Эх, Тăван çĕршыв, аннемĕр,
Шан пире, ĕнен пире:
Аслă Атăлăн илемĕ
Сывă пулĕ ĕмĕрех!

Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Сан хăва сăпку çинче
Ӳссе улăп пек Чапаев
Ишнĕ Атăл шывĕнче.

Чĕр юна тумлам-тумламăн
Хĕрхенмесĕр тăкрамăр,
Тăкапăр, анчах та хамăр
Çĕршыва хăтарăпăр.

Халăхăмăр, савнă халăх,
Çĕртмĕпĕр чăваш ятне,
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Çĕклĕпĕр ун мухтавне.

Пăшала татах та хыттăн
Тытăпăр эпир алла.
Сталиншăн, Тăван çĕршывшăн
Утăпăр малтан мала!

* * *

Савнă халăх, эх, аннемĕр,
Чĕререн сава-сава
Вуласам пĕр сиктермесĕр
Пирĕн çакă çырăва.

Шартлама хаяр хĕл кунĕ
Тăнă чух, Дон хĕрринче
Çыртăмăр таса юр хӳнĕ
Дзотсенче, блиндажсенче.

Чи тискер тăшман окопĕ
Умĕнче, малти ретре,
Çыртăмăр; кĕрхи йĕпе пек
Сирпĕнсе тăчĕ етре.

---

* Кĕскетсе пичетленĕ.

Çĕр ракета та пĕр уйăх
Çутă сапнă каçсенче
Çыртăмăр эпир Дон уйĕ
Чĕтĕренĕ кунсенче.

Эх, аннемĕр, савнă халăх,
Пĕл эс—вăрçă хирĕнче
Ачусем хĕрсе хастарлăн
Кĕрешсе пыни çинчен.

Печĕ пирĕн артиллери,
Ӳхĕрчĕç самолĕтсем.
Шур хута эпир тĕрлер-и?—
Терĕмĕр хĕпĕртесе.

Çырăвăн, кашни сăмахăн
Вăйĕнче пур пирĕн юн.
Юмахри пек урхамахлăн
Çĕнтерӳ килет-и йӳн?

Çĕнтерме вăрçа нумайăн,
Пинĕн-пинĕн кĕтĕмĕр,
Утнăçемĕн, пынă майăн,
Халăх, саншăн ӳкрĕмĕр.

Акăш-макăш вăрçă вучĕ
Ăшĕнче хыт кĕрешсе
Халăх чысĕшĕн пуç хучĕç
Пирĕн паттăр юлташсем.

Масарсем нумай куратăн
Халь Воронеж хирĕнче,—
Ачусем сан, Аслă Атăл,
Пур унта, санран инçе...

Халĕ лăпкă çывăраççĕ.
Вĕсене лăпкана пек,
Асăннă пекех кашлаççĕ
Вăрмансем çил вĕрнипе.

Таврăнаймĕç, тăван халăх,
Ӳкнĕ ачусем килне,—
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Йышăнсам вĕсен чапне!

Çакă çырăва шăрçа пек
Шăрантарнă çынсенчен
Вилнисем те пулĕç,—чапĕ
Юлĕ халăх чĕринче.

Тăван халăх, ăмăрткайăк,
Тĕплĕн-йĕрлĕн калама
Çитеймест-мĕн юрă майĕ,
Тупăнмасть, иккен, сăмах.

Çырура манни сахал-и,
Пур сиксе те юлнисем.
Вăхăт çитĕ те çуралĕç
Романсем, поэмăсем.

* * *

Манмăпăр эпир июнĕн
Çирĕм иккĕмĕш кунне,
Аставăпăр халăх юнĕ
Айăпсăр тăкăннине.

Молотов сасси кĕрлерĕ,
Сарăлчĕ çав кун хыпар:
Вăр-хурах, тĕнче тискерĕ
Сапса ячĕ шĕл-кăвар.

Мăкăрланчĕ хӳхĕм Киев.
Çулăм сикрĕ Минск çинче.
Сăрхăнчĕ юн çийĕн-çийĕн
Ялсенче, хуласенче.

Пĕлĕте витсе кĕрлерĕç
Хуп-хура самолĕтсем.
Сад, дворец, çырма кĕперĕ
Пĕтрĕç, бомбăсем ӳксен.

Ахлатса, йĕрсе арканчĕ
Çĕр-тăпра, тăван анне...
Кĕл, кăвар та, ишлĕк-ванчăк
Тăрса юлчĕ çĕр çине.

Амăшсем савса сиккенĕ
Сăпкари ачасене.
Хĕрхенми вĕлерекенĕ
Сапрĕ вилĕм çумăрне.

Вăр-хурахлăн çаратмашкăн
Нимĕç мурĕ килнĕ чух,
Чикĕрен упа та кашкăр
Тарчĕ, тарчĕ чĕрĕ чун.

Куртăмăр-çке Белостокăн
Хирĕнчи тăрнасене,
Куртăмăр чăлт шурă акăш
Кӳлĕрен çĕкленнине.

Астăватпăр халăх юнĕ
Айăпсăр тăкăннине.
Манмăпăр эпир июнĕн
Çирĕм иккĕмĕш кунне.

Аслăран та аслă Сталин
Йыхравне илтсе, эпир
Пĕр çын пек пурте хастарлăн
Харăс тăтăмăр çав ир.

— Манăн ывăлсен хăвачĕ
Çапнине, фашизм, пĕл!—
Терĕ халăх, тумлантарчĕ,
Тăхăвтăмăр сăр шинель.

— Нимĕçе вĕлер, тăванăм!—
Терĕ халăх çавă ир,—
Кĕр вута, анчах тăшманăн
Салтакне тапта та ир!

— Нимĕçе пĕр хĕрхенмесĕр!—
Тесе çырнă енчĕкне
Парнелерĕ чип-чипер хĕр
Кăвар куçлă йĕкĕтне.

— Нимĕçе вĕлер, тăванăм!—
Терĕ хăй упăшкине,
Ăсатса маттур хĕрарăм
Шăлчĕ вĕри куççулне.

— Нимĕçе вĕлер, аттеçĕм!—
Терĕç пирĕн ачасем.
— Нимĕçе вĕлер!—теççĕ
Вăрмансем, çеçенхирсем.

Каш-кашла, Вăрнар вăрманĕ,
Шавлăр, Елчĕк хирĕсем!
Нимĕçе хирме тухман-и
Аслă Атăл ачисем!

Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Сартăмăр çунатсене,
Чĕппӳсем, эпир, нумайăн
Вĕçрĕмĕр тăшман çине.

* * *

Хуп-хура тусан çĕкленнĕ
Кăн-кăвак пĕлĕт таран.
Çавраçил вĕрмест,—çĕленлĕн
Чашкăрса килет тăшман.

Хурçă танкĕсем ирессĕ
Тăпрана, ачасене;
Çĕмĕрсе вĕсем килессĕ,
Эх, çĕршывăм, сан çине!..

Кайăксем тарса вĕçессĕ
Тахçанхи йăвисенчен,
Куççульне тăкса йĕрессĕ
Хĕрӳсем Дунай çинче.

Кашни шит тăван тăпрашăн,
Кашни çуртшăн, йывăçшăн,
Сăпкари кашни ачашăн,
Кашни хĕрĕн чысĕшĕн,

Хамăр шывшăн та вăрманшăн,
Пурте хамăрăн,—тесе
Çапăçрăмăр, Хĕрлĕ Çарăн
Улăп пек паттăрĕсем.

Юлташсем çунса кĕлленчĕç
Сывлăшра, танк ăшĕнче,
Хастарланчĕç чун хăвачĕ
Чĕрере лăп сӳниччен.

Аларан ӳксен пăшалĕ,—
Шăл хăйра, çырт нимĕçе!
Çавăн пек герой сахал-и,
Çитмĕл çиччĕ-и, миçе?

Пинĕпе вĕсем, нумайăн
Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче!
Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Сан вăю геройсенче!

* * *

Манмăпăр кĕлленнĕ Киев
Макăрса ăсатнине,
Манмăпăр Днепр çийĕ
Юнланса хĕрелнине.

Халĕ те эпир илтетпĕр
Ирсĕр нимĕç аллине
Лекнĕ халăх тÿсеймесĕр
Ир те, каç та йĕрнине.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Хамăр çиллĕмĕр çинчен
Калама сăмах çитмест мĕн,—
Юн вĕрет чĕресенче.

Хĕрÿсем мăшкăл кураççĕ
Немĕн шывĕ хĕрринче;
Макăраççĕ, макăраççĕ
Инçетре, Дунай çинче...

Макăраççĕ, ирĕн-каçăн
Чăн тăван Мускав енне
Куç хурса кĕтсе тăраççĕ
Çăлăнăç килессине.

Аслă вăрçă вучĕ витĕр
Хĕрлĕ Çар малтан мала
Пырĕ çапăçса, вăл çитĕ,—
Вĕлкĕшĕ Хĕрлĕ ялав.

Пирĕн халăхăн куççулĕ
Юхнăшăн тавăрăпăр.
Нимĕç урчĕ... Шалçи тулĕ
Аслати пек çапăпăр.

* * *

Эх, тăван çĕршыв, аннемĕр,
Пулчĕ вăхăт, кĕркунне—
Гитлер çарĕ килнĕçемĕн
Çитрĕ сан чĕрÿ патне.

Шăннă çĕр çинчен васкавлăн
Кармашса хăмăр танксем
Ÿхĕрчĕç:—чипер Мускавăн
Инçе мар урамĕсем!..

Пуç усмарĕ пирĕн халăх
Чи хăрушă кунсенче,
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Вăй пуçтарчĕ чĕринче.

„Асларан та аслă Сталин
Ватă Кремльтен приказ
Парсанах, хăват хускалĕ!“
Халăх кĕтрĕ ир те каç.

Мускава таптатăп!—терĕ
Хурçă тумлă вăр-хурах.
Пухăнчĕ тăшман тискеррĕн,
Кĕрхи пĕлĕт пек хура.

Курăнмасть хĕрри те вĕçĕ,
Çук виçме сарлакăшне.
Эх, çĕршыв, миçе дивизи
Килчĕ сан чĕрÿ çине?..

Çут мерченлĕ Хĕрлĕ Çăлтăр
Кремль хÿмисем çинче
Сар хĕвел пек йăлтăр-йăлтăр
Çуннине курать тĕнче.

Мĕнле паттăр, мĕнле улăп
Сăнчăрланă хĕвеле?
Ан та тапăн, вут та çулăм
Касĕ пин хĕçĕпеле.

Хĕрлĕ Çăлтăра çĕр ванчăк
Салатма Мускав çине
Килчĕ Гитлер—юнлă анчăк
Юхтарса сĕлехине.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Эсĕ анлă та, анчах
Хĕрлĕ Çар, çĕршыв илемĕ,
Утăм чухлĕ те ан чак!

Каялла çул çук. Мускавăн
Сарлака урамĕсем
Умĕнчех тăраççĕ тарăн
Блиндажсем те окопсем.

Вилĕпĕр, герой шăмшакĕ
Хурçă тимĕр айĕнче
Лăчăртатĕ,—нимĕç танкĕ
Ванĕ паттăр умĕнче.

Вилĕпĕр, анчах та юлтăр
Хуласен хули Мускав,
Ун çинче çуталтăр çăлтăр,
Вĕлкĕштĕр хăмаç ялав.

Хурçăран та хытă хурçă
Пул, çĕршыв, тăван анне!
Ой, мĕн чухлĕ Гитлер хучĕ
Полкисен виллисене!..

* * *

Паттăр вăхăт! Кашни кунĕ
Халь те чаплă,—малашне
Чаплăран та чаплă çунĕ,
Çырăнĕ историне.

Çав кунсен кашни сехечĕ
Курăнĕ çулталăк пек,
Ма тесен, вĕсен тивлечĕ
Тулнă халăх юнĕпе.

Хĕвеланăç хĕрлĕ тейĕн,—
Юнлă пулчĕ аслă уй...
Çитĕ вăхăт, эпопея
Çырĕ тепĕр Лев Толстой.

Фашистсен çарне хаяррăн
Вакласа тăкса эпир
Утрăмăр пурте пĕр харăс
Кăнтăрла та, каç та ир.

Юлташсем вилсен, виç утăм
Утса ӳкрĕç çĕр çине,
Тепĕр хут тăрас пек хыттăн
Тăсрĕçĕ аллисене.

Хирсене салтак масарĕ,
Арăш-пирĕш ушкăн танк
Хаварса, тăшман тармарĕ-и?—
Тарчĕ пирĕн Мускавран.

Артиллери—пирĕн „тура"
Пыйтăллă эсрелсене
Шыраса кăларчĕ, тӳрĕ
Харсăр вырăс сиввинче.

Шăннипе шалт ĕнтĕркенĕ
Фрицсене нӳхрепсенчен
Сĕтĕрсе эпир силленĕ
Шартлама хĕл сиввинче.

Вĕсене эпир кăтартнă
Территори мĕнлине,
Пĕр халăç çĕр татса панă,
Çапнă, чикнĕ çĕр айне.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Çитрĕ вăхăт, çуркунне
Анчĕ сар хĕвел илемĕ
Çапăçу хирĕсене!

* * *

Мухтансам, чăваш уй-хирĕ!
Ӳхĕр, Атăл, хĕпĕрте!
Ачусем тăшмана хирĕç
Кĕрешеççĕ пур çĕрте.

Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Харсăр санăн чĕппӳсем,
Хуть ăçта пулсан та, лайăх
Янтăраççĕ ячĕсем.

„Хамăра çуратнă вырăн
Лăпкă халĕ, инçетре..."—
Тенĕ шухăш пулмĕ ырă,
Выртмĕ пирĕн чĕрере.

Белоруç йĕрсен, чăвашăн—
Куçĕнче вĕри куççуль.
Çинĕ чух пире—пĕр кашăк,
Утнă чух пире—пĕр çул.

Пĕрле туйнă пĕр телейĕн
Çырлине астивнĕ чух;
Е чăваш-и, е ирçе-и,—
Туслă пулнă, пулнă чун.

Пĕр-пĕрне савса мухтанă
Вырăс та латыш, узбек,
Савăннă, пĕрле юрланă,
Çывăрнă эпир пĕр пек.

Тăван халăх, савнă халăх,
Чăвашсем эпир—маттур.
Фронтсене пăхса ил халĕ,—
Пирĕн юнăн йĕрĕ пур.

Ленинград панче тумланă,
Тăкăннă Мускав çĕрне,
Чăваш юнĕ мухтавланă
Севастополь хăйăрне.

Украинăн аслă уйĕ
Астăвать чăвашсене.
Сар хĕвел те кĕмĕл уйăх
Курнă пирĕн ĕçсене.

Шавлă Днепрпа Çут Немăн
Шывĕсенче чӳхенсе
Çывăраççĕ халь чăвашăн
Паттăр вилнĕ ачисем.

Вилнисем çинче хумханнă
Лăпкă шывăн саламне
Йышăн, çĕршыв, хăвăн анлă
Кăкăрна, чĕрӳ патне.

Савнă халăх, тăван халăх,
Ачусем эпир—маттур,
Тăшмана çапса ватмалăх
Пирĕн вăй та, юн та пур.

Илтрĕмĕр эпир Воронеж
Çыннисем макăрнине,
Туйрăмăр эпир Воронеж
Йывăр хурлăх чăтнине.

Шупашкар пекех илемлĕ.
Шупашкар пекех тăван.
Вилĕпĕр, анчах илеймĕ
Çичĕ ют, усал тăшман.

Йӳçĕ тĕтĕм, пысăк çулăм
Пăтрашса тăнă чухне
Вилесен купийĕ урлă
Кĕтĕмĕр вăрçă хирне.

Шăхăрса ӳкет те бомба
Тăпрана йăтса алтать,
Каялла пĕрре те ан пăх,
Малалла çеç, малалла!

Фашистсем тискеррĕн тухрĕç,
Пĕтĕм пĕвĕпе тăрса,
Килчĕç, килчĕç,—нимĕç мурĕ
Хăратасшăн ахăрса.

Петĕмĕр эпир хаяррăн,
Çултăмăр эсрелсене,
Хытă тăтăмăр, пĕр харăс
Тиртĕмĕр штыксем çине.

Хамăр тус вилсен, ун урлă
Чĕр юна аша-аша
Утрăмăр эпир, сатурлăн
Сыхласа Воронежа.

Июльте эпир Воронеж
Чысĕшĕн кĕрешнине
Кĕнеке тăрăх вĕренĕç
Ачасемĕр малашне.

Каçхине ытла та шăпчĕ,
Вăрçă çук пекех тĕнче
Лăпкăччĕ, юрлатчĕ шăпчăк
Çемĕртлĕх тĕмĕсенче.

Çăлтăрсен çутти çиçетчĕ
Çулçăсем çинче хитре.
Вĕркелетчĕ пулемĕчĕ
Нимĕçсен хутран ситрен.

Ытарма çук каç аванччĕ;
Çичĕ çăлтăр çуннине
Леш енчен тăшман пăхатчĕ
Вылятса çăткăн куçне.

Çакă каç итлет мĕн нимĕç
Пирĕн шăпчăк сассине.
Хăлхине хупла, çап, нимĕр,
Шăтарса кăлар пуçне!

Çакă çĕр эпир хăватлăн
Кайрăмăр атакăна.
Ишрĕ, ишрĕ пин-пин алă,
Каçрăмăр эпир Дона.

Çĕр кисренчĕ, çĕр чĕтренчĕ,
Вутлă çумăр сирпĕнчĕ,
Çапăçу кĕр-кĕр кĕрлерĕ
Лăпкă Дон улăхĕнче.

Ишрĕмĕр эпир пин-пинĕн
Уйăх сăвлă шыв çинче,
Пуля та, снаряд та мина
Вĕççĕр-хĕрсĕр пĕрхĕнчĕ.

Юлташсем сахал-и анчĕç
Аслă лăпкă Дон тĕпне...
Хĕретсе вĕсем хăварчĕç
Кăпăкланнă хумсене.

Каçрăмăр йĕпеннĕ тумлă
Салтаксем çыран çине.
Тухрăмăр, хăватлă хумлăн
Кайрăмăр тăшман çине.

Çитрĕ ир. Çанталăк пулчĕ
Сар хĕвеллĕ те уяр.
Чи малта хăюллăн пычĕ
Паттăр Хлебников майор.

Етĕрне ачи Голицын,
Политрук, кăвар чĕре,
Паттăррăн тата хăюллăн
Çапăçрĕ малти ретре.

Юлашки вăйĕ-хăвачĕ
Пур таран вăл тăшмана
Сайратса пырса йăванчĕ.
Чап ăна! Мухтав—ăна!

Манмăпăр эпир нихçан та
Кравченко лейтенанта,
Ун çинчен çыру шăрантăр.
Юлтăр, халăх, асăнта!

Амансан та, арăсланлăн
Ертрĕ хăйĕн ротине,
Тăкрĕ йĕрĕнчĕк тăшманăн
Наркăмăш пекех юнне.

Йывăр вăхăт килчĕ. Нимĕç
Хупăрларĕ, тапăнчĕ.
— Парăн, вырăс, парăн!—терĕç
Сасăсем мĕнпур енчен.

— Эх, çĕршыв, Тăван çĕршывăм,
Пурăв!—терĕ лейтенант,—
Юн пĕтмен-ха, эпĕ сывă.
Ме, тăшман, эппин тăран!

Пуля хыççăн пуля ячĕ
Иртĕхнĕ тăшман çине,
Ӳкрĕ унăн пистолечĕ
Анлă кăкăрĕ çине.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Сан чысушăн пурнăçа
Парнелетпĕр, кĕрешетпĕр,
Килнĕ чух, хурса пуçа.

Пĕр самант та лăпланмарĕ
Дон хĕррийĕ пĕр ĕрег,—
Вилĕм чĕлхипе шавларĕç
Пулемёт та миномёт.

Иртрĕ кун. Çĕкленчĕ уйăх,
Тĕтĕм витĕр каçхине
Курчĕ сарлака Дон уйĕ
Юнланса хĕрелнине.

Ой, мĕн чухлĕ вилнĕ нимĕç
Хупнă ĕмĕтсĕр куçне,—
Нихăçан та ĕнтĕ курмĕç
Мĕнешкел каç хитрине.

Ирхине, тĕтре чаршавĕ
Сирĕлнĕ сирĕлменех
Тухрĕ сар хĕвел, савса вăл,
Пăхрĕ çапăçу хирне.

Днепр çийĕн, Киев урлă
Иртнĕ хулăм пĕлĕтсем
Ярăнаççĕ те хĕн-хурлăн,
Тăсăлаççĕ мĕлкисем.

Пĕлĕтсем, иртсе ан кайăр,
Чарăнăр Дон хĕрринче,
Уй-хире çуса тасатăр
Вилнĕ нимĕç шăршинчен!

* *
*

Командир, Канаш чăвашĕ,
Павăл Ильиных çинчен
Чап çӳрет нирте ачашшăн,
Чап—Воронеж фронтĕнче.

Тăван халăх, савнă халăх,
Унăн ыр хушаматне
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Çырса хур чĕрӳ патне.

Ильиных, хăватлă паттăр,
Пирĕн ирĕк саманан
Телейне сыхланă харсăр,—
Панă хăй вăйне ăна.

Граждан вăрçинче аманнă
Вăл тăвата хут; юнне

Тăкнă хĕрхенмесĕр анлă,
Аслă çапăçу хирне.

Манмăпăр лутра çеç пÿллĕ
Аслă сержанта эпир,—
Юрăра шăранĕ, юлĕ
Çыра куçлă командир.

Дон хĕрри. Çап-çамрăк хырлăх,
Сар хĕвел. Пĕчĕк блиндаж.
Çавăнтан тухса Дон урлă
Каçнă Ильиных юлташ.

Вăл пĕччен хăюллăн кайнă
Ешĕл топăллĕ яла,
Çĕмĕртсем ăна пуç тайнă,
Суннă ырă çул мала.

Нимĕçсем ăна сасартăк
Хупăрланă: «Паран, русс!»
Ик гранатăна кăлар та,
Ильиных, пуçна ан ус!

— Хĕрлĕ Çарăн командирĕ
Паранать-и тыткăна!—
Тенĕ вăл, ăсатнă хирĕç
Пуля, пуля тăшмана.

Автомачĕ ун кĕрленĕ,
Курак пек нимĕçсене
Сăтарнă, çапса ÿкернĕ,
Пăталанă çĕр çумне.

Пĕр алли аманнă унăн,
Сылтăмми аманнă ун.
Упаленнĕ Павăл, шунă.
Вăйĕ чакнă, юхнă юн.

Ильиных ак сулахайăн
Пенĕ, пенĕ, чарăнман,
Сирпĕнсе нумай-нумайăн
Ÿкнĕ, антăхнă тăшман.

Пуля пĕтнĕ. Пĕр граната
Нимĕç-йытăсем çине
Вăркăннă та, çĕр çĕр катăк
Çапнă вĕсен ушкăнне.

Тутисем ун сивĕнеççĕ,
Юн юхать. Нумай суран.
Нимĕçсем татах килеççĕ,
Умĕнчех ак-ак тăшман!

„Пар, çĕршыв, хăват татах та,
Кăшт кăна, вилме кăна!"
Ильиных тăрать. Граната
Шартлатса çех саланать.

Вăрçă иртĕ. Пурнăç савăк
Пулĕ пĕтĕм çĕр çинче.
Гранитран шăратнă Павăл
Тăрĕ Донăн хĕрринче.

* * *

Мухтанма пулать чăвашăн
Ачисем маттуррипе:
Сталиншăн, Тăван çĕршывшăн
Кĕрешеççĕ пинĕпе.

Мĕнешкел сăмах тупар-ши?
Юррăмăр, янра паян!
Пур—хастарлă Саша Паршин
Хамăрăн Кувакинран.

Комсомолец вăл, разведчик,
Хÿхĕм çамрăк сăвăçă.
„Чĕлхесем" тытма çÿретчĕ,
Шикленместчĕ нихăçан.

Хир-хир тăрăх, уй-уй урлă
Хырăмпа шуса кăна,
Çук тесен те, вăл çĕр çухрăм
Иртнĕ, пенĕ тăшмана.

Вилĕм тупрĕ йышлă нимĕç
Саша Паршин пульлинчен.
Чап юрри, янра, çÿле вĕç
Çулăм пек герой çинчен!

Шăмăршă уй-хирĕ, савăн,
Хĕпĕрте! Санра—телей!
Хареăр улăпу пур санăн
Вăл—Можаев Васçилей.

Вăл разведчик. Халĕ паллă
Унăн ячĕ фрончĕпе.

Тăван халăх, савнă халăх,
Ўснĕ вăл сан сĕтўпе.

Хуп-хура сĕм тĕксĕм каç-и,
Кăнтăрла е ирхине
Йыхăрать çĕршыв приказĕ
Арăслан пек кĕрешме.

Фрицсене тытать Можаев
Çухинчен те пырĕнчен,
Аллине çакланнă кайăк
Чĕтĕрет ун умĕнче.

Çывăх тусĕ Василейĕн—
Николай Фролов сержант!
Вăрçăра этем телейĕ—
Туслăхра. Туена ан ман!

Вут пекех хĕрў те паттăр
Фролова хисеплесе,
Елчĕк çыннисем, мухтанăр,
Юрлăр, Елчĕк хĕрĕсем!

Автоматлă харсăр улăп,—
Тетпĕр чысласа ăна,
Çитмĕл çичĕ хут та пулĕ
Кĕнĕ вăл атакăна.

Тĕксĕм каç çăвать-и çумăр,
Çилтăман-и ўхĕрет,—
Канăçсăр Фролов канмасăр
Нимĕçсем çине çўрет.

Нимĕç йышлă-и, сахал-и,—
Вăл пăхмасть ăна-кăна,
Вĕресе тăрать вăй-халĕ,
Вăркăнать атакăна.

Пĕтĕмпе тата йĕркеллĕн
Ун çинчен калас тесен,
Çырмалла яка, илемлĕ
Хулăмкка кĕнекесем.

Çĕрпўртре тĕрленĕ çакă
Çырури йĕркесенче
Калăпăр эпир пăртаккăн
Елчĕк йĕкĕчĕ çинчен.

Фроловна вунакĕ тусĕ,
Хăй пекех богатырьсем,
Хĕллехи çĕр, уйăх кусĕ
Тĕксĕм пĕлĕтре сўнсен,

Ăнсăртран пырса тыллана
Нимĕçсен батальонне,
Нимĕç юнĕпе сăрлана
Лăпкă Дон кăвак пăрне.

Çапăçу хĕрсе хаяррăн
Тăвăллă тĕле çитсен,
Кирлĕ вăхăтра Фроловăн
Пĕтнĕ мĕн патронĕсем.

Нимĕç мурĕ хĕпĕртенĕ.
Ахăрашнă çав самант.
Фролова пăхса тĕлленĕ
Мăнтăр обер-лейтенант.

—Тусăмсем, ман хыççăн!—тенĕ
Елчĕк йĕкĕчĕ, герой.
Тепĕр хут кĕр-кĕр кĕрленĕ,
Тепĕр хут юнланнă уй.

Юлашки вунвиç граната
Нимĕç йыттисем çине
Вăркăннă,—кайса кăна тăр,
Чунилли, леш тĕнчене!

Прикладпа çапса яр çурнă
Обер-лейтенант пуçне
Хăй Фролов,—çапла вăл хунă
Фашиста, хĕреслине.

Пур кунта Семĕн Михайлов,
Рядовой, Канаш çынни,
Нимĕçе вилме пит майлă
Минăсем хураканни.

Çамрăк пек çўрет хастарлăн
Аллăри Çемен пичче—
Миналанă Лăпкă Донăн
Сарлака уй-хирĕнче.

Çапăçу чухне ялан вăл
Чи малта, вут ăшĕнче.
Ялкăшать Хĕрлĕ Ялавăн
Орденĕ кăкри çинче.

Кӗрмешсе эпир Дон урлӑ
Каҫнӑ чух, ҫӗрле пӗрре
Нимӗҫсем чӑтма ҫук хурлӑх
Кӑтартасшӑнччӗ пире.

Улт кӗпҫеллӗ миномӗчӗ
Урнӑ йыт пек ӳлесен,
Куҫ курми тусан ҫӗкленчӗ,
Тулхӑрчӗҫ шыв хумӗсем.

Тӑшмана хирсе, чакмасӑр,
Тӑхлан ҫумӑр айӗнче
Пытӑмӑр, умра—хура сӑрт.
Ёлӗк ялччӗ ун ҫинче.

Ҫапӑҫу хӑватлӑ пулчӗ,
Юхрӗ юн ҫӗнтерӳре.
Пирӗн аманнисем пурччӗ
Ял хӗрринче пӗр пӳртре.

Йӗрӗнчӗк тӑшман снарячӗ
Шӑхӑрса килсе ӳксен,
Пӳрт сасартӑк мӑкӑрланчӗ.
Чӗлхеленчӗҫ ҫулӑмсем.

Кантӑк витӗр вӑрӑ майлӑ
Кӗчӗ талпӑнса кӑвар.
Рядовой Семён Михайлов
Чупрӗ пӳрт патне вӑр-вар.

Вӑл шинельсемпе пӗркерӗ
Хыт аманнӑ ҫынсене,
Ҫирӗм юлташне пӗрерӗн
Сӗтӗрчӗ шыв хӗррине.

Паттӑр ҫын, Канаш чӑвашӗ,
Ҫирӗм салтака—тусне
Вилӗмлӗ вутран ҫӑласшӑн
Шеллемерӗ хӑй пуҫне.

Кӗпине ҫакланчӗ ҫулӑм,
Ёнчӗ ҫӳҫӗ, куҫхарши.
— Эх, мӗнле хӑватлӑ ывлӑм
Пур!—тесе мухтан, Ҫӗршыв.

Вӑл, Ҫемен пичче, чиперрӗн
Мухтавлать салтак ятне.
Тӗрӗпе ҫырса ӳкерӗр,
Хӗр-туссем, ун портретне!

Ҫапӑҫу хирне тухсассӑн,
Вилӗме ҫӗнтерекен
Яковлев Петтюк сержантӑн
Пурнӑҫӗ—хӑй кӗнеке.

Хирнӗ нимӗҫе мӗн чухлӗ,
Хирвӗ хытӑ та хаяр.
Вӑл вӗлернӗ нимӗҫ пулӗ
Хӑш вырӑнта пӗр масар.

Вӑрҫӑ хирӗнче аманнӑ
Стрюков вырӑс лейтенант.
Ҫавӑрса илме хӑтланнӑ
Чӗрӗллех ӑна тӑшман.

Яковлев, Вӑрмар чӑвашӗ,
Амансан та, юлташне
Хунӑ ҫӗклесе ачашшӑн
Хӑйӗн ҫурӑмӗ ҫине.

Кӗпине ҫурса вӑл сыхнӑ
Лейтенантӑн суранне.
Хурҫӑ ҫумӑр витӗр тухнӑ
Хамӑр окопсем патне.

Вырӑспа чӑваш йӗкрешӗн,
Пиччӗшпе шӑллӗ пекех;
Тӑшмана часрах ҫӗнесшӗн
Ыталаннӑ ик йӗкӗт.

Пӗр-пӗрне виҫ хут чуптунӑ
Кӑн-кӑвак тутисемпе:
„Сурансем тӳрленччӗр!"—ҫунӑ
Савӑнса куҫҫулӗпе.

Туслӑхра эпир мӗнпурӗ!
Туслӑ паттӑр ҫынсене
Ӳкереймӗ нимӗҫ мурӗ
Пусмӑр сӑнчӑрӗ айне.

* * *

Тӑван халӑх, савнӑ халӑх,
Сан ятна кӗрешӳре
Ҫӗклерӗмӗр асӑнмалӑх
Ҫӳлерех те ҫӳлерех.

Йӑтӑпӑр тата та ҫӳллӗ,
Ҫырӑпӑр историне,

Пулăпăр тата хĕрÿллĕ,
Ямăпăр чăваш ятне.

Вăрçăра чăваш хăравçă
Пулнă тенине илтсен,
Каснă евĕр ыратаççĕ
Пирĕн харсăр чĕресем.

Пĕр хăравçă пулчĕ пирĕн—
Çын çÿп-çапĕ, йĕрĕнчĕк:
Хăй ятне ярса хăй çирĕ
Çапăçу уй-хирĕнче.

Шăл çыртса хăюллă, хытă
Кăшкăрса атакăна
Кайнă чух, пытанчĕ йытă
Вутсăр хÿтĕ вырăна.

Ÿсĕр нимĕçсем хăрушă,
Сĕмсĕр тапăннă чухне
Ун окопĕ юлчĕ пушă.
Хăй вăл тарчĕ инçене.

Нимĕç пульлинчен тарсан та,
Хамăр халăх çиллинчен
Тараймарĕ вăл,—çухалтăр
Пирĕн чыслă çĕр çинчен!

Сарлака Тăван çĕршывăн
Юнсăр ырă хирĕнче
Тырă ÿснĕ чух, вăл сывă
Çывăрнă тÿшек çинче.

Çапăçса çынсем туяннă
Лăпкă пурнăç çимĕçне
Çинĕ шеп вăл, самăрланнă,
Пурăннă лайăх ун чухне.

Çĕршыва тĕнче тăшманĕ
Таптаса тулана чух,
Хĕç-пăшалсăр тараканĕ—
Вăл—çĕлен пек ирсĕр чун.

Пытармасăр юлчĕ ÿчĕ,
Хупланса тусан ăшне.
Çитĕр ун ÿтне çĕр хурчĕ,
Йыт кышлатăр шăммине!

* * *

Ир те каç пире кĕтетĕр,
Аннесем те арăмсем!
Каччăрсем валли тĕрлетĕр
Хÿхĕм енчĕк, савнисем!

Фашистсен шăмшакĕ витĕр
Шăтĕ курăк, хирсене
Хупласа, кĕççе пек витĕ
Хуп-хура окопсене.

Снарядсем хĕрсе кĕрленĕ
Вырăнта шăпланĕ ир,
Шăпчăк юрлĕ те илемлĕ
Пулĕ тар шăршисĕр хир.

Çитĕ вăхăт, Гитлер пуçĕ
Тăрăнĕ юпа çине.
Çитĕ вăхăт, алăк уçĕ,—
Салтак кĕрĕ хăй килне.

Нимĕç ларнă сак-тенкелĕн
Хăмине вĕри шывпа
Çăвĕç,—хăнасем йĕркеллĕн
Пухăнĕç çĕнĕ вăйпа.

Кăмăллă пире хĕл кунĕ—
Уçă, сивĕ, тап-таса!
Хĕрлĕ Çар боецăн юнĕ
Вылянать хастарланса.

Пирĕн халăх ĕнтĕркет-и
Хамăр вырăс сиввинче?—
Вăй шăрантăр, вăй кĕрлетĕр
Çăмăл йĕлтĕрсем çинче.

Кăкăра юрпа çăватпăр,
Нар пек хĕрлĕ тĕс кĕртсе.
Çил-тăман, атя, улатăр,
Йăтăнччăр хулăм кĕртсем!

Улпута тухма шутлана
Шăннă нимĕç сехрине
Хăпартать, памасть хĕл—канăç
Кăнтăрла та ирхине.

Пирĕн мина та, снаряд та
Çĕтĕк-çатăк тăшмана

Тӑлпалать те, пӑтӑр-патӑр,
Татӑк-кӗсӗк вӑркӑнать.

* * *

Аслӑран та аслӑ Сталин
Полководец сӑмахне
Чӗрере тытатпӑр халӗ,
Пурнӑҫлатпӑр приказне.

Ҫут хӗвел, тӑван аттемӗр,
Ӗртнипе эпир ялан
Тӑшмана ҫапса ҫӗнмесӗр
Нихӑҫан та чарӑнман.

Граждан вӑрҫинче унпаччӗ,
Стройкӑра—унпа эпир.
Пирӗнпе тӗнче хавачӗ—
Аслӑ Сталин, командир.

Ҫӗнӗпӗр, телей хӑпарӗ
Асамат кӗпере пек.
. . . . . . . . . . . . .

Ун чухне, ҫӗнтерне хыҫҫӑн,
Курӑпӑр ял-йышсене,
Ларӑпӑр илемлӗ, уҫӑ,
Сарлака кӗрекене.

* * *

Малалла эпир пӑхатпӑр
Тӗтӗм, ҫулӑм витӗрех,
Пӗр самант та тӑхтамасӑр
Ыратса ҫунать чӗре.

Украина, Украина,
Сан ҫеҫен-хирӳсене
Тӑкӑннӑ куҫҫуль, юн ҫунӑ
Хулӑм кӑкӑру ҫине.

Сан чечек ҫӗрӳ чӑвашшӑн
Хамӑр ҫӗр пекех чечен,
Сан ҫинчен эпир ачашшӑн
Илтнӗ Ҫеҫпӗл Мишшинчен.

Ирхине килмест саркайӑк
Ҫеҫпӗлӗн тӑпри ҫине,
Тертленсе хӗрсем нумайӑн
Юхтараҫҫӗ куҫҫульне.

Аслӑ Ҫеҫпӗл, халӑх чапӗ,
Патриот, кӑвар чӗре,
Ҫӗнтерӳ сехечӗ ҫапӗ,
Ҫитӗ эс выртан ҫӗре.

Сарлака Чернигов уйӗ
Тепӗр хут ешернине
Курӑн эсӗ, Ҫеҫпӗл,—туйӑн,
Сисӗн ирӗк килнине.

Эсӗ туйӑн—Хӗрлӗ Ҫарӑн
Йышӗнчи тӑванусен
Мӗнешкел янраҫҫӗ харӑс
Сулӑмлӑ утӑмӗсем.

Эсӗ, савнӑ Ҫеҫпӗл, шантӑн
Хамӑр халӑх паттӑрне,
Малалла чӗнсе янратрӑн
Вилӗмсӗр юррусене.

Чунӑмӑр, поэт, пире кӗт,
Ҫитӗпӗр-ха сан патна,
Сирпӗнӗ фашист тӗрекӗ,
Вилӗм ҫитӗ тӑшмана.

* * *

Малалла кайма Дон карчӗ
Пирӗншӗн яка кӗпер,
Унӑн пӑрӗ кӑвакарчӗ
Кӑвакарчӑн тӗсӗ пек.

Эс, Ҫӗршыв, сикми тӑратӑн
Гранитран шӑратнӑ пек.
Мухтанатпӑр Сталинградӑн
Фронтӗнчи ҫӗнтерӳпе.

Каҫ та, ир те, ҫӗрӗн-кунӗн,
Пӗтерсе фашистсене,
Тасатӑпӑр Лӑпкӑ Донӑн
Сарлака ҫеҫен-хирне.

Тӑван халӑх, ӑмӑрткайӑк,
Эсӗ шан ачусене:
Тӗнчере пӗлеҫҫӗ лайӑх
Теветкел чӑвашсене.

Вырăсĕн, марин, тутарăн
Çулĕ, шухăшĕ пĕрре.
Çавăнпа пыраç хастарлăн
Яланах кĕрешӳре.

Малалла! Çил вĕр, мала вĕр,
Хыпарла тăвансене:
Çитĕпĕр, çĕнӳ ялавĕ
Кĕрĕ Киев урамне!

Малалла! Çап-çутă уйăх,
Йыхравла тăвансене:

Курĕ Белорусси уйĕ
Пирĕн харсăр полксене.

Малалла! Хĕвел кăварĕ,
Пĕлтерсем тăвансене:
Çитĕ кун, уяв хыпарĕ
Кишинёвăн урамне.

Малалла! Хĕвел пек пытăр
Пирĕн алăри ялав!
Аслă Сталин сывă пултăр!
Аслă Сталина мухтав!

Ку çырăва 1942 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче наступление каяс умĕн, Дон хĕрринче тăнă чăваш боецĕсемпе командирĕсен митингĕнче йышăннă.

---



## АРКАДИЙ ЁÇХĚЛ

### ĂМĂРТКАЙĂК*

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен,
Çĕрсем çинче, шыв çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

*Константин Иванов.*

**Çĕршыв пехиллени.**

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ мăшăр çунат.
Çитмĕл çичĕ çĕр урлă çул хыв,
Çул-йĕре ан çухат.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ паттăр хăват.
Ан пулах эс хăравçă çерçи,
Пул хăватлă хăлат.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ хăй тивĕçне.
Ăмăрткайăк пул, — сывлăш хуçи,
Эс çуралнă вĕçме.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ çулăм-чĕре.
Эс ан манччĕ: санпа, паттăр сын,
Çĕршыв чапĕ çӳрет.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Йыхравларĕ тăрса:
Ывăлăм, ку вăл халăх вăрçи,
Тух çак юнлă вăрçа.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пехиллерĕ сана:
Пурнăç кӳр çĕршыва, паттăр сын,
Вилĕм кӳр тăшмана.

---

* Кĕскетсе пичетленет.

## 1. Кĕтӳçĕ.

Хăлат та ăмăрткайăк
Вĕçеççĕ тӳнере.
Анчах та ĕмĕт кайĕ
Татах та çӳлерех.

Сӳнме пĕлмесĕр, йăлтăр-йăлтăр
Шевле сапса аялалла,
Хĕррипе тулнă Алтăр-çăлтăр
Хуллен ял урлă тайăлать.

Вăрман чӳхенчĕ. Ял çӳçенчĕ.
Çакна ак шăпчăк сиссенех
Сывлăмпала çума пикенчĕ
Янравлă кĕмĕл сассине.

Çурхи васкавлă çăмăл шуçăм
Тĕтрелле йăлăм тăррине
Кал-каллăн карчĕ хăйĕн пурçăн,
Сенкер те çутă каррине.

Анчах ял лăпкă ыйхăра-ха.
Хуралтă урлă, тĕлĕк пек,
Каç тĕксĕмĕ шăвать вăраххăн
Темле тăрлавсăр кĕрĕкпе.

Çав тĕксĕме сирсе ярасшăн,
Çунат çапса та хĕртĕнсе,
Ир хыпарне кӳрсе йăвашшăн
Авăтса ячĕç автансем.

Автан юрри ял тăрăх карĕ
Çĕр тĕрлĕ сас тăка-тăка.
Вара хуллен килсе шаккарĕ
Якур мучи те алăка.

Пĕчĕк тусне ĕçе чĕнмешкĕн
Мучи килет кашни ирех.
Кăçалтанпа вĕсем пĕрлешнĕ, —
Хветут çӳрет халь кĕтӳçре.

Хветутăн амăшĕ ал-хапăл
Уçса кĕртет те мучине.
Леш çенĕкре вара: — Ăçта вăл,
Ман паттăрăм? — тесе чĕнет.

Унтан пырать те хăйĕн хытă
Аллисемпе çемçен-çемçен
Шăлать вара пĕчĕк Хветутăн
Кăтра, тăваткăл пуçĕнчен.

— Ачам, ачам, — тет вăл ачашшăн, —
Ыйхи те пĕчĕк чух анчах. —
Çак çеç вĕт кирлĕ-çке ачашăн;
Савать лăпканине ача.

Хветут çакна туйса вăр-вар çеç
Сирет çири шăналăка:
— Якур мучи, пит лăпкас марччĕ,
Вĕрентес мар ачашлăха.

Унтан пĕр алтăр шыв ăсать те
Тухать васкавлăн çăвăнма.
Ак вăл ĕçе кайма та хатĕр —
Кĕтӳ кĕтме те ывăнма.

Хăйне, паллах, тӳсме çук йывăр, —
Анчах вăл систермест вуçах.
Кулса калать: — Ӳссен те çыврăп,
Ун чух хам пысăк — хам хуçа.

Çак самантра вара — тăнла-ха!
Йĕри-тавра пур кӳршĕсен
Янраççĕ тутлăн та пылаккăн
Ытарайми сĕт витрисем.

Анчах мучипеле Хветутăн
Кĕтӳç черечĕн апатнех
Çисе пулас пулать-çке тутă, —
Куллен сĕнккетĕн çын патне.

Ун пек чухне чи ырă пыл та
Темле пымасть чĕре патне.
Çак пурнăç витнĕ питĕ хытă
Хветутăн сисĕмлĕ чунне.

... Часах хĕвел те тухрĕ чаплăн;
Мĕнпур пуянлăх хуçи пек,
Тĕнче çине çут ылттăн сапрĕ
Вăл хăйĕн улăп ывçипе.

Вара шултра та чӗрӗ сывлӑм
Пуҫларӗ вут пек йӑлкӑшма.
Епле илемлӗ эс, ҫӗршывӑм, —
Анчах та сан вӑл шухӑш мар.

Вӑрӑм пушша ҫакан та эсӗ,
Хӑв нушуна ху йӑтнӑ пек,
Тухса каятӑн пӗр чӗнмесӗр
Микитасен пралукӗпе.

Ик сӑрт хушши ҫӑй-ҫайпа тулнӑ,
Ҫайлаҫҫӗ выльӑх-чӗрлӗхсем,
Якур мучи те кӑшт салхуллӑн
Пырать хӑй тӗллӗн ӗрлешсе.

Ак анлӑ улӑх. Эс ун тӑрӑх
Утатӑн ҫӳсенсе ҫарран.
Ҫапла сан пурнӑҫ. Эсӗ — тӑлӑх.
Асап куратӑн ачаран.

Илемлӗ сывлӑм — ҫутӑ ылттӑн
Сан чӗпӗленнӗ уруна
Касать-ҫке ҫӗҫӗ евӗр хыттӑн,
Пӑчӑртатса юн сӑрхӑнать.

Ҫапах та ир ҫинче, тӑванӑм,
Нумай-нумай пурӑнас килет.
Хаваслӑн янӑрать вӑрманӗ
Пин кайӑкӑн сассипеле.

Куккукӗ авӑтать вӑраххӑн,
Ача шутлать те хӗпӗртет.
Хӑй ӑшӗнче ыйтать: — Кала-ха,
Мӗнле кунҫул мана кӗтет?

Сенкер тӳпе кӗмӗл шӑнкравлӑн
Тӑри юррипе янӑрать.
Итле, Хветут, итле те савӑн,
Тӗнче илемӗ — сан умра.

Анчах сана ҫапах та тунсӑх,
Ҫапах та тем ыйтать чӗре;
Сана ҫак улӑхри чӗр-чунсӑр
Пӗлмест никам та тӗнчере.

Вӗсем, сан хуйӑхна ӑнланнӑн,
Чечен те ҫамрӑк ухльӑме
Мӑшӑлтатса ҫиеҫҫӗ канлӗн, —
Чӗлхи ҫеҫ ҫукки пуплеме.

Ҫӳреҫҫӗ лӑпкӑ. Нӳрлӗ курӑк
Ҫине выртан эс месерле.
Санра темле илемлӗ юрӑ
Темле хумханнӑн чӗрӗлет.

Инҫе, инҫе эс тинкеретӗн
Хура та тарӑн куҫупа.
Сан шухӑш лӑпланмасть пӗрре те,
Тӗнче талккишӗпе чупать.

Ҫӳлте-ҫӳлте — мӗнле вӑл ирӗк! —
Хӑюллӑн ярӑнать хӑлат.
Ача шутлать: „Мӗскершӗн пирӗн
Вӑл ҫук-ши ҫавӑн пек хӑват?..

Мӗскершӗн ҫуккӑ-ши ҫунаттӑм?
Мӗншӗн ҫунатлӑ мар чӗре?
Эп те вара хӑлат пулаттӑм,
Ҫӳреттӗм ирӗк тӗнчере...“

Ҫак вӑхӑтра пӗр систермесӗр
Мучи пырать, кӑшт ӳсӗрет:
— Мӗн шухӑшлан, ачамҫӑм, эсӗ?
Мӗскер куратӑн тӳпере?

Хветут тӑрать. Вӑл кӑшт именнӗн:
— Хӑлат ҫине пӑхатӑп, — тет. —
Мӗскерле вӑй ӑна ҫӗкленӗ?
Мӗнле вӑл пит ҫӳлте вӗҫет?

Якур мучи вара ларать те,
Хӑй чӗлӗмне кӑшт тӳрлетсе:
— Хӑлатсенчен вӑйлӑрах, — тет, —
Вӗҫеҫҫӗ ӑмӑрткайӑксем.

— Мучи, эс курни ӑмӑрткайӑк?
— Таҫта, тен, курнӑ пуль ара...
Унтан вӑл Хветута пӗр лайӑх
Манми юмах ярса парать.

## 2. Якур мучи юмахӗ,

Ҫав-ҫав ҫӗрте, ҫав ҫӗрте.
Вӗҫӗмсӗр ҫеҫен хирте,
Ҫӗрпе пӗлӗт хушшинче,
Ырӑ сывлӑш уҫҫинче,
Ҫут хӗвелӗн ӑшшинче
Пуянӑн та чухӑнӑн
Пӗр сунарҫӑ пурӑннӑ.

Ухӑ пулнӑ — пурлӑхӗ,
Тӗнче пулнӑ — ырлӑхӗ,
Юлташ пулнӑ — ӑмӑрткайӑк,
Вӗҫсе пынӑ вӑл ҫӳлтен.
Пурнӑҫ пулнӑ пыл пек лайӑх,
Анчах пыл мӗнне пӗлмен.
Чухламан — мӗскер вӑл хуйӑх,
Пурте янтӑ, пурте хатӗр, —
Нушине те ӑнланман.
Каҫхине ҫутатнӑ уйӑх,
Кӑнтӑрла вара ахаль те
Уншӑн пулнӑ пит аван.

Пуснӑ ура кӗллипе —
Шывӗ тухнӑ кӳлӗ пек.
Туртса янӑ ҫӗмренне —
Кайӑк ӳкнӗ ун умне.
Хӗвел хӗртнӗ — ӑшаланнӑ,
Ларнӑ, ҫинӗ — апатланнӑ,
Унтан утнӑ малалла.
Каҫ пулсассӑн канмалла.
Уй-хир пулнӑ — ун минтерӗ,
Пӗлӗт пулнӑ — ҫивитти.
Пурнӑҫ пулнӑ — эс мӗн терӗн, —
Кунта ҫук-ха ун пекки.

Ӑмӑрткайӑкӗ унтах —
Ларнӑ тӗрӗс хуралта.
Кӑнтӑрла та ывӑнман вӑл,
Каҫхине те куҫ хупман вӑл,
Пуҫ вӗҫӗнче пӗр пӗччен
Ларнӑ ҫапла вӑл ирччен.
Ҫитмӗл ҫичӗ ҫил тухсан та,
Шалкӑм ҫумӑр тапрансан та,
Ҫунаттипеле хупланӑ
Хайӗн шанчӑклӑ тусне.
Тусӗшӗн ҫапла пултарнӑ
Пур инкексене тӳсме.

Ирпе тӑнӑ хаклӑ тусӗ,
Питне ҫунӑ сывлӑмпа.
Ҫав сунарҫӑн пичӗ-куҫӗ
Сывӑ пулнӑ ҫавӑнпа.
Ӑмӑрткайӑкӗ ҫӗкленнӗ
Татах пӗлӗтрен ҫӳле.
— Эп кунтан сыхлатӑп, — тенӗ, —
Эсӗ ҫӗр ҫинче ҫӳре.

Ҫӳлтен пурте курӑннӑ,
Ӑҫта майлӑ, вырӑнлӑ,
Ӑҫталла кайсан аван —
Ӑмӑрткайӑк ыр тӑван
Хӑй тусне йалтах систернӗ,
Куҫ шӑрҫи пек хӳтӗленӗ,
Нихҫан ӑна пӑрахман.
Куҫ умне инкек тухсассӑн,
Ҫӗмсӗр кашкӑр курӑнсассӑн,
Ӑмӑрткайӑк тӳперен,
Чул пек вӑркӑннӑ ҫӗре.
Ҫутӑ хурҫӑ пек хӑватлӑн
Чӗрнине вӑл кӗртсе лартнӑ
Ҫӗмсӗр кашкӑр ӗнсине.
Унтан ҫивчӗ сӑмсипе
Ҫав тӑрлавсӑр кашкӑрӑн
Ик куҫне те харсӑррӑн
Чавса илнӗ ҫийӗнчех,—
Халь каяймӑн пит инҫех.

Ҫапла ҫынпа ӑмӑрткайӑк,
Пурӑннӑ питех те лайӑх,
Пӗр-пӗрне хуҫа темен,
Хӑрхӑм-тарҫӑ та темен;
Кайӑк савнӑ этеме,
Этем савнӑ кайӑка,
Пурнӑҫ пынӑ лайӑхах.

Ҫак сунарҫӑ хӑй тусне
Пӗчӗкрен пӑхса ӳстернӗ.
Кайӑк пӗчӗкрех чухне
Хӑйӗн хулпуҫҫи ҫине
Вӑл ӑна лартса ҫӳренӗ.
Аларан апат ҫитернӗ,
Унтан ҫӳлелле вӗҫтернӗ
Тусем урлӑ инҫене.

Вӑл ҫапла виҫме вӗрентнӗ
Аслӑ ҫутӑ тӗнчене.
Кайӑка вӑл ят та хунӑ,
Унӑн ячӗ Ирӗк пулнӑ. —
Ӗмӗр-ӗмӗр ирӗкре!
Сенкер ҫутӑ тӳпере,
Ирӗкӗм, ҫӳре хӑюллӑн,
Ҫил ҫӳренӗ пек ҫӳре.

Ҫапла иккӗшин вӗсен
Пурнӑҫ пулнӑ хӑруш мар.
Анчах ҫывӑхрах иккен
Вӗсен пулнӑ пӗр тӑшман.

Хӑрпан-пуҫ патша панчен,
Тӗксӗм сӗм-вӑрман енчен,
Ӑнсӑртран, ҫӗрле пӗрре,
Туссем ҫывӑрнӑ ҫӗре
Вӗҫсе килнӗ, вӑрӑ майлӑ
Икӗ пуҫлӑ ӑмӑрткайӑк.
Ирӗкпеле сунарҫа
Вал шутланӑ ҫав каҫах
Систермесӗр тапӑнма,
Хурахла тытса кайма.

Хӑрпан-пуҫ патша валли
Сӗткенпе юн ӗммелли,
Витесем тасатмалли
Чӗмсӗр сӗм-чура тума,
Ҫурӑм урлӑ кашни кун,
Выльӑх пек, патак хума.

Икӗ пуҫлӑ ӑмӑрткайӑк —
Тӑхланран ҫуначӗсем.
Хурлӑх курнӑ нумай халӑх,
Тухайман ун айӗнчен.

Икӗ пуҫлӑ ӑмӑрткайӑк
Ӗмӗтленнӗ: — Тытса кайӑп,
Систермесӗр, вӑрӑ пек,
Юлашки ҫав Ирӗке.

Акӑ каҫӗ тӗм-хура,
Акӑ вӑл вӗҫсе пырать
Ирӗклӗ ҫеҫен хире.
Икӗ тус та ик чӗре
Лӑпкӑн ҫывӑрнӑ ҫӗре.

Анчах ҫӗрлехи тӑшман,
Шӑппӑн вӗҫеймен нистан.
Тӑхлан ҫунат варкӑшать,
Хирти кӑлкан каш-кашлать.
Ши! шӑхӑрса ҫил вӗрет,
Хӑрушлӑха систерет.

Ирӗк-кайӑк кӑларать
Пуҫне ҫунат айӗнчен.
Хайӗн тусне вӑратать
Инкек килсе ҫитиччен.
Унтан, вут та ҫиҫӗм пек,
Ҫурса тӗксӗм тӳпене,
Хайӗн пӗтӗм вӑйӗпе
Ҫӳлелле вӑл хӑпарать.

Ак пуҫланчӗ ҫапӑҫу,
Ай, хаяр-ҫке чӑтма ҫук!
Тӑвӑл мар ку, ҫумӑр мар,
Пӑрпа хутӑш пӗрхӗнет.
Ҫитмӗл ҫичӗ ҫухрӑма
Чӗп-чӗр юнах сирпӗнет.

Икӗ пуҫ та тӑватӑ куҫ,
Паллах ӗнтӗ, хӑватлах.
Анчах пирӗн Ирӗк-тус
Парӑнмасть-ҫке хӑвӑртах.
Пуҫӗ унӑн иккӗ мар,
Анчах ӳснӗ ирӗкре.
Куҫӗ унӑн тӑваттӑ мар,
Анчах чунӗ ҫирӗпрех.

Пӑлтӑр-пӑлтӑр ҫаврӑнса,
Нумай вӑхӑт ҫапӑҫсан,
Икӗ пуҫлӑ вӑр-хурах
Халран кайрӗ лӑштӑрах.

Вара ҫакӑ самантра
Ирӗк-кайӑк тӑшманран
Аяккарах пӑрӑнчӗ.
Унтан татах пур вӑйран
Тӑшман ҫине тӑрӑнчӗ.
Ҫутӑ хурҫӑ сӑмсипе
Пырса ҫапрӗ ҫиҫӗм пек,
Сулӑмлӑн та вирлӗн ҫеҫ
Тӑшмана вӑл пуҫӗнчен.
Пырса ҫапрӗ, тӗлӗнчӗ —
Пуҫ чӑлпар ҫеҫ сирпӗнчӗ.

Хăрах пуçлă çав тăшман,
Путсĕр хура çил-тăман,
Тытăнса тек тăрайман.
Çĕрелле вăл вăркăнать,
Хĕрхенмешкĕн йăлăнать.

Хайхискер, кунта çĕртен,
Пирĕн тусăмăр сунарçă
Уххине вăшт! туртса ячĕ,
Çил пек сирпĕнчĕ çĕмрен.
Пырса çапрĕ вăл хăватлăн,
Çĕмрен турĕ хăй ĕçне.
Пырса çапрĕ те салатрĕ
Лешĕн юлашки пуçне.

Ир те пулчĕ. Çут хĕвел
Шуса тухрĕ уй-хире.
Икĕ тус хăйхи пăхаççĕ,
Икĕ тус хăйхи кураççĕ:
Çĕрлехи çав усалăн
Пуçĕ пулнă ултавлă,
Çийĕ пулнă ылттăнран,
Купташки вара — тăмран.

Çапла Ирĕк Пусмăра
Çĕннĕ юнлă вăрçăра.
Икĕ пуçлă вăр-хурахсăр
Пĕтнĕ тет Хăрпан-патша та
Çакăн хыççăнах вара.
Икĕ тус татах та лайăх
Тытăннă, тет, пурăнма.

Çапла аслă ăмăрткайăк,
Ик пуçли мар, суйи мар,
Ылттăнлана ултав мар,
Çынна кӳнĕ ирĕклĕх,
Чуна кӳнĕ çирĕплĕх;
Сирнĕ асап-хурлăха,
Телей кӳнĕ халăха.
Ӳссе çитĕн, курăн эс,
Мĕнле пулĕ пурăнăç.

* * *

Юмахне мучи пĕтерчĕ,
Чĕртрĕ сӳннĕ чĕлĕмне,
Ункăн-ункăн вăл вĕçтерчĕ
Хăйĕн ырă тĕтĕмне.

Хветут тăчĕ. Унăн халĕ
Анлă хулĕсем çинче
Ăмăрткайăканни майлă
Çунат шăтнăн туйăнчĕ.

Икĕ аллине вăл сарчĕ,
Чăн-чăн ăмăрткайăкла,
Çил пек, вĕçнĕ пек чуптарчĕ
Малалла та тăвалла.

Ак вăл сăрт çине çитет те,
Янратать пур вăйĕпе:
— Курса юл, мучи, вĕçетĕп.
Паттăр ăмăрткайăк пек.

## 3. Шкулта.

Вăрçăсемпе хăрушă выçлăх
Шăллана, шелсĕр çавипе
Çĕршывăм тăрăх тухнă хыççăн —
Лăпланчĕ пурнăç майĕпен.

Анчах та тăлăхăн — Хветутăн
Пайтах-ха умĕнче асап.
Ĕмĕчĕпе кăна вăл тутă,
Çав ĕмĕт çутă та таса.

...Кĕр кунĕ çитрĕ. Çил хаяррăн
Килсе шаккарĕ çенĕке.
Пуçри çут ĕмĕт чĕннипе
Хветут кăçал тытма шутларĕ
Алла шур хут та кĕнеке.

Антив, сив çил туртса силлетĕр
Çĕр саплăк лартнă сăхмана.
Хветут халь шикленмест пĕрре те,
Шкула каймашкăн тумланать.

Шкул алăкне уçса хăюллăн
Ялан çӳренĕ пек кĕрет.
Шăв-шавпала шкул çурчĕ-тулнă.
Çурхи вĕлле пекех кĕрлет.

Кĕрет учитель. Куçлăх витĕр
Темле хăтăрас пек пăхать.
— Ачсемĕр, — тет, — шавлатăр
питĕ.
Вĕлле часах ак шăпланать.

Унтан учитель кăшт йăпатнăн,
Кăшт çирĕппĕн, кăшт вашават,
Ыйтма пуçлать ак: кам мĕн ятлă,
Мĕнле кашнийĕн хушамат.

Кунта ун куçĕсем Хветутăн
Куçĕсемпе тĕл пулсанах,
— Орлов, — тет лешĕ питĕ хыттăн,
Çаплах калать вăл, кулса мар.

Учитель ун çине вăрахăн
Пăхать хайхи, шăлт тĕлĕнсе.
Кунта çырма та вăл пăрахрĕ,
Ручки ун ӳкрĕ аллинчен.

„Мĕнле Орлов?“ — шутлать хăй тĕллĕн,
Шутлать те темĕскер кĕтет.
Ун ашшĕ пулнă çке — кам пĕлмĕ? —
Ялти чи ятсăр Мĕкĕте.

Унтан Хветутăн хура куçĕ
Кăшт та сикменнине кура,
Учитель çирĕппĕн те уççăн
„Орлов“ тесе çырса хурать.

Мĕнех вара — пул ăмăрткайăк, —
Шутлать учитель ăшĕнче.
— Хушамату питех те лайăх,
Хута хастаррăн вĕрен çеç.

Антив, — ача маттур эс, çивĕч, —
Чăвашăн пултăр хушамат.
Çапла Орлов Федот Никитич
Йыша пĕр танăн хутшăнать.

Ун чĕринче хай ăмăрткайăк,
Мучи юптарнă ыр юмах,
Кĕрсе вырнаçнă пурăнмалăх
Йăва хывса яланлăхах.

. . . . . . . . . . . . . . .

## 5. Ĕмĕт çунатланать.

Кĕрхи кунсен, тăванăм,
Хăйсен илемĕ тулăх,
Хăйсен юрри-кĕввийĕ,
Хăйсен тивлечĕ пур.
Кăнтăралла ял урлă,
Кикаклатса салхуллăн,
Ачалăх иртнĕ евĕр,
Иртет ав кайăк-хур.

Кайăк-хура ыр суннăн
Ав Омашне вăрманĕ
Варкăштарать сар тутăр —
Тăкать сар çулçине.
Çак ир вара Хветутăн
Ачалăхĕ ăсаннă,
Хăюллă яшлăх кĕнĕ
Ун уçă чĕрине.

Пĕрре çуралнă ĕмĕт
Паман пĕрре те канăç:
Вăл ăмăрткайăк майлă
Çӳренĕ тӳпере.
Военкомат калană:
— Ĕмĕтленни — аван ĕç.

Сывлăш флотне сăмахсăр
Илме пулать сире.

Çав самантрах Орловăн
Икĕ çунат — ик çулăм
Хăватлăн ӳссе ларнă
Ик хулпуççи çинче.
Киле вăл, çулсăр мĕнсĕр,
Вĕçтернĕ уй-хир урлă;
Ăна пăхса йăл кулнă
Кĕрхи кĕрен тĕнче.

Чарусăр шухă çил пек
Киле çитсе кĕрсессĕн,
Вăл амăшне çĕкленĕ
Тĕреклĕ аллипе.
— Анне, анне, аннеçĕм,
Анне, чухлатни эсĕ,
Эпир часах вĕçетпĕр
Чăн ăмăрткайăк пек.

Анчах мăнтарăн амăшĕ
Пĕр савăннă, хурланнă, —
Тем çуннă ун, вăркана

Яланхи пек шалтан.
Салтак валли вăрахăн
Вăл кутамка пуçтарнă,
Тирпейлĕн хатĕрленĕ
Сухарипе шăрттан.

Ун ывăлĕ çын пулчĕ —
Ку питĕ пысăк савнăç.
Анчах паян сасартăк
Ăсатмалла инçе.
Юлташĕсем пуçтаранчĕç,
Ыталанса юрларĕç
Çӳлти çут çăлтăр витĕр
Çул куранни çинчен.

Хисеплĕ председатель
Часах ак кӳлсе килчĕ
Колхозăн çил çунатлă,
Кăвар пек айрине.
— Сывпул, тăван Ямашăм!..—
Кĕрхи чарусăр çил çеç
Кервен урапа хыççăн
Хир тăрăх вирхĕнет.

— Сывпул, тăван уй-хирĕм!
Сывпул, тăван ял-йышăм!
Сывпулăр та пур пулăр,
Хĕрсем те каччăсем!
Сывпул, Якур мучиçĕм,
Мухтав сана иртнишĕн,
Çухалмĕç нихăçан та
Эс чĕртнĕ юмахсем.

Юртать тур ут çул тăрăх,
Ун капăр çилхи витĕр
Çĕр çитмĕл çичĕ саслă
Хаваслă çил вĕрет.
Хĕрсем сулаççĕ тутăр:
— Сыв пулăр, лайăх çитĕр,
Анчах таçта çитсен те
Ан манăрсам пире!

Сана ăсатма тухнăн,
Вĕçĕ-хĕррисĕр, шутсăр
Çул хĕрринче тăраççĕ
Колхоз çĕмелĕсем.
Ав Омашне вăрманĕ
Варкăштарать сар тутăр,
Пусне таять мăнаçлăн
Тур йăвăр юртнăçем.

Сывпул, тăван çĕршывăм,
Сывпул, тăван кĕтесĕм!
Лашам, утсам, васкавлăн,
Çитес çĕре çитсем!
Ĕнтĕ, тăван çĕршывăм,
Сан ывăлна кĕтеççĕ
Чи аслă та чи паттăр
Ĕçсем те ĕмĕтсем.

Хăюллисем — вĕçеççĕ,
Хăравçисем — ӳкеççĕ,
Чăн малтанхи урок ку,
Чăн малтанхи сăмах.
Тĕпче хăвна, тăванăм,
Пулас тесен вĕçевçĕ —
Хăюллисен йышне эс
Кĕрес тесен чăнах.

Кам нăрă пек аранăн
Йăраланма çуралнă,
Ăншăртлансах ăмсантăр —
Вĕçме пултараймасть.
Орлов çакна вуланă.
Орлов çакна ăнланнă.
Вăл туйнă — ун чĕрийĕ
Вĕçме кăна хавас.

Юмахпала çуралнă
Хăватлă ăмăрткайăк
Ун чĕринчех çӳренĕ,
Вăл пулнă хăй — чĕре.
Чĕри ăна сĕкленĕ:
— Сана эп илсе кайăп
Чи харсăр кайăкран та,
Тăванăм, çӳлерех...

Анчах малтан Орловăн,
Чи тимлĕ шкул ачи пек,
Ларсах вĕренме лекнĕ
Вĕçев теорине.
Районсем — кайăк пулсассăн,
Икар — вăл пулнă чĕпĕ, —
Çапла пин çул этемлĕх
Вĕçмешкĕн вĕренет.

Пин-пин çул ĕмĕтленнĕ,
Çуратнă пин легенда,
Икар хăй те çӳренĕ
Легендăра кăна.
„...Халь эс вĕçен, çапах та
Пĕр штопăра лекен те
Унтан тухаймасассăн
Пуç-хĕрлĕ вăркăнан".

Çапла çырать Орловăн
Пĕрле ларан юлташĕ
Хăй умĕнчи сар питлĕ
Таса тетрадь çине.
„Штопор тени вăл тĕрлĕ, —
Мĕнли çинчен каласшăн? —
Пĕр тĕрлипе уçăççĕ
Эрех кĕленчине".

Çапла Орлов та çырчĕ,
Кулмасăр çырчĕ, çирĕп,
Хăйĕн кулăшларах та
Ытарлă ответне.
Çапла кунсем иртеççĕ.
Герой ман кунĕн-çĕрĕн
Васкать канма пĕлмесĕр
Çитме хăй ĕмĕтне.

Часах, часах вăл ака
„У-2" çине те ларчĕ,
Инструкторпа пулсан та —
Çапах вăл сывлăшра.
Мухтав, этем ăс-тăнĕ!
Мухтав, этем хăвачĕ! —
Иртни те аса килчĕ.
Ăна çак хушăра!

Ытла та мĕскĕн пулнă,
Никам пĕлмен кĕтӳçĕ;
Куççулĕ витĕр пăхнă
Çӳлти хăлат çине.
Çĕршыв ăна çĕклерĕ,
Халь акă çул яр-уçă,
Халь тӳперен сăнать вăл
Мĕнпур çут тĕнчене.

Часах Орлов хăй тĕллĕн
Вĕçме пуçларĕ лайăх,
„У-2" кăна пулсан та
Çунатлă вăл çапах.

Çапла çунатне сарчĕ
Пĕр çамрăк ăмăрткайăк,
Çапла çӳре пуçларĕ
Ĕмĕтленен çулпа.

Ун чух çĕршывăм хăй те
Тинреххĕн çунат сарнă,
Çитĕнекен хăвачĕ
Хăпарнă кĕрлесе,
Челюскинçăсен чапĕ
Тĕнчипеле янранă,
Тĕнче умне çĕкленнĕ
Пĕрремĕш геройсем.

Унтан Валерий Чкалов,
Пĕрремĕш çиçĕм евĕр,
Тĕтре витĕр çул хыврĕ
Çулпуç маршручĕпе.
Унтан шур полюс урлă
Америка вĕçетпĕр,
Полюсалла кĕретпĕр
Чи аслă хуçа пек.

Хăюллă вĕçевсен тапхăрĕ —
Мухтавлă, чаплă тапхăр.
Кашни ун чух çӳренĕ
Хăй майăн çунатпа.
Пĕр-пĕр сăвăр пек лăпкă
Вăрмантрестри бухгалтер
Вышка çинчен чăмтарнă
Сенкер парашютпа.

Кашни йĕкĕт шутланă
Пулмашкăн истребитель,
Яш-кĕрĕмре çӳренĕ
„Хурчка" сăмах кăна.
— Хурчка, — тенĕ Орлов та, —
Хурчка аван вăл пит те. —
Анчах та урăххийĕ
Канăç паман ăна.

Хурчка аван вăл питĕ.
Çапах та ăмăрткайăк
Мĕн пĕчĕкрен çуралнă
Орловăн чĕринче.
Начальнике калать вăл:
— Бомбовозпа эп кайăп.
Унпа епле пулсан та
Вĕçме пулать инçе.

## 6. Чӑваш ачин ҫулӗ.

Чӑваш ачи, сассуна пар!

*Ҫеҫпӗл Мишши.*

Хӑватлӑ марш. Вӗҫевҫӗсем маттур.
«Чӗремӗр пирӗн ҫуламлӑ мотор...»
Шкултан тухса ҫӗн ӗмӗт-шанчӑкпа
Орлов вӗҫет бомбардировщикпа.
Тӑват мотор, ик сарлака ҫунат, —
Тӑван ҫӗршыв ӑна ыр ҫул сунать:
Хӑюллӑ ҫул, инҫе те ҫӳллӗ ҫул, —
Ҫав ҫул ҫинче эс пысӑк паттӑр пул!
Ҫав ҫулпала эс ирӗклӗн ҫӳре.
Эс ху хуҫа ҫак аслӑ тӗнчере.

Орлов вӗҫет. Ҫуралнӑ вӑл вӗсме:
Пӗр вӗҫӗнчен тухать тепӗр вӗҫне.
Енчен-енне виҫет ҫӗршывӑма,
Ӗмӗтленет ҫӗнӗ ҫулсем хывма.
Вӑл кӑнтӑрти хӗвелпеле васкать
Ҫитме часрах пӑрланнӑ Мурманска.
Шур ҫӗлӗклӗ мухтавлӑ Кавказа
Вӑл урлӑ-пирлӗ ҫичӗ хут каҫать.
Пӑрпа та, ҫумӑрпа та ҫапӑҫать,
Балтикӑран тухать вӑл Тухӑҫа.

Вӑл Ази урлӑ вӗҫнӗ чух пӗр ир,
Кӗтсе илет ӑна тӑван Памир.
Малтанхи хут кунта вӑл — аякра —
Курӑнӑҫать хай ӑмӑрткайӑкпа.
— Аван и, тусӑм, ӗмӗтри тӑван?
Мӗнле пурнан, ӑҫта эс ҫул тытан?
Хай аслӑ кайӑк, тем ӑнланнӑ пек,
Варкӑштарать хӑлаҫ ҫунаттипе.
Юласшӑн мар паян вӑл намӑса,
Орловпала вӗҫет вӑл ӑмӑртса.

— Вӗҫ, вӗҫ, хӑватлӑ тусӑмҫӑм, кӗрле!
Ҫитес ҫӗре часрах ҫитер пӗрле.
Хастаррӑнрах эс сывлӑша кассам,
Пире чӗнет юнпа вӗрен Хасан.
Вут-ҫулӑм хыпнӑ ҫапӑҫу хирне
Пире тӑван ҫӗршывӑмӑр чӗнет.
Анчах та ӑмӑрткайӑк пит хуллен
Вӗҫет, ҫынпа ӑмӑртаймасть иккен,
Ырӑ сунса ҫунаттипе сулать,
Вӑл Орловран инҫе тӑрса юлать.

— Сывпул эппин эс, сывлӑшри тӑван!
Ҫӗнтерӳпе эп таврӑнӑп ыран.
Сан чыслӑхна та санӑн йӑвуна,
Эп, тусӑм, памӑп сӗмсӗр тӑшмана.
Сывпуллашса вӗҫевҫӗ ӑсанать
Ҫапла хӗрӳллӗ, юнлӑ Хасана.
Ҫитес ҫӗре ҫитет те вӑл ирех
Харсӑрланса ҫапӑҫӑва кӗрет.
Тӑшман ҫине вӑл вилӗм ҫеҫ ярать.
Ҫапла чӑваш хӑй сассине парать.

Ҫапла вӑл малтанхи ҫапӑҫура
Хӑйӗн вӑйне тӗрӗслесе курать.
Тепӗр ҫултан ун йывӑр та шултра
Бомбийӗсем ӳкеҫ Халхин-Голра.
Сыхлать Орлов тӑван ҫӗршыв чысне,
Вӑл шанчӑклӑн тӑвать хӑйӗн ӗҫне.
Ӑҫта Орлов пырса ҫапать хастар,
Унта вара тӑшманшӑн пурнӑҫ мар.
Ӑҫта Орлов юррийӗ илтӗнет,
Унта ҫӗршывӑн чапӗ ҫӗкленет.

Иртеҫ кунсем. Тӑван ҫӗршыв тавра
Тӗнче вӑрҫи тискер ҫилне ҫаврать.
Орлов васкать Хӗвеланӑҫнелле,
Ҫитес ҫӗре татах ун ҫитмелле.
Ун вӗҫмелле питех те аякка,
Татах курать вӑл ӑмӑрткайӑка.
Варкӑштарса хӑлаҫ ҫунаттипе
Леш саламлать ӑна ҫӗнтерӳпе:
— Салам сана, ҫут ҫӑлтӑрлӑ ҫунат,
Тупнӑ ҫулна нихҫан та ан ҫухат!

Тусӗпеле сывпуллашса хавас,
Орлов васкать. Ун чӗринче приказ.
Ҫут тӳпере мӑнаҫлӑн кӗрлесе,
Пӗр тикӗссӗн ӗҫлеҫҫӗ моторсем.
Ҫунат ҫинче ик ҫӑлтӑр ҫӗклесе,
Орлов вӗҫет. Чӗнеҫҫӗ тӑвансем.
Аван чухлать вӑл — ирӗклӗх мӗскер, —
Чӑваш ячи, хӑй мӑшкӑл тӳснӗскер.

Çампа вăл ăмăрткайăк пек çӳрет.
Тăвансене телейпе чыс кӳрет.

Çав кĕркуннех, пĕр тĕксĕм каçхине,
Тăшман сикет тăван çĕршыв çине.
Орловваскать. Вĕçет Çурçĕрелле.
Тăшман усал. Ăна пĕтермелле.
Орлов хаяррăн бомбăсем такать,
Тăшман чăмать пуç-хĕрлĕ шăтăка.
Белофиннсем вара çавăн чухнех
Хыпса пăхаç Орлов куччеиеçне.
Çапла, çав сулхăн Çурçĕрте вара
Чăваш татах хăй сассине парать.

Орлов вĕçет. Татах çулсем хывать,
Унпа çӳрет вут-çулăмлă хăват.
Çут тӳпере мăнаçлăн кĕрлесе,
Пĕр тикĕссĕн ĕçлеççĕ моторсем.

Çĕршывăма чыспа мухтав кӳрсе,
Çунатсенчен çиçеççĕ çăлтăрсем.
Вăл Балтика таврашĕнче вĕçет;
Ăçта çитет, унта телей çиçет.
Часах Эстони—Латви—Литвара
Чăваш ачи хăй сассине парать.

Часах хĕн-хурлă Бессарабире
Çынсем кĕтсе илеççĕ çут ире.
Орлов унта хăй çунатти çинче
Илсе пырать телейлĕ çĕн тĕнче.
Аван чухлать вăл — ирĕклĕх
мĕскер,
Чăваш ачи, хăй мăшкăл тӳснĕскер.
Çампа вăл ăмăрткайăк пек çӳрет,
Тăвансене телейпе чыс кӳрет.
Чăваш ачи ăçта вĕçсе пырать,
Унта вăл хăйĕн сассине парать.

## 7. Тӳлек те лăпкă каç.

Орловăн тусĕ—Николай Гастелло,
Ăна Орлов тăван пек юрататъ:
Анчах та ун юлма лекет хăй тĕллĕн,
Куçать Гастелло урăх отряда.

Хăй кайнă чух вăл хăйĕн отрядне те,
Самолётне те Орлова парать.
— Шанатăп,—тет,—сана аван пĕлетĕп,
Санах пулать çак ăслă аппарат.

Умра тăрать тăват моторлă улăп,
Ăна Гастелло лăпкăн ачашлать.
— Учитель,—тет Орлов,—тивлетлĕ
пулăп,
Тупа тăватăп,—тет вăл чăвашла.

Гигант машинăн çӳллĕ фюзеляжĕ
Çине кăвак сăрпа, ăста алпа
Кĕрнеклĕ „2“ çырнă. Çампа мар-ши
Ăна кунта кашни пилот паллать!

Мухтавлă улăп—„Голубая двойка“,
Ăна çапла чĕнеççĕ отрядра.
Самант канма вырнаçнă ăмăрткайăк—
Вăл лăпкăн çеç асфальт çинче тăрать.

Мăнаçлă вăл,—эсир ăна курасчĕ,—
Гастелло уйрăлать кăшт хурланса.

Халь ĕнтĕ вăл—çăмăл
бомбардировщик,—
Килкелĕп, тет вăл, вăхăт тупăнсан.

Унăн отрячĕ кӳршĕре вырнаçнă.
Вăл—командир. Вăл час-часах унтан
Орлов патне килсе каять ир-каçăн,—
Тусĕсене манмасть-мĕн капитан.

Ку шăматкун каç выртмаллах вăл
юлчĕ;
Тусĕсемпе калаçмалли нумай.
Çуллахи каç тӳлек те лăпкă пулчĕ:
Сăмах та шурĕ вăхăт шунă май.

Вĕсем çемçе çерем çинче выртаççĕ,
Аэродром сывăхĕнчех вĕсем.
Чӳхенкелет асамлă июнь каçĕ,
Хуллен кăна çунаççĕ çăлтăрсем.

— Тусăмăрсем, тĕнче тӳпи пит çӳллĕ,
Мĕн чухлĕ çул вĕçевсĕн уçмалла!—
Çӳле пăхса çапла калать Гастелло,
Шухăшĕпе каять вăл малалла.

—Эпир, тет вăл, тин çеç-ха çунатланнă,
Пирĕн ĕçсем халь пĕтĕмпех умра.
Валерий Чкалов, тусăмсем, шутланă
Вĕçсе тухма çĕр чăмăрĕ тавра.

Тусемпе тинĕссем, пур океансем
урлă—
Вĕçевçĕн çулĕ вĕçĕмсĕр инçе.
Этем телейĕшĕн çул хыв, пилот,
хăюллăн,
Этем телейлĕ пултăр çĕр çинче.

Хăш чух çапла шутлан та тĕлĕнетĕн:
Мĕн ĕмĕртен çĕрте таптаннисем,
Эпир, паян çӳле, çӳле çĕкленнĕ,
Пире паян—мухтавпала хисеп.

Унтан Гастелло çаврăнчĕ сасартăк
Орлов енне:—Чăваш ачи, кала,
Совет çĕршывĕ пулас мар-тăк,
Çак самантра ăçта эс пулмалла?

Эс халь, гигант караппала çӳретĕн,
Эс сывлăшра çĕнĕ çулсем уçан,
Сан ĕмĕтсемшĕн чăрмав çук
пĕрре те,
Ăçта пыратăн, эс унта хуçа.

— Эп хам та,—тет Орлов кăштах
хумханнăн,—
Шутлатăп халĕ çавăн çинченех,
Эп тĕттĕм çĕрпӳртрен тухса хăпарнă
Çак вĕçсĕр аслă, çутă тĕнчене.

Ман халăх ĕмĕр мăшкăлра таптаннă,
Юмах кăна йăпатнă халăха.
Халь ак куран, эп те çынах, тăванăм,
Вĕçме те эп вĕçетĕп лайăхах.

— Çапла, Федот, çапла, юлташăм,
тусăм,—
Гастелло тăчĕ, пăхрĕ тухăça.
Ĕнтĕ çĕкленнĕ çутă шурăмпуçĕ,
Ĕнтĕ çут ир хăй илемне уçать.

Инçе те мар самолётсем тăраççĕ.
Тӳлек те шăп аэродром çинче.
Çапла иртет июнĕн кĕске каçĕ,
Ытла тӳлек пек туйăнать тĕнче.

— Çапла, Федот,—тет Николай
Гастелло,—
Анчах та çак телейлĕ пурнăçа

Сыхламалла. Ку вăл кашниншĕн
паллă.
Тен, çакăншăн тухма лекет вăрçа.

Тăрать Гастелло. Паттăр улăп евĕр
Вăл курăнать çут шуçăм çуттинче,
Вăрçă ултавлăн килессе кĕтмесĕр,
Çут тĕнчепе тăрать вăл киленсе.

Анчах хĕвел тухса ĕлкĕреймерĕ...
Кам килчĕ ку? Сасси хамăрăн мар.
Хура хĕреслĕ самолёт тискеррĕн
Пуç тăрринчех пуçларĕ явăнма.

Малтан ларма хăтланнă пек кăтартрĕ,
Явăннă май кăларчĕ шăççине.
Унтан сасартăк вут тăкма пуçларĕ
Тӳлек ларан самолётсем çине.

— Ниушлĕ вăрçă? Ку—çăхан-
разведчик?
Вĕçевçĕсем выртаççĕ çĕр çумне.
Гастелло çеç çил-тăвăл пек вĕçтерчĕ
Вут айĕнчи самолётсем патне.

Стрелок-радист кабинине вăл кĕчĕ.
Хурах пек явăнан çăхан çине
Кăларса ячĕ пулемёт черечĕ,
Вут тăкрĕ, печĕ лектеричченех.

Çăхан чĕтренчĕ, сывлăшра кисренчĕ,
Тарма шутларĕ, туртăнчĕ çӳле.
Унтан вара вăрахăн та хуллен çеç
Çăхан шăва пуçларĕ çĕрелле.

Ун çумĕнчен ав хăпрĕ тĕксĕм михĕ,
Çав михĕ сарчĕ симĕс парашют.
— Парашютпа сикесшĕн йытă йăхĕ.
Халь-хаççĕнех ун çук мĕн вилес шут!..

Çав ирсĕр йытă пулнă мĕн разведчик.
Алла лексессĕн, допроса çитсен:
— Кăтартăр, кам мана персе
ӳкерчĕ?—
Тесе вăл ыйтнă пирĕннисенчен.

Хăйне вăл питĕ сĕмсĕр тыткаланă;
Ун кантăк евĕр сивĕ куçĕсем

Хăйне ӳкерне харсăра шыранă,—
Шартах вăл сикрĕ капитан кĕрсен.

— Эп вĕçнĕ Франци урлă, Бельги
çийĕн,
Эп пулнă аслă Лондон çийĕнче,
Анчах телей кӳмерĕ-мĕн Россия,
Вĕçленчĕ çул пĕрремĕш кунĕнчех.—

— Çитет, фашист!—ăна Гастелло
пӳлчĕ.
Кантăк куçсем те шăнчĕç
самантрах.

...Пуçланчĕ вăрçă. Пирĕн çилĕ тулчĕ.
Çĕршывăмăр пуçтарăнчĕ фронта.

Орлов та çакрĕ бомбă ярăм-ярăм
Тăват моторлă улăпĕ çине.
Тĕттĕм пулсан хăватлăн тухса карĕ
Тин çеç пуçланнă çапăçу хирне.

Халь Орлова сасартăк аса килчĕ
Тахçан, ыйткаласа çӳревĕ чух,
Ун аллине кулак пăрахнă чул.
Хĕврех пек вăл. Ăна алла эс ил те—
Тăшман пуçне пĕр шелсĕр çапса çур!

## 8. Гастелло ĕçĕ.

Вăл аслă кун пулчĕ. Вăл кун ирхине
Çĕршывăм итлерĕ çулпуç сăмахне.

Çулпуçăмăр чĕнвĕ:—Туссем,
тăвансем,
Вăрçа тухăр, пурте карах çĕкленсе!

Пире сĕмсĕр нимĕç тăвасшăн чура,—
Аркатăр ăна юнлă çапăçура.

Пире хавшатаймĕ 'нимле йывăр çул,
Эпир—ирĕк халăх, чура пулас çук.

Çакна пĕтĕм халăх итлерĕ тăрса.
Çав ир тухса кайрĕ Гастелло вăрçа.

Кĕрлет ик моторлă хăватлă хăлат,
Гастелло çул тытрĕ фронт урлă
тыла.

Çĕршывшăн, çулпуçшăн сыхла тивĕçе,
Пĕр шелсĕр пĕтер эс тискер нимĕçе.

Фашист вăр-хурах пек килет çаратма,
Асса иртĕхмешкĕн ăна парас мар.

Эпир тунă пурнăç, ĕçленĕ хĕрсе,
Эпир тунă аслă цехсем, корпуссем.

Авал пуш-хир тăрăх çил чупнă
çĕрте—
Эпир тунă çутă телейлĕх çуртне.

Тин çеç çунат сарнă хăюллă этем'
Пăхса çитĕнтерчĕ таса ĕмĕтсем.

Эпир никама та тивме шутламан,
Анчах килсе çапрĕ ултавлă тăшман.

Паян çавăнпа та Гастелло хаяр;
Пĕр шухăш кăна ун: çапар,
аркатар!

Çапар, аркатар йăлт усал тăшмана,
Тискер нимĕçе пултăр вилĕм кăна.

Ак бомбардировщик колонна курать,
Тăшманăн обозĕ таçтан тăсăлать.

Гастелло васкавлăн унта çул тытать,
Анчах ăна нимĕç часах асăрхать.

Тăшман асăрхать те пеме тытăнать,
Сехри хăпнă нимĕç перет хыттăнах.

Гастелло та хирĕç вутпа вăтăрать.
Анчах, чим, мĕн пулчĕ хăрах мотора?

Тăшманăн снарячĕ лекрĕ тӳрех.
Машина кисренчĕ... çулăм кĕрлет!

Нумай шутламашкăн халь вăхăт
та çук,
Калла таврăнмашкăн ытла вăрăм
çул.

Сикес парашютпа—вара халь тинех
Пит çăмăл лекетĕн тăшман аллине.

Çук, паттăр Гастелло хăравçă çын мар,
Çĕршывшăн вăл хатĕр вутра та çунма.

— Çапах та, вăй-халăм, часах эс
ан чак!
Вилсен те, çунсан та, çĕршывшăн
анчах.

Çапла шухăшларĕ Гастелло герой.
Ун шухăшне илтрĕ вăрман та хир-уй.

Ёçне унне курчĕ çĕршывăмçăм ман.
Вутне унне лайăх тутанчĕ тăшман.

Çапах та, вăй-халăм, часах эс ан чак!
Вилсен те, çунсан та, пĕр тупсăм
анчах.

Çак шухăш çĕклерĕ герой чĕрине.
Гастелло çул тытрĕ колонна çине.

Пуçлать вăл колоннăн кайри вĕçĕнчен,
Вут-çулăм хÿрийĕ шăвать хыçĕнчен.

Машина-комета шăвать те шăвать,
Вут хыпнă бензин вăл баксенчен
сапать.

Вăраннă хаярлăх, вут-çулăм хÿри
Тăшманшăн—хăрушă, тăшманшăн—
вĕри.

Гастелло пĕр шелсĕр шăвать те
шăвать,
Ун хыççăн хăватлă вут йĕрĕ юлать.

Пур автоцистерна, бензин пичкисем.
Сиксе сирпĕнеççĕ герой пынăçем.

Шартах шартлатаççĕ снаряд-
бомбăсем,
Машина-комета вут-хĕм тăкнăçем.

Çĕршывшăн, çулпуçшăн сыхла тивĕçе;
Пĕр-шелсĕр вĕлер эс, пĕтер нимĕçе!

Вĕçленчĕ колонна, малта ав танксем,
Машина-комета, унта эс çитсем!

Мĕнле вăй-хăват халь чарайтăр ăна!
Гастелло çитет те унта тăрăнать.

Танксем сирпĕнеççĕ, çурлаç
снарядсем.
Вутра вĕтĕнеççĕ çĕлен-калтасем.

Герой аçа-çиçĕм пек çĕр çĕмĕрет.
Гастелло-комета кĕрет ĕмĕре.

Кунсем çиççе иртĕçĕ, иртĕ пин çул,
Гастелло чĕри нихăçан сÿнес çук!

## 9. Ку—таварý каçĕ мар-ха...

И если капитан Орлов
Летит в туманной мгле,
Его карающая тень
Проходит по земле.

*Мих. Матусовский.*

Ирхине Информбюро пĕлтерчĕ
Çулăмлă кĕске хыпар фронтран.
Улăп пек, тĕнче умне çĕкленчĕ
Николай Гастелло—капитан.

Çав хыпар Федот Орловшăн пулчĕ
Çурхи вăйлă аслати пекех.

Ун чĕри хаярлăхпала тулчĕ,—
Куççуле хаярлăх типĕтет.

Çапăçма чĕнет Гастелло ячĕ.
Ун кăварĕ—пирĕн чĕрере.
Орлов хăйĕн отрядне пуçтарчĕ:
— Таварма каятпăр кĕçĕрех!

Кусӗнче ун—пӗрмаях Гастелло,
Ун сӑнарӗ, унӑн ӗҫӗсем.
Унӑн пӗвӗ улӑп пек, хӑй тӗллӗн
Усӗнет чӗр шухӑш ӳснӗҫем.

...Халь кӑначчӗ питӗ лӑпкӑ касчӗ,
Вӑйлӑ тӑвӑл тухрӗ ирхине.
Капитан ҫав ир персе антарчӗ
Фашистсен пӗрремӗш ҫаханне.

Ун чухне Гастеллӑна каларӗҫ:
— Аллу ҫӑмӑл пултӑр, капитан!
Эс пуҫартӑн тӗрӗс те хаяр ӗҫ,
Пирӗн ҫилӗ пырӗ санпа тан.

Эс татах та чаплӑрах ӗҫ турӑн,
Вилӗмсӗр учитель, командир.
Сан ятна асра тытса, сатуррӑн
Тӑшмана аркатӑпӑр эпир.

— Хатӗрленӗр, бомба ан хӗрхенӗр!—
Орлов пачӗ отряда приказ.—
Фашистсемшӗн кӗҫӗр ҫӗр кисрентӗр,
Тамӑкри пек ҫунса тӑтӑр кас.

Ак Орлов та Локтионов, Сушин
Виҫӗ паттӑр—виҫ самолётпа,
Тухса кайрӗҫ—командиршӑн, тусшӑн
Тӑшмана пӗр шелсӗр аркатма.

Паттӑрсем фронт урлӑ ҫул тытаҫҫӗ.
Тӳперен пӑхатӑн та—ҫӗрле
Пирӗн чаплӑ хуласем ҫунаҫҫӗ,
Вӑрҫӑ пӗтӗм таврара кӗрлет.

Ой, ҫӗршыв, сана эпир ӳстернӗ,
Пайтах тӑкнӑ саншӑн юнпа тар.
Килсе тапӑнчӗ тӗнче эсрелӗ,
Нимӗҫ кӳчӗ вилӗм те пушар.

Улӑпсем пек хуласем пӗтеҫҫӗ,
Тӑшманпа хаяррӑн ҫапӑҫса.
Анчах пирӗн хуласен тивлечӗ
Ӗмӗр юлӗ ҫутӑ та таса.

Ҫав тивлетшӗн, ирӗклӗхшӗн, чысшӑн
Виличчен тӑма сӑмах парса,
Ак Орлов та Локтионов, Сушин
Тухрӗҫ ҫакӑ ҫӗрлехи рейса.

Виҫӗ тусӑн, виҫӗ капитанӑн
Кӑкӑрта ҫунса тӑрать пӗр ят:
Вӑл Гастелло ячӗ—чӗр суранӑн
Кашниннех чӗри ҫинче выртать.

Ак вӗсем тӗллев патне тухаҫҫӗ.
Аялтан чӗнмеҫҫӗ халлӗхе.
Тӑшман шӑппӑн пытанса юласшӑн,
Ҫӗре сӑхса выртнӑ сӗлӗх пек.

Нумаях тӳсейӗн-ши эс, сӗлӗх,
Шарламасӑр?—
Нимӗҫ нервине
Ҫиелтен тӗрӗслесе пӗлмелӗх
Орлов ярса пӑхрӗ бомбине.

Ҫӗр чӗтренчӗ. Юрӗ, начар мар ӗҫ!
Мӗн хӑтланӑр-ха тепрер лексен?..
Ак хайхи йытла вӗрме пуҫларӗҫ,
Вут вӑрса тӑшман зенитксем.

Ме эппин татах! Пуҫу кисрентӗр!
Нерву санӑн, курӑпӑр, мӗнле!
Хыпашлать ак вун-вуник прожектор
Тӳпене, тискер эрешменле.

Ялкӑшать ҫӗрте халь ӗнтӗ ҫулӑм,
Ялкӑшаҫҫӗ ориентирсем.
Вилӗм ҫеҫ ташлать ӗнтӗ хӑюллӑн
Тӑшмана ҫӗрпе, вутпа ирсе.

Йӗркерен прожекторсем сӳнеҫҫӗ.
Ҫутатать пушар ҫеҫ таврана.
Лётчиксен хаяр та селӗм ӗҫӗ
Ал лаппи ҫинчи пек курӑнать.

Нимӗҫсемшӗн ҫитрӗ тамӑк касӗ,—
Такӑр ҫул сире леш тӗнчене.
Паттӑрсем ҫӳлтен пӑхса шутлаҫҫӗ
Ҫулӑм хыпнӑ самолётсене.

Хисеплеҫҫӗ, татах вут тӑкаҫҫӗ,
Пӗт эс, нимӗҫ, вӗтӗнсе хуплан!
Фашистсен машинисем ҫунаҫҫӗ
Ҫӗр ҫинче пӗр утмӑл та ытла.

— Кур, Гастелло! Эпир, тусӑм,
саншӑн
Ҫутрӑмӑр ҫав ҫут ҫуртасене.

Халлĕхе ку пултăр-ха пуçламăшĕ.
Вĕчĕ кăмăл малалла чĕнет.

Тăкăр бомбă! Вирлĕнрех пăрахăр!
Тоннăшарăн тăкăр пĕр тăрук!
Ку вăл халĕ тавăру касĕ мар-ха,
Тин пуçланчĕ хаяр тавăру!
. . . . . . . . . . . . . . .

## 13. „Кăвак дивизи".

Хăш чухне вĕçевçĕн ĕçĕ—
Мыскаралла ялала.
Темĕнле „Кăвак дивизи"
Çитнĕ, терĕç, пĕр яла.

Мĕнле çар вăл? Мĕн амакшăн
Килнĕ пирĕн çĕршыва?
Мĕн шырать вăл, мĕн тупасшăн?
Тата мĕншĕн вăл „кăвак?"

Орлова штаба чĕнтерчĕç;
Ĕç пырать кунта кал-кал.
— Çавсене кăшт тĕрĕслесчĕ,—
Терĕ пирĕн генерал.

— Ăнланан, Орлов, хăвах эс,
Мĕн пирки сăмах пырать:
Чăнахах-и, кăваках-и?
Кăвак мар-тăк, кăвакарт.

Çав дивизи килнĕ, имĕш,
Хай Испани çĕрĕнчен.
Шăлса пухнă ăна нимĕç
Мĕнпур пек хупахсенчен.

Йĕксĕксем çурран танккана,
Тунă питĕ пысăк марш.
Вĕсене халь кирлĕ „канăç",
Мĕншĕн „канăç" парас мар!

— Хатĕрлен, Милостивенко,—
Орлов чĕнчĕ штурманне.—
Эпĕ карапа тием-ха,
Тием вырăс „кавăнне".

Леш „кăваккисем" халь путнă
Питĕ тутлă ыйăха.
Халь те тутлă, тата тутлă,
Тата тутлă пулĕ-ха.

Таçтан лĕтчикăн вăраннă
Çак „линкка-линкка" кĕвви.
Çав юрра юрланă майăн
Сисĕнмен те хĕл сивви.

„Вăрăм çулра ырнă хыççăн
Сире „канăç" кирлĕ.
Юрĕ, юрĕ, пырса хыçăп,
„Канăç" пулĕ вирлĕ.

Сивĕре пит ĕнтĕркерĕн—
Ăшăнма вут ырă.
Ытлашши нумай кĕттермĕп,
Вут тиесе пырăп".

Лешсем тутлă ыйăх витĕр
Çак кĕвве, паллах, илтмен.
Вырăс шартлама сивви те
Вĕсене пўртре витмен.

Халь вĕсемшĕн—вырăс ан кил,
Ан татах ыйхисене.
Тĕлĕкре çап-çутă ангел
Ачашланă вĕсене.

Анчах „ангел"—тăват моторлă,
„Голубая двойка" вăл!
Кĕрлесе касать фронт урлă,
Çĕклет вăйлă çил-тăвăл.

Ку—Гастелло самолĕчĕ,
Ăна пĕтĕм фронт паллать.
„Голубая двойка", теççĕ,
Вĕç сатуррăн малалла.

Хăш чухне вĕçевçĕн ĕçĕ
Чиперех тĕлĕнтерет:
Çĕр çинче—„Кăвак дивизи":
„Кăвак двойка"—тўпере.

Çитменне тата тўпи те,
Касе, юрĕ те кăвак.
Кăн-кăвак çăнталăк витĕр
„Кăвак двойка" çул хывать.

— Ну, мĕнле, Милостивенко?—
Орлов ыйтрĕ штурманран.
— Тĕллеве кăшт ҫитеймен-ха,
Ҫапла тӳр тыт, капитан.

Ответ пачĕ ҫамрăк штурман,
Вăл нихҫан та йăнăшман.
Унпала ĕҫре шар курмăн
Эс, юлташăм капитан!

Орлов хăй те питĕ лайăх
Тавҫăрать кунти ҫула.
Ҫĕрлехи ҫак ăмăрткайăк
Кунта вĕҫнĕ-ҫке чылай.

— Эх, декабрь питĕ капăр,
Штурман, пăхсам ҫĕрелле.
— Капитанăм, ҫывхаратпăр,
Ял ҫине халь кĕмелле.

Моторсем ҫакна ăнланнăн
Пусараҫҫĕ кĕрлевне.
Самолёт хайхи вăраххăн
Шăвать лăпкă ял тĕлне.

Ҫĕр шăпах. Пĕр чĕрĕ чун та
Ҫук пек пĕтĕм тĕнчере.
Вилĕм тĕсĕ ҫапнă, чăн та,
Тăшман пуснă ҫак ҫĕре.

Кăн-кăвак тăрать ҫанталăк,
Кăн-кăвак тăрать тӳпе.
Ăсатать Орлов малтанлăх
Пилĕк бомба—йĕркипе.

Ответ ҫук-ха. Бомбăсем ҫеҫ
Ҫурăлаҫҫĕ, кĕрлесе.
Вулккан тапнăн ҫĕр кисренчĕ,
Тăр-чĕтренчĕҫ ҫăлтăрсем.

Ҫĕр ҫинчен ответ памаҫҫĕ.
— Ҫап-ха, тусăм, вăйлăрах!
Лётчиксем хайхи анаҫҫĕ
Кăшт тата аяларах.

— Ăшала, Милостивенко!
„Кавăн" пултăр тутлăрах.
Чăн-чăн „кавăн" астивмен-ха
Ҫавă пыйтлă вăр-хурах.

Капитан Орлов ял ҫийĕн
Ҫаврăнать те ҫаврăнать.
— Курăр, ак сире—Россия!
Ҫийĕр пирĕн „кавăна"!

— Тутă пулăр, лăк тăранăр,
Ӳлĕм ан ыйтăр вара!—
Йĕксĕксем хайхи вăраннă,—
Чупкалаҫҫĕ ҫулăмра.

Ялкăшать ялта вут-ҫулăм,
Хайхи пыйтлă йытăсем,
Хӳрисем айне вут хунăн,
Вăрканаҫҫĕ ĕрĕхсе.

Орлова кино пек ĕнтĕ
Курăнать ҫак тамаша.
— Пулемётсенчен халь ĕнтĕр,—
Вăл хушать экипажа.

Акă харăс юрра ячĕҫ,
Вĕсен пурин те пĕр сас:
— Акă вырăссен апачĕ—
Ăшаланă тип пăрҫа!

Орлов ăшĕнче вăранчĕ
Авалхи мунча юрри:
— Пыйтисем шалт ăшаланччăр,
Мунчи пултăр-и вĕри!

Ҫат-ҫат, ҫат-ҫат,
Епле «милĕк» ҫыпăҫать.
Ҫат-ҫат, хытăрах,
Чĕре патне ытăрах!

Ҫат-ҫат та ҫурăмне,
Пыйти-шăрки—лапкайне.
Фрицсене, хурахсене
Ăсатар леш тĕнчене.

Нумайччен Орлов ҫӳрерĕ
Кĕрлесе ҫак ял ҫинче.
Яланхи пекех ĕҫлерĕ
Ҫамкине тар тухиччен.

— Ну, мĕнле, юлташăм штурман,
Каймалла пуль килелле?!
Леш кулать:—Пĕр бомба пур ман,
Ăна таçта чикмелле?

Ун валли юлмарĕ вырăн
Вутпа хыпнă çĕр çинче.
— Вырăн тин ăçта-ха ширăн?
Варкăт, ан тăр хĕрхенсе!

Ялкăшать декабрь каçĕ,
Тĕпĕнче ун—вут кăна.
Ирхине кĕрсе каяççĕ
Боецсем атакăна.

Боецсем чунран ырлаççĕ
Кĕçĕрхи вĕçевçĕне.
Ял патне çитсен кураççĕ
Увăн витĕмлĕ ĕçне.

Килсе çапнă та хаяррăн,
Кисрентернĕ вăл çĕре.
Сехри хăпнă йытă çарĕ
Тухса чупнă йĕмсĕрех.

Ăшталаннă. Хăшĕ путлĕн
Ыйхăран та вăранман.
Хăшĕ пирĕн пата чупнă,
Хăшĕ чупнă вăрмана.

Анчах вăрçăн шав пĕр юрă—
Пĕт, тăшман, эс пĕтĕмпех!
Кăн-кăвак—декабрь юрĕ,
Кăн-кăвак—ирхи тўпе.

Боеца боец каларĕ:
— Ак ĕнтĕ куран хăвах,
Фашистсенĕн „кăвак çарĕ“
Шăвса хытнă кăн-кăвак.

Кăвак юр çинче выртаççĕ
Кăвакарнă йĕксĕксем.
Халь „кăвак“ ята тытаççĕ
Чăн тивĕçлипех вĕсем.

Тăшман пĕттĕр те çухалтăр,
Ĕçе Орловла тăвар.
Пирĕн пысăк генерал та
Пит ырларĕ Орлова.

— Пит аван Орловăн ĕçĕ,—
Терĕ вăл кулкаласа.
Кăвак марччĕ çав дивизи.
Халь кăвак та... тап-таса.

## 14. Вырăс хăярĕ.

Хирĕ пирĕн—çивчĕ куçлă,
Пин хăлхаллă—сĕм вăрман.
Тăшман утăм ярса пуснă—
Ăна сиснĕ партизан.

Каç пулсассăн хыпар çитрĕ
Хамăр партизансенчен:
— Ĕç пур кĕçĕр, хўхĕм пит те,
Авалхи Н** хулинче.

Самант меллĕ-çке ытла та,
Ун пекки часах ан кĕт,—
Нимĕçсем тума шутланă
Раштав ячĕпе банкет.

Авалхи дворецăн залĕ
Ўсĕр музыкпа кĕрлет.
Пĕтĕм ирсĕрĕ-усалĕ
Кĕçĕр пухăннă пĕрле.

Варрине çут чăрăш лартнă,
Çимĕçсем сĕтел тулли.
Сахал мар вĕсем çаратнă,
Çав ĕнтĕ вĕсен йăли.

Савăнать, çиет мур-нимĕç.
Анчах чаплă ĕлкăна
Çитеймест иккен пĕр çимĕç,
Çитеймест „хăяр“ кăна.

Вырăссен шултра хăярĕ
Кирлĕ ўсĕр нимĕçе.
Вĕçсе кай, Орлов, вăр-варрăн,
„Хăяр çимĕç“ тиесе.

Кĕттермерĕ пирĕн паттăр,
Тухрĕ хăвăрттăн вĕçсе.
„Хăяр“ кăшт тăварлăрах та,
Ан ўпкелĕр, нимĕçсем!

Сывлăша çурса вĕçевçĕ
Сĕм каç витĕр çул хывать.
Тăван çĕрĕн çак кĕтесĕ
Питĕ палла Орлова.

Кунта ĕлĕк Невский пухнă
Хайĕн вилĕмсĕр çарне.
Çакăнтан вăрçа вăл тухнă
Сыхлама тăван çĕрне.

Йытă-рыцарьсене хирĕç
Тăнă пирĕн паттăрсем.
Вилĕм тупнă сĕмсĕр нимĕç
Чĕррĕн пăр айне кĕрсе.

Халĕ те çав ирсĕр сăхă
Тăшман курмĕ ыррине.
Александр Невский йăхĕ
Тухрĕ нимĕçсем çине.

Сывлăша çурса вĕçевçĕ
Сĕм каç витĕр çул хывать.
Тăван çĕрĕн çак кĕтесĕ
Чун пек палла Орлова.

Хăй çул тытнă хулара та
Вăл паллать кашни çурта.
Штурмана калать:—Куратăн,
Ав ăçта тĕллев выртать.

Ĕлĕк ларнă вăл мăнаçлăн—
Авалхи кермен дворец.
Халь унта тăшман вырнаçнă,
Ăна шелсĕр пĕтерес!

Вĕçсе пычĕ ăмăрткайăк
Çывăхрах, аяларах.
Халь ĕнтĕ «сĕнмешкĕн» лайăх
Шар-тăварлă «хăяра».

Авалхи çурт çийĕ витĕр,
Ташлатса нимĕçсене,
«Хăярсем» тĕл ўкрĕç питĕ—
Шăп çавра сĕтел çине.

— Мейĕр, çийĕр те çырлахăр,—
Акă «çимĕç» вăркăнать.
— Ытлашши ятламăр ахăр,
Кучченеçĕ çав кăна!

Нумайччен Орлов ĕçлерĕ,
«Хăналарĕ» нимĕçе.
Вăл пĕрре те шеллемерĕ
Ырă, сиплĕ «çимĕçе».

Çав тери аван ĕç пулчĕ,
Çыпăçуллă темелле.
Çуртран кĕл çеç тăрса юлчĕ
Çурт танлашрĕ çĕрпеле.

Орлов туйрĕ çăмăлраххăн,
Халь юрать киле кайма.
Анчах çакă вăл çапах-ха
Тавăру сехмечĕ мар.

Вĕресе тăран хаярлăх
Ĕмĕрне ан сивĕнтĕр.
Саншăн, капитан Гастелло,
Саншăн, Аслă тăван çĕр!

Моторсем юрлаççĕ юрă,
Çав юрра итлет тĕнче.
Тепĕр кун хыпар фронт урлă
Килчĕ партизансенчен:

— Кирлине туянчĕ нимĕç;
Лётчик килнĕ каçхине
Кунта çĕр те вăтăр иккĕш
Тупрĕç вилĕмĕсене.

Тата лăпăр-лапăр мар çав,
Пурте пулнă—офицер.
Лётчик вĕсенне хăварчĕ
Мухмăрĕсене чĕртсех.

### 15. Хумхануллă маршрут.

Çапăçура хĕл иртрĕ.
  Хĕрў çу кунĕ çитрĕ.
Тăванăм, эсĕ пултăн
  Çĕр çирĕм вĕçевре.

Тĕтре купиĕ урлă,
  Декабрь пăрĕ витĕр
Çĕр çирĕм хут эс тухрăн
  Çĕр çирĕм вилĕмрен.

Вилĕмпеле эс тăнă
  Ялан та куçа-куçăн;
Анчах ялан çĕнтернĕ
  Чĕр пурнăç вилĕме.
Хăюллă ăмăрткайăк,
  Çунатлă çĕнтерӳçĕ,
Вутра та эс, шывра та
  Çунма, путма пĕлмен.

Самолĕту пăрланнă,
  Ал-уруна тăм илнĕ.
Винтсем пăра тĕпретнĕ,
  Пăр сапăнна пите.
Ик куç тулли юн тулнă,
  Снаряд та пуля пивĕн
Сан чĕрене шыранă,
  Шыранă сан ӳте.

Анчах та вăрçă çулĕ
  Тамăкри пек пулсан та,
Самолĕта, тăванăм,
  Аллу сан вĕçертмен.
Тӳпе тĕпрен кисреннĕ,
  Тĕнче вутпа пăтраннă,
Çапах эс нихăçан та
  Çурма-çула пĕлмен.

Эс çĕршыва саватăн,
  Эс пурнăçа сыхлатăн,
Сана çӳле çĕкленĕ
  Хăватлă юрату.
Халь эсĕ Атăл çийĕн
  Çӳлте вĕçсе пыратăн,
Çĕршывăн юратăвĕ—
  Вăл санăн çунатту.

Сана задани панă.
  Хĕвеллĕ тӳпе тăрăх
Н** хулинчен вĕçетĕн
  Тăван Мускавалла.
Маршрут выртать çап-çутă.
  Çу кунĕ тăра-тăра,
Çуралвă Ямаш урлă
  Паян сан каçмалла.

Мухтавлă Аслă Атăл,
  Тӳлеккĕн те ачашшăн
Çĕршыв кăкри çинче вăл
  Йăлтăртатса выртать.
Тискер те сĕмсĕр нимĕç
  Атăл çине тухасшăн,
Вăл çĕршыва пăвасшăн
  Выç кашкăр пек пыртан.

Юратнă Аслă Атăл,
  Пирĕн тăван аннемĕр,
Эс пирĕнне упратăн
  Чыса та тивĕçе.
Вилсен те, чĕрĕлсен те
  Эс пирĕн ĕмĕр-ĕмĕр;
Вилсен те, чĕрĕлсен те
  Памастпăр нимĕçе!

Орлов паян хаваслă.
  — Ачсемĕр, юрă юрлăр!
Экипажне чĕнет вăл:
  — Паян юрламалла!
Гастелло самолĕчĕ
  Чăваш çĕршывĕ урлă
Чи хаклă тус-тăван пек
  Вĕçет Мускавалла.

Тăват мотор кĕрлевĕ
  Мухтавлă Атăл çийĕн,
Юратнă çĕршыв тăрăх
  Мăнаçлăн ярăнать.
Тăван чăваш çĕршывĕ,
  Тăванăмăр Россия,
Кунçулăмăр, хăватăмăр,
  Телейĕмĕр санра.

Çак паттăрсен карапĕ
  Мăнаçлăн шунăçемĕн
Республика пейзажĕ
  Пуянлансах пырать.
Ăçта авал вăрахăн
  Упасем çеç ӳленĕ,—
Унта заводăн корпусĕ
  Кĕрнеклĕн хăпарать.

Ăçта вăл асат хуçнăн
  Ахлатнă сухапуçĕ,
Унта халь тырă тиĕсĕ
  Тӳлеккĕн хумхавать.
Унта халь илĕртӳллĕн
  Вылять телей çăлкуçĕ,

Унта—этем хăватлă,
  Хуçа вăл хăй кăна.

Тӳлек шывсем çине ав
  Ялсем пăхса лараççĕ—
Хăйсен çап-çутă ĕмĕтлĕ
  Таса куçĕсемпе.
Улăхсенче хĕрӳллĕн
  Хĕрсем утă çулаççĕ;
Шап-шурă ретĕн тăна
  Чипер акăшсем пек.

Мотор шавне илтсессĕн,
  Вĕçевçĕсене хирĕç
Чи ăшă саламсем пек
  Шур тутăрсем вĕçеç.
Орлов çакна курать те
  Татах калать вăл çирĕп:
— Кунта эп ĕмĕр ямăп
  Ылханлă нимĕçе!

Умра тăван столица—
  Чăвашăн тĕп хулийĕ,
Атăл хĕрне мăнаçлăн
  Вырнаçнă Шупашкар.
Чăвашăн паттăр ывăлĕ
  Вĕçет паян ун çийĕн,
Ун кăмăлĕ хумханнă,
  Ун чунĕ лăпкă мар.

Кунта—тăван республикăн
  Чĕрийĕ, ăсĕ-пуçĕ,
Кунта ĕçлеççĕ фронтшăн
  Тин ӳснĕ заводсем.
Кунта тин çеç çĕкленнĕччĕ
  Телейĕн шурăмпуçĕ,
Çавăн çинчен хавассăн
  Юрлатчĕç поэтсем.

Хула паян та лăпкă,
  Анчах вĕри хаярлăх
Хăватлă Атăл тăрăх
  Тапать пĕр тинĕсех,
— Туятăп,—тет вĕçевçĕ,—
  Шанса тăр, ирĕк халăх,
Кунта эп ĕмĕрне те
  Кĕртместĕп нимĕçе!

Çĕртен çынсем пăхаççĕ.
  Ик çăлтăра кураççĕ.
Çав çăлтăрсем çĕн шанчăк
  Кӳреççĕ вĕсене.
— Васка, тăванăм!—теççĕ,
  Вĕсем ыр çул сунаççĕ.
Вĕçевçĕ, эс туятăн
  Вĕсен чĕрисене.

Васкатăн эс, васкатăн,
  Çунаттусем сан вăйлă,
Тăват мотор хăватлăн
  Анăçаллах туртать.
Анчах умра, куратăн,—
  Хăю пек çутă Вылă,
Ем-ешĕл улăхра вăл
  Йăлтăртатса выртать.

Çуралнă ыр кĕтесĕн
  Асамлă вăйĕ пур-тăр,
Хăй еннеллех чĕнет вăл,
  Йыхравĕ ун ачаш.
Ав, Омашне вăрманĕ
  Суллать сип-симĕс тутăр,
Ача чухнехи тĕлĕк пек
  Выртать тăван Ямаш.

Орлов чĕри татах та
  Тапма пуçларĕ хăвăрт:
Мĕнле тӳсен анмасăр
  Çуралнă çĕр çине!
Экипажне каларĕ:
  — Туссем, чухлатăр хăвăр,
Кун пек чухне этемĕн
  Чĕрийĕ мĕнлине.

Хăватлă кайăка вăл
  Аяларах антарчĕ,
Унтан ял çийĕн çаврăнчĕ
  Виç хут кĕрлеттерсе.
Çав хушăра çĕре вăл
  Пĕчĕкçĕ вымпел ячĕ:
  — Ку вăл Хветутăр сирĕн.
  Салам, ял-йышăмсем!

Шаççи çĕре лексессĕн,
  Кабинăран тухсассăн,
Орловăн тулса çитрĕ

Хумханакан чĕри.
Хăй тĕллĕнех пит тăрăх,
Пĕр савăннăн, хурланнăн,
Куççулĕ юхса анчĕ,
Ачалăх пек вĕри.

Йĕри-тавра вăл пăхрĕ:
— Эх, манăçми уй-хирĕм!
Ытараймн Ямашăм,
Тăван ана-çаран!
Кунта пĕчĕк кĕтӳçĕ,
Пушă йăтса ир-ирĕн,
Уç сывлăм тăрăх утнă,
Телейсĕррĕн, çарран.

Кунта халь океан пек
Хумсем ярать тырпулă,
Вăл ирĕклĕ те тулăх,
Ниçта çук пĕр сыран.
Самолёта курсассăн:
— Ку анчĕ мĕнле улăп?—
Тесе чупма пуçларĕç
Çынсем пур таврăран.

Часах вĕсем кураççĕ,
Часах вĕсем палласçĕ:
Юмахри мар, чăн улăп—
Хветут тăра парать.
Комбинезонне хывать вăл.
Ун куçĕсем куласçĕ.
Хĕвел çинче çут орден
Вут пек йăлтăртатать.

— Сывах-и, тăван халăх!
— Сывах-ха, паттăр ывăл!
Анчах вăл паллаймасть-ха
Пĕрне те çийĕнчех.
Ялта тăванĕ çук ун,
Кашни тăван пек çывăх.

Вăл хăй те халăх ывăлĕ
Çак аслă çĕр çинче.

Унтан Орлов сасартăк,
Сасартăк асăрхарĕ:
Инçе те мар паллană,
Ĕмĕр манми куçсем.
Асра—чечеклĕ çимĕк.
Çав çĕмĕрт куçсем мар-и
Çăл шывĕнче вылянă
Çăлтăрсем пек çиçсе!?.

Ун чух Хветутăн куçĕ
Именнĕ те нытаннă.
Халь акă вăл хăюллăн
Пике патне пырать.
Анчах та леш чĕнмесĕр
Пуçне чикет вăтаннăн,
Икĕ енче халь унăн
Икĕ ача тăрать.

Хветут ик ачине те
Алла тытса хăватлăн
Çӳле, çӳле çĕклет те:
— Пĕрлех-ха,—тет,—вĕçер!
Хăй чĕринче татах та
Тупа туса калать вăл:
— Кунта эп нихăçан та
Кĕртместĕп нимĕçе!

— Аннен таса тăприйĕ,
Якур мучин ыр ячĕ,
Тăван Ямаш та ĕмĕр
Ан курччăр мăшкăла!—
Çапла вăл тупа турĕ,
Çапла вăл сăмах пачĕ.
Ирпе ирех вĕçтерчĕ
Татах вăл фронталла.

## 16. Герой.

Çапла хăйне тĕрĕслеме
Пулни-иртнисене тĕпчене.

Кунта хăйне вăл хĕрхенмен,
Кăлтăк пулсан, хытах ятланă.
Çапăçура чи кирлине
Чĕрипеле çунса ширанă.

Вăл ларнă çĕрпӳртре,
Кĕскен хăй шухăшне тĕрленĕ.
Пĕр чарăнмасăр инçетре
Хаяр вăрçă сасси кĕрленĕ.

Каçхи хĕрӳллĕ ĕçсене
Дневникĕнче вăл пĕтĕçтернĕ.

Çурма-ĕçе вăл юратман;
Ăçта, мĕскер тумасăр юлнă,
Дневникĕнче вăл пытарман,
Çавна ыран тума вăл пулнă.

Тăват мотор мĕн панине
Йăлтах хаярлăха кĕртесчĕ.
Тăшманăн çĕршĕннĕ пуçне
Ялан Гастелло пек хĕртесчĕ.

Орлов черетлĕ каç валли
Хăйне задани хатĕрленĕ
Кĕçĕрхи каç аркатмалли
Чи йывăр объекта тĕлленĕ.

Çапла паян та йĕркерен
Хăй шухăшве çырса хурсассăн,
Вăл тухрĕ лăпкă çĕр пўртрен,
Вăл пулчĕ тĕнчене курасшăн.

Çĕрле—текех çапăçура,—
Тулта—вăрман, çанталăк ырă.
Хĕрсех халь ĕнтĕ колхозра
Тăван ял-йыш вырать пуль тырă.

Анчах кунта пĕр вĕçĕмрен
Кĕрлет хаяр та юнлă вăрçă.
Кунта çак чунсăр вилĕмрен
Çăлăнаймасть чи çирĕп хурçă.

Этем кăна тўсет иккен,—
Шутлама ĕлкĕрчĕ çапла çеç;
Унтан курать вăл: пур енчен
Ун патвелле çынсем чупаççĕ.

Мăкăрланать тусан анчах,—
Мĕн пулнă-ши, мĕскер ăнманĕ?
Субординацие мансах
Чупать майорĕ, капитанĕ.

Малта ав Сушин капитан,
Унтан çитет Милостивенко.
Орлов пĕр нимĕн ăнланман,
Мĕн пулнине пачах пĕлмен-ха.

Тен, пулнă пуль пĕр-пĕр иккек?!.
Анчах çынсем хавас кулаççĕ,
Хаватлă тинĕс хумĕ пек,
Ăна тытаççĕ те йăтаççĕ.

Янрать уçланкăра—урра!—
Фронтри юлташлăх пит хĕрўллĕ.
— Мухтав—çуватлă паттăра!
Мухтав сана, çĕршыв геройĕ!

Ăна ывтаççĕ хытăрах,
Çўлтен çўле туссем çĕклеççĕ.
Пĕр нимĕнле болтанкăра
Халччен кун чухлĕ силлеменччĕ.

Çуралчĕ митинг ăнсăртран:
— Кашни Орлов пек паттăр пултăр!
Çак вăрмантах пĕр-ик кунран
Ăна параççĕ Ылттăн Çăлтăр.

Çав парнене алла парсан,
Фронт çар совечĕн членĕ ыйтрĕ:
— Мĕскер каласшăн, капитан?—
Ыталаса ăна вăл тытрĕ.

Орлов ача пек пăлханса,
Кĕскен:—Ан тăвăр, терĕ, айăп.
Сăмаххăм тухас çук ансат,
Калассине ĕçпе эп калăп.

Фронтра çапла кăна сăмах,—
Вăхăт ахаль сая ан кайтăр.
Тăшман çине, каç пулсанах,
Орлов вĕçсе тухмашкăн хатĕр,

Ăна чĕнет Тăван çĕршыв,
Ăна çĕклет герой çуначĕ.
Йĕри-тавра çунăк шăрши,
Ку пирĕн хуласем çунаççĕ.

Тăван çĕршыв аманнă чух
Ăçтан-ха чĕресем лăпланĕç?
Тăшман пĕтмесĕр канăç çук,
Çапăçура кăна халь канăç.

Çак шухăшпа вăл кĕçĕрех
Çапăçăва кайма шутларĕ.
Кĕçĕр вăл çапĕ вирлĕрех,
Герой ятне тўрре кăларĕ.

Чăн та, паян городокра
Ун ячĕпе—хаваслă вечер.
Пулма лекмест пуль концертра.
Туссем каçарччăр, ан кўренччĕр.

Ан пӑшӑрханччӑр артистсем,—
— Ҫапӑҫӑва!—тет Ылттӑн Ҫӑлтӑр.
— Тен ҫитӗп те кайса килсен,
Ӗҫӗ кӑна йӗркеллӗ пултӑр.

Яланхинчен вӑл хӑвӑртрах
Моторсене тӗрӗслеттерччӗ.
Ҫак самантра городокра
Пуҫтарӑннӑ уяв концерчӗ.

Клубра, чечек ытамӗнче
Паян ун ҫут портречӗ ларнӑ.
Фронтри поэт герой ҫинчен
Хӗрӳллӗ сӑввине вуланӑ.

Унтан уяв сцени ҫине
Артистка тухнӑ, кӑшт именнӗн.
Вӑл, вырӑс халӑх юррине
Ун ячӗпе юрлатӑп, тенӗ.

Анчах пӗр сасӑ халӑхран:
— Орлов ӑҫта-ха?—тесе ыйтнӑ.
Мотор сасси ҫак самантра
Илтӗнсе кайнӑ питӗ хыттӑн.

Мӗнпур хӑватлӑ моторсен
Мӗнпур заслонкине вӑл уҫнӑ.
Орлов сатуррӑн кӗрлесе
Клуб урлӑ аслати пек куҫнӑ.

Артисткӑн витӗмлӗ юрри
Самантлӑх кӗрлевре ҫухалчӗ.
Ун ҫепӗҫ туйӑмлӑ чӗри
Вӗри хумханупа вылянчӗ.

— Орлов ку,—терӗҫ лётчиксем.
Хавассӑн алӑ ҫупса ячӗҫ.
... Кун пек тӗлӗнмелле ӗҫсем
Пирӗн патра кӑна пулаҫҫӗ.

Вара артистка малалла
Хӗрӳллӗнрех юрла пуҫларӗ.
Ҫав юрӑ пӗтӗм фронтпала
Инҫе-инҫе янраса карӗ.

Ҫав юрӑра тулса тӑрать
Тӑван Российӑн вӑй-хавачӗ,
Ҫав юрӑ пирӗн паттӑра
Нихҫан сӳнми хастарлӑх пачӗ.

Ҫав каҫ Орлов фашистсене
Мӗнпур хаярлӑхпа ҫунтарчӗ.
Ҫав каҫ Орлов герой ятне
Татах, татах тӳрре кӑларчӗ.

Унтан киле вӑл таврӑнать.
— Ӗҫ пулчӗ, тет, питех те лайӑх!
Чӑваш ачи, мухтав сана!
Мухтав, хӑватлӑ ӑмӑрткайӑк!

## 17. Сарсков колхозник самолёт илет.

Кӑнтӑрти ҫеҫен хир
ҫулӑмпа ӗнсе кайнӑ,
Вутпала пӑтранса
Вӗрет тӗпсӗр хуран.
Тусан витӗр хӗвел
курӑнать суран майлӑ,
Пӑхма ҫук ун ҫине,
Тен, вӑл чӑн та суран?!

Канӑҫ ҫук, сывлӑш ҫук,
шыв та ҫук ҫеҫен хирӗн.
Пур кашнин чӗрере
пӗр хаярлӑх анчах.
Тӑшмана чармалла,
ҫапмалла ӑна вирлӗн.
Тӑр, боец, виличчен,
тӑр, пӗр утӑм ан чак!

Нимӗҫе илӗртет
Кавказ нефчӗн шӑршийӗ,
Ӑна Дон кулачи
йӗкӗлтет, уртарать.
Тӑшман танкӗ умне
хӳме пек тӑр, ҫӗршывӑм.
Ху аваллӑхунтан
пул эс паттӑртарах!

Лӑпкӑ Дон хӗрринче
саралать йывӑр шӑршӑ.
Ку вӑл нимӗҫ ҫӗрет,
сывлӑша варлать.
Хӑй ҫапах хирӗнет,
хӑй ҫапах пирӗн ҫӗршӗн
Вилесен купи урлӑ
кӗрет шалалла.

Юнлă йĕр хăварса
танкĕсем ун шăваççĕ.
Нимĕссен купипе
чыхăнаççĕ шывсем.
Нимĕссен купипе
кĕперсем хывăнаççĕ,
Çавсем урлă каçса
килеç çĕннисем.

Мускав айлăменчи
вутлă „çăкăр-тăваршăн"
Нимĕç тытнă кăçал
урăх çул, урăх план;
Аслă Атăл çине
çĕмĕрсе вăл тухасшăн,
Мускава хупăрласшăн
таçтан аякран.

Унăн сĕмсĕр планне
чăваш çĕрĕ те кĕнĕ.
Атăлпа тăвалла
вăл шутланă килме.
Вăрăм хĕскĕчпеле
хĕстерме ĕмĕтленнĕ,
Мускава, Мускава
вăл сĕмленнĕ илме.

Картнă çирĕп кунсем
ăсран кайнă ефрейтор.
Юмăç пăхнă картпа,
тухнă вырăнлă карт.
Анчах çав упăте
тĕлĕкре те кĕтмен-тĕр
Ун умне тăрасса
Сталинград.

Улăпла пĕвĕпе!
Сталинград тăчĕ хирĕç,
Нихăçан парăнми
Çĕршыв крепоçĕ пек
Сталинград хўмине
пырса тăрăнчĕ нимĕç
Юнпала вараланнă
чугун сăмсипе.

Тăвата уйăх кунта
юн тăкса тĕпĕртетрĕ,
Тăкрĕ вут, тăкрĕ бомба
ылханлă çахан.
Кун чул çумăр çуман
хулара ĕмĕрте те,
Кун чул пăр та çуман
нихăçан.

Хĕвел тулнă садсем
çунчĕç, сўнчĕç кĕлленчĕç;
Ўкрĕç ишĕлчĕç, вилчĕç
цехсем, корпуссем.
Анчах çак тамăка
пирĕн паттăр çынсем çеç,
Юмахри улăпсем пек,
ирттерчĕç тўссе.

Тăшмана чаракан—
пулчĕ пирĕн этем вăл,
Ун харсăр чĕри,
унăн хурçă алли.
Сталинград! Çак сăмах
пулчĕ пирĕншĕн символ,
Пулчĕ çирĕплĕх, чăтăмлăх,
туслăх палли.

Тĕнче кусĕ ялан
Сталинград çинче тăчĕ.
Тĕнчери çĕршывсем,
сводкăсем мĕнлине
Куллен-кун сăнаса,
тĕпчесе тытса пычĕç
Дипломатин чее
сикекен кўмине.

Репродуктор умне
тăрса пурте ир-ирĕн
Эпир пĕтĕм чунтан
кĕтнĕ ырă хыпар.

Хыпарсем... Çук вĕсем
çăмăл марччĕ чĕрешĕн.
Анчах шанчăк хурçи
пур-пĕрех тутăхман.
Сталинград тăшманпа
чăн Антей пек кĕрешнĕ,
Урисем ун самант та
çĕртен татăлман.

Вырăс çĕрĕ çинче
çирĕп тăнă çав Улăп,
Пĕтĕм халăх ăна
кӳнĕ аслă вăй-хал.
Çĕпĕртен, тайгаран,
Урал тăвĕсем урлă
Килнĕ вĕçĕмсĕр çар,
хĕç-пăшал.

Сталинградшăн кашни
чĕринче пухнă çилĕ,
Орлов хăй фронтĕнче
тăкнă шелсĕр кăвар.
Габайдуллин та Лаптев,
Винокуров, Ефимов, Васильев,
Кашнин пулнă пĕр шут:
— тăшмана аркатар!

Кашни кас, кашни ир
эпир кĕтнĕ те çуннă,
Пĕтĕм сулăмĕпе
тапнă пирĕн чĕре.
Сталинград халăхсен
çутă шанчăкĕ пулнă,
Янăранă çак ят
пĕтĕм çут тĕнчере.

Акă çапрĕ сехет,
вара пурте сасартăк
Илтрĕç ĕмĕр манми—
наступлени—сăмах
Юлашки сехетре...
Ӳкнĕ кăмăл хăпартăр!
Паттăр кăмăл, кĕрле
тата сулăмлăрах!

Ирпе пирĕн çынсем
пĕр-пĕрне саламлаççĕ.
Сталинград!—тет пĕри;
Сталинград!—тет тепри.
Çынсен кăкăрĕсем
çăмăлраххăн сывлаççĕ.
Çăмăлраххăн тапать
пур çĕршывăн чĕри.

Стăноксем хыттăнрах
çаврăнма тытăнаççĕ.
Ялсенчен хулана
туртăнаç обозсем.
Тĕнче ĕмĕр курман
туйăмсем вăранаççĕ,
Чи шалти, чи вĕри,
чи пуян туйăмсем.

Кузьма Минин ĕçне
Тăван çĕрĕмĕр курнă,
Анчах ку урăххи,
урăх ĕмĕр кунта.
Мĕннур пек кĕтесрен
вăрмансем, тусем урлă
Халăх вăйĕ куçать
çĕнтерӳлĕ фронта.

Кузьма Мининăн ĕçĕ
пулнă аслă, хăватлă;
Анчах çĕр çакăн пек
тĕпренех хускални
Нихăçан та пулман.
Ферапонт Головатый
Самолёт туянать
паттăр лётчик валли.

Çĕршыва ирсĕрлен
сĕмсĕр нимĕçе хирĕç
Вырăс çĕрĕ тăрать
пĕтĕм сулăмĕпе.
Вăранаç вăрмансем,
çĕкленет уйĕ-хирĕ,
Халăх вăйĕ кĕрлет
океан хумĕ пек.

Тулса пухăннă вăл,
тăван çĕрĕн хăвачĕ,
Çулпуç çутнă хĕвелĕн
хĕрӳ ăшшипе.
Орлов паттăр валли
самолёт заказ пачĕ
Ват колхозник Сарсков,
ун тăван ашшĕ пек.

Самолётсем, танксем
эскадрильйăн, колоннăн
Çуралса çитĕнеççĕ
унта та кунта.

Çурхи Атăл çинче
    талккишпе пăр тапраннăн
Колхоз вăйĕ куçать
    çĕнтерӳллĕ фронта.

Виçи çук, чикки çук
    халăхсен вăй-хавалĕн,
Наступлени пырать
    пур енчен малалла.
Авалхи Кремльтен
    халăха аслă Сталин
Хĕрлĕ Çар ячĕпе
    ыр сунса саламлать.

Пирĕн çар çĕнĕ кун,
    çĕнĕ ĕмĕр пуçларĕ.
Хурçăран пухса тунă
    хаяр ункăра
Пĕтрĕ, çунчĕ, кĕлленчĕ
    фон Паулюс çарĕ.
Ĕмĕр палăкĕ пулчĕ
    тăван Сталинград.

Сталинград! Вăл пире
    ĕçре çĕнĕ вăй пачĕ,
Вăл çывхартрĕ
    пулас çĕнтерӳ уявне.
Станоксем хыттăнрах,
    хăвăртрах çаврăнаççĕ
Вăхăтра пурнăçласшăн
    Сарсков заказне.
Аслă Сталин çапла
    Сарскова сăмах панă.

Эпир акă завод
    аэродромĕ çинче.
Мĕнчул „кайăк" кунта
    тин кăна çунат сарнă,
Иртет ватă колхозник
    вĕсен умĕнчен.
Вăл сăнать, тĕрĕслет,
    пысăк влаçлă хуçа пек.
Ак Орлов та утать
    унпала юнашар.
— Начар мар,—тет колхозник,—
    геройăмăр чапĕ,
Самолĕчĕ те унăн
    ан пултăр начар!

Анчах самолётсем
    пурте çĕнĕ те лайăх.
Орлов ултă йышши
    аппаратпа вĕçет.
— Акă,—терĕ Сарсков,—
    ак сана, ăмăрткайăк,
Вĕç эс çиçĕм пулса,
    вĕç çӳлте, вĕç инçе.

Ку пач çĕнĕ йышши,
    кун çинче халĕ çеç-ха
Вĕренсеччĕ Орлов
    кану вăхăтĕнче.
Ĕнтĕ пирĕн вĕсем
    чылай йышлăн вĕçеççĕ
Аслă халăх вăрçин
    аслă фрончĕсенче.

Акă вăл, кĕр те лар,—
    алăкне яри уçнă:
Кĕрсе лар та вĕçтер
    фронталла, малалла.
Чаплă самолёта
    ватă, тимлĕ колхозник
Куçпа мар,
    тĕрĕслерĕ, тĕпчерĕ алпа.

Унтан вăл Орлова
    тăван пек ыталарĕ:
— Тур сыхлатăр, Хветут,—
    терĕ вăл мучилле.
Çĕршывран нимĕçе
    хытăраххăн хăвалăр,
Сывă пул,
    çĕнтерӳпе кĕтетĕп киле.

Героя ăшă хум
    килсе саврĕ ачашшăн.
Чĕрене ăшă хум
    мĕн пек ырă, аван!
Унăн пур—тăван çĕр,
    унăн пур тăван ашшĕ.
Тев, вăл уншăн паян
    тăванран та тăван.

Чĕркуçланчĕ Орлов,
    тупа турĕ яланлăх:

— Халăх ячĕ çĕре
нихçан ӳкес çук.
Саншăн таптăр чĕре,
асăмри аслă халăх,
Саншăн эп тĕнчере
тытăп чи тĕрĕс çул!

Унтан тăчĕ Орлов,
самолёт ăшне кĕчĕ.
Çĕнтерӳллĕн, хăватлăн
кĕрлеç моторсем.
Акă вăл хăлаçланчĕ,
вылянчĕ, çĕкленчĕ,
Уйăрлу кăмăлне
çилпеле вĕçтерсе.

Ырă çул, сывă пул!
Кунĕ кĕтнĕ пек лайăх.
Çу хĕвелĕ кулать.
Вăхăт шăп кăнтăрла.
Çĕнĕ самолётпа
ывăнми ăмăрткайăк
Тухса кайрĕ татах
фронталла.

1943 çул.

---

## РЕСПУБЛИКА ÇУЛĔ*.

*Аслă Сталина халалласа çырнă поэма.*

Аслă çулпуçăмăр, Сталин аттемĕр,
Санăн яту хĕвелтен çутăрах.
Çав çутăри халăхсем ĕмĕр-ĕмĕр
Чаплăн мухтавлĕç сана юрăра.

Эсĕ пире пĕрлештертĕн тăванлăн
Пур халăха пĕр телейлĕ йыша.
Эсĕ сӳнми хĕвел ырлăхĕ патăн
Ĕмĕр хĕн курнă ĕçчен чăваша.

Аслă та ирĕклĕ Атăл çыранĕ
Сан чунупа ăшăнса савăнать.
Халăхăн Атăл пек пысăк саламĕ
Саншăн паян сăвăра шăранать.

Эсĕ пире аслă çул уçса патăн,
Эсĕ малтан малалла йыхăран.
Пысăк салам сана, пирĕн хăватăмăр,
Çĕр пек, хĕвел пек салам халăхран.

Пур чечексем хĕвеле пуç таяççĕ,
Çут хĕвелпе пĕр майлах çаврăнаççĕ.
Сан еннелле çавăн пек пуç тайса,
Юрă юрлатпăр сана мухтаса.

Пур çăлтăрсем çĕрелле куç хываççĕ,
Пĕтĕм çĕрпе пĕр çулпа çаврăнаççĕ.
Сан çинелле çавăн пек куç хывса,
Юрă юрлатпăр сана чысласа.

* * *

Тăван çĕршыв тăшмансене çĕнтерчĕ,
Татах хавасла ĕç юрри кĕрлет.
Чăваш çĕршывĕн юбилейĕ килчĕ
Пур халăх çĕнтерĕвĕпе пĕрле.

Эпир мăнаçлăн уява тухатпăр,
Аслă уяв халь пирĕн урамра.
Кăкăр тулли, чĕре тулли юрлатпăр
Çак ирĕклĕ çурхи юррăмра.

Халăхпала кĕрекене ларатпăр,
Сана чĕнетпĕр, пирĕн хаклă тус!
Мухтав курки те тав курки йăтатпăр,
Пĕрремĕшне—сан сывлăхшăн, çулпуç!

Паян уяв. Республика тултарчĕ,
Ӳссе çитсе, шăп çирĕм пилĕк çул.
Вăл чăнкă çулпала утса хăпарчĕ,
Ун уттинче пĕр кукăр йĕр те çук.

Эсир кăтартнă çулпала вăл утрĕ—
Чи тĕрĕс Ленин—Сталин çулĕпе.
Сирĕн ялавăра вăл çирĕп тытрĕ,
Мухтавлă ашшĕн тӳрĕ ывăлĕ пек.

* Поэмăна Чăваш автономийĕ 25 çул тултарнă уява халалласа çырнă.

Çут тӗнчери пур ирӗклӗ çынсемшӗн
Чӗре пек çывӑх туйӑнать Мускав.
Историри чи Аслӑ Çӗнтерӳшӗн
Мухтав сана, çулпуçӑмӑр, мухтав!

* * *

Аваллӑх чапӗ—паттӑр Улӑп
Кӗрешнӗ ырӑшӑн хӑюллӑн,
Ялан çӗнтернӗ усала,
Ялан вӑл утнӑ малалла.
Вӑл халӑхшӑн хӗвел шыравӑ,
Вӑл пынӑ чӑнлӑх йӗрӗпе.
Вӑл çивчӗ хурçӑ хӗç шӑратнӑ
Хӑйӗн чӗре каварӗпе.
Çав тӳр чӗреллӗ Улӑп-паттӑр
Чапне эпир чысра усратпӑр.
Эпир—ун тивӗç йӑхӗсем,
Ун хӑватне йышӑннисем.
Иртнӗ кунçул çиве пӑхатпӑр
Паянхи кун çӳллӗшӗнчен.
Мӗн авалтан эпир пурнатпӑр
Тӑван Россия варринче.
Тӑван çӗршыв тесе чыслатпӑр
Ӑна пур халӑх чӗринче.
Çичӗ ютран килсе тухсассӑн
Çӗршыв çине хурах-тӑшман,
Эпир ун пек чухне нихçан та
Ютсем пек аякра тӑман.
Тӑван Российӑмӑр тӑшманӗ—
Вӑл пулнӑ пирӗншӗн тӑшман.
Тус-вырӑс халӑхӗ тӑванлӑн
Чӗнсен çӗршывшӑн çапӑçма,
Улӑп хӗçне эпир хӑйрана
Юта пӗр шелсӗр аркатма.
Мухтавлӑ вырӑс—аслӑ халӑх,
Хӗвел пекех вӑл хӑй тавра
Пуçтарчӗ ӗмӗр пурӑнмалӑх,
Çӗклерӗ ӗмӗр савӑнмалӑх
Пур халӑха пӗр çӗршывра.
Çак туслӑх авалтан çуралнӑ,
Истори вутӗнче туптаннӑ,
Вӑл ӗмӗр-ӗмӗрех упраннӑ,
Вӑл çитнӗ паянхи куна,
Никам та хуçас çук ӑна.

* * *

Анчах пире Октябрьччен кышланӑ
Ӗç çыннисен усал тӑшманӗ—
Патшапала харам-пырсем,
Улпутсемпе мул хуçисем.
Пӗр-пӗринпе пире вӑрçтарнӑ
Чуниллисем, юнӗçенсем.
Вуникӗ пуслӑ çав çӗлӗнӗн
Пуçӗсене касса татма,
Пусмӑрлӑха çапса ватма
Эпир татах пӗрле çӗкленнӗ.
Хӑпарнӑ Разин Атӑл тӑрӑх,
Кӗрленӗ Пугачёв килсе.
Пур халӑха хускатнӑ:—Тӑрӑр,
Вӑранӑр, паттӑр тӑвансем!
Хумханнӑ, тӑвӑллӑн, хӑватлӑн
Мӑнаçлӑ Атӑл хумӗсем.
Ун чух та хӑйсене кӑтартнӑ
Чӑвашӑн паттӑр ывлӗсем.
Анчах çапах та аслӑ пӗрлӗх
Çав вӑхӑтра пирӗн пулман.
Кӗрешӳре вӑл пӗрлӗх кирлӗ,
Ахаллӗн çӗнтерет тӑшман.
Ак илтӗнет хӑюллӑ сасӑ,
Ту ӑмӑрткайӑкӗн сасси:
— Рабочисен хӑватлӑ класӗ,
Санра—Российӑн пуласси!
Çапла каларӗ аслӑ Ленин,
Эс патӑн Кавказран ответ:
— Рабочи класс часах çӗкленӗ,
Паян вӑл тӑвал çеç кӗтет!
Çапла ак икӗ ӑмӑрткайӑк:
Пӗри—Россия варринчен,
Тепри Кавказ тӑвӗсенчен
Çӗкленчӗç вӑйлӑ çиçӗм майлӑ.
Вӑранчӗ авалхи Россия,
Хускалчӗç паттӑр халӑхсем.
Вӗçӗ-хӗррисӗр çӗршыв çийӗн
Çил-тӑвӑл кайрӗ кӗрлесе.
Вӑл тухрӗ, халӑхсен хӗвелӗ,
Октябрь сапрӗ çут хӗлхем.
Ӗмӗрлӗхе ӗнтӗ телейлӗ
Нумай хӗн курнӑ халӑхсем.
Эпир çав куншӑн тав тӑватпӑр
Хӗвел пек аслӑ Ленина.
Эпир çав куншӑн тав тӑватпӑр
Тӑван çулпуçӑмӑр, сана!
Эпир çав куншӑн тав тӑватпӑр
Туссемӗр—большевиксене.
Мӗнпур чун-чӗререн ырлатпӑр
Пире çул уçнӑ партине.

Ăван пек тăвана чыслатпăр.
Рабочасен паттăр класне.
Ĕмĕрлĕхе ырă сунатпăр
Чи çывăх вырăс халăхне.
Вĕсем чуралăхран хăтарчĕç,
Телейлĕ çул çине кăларчĕç,
Тăван пек пулăшрĕç пире
Кĕмешкĕн çĕнĕ ĕмĕре.

Анчах та çамрăк совет влаçĕн
Тăсме тăр килчĕ сахал мар.
Чĕр юншăн сăхă буржуази
Çĕклерĕ хирĕç вут-кăвар.
Хĕвеллĕ самана тăшманĕ
Тин ирĕк тупнă халăха
Хĕçпе, вутпа чикме шутланă
Калла, тискер чуралăха.
Шур банда вăркăнчĕ пусхĕрлĕ,—
Шăпи те унăн çав кăна.
Кĕрешăре тупнă пĕрлĕх
Татах çĕнтерчĕ тăшмана.
Чапаев—чаплă халăх ывлĕ
Çуралнă пирĕн таврара.
Кĕрешнĕ вăл мĕнпур çĕршывшăн,
Çĕршыв манмасть çав паттăра.
Ак, Иванов, ун ячĕ ылттăн,
Сивашшăн çапăçнă вăл хыттăн.
Вут-хĕм сăнсен те кăкринче,
Вăл çирĕм çул çĕрмесĕр выртнă
Сиваш таварĕ ăшĕнче.
Çулпусăмăр, эсир манмарăр,
Эсир-çке, Ленинпа пĕрле,
Пире чи йывăр чух ал патăр
Утма телей çулĕпеле.
Пирĕн çула çутатса тăчĕ
Ленинпа Сталин аслă ăсĕ.
Çав çут хĕвел çутатнă чух
Эпир чуралăх курас çук.

* * *

Хĕвелпеле мăн Атăл хумĕ
Ялтрарĕ ылттăн пек таса.
Çуралчĕ пирĕн Автономи
Пире çĕнĕ вай-хал парса.
Юрларĕ авалхи юмахлăх,
Илемлĕн çуралчĕç садсем.
Çĕнĕ ĕçе çекленчĕ халăх,
Çав ырă хыпара илтсен.

Октябрьпе çуралнă сăвăç
Çеçпĕл Мишши—кăвар чĕре
Калана: „Чăвашсем те тăрĕç
Пĕр хисепре, пĕр тивĕçре".

Авал выç кашкăрсем уланă
Хĕвелсĕр сĕм вăрмансенче,
Йăсек арăмути кашланă,
Суха витмен уй-хирсенче
Ăссе хăпарчĕç, капăрланчĕç
Кĕрнек завод корпусĕсем,
Çĕртен тенĕ пекех çуралчĕç
Хĕвеллĕ çĕнĕ хуласем.
Республика, мĕнле вăл ăсрĕ
Хĕрă пилĕкçуллăхсенче.
Хăватлă, сулăмлă индустри
Çуралчĕ пирĕн çĕр çинче.
Чăпта станне кăна курман-и
Унччен пирĕн чăваш сынни?
Вăранчĕ Çĕмĕрле вăрманĕ,
Вăранчĕ Куславкка сырми.
Канаш вагонĕсем çăреççĕ
Мĕнпур Союз çулĕсемпе,
Тырпул леçсе, станок кăреççĕ,
Республика чапне çĕклеççĕ
Хăйсен васкавлă чуппипе.
Ĕлĕк чăвашăн хура пăрчĕ
Хăйчикки çеç пĕлнĕ пулсан,
Ильич лампăчкине вăл курчĕ,
Çуталчĕ хĕвелпе тулса.
Ĕçчен ятне те пирĕн халăх
Алла авмасăр туянман.
Хастарлăн ăсрĕ аласталăх,
Вылять аллăмăрта вăрман.
Тĕп авалхи чăваш юманĕ
Ĕлĕкренпех чапра тăрать.
Ун чапĕ халь тата вăйланнă,
Пур çĕршыва вăл саланать.
Сăпайлă ирĕк чăваш хĕрĕ
Илемлĕ тĕрĕсем тĕрлет.
Вăл чĕнтĕрленĕ çутă тĕрĕ
Çĕршыв илемĕпе çиçет.
Аваллăх тĕшмĕшлĕхĕ иртрĕ.
Эпир çĕннишĕнех хавас.
Халь хамăрăн çитĕнсе çитрĕ
Ĕçчен, хастар рабочи класс.
Çăпата калăпĕ, пир стане,—
Çакна çеç пĕлнĕ яш-хĕрсем

Техникăпа хĕçпăшалланчĕç,
Вĕсем халь—чаплă маçтăрсем.
Пире аслă плансен хăвачĕ
Çав ĕççене тума май пачĕ.
Сана, тăванăмăр çулпуç,
Чунтан калатпăр: тавтапуç!

* * *

Халь уй-хирсем те пирĕн урăх,
Ял сăнĕ улшăнчĕ йăлтах.
Йăлт урăх сывлăш, урăх юрă
Хавассăн илтĕнет ялта.
Хирте мĕн чухлĕ тар тăкман-ши
Пĕччен хуçалăхпа эпир?
Çапах та саплăклă сăкман пек
Выртатчĕ ун чухне уй-хир.
Çав „сăкмана" та турткалană:
Çĕр тухми, тенĕ, ытларах.
Часах-çке юн та тăккалană
Çĕрсем валеçнĕ чух вара.
Анчах кулак çăпан пек ларнă
Çемçе те лайăх çĕр çинче.
Пайтах тертленнĕ, асапланнă
Эпир хресчен ĕмĕрĕнче.
Ăçта унта хулашăн çакăр,—
Çитмен вăл хамăра валли.
Хире ак халĕ тухса пăхăр:
Мĕскер тăвать хресчен алли!
Пин саплăк мар. Хирсем пĕр тикĕс
Выртаççĕ халĕ колхозсен;
Савăнтарать çав аслă тинĕс,
Чуна çĕклеççĕ хумĕсем.
Çав тинĕс урлă хир карапĕ—
Комбайн мăнаçлăн ярăнать.
Ку—сталинла индустри чапĕ,
Ку—пирĕн çĕнĕ самана.
Карапăн штурвалне сăпайлăн
Чăваш хĕрĕ тытса пырать.
Тырă çеç мар вырать комбайн,
Малашлăха вăл çул хывать.
Авал асатлă сухапуçĕ
Çĕре амантнă вырăнта—
Паян ĕçлеççĕ чаплă хурçă
Утсем,—пĕлмеççĕ ывăнма.
Ĕлĕк тăпачăпа çурла çеç
Пĕлнĕ пулсассăн чăвашсем,
Халь пирĕн çĕр çинче юрлаççĕ
Пур еврĕлĕ машинăсем.

Чаплă çынсем çитĕнсе çитрĕç
Колхозсенче ку вăхăтра.
Нумайăшсем ав орден илчĕç,
Хăшсем татах та хÿхĕм ÿсрĕç,—
Ĕçлеç Верховнăй Советра.
Колхозăн иксĕлми хăвачĕ
Пире хаваслă пурнăç пачĕ.
Çав пурнăçшăн, çулпуç, сана
Колхозник ăшшăн саламлать.

* * *

Авал эпир çапла юптарнă:
Пирĕн чăваш кĕнекине
Ним хăвармасăр çисе янă
Пыранăç хапсăнчăк ĕне[1].
Менле ĕне пулни вăл паллă,
Вăл курăнать юптаруран:
Патша калана: тĕттĕм халăх—
Маншăн чи шанчăклă чура.
Çапах та пирĕн ĕмĕт çунна,
Вăл туртăннă çутă патнех.
Халăх ĕненнĕ, халăх туйнă
Хăйĕн ăс-хакăл хăватне.
Çакна сиссе, чун пек тăванлăн,
Пирĕн патра шкулсем тума
Илья Николаевич Ульянов[2]
Вăй хунă, тăрăшнă нумай.
Çав йывăр вăхăтра çуралчĕ
Мухтавлă Иванов таланчĕ.
Каларĕ вăл: „Çут тĕнчере
Вăйлийĕ çук та этемрен".
Анчах культурăн аслă çулĕ
Пуçланчĕ çут Октябрьтен.
Вăл пачĕ халăха хăюлăх:
Ĕçле, çĕнтер те хĕперте!
Халăх таланчĕпе вăй-халĕ
Хăтăлса тухрĕ тĕтререн.
Тÿр çул кăтартрĕ Ленин—Сталин
Мухтавлă партийĕ пире.
Çулпуççене чăваш вуларĕ
Хăй чĕлхипе; мĕн ачаран—
Хисеплĕ асанне таран,
Алла тытса чăваш букварĕ,
Пур халăх вĕренме пуçларĕ.

---

[1] Ваттисен ĕлĕкхи сăмахĕ.
[2] И. Н. Ульянов—В. И. Ленин ашшĕ, халăх шкулĕсен инспекторĕ.

Аслă шкулта та вĕренетпĕр
Ытти халăхсемпе пĕр тан.
Ĕлĕк тесессĕн, тĕлĕкре те
Вăл пирĕн чăвашсен пулман.
Культура чаплă чечекленчĕ,
Ун вăйĕ ўснĕçем ўсет.
Халь хамăрăн интеллигенци
Халăх телейĕшĕн ĕçлет.
Кĕнекесем пиншер тухаççĕ,
Нумай тухаççĕ хаçатсем.
Тăван чĕлхепеле вулаççĕ
Пурне те халĕ чăвашсем.
Чăваш ĕç çынĕ Ленинпа та
Халь сăмахлать ав чăвашла.
Тăван çулпуçăмăр, саппа та
Хăй чĕлхипе вăл канашлать.
Толстой та Пушкин, Руставели,
Шевченко, Горький те Шекспир
Пирĕнпеле халь пĕр чĕлхеллĕ,
Тĕпчетпĕр вĕсене эпир.
Чечекленет тăван чĕлхемĕр
Пухать вăл хăйĕн хăватне,
Ун çĕнĕ ĕмĕрти хĕлхемĕ
Пырать кашнин чĕри патне.
Ўсет тăван литература,
Ўсеççĕ пирĕн ĕмĕтсем.
Çĕршыв çинчен мухтавлă юрă
Хываççĕ пирĕн поэтсем.
Ĕлĕк-авал чăваш хăрана
Хăй юррине çын илтесрен.
Юман хăвăлĕнче усрана
Вăл çав юрра мĕн ĕмĕртен.
Октябрьпе çеç пирĕн юрă
Тин тухрĕ çут тĕнче умне,
Янраса кайрĕ уй-хир урлă,
Мускав та илтрĕ сассине.
Чăваш театрĕ те çуралчĕ
Граждан вăрçи вут-хĕмĕнче.
Вăл аслăланчĕ, хăватланчĕ
Ирĕк совет саманинче.
Пулман ĕлĕк художник ячĕ,—
Халь çитĕнчĕç художниксем,
Музăкçăсем, юрăçăсем,—
Пурте вĕсем халăх таланчĕн
Хĕвелпе ўсне калчисем.
Çулпуçăмăр, эсех хăтартăн
Тискер трахомăран пире.
Пире эс куç çутийĕ патăн
Курмашкăн аслă ĕмĕре.
Пирĕн хастар та сывă халăх
Тăванлă халăхсемпеле
Куллен хаваслăн та пĕрле
Ĕçлерĕ пур çĕрте те лайăх,
Пĕрмай вăл утрĕ çўлелле.
Тăван çĕршыв вара тивлетлĕн
Курса хакларĕ çав ĕçе.
Республика çинче хĕлхемлĕн
Ав Ленин орденĕ çиçет.
Çапла çĕршыв туса çитерчĕ
Телейпе савăнăç çуртне.
Çĕнĕ хĕвел çўле çĕкленчĕ,
Çутатрĕ чаплă çурт ăшне.
Вăл пулчĕ—çĕнĕ Конституци,
Вăл ялкăшса çутатнăçем
Мăнаçлăн, чаплăн тухса тăчĕç
Иртнĕ кунхи çĕнтерўсем.
Çĕнĕ Законăмăр хăвачĕ
Çĕн самана пуçласа пачĕ.
Çулпуçăмăр, мухтав сана!
Мухтав çав аслă Закона!

* * *

Çулпуçăмăр, тăван аттемĕр,
Вĕри ĕçпе кĕрешўре
Татах та пысăк ĕмĕтсемĕр
Чĕнетчĕç малалла пире.
Анчах ют çĕршĕн сăхă нимĕç
Хăйĕн ылханлă йăвинчен
Тискеррĕн сикрĕ пире хирĕç
Вăр-хурахла, кĕтмен çĕртен.
Хаяр та шелсĕр вăрçă вучĕ
Ўксен чечеклĕ çĕр çине,
Пур халăх йышĕ паттăр тăчĕ
Хўтĕлеме хăйĕн çĕрне.
Чăваш çынни те тухрĕ хăрăс
Ыттисемпе пĕрле вăрçа.
Фронта ун ывăлĕсем карĕç
Чăн-чăн улăпсем пек тăрса.
Çак вăрçăра тăшман çитсессĕн
Мухтавлă Ленинград умне,
Пур халăхсем те кар çĕкленчĕç
Пўлмешкĕн нимĕçсен çулне.
Кунтах çĕкленчĕ пирĕн паттăр
Чăваш ачи—Смирнов Иван.

Ун çулăмлă ятне паян
Эпир çак уявра чыслатпăр.
Вăл çапрĕ тăшмана хаяррăн,
Вăл выртрĕ сĕмсĕр танк айне,
Анчах хăй урлă каçармарĕ,
Ылханлă нимĕçе ямарĕ
Юратнă Ленинград патне.

Çĕршывăмăр чĕри—Мускавшăн
Пур халăх çапăçнă чухне,
Ыттисемпе пĕрлех чăваш та
Кăтартрĕ хăй паттăрлăхне.
Тăвата çул пĕр лăпланмасăр
Кĕрленĕ юнлă вăрçăра,
Хăватлă Хĕрлĕ Çар канмасăр
Тăшмана ватнă хушăра,—
Хĕвеллĕ, çÿллĕ Кавказран та
Сив Çурçĕрти тинĕс таран
Таттисĕр пынă пур фронтра та—
Чăваш ачисене куран.
Ывăлсене аннемĕр—Атăл
Пиллерĕ аслă хăватне:
— Телейлĕ çул сире сунатăп
Çитмешкĕн çĕнтерÿ патне.
Сталинградра чĕртнĕ хăюлăх
Малтан мала, малтан мала,—
Дон урлă, Çурçĕр Донец урлă,
Ват Днепр урлă, Днестр урлă,
Шав малалла, анăçалла,
Васкатрĕ паттăррăн, сатуррăн
Прутпа Дунай та Висла урлă
Балканалла, Карпаталла,
Унтан татах та малалла.
Паян ак Украина çĕрĕ
Татах туллин чечекленет.
Кĕлленнĕ Белорусь та чĕррĕн
Пурнăç тумашкăн çĕкленет.
Карел, литовец, эст, латышĕ—
Совет халăхĕсен пур йышĕ,
Каллех ак ирĕке тухса,
Сывлать, ĕçлет хавасланса.
Çав çĕрсенче эпир куратпăр
Чăваш ывăлĕсен йĕрне.
Вĕсем кĕрешрĕç питĕ паттăр
Пур халăх йышĕпе пĕрле.
Çĕнтерÿпе мухтавлăх çулĕ
Германи урлă уртăнать.
Хăватлă Хĕрлĕ Çар хăюллăн
Пырса кисретрĕ Берлина.
Çулпуçăмăр, тăван аттемĕр,
Пĕлен эс паттăрсен ятне.
Пур паттăра эс çитĕнтернĕ,
Пилленĕ халăх хăватне.
Хăшне эс паттăр арăсланăн
Вăйне парса, кăтартнă çул.
Хăшне эс вутлă çунат панă,
Калана: ăмăрткайăк пул!

Акă Петров, чăваш çынни,
Ун ячĕ ялкăшать сÿнми.
Çав пултаруллă генералăн
Ырми-канми сапĕрĕсем
Ĕçленĕ, хывнă пит хастарлăн
Çут çĕнтерÿ кĕперĕсем.
Хăватлă çарăн хурçă маршĕ
Кĕрленĕ кĕперсем çинче.
Петров ятне, юратнă Маршал,
Кăтартнă эс приказсенче.
Чĕре патне хурса чыслатпăр
Паян кашни таса ята.
Ак Боголюбов—тепĕр паттăр,
Вăл çитĕннĕ Шупашкарта.
Пур чаплă орден кавалерĕ
Тăрать мухтавлăн çуталса.
Вăл Рокоссовскипе ĕçлерĕ
Ун штаб начальникĕ пулса.
Пур пирĕн генерал Макаров,
Пур урăх полководецсем.
Чăваш çĕршывĕ, Шупашкарĕ
Ĕлĕк курман ун пек ятсем.
Орлов—Гастелло ученикĕ,
Васильев, Лаптев, ыттисем...
Геройлăхшăн çук пирĕн чикĕ,
Пурте Улăп пекех вĕсем.
Герасимов, Ефимов, Яшин,
Пур Кочетов—çиçĕм чĕре.
Вĕсен ятне кашни ачашшăн
Кăкăрĕнчех илсе çÿрет.
Çулсем иртсе тĕнче лăпланĕ,
Тÿрленĕç йывăр сурансем,
Йывăр хуйха этемлĕх манĕ,
Çĕкленĕç çĕнĕ ăрусем,
Анчах çапах та пирĕн халăх
Асран кăлармĕ ĕмĕрне
Хăйĕн ялавлăха мухтавлă
Тăван ывăл-хĕрĕсене.

* * *

Юратнă çулпуçăмăр, аслă учитель!
Çунса кĕрлекен çапăçу вучĕ витĕр
Эс чĕнтĕн пире паттăрла кĕрешме.
Эс чĕвтĕн ырми те канми ĕçлеме.

Эс ăслăн калана вĕри сăмахсем
Çĕршыв вăй-халве, шанчăкне
çирĕплетрĕç;
Ялсем, хуласем, пур тăван халăхсем,
Пĕр чунлă кил-йыш пек, пĕр харăс
çĕкленчĕç.

Пĕрлешрĕç вĕсем аслă парти тавра,
Эс хушнă пек фронтшăн, пĕрле, пĕр
канашлăн
Пĕр тимĕрç лаççи пек кĕрлен
çĕршывра
Хаярлăх хĕçне хурçăран туптамашкăн.

Çĕршыв ĕçĕнче, çак пулас
çĕнтерӳшĕн,
Республика пирĕн юлмарĕ кая.
Вăл турĕ куллен çĕнĕрен-çĕнĕ ӳсĕм,
Вăл хучĕ çĕршывшăн пур-пĕтĕм вăя.

Çĕршыв умĕнчи тивĕçе пирĕн халăх
Чунтан кĕртсе пычĕ ĕçе, пурнăçа.
Çав ĕçшĕн пире ĕмĕрсем асăнмалăх
Тав турĕ çулпуç та тăван Хĕрлĕ Çар.

Ик-виç пилĕкçуллăх вучахĕнче ӳсвĕ
Республикăри заводсемваскасах
Çулпуçăмăр хушнă пек йышăнчĕç
ĕçлĕн
Фронтпа çĕршыв панă паха заказа.

Хаяр вăрçă вучĕ çунса йăсăрланнă
Çĕртен куçса килчĕç кунта заводсем.
Эпир вĕсене кĕтсе илнĕ тăванлăн,
Ĕçленĕ, ĕçлеççĕ хĕрӳллĕн вĕсем.

Ĕçчен чăваш ялĕ пĕр тăтăш ӳстерчĕ
Тырпул тухăçне, тăрăшса пур халтан.
Нумай колхозсем çĕршер пăт тыр
илеççĕ
Паха кăпкалатнă кашни гектартан.

Маттур, вăйпитти арçынсем
асансассăн
Фронта—курайман тăшмана аркатма,
Пин-пин çамрăксем ĕçе тăчĕç
хавассăн,
Хĕрарăмсем тăчĕç пĕрле ăмăртма.

Цехра станоксем пĕр самант
чарăнмарĕç,
Хирте чарăнмарĕç ĕçчен тракторсем.
Куллен ӳссе пычĕ çĕн кадрсен çарĕ,
Ĕçре ӳссе пычĕç паха маçтăрсем.

„Пĕччен ик-виç çыншăн ĕçле те ан ывăн,
Боец хĕрхенмест-тĕк фронтра хăй
юнне,
Тара ан хĕрхен-ха мухтавлă
çĕршывшăн,
Ĕçре çĕнсе ил фронтовик тивĕçне".

Çапла кашни çын хăйне хăй
паттăрлатрĕ,
Çапла ĕç вĕрерĕ хирте, заводра
Хăйне чăваш халăхĕ чыслăн кăтартрĕ
Чи аслă та йывăр, хĕрӳ вăхăтра.

Ахаль-и республика тивĕçлĕ пулчĕ
Мухтав ялавне ик хутчен те илме.
Республика пĕлчĕ, республика курчĕ
Тӳр кăмăллă ĕçĕн чăн-чăн илемне.

Совет çĕрĕн чапĕ—тăван Хĕрлĕ Çар,
Нимрен те çук мар вăл, çителĕксĕр
мар.
Вăл—тутă, тумланнă; ун техника
тулăх,
Вăл—паттăр, хăватлă, ялан
пултаруллă.

Пур халăх чунран вăйлăн пулăшнипе
Вăл утрĕ чăн-чăн Улăп утăмĕпе.
Вăл аслăн çапла çĕвтерсе пынăçем
Çĕкленчĕç, вăранчĕç ялсем, хуласем,
Çĕкленчĕç татах çĕршывсем,
халăхсем.

Кĕлтен те кĕлтен капан хывăнать,
Тумламăн-тумламăн Атăл тулать.

Атăл таппи ĕмĕрне типес çук,
Халăх хăвачĕ нихçан пĕтес çук.

Çак шухăш пирте çунса тăчĕ ялан,
Ĕçленĕ те пурăннă эпир унпалан.
Эпир нимĕскер хĕрхенмен Хĕрлĕ
Çаршăн,
Вăйлантăрччĕ, тенĕ, ун суламлă
маршĕ.

Эпир туса панă ăна бронепоезд,
Эпир туса панă хăвэтлă танксем.
Вĕсем çĕнтерӳллĕн вăрçа кĕрсе
кайрĕç,
Тискер тăшмана аркантарчĕç вĕсем.

Мăн Атăл çинчен Ферапонт
Головатый
Чĕнсе сас пани асилтерчĕ пире
Кузьма Минина,—çав питех
пархатарлă,
Тахçан иртнĕ чаплă, манми ĕмĕре.

Тăван совет çĕрĕшĕн—хамăр чĕрешĕн,
Чыспа телее тăшманран сыхлама
Хăйсен укçине хывнисем çĕр
пиншерĕн,
Çулпуç, эс пĕлетĕн, пирте сахал мар.

Нумайăн вĕсем—ырă, тӳрĕ чĕреллĕ,
Çĕршывшăн чунне пама хатĕр çынсем,
Вĕсем пуррипе пирĕн халăх телейллĕ,
Пыратпăр çампа малалла çĕнтерсе.

Çĕртен татăлман—çĕр пекех паттăр
пулнă,
Пĕлетпĕр эпир паттăрсен законне.
Тырпул, нумай çимĕç эпир парса
тăнă
Тăван Хĕрлĕ Çарăмăр аслă фондне.

Çӳлтен çутатать çĕнтерӳ çут хĕвелĕ,
Çулпуçăмăр, эс çутса патăн ăна,
Хĕвел çуттинче пирĕн халăх телейллĕ,
Хĕвел çуттинче вĕл ĕçлет, савăнать.

Тав та мухтав сана, аслă аттемĕр,
Сталин хĕвелĕмĕр, сан ятупа
Çакă юрра халăхпа кĕвĕлерĕмĕр,
Сан умăнта халь тăватпăр тупа.

* * *

Асаттесен çĕрĕ çинче,
Мухтавлă Атăл хĕрринче,
Эс панă ирĕк хӳттинче,
Совет ялавĕ айĕнче
тупа тăватпăр!

Çĕршывшăн шанчăклă пулма,
Ăна юнпа чуна пама,
Санăн ятна çӳлте тытма,
Эс сунна çулпала пыма
тупа тăватпăр!

Тивлетĕмĕр—чысăмăра
Куç пек тĕп-тĕрĕс упрама,
Пур халăхпа пĕрле утма,
Тăшман пулсассăн—аркатма
тупа тăватпăр!

Çĕре-аннемĕре ялан
Савса пăхса халăхпалан,
Пуян тырпул туса илме,
Выльăхсем йышлăн ĕрчетме
тупа тăватпăр!

Заводсене, фабриксене
Татах та вăйлăн ӳстерме,
Хамăр телейшĕн вĕсене
Тухăçлăнрах ĕçлеттерме
тупа тăватпăр!

Тăван совет культурине
Хăватлăн чечеклентерме,
Интеллигенци çар-йышне
Хĕрӳллĕнрех çитĕнтерме
тупа тăватпăр!

Ĕçчен тесе чĕнеç пире.
Ĕçчен ятне çӳлте тытма,
Ялан та ĕмĕр-ĕмĕрех
Тӳрĕ ĕçпе чапа тухма
тупа тăватпăр!

Паян пирĕн уяв кĕрлет,
Телейлĕ халăх хĕпĕртет.
Телейлĕ халăх, ирĕк халăх
Тăван çулпуçăмăр, сана
Чи вăрăм ĕмĕр пурăнмалăх
Чун-чĕререн сывлăх сунать.

---

## ЧИ ЫРĂ ЯТ.

Урал ĕçчене хурçă шăрататать,
Донбасс ĕçченĕ кăмрăк кăларать.
Çулйĕр ĕçченĕ пуйăс çӳретет.
Çитес çĕре васкавлан çитерет.
Уй-хир ĕçченĕ тырă-пул акать,—
Çĕршывшăн пурте пĕр пекех паха.
Кашни ĕçе тӳр кăмăлпа эс ту.
Кашни ĕçре сан пултăр юрату.
Ĕçчен ятран халь пирĕн çĕршывра
Тата мĕскер-ши пултăр ырăрах!

Поэт хĕрӳллĕн юрă кĕвĕлет,
Ĕçе чĕнет вăл çутă хĕвеле.
Ăс-хал ĕçченĕ те ахаль тăмасть,
Йĕрлет, шырать, тĕпчет вăл атома.
Çапла ĕçре çĕкленнĕ ĕмĕртен
Тĕнче хуçи — никам çĕнми этем.
Алли ун çитĕннĕ ĕçре кăна,
Ĕç илемлетнĕ çак планетăна.
Анчах Тăван çĕршывра çеç ĕçе
Тĕрĕссипе хураççĕ тивĕçе.

Ют çĕрсенче — этем тăвать кермен,
Хăйне ăна унта кĕме пӳрмен.
Кăмрăк чавать вăл ĕмĕр-ĕмĕрех,
Хăй хытăркать çапах та сивĕре.
Хăй тупнă хаклă ылттăнпа ĕнче
Курать вăл хуçа хĕрĕн мăйĕнче.
Ĕçрех эс хуçăл, ан çĕкле пуçна,
Çĕр тĕпĕнче тин тупăн канăçна.

Этем ыр ячĕ тенине унта
Сутаççĕ те илеççĕ ылттăнпа...
Кунта кăна этем хăйне хуçа.
Пур алăка хăюллăн вăл уçать,
Кĕрет чи çутă, чи кервен çурта,
Хавасланса, мăнаçлăн вăл утать.
Чи аслă çын алă парать ăна,
Кăмăлласа, тус пек тăвать хăна,
Пурнăç çинчен йăлтах ыйтса пĕлет,
Çунать тăванлăн сывлăхпа телей.
Сан чĕрӳне вăл витĕрех курать:
Ĕçре туяннă эс чи ырă ят!

Хĕвел тухсассăн, илĕртен ирпе
Утатăп эпĕ анлă уй-хирпе.
Эп тĕлĕнетĕп хамăр çĕршывран:
Ун чиккисем — çут тинĕссем таран
Сăрт-ту, шыв-шур та çеçен хир,
вăрман,
Ку — халăхăн, ку — санăн та, ку —
ман!
Телей хĕвелĕ тухнă Кремльтен,
Хĕвел çутти кĕрет кашни пӳрте.
Çĕклентерсе чуна та хăвата,
Ку пирĕн Конституци çутатать!

Шыра, этем, пур тĕнчипе шыра,
Тупаймăн эс кун пек çут çĕршыва!
Çитмĕл чĕлхеллĕ халăхсем паян
Кунта ĕçпе кĕрешӳре тăван.
Вĕсем çулпуç хĕвелĕн çуттинче
Тăваççĕ аслă, савнăçлă тĕнче.
Çак кил-йышра, куратăн-и, юлташ,
Тек ĕнтĕ мĕскĕн чура мар чăваш!
Ман тăван халăхăм ĕçчен ята
Çӳлте те чыслăн упраса тытать.

1946.

## АТĂЛ ÇИНЧЕ.

Хĕвел хăйĕн кулленхи йĕрĕпе Атăл çине çавранса çитрĕ. Вăрăм юпа пек тăсăлса выртрĕ вăра аслă шыв тăрăх, инçетри кăвакрах тĕтрере çухалакан Йăлăм хĕрринчен пуçласа сăрт çинчи хула умне çитиччен, çап-çутă ылттăн çул. „Хĕвел çулĕ",— шухăшларĕ, ун çине пăхса, шыв хĕрринче шыва кĕмелли костюм вĕççĕн тăракан яштака хӳхĕм пӳлĕ хĕр. Вăл,

кунта халь тин çитсе салавнăскер, уçă шыва тӳрех чăмма именерех панă. Кунсăр пуçне ăна тата ун умĕнче йăлтăртатса выртакан тӳлек çутă çул манăçа яричченех килентернĕ. Аслă Атăл тăрăх — хĕвел çулĕ. Инçете тăсăлать çав çул, чĕнет, илĕртет. Хĕрĕн çуллахи хĕвелпе пиçсе кĕренленнĕ хулпуççийĕсем çине ярăм-ярăмăн анакан сарăрах çӳçĕн çăра кăтрийĕсем ăшĕнче каç умĕнхи хĕвелĕн ылттăнĕ ачашланать. Хĕр ăна лайăх туять. Çавăнпа, темле, кунрă ачашлăха çĕре ӳкерсе çухатас мар тенĕ пекех, пĕр хускалмасăр тăрать вăл. Унăн таса, хăмăртарах кăвак куçĕсем „хĕвел çулĕ" тăрăх, инçетри тĕтрере тĕлĕрекен йăлăм патнелле туртăнаççĕ. Мĕн-ши унта?

Атăл питĕ лăпкă. Вăл хăй юхнине, пуçăннине никама та палăртасшăн мар пек, миçе ĕмĕр ĕнтĕ çакăн пек пĕр улшăнмасăр лăпкăн малалла юхса выртать. Вăл савăнать. Анчах ун савăнăçĕ тарăн та тӳлек. Мăнаçлă. Вак-тĕвек шарлашка юханшывсем пек çăмăллăвса ахăлтатмасть вăл, мĕншĕн тесен пурнăçа вăл çителĕклех курнă. Атăл — темиçе çĕр вак-тĕвек юхан шывăн тăван амăшĕ. Ун çинелле пĕчĕк ачасем пек макăрамакăра е чарусăр савăнăçлăн кĕрлесе чупса кĕрекен пĕчĕк шывсене вăл яланах хăйĕн тарăн кăмăлĕпе ачашласа лăплантарать. Лăпланăр, ачасем, лăпланăр! Тăван амăшĕ пек хаклă, çывăххи, юратни нимĕн те çук ачисемшĕн. Ачисем — амăшĕпе пĕрле чухне телейлĕ.

Атăл васкамасть. Вăл шанчăклăн тăвать хăйĕн ĕçне. Тĕнчери шывсен виçине шайлаштарса, пĕр тан тăвассишĕн ĕçлемелле унăн. Вĕçĕмсĕр юхмалла, вĕçĕмсĕр малалла каймалла.

Нина лăпкă хĕр ача мар. Вăл, яланах васкама юратаканскер, халĕ Атăл лăплантарнипе çеç çакăн пек пĕр хускалмасăр тăрать. Нина Атăла вăл çынна лăплантарма, ачашлама, савăнтарма, хушăран хурлантарма, унтан татах лăплантарма пултарнăшăн юратать. Вăл Атăл хĕрринчи ялта çуралнă. Анчах ăна, тĕрексĕрскере, ăншăртлă амаçури пĕчĕклех хăй ашшĕнчен тата амăшĕ пек хаклă Атăлтан уйăрса, хулана, чулсем хушшине, вăл хăнăхман çĕршыва кайса ячĕ. Тăван ашшĕ амăшĕсĕр хурлăх курса, пăчăхса ӳснĕ вăл унта. Этем ĕмĕчĕ — нихăçан сӳнме пĕлми кăвар. Ĕмĕрĕмĕр çутатса пырать вăл умри çула: Нинăн ĕмĕчĕ малтанах уншăн ют пек туйăннă чул çуртсем хушшинче те витĕмлĕн ялкăшнă. Ĕмĕт тăван Атăл еннелле туртăннă. Акă халĕ вăл „хĕвел çулĕ" тăрăх тата малалла çиçĕнет.

Нина уçăлса çитнĕ пек туйрĕ хăйне. Ĕнтĕ шывалла чăмма та юрать. Анчах — çул. Епле илемлĕ Атăл тăрăх ярăнса выртакан „хĕвел çулĕ"! Епле тӳрĕ çул — Нинăн савăнăçĕ. Иртнĕ кунсенче пурнăç çулĕсем кукăр-макăр, тумхахлă пулнă. Нина халь çулйĕр техникĕ. Хăй çул хывать. Çулйĕр технкумĕнчен вĕренсе тухсан, республикăн аслă çулне хывнă çĕрте ĕçлеме тытăннă вăл. Аслă тракта Нина каснă. Упа йăлăмĕ урлă, кашкăр çӳрекен шурлăхсене пусарса, ярт каçса выртрĕ пĕр сыпăксăр, ирĕклĕ тӳрем тракт. Нина сăнне пайтах фотографсем, художниксем ӳкерсе илчĕç. Çулйĕр паттăрĕ! Хаçатсенче хăйĕн, хăй пек мар пулса тухакан кулăшларах сăн-ӳкерчĕкне курсассăн, вăтанса хĕрелчĕ Нина. Каçал Нина çĕнĕ дамба тунă çĕрте техник пулса ĕçлерĕ. Ун пек дамбăсене тума, этем вăйĕсĕр пуçне, энтузиазм текен хĕрӳлĕх кирлĕ. Нинăн вăл хĕрӳлĕх халăха çĕклентермелĕх те пур. Дамба ăнăçрĕ. Нинăна республика уявне ирттерме правительство столицăна хăнана чĕнсе илчĕ. Уяв ăна юлташсем умĕнче тата тепĕр хут вăтантар-

чĕ. Уяв кунĕнче Нинăсем, шыва кĕме каяс тесе, ирех тухнăччĕ. Илемлĕ площадь урлă иртсе пынă май, Нина юлташĕсенчен пĕри — Ира, сасартăк тĕлĕннĕн кăшкăрса, пурне те шартах сиктерчĕ:

— Пăхăр-ха, пăхăр! Нинăна ăçта кăларса лартнă!.. Пурте эрешлĕ садпахчи карти çумне çапса тухнă ĕç паттăрĕсен портречĕсем хушшинче хăй тĕллĕн йăлтăраса тăракан пысăк хĕр сăнĕ çине куç хыврĕç.

— Нина Вавилова — çулйĕр ударницè, — вуласа илчĕ Ира. Хĕрсем, пĕр-пĕрин çине пăхса, савăнăçлăн ахăлтата пуçларĕç.

— Ну, ĕçлене те художникĕ! Пăххалĕ, епле йĕрĕлчĕ туталлă туса хунă вăл Нинăна... Çӳçне мĕнле авкалантарнă!

— Юрĕ-çке, юрĕ... Тăрăхлассипех çав эсир...

Нинăн вăтаннипе çавăнтах таçта путса анас килчĕ. Художник унăн темĕнле ырă мар ĕç тунă пек те туйăнчĕ ăна. Çав вăхăтрах ун чĕринче тулли те хаваслă кăмăл çĕкленчĕ. Хĕрсем вара, Нинăна çавăрса илсе, Атăл хĕррипелле шаклаттарса кайрĕç...

Паян ак Нина пĕчченех. Çӳçеннĕ пек пулчĕ вăл. Хĕвел анса пынăçемĕн ун умĕнчи „хĕвел çулĕ" те тĕксĕмлене пуçларĕ. Васкамалла, унсăрăн ку çул часах çухалма пултарать. Çак шухăш çинче Нина, саланнă çӳçне хĕрлĕ тутăрпа пуçтарса çыхса, шывалла ерипен утса кĕчĕ те, умри „ылттăн çулĕ" çине сулăмлăн ывтăнчĕ. Уçă шыв унăн пĕтĕм ӳт-пĕвне кăвар пек çупăрласа илчĕ, чăмăртарĕ. Çан-çурăмĕ тăрăх электричество чупса кайрĕ. Сывлăшĕ пыр анинче пӳлĕнчĕ. Савăнăç! Çак сăмах çеç çаврăнса тухрĕ унăн кăкринчен. Нина вара, шывра çухалса кайнă пек пулнă шăмшакне пуçтарса хытарчĕ те, аллисене малалла тăсрĕ. Унтан çав çирĕпленнĕ аласемпе харăссăн туртса илчĕ вăл хăйне хирĕç юхакан уçă шыва. Унăн тулли кăкăрне уçă сулхăнлăх пырса çапăнчĕ. Ю-ю! шуса кайрĕ Нинăн авăнчăк та тăп-тăп ӳтпĕвĕ „хĕвел çулĕ" тăрăх тăвалла. Пурнăç! — ярăнуллăн туртрĕ Нинăна татах Атăл, унтан тепре, унтан татах... татах...

Хӳхĕм хĕр — пурнăçа пĕтĕм туйăмĕпе юратакан вĕри чĕреллĕ этем, çивчĕ туйăмлă Атăл хĕрĕ, ялан шывра савăнакан уланкă пек, çăмăллăн ишсе кайрĕ.

* * *

Чăнкă сăртăн чуллă хысакĕ çинче, шывран аякра мар ларакан будка умĕнче, кăвайт çуннă. Ывăннă çулăм хăйĕн вĕтĕ чĕлхисемпе кăвайтăн икĕ айăккинче выртакан пысăк чулсене, уйрăмăнах вĕсем çине урлă хунă юман алтуйи çинче çакăнса тăракан хура витрене, тĕпĕнчен пуçласа хăлăпĕ патне çитиччченех, вăйсăррăн çуласа хăпарнă. Çулăм паçăрах ывăннă. Хуçи ăна асăрхаман. Хура витрере пулă яшки вĕренĕ. Вĕтĕ йышши пулăсем, вĕрекен шывра сиккелеме йăлăхса, пĕтĕмпех çиеле тухса выртнă. Пурте вĕсем нимĕне пĕлтермен шурилнĕ куçĕсемпе таса сенкер тӳпене тĕлленĕ. Хуçи асăрхаман вĕсене. Вăл — çине çĕтĕк брезент пиншак, мамăк пустарса çĕлетнĕ йĕм тăхăннă, пуçĕ çине симĕс сукна тӳпеллĕ „фимка" лартнă, урисене сăран пахил тăхăнса çăпата сырнă çăмламас сăн-питлĕ этем — тутăхса хăйăрланнă якăр çинче ларнă. Ларнă вăл пĕр хускалмасăр, çумăрпа хĕвел айĕнче мăкланнă чул катăкĕ пек курăнса... Унăн сăн-питĕнчи хура шăрта тĕллĕн-тĕллĕн пурнăç извеçĕ тивнĕ. Çав шăрт ăшĕнчи куçĕсем унăн вĕри сăмала тумламĕсем пек çуталса тăнă. Икĕ тумлам. Вăл тум-

ламсем хăйсен сăхă çутипе Атăл çинчи илемлĕ картина çине тăрăннă — икĕ сиенлĕ сăнă пек, сăпса сăннисем пек!

Халĕ ак хĕр ача тăвалла ишет. Туран Астрахань пароходĕ анать. Сăмала куççем — çав çавах хĕр çине сăнă пекех тăрăнса ларнă. Туртсан та уйăраймăн, темелле.

Пароход çывхарса килчĕ. Çыран хĕрринелле ÿсĕмлĕ хумсем чупа пуçларĕç. Хĕр тăвалла ишме пăрахрĕ. Месерле, шыва майлăн выртрĕ вăл. Вылянчăк хумсем пĕрин хыççăн тепри пырса ыталаççĕ ăна, кăкри урлă каçаççĕ; хул айĕнчен е чĕри тĕлĕнчен чăмпалт! анчах чуптуса хăвараççĕ. Нинăна ырă. Хумсем халĕ васкаççĕ. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри çыран çине пырса çапăнаççĕ.

„Вавил... Вавил... Вавил...“ — виртлешеççĕ хумсем. Этем итлет. Тивĕçлипе виртлеççĕ-и, тен, ăна чарусăр хумсем? Кам пĕлет?

Чăн та, ак çак тутăхнă хуçăк якăра пăрахса хăварнă пекех, ывăтса хăварчĕ Вавила хумлă-тăвăллă пурнăç хăй çыранĕн чулĕсем çине. Тутăхнă якăр та сăмала чунлă Вавил. Мĕн пулнă-ха унăн тата? Пуянсен картине кĕрес тесе, тикĕт-сăмалапа сутă тунă. Унăн иртнĕ кунĕсем тикĕт пек хура, сăмала пек тăкăскă. Тĕксĕм. Мĕн вăл çутă? Пулнă вăхăт, çутта турткăнас кăмăл та килкеленĕ, анчах Вавил чăн-чăн çутта нихçан та путлĕ ăнланман. Çутти! — тенĕ вăл. „Çутти“ йÿçĕ пулнă, суранлă чуна тата хытăрах çунтарнă. Акă халĕ те, хурама хуппинчен тунă кивĕ пештĕрте, çăкăр татăкĕпе юнашар унăн „çутти“ выртать. Çавăн çуттипе сахал мар утнă Вавил хăйĕн кунçулĕ тăрăх. Уявсем, туйсем пулнă. Вавилăн сылтăм ури сулахаййинчен пĕр вершук кĕске пулин те, хытă сикнĕ вăл туйсенче, юрланă. Ӳсĕр юрăра урă ĕмĕт те вĕлкĕшнĕ.

„... саррине, вăрăммине,
Ик çÿç хĕрри кăтрине...“

„Кривнĕк петак мар“, — тенĕ яланах туй вăхăтĕнче Вавил ашшĕ — Кĕçтенттин. Ашшĕн сăмахĕ — саккун. Çирĕм çула çитсен, Вавила хĕр туппа пачĕç — „сарринех, вăрăмминех, ик çÿç хĕрри кăтринех...“

Ирхине тăрсан Вавил „турă çырса панă“ арăмне — Укçинене сÿс тилхепепе „ăса кĕртрĕ“. Çапла пуçланчĕ Вавил пурнăçĕ. Унтан пуçланчĕ тикĕт-сăмала сутти. Иртет хĕл, çу иртет, юр çăвать, çумăр çăвать. Вавил тикĕт-сăмалапа ялсем тăрăх çÿрет. Киле час-часах сыпса таврăнать. Укçине çурăмĕ çине пăр çунă пек патак тăкăнать. Укçине чунĕ юнăхать. Вавил чунĕ юн ыйтать. Çак „тамăкрах“ Укçинен хĕр çуралать — инкек çине синкек. Ывăл ача çуралсассăн, тепрер ят çĕрĕ хутшăнасса кĕтсе тăначчĕ... Пулмарĕ. Айăпĕ татах Укçине çине ÿпĕнет. Халь ак шухăшлать Вавил: якăр та хуçăлать... Укçине тÿсеймерĕ...

... Пуçланчĕ вăрçă. Халăх вăрçа тухса кайрĕ. Вавилăн сылтăм ури сулахаййинчен пĕр вершук кĕске. Вăл вăрçа юрăхсăр. Ял çинче пĕрисем, упăшкасăр юлса, тем чухлĕ нуша кураççĕ, вĕçĕмсĕр куççулĕ тăкаççĕ. Теприсем ку хушăра иртĕнме пăхаççĕ. Çын нушипе усă курса, хăйсен кĕсйине, хăйсен пырне тултарасшăннисем те çук мар. Чăн та, Вавил йышшисене ялта ирĕк пулчĕ.

Пĕтнĕ Укçине вырăнне тупăнчĕ çĕнĕ арăм. Ку хăватлăскер пулчĕ:

— Мана çын ачи кирлĕ мар, эпĕ хам тума пултаратăп, — терĕ вăл чималтанах. Вара Укçине хĕр ачине, ултă çултискерне, хулана тикĕт илме кайсан... „çухатса хăварчĕç“...

... Вавил хăйĕн ăнсăртран сыпăнма пуçланă шухăшĕсене çак тĕлте туртса татрĕ. „Ку сăмала тени, хам та сисмен, мана каяллах сĕтĕрсе кайнă...

путарасшăн пулас...“ тавçăрса илчĕ вăл.

Хĕвел анчĕ. Шыва кĕрекен хĕр çыран хĕрринелле тухрĕ. Мĕнле хĕр вăл: сивве те парăнмасть, вилĕмрен те хăрамасть. Халĕ Атăл шывĕ кантăк пек касать пуль, ара! Пĕр уйăх çурă патнелле пулать ĕнтĕ, çак хĕр ир те каç та ялан шыва кĕрет. Ялан пĕччен. Ялан шыв тăрăх ўкекен хĕвел йăлтăравĕ çине сикет. Ирхине — анаталла, хĕвеле хирĕç, каç умĕн — тăвалла, шыва хирĕç, хĕвел çук — тўрех çырана урлă, юхан шыв варринелле ишет.

Уйăх çурă хушшинче Вавил çав хĕрĕн мелĕсене пĕтĕмпех пĕлсе çитрĕ. Акă халь хĕр ача шывран тухрĕ. Сулхăнне-мĕнне те пĕлмест. Санăн ун çине пăхнипех çан-çурăм сў тăвать, вăл пур — чĕтремест те.

Вавил çак хĕрĕн кашни утăмне, кашни хусканăвне куллен сăнаса пынă. Тарăхнă вăл, тепĕр чух намăс сăмахсем каласах вăрçнă хăй тĕллĕн. Анчах паян ун ăшĕнче темĕнле ыратакан япала вăранчĕ: „Мĕне курса асаплантарать-ши ку хĕр хăйне-хăех. Ашшĕ-амăшĕ мĕншĕн чармасть-ши? Пур-ши вĕсем?!“

Вавилăн халĕ никам та çук,— çак пысăк чул пек пĕччен. Чул тесе пуранатчĕ вăл хăйне хăй. Анчах чула чун кĕчĕ. Вăл чун ырата пуçларĕ. Çак хўхĕм хĕре кашни кун курса пынипе, вăл Укçинен „çухалнă“ хĕрне тек-текех аса иле пуçларĕ. Тискер кайăк чĕринче тепле упранса юлнă этем совеçĕ хăй пурри çинчен малтан вăйсăр сасăпа пĕлтерчĕ, халĕ вăйланса кайрĕ çав сасă, çав ўкĕт, чĕрере йынăшакан суран пулса тăчĕ. Ăçта-ши вăл хĕр?..

... Нинăн чĕри хыттăн тапнă. Вăл нимĕн çинчен те шухăшламан халь. Унăн ўт-пĕвĕ тăрăх темле чĕрине килентерекен вĕри ырлăх ярăнса çўренĕ. Вăл — телейлĕ. Шыв ăна аналла чылай юхтарса кайнă пирки, каялла, çыран хĕррипеле, будка патĕнче ларакан тексĕм çын умĕнчен иртсе каймалла пулчĕ унăн. Çав çынран Нина темшĕн хăранă. Ир те, каç та çав çын хуçăк якăр çинче ларнă — тухатмăш пек.

Вавил, шывран тухнă хĕр хăй тĕлнерех çывхарса пырсан, сўннĕ кăвайчĕ еннелле çавăрăнса, аллинчи патакĕпе витре айĕнчи кĕле пăлхата пуçларĕ. Çак вăхăтра туран: Нина!— тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Вавил шартах сикрĕ, çўçенчĕ.

Çўлтен, кукăр сукмак тăрăх, шукăль тумланнă хĕр чупса анчĕ.

— Нина, эсĕ халĕ те шыва кĕретĕн-и? — тĕлĕнчĕ шукăль хĕр.

— Тухас та килмест шывран... анчах Атăлĕ ак часах шăнса ларĕ,— терĕ Нина, нумай ишнипе сывлăшĕ çавăрăнса çитеймен пирки пўлĕнекен сасăпа. Вавил, ку сасса илтсен, пĕтĕм шăм-шакĕпе чĕтренсе ўкрĕ.

„Укçине сасси... Укçинен хăранă чух çакăн пек пўлĕнсе тухатчĕ... Нина... Чăнах та Нина ятлăччĕ вĕт-ха вăл, мĕскĕн хĕр... Çак шыва кĕрекен хĕрĕн сарă та кăтра çўçĕ... Пĕвĕ... Акă халь сасси...— кăварлана пуçларĕç темĕнле хăрушă сурансем Вавилăн ăшĕнче. Икĕ хĕр, хаваслăн калаçса, çыран хĕррипеле тăвалла улăхса кайрĕç.

Атăла тикĕт тĕсĕ кĕчĕ. Вавил Атăл урлă Йалăм еннелле пăхса сăхсăхрĕ. Унтан чĕтрекен аллисемпе, сивĕне пуçланă пулă яшкине кăвайт çинчен илсе хăй умне лартрĕ те, катăк кашăкпа пĕр ирĕлсе кайнă пуллине тытрĕ. Маннă вăл: çиме пуçличчен „апат çулĕ“ уçмалла. Вара, пулла çăкăр çине хурса, пештертен хăй пурнăçĕн яланхи „çуттипе“ шăвăç курка илчĕ. Çак вăхăтра унăн юлташĕ харсăр йĕкĕт Якку та килсе çитрĕ.

— Апат тутлă пултăр, Вавил пичче!

Вавил хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ. Лешĕ те вара, кăмăлсăр пулса, будка çумĕнчи чул çине кайса ларчĕ. Чылайччен мăшăлтатрĕ Вавил. Хура витре çине пĕтĕм пĕвĕпе тăрăнсах кишеклерĕ мĕскĕн пулăсене.

— Ну, кайрăмăр,— чĕнчĕ вăл Яккăва, шыв хĕрринчи кимĕсем патнелле уксахлама тытăнса.

Вĕсем кимĕпе шыв тăрăх бакенсене çутма кайрĕç. Якку аллинчи кĕсменсем шывпа вăрттăн калаçса пынă май, Вавил чĕрине паçăрхи шухăш тата хытăрах кышлама тытăнчĕ. Кичем. Темĕн ишĕлет Вавил ăшĕнче. Вĕсем малтанхи бакена çитсе çутрĕç. Хăрушă сăмах асапланать Вавил пырĕнче. Вĕсен кимми тăвалла шăвать. Хăрушă сăмах шалтан тулалла тухасшăн: „вăлах... вăлах, Укçине хĕрĕ вăл,..“

Вавил асапланать. Хăй кунçулĕнче малтанхи хут чăн-чăн этем туйăмĕпе чĕтрет. Бакенсене пĕрин хыççăн теприне çутаççĕ вĕсем... Вавил темĕнле урăх, темĕнле ыратакан, сĕрĕмлĕ кăмăлпа ĕçлет.

Ун пуçĕнчи шухăшсем йывăррăн çаврăнаççĕ. Ку таранччен вăл сăмала пек сăхă чунлă пулнăскер, кĕçĕрхи çĕр иртнишĕн хăйне айăплать. Ун ăшĕнчи юлашки сăмала ирĕлсе тĕпренех пăтранса вĕрет. Вăл кĕçĕрех, халех шыраса тупма хатĕр паçăрхи хĕр ачана. Çак айăпсăр çын ури умне ӳксе, унтан каçару ыйтма хатĕр.

«Анĕ-ши вăл ыран?— шухăшлать Вавил.— Анмасан?! Çук, анмалла-ха вăл... Шыв ытлашшиех сулхăн мар».

Вавил, ăнсăртран тенĕ пек, аллисене шыва чиксе илет. Шыв, чăн та, ытлашши сивĕ мар.

«Анмасан?!— татах хускатать вăл хăйне-хăй.— Анмасассăн та эпĕ ăна пурпĕрех шыраса тупатăп. Ăна лайăх пăхса çитĕнтерне Совет правительствинчен каçару ыйтса хут çыратăп»,— шутлать Вавил.

Вăл кĕтет çĕнĕ ире, çĕнĕ куна. Пĕчĕкле „çухатса хăварнă“ хĕр ача халĕ çĕнĕрен тупăннишĕн унăн йывăр чĕри çăмăллăнрах тапма пăхать.

---



## ИВАН ИВНИК

### ÇУРКУННЕ.

I

Пуçларăм çырма. Çывхарать çуркунне.
Сармашкăн тапратрĕç садсем папкине,
Кикак киклатса каллех кайăкхур
Килет кăнтăртан. Ĕнтĕ тулăх шыв-
шур.
Акма тухасса вашаватлăн кĕтсе,
Колхоз витинче кĕçенеççĕ утсем.
Юсав тракторсем. Паян-тăк—паян
Тухма пултарать тракторист мăн уя.
Ĕçчен бригадир ĕнтĕ ĕçшĕн çунать,
Çŭремешкĕн пуçларĕ хире тахçанах.

II

Чечен çуркунне сарăлать çĕршыва,
Вăл пирĕн уйра çуратать вăй-хăват.
Паян колхозран утмăл пилĕк утпа
Уя тухса кайрĕç кăвак çутăпах.
Паян тракторист укăлча хапхине
Яри уçайса ĕçе тухрĕ тинех,
Хĕрсе сухаланă хире паянах
Ырă тĕш машинпа акăнать.
Çурхи ăша çил уй-хир тăрăх çŭрет,
Пахалăх инспекторĕпе пĕрех.

III

Сип-симĕс парка симĕсленчĕ çерем,
Ĕнер ăшă çумăр шŭтерчĕ çĕре.
Ĕнер пирвайхи аслати сассине
Илтейрĕмĕр эпĕр уйра каçхине.
Ак халĕ паян ĕнтĕ кĕр калчисем
Пĕр харăс кăтартрĕç ем ешĕл тĕсе.
Пулать хăпарту: сарă тулă пĕр пек—
Карах, яшăлах шăтса тухрĕ ирпе.
Колхозăн кĕтĕвĕ каять улăха,
Раххать ĕнтĕ халĕ кунта выльăха.

IV

Пахчаçă тухать ирпелен пахчана,
Кашни папкавах асăрхать вăл, сăнать.

Паян улмуççи ун ларать çеçкене,
Ыран—çĕмĕртсем, хурлăхан—виç-
мине.
Вăл ватă, пахчаçă. Ялта вăл
пĕччен
Кăçал çимĕкре каять çĕр те çичче,
Çапах та вăл çивчĕ. Сухалĕ çинче
Чечен çуркунне ун вылянĕ çемçен.
Çак сад пахчинчех колхозăн—утар,
Çур кунĕ кунта та çитернĕ хыпар...

V

Эп илтĕм çыру. Курсамччĕ эс, кур,
Кашни пуплеврех çуркунне сăнĕ пур.
Кашни пуплеврех çут илем, юрату,
Кашни пуплевех илĕртет: юрă ту.
Пирте çамрăксем каççерен урамра
Шавах савăнаççĕ çурхи вăйăра.
Юрлаç те ташлаç, вăйçă купăс калать:
Япшар çуркунне вĕсемпе ал çупать.
Саватăп сана, чечен çуркунне!
Ялан çĕклентерччĕ поэтăн чунне!

---

## Ю Р Ă.

Улма-чăпар ут эп утланам-и,
Инçе кăна çула эп тухам-и.
Эх, пырса кĕрем-и эп Мускава,
Улма-чăпар утăма вылятса!

Мускав урамĕсем—пин урамĕ,
Улма-чăпар утпа эп пырам-и.
Сÿнми ĕмĕт пекех-çке ялтăрса
Кремль çинче çунаççĕ çăлтăрсем!

Хĕрлĕ площадь çинче, ай, мавзолей,
Пырайса тухам-и эп вăл тĕле.
Мавзолея кĕрсе эп курам-и,
Ленин атте çине эп пăхам-и!

Шухăшăмсем ман аслă Кремльре,
Унта пирĕн çулпуç—кăвар чĕре.
Сталин патне кĕрсе эп тухам-и,
Колхозсенчен салам эп калам-и!

Улма-чăпар ут эп утланам-и,
Инçе кăна çула эп тухам-и.
Эх, килсе кĕрем-и эп колхоза
Сталин янă чи ăшă салампа!

---

## ХĔВЕЛĔМĔР СТАЛИН.

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Юрлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр юрă,
Юрă кайтăр ян та ян!

Кам хĕн-хурлă пулнă ĕлĕк,
Камшăн пулнă хĕн-асап,—
Халь вĕсенĕн çут хĕвелĕ
Тухрĕ ăшшăн,
Ăшшăн тухрĕ çутатса.

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Аслă тусăмăр, çулпуç,
Телее куратпăр халĕ
Ĕнтĕ эпĕр,
Эпĕр ĕнтĕ куçран-куç.

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Эс çутатăн ĕмĕрех.
Савăнать-çке пĕтĕм халăх,
Патăн ырлăх,
Ырлăх патăн эс пире.

Тавтапуç, юратнă Сталин,
Тавтапуç сана, мухтав!
Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Эсĕ—юрă,
Юрă—эсĕ, эс—ялав.

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Юрлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр юрă,
Юрă кайтăр ян та ян!

---

## ХАЛЬ ТЕ, МАЛАШНЕ ТЕ...

1

Кăнтăртан та, çурçĕртен те,
Анăçран та, тухăçран,—
Пĕрре мар килсе хур пулнă
Пирĕн çĕр çинче тăшман.

Çав-çке пирĕн халăх:
Ыррăн асăнмалăх
Тăшмана сĕнмен
ни çăкăр, ни тăвар.

Халь те, малашне те
Пирĕн пулĕ хатĕр
Ун валли вут-çиçĕм,
шĕл-кăвар.

2

Перекоп, е Волочаевск,
Халхин-Гол-и, е Хасан,—
Аса килĕç кӳренмелĕх
Тăшмансен пуçне ялан.

3

Мăкăрланчĕ, астăватпăр,
Шура-финлă çил-тăман.
Лăплантартăмăр ăна та,
Манăç пулмĕ нихăçан.

4

Ак каллех килсе капланчĕ
Урнă йытă анăçран;
Шăммисем çеç выртса юлĕç
Урнă йытă фашистран.

Çав-çке пирĕн халăх:
Ыррăн асăнмалăх
Тăшмана сĕнмест
ни çăкăр, ни тăвар.

Халь те, малашне те
Пирĕн пулĕ хатĕр
Ун валли вут-çиçĕм,
шĕл-кăвар.

1941

---

## ФАШИСТСЕН ЙĂХНЕ.

*(„Ылхан" поэма прологĕ)*

Тăван çĕршывăмăр çине
Тăшман ăмсаннă пĕрре мар,
Вăл тăснă ирсĕр сăннине,
Нумай вăл тăкнă вут-кăвар.

Хăтланнă нимĕç-рыцарьсем
Пăхăнтармашкăн вырăса,
Анчах шăмми çеç, путсĕрсен,
Чăл-парăн юлнă акăнса.

* * *

Çăхан кăлартăр сан куçна,
Йытсем салатчăр сан пуçна,
Ӳтне ан илтĕр нӳрĕ çĕр,
Лачакарах хуртлан та çĕр.

Çиес çăкру чуллантăр сан,
Ĕçес шыву пăрлантăр сан,
Сыпас шӳрпӳ пăсташ пулса,
Çунтартăр сан ăшна тулса.

Ылхан сана, хура ылхан,
Тилĕпеле сысна йăхне!
Чее те сĕмсĕр майпалан
Эс кĕтĕн пирĕн çĕр çине.

Тухсассăн эс çула кайма,
Тӳрем çĕртех çĕклентĕр ту,
Тип вырăнтах хура çырма
Çуралтăр, такăнтăр уту.

Ăшу типсен, умри шыв-шур
Санран пытантăр чул айне,

Шăрăхпала пиçсе терт кур,
Вăрман ан кўрттĕр сулхăнне.

Ылхан сана, виç хут ылхан,
Çĕлен-калта йăхне-тĕпне.
Пĕр систермесĕр йăвунтан,
Эс тăсрăн вилĕм сăннине.

Çынсем уяв пуçлас кунне
Инкек-синкек тапрантăр сан,
Никам ан патăр сассине
Эс хĕнпеле вилме тăрсан.

Ылхан сана, çич хут ылхан,
Тĕнчен хура вăр-хурахне.
Амсаннă, имĕш, тахçантан
Эс пирĕн халăх пурлăхне.

Аннў кăкри сĕтне тахçан
Ĕмни сан пултăр харама.
Ятна-шывна, вăл пур пулсан,
Пăрахтăр халăх асăнма.

Санран ан юлтăр пĕр ăру,
Пуррийĕ пĕттĕр хĕнлĕхре,
Сана ан паччăр каçару
Ни чиркўре, ни тĕрмере.

Кăвар ан юлтăр чĕрўнте,
Йĕтем юпи пек тăлăх пул.
Сан тĕтĕм сўннĕ килĕнте
Мăян кашлатăр çулран çул.

Ылхан сана, çĕр хут ылхан,
Ал тăснăшăн хĕвел çине.
Хăртасшăн пулнă мĕн, шуйттан,
Эс пирĕн халах телейне.

Сăвас ĕнў ан патăр сĕт,
Ан самрăлтăр пусас таку,
Аш-çусăр хăр эс, тип эс, пĕт,
Тĕрек ан хуштăр шăм-шакку.

Пăр çаптăр акнă тыр-пулна,
Ан ўстĕр çимĕç пахчунта.
Мур илтĕр санăн выльăхна,
Шар кур эс хăвăн ачунтан.

Ан ешĕртĕр эс чĕртнĕ сад,
Ан патăр утă улăху.
Карассăр, пылсăр шавласа,
Салантăр санăн пыллăху.

Хур-кăвакал пăчлантăр сан,
Ан вырттăр тыра пўлмере.
Вăлча ан саптăр нихăçан
Эс яна пула кўлĕре.

Ылхан çине—ылхан сана,
Таптанăшăн çĕре-шыва
Ăçта эс пуснă уруна,—
Унта путланăн эс шавах.

Вăрман-хăрман касма тăрсан,
Хăр йывăç ўктĕр сан çине,
Пĕр ăнăç та ан пултăр сан,
Вилсе çĕре кĕрiчченех.

Ылхан сана, пин хут ылхан,
Аркатнăшăн хуласене,
Çак çут тĕнче ниçта, нихçан
Сана ан илтĕр ытамне.

Хăна-вĕрле пухсан киле,
Пĕрмай çĕклентĕр харкашу,
Хăть касхине, хăть ирпеле
Шавах сан тăвăлтăр ăшу.

Ыйткалама тухса кайсан,
Ан паччăр татăк та сана.
Эс ĕмĕр-ĕмĕр асаплан,
Ылхан телейсĕр шăпуна.

Çĕкленес пур эс сывлăша—
Персе ўксе салан чăл-пар!
Кам упалевнĕ тăтăшах—
Çўлте вĕçмешкĕн тивĕç мар.

Тухсассăн тинĕс варрине,
Çил-тăвăл çĕмĕртĕр сана.
Çăлни ан пултăр ĕмĕрне
Ни хăв пуçна, ни карапна.

Анас пулсассăн çĕр айне,
Калла тухмашкăн ан хăтлан.
Пĕлетĕп тамăк çуккине,—
Анчах та пултăр тамăк сан.

Ылхан сана, ылхан кӑна
Асап кӳнишӗн халӑха!
Тӑрлавсӑр вилӗм сан чунна,
Асаплӑ вилӗм—пуҫтаха!

Сан тӗллӗн, шуҫӑм килнӗ чух,
Ан ӳктӗр сывлӑм ҫӗр ҫине.
Тӗнче илемӗ—Шурӑмпуҫ
Ан саптӑр хӗйӗн шевлине.

Сан ҫӗрӗнте юхан шывсем
Ан шӑнкӑртатчӑр нихӑҫан,
Шӑпланччӑр ҫепӗҫ шӑпчӑксем,
Ан симӗслентӗр сӗм вӑрман.

Ҫӗр ҫӗклейми ылхан сана—
Пур ӗмӗр-ӗмӗр тӑршшине!
Аҫа кикен те тӑпруна
Шӑтса ан палӑрттӑр санне!

1942 ҫул.



## *АЛЕКСАНДР АЛГА.*

### ЁШНЕРЕ.

Сар хĕрсем ĕнтĕ кĕреççĕ ешĕл
ĕшнене,
Юрласа тĕрĕ тĕрлеççĕ çŷхе пир
çине.

Ытарма та çук илемлĕ уçă ĕшнери
Чечексем пекех хитре-çке, капăр-
çке тĕрри!

Шурă ландышăн çеçки пек тăваткăл
пир çине
Çепĕç алăсем тĕрлеççĕ Сталинăн
сăнне.

Çулçă çиййĕн, вĕтлĕх витĕр Атăл
еннелле
Вĕçрĕ юрă, вĕçрĕ юрă чун
çĕкленмелле;

„Вăрман витĕр курăнаççĕ кĕмĕл
тенкĕсем—
Çĕмĕртсем, иккен, çураççĕ шурă
çеçкесем.

Хуларан килнĕ концерт пек юрă
янăрать—
Кайăксем, иккен, юрлаççĕ пирĕн
таврара.

Çурхи пурнăç, çутçанталăк кĕвĕ
кĕвĕлет,
Тавтуса, савса мухтавлă ăшă хĕвеле.

Уяв çитĕ те, вылянĕç ташă-
вăйăсем;
Пĕр ытам чечек пек курнĕç пирĕн
тĕрĕсем.

Чунри савăнăç хĕвел пек ялтăрĕ
питре,
Янрĕ юрă, шăнкăр шыв пек, уççăн
та хитре.

Янрĕ юрă уççăн-уççăн! Кайĕ таврана,
Тавтуса, савса мухтавлă аслă Сталина.

Сталин сăнĕпе тĕрленĕ çак парнесене
Эпир парăпăр маттур та чаплă яшсене!"

Сар хĕрсем илем кӳреççĕ ешĕл ĕшнене:
Юрласа сăн ӳкереççĕ—çывăх сын сăнне.

## ШЫВ АРМАНĔ.

*(Легенда.)*

I

Ялтăртатса юхать Сĕве
Сар уйăх питĕнче.
Кăваккăн сарăлать пĕве,
Таппи ун пит инçе.

Шарлак пĕве çинчен тахçан
Эп илтнĕччĕ юмах,
Шутларăм эп ăна паян
Сăвва-юрра хума.

Вăл пулнă, тет, ĕлĕк-авал
(Кам асăнмасть ăна?).
Хитре пĕве панчен пĕр ял
Илемлĕн курăнать.

Йăлтăртатса хĕвел кулать,
Ял тумланать чипер...
Унта-мĕн пурăннă пулать
Сарпи хăй каччипе.

„...Сарпи—çап-çамрăк сарă хĕр,
Чи çывăх тусăм ман,
Ăна курас тесех кĕçĕр
Эп тухрăм урама.

Сарпин сап-сарă куçĕсем,
Кăлкан пек вăл кăтра;

Сарпи, ытла ан кĕттерсем,
Тухсамччĕ хăвăртрах.

Сарпин алка пек куçĕсем
Ытарайми сенкер;

Савни, часрах вĕçсе çитсем,
Вараххăн ан кĕттер.

Сарпиçĕм, çамрăк пĕвӳ сан
Шап-шур яштак хăва;

Савниçĕм, кантăкна уçса,
Илтсемччĕ ман сăвва".

Каччи çапла юрла-юрла
Ширанă савнине.

Сар уйăх—авăнчăк çурла
Хăпарнă тӳпене.

Çав самантра Сĕве çинче,
Вăрман патнерехре,

Шыв тăрăх сарăлнă инçе
Каçхи кăвак тĕтре.

II

Ĕçлет Сарпи мĕн ачаран
Тăмпай пуян панче.
Ĕçĕ каймасть-çке аларан—
Ир пуçласа каçчен.

Ĕçлет-çке çăвĕ-хĕлĕпе,
Çапах та тутă мар,
Çапах та пĕр çĕнĕ кĕпе
Ун çук вăйя тухма.

Кам йăпанмасть юратупа?
Кам çамрăк чунĕ—чул?
Хăй савнине тăвать тупа
Сарпи, чупгунă чух.

Анчах Тăмпайăн ĕмĕтсем —
Тискер! Çĕрме пуян!
Ват супнă, йĕрĕнчĕк этем
Шутланă: „Ак, паян...

Паян ак, шăпăрт каç пулсан,
Манпа пĕр каçлăха.
Сарпи, тую тапранĕ сан,
Кирлех-çке тăлăха“.

Хĕвел анать те, каç пулать,
Пўртре Сарпи кăна.
Тăмпай çуланкалать, кулать,
Парне сĕнет ăна.

Çиленнĕ хĕр пĕр хăвăртрах,
Сурать те ун питне,
Кўршĕ яла тухса тарать
Хăй аппăшĕ патне.

Анчах çурма çула çитсен,
Ик-виç юланутпа
Хĕрĕн çулне пўлет, иккен,
Тарçисемпе Тăмпай.

Ак халь тусанлă çул çинче
Тăсланчăк ут сикет;
Ак хурчăка ытамĕнче
Выртать хитре пике.

Чĕн саламатăн ярапи
Ик енлетсе шăхрать.
Ĕшеннĕ, вилнĕ пек Сарпи
Сас кăларма хăрать.

III

Сасартăк сăрт çинчи вăрман
Пуçларĕ шавлама,
Шăпăлтатса ларан арман
Тăп чарăнчĕ самант.

Пĕр тикĕссĕн юхан Сĕве
Арпашăнчĕ çилпе.
Хум хыççăн хум, шарлак пĕве
Ак халь татăлас пек.

Çанталăк урнă пек асать,
Лăскать çĕршыв питне.
Утсем çитеççĕ хашкаса
Арман пĕви патне.

Тăсланчăк ут ак чарăнать.
Сарпи выртать çĕрте.
Тăмпай пырса çĕклет ăна:
—Пĕве тытатни!—тет.

—Çурхи усал шывпа ялан
Пĕве ман татăлать.
Хĕр ямалла. Çапла йăла.
Çапла Тăмпай калать

Çак сăмахпа вăл Сарпие,
Хăйне савман хĕре,
Тытса перет пĕве айне,
Чи тарăнрах çĕре.

Сасартăк çил пек ыткăнса
Тухать пĕр çын ума.
Тăмпай пăхать те çаврăнса—
Ун тарçисем юлман.

Хай çын кĕрет çине-çине.
Тытать карланкăран;
Вара пĕвен аял енне
Тытса перет ăна!

—Ман савнипе ан вырт пĕрле.
Вырт, вилĕ, инçетре...
Хум хыççăн хум. Тĕттĕм. Çĕрле.
Сĕве çинче тĕтре.

Шав-шавласа юхать Сĕве,
Сĕм пĕлĕт-питĕнче.
Кăваккăн сарăлать пĕве.
Таппи ун пит инçе.

IV

Нумай-нумай çулсем иртет.
Анчах та çав каçа
Ял çынĕ тепĕр ĕмĕрте
Яман-ха манăçа.

Çаплах шавланă сĕм вăрман
Сĕм пĕлĕт айĕнче.
Çаплах шарланă çав арман
Шăв-шавлă шыв çинче.

Пĕве çыранĕ тăрăхах,
Сĕвен ик енĕпе,
Хумханнă хăмăшпа хăях
Вăш-вăшăл аш çилпе.

Хăвалăха кĕпĕрленсе,
Каç пуçласа ирччен
Шав чĕвĕлтетнĕ кайăксем
Чĕвĕл чĕлхепелен.

Тин тухнă уйăх—сарă пит
Пĕве çине сăхсан,
Шăппăн юрланă, тет, Сарпи,
Çыран хĕрне тухса.

Юрланă, тет ун ĕмĕрне
Сая яни çинчен:
Яш пĕвĕпе çак пĕвене
Тытма тивни çинчен.

Юрланă, тет, вăл ылханса
Тăмпай пуян сăнне;
Юрланă, тет, вăл асăнса
Чун савнă каччине.

Ĕшеннĕ уйăх—сарă пит
Вăрман хыçне ансан,
Чамнă, тет, шыв тĕпне Сарпи,
Çăрттан пек ярăнса.

Шарланкă сас кĕрле-кĕрле
Ян кайнă инçене.
Çынсем çав вырăнта çĕрле
Харанă çÿреме.

Йăлтăртатса юхать Сĕве
Сар уйăх питĕнче.
Кăваккăн сарăлать пĕве,
Таппи ун пит инçе.

## СТАЛИНГРАД.

...Сталинград, Сталинград,
Сталинград!
Кунта пирĕн юн витнĕ ялавăн
Чаплă çулĕ пуçланчĕ вутра.
Сан ятна асăнсассăн, умра
Атăл хумĕ юрлать пек мухтавлăн.

Хула халь те умрах-çке тăрать:
Чул ăшне бомбăсем тăрăнаççĕ.
Тупăсем янăраççĕ садра,
Вут çунса шартлатать заводра,
Хутла-хутла çуртсем арканаççĕ.

Сĕкĕнет чулсем айĕн тăшман
Аслă Атăл шывне хĕретесшĕн;
Кисренет тĕтĕм карнă çыран,
Тепĕр бомба ÿксе çурăлсан,
Чул çыран хум çине ишĕлсессĕн

Туйăнать... Сталинград,
Сталинград!
Тарăхса хумханать сивĕ Атăл,
Çилленсе çил вăрçа йыхăрать,
Чĕрене пысăк шухăш касать:
„Çурмаран, Çĕрĕм шывăм, ан
татăл".

Тарăхать хаяр куçлă салтак.
Ÿтĕнче юлашки юн тумламĕ,
Çĕлен—тимĕр сăхать-çке шалтан,—
Çапах вут пĕрĕхет пăшалтан,—
Нимĕç пурпĕр тăрса утăмлаймĕ!

Уй-хирсем çуркаланнă, ула;
Улăхсем чавкаланнă, пăр-шурлă;
Юмахри пек хăюллă хула
Çĕрĕн-кунĕн асаплăн улать,
Tăванне йыхăрать Атăл урлă.

Сталинград, Сталинград, Сталинград!
Кам вăй парĕ? Вăя кам ăсталĕ?
Пурпĕр путмăпăр тарăн шывра,
Пурпĕр çунмăпăр ялкăш вутра:
Вăй парса вăй ăсталĕ Сталин!

Кайăксем çунатланчĕç вăрçа,
Тăпăртатрĕç утсем çулсем тăрăх,
Хирсем тăрăх тусан тустарса,
Кунĕн-çĕрĕн иртет вăйлă çар.
Пирĕн çар вăл,—салтакăм, ан тарăх!..

Халь те куç умĕнчех-çке тăрать:
Чул ăшне бомбăсем тăрăнаççĕ,

Тупӑсем янӑраççӗ садра,
Вут çунса шартлатать заводра,
Хутлӑ-хутлӑ çуртсем арканаççӗ.

Анчах паттӑр халь пирӗн салтак;
Шартлама сиввине парӑнмасӑр,
Çӗнтерӳ туйса, пилӗк салтать.

Хай тӑшман ункӑра пӑвӑнать,
Аслӑ Атӑл сӑнне кураймасӑр...

...Кунта пирӗн юн витнӗ ялавӑн
Чаплӑ çулӗ пуçланчӗ вутра.
Халь çавна асӑнсассӑн, умра
Атӑл хумӗ юрлать пек мухтавлӑн:
Сталинград, Сталинград, Сталинград!..

## МУХТАВ ЮРРИ.

Юратнӑ çӗршывӑмӑр, çутӑ
кунçулӑмӑр,
Усал тӑшманпа вӑрçӑ вӑрçнӑ чухне,
Эс панӑ вӑй-халӑмӑр—вӑйлӑ вут-
çулӑмӑр
Хӗртсе хурçӑларӗ этем тарӑхне...

Çӗршывӑмӑр хурлӑхӗ тинӗс пек
тарӑнччӗ,
Çӗршыв тӑрӑх вилӗм çӳретчӗ асса;
Тӑшман шартлама çиллипе çитсе
тӑрӑнчӗ
Мускав çывӑхне—çӗнтерме ӑмсанса.

Эс тӑтӑн хӑюллӑ—эпир хӑрамарӑмӑр;
Çӗнмешкӗн хӗç тытрӑмӑр сан ятупа.
Алла амантсан та, ӳкмерӗ ялавӑмӑр;
Чуна пӑр витсен те, сӳнмерӗ тупа.

Чи йывӑр чухне пире, Аслӑ
Çулпуçӑмӑр,
Эс пысӑк ӑспа ертсе кайрӑн вӑрçа.
Хаяр çулӑмра Çӗнтерӳ çулне уçрӑмӑр,
Хӑрушӑ вӑрçа Анаç май çавӑрса.

Эс пытӑн Çар умӗн тӑрса, çиллӗ-
тӑвӑллӑ
Хирпе, чарӑнми çӗнтерсе малалла.
Эс, аслӑ сӑмах каласа, çилӗ
тӑвӑлнӑ
Чуна патӑн шанчӑк, вӑй патӑн
алла...

Тӗнчемӗр хӗн-хурлӑхӗ тинӗс пек
тарӑнччӗ,
Çул хыççӑн çул иртрӗ асап
вутӗнче.
Ак, Эсӗ туптанӑ хӗççем çитсе
тӑрӑнчӗç
Тӑшман чӗрине! Яр уяртрӗ тӗнче.

Берлин çинче хӗрлӗ ялав
вӗлкӗштертӗмӗр,
Çӗре илемлетрӗ çӗнтернӗ ялав.
Çапла, полководец ятне ӗмӗр-ӗмӗр,
Ялав пек йӑтса, пырӗ пирӗн Мухтав.

Мухтав çуттинче чечекленӗ Çӗр
анӑшӗ..
Этем кӑмӑлтан тав тӑвать Сталина:
—Мухтав, полководец, çӗнмешкӗн
вӑй панӑшӑн.
—Тав—çутӑ кунсемшӗн, аттемӗр,
сана!

## ВӐРÇӐ ТУРРИН СИМФОНИЙӖ.

Сасартӑк, лӑш ӳкрӗ те шурӑ
шӑналӑк,
Мухтавлӑ „катюша" пуçларӗ юрра.
Сасартӑк ак уçӑлчӗ, çиçрӗ çанталӑк
Пин-пин çӑлтӑрпа ялтӑра-ялтӑра.

Пин-пин сасӑпа тулчӗ янкӑр тавралӑх.
Тӳнккет-и тукмак, шӑхӑрать-и
сӑрнай,—
Пире савӑнмалӑх, юга тарӑхмалӑх
Тӗнче çаптарать пек ташша кӗвӗ
май.

Çӗлен пек вут-çиçӗм çиçет хирсем
урлӑ,
Çӗр çурӑлнӑн çатӑртатать çырма,
Чӑн тамӑк пек, урнӑн улать ула
улӑх,

Вăр-вар вăркăнас пек шавлать сĕм
вăрман.

—Пуçланчĕ, пуçланчĕ!—вĕрет пуçра
шухăш.
Пуçланчĕ!—хĕрет кăварланнă чĕре.
Хăюллă куçсем ялтăраççĕ халь
шухă,
Пăхаççĕ вутсем ӳксе çапнă çĕре.

Унта вăрăм алăллă улăп тăпаçĕ
Чăл-пар! сирпĕтет хĕмлĕ тимĕр
пуçах,
Унта çĕр пӳртсем пĕлĕте ыткăнаççĕ,
Тăшман йăвине хыпать çулăм-вучах.

Унта çĕр çунать. Ун тăпри чĕрĕ
юнлă.
Тăшман тытăнать йытăлла йывăшма.
Эсрелĕ пит-куçĕ кĕл пек хăрса юлнă,
Мăнтарăн, шутлать хăй тарса хатăлма.

Тарать вăл, пуç каснă пек, юнлă хир
тăрах
Исленнĕ тути пуплешет:
Шартлатрĕ самант! Шухăшла ĕнтĕ,
тарăх—
Ăçта мĕскĕн пуçăм? Ăçта манăн...

Çĕлен пек вут-çиçĕм çиçет хирсем
урлă,
Çĕр çурăлнăн çатăртатать çырма.
Чăн тамăк пек урнăн улать ула улăх,
Вăр-вар вăркăнас пек шавлать сĕм
вăрман.

Хĕвел хĕм сапать ылтăнне
хĕрхенмесĕр!
Ялтра тупăсем хушшинче, пĕр
сăртра,
Патвар генерал, умĕнчен куç
илмесĕр,
Ăста дирижĕр пек хăюллăн тăрать.

Çаплах янăрать, Çĕнтерӳ чысне
туйнăн,
Хăватлă симфонин мухтавлă юрри.
Ăна шăрататать пирĕн савнăçлă уйăн
Юратăвĕ—Вăрçă Турри.

1944

## СТАЛИН ПРИКАЗĔ.

Пире хирĕç, çил-тăвăл пек, çулăм
тухсан,
Чарăнса окоп чаврăмăр пĕр айлăма.
Тăшман канăç памасть: умри çӳллĕ
сăртран,
Ĕнтĕ сывлăш çурса, шăхăрать çеç
тăхлан.
Кун пек чух ĕнтĕ чун тытăнать
хайрăлма.

Çак самант, кайăксем хĕвеле ырлас
чух,
Ăшă сывлăш кăна вĕрес чух
касă-кас,—
Çутçанталăк урать, çĕр çинче
çапăçу...
Çак самант—нихăçан та ăна манас
çук—
Инçетри Тухăçран вĕçсе çитрĕ
приказ.
Чи хăюллă салтак пек вăл тухрĕ хире.
Аларан алла вĕçрĕ хыпар—шурă хут.
Ун саламĕ кăвар пек çутатрĕ ире:
Мухтаса тавтăвать, иккен, Сталин
пире.
Мускаврa кĕрлесе, иккен, çиçнĕ
салют!

...Асăма килет хамăр хăтарнă хула.
Хамăр çăлăнăç панă ялсем асăмрах.
Аслă Сталин хушать: малалла,
малалла!
Ун приказĕ вĕçет аларан алла,
Ун сăмахĕ хĕрет, вăй парса, чунăмра.

Ĕнтĕ пирĕн ума Аслă Маршал тухать.
Вăл хăюллăн пăхать пек умри сăрт
енне.
Вăл каланă сăмах чун патне çул
тупать:

Ялан паттăр пулма асра тытнă тупа,
Çĕнтерме йыхăрса, вĕрилет чĕрене.

Ак, сасартăк, хĕм-çулăм туларĕ сăрта.
Сăрт пĕр çиçрĕ вучах пек, пĕр пулчĕ хура.
Ак, эпир сиксе чупрăмăр харăс, пĕр тан;
Чи хăватлă сас тухрĕ хаяр кăкăртан:

—Аслă Сталиншăн! Савнă Çĕршывшăн! Урра!

Тепĕр вунă минут çеç иртсен сăрт çине
Çĕнтерÿллĕн çĕклерĕмĕр Хĕрлĕ ялав.
Ялавпа тан çĕклерĕмĕр Сталин сăнне,
Ырă шухăш хумхатрĕ боец кăмăлне,—
Кашни туйрĕ ăна: пирĕнпех Вăл ялан.

1944



## СТИХВАН ШАВЛЫ

### ЗОЯ.

Эс чаплă Зойăпа пĕр ятлă,
Шăпу та санăн унни пек,
Ĕçÿ те унни пек хăватлă,
Вилме те вилтĕн эс ун пек.

Вăл пулнă аслă вырăс хĕрĕ,
Эс унăн йăмăкĕ—чăваш.
Ун ячĕ ĕмĕр пулĕ чĕрĕ.
Ан сÿнтĕр санăн та, юлташ!

Хĕр пуççăн пулнă вăл чăн паттăр,
Вăл ÿснĕ аслă Мускавра.
Сана чăваш çемйи çуратнă,
Эс ÿснĕ ват Шупашкарта.

Мухтавлă пултăр сан яту та,
Çÿретĕр халăх хушшинче,
Хисеплĕ пултăр, пултăр çутă,
Ан тухтăр халăх асĕнчен.

Тăванăм, ху та, тен, сăнанă:
Ÿкет те çăлтăр—йĕр юлать.
Çав çутă йĕр пек пурнăç санăн,
Кĕске пулин те—ялтăрать.

Вунсаккăрта кăначчĕ эсĕ,
Шкултан та тухнăччĕ кăна,
Сан уçă куллуна илтмесĕр
Эп ирттерместĕмччĕ куна.

Эс кÿршĕре кăна пурнаттăн,
Кĕреттĕн пĕчĕкçĕ çурта,
Сана ирпе час-час кураттăм
Шап-шур çеçкеллĕ садăрта.

Эс ху та шурă çĕмĕрт пекчĕ,
Пилеш пек çирĕп, яштака,
Эс ху та сад пек çеçкереччĕ,
Чипер те капăр, тăпăлкка.

Паян куна асран каймаççĕ
Таса та тăрă куçусем,
Ик çутă çăлтăр пек çунаççĕ,
Паян та ăшă пек вĕсем.

Паян куна та асăмрах-ха:
Ирхи салам сире!—тени.
Асрах — такам валли вăраххăн
Пĕр çыхă шур чечек татни.

Эс хĕрлине чикеттĕн хутăш,
— Хитре-и?—теттĕнччĕ вара.
Мĕн чухлĕ ĕмĕт, шанчăк, шухăш
Вĕрет вунсаккăрти пуçра!

Сисеттĕм, эсĕ юрататтăн,
Сывлаттăн ĕнтĕ хăшлатса.
Вăтаннипе пуçна усаттăн
Пĕр хĕрелсе, пĕр шуралса.

— Эппин, телейлĕ пултăр, теттĕм,
Эпир те савнă ĕлĕкрех.
Пиччӳ пек саншăн хĕпĕртеттĕм,
Пурăнтарасшăнччĕ шепрех.

Пулмарĕ... Вăрçă siксе тухрĕ,
Пĕр мур ефрейтора пула.
Çырма пек юхрĕ, чĕр юн юхрĕ,
Çĕрпе танлашрĕ çĕр хула.

Ыйтмарăн эсĕ аннӳнтен те—
Эс утрăн комиссар патне.
Ăна шур хут пырса сĕнен те:
— Эп хатĕр, тетĕн, çул çине.

Шăпланчĕ сан хавас куллу та,
Кăра тĕс çапрĕ çут сăнна;
Вăйланчĕ сан çемçе утту та,
Хытартăн çепĕç кăмăлна.

Эс мантăн пулĕ йĕкĕтне те,—
Çĕршыв тени тытать чунна.
Каларăн пулĕ: ĕлкĕретĕп;
Халь вăрçă йыхăрать мана.

Тен, эс юлма пултарнă пулĕ,
Тен, вăрçă—хĕрĕн ĕçĕ мар!

Тен, юхмĕччĕ аннӳн куççулĕ,
Куççуль вĕт! сивĕ шăрçа мар!

Ăсна пĕр шухăш туртăм çĕннĕ:
Тăван çĕршыв. Çулпуç. Мускав.
Арçын-и, хĕр-и... лозунг чĕннĕ:
„Совет çынни, вăрçа хускал!"

Килне килсен: каятăп, терĕн,
Пулмасть ку чух килте ларса...
Аннӳ салхуллăн тирпейлерĕ,
Ăсатрĕ ăшшăн макăрса.

Салхуллăн юлчĕ симĕс сад та,
Пушанчĕ пӳлĕм туссенчен.
Роман выргать, вĕçне тухман та;
Çыру... çырса та пĕтермен.

Васкарĕ поезд хăвăрт-хăвăрт,—
Çĕрпӳ, Канаш хыçа юлать.
Васкарĕ поезд шăкăрт-шăкăрт,—
Çĕршыв столицине каять.

Çурхи шывсем хускалнă, тейĕн:
Васкать Мускав, шавлать, кĕрлет...
Çар тумĕпе—çĕршыв телейĕ,
Вăрман пек шутсăр çар иртет.

Вăрçа, вăрçа каясшăн эсĕ,
Анчах каларĕçĕ: Тăхтан!
Усси пулаймĕ вĕренмесĕр.
Радистка, терĕç, эс пулан.

Приказ. Унран пăрăнаймастăн.
Итлен. Çарта йĕрки çапла.
Вара эс куç та мăч хупмастăн,
Çӳретĕн эс курса—шкула.

Пилотка тăхăнатăн меллĕн.
Çыхатăн сарлака тăха.
Сăран пушмак, салтак шинелĕ—
Юри çĕленĕ пек паха.

Самолĕта кĕрсе ларатăн,
Çӳл тӳперен çĕре чăман,
Шăхăракан чул пек анатăн,
Самант... парашютна каран.

Шур лӗпӗш пек анса ҫитетӗн,
Ҫӗре хаваслӑн ыталан,
Инструктор ятне эс илтетӗн:
„Аван, Семенова, аван!"

Килсе ҫитет, ҫитет ноябрь,
Мускав умне тӑшман ҫитет.
Вӑрҫа тухмашкӑн эсӗ хатӗр,
Хастар та эсӗ, ҫивчӗ те.

Тӑшман тылне анас пулать сан,
Тӑшман тӗлне сӑнас пулать.
Эс радио-хыпар парсассӑн—
Тӑшман ҫинех ӳкет снаряд.

Чикетӗн пӗчӗк передатчик,
Ларатӑн самолёт ҫине.
Вӑл ӑмӑрткайӑк пек хускалчӗ,
Вӑл кӗчӗ пӗлӗт хушшине.

Пӗрле пырать вуникӗ каччӑ,
Пӗрле пырать вуникӗ хӗр.
Кашнин—приказ, кашнин—задача,
Анчах тӗллев—кашниййӗн пӗр.

Кӗпер сывлӑшалла хӑпартӑр,
Аркантӑр ҫул, кӗрлетӗр вут.
Пӗрре те ҫӑмӑл ан сывлатӑр,
Ҫав нимӗҫ мурӗ—ҫав ҫич ют!

Пилот калать: анмашкӑн вӑхӑт!
Хӑрушӑ. Ҫил ҫеҫ шӑхӑрать.
Сиксе тӑрать те Зоя хӑвӑрт
Хурчка пек ҫӗрелле чӑмать.

Хӗрсем сикеҫҫӗ умлӑн-хыҫлӑн,
Сикеҫҫӗ йӗкӗтсем васкав.
Ҫӗрте ютсем кӗтеҫҫӗ выҫҫӑн.
Кӑвак ракет ҫӗкленчӗ ав.

Вӑрман хӗрне пуҫтарӑнаҫҫӗ
Хастар хӗрсем, яш йӗкӗтсем.
Пӗрне-пӗри суса тухаҫҫӗ:
Шӑп ҫирӗм пиллӗкӗн вӗсем.

Кашнин—приказ, кашнин—задача..
Сывпуллашаҫҫӗ те, вара,
Хӑйсен ҫулӗпеле утаҫҫӗ...
Хура кӗр касӗ пит хура.

Хура. Ун чатӑрне чӗреҫҫӗ
Васкавлӑ радио хумӗсем.
Пуҫ урлӑ снарядсем иртеҫҫӗ,
Шартлаттараҫ пирӗннисем.

Пӗтӗрӗнсе ҫӗре ӳкеҫҫӗ
Фрицсем, ганссем, шульцсем,
штоксем...
Сывлӑшалла ӗрӗхтереҫҫӗ
Снаряд тиенӗ составсем.

Пуҫне хыҫать чӗр юлнӑ нимӗҫ:
—„Ак тамаша! Ак пӗсмӗлле!
Ак вырӑс те... Ҫитерчӗ ҫимӗҫ...
Ӑҫтан перет? Тӗлӗнмелле!

Диверсантсем антарчӗҫ пулӗ?
Хаяр ӗҫлеҫҫӗ-ҫке вӗсем.
Унта—снаряд, кунта ак—пуля...
Тӑхтав памаҫҫӗ вӗт, мурсем!"

Ӗҫлет ырмасӑр передатчик,
Хум хыҫҫӑн хум леҫет хыпар.
Иртет те вӑхӑчӗ пӑртакҫӑ—
Каллех—кӗрлев, каллех—кӑвар...

Ку пирӗн Зойӑн, Зойӑн ӗҫӗ!
Радисткӑн ӗҫӗ—ӗҫ тӑвать.
Ку пирӗн хӗрӗн, хӗрӗн хӗҫӗ
Тӑшман пуҫне касса татать.

Ҫулталанӑк шӑп вутран тухмасӑр
Хум хыҫҫӑн хум вӑл ӑсатать.
Юратнӑ сасӑ, лӑпкӑ сасӑ
Тӑшман ҫине тӑхлан тӑкать.

Хастарлӑ, паттӑр, чаплӑ ӗҫшӗн—
Мухтавлисен шутне кӗрет.
„Служить тӑватӑп хамӑр ҫӗршӗн!"
Сӑпайлӑн ҫеҫ вӑл ответлет.

Кӑкри ҫинче ҫунать медалӗ,
Хӗп-хӗрлӗ ҫӑлтӑр ялкӑшать.
Ик алӑра вылять вӑй-халӗ,
Вӗр-ҫӗнӗ юрӑ чун юрлать.

Кунсем, çӗрсем хуллен шӑвассӗ,
Çич ют калле чупсах чакать.
Пуç урлӑ минӑсем уласçӗ,
Пуç урлӑ пуля шӑхӑрать.

Чиркӳ тӑрне хӑпарнӑ Зоя.
Курнать ӑна мӗнпур тавра.
Яла капланнӑ нимӗç вӑйӗ.
Хӗр пӗлтерет:—Пар тупӑран!

Ахӑрттарать совет туппийӗ,
Хура çӗре тавӑрттарать.
Хӑпать мур нимӗçӗн сехрийӗ.
Вӑл анкӑ-минкӗн пӑхкалать.

Чухларӗ мур, эсрел пӑвасшӗ!
Тытса пӑхать бинокльран.
Хыпарлакан хӗре тытасшӑн
Салтак ярать пӗр рота тан.

Пуçланчӗ çапӑçу хаяррӑн...
Çӳлти—автоматран хӗртет...
Ак тимӗр ӑшалать кӑварран,
Ак пуля та пӗтсе çитет.

Тумларӗ юн та пӑтӑр-пӑтӑр,
Çапах чакмасть-ха вӑй-хӑват:
Граната вӗçрӗ йӑлтӑр-йӑлтӑр,
Вӑл шӑхӑрса çеç ыткӑнать.

Ун хыççӑн шӑхӑрчӗ теприйӗ,
Унтан татах, татах, татах...
Арканчӗ нӳрлӗ çӗр тӑприйӗ
Нимӗççене витсе хурсах.

Самант... чиркӳ тӑрри шӑпланчӗ.
Ырра-и ку? Е усала?
Самант... Хум хыççӑн хум ӑсанчӗ:
Тӑшман перет тупӑпала!

— Патрон та пӗтрӗ ман, гранат та...
Час передатчик те ванать...
Атакӑлать мана пӗр рота,
Татах çӗн вӑй ав пухӑнать...

Туссем, сыв пулӑр! Васкӑр, васкӑр,
Чиркӳ çине, шӑп ман çине!.."
Улать те тупӑ—лӑстӑр-ластӑр
Ишӗлтерет чиркӳ чулне.

Хупланчӗ йытӑ нимӗç йышӗ...
Йӗрет йӗтре, масар чавать:
Чипер хӗр Зойӑмӑр вилнишӗн
Çӗр нимӗçе çӑва çӑтать.

Яла кӗрет тӑван çар чаçӗ,
Алтаççӗ шӑтӑк салтаксем:
Шинельпеле витсе хураççӗ
Радисткӑн сив ӳтне вӗсем.

Танксем иртеççӗ чарӑнмасӑр,
Çарсем утаççӗ—шучӗ çук.
Чӑн юлашки фашист кӑнмасӑр—
Вӗсем киле таврӑнас çук.

...Эс чаплӑ Зойӑпа пӗр ятлӑ,
Шӑпу та санӑн унни пек,
Ӗçӳ те унни пек хӑватлӑ,
Вилме те вилтӗн эс ун пек.

Вӑл пулнӑ аслӑ вырӑс хӗрӗ,
Эс унӑн йӑмӑкӗ—чӑваш.
Ун ячӗ ӗмӗр пулӗ чӗрӗ,
Ан сӳнтӗр санӑн та, юлташ!

Хӗр пуççӑн пулнӑ вӑл чӑн паттӑр,
Вӑл ӳснӗ аслӑ Мускавра.
Сана чӑваш çемйи çуратнӑ,
Эс ӳснӗ ват Шупашкарта.

Мухтавлӑ пултӑр сан яту та,—
Çӳретӗр халӑх хушшинче,
Хисеплӗ пултӑр, пултӑр çутӑ,
Ан тухтӑр халӑх асӗнчен!

1946.

## МУСКАВ.

Мускавра-и
çуран уттарасшӑн?
Автобус,
троллейбус,
трамвай,
такси...
Кондукторсем çепӗç:
„Тархасшӑн!"

Суйлатӑн,
ларатӑн,
ак ҫит!..
Ку темӗн мар,
метро курман-ха эпӗ.
Тахҫантанпах
курас тесе ҫунап.
Эп савӑнатӑп,
хӗпӗртетӗп,
Куҫ-пуҫ алчӑрасран кӑна
хӑрап.
Ҫемҫе такси ҫинчен
анатӑп,
„Метро" тесе
ҫырни умне,
Сарлакарах пусса
утатӑп—
Шуса тӑран
пусма енне.
Чӑнах та,
умра—эскалатор,
Ҫӗрӗн тӗпнех
сана илсе анать.
Хуллен кӑна
кӑлтӑртатса анатӑр,
Ҫав хушӑрах
хаҫат вулатӑр,
Ансан, ансан—
вокзал уҫӑлать.
Ак тамаша!—
ӑҫта та мрамор,
Тӗсрен илсен—
кӗрхи хӑймаллӑ сӗт.
Ирӗксӗрех шутлан:
„Таса-ши урамӑр?
Метро—
Мускав илемӗ вӗт".
Маншӑн,
ялтан килен чӑвашшӑн,
Кунта—
халлап тӗнчи!
„Ха!"—тесе
Эп кӑтартасшӑн
кашни япаланах тӗллесе.
Ларса канма та пултаратӑн:
Хӑть радио итле,
ҫиес килсен—
буфет.
Тӗлӗннипе ун-кун пӑхатӑн,
пӑхатӑн та—
сӑну ӳкет.
Пуҫ тӗлӗнче
ҫунать пин лампӑ.
Илемлӗ.
Ирӗк.
Ҫутӑ...
Янн! каять сас.
Чӑн-чӑнласах
ҫӗр ҫинчи пек эс хапӑл,
ҫӗр ҫинчи пек хавас!
Минут кӗтетӗн,—пуйӑса-тӑр.
Ҫитет.
Сас-чӳ те ҫук.
Йӑваш.
Перрон ҫинчен ларатӑр,
ларсан-и—
ваш!
Каятӑр ухӑ пек хӑватлӑн.
Калатӑр:
„Ток—мӗнле хӑват!"
Сӑнарӑр-и,
мӗн чухлӗ алӑк,—
Хӑй уҫӑлать,
хӑй хупӑнать.
Анчах мӗскер ҫинче
ларса пыраҫ пуль
тетӗр?—
Диван ҫинче!
Ҫук, юлташсем,
пӗрне-пӗри хӗсместӗр,
Сире кунта аван,
сире кунта ҫемҫе.
Ларса пыруҫӑн
пысӑк савнӑҫ
Ӑша тулать,
сиксе тапать чӗрем.
Калатӑн:
„Мӗскер тума пултармӗҫ
Хастар ҫынсем—
большевиксем!"
Е,
тарӑн,
тарӑн шухӑша каятӑн
Тӑван ялта—
кун пек метро пулсан!..

— Ан тӗлӗнтер!—
    хӑвна чаратӑн.—
Епле ӑсу
    ҫитмест-ха сан?
Мӗне унта метро?
    Грузовиксем мӗн чухлӗ!
Ҫителӗклӗ.
    Калкал.
Ак ҫӑмӑл машинапа
    час лӑках тулӗ
Колхозлӑ ял.
    Пуйӑс васкать.
    Ик-виҫ минут иртет-и,—
Каллех вокзал.
Мускав айпе
    эс пуля пек вӗҫетӗн,—
Зал хыҫҫӑн—
    зал.
Тухатӑн ҫӗр ҫине
    ӑнран кайса пек,
Пӑхан ҫуртсем ҫине—
    калпак ӳкет.

Кунран куна ӳсет
Мускавӑн чапӗ.
Кун хыҫҫӑн кун.
    Мускав ӳсет.
Ҫитмен,
    курман эп Парижа та,
Нью-Йорк айне те эп
    анман.
Анчах та эпӗ тавлашатӑп:
Кун пек метро
    вӗсем курман.
Пӗлӗтелле
    ҫуртсем кармашчӑр,
Ҫӗклен, тӗп хуламӑр,
    тӗреклӗн те васкав!
Тӑшман ӑмсантӑр.
    Туссем калаччӑр:
„Салам сана,
    аслӑ Мускав!“

1937.

## КОМСОМОЛЕЦСЕН МАРШӖ.

Пире ҫӗнӗ ӗмӗр ҫекленӗ,
Ҫуралнӑ эпир ҫуркунне,
Вӗрентнӗ пире аслӑ Ленин,
Кӑтартнӑ ҫӗн пурнӑҫ ҫулне.

    Комсомолец, харӑс ут,
    Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
    Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
    Партипе пӗрле!

Пире аслӑ Сталин ӳстерчӗ,
Вӑл уҫрӗ шкулсен алӑкне,
Атте пек пӑхса ҫитӗнтерчӗ,
Вӑл кӳртрӗ ҫӗн пурнӑҫ ҫуртне.

    Комсомолец, харӑс ут,
    Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
    Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
    Партипе пӗрле!

Эпир ҫирӗп хурҫӑ шӑратнӑ,
Вӗретнӗ Урал чугунне,
Хастарлӑн якатнӑ, хӑпартнӑ
Ҫӗршывӑн хӗрӳ кирпӗчне.

    Комсомолец, харӑс ут,
    Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
    Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
    Партипе пӗрле!

Тӑван пиччепе юнашаррӑн
Ҫӗклентӗмӗр юнлӑ вӑрҫа,
Хаяр тӑшмана вут-кӑваррӑн
Аркатрӑмӑр, чысшӑн тӑрса.

    Комсомолец, харӑс ут,
    Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
    Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
    Партипе пӗрле!

Пире ҫӗнӗ ӗмӗр ҫекленӗ,
Пире ҫӗнӗ пурнӑҫ чӗнет.
Вӗрентнӗ пире аслӑ Ленин,
Халь Сталин пире вӗрентет.

    Комсомолец, харӑс ут,
    Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
    Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
    Партипе пӗрле!



# *ХВЕТĔР УЯР*

## СУК ХĔРРИНЧЕ

*(Юлташ калавĕ.)*

Эпир пĕр лупашкара канса выртатпăр. Шăп кăнтăр тĕлĕ. Йĕри-тавра куҫа шартса, вĕҫĕ-хĕррисĕр чечек уйĕ сарăлса выртать, инҫетре вăрмансем курăнаҫҫĕ, шыв йăлтăртататать. Ҫак кĕтесре ҫĕр ҫула яхăн ĕлĕкрех чаплă сунарҫă Иван Сергеевич Тургенев ҫӳренĕ. Ăшра, таҫти сăваплă вырăна пырса кĕнĕ чухнехи пек, темĕн чĕтренсе илет, пурнăҫшăн, тĕнчери пур ырлăх-хурлăхсемшĕн такама тав-тăвас шухăш пырса кĕрет. Тен ку вăл вăхăтлăха чун хăпартланни кăна пулĕ, анчах ҫапах та фронтри шиклĕ пурнăҫ маншăн ҫак самантра паха та интереслĕ пек туйăнать. Фронтра ҫын пурнăҫа хаклама вĕренет. Кунта чи таса ĕҫсемпе шухăшсем аса килеҫҫĕ, чи хăватлă ĕмĕтсем ҫуралса ҫитĕнеҫҫĕ. Ман шухăшпа, Улăп ҫинчен калакан юмахсене те кăмака ҫинче ларакан айван мар, хăрушлăха кулленех куҫран пăхакан паттăрсем хывнă. Хăюллă ҫын пуҫĕнче шухăшĕ те хăюллă, айванăн—шухăшĕ те айван.

Эпĕ хампа юнашар выртакан Ильин ҫине пăхатăп. Вăл та, ман пекех, вăрҫăччен студент пулнă, кĕнекесене юратнă, чаплă ĕмĕтсемпе пурăннă.

Ильинăн кăшт тăрхаларах хитре пичĕ, пысăк хура куҫĕсем, пĕтĕм кĕлетки—вăл тулли кăмăлпа канса выртнине кăтартаҫҫĕ.

Сывлăшра шăна-пăвансем явăнаҫҫĕ; чечексем ҫумне куҫсăр пек пырапыра ҫапăнса, пĕччен пыл хурчĕ вĕҫсе ҫӳрет. Сăмса умĕнчех хăмăрлана пуҫланă шултра ҫырласем усăнса тăраҫҫĕ.

Ильин хăех калаҫма пуҫлать.

— Эх, ку ҫырлана пĕрер чĕрес татса пельмень пĕҫерес пулсан...

Сăмахĕсене вăл, пулма пултарас ҫук

япала ҫинчен калаҫнӑ пек, тӑсса та шӑппӑнтараххӑн каласа хурать.

— Вӑрҫӑ иртсен пӗҫерсе ҫийӗпӗр,— тетӗп эпӗ. — Вӑрҫӑ чарӑнсанах эсӗ Шупашкара пыр. Атӑл хӗррине тухса хуран ҫакса ярӑпӑр та...

— Вӑрҫӑ иртсен ӑна такам та пӗҫерме пултарать. Эсӗ халӗ пӗҫер вӑт, кунта, фронтра..

— Пӗҫер-ха вӑт, ҫийӗпӗр.

— Эпӗ-и?

Ильин сасартӑк тӑрса ларать.

— Пӗҫерейместӗ, тетӗн-и?—Курса тӑр!.. Ей бог та... Атту тупнӑ пӗр юрӑ: вӑрҫӑ иртсен те вӑрҫӑ иртсен, теҫҫӗ. Хӑнӑхнӑ та кашни ӗҫех ҫавӑн пек сӗвӗртсе хӑварма. Йӑваш характерлӗ ҫынсем ҫапла хӑтланаҫҫӗ ӑна. Чӑнах. Хӑйсем кахаллӑхне пула пур япалана та ырана хӑварса пыраҫҫӗ. А ыранӗсен—вӗҫӗ те ҫук. Пӑхӑсӑн— ҫыннӑн алли-урисем чӗтрекен пулнӑ, ҫӳҫӗ шурса кайнӑ, курпунӗ—хӑпарту пысӑккӑш. „Ҫук ӗнтӗ, манран пулмарӗ. Ачасем ҫинче шанчӑк, эп тӑвайманнине ҫавсем туса пӗтерччӗр". Ҫук, эсӗ хӑвах ту!—кулса ярса сасартӑк мана хулпуҫҫирен ҫапрӗ Ильин.—Ачасем—хӑйсемшӗн пурнаҫҫӗ, саншӑн мар.

— Кашни самантрах пурӑнма пӗлес пулать,—тет Ильин, кӑшт чӗнмесӗр выртнӑ хыҫҫӑн.—Неччу унта ырана хӑварса пыма! Чӑнах.—Унтан вӑл, хӑйӗн сӑмахӗсене шӳтле ҫаварса яма хӑтланса, кулса илет те автоматне ҫавӑрса тытать.—А пельмень пулатех. Курса тӑр... Ӗненместне?

Ӗненмесӗр! Ильин каларӗ-тӗк—пулатех вара. Хӑйне кирлӗ япаласене ҫӗр айӗнчен чавса кӑларать те—тупать вӑл.

Эпӗ месерле ҫаврӑнса выртса тӳпенелле пӑхма тытӑнатӑп. Аван ҫанталӑк! Кӑн-кӑвак тӳпере кӑтра пӗлӗт таткисем шӑваҫҫӗ. Сывлӑшра эрешмен карти ука тӗслӗ курӑнса йӑлтӑртатать. Пӗр те пӗр шухӑшласан, кунта нимӗнле вӑрҫӑ та, нимӗнле хӑрушлӑх та ҫук, темелле ӗнтӗ. Ҫав тери мирлӗ те чуна лӑплантаракан сӑн-сӑпат. Тӳпе те, чечексем те, эрешмен карти те—пурте эпир ӗлӗкрех уйра ҫанӑсене тавӑрса тыр вырнӑ чухнехи пекех. Анчах инҫех те мар пулемӗт кӗскен таклатса илет, автомат шатлатать, аякра-аякра, такам йывӑҫ ҫурт ишсе антарнӑ пек, бомбӑсем ӳксе ҫурӑлаҫҫӗ.

Эпир нумаях пулмасть разведкӑран таврӑнтӑмӑр. Манӑн юлташ, Куйбышев облаҫӗнчи чӑваш ачи Ильин, автоматне тасатать. Кӗҫех ак вӑл ӑҫтан та пулсан шыв тупса килсе чей ҫакса ярать, ҫырла татма пуҫлать...

— „Кашни самантрах пурӑнма пӗлес пулать", тетӗн эсӗ. Мӗнле, ӳкӗнмелли вӑхӑтсем пулман-и санӑн хӑвӑн? Усӑ курма пӗлнӗ-и эсӗ кашни минутпа?

Ильин автоматне хурать те пӗр вӑхӑта мана куҫран пӑхса ларать, унтан унӑн пысӑк хура куҫӗсем таҫта аяккалла тинкерсе пӑхма тытӑнаҫҫӗ.

— Темӗн,—тет те вӑл курӑк ҫине хутланса ларать. — Ӗҫре, вӗренӳре кайран ӳкӗнмелле ан пултӑр, тесе тӑрӑшаттӑмччӗ ӗнтӗ эпӗ. Совӗҫе яланах таса тытма тӑрӑшаттӑм. Кӑна-эпӗ мухтанса мар, хамӑн шухӑшсене кӑна каласа паратӑп. Аякран пӑхсан, тен, ку енӗпе те шайрӑксем пулкаланӑтӑр... Вӑл мар-ха, мана леш... Мӗнле калаҫҫӗ-ха ҫав... личнӑй пурнӑҫри пӗр... ҫитмен ӗмӗт кавӑҫ памасть.

Ильин темшӗн вӑтаннӑ пек пулса аллипе ҫӳҫне сӑтӑркаласа илет, эпӗ ыйту парасса кӗтсе ман еннелле пӑхать.

— Личнӑй пурнӑҫ тени вӑл... мӗнле калас, питӗ те кӑткӑс япала иккен,—тесе малалла калама тытӑнать вӑл нӑртакран. — Хӑш-пӗр чух санӑн хуйху-суйху пӗтӗм тӗнчене хупласа илнӗ пек туйӑнать, ҫутҫанталӑка курми пулатӑн. А тепри сан ҫумӑнтах апат та ҫиет, пуҫӗ те—тӑп-тӑрӑ урах.

Тен, ман калавӑм та сана ҫавӑн пек туйӑнӗ. Тен, вӑл маншӑн кӑна интереслӗ пуль. Ҫапах та итле, каласа парам сана кӗскен...

I

1941-мӗш ҫулхи ҫуркунне пире, институтри студентсене, практикӑна салатрӗҫ. Манӑн пӗр пӗчӗк хулана каймалла пулчӗ. Лав тытрӑм та ҫула тухрӑм. Ҫанталӑк чиперех тӑратчӗ-ха. Ҫу умӗнхи кӑмӑла ҫӗклентерекен кун мӗн кӑнтӑрла иртиччченех ҫӗр тӗрлӗн ҫиҫсе, йӑлкӑшса тӑчӗ. Ялсене пырса кӗрсен, хӑлхара ҫуртсем ҫинчен шӑпӑртатса тумла юхни, ача-пӑчасем савӑнӑҫлӑн ҫуйхашни илтӗнсе тӑрать. Ҫу ӑшшине туйса, йыт-качкасем те ӗрӗхтерсе кӑна ҫӳреҫҫӗ, вӗрес килмен ҫӗртенех пирӗн лава сырса илсе уй хапхинчен тухиччченех харкашса ӑсатса яраҫҫӗ.

Каҫпала кӗтмен туман ҫӗртенех пӗлӗт хупласа илчӗ, ҫерҫи пуҫӗ пек лапкам-лапкам йӗпе юр ҫӑва пуҫларӗ, пӗтӗм юр пӗлӗчӗ ҫӗре татӑлса анчӗ, тейӗн. Халиччен чиперех калаҫса пынӑ лавҫӑ-старик сасартӑк чӑхӑмлама пуҫларӗ.

— Мӗнле шутлатӑн, ыр ҫыннӑм,— тет,—ман лаша ҫак самантрах ӗшенсе ӳкӗ-ши, е кӑштах каярахпа-ши?— тет.

Лаши хӑйӗн хуҫи пекех чее йышши пулас: яка ӳтлӗ пулсан та, вӑл майӗпен те сӳрӗккӗн пускаласа пырать, тӑтӑшах пирӗн ҫине ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхать.

— Ҫак самантра та, кӑшт каярахпа та ӗшенес ҫук-ха вӑл санӑн,—тетӗп эпӗ.—Вӑл лашапа И** хулине мар, Мускава та пӗр шикленмесӗрех кайса килме пулать.

Пӑртак чӗнмесӗр пынӑ хыҫҫӑн лавҫӑ каллех сӑмах хушма хӑтланса пӑхрӗ.

— Карчӑк та пӗрре мар ятланӑ мана уншӑн... Ҫемҫе кӑмӑллӑ пулнӑшӑн, тетӗп-ха та... Ара, кам ухмахӗ кайтӑр ҫак ҫанталӑкра вунӑ тенкӗшӗн хӗрӗх ҫухрӑма?

Студент кӗсйи мӗнли паллӑ ӗнтӗ вӑл, ҫавӑнпа лавӑҫа хирӗҫ эпӗ ырӑ та, усал та шарламарӑм. Старик телейне, инкекӗ те лаша ури айӗнчех пулнӑ иккен. Кӗҫех пӗр яла пырса кӗтӗмӗр. Ялтан тухасси ик-виҫӗ кил ҫеҫ юлнӑччӗ, пире хирӗҫ пӗрене тиенӗ лавсем килни курӑнчӗ. Лавсене ҫул парас тесе, старик лашине сылтӑмалла тытрӗ. Ачасем ҫунашкасемпе яранса пӑрлантарнӑ ҫырма хӗррипе пыракан ҫуна, хӑяккӑн-хӑяккӑн шурӗ те, ҫырманалла кая пачӗ. Вӑл хӑй сулӑмӗпе лашана та туртса антарчӗ. Такансӑр лаша пӑр ҫине персе анчӗ. Шартлаттса турта хуҫӑлса кайрӗ.

— Ҫитрӗ ҫимӗк... Ҫав пушӑ ҫунана та туртса кӑлараймарӑн пулать те...— вӑрҫса тӑкрӗ лашине ҫырма тӗпӗнче мӗшӗлтетекен лавҫӑ.

— Хамӑр та ҫав. Ав, сулахаялла кӑна пӑрмалла пулнӑ, ҫырмана курах сылтӑмалла тытрӑн вӗт... терӗм эпӗ, пулнӑ инкеке лавҫӑ ҫине йӑвантарса.

— Вара... Инкек куҫа курӑнса килмест, теҫҫӗ ҫав,—ҫийӗнчех каласа татрӗ лавҫӑ.

Лашана хӑвӑрт тӑварса, ҫунине ҫырмаран сӗтӗрсе кӑлартӑмӑр.

— Эккей, ҫитесси нумай юлманччӗ...

— Турта тупас пулать ӗнтӗ...

— Тепле-ҫке?..

— Ялӗ вӑрман ҫывӑхӗнче-ха. Ялта ҫерҫи вилмен, теҫҫӗ... Ав ҫав ҫурта кӗрсе пӑхам-ха,—тесе эпӗ хӑйӑ ҫути курӑнакан кил еннелле утрӑм. Кивелнӗ вырӑсла хапхан калинкине тӗксе пӑхрӑм. Питӗрмен. Ҫенӗкӗ те уҫах. Хуллен пӳрт алӑкне шаккатӑп.

— Килте-и хуҫисем?

— Кам унта?—илтӗнчӗ пӳртрен хӗрарӑм сасси.

— Эпӗ-ха... Ҫул ҫӳрекен.

— Кӗрӗр...—терӗ пӳртри сасӑ.

Тирпейлӗ пӗчӗк пӳрт. Сӗтел ҫинче

йĕс сăмавар чашкăрса ларать, ĕçмеçимесене те пуçтарман.

— Сывă-и?

— Сывах-ха... Тĕпелелле иртĕр.

Ман умра, кăшт вăтаннă пек, çав хушăрах ырă кăмăл суннă пек, пĕве çитнĕ хитре хĕр тăрать. Эпĕ пĕрре хĕр çине, тепре урасем çине пăхса илтĕм те, хам та хĕрелсе кайрăм.

— Каçарăр, лайăх тасатса кĕреймерĕм...

Хĕр эпĕ вăтаннине сисрĕ пулас, кулançи пулчĕ.

— Инçетрен килетĕр-и? Çанталăкĕ ытла пăсăлса кайрĕ...

— Чарăнать пулас-ха та...

— Тĕпелелле иртĕр.

— Çук, иртсе тăмастăп: ман тулта лавçă пур.

— Лавçă?.. Ара, ма чĕнместĕр ăна, чĕнĕр, пўрте кĕрсе ăшăнтăр.

— Пирĕн васкамалла-ха... Пĕчĕк инкек пулчĕ пирĕн. Турта хуçăлчĕ.

— Инкекĕ пĕчĕкех те мар иккен,— каллех кулса илчĕ хĕр.—Турта кирлĕ апла сире? Туртине тупăпăр...

— Тавтапуç; тупсан тем пекехчĕ.

— Эй, часрах тата эсир!—илтĕнчĕ тултан лавçă сасси.

— Халех,—терĕ хĕр, сасартăк хыпăнса ўксе,—тумланам-ха. Сарайĕнче туртасем пурччĕ пирĕн...

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, хуçăк турта вырăнне çĕннине лартрăмăр.

— Ăçталла çул тытатăр? Инçе каймалла пулсан, пирĕн патра çĕр каçăр...—терĕ хĕр, кăштах ĕнтĕркенĕ сасăпа.

— Инçи-качки... Çак юлташа хулана леçсе хăвармалла-ха ман,—терĕ лавçă.—Студенцă вăл... Лаша ĕшенчĕ. Уринчен урине те аран ирттерет... Юлташ сирĕн пата юлма килĕшсен, питех те аванччĕ. Эпĕ вара тўрех киле кайăттăм, инçетрисем мар эпĕ кунтан.

— Юлăр эппин, юлташ,—çаврăнса тăчĕ хĕр ман еннелле.—Ыран ирпе ăсатăп сире.

— Юрĕ эппин, килĕшетĕп, спасибо.

— Турташăн та спасибо,—терĕ лавçă, çуни çинчи улăмне кăпăшлантарса.—Пасар кунĕ çула май кĕрсе парăп... Ну, сывă пулса юлăр.

— Сывă пулăр. Ан чăрманăр: туртасем татах та нумай. Чипер çитĕр.

Лавçă лаша ĕшеннĕ тенине мансах кайрĕ пулас, пирĕнпе алă тытса сывпуллашрĕ те, çуни çине кĕрсе ларса, лашине туртса çапрĕ. Лешĕ пĕр самантрах куçран çухалчĕ...

Хĕр кулса ячĕ.

— Эсир самаях йывăр пулас. Куртăр-и, мĕнле кайрĕ лаша сирĕнсĕр?

Эпĕ, чемодана йăтса, хĕрпе пĕрле пўрте кĕтĕм.

— Кўрĕр чемоданăра, ав лере кайса лартам,—терĕ те хĕр, манран чемодана илсе, тĕпелти сак айне кайса лартрĕ.—Салтăнăр та тĕпелелле иртсе ларăр.

Эпĕ каллех пўртре хыпаланса çўрекен хĕр çине пăхса илтĕм. Чăн та чипер иккен вăл. Çинçе пилĕклĕ те яштака пў-силлĕскер, вăл çăмăллăн та илемлĕн хускалса çўресе чей чашкисене майлаштарать, пысăк хура куçĕсемпе ман çине кулкаласа пăхса илет.

„Хитре хĕр,—шухăшласа илтĕм эпĕ,—кăмăллă..."

Мана çав самантра темшĕн Пушкинăн „Станционнăй смотритель" повеçĕнчи ĕçсем аса килчĕç, темле аван мар пек туйăнса кайрĕ.

Эпĕ салтăнсан, хĕр мана сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ.

— Чей ĕçме ларăр, юлташ. Ăшăнăр, ларăр, ларăр...

— Тавтапуç. Алăсене çăвасчĕ те малтан...

— Килĕр, ал çумалли кунта...

Эпĕ çăвăнтăм та, хĕр арчинчен кăларса пана алшăллипе шăлăнса, сĕтел хушшине кĕрсе лартăм.

— Çийĕр, ĕçĕр, — сĕнме пуçларĕ мана, хĕр.—Акă пыл, йӳçĕтнĕ панулми...

— Спасибо. Манăн чемоданра шаритленĕ хур пурччĕ... Кăларам-ха çавна.

— Ан чăрманăр, ыран ирпе çийĕр ăна... Халь сивĕ вăл.

— Юрĕ эппин, сирĕн пек пултăр... Сирĕн ыттисем ăçта тата?..

— Анне кӳрше тухса кайрĕ-ха.

— Ялтах пурăнатăр-и?

— Мар, хулара ĕçлетĕп. Шкулта...

— Каçарăр та, мĕнле чĕнмеллеччĕ-ха сире?

— Нюра... Сире тата?

— Ильин... Федор Ильич.

— Ăçта кайма тухнă вара эсир... Федор Ильич?

— Практикăна каятăп. Институтран...

Пĕр вăхăта пĕрне-пĕри нимех те чĕнеймерĕмĕр. Эпĕ çисе тăрантăм та, спасибо — ыр кăмăлăрпа апатăршăн, текелесе, сĕтел хушшинчен тухрăм.

— Çимеллеччĕ-ха, чей ĕçмеллеччĕ. Апачĕ те нимех те çук та...

— Пурте çитет. Тăраничченех ĕçрĕм те, çирĕм те.

Каллех сăмах таталчĕ. Хĕр пуçне чикнĕ те вăрăм çивĕт вĕçĕнчи хăюне сӳткелесе куç хӳрипе ман еннелле пăхать.

— Иккĕн çеç пурăнатпăр тетĕр-и?— сăмахсем айванла янтранине сиссе тăркачах, калаçăва хускатма хăтланса пăхрăм эпĕ.

— Мар...—майĕпен те тытăнчăклăн, çав вăхăтрах именереххĕн каласа хучĕ Нюра.—Пичче те пур... Хулара ĕçлет... Учитель.

Эпĕ Нюра хулара ăçта ĕçленине ыйтса пĕлесшĕнччĕ, ăна та ыйтаймарăм, ĕшеннипе часах çывăрса кайрăм.

Ирхине эпĕ вăраннă тĕле чылай вăхăт çитнĕччĕ. Пĕркеленчĕк питлĕ пĕчĕк карчăк мана куркапа ăшă сĕт ăсса кĕрсе пачĕ, сĕтел çине ывăспа икерчĕ кăларса лартрĕ.

Нюра пӳртре çукчĕ. Эпĕ васканипе вăл ăçта кайнине те ыйтса тăраймарăм, çикелерĕм те, чемодана йăтса, хуланалла тухса утрăм.

* * *

Çуран утса çӳресси маншăн темрен те паха. Çӳлте—кăвак тӳпе. Йĕритавра вĕççĕр уй, юрпа хупланнă вăрмансем, çырма-çатра. Аякра пĕр вăхăта вĕçен кайăк çунатти е куян мĕлки вĕлтлетсе илет. Утатăн, утатăн... Тăвăр пӳлĕмсенче, тĕркешӳре пурăннă хыççăн, уйра çав тери çăмăл та ирĕк пек туйăнать. Чун уçăлса каять. Ал-урасем, хул-çурăм, пĕтĕм ӳт-пӳ канать, çутçанталăк ырлăхĕпе савăнать.

Хăш-пĕр чух çавнашкал самантсем пулаççĕ: мĕн ĕмĕтленетĕн, мĕн шухăшлатăн,—çавă пĕр чăрмавсăрах пурнăça кĕрессĕн туйăнать. Ман пурнăçри ĕмĕт—хамăр вăйпа колхозра чаплă электростанци туса лартасси. Ик-виçĕ çул хушши ĕнтĕ эпĕ унăн кашни пайне куç умĕнче курса тăратăп, урăписем мĕнле çавăрнинине илтетĕп. Тăван çĕршыв пулăшнипе ура çине çĕкленнĕскер, эпĕ хама çак самантра чи телейлĕ çын, тесе шутлатăп. Пĕрре те ĕненес килмест... Ик-виçĕ кун каялла çеç эпĕ вĕренсе лараттăм. Нумаях та пулмасть... çарран шкула чупаттăм. Халĕ ак—хам вĕрентме пуçлатăп.

Чăн та, телей тени вăл кам уншăн тăрăшать, кам ăна шырать — çавăншăн çеç иккен.

Ура айĕнче çемçе юр нăтăртатса пырать. Ăшă çил вĕрет. Эпĕ аякра курăнакан тĕтĕмсене, кăвак тӳпене, кайăксене сăнаса пыратăп, вĕсем мĕнле тĕслине, ăçталла вĕçнине куратăп, анчах пуçра, пуçра та мар-ха, темĕнле вăрттăн кĕтесре, шухăшсен айĕн-

че—пĕрмаях ĕнерхи хĕрĕн сăн-сăпачĕ сĕмленсе пырать. Тепĕр чух шухăшсем пачах та урăх еннелле куçса каяççĕ. Эпĕ хам каякан шкула, унти ачасене, учительсене куратăп. Шкулĕ вăл темшĕн уллах урамра, çырма хĕрринче пулассăн туйăнать. Картишĕнче сад. Улмуççисем, чие йывăççисем айне хыçлă тенкелсем лартнă. Икĕ хутлă чул çуртра ачасем савăнăçлăн кăшкăрашаççĕ...

Ăшра темĕнле кансĕр шухăш сисĕнтернĕçем сисĕнтерме тытăнать, вĕчĕрхенме пуçлать. Таçти вăрттăн хĕлĕх, вĕçĕмсĕр чĕтренсе тăрса, юлашкинчен пĕтĕм шухăша хупласа хурать. Сасартăк астуса илетĕп: Нюра!..

— Эх, юлташăм,—тесе Ильин мана сасартăк ыталаса илчĕ,—эс вăл хĕре курас пулсан... Пуç антраса каять вĕт. Ун пек хĕр хама юратнине пĕлес пулсан, эпĕ çĕр чăмăрне тепĕр майлă çавăрса лартма хатĕр...

— Ытла тата эсĕ... Вара мĕн пулчĕ? Çапла пĕччен хăпартланнипех пĕтсе ларчĕ-и юрату тени?

— Тăхта эсĕ... Хула патнелле çывхарса пынăçем чĕре тата хытăрах пăшăрханма пуçларĕ. Аптранă енне каялла çаврăнма та шутласа пăхрăм. Анчах килте мар-çке вăл... Юрĕ, терĕм вара эпĕ хама-хам. хулара эпĕ ăна шыраса тупатăпах, унта çук пулсан, каялла таврăннă чух, хăйсем патне кĕрсе тухатăп.

Шкулĕ вуçех те эпĕ кĕтнĕ пек пулмарĕ. Хула леш хĕрринче, айлăмра ларать вăл. Йĕри тавра сад та чĕртсе ĕлкĕреймен-ха. Çапах та çулла илемлĕ пулмалла ку вырăн. Инçех те мар вăрман курăнать. Сук шывĕ юхса иртет. Шкул çурчĕ пысăк та çĕнĕ. Аялти хутра мана ачасем директор кабинетне кăтартса ячĕç.

Алăкне уçрăм та, сасартăках ура вăйĕ пĕтнĕ пек пулнипе, пĕр пукан çине тĕрентĕм. Сĕтел хушшинче... Нюра лара парать. Эпĕ ăна кĕтмен çĕртен тĕл пулнипе сывлăх сунма та, алăка хупма та манса кайнă. Коридорта ачасем шавланине илтсен тин тăрса хупрăм та сĕтел патне пырса тăтăм. Пит-куç хамăн чĕкĕнтĕр тĕслех пулмалла, вĕри çапнине те сиссех тăратăп.

— Директора курма пулать-ши?

Нюра хăвăрттăн ман çине пăхса илчĕ те темшĕн хăй те хĕрелсе кайрĕ; каллех хут çине пĕшкĕнчĕ, пуçне çĕклемесĕрех пукан çине тĕллесе кăтартрĕ.

— Чиперех çитрĕр пулĕ? Ларăр, ларăр... Директор урокраччĕ-ха.—Унтан вăл пуçне хут çинчен илчĕ те уççăн та савăнăçлăн кулса аллине пачĕ:

— Каллех турта пирки мар пуль те эсир?

Сăмах майĕпе каласа хунă шӳт, ăшă кулă, эпĕ вăтаннине асăрхаман пек туни—пĕр самантра кăмăла хăпартрĕ. Эпĕ Нюрăн вĕри аллине чăмăртарăм та хута сĕтел çине кăларса хутăм.

— Çук, хальхинче урăх сăлтавпа çӳретĕп. Каштах сирĕнпе пĕрле ĕçлесе пăхма шухăш пур.

— Пирĕнпе пĕрлех мар пуль-ха та... Эпĕ пуçламăш классенче кăна ĕçлетĕп вĕт.

— А вăл çавах мар-и-мĕн? Ман шутпа унта ĕçлесси тата та кансĕртерех,

— Пĕрле килме вăратасшăнччĕ те эпĕ сире, тивмерĕм. Питĕ хитре çывраттăрччĕ.

— Вăратнă пулсан, хăвăрах кансĕр пулнă пулĕччĕ. Эпĕ хытă утма юрататăп.

— Мĕнлеччĕ унта, утса пăхнă пулсан. Тен эпĕ те юлсах каймăттăм.

Нюра паян мăйĕ тавра кăшăл пек тăракан шур çухаллă хура кĕпе, çӳхе пальто тăхăннă. Хура çӳçне кăпăшлантарса сулахай еннелле тураса хунă. Вăл пĕр вунсакăр-вунтăхăр çулсенче пур пулсан та, темшĕн питĕ çамрăк пек курăнать.

Нюра мана кунта ĕçлеме яни çинчен

калакан хута вуласа пăхрĕ те, кăщтах тĕлĕннĕ пек пулчĕ.

— Математикăпа физика? Хм... Эп сире темшĕн литератор е историк пулĕ, тесе шутланăччĕ.

— Мĕншĕн?

— Хам та пĕлместĕп мĕншĕнне. Сирĕн сăн темле... Математика учителĕнни пек мар.

— Мĕнлерех-ши апла?

— Мĕнле калас сире... Эсир гуманитарнăй наукăсене вĕрентекен çын евĕрлĕ курăнатăр.

— Вĕсен хăйсене евĕр сăн-и мĕн? Беликов та гуманитарнăй наукăна вĕрентнĕ. Йăнăшмастăп пулсан, вăл чĕлхеçĕ пулнă.

Нюра кулса ячĕ те—тăчĕ.

— Паранатăп, каçарăр тархасшăн... Эп темĕскер пăтрашăнса кайрăм нихак-ха.

— Пырать... Нимех те мар... Сирĕн пиччĕр те çак шкулта ĕçлет терĕр-и?

— Çакăнта ĕçлет.

Кĕçех шкул директорĕ пычĕ те мана хваттере ертсе кайрĕ.

II

Сисмесĕрех пĕр уйăх иртрĕ. Хулари садсем шап-шур чечеке ларчĕç. Сук шывĕ хĕрринче иртен пуçласа каç ченех хурсем какалаççĕ, ача-пăчасем çуйăхашаççĕ. Хула таврашĕнчи çерем симĕс курăкпа тата хур тĕкĕпе хупланчĕ.

Ĕçсене пула эпĕ ку хушăра никампах та паллашса ĕлкĕреймерĕм. Кăнтăрла кунĕпех шкулта иртет, каçпа ученикcен тетрачĕсене юсаса ларап, тепĕр кун валли конспектсем туса хатĕрлеп. Çĕрле... ăçта кайăн, тепĕр тесен, çĕрле ют хулара? Ик-виçĕ хут шкул директорĕ Сергей Кузьмич патĕнче пултăм, анчах унпа пирĕн сăмахсем пиçсех каймарĕç. Сергей Кузьмич, кăшт шатрарах питлĕ лутра çын, темшĕн мана çуралнăранпах директорта пурăннă пек курăнать. Учениксемпе калаçнă пек, яланах вĕрентсе калаçать вăл, яланах ăслă сăмахсем калать.

Малтанах калама пулать: Сергей Кузьмич вăхăтра выртать те вăхăтра тăрать, нихçан та йăнăшмасть, йăнăшма та пултараймасть. Анчах уссине те унран ытлашшинех ан кĕт: унашкал çынсем пур ĕçре те „золотая середина“ текен правилăна пăхăнса пурăнаççĕ.

Пĕрремĕш хут пырсан, Сергей Кузьмичăн сентенцийĕсем мана çĕнĕ пек туйăнчĕç, иккĕмĕш хутĕнче эпĕ хам студент иккенне астуса илтĕм, виççĕмĕшĕнче—йăлăхтарса çитерчĕç.

Ытти учительсенчен Нюра пиччĕшĕпе, Иван Петровичпа, çывăхрах туслашрăмăр. Иван Петровича учительсем кăшт кулăшларах çын, хиртяк, кĕнекеçĕ тесе шутлаççĕ иккен. Çав вăхăтрах камăн та пулин ытса пĕлмелли пулсан, е тавлашу тухса кайсан, ыйтăва татса пама тӳрех çавăнтан ыйтаççĕ. Иван Петрович хаçат-журналсене те çыркалать иккен.

Эпĕ ăна малтанах Кавказ çынни пулĕ тенĕччĕ. Кĕске туналлă та йĕпкĕн хура çӳçлĕскер, курпун сăмсаллăскер, вăл учительсен пӳлĕмне пырса кĕрсенех кĕнекине хучĕ те ман çумма пырса ларчĕ.

— Die Stunde ist zu Ende[1] терĕ вăл, куçлăхĕ витĕр ман урасем çине тинкерсе.—Wis spät ist es?[2] Манăн каçчен яла çитес пулать-ха...

Учительсем кулса ячĕç.

— Was?—текелесе Иван Петрович кĕнекине çавăрса тытрĕ.—Аннене курманни чылай пулать-ха. Паян йăмăк кайса килчĕ те, шутсăрах кĕтет тет... Утас пулĕ...

Эп çаплах чĕнменнине кура Иван Петрович пуçне çĕклерĕ те тĕлĕннипе куçлăхне хывса илчĕ.

---

[1] Урок пĕтрĕ.
[2] Миçемĕш сехет?

Эпир иксӗмӗр те ура ҫине сиксе тӑтӑмӑр.

— Каҫарӑр тархасшӑн,—терӗ те вӑл аллине тӑсрӗ.—Эпӗ сире нимӗҫ чӗлхине вӗрентекен Федор Касьянович пулӗ тесе. Паллашар: чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен Иван Петров. Эсир?..

Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах тупӑнчӗ. Калаҫса кайрӑмӑр. Эпӗ ӑна ӗнер хӑйсем патӗнче хӑнара пулни ҫинчен пӗлтертӗм.

Иван Петровичӑн куҫӗсем сасартӑках ҫуталса кайрӗҫ.

— Ну, мӗнле?—терӗ те вӑл чавсипе чӗркуҫҫи ҫине тӗренчӗ, ман ҫине ҫав тери юратнӑ ҫын ҫине пӑхнӑ пек пӑхма пуҫларӗ.—Хӑналаса ячӗ-и сире анне? Пӗҫерсе ҫитерчӗ-и пӗлӗмсем, икерчӗсем...

— Икерчине эп тӑриччӗнех пӗҫерсе хуначчӗ,—терӗм эпӗ.—Ӑшӑ сӗт те суса ӗҫтерчӗ.

Иван Петрович савӑнӑҫлӑн сиксе тӑчӗ те ман алла тытса чӑмӑртарӗ.

— Тавтапуҫ ыр сӑмахӑршӑн, юлташӑм! Вӑл ылттӑнран та хаклӑ пирӗншӗн.

— Мӗншӗн хӑвӑр пата илсе килместӗр эсир ӑна?

— Килмест вӗт. Ним тусан та колхозран хӑпса тухасшӑн мар. Ӗҫ чӗре патне пынӑ чух колхозрах ӗҫлетӗп, сана пӑхма Ануш пур вӗт унта, тет. А эп пӗчӗк ача-и-мӗн—мана пӑхма?—текелесе Иван Петрович ман ума пырса тӑчӗ.—Тавтапуҫ турра, ҫирӗм тӑххӑра пусрӑм ӗнтӗ... Ну, сыв пулса юлӑр. Ҫитес вырсарникун сире кӗтсех тӑратӑп ӗнтӗ эпӗ... Сирӗнпе темле калаҫма пите ҫӑмӑл.

Вӑл пукан ҫине пырса кӗрсе, кавир ҫинче такӑнкаласа, канцеляринчен тухса кайрӗ.

Тепӗр икӗ эрнерен, вырсарникун, эпӗ ирех тӑрса тумлантӑм та Сук шывӗ хӗррипе, тавра ҫулпа, Нюрӑсен хваттерӗ еннелле тухса утрӑм. Манӑн кӑштах ҫурхи кунпа савӑнса уҫӑлса ҫӳрес килетчӗ.

Хитре те тӳлек ҫурхи ҫанталӑк Сук тӑрӑхӗнче. Улӑхри ҫӗмӗрт, ҫирӗк, хӑва йывӑҫҫисем хушшипе таҫтан-таҫтан шыв сарӑлса выртать. Аякри утравсем ҫинче, чӗрӗ сывлӑшра, кайӑк кӑвакалӗсем нартлатаҫҫӗ. Такам ачашланӑ пек, ӑшӑ ҫил вӑштӑртатса юхса иртет, шӑппӑн-шӑппӑн тӗлӗрекен шыв кӑкрине кӑтралатса хӑварать. Шыва усӑннӑ хӑва тураттисем хускалса илеҫҫӗ, чӗрлӗх шывӗпе чӳхенсе кун пуҫланасса кӗтме тытӑнаҫҫӗ. Турам тӗтре йӑсӑрланса килет, пӗтӗм улӑха, шыва, йывӑҫсене хупласа хурать. Ак ӗнтӗ ҫил те чарӑнчӗ, кайӑк-кӗшӗксем те шӑпланчӗҫ, шыв та хускалмасть. Анчах пур ҫӗрте те, пур япалара та: шывра, йывӑҫсенче, сывлӑшра,—темӗскере чӑтӑмсӑррӑн кӗтни, чӗнни, йыхӑрни сисӗнсе тӑрать. Ҫурхи асамлӑ тӗнче ҫутӑлас умӗнхи ҫӑмӑл та канӑҫсӑр ыйӑхпа ҫывӑрать.

Кӗҫех инҫетри тӗттӗмлӗхре, улӑхсем леш енчи чӑваш ялӗсенче, пӗрремӗш автан авӑтса ярать. Унтан иккӗмӗшӗ хутшӑнать, виҫҫӗмӗшӗ...

Мӑнтарӑн сӑваплӑ ирхи ҫанталӑкӗ, пирӗн ачалӑхӑн ачаш сӑпки!

Кам юратмасть пуль ӗнтӗ автан сассиллӗ те шӗлтӗрти пӑрлӑ ҫурхи ире. Пуринчен ытла ҫуркунне ялта лайӑх. Тул ҫутӑлна-ҫутӑлманах йӑмрасем тӑрринче кураксем кӑшкӑрашма тытӑнаҫҫӗ. Янкӑр уҫӑ тӳпене кашни пӳрт тӗленченех тӗтӗм юпи ҫӗкленет. Алӑк шалтлатнисем, лаша кӗҫенни, пусӑ тараси чӗриклетни, витре-ҫарма шӑнкӑртатнисем илтӗнме пуҫлаҫҫӗ. Илӗртӳллӗн кулкаласа, сан умӑнтанах сарӑ хӗр чупса иртет. Таҫта чӳрече васкаса уҫӑлать.

— Эй, Анюк, кӗр-ха наччаслӑха, пӗр курка сӑра ӗҫтерем.

Кӗҫех картасенче сӗт чӑрлатма тытӑнать, сывлӑша ӑшӑ сӗт шӑрши сарӑлать...

Ак ĕнтĕ ĕнесене те суса пĕтернĕ, чăх-чĕпсене те сарă тулă сапса панă. Кахаллăн кавлекен ĕне çурăмĕ çине чавка пырса ларать, йĕри-тавра куç-не-пуçне вылятса, унăн йăптăхне тăпăлтарма тытăнать.

Ĕне тулли кăмăлпа сывласа куçне хупать...

Ан кул, юлташăм, эпĕ ун чух пурĕ те çирĕмре çеç пулнă, пĕрремĕш хут юратнă. Пулас тĕлпулу, саванăçлăн уçăлакан çурхи ир, кăвак тӳпере юрлакан кайăксем,—пĕтĕм çак сасартăк йăтăнса аннă çамрăклăх телейĕ чăн та ман пуçа антратрĕ, чĕрене хускатрĕ. Эпĕ халиччен çĕр хут та курнă пӳртсем, садсем, йывăççем çине халь тин çуралнă çын пек савăнса пăхатăп. Манăн вĕсене кашнинех тытса ачашлас килет, чĕре патĕнчи ăшă та йăпатуллă сăмахсене калас килет.

И** хули мана пур енчен те яла аса илтеретчĕ. Пĕчĕкренех пуçа кĕрсе юлнă ял сăн-сăпачĕ пекех, вăл пĕр эрне хушшинче ман тăван кил пулса тăчĕ. Эпĕ халь çуртсемпе садсем çине те, тислĕклĕ çул çинче чинлă утса çӳрекен курак çине те тахçан ĕлĕк курнă япаласем çине пăхнă пек пăхатăп. Чăн та, ал-ура-сенче вĕри юн тапса тăнă чух, йĕри-тавра сан пекех сывлăхлă та хаваслă çынсем, хитре тумланнă çамрăксем çӳренĕ чух кашни куна ĕмĕре тăсас килет.

Нюрăпа Иван Петрович пурăнакан пĕчĕк пӳрт те мана темшĕн тахçан курнă çурта аса илтерчĕ. Унашкал çуртсене час-часах хула хĕррисенче курма пулать. Çиелтен пăхма вĕсем мĕскĕн те сăпайлă. Тен ытларах та сăпайлă пуль. Тăррине витнĕ хăми хуралса ларнă. Вĕрлĕк хапха. Урам енчи ик чӳрече хушшинче черчен туваллă лăстăрти хурăн ларать. Сасартăк куçа илĕртмелли, кăмăла хăй патнелле туртмалли нимех те çук ĕнтĕ кунта, çавăнпа çула тухнă çынсем вĕсене чылай чухне асăрхамаççĕ те. Анчах кăшт аяккарах кайса сăнарах пăхăр-ха эсир вăл çуртсем çине. Сирĕн куç умĕнчех вĕсем хитрелене, темĕнле шалти илемпе капăрланса кайнă пек туйăнма пуçлаççĕ. Вĕсенче пытарăнчăк вăй, вăй та мар-ха, темĕнле вăрттăн тивĕçлĕх, сулмаклăх пурри сисĕнме пуçлать. Вара эсĕ малтан курăннă мĕскĕнлĕх, çиелти сăр, суя мираж кăна пулнине ăнланса илетĕн. Ирĕксĕрех йĕри-тавра çаврăнса пăхатăн: мĕн-ши вăл çак сулмаклăха кӳрсе тăракан хăват? Пӳрт умĕнчен хĕвелтухăçнелле сарăлса выртакан ирĕк уйсем-ши? Е картиш хыçĕнчи улмуççи сачĕ-ши?

Эпĕ пырса кĕнĕ вăхăтра Нюра кăмака умĕнче апат-çимĕçсем хатĕрлетчĕ. Çине вăл çутă-кĕрен кофта, хура юбка тăхăннă. Уринче—çӳллĕ кĕлеллĕ туфли. Çӳçне çав-çавах, кĕлте пек кăпăшлантарса, сулахай еннелле тураса хунă.

Çинçе те илемлĕскер, вăл кăмака умĕнче хĕрелнипе халĕ татах та хитререх пек туйăнать.

Пӳрт ăшчикки питĕ тирпейлĕ. Икĕ кровать: пĕри—алăкпа картишне тухакан чӳрече хушшинче, тепри—малти кĕтесре. (Вырăнне мĕнле пуçтарни тăрăх пăхсан, ку—хĕрарăм кровачĕ.) Икĕ сĕтел, тăват-пилĕк пукан, вĕсем те пулин килте тутарнăскерсем. Стенасем çинче çулпуççен сăн-ӳкерчĕкĕсемпе пысăк куçкĕски тата кĕнеке çӳлĕкĕсем пулман пулсан, пӳрт ăшчикки тен ытла та пушăрах пек курăннă пулĕччĕ-и.

Сĕтел хушшинче çырса ларакан Иван Петрович мана курсанах сиксе тăчĕ те, хирĕç утса пырса, алла чăмăртарĕ.

— Тухмасть, — терĕ вăл салхуллăн. — Пилĕк сехетренпе асапланса ларатăп, темиçе вариант та туса пăхрăм ĕнтĕ, пĕри те килĕшмест...

Иван Петрович пӑртак мыскараллӑрах ҫын, хиртяк, „оригинал“ тенине илтнӗ пулин те, эпӗ малтанах аптраса ӳкрӗм.

— Кам тухмасть? Мӗн килӗшмест?

— Юрӑ тухмасть,—терӗ те Иван Петрович, куҫлӑх витӗр йӑмӑкӗ ҫине пӑхса илчӗ.—Ӗлӗкхи юрӑсене куҫарассипе аппаланса ларатӑп та, нимӗскер те тухмасть. Иртнӗ расра анне авалхи юрӑсем юрласа пачӗ. Хӑш-пӗрисене эпӗ унччен те илткеленӗ. Анчах анне юрланине илтсен, тӗлӗнсех кайрӑм... Мӗн тери илем те мӗн тери хурлӑх вӑл юрӑсенче! Уй варринчи тӑлӑх-турат пекех туйӑнӑ, иккен, хӑйне ӗлӗк чухне мӑнтарӑн чӑвашӗ. Ниҫта та ни ӑшӑ кӗтес, ни хӳтлӗх, ни шанчӑк курӑнмасть.

Хура вӑрман ҫинчи хура пӗлӗт,
Тата мӗн ҫӑвасси, ай, пур-ши ун?
Ай-хай, асапӑмсем, кӗске ӗмӗр,
Тата мӗн курассисем, ай, пур-ши-ха?

Хапхӑр умӑрсенче, ай, лӑс хурӑн—
Ҫӗре тиви-тивми, ай, ларать-ҫке.
Ай-хай-ах та мӑнтарӑн, ай, телейӗ,
Ҫынна ҫити-ҫитми, ай, тӑрать-ҫке.

Тата „Уй варринчи лаштра юман“ текен юрра астӑватӑр-и? Вӑт ҫав юрӑн пӗтӗм сӗтекне, пӗтӗм тӗпсӗр хурлӑхне куҫарнинче палӑртма вӑй ҫитерес пулсан, эпӗ хама шутсӑрах телейлӗ ҫын тенӗ пулӑттӑм. Пӗр „лаштра“ тенӗ сӑмах кӑна мӗне тӑрать... Да-а... Ҫынсем мухтаҫҫӗ, анчах, хама килӗшмеҫҫӗ-ҫке? Редакцинче те ырланӑ вӑн. „Пичетлетпӗр, татах куҫарса ярӑр“, теҫҫӗ...

Пиччӗшӗ калаҫнӑ вӑхӑтра Нюра сӗтел ҫине пырса чавсаланчӗ те пӗрмаях ун ҫине пӑхса ларчӗ. Унӑн нурҫӑн пек ҫемҫе ҫӳҫӗ ман пите сӗртӗнсе, кӑтӑклантарса тӑрать. Эпӗ ҫывӑхранах Нюрӑн кӑшт тӑртаннӑ пек курӑнакан пӗчӗк тутисене, тӳрӗ те хитре сӑмсине, чӑмӑр кӑкӑрӗсене куратӑп... Сӑнран пӑхсан, пӗрре те пӗр тӑвансем пек мар вӗсем. Пӗри ҫӳллӗ те яштака, хитре, тепри лутра, ӑшӑ кӑмӑллӑ пулсан та, сӑнран тӳрккесрех. Анчах темскер пурах вӗсен пӗр пекки. Темле пӗрне-пӗри ҫав тери сума-суса, шӑкӑлтатса калаҫса пурӑнакан пӗчӗк ачасене аса илтереҫҫӗ вӗсем мана.

Иван Петрович калаҫма чарӑнсанах Нюра хӑйӗн тӗпсӗр хура куҫӗсене ман ҫине куҫарчӗ.

„Юрататӑн-и эсӗ те ман пиччене? Килӗшеҫҫӗ-и сана унӑн ӗҫӗсем?“— теҫҫӗ вӑл кӑшт шикленерех пӑхакан пысӑк куҫсем.

Эпир Иван Петровичӑн кӗнекисене пӑхса тухрӑмӑр, ӗпат ҫирӗмӗр. Кӑнтӑрлапа Нюра тухса уҫӑлса ҫӳреме кӑмӑл турӗ.

Ирхине ура айӗнче кӗленче пек шӗлтӗртетсе ванакан пӑр халь исленсе сӗлкӗш пулнӑ. Иван Петрович сасартӑках пусӑрӑнса вуҫех те калаҫми пулса ларчӗ. Тӑтӑшах вӑл шыв кӳленчӗкӗсене кӗре-кӗре каять, тӗмескесем ҫинче такӑнать. Вара куҫлӑхне хывать те чылайччен ӑна сӑмса тутрипе сӑтӑркаласа тӑрать. Ҫӗнӗ костюм, ҫӳхе пальто тӑхӑннӑскер, вӑл ирӗк уйра, ҫутҫанталӑк ытамӗнче темле ҫухалса кайнӑ пек, темӗншӗн ӳкӗнсе пынӑ пек туйӑнать.

Сук хӗрринелле ҫитес чух Иван Петрович чарӑнчӗ те мана хулпуҫҫинчен тӗкрӗ.

— Итлӗр-ха, Федор Ильич. Манӑн пуҫ ыратма пуҫларӗ. Эсир ҫӳрӗр... Халь васкама кирлӗ мар... Канмалли кун вӗт.

Вӑл йӑмӑкӗ ҫине айӑплӑн пӑхса илчӗ те килнелле утрӗ.

— Суяты!—терӗ Нюра, Иван Петрович курӑнми пулсанах. — Пуҫ ыратать пулӗ тетӗр-и эсир унӑн? Тыттарать. Ӗҫлеме карӗ. Яланах ҫапла вӑл... Куҫ ҫутине пӗтерчӗ ӗнтӗ хӑйӗнне.

— Питӗ юрататӑр пулас эсир пиччӗре.

Нюра темĕнле вăрттăн япала ҫинчен пĕлтернĕ пек ман ҫине вăтанса пăхса илчĕ те, пуҫне усрĕ.

— Тĕлĕнмелле ҫын вăл. Вăл маншăн пичче те, атте те... Эпĕ уншăн кирек хăш вăхăтра та хам пурнăҫа пама хатĕр.

Эпир Сук хĕррине ҫитсе шыва май анаталла утрăмăр.

— Пĕлетĕр-и?—терĕ те Нюра, ҫурхи тĕнче пекех ыйтарайми хитрескер, ҫӳҫе йывăҫĕ ҫумне тайăнса тăчĕ.— Вăл вунтăватта кайсан тин ялти шкула вĕренме кĕнĕ. Института ҫитсен, ҫĕрле типографисенче ĕҫлесе мана вĕренме кĕме пулăшрĕ, хăй вĕренсе тухрĕ. Шутлăр: вунтăваттăра—хут пĕлмен ача, халĕ—институт пĕтернĕ ҫын, писатель...

— Кăмăлĕ те питĕ аван унăн.

— Ҫав тери... Ача пек вăл. Анчах... Ытла та кĕнекесем ҫине тăрăнчĕ. Ҫĕрле тăра-тăра ларать. Нимĕҫле калаҫма вĕренчĕ, акăлчанла перкелешет...

— Эпир сасартăк сĕм вăрмантан аслă уя сиксе тухнă ҫынсем ҫав, Ню... Анна Петровна. Тĕнчере мĕн кăна пулман пуль, мĕн кăна ҫырман, шутласа кăларман пуль эпир кĕтӳ хыҫҫăн ҫӳренĕ вăхăтсенче! Тепĕр чух сехре хăпса каять вĕт, вăй пĕтсе ларать. Кашнинех ик-виҫ ĕмĕр кирлĕ пире ҫавсене пĕлсе ҫитме.

Нюра йывăҫ ҫумĕнчен уйрăлчĕ те ман ҫумма ҫывăха-ҫывăха пырса тăчĕ.

— Калăр-ха,—терĕ те вăл, шăннипе пулас, кăштах ҫӳҫенсе илчĕ,—чăн-и вăл, эсир хăвăр колхоз валли электростанци проекчĕ тунă, теҫҫĕ? Сирĕн ҫинчен-и вăл хаҫатра ҫырчĕҫ?

— Ҫапла, — терĕм эпĕ. — Облаҫре ырларĕҫ ăна. Халь Мускава ятăмăр.

— Апла эсир инженер пулма та пултаратăр пуль?

— Пĕрер ҫул шкулта ĕҫлесе пăхас тетĕп. Унтан—аспирантурăна...

Нюра темшĕн ассăн сывласа илчĕ те каллех йывăҫ ҫумне таянчĕ, ҫĕрелле пăхма пуҫларĕ.

— Ĕҫлеме сире, паллах, урăх хулана яраҫҫĕ.

Унăн сассинче пĕр вăхăтрах татса калани те, ыйтни те, шикленни те илтĕнет.

— Ҫук,—терĕм эпĕ.—Ĕҫлеме эпĕ ҫак шкулах килесшĕн. Директорпа та калаҫса татăлвă ĕнтĕ.

Нюра пĕчĕк ача пек сасартăк кулса ячĕ те ҫул ҫине чупса тухрĕ.

— Кайрăмăр киле!..

## III

Иван Петрович мана ыйăхран каярах юлса вăраннă ҫынна аса илтеретчĕ. Кунĕпехваскать вăл: вуласа пĕтерейммен кĕнеки ҫине пăшăрхануллăн пăха-пăха илсе, тетрадьсем юсать, васкаса хаҫат-журналсене пăхса тухать, нимĕҫ чĕлхи учебникне тытса ларать. Кăшт сарăхарах панă костюмĕн кĕсйисенче унăн яланах тĕрлĕ словарьсем, справочниксем, алҫыру тĕркĕмĕ.

Апат ҫисе ларнă чухне те, савăннă чух та, шкулта та унăн йăвашшăн та кăшт тĕпчесерех пăхакан куҫĕсенче пĕр шухăш, пĕр ĕҫ асран кайманни сисĕнсе тăрать. Вăл яланах хăйĕн пулас произведенийĕсем ҫинчен шухăшлать, унти геройсемпе пурăнать пулас...

Каҫ. Эпĕ алăк патĕнчи пĕчĕк сĕтел хушшинче кивĕ журналсем пăхкаласа ларатăп. Иван Петрович вулать. Нюра абажур сулхăнне, тĕттĕм кĕтессе кĕрсе ларнă та, чĕнтĕр ҫыхать. Эпĕ пуҫа ҫĕклемесĕрех вăл ман ҫине пăхнине туятăп.

Тулта ҫумăр ҫăвать, ҫил тулать.

Апра темшĕн кичем, пусăрăнчăк. Эпĕ Нюрăна малтанхи хут курнине, И.. хулинче иртнĕ вăхăтсене аса илетĕп. Мĕнле хăвăрт та сисĕнмесĕр иртеҫҫĕ, иккен, кунсем! Нумаях та пулмасть хĕллеччĕ, ак халь урамра—

июнь каçĕ, чĕреслеттерсе çумăр çăвать, Сук канăçсăррăн шавлать.

Ыран эпĕ тухса каймалла. Пĕрте пĕр шутласан, пурте чиперех темелле ĕнтĕ. Хушнă ĕçе тунă. Практика пĕтрĕ. Кĕсъере—ман ĕçе ырлакан хут. Малта — госэкзамен, шкулти шавлă кунсем, хĕрӳ ĕç.

Анчах çапах та, çиелтен пăхма пурте йĕркеллĕ пек курăнать пулсан та, ăшра темĕскер çитмест, темĕскер пăшăрхантарать. Тӳррипе, апла калама та кирлĕ мар ĕнтĕ, мĕншĕн тесен эпĕ вăл пăшăрханăвăн ятне те, сăлтавне те пĕлетĕп.

Малтан курнă чух мана Нюра çав тери хăюллă та уçă кăмăллă хĕр пек туйăннăччĕ. Анчах каярахпа вăл йăлтах улшăнса кайрĕ. Пĕрре вăл хăйне пĕчĕк ача пек кăшт вăтанарах тыткалать, калаçать, кулать, юнашар пырса ларса манпа пĕрле кĕнеке вулать. Ун пек чух вăл хăй хĕр ача иккенне те манса каять темелле. Тепрехинче мана курсан, сасартăк хĕрелсе каять те, хальхи пек, пĕр-пĕр тĕттĕмрех кĕтессе кайса ларса, ал ĕçĕ тума тытăнать. Вара çĕрĕпех унран пĕр сăмах та кĕтсе илейместĕн.

Пĕррехинче Сук çине кимĕпе ярăнма кайнине лайăх астăватăп. Хĕвеллĕ ăшă кунччĕ. Эпир пĕчĕк кимĕпе юхăма хирĕç инçе-инçе хăпарса кайрăмăр. Нюра шухăша кайса шыв çине усăнса аннă çĕмĕрт тураттисене тататата илет, уçă сывлăша тулли кăкăрпа сывласа ман урлă аяккалла тинкерет. Мĕнле хитре те тарăн унăн куçĕсем! Манăн Нюрăн ирхи шуçăм пек илемлĕ пичĕ çине, пĕчĕк аллисем çине пăхса çапла вĕçĕмсĕрех малалла ишес килет. Пултарччĕ вăл манăн ĕмĕтĕм, таса шухăшăм...

Шыв кукрине çитсен, Нюра сасартăк сиксе тăчĕ те кимме кăшт çеç йăвантарса ямарĕ.

— Эх, мĕншĕн эсĕ...—терĕ те вăл, хĕрелсе, вăтанса чарăнса ларчĕ, пĕшкĕнсе кĕсмен аврине тытрĕ.—Çаврăнар пуль каялла... Санăн пирĕн ялта çуралмалла пулнă...

— Вара?—терĕм эпĕ.—Вара мĕн пулнă пулĕччĕ?

— Нимĕн те мар,—терĕ те вăл, темĕскере ăнланса илменнишĕн тарăхнă пек пулса тутине çыртрĕ.

— Халĕ мĕнле?—ыйтрăм эпĕ, ăна куçĕсенчен сăнаса пăхса.—Халĕ?..

Нюра шыв çинелле пĕшкĕнчĕ те урăх пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Ун хыççăн ик-виç кун манран пăрăнарах çӳрерĕ.

Иван Петрович пирĕн хушăри урлă-пирлĕсене, вĕçленмен сăмахсене сисет. Сисет çеç те мар, вăл эп асаплланнине те курать. Вăл, тен, чунтавах мана пулăшнă пулĕччĕ, анчах майне-йĕрне чухламасть. Халĕ те ак вăл ассăн сывласа илсе вăйсăр куçĕсемпе ман еннелле пăхать, куçлăхне хывать.

— Мĕнле? Мĕншĕн пĕри те чĕнместĕр? Тен шахмăтла выляса илĕпĕр?

Эпĕ ура çине тăтăм.

— Кайма вăхăт ĕнтĕ, чылай вăхăт иртрĕ вĕт.

— А çумăр? Тен кунта çывăрса кайăр?

— Çук, хваттерех каятăп... Сыв пулăр...

— Нюра, ăсатса яр-ха эппин. Ну, чипер çитĕр.

— Ыр каç пултăр, эппин.

Çенĕхе тухсанах Нюра ман алла тытса чăмăртарĕ.

— Ыран каятăр, эппин?

— Каятăп,—терĕм эпĕ.—А эсĕ ăçтан пĕлетĕн?

— Пĕлетĕп. Çапла сывпуллашмасăрах тухса каясшăнччĕ-и?

— Эпĕ çыру çырса хăварас тенĕччĕ.

Нюра пăртак чĕнмесĕр тăчĕ те кайма пуçларĕ.

— Ну, чипер çитĕр эппин...

— Тăхта-ха,— терĕм эпĕ.— Çаплипех пĕтет-и вара пирĕн паллашу?

— Сивĕ,— хуллен пăшăлтатрĕ Нюра.

Эпĕ ăна ачашшăн ыталаса плащ аркипе чăркарăм та чуптуса илтĕм.

—Ыранччен,— терĕ те Нюра хуллен ман ытамран шуса тухрĕ.—Ыран клубра вечер пулать. Пырăр...

Пÿрт алăкĕ шалтлатса хупăнсан та, эпĕ темиçе минут хушши антраса ним ăнланмасăр тăтăм. Шăлтăрах вай пĕтсе килчĕ. Чылайран тин ман хăлхана урамри сас-чĕвсем илтĕнме пуçларĕç. Çумăр чарăннă иккен. Çил те çук. Çурт çийĕнчен темĕнле каnăçлă та ырă саслăн янраса шыв тумласа тăрать.

Манăн çывăрас килместчĕ. Эпĕ, ÿсĕр çын пек тайкаланса, çенĕхрен тухрăм та уялла утрăм.

* * *

Хваттере хăш вăхăтра таврăнса выртнине, тепĕр кунне мĕн туса ирттернине эпĕ халь хам та лайăххăн астумастăп. Каçхине çеç шалкăм çумăр çуса иртнĕ пулсан та, çав тери пăчă пулчĕ вăл кун. Каçпала çанталăк пушшех тăвăрланса çитрĕ, сывлама кансĕрлене пуçларĕ. Çавна пулах вечерта ташлакансем сахал пулчĕç. Пĕр вуникĕ сехетсем тĕлнелле Нюра хăйĕн юлташĕсемпе сывпуллашрĕ.

Эпĕ çĕрĕпех вăл мĕнле ташланине, унăн хăйне расна çутăпа ялкăшса тăракан хура куçĕсене, кăшт шурăхнă сăн-сăпатне сăнаса лартăм. Нюрăн пур хусканăвĕсенче те темĕнле вăрттăн шухăш, пĕр эпĕ кăна асăрхама пултаракан çепĕçлĕх пурри сисĕнсе тăратчĕ.

— Эсир пымастăр-и?— терĕ те вăл, хăйĕн вăрттăнлăхне пытарса тăраймасăр кулса ячĕ.—Хăратăп эпĕ... Ну, сывпулăр, хĕрсем.

Çурхи хурăн пек яштака пÿ-силлĕ те илемлĕскер, вăл пер самантра урама чупса тухрĕ, хускалмасăр ларакан йывăçсем хушшипе васкаса анаталла утма тытăнчĕ.

— Кĕçех аслати пуçланать,—терĕм эпĕ, аран-аран Нюрăпа тан ĕлкĕрсе пырса.

— Çĕрĕ те чылай пулчĕ пулас,— тесе, Нюра тата васкарах утма пуçларĕ.

— Мĕншĕн ун пекех васкатăр?

— Часрах киле çитес.

— Киле-и вара эсир?—хăраса ÿкрĕм эпĕ сасартăк.

— Тата ăçта кайăпăр?

— Айтăр Сук хĕрринелле.

Нюра килĕшрĕ. Анчах вăл унталла та çав-çавах васкаса утать. Эпир, тĕттĕм урам вĕçне тухса, Сук хĕрринелле пăрăнтăмăр. Тĕксĕмĕн курăнса ларакан çуртсем хыçала тăрса юлчĕç. Халь ĕнтĕ тÿпе те, çĕр те пĕр тĕслĕ—пăч тĕттĕм. Сайра-хутран çеç аякри вăрмансен леш енче çиçĕм йăлтăртатса илет. Тăвăл умĕнхи çанталăк пăчă, тăвăр, лăпкă.

## IV

Эпир иккĕнех. Пĕр утăмра Сук шăппăн юхса выртать. Çыран хĕрринче, пиртен инçетрех мар, хурсем лараççĕ. Сывлăшра шăркана ларнă ыраш шăрши кĕрет.

Нюрăн алли кăвар пекех.

— Анна Петровна!— тетĕп эпĕ шăппăн, чĕтрекен сасса пусарма тăрăшса.— Анна Петровна, Анечка, Нюра... Ăçтан таталса антăн эсĕ ман ума? Мĕнле тĕл пултăмăр эпир пĕрнепĕри?

— Турта...—тет те Нюра, телейлĕн кулса илет.

— Кала-ха, Нюра, юрататăн-и эсĕ мана чăнах? Сума сăватăн-и кăшт та пулин?

Нюра хăвăрт-хăвăрт сывлать, ман

алла вӗҫертмесӗрех чул ҫинчен сиксе тӑрать.

— Куратӑн вӗт—килтӗм...

— Ҫук, кала-ха, юрататӑн-и?

— Юрататӑп... пулӗ теп.

Эпӗ ун аллине чӑмӑртарӑм.

Нюра хӑвӑрттӑн каялла чакрӗ.

— Ҫук, халь мар... Кайран... Кӗркунне пӗлтерӗп. Килетӗн вӗт?

— Экзаменсем пӗтсенех килетӗп. Кӗркуннеччченех килетӗп. Вара ӗмӗр пӗрле пулӑпӑр, пӗрле вӗренӗпӗр.

Нюра мана куҫран пӑхма тӑрӑшнӑ пек ҫывӑха-ҫывӑха пырса тӑчӗ.

— Ҫук, киле кайма вӑхӑт ӗнтӗ. Кӗҫех ак тӑвӑл пуҫланать.

— Тӑхта-ха кӑштах...

— Айтӑр, теп...

— Хӑрамастӑн пулӗ те эсӗ манран?

— Ҫук та ара... Кайма вӑхӑт ӗнтӗ.

Нюра пуҫне усрӗ те ман хул ҫине тайӑнчӗ.

— Кӗркуннеччен калас мар, палӑртас мар тенӗччӗ. Юрӗ ӗнтӗ... Чи малтан курсанах эп сире...

Вӑл хӑйӗн сассине такам илтесрен хӑранӑ пек, ҫав тери хуллен те майӗпен калаҫать.

Эпӗ Нюрӑна ачашшӑн тытса пӗрре чуптума ӗлкӗрнӗччӗ кӑна, вӑл сасартӑк вӗҫерӗнчӗ те аяккалла чупса кайрӗ.

—А!.. Атьӑр часрах, тӑвӑл килет...

Чӑн та, тӗттӗм тӳперен сивӗ ҫил вашкӑртма пуҫларӗ, ҫывӑхрах аслати кӗрлесе кайрӗ.

Сук хӗрринчи хурсем килелле хускалчӗҫ.

* * *

Эпӗ ҫав каҫах, ҫил-тӑвӑл тапраннине пӑхмасӑрах, хамӑр яла тухса утрӑм. Тул ҫутӑлса ҫитнӗ вӑхӑта хуларан ҫирӗм ҫухрӑмраччӗ эпӗ. Кӑнтӑрла тӗлне тӑван яла пырса кӗтӗм.

Тепӗр кунне кӑнтӑрла, 1941-мӗш ҫулхи июнӗн ҫирӗм виҫҫӗмӗшӗнче, эпӗ каялла И** хулине пырса ҫитрӗм. Анчах ӗлкӗреймерӗм. Нюрӑпа пиччӗшӗ вӑрҫӑ тапраннӑ кунах мобилизаци йӗркипе Куйбышев хулине тухса кайнӑ иккен...

Ҫавӑнтанпа пирӗн ҫулсем уйрӑлса кайрӗҫ. Кӗҫех эпӗ хам та фронта кайрӑм, нумай хутчен ҫапӑҫусенче пултӑм, суранланса госпитальре те выртса тухрӑм.

Кӑҫалхи январь уйӑхӗн уяр кунӗсенчен пӗринче эпӗ, фронта ҫӗнӗрен килекен салтаксем хушшинче, И** хулинчи шкул директорӗ пулнӑ Сергей Кузьмича палласа илтӗм. Иксӗмӗр те питӗ савӑнтӑмӑр. Вӑл мана пӗр ҫар чаҫӗнче тӑлмач пулса ӗҫленӗ Иван Петрович вилни ҫинчен пӗлтерчӗ. Нюрӑран мӗн фронта тухса кайнӑранпах пӗр сас-хура та ҫук, тет, иккен.

Тӗркӗшӳ вӑхӑтсем, ҫамрӑклӑх кунӗсем аякка-аякка тӑрса юлчӗҫ, вӑрҫӑ тӗтӗмӗпе хупланса курӑнми пула пуҫларӗҫ. Анчах хура куҫлӑ хитре хӗре эпӗ кашни ҫапӑҫу умӗнех аса илетӗп. Мана темшӗн пирӗн ҫулсем тaҫта хӗвеланӑҫӗнче, уйрӑлнӑ чухнехи пекех ӑнсӑртран пӗрлешессӗн туйӑнать...

Юлташӑм, ӑҫта эсӗ?

## АВТОРСЕН КĔСКЕ БИОГРАФИЙĔСЕМ

### *УЙĂП МИШШИ.*

Михаил Данилович Шумилов (Уйăп Мишши) 1911 çулта Чăваш республикинчи Шупашкар районĕнче, Мăштавăш ялĕнче çуралнă. 1923 çулта, ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, вăл Шупашкарти коммуна шкулне вĕренме кĕнĕ. Çак вăхăтра коммуна шкулĕнче чăваш поэчĕ Н. И. Полорусов — Шелепи ĕçленĕ. Коммуна шкулĕнче вĕренекен ачасене Шелепи тата ытти чăваш поэчĕсем те сăвăсем вуласа панă. Сăвăсем вуласа пани—пулас поэтăн кăмăлне хумхантарнă, унăн хăйĕн те сăвăсем çырасси килнĕ. Çапла вара Уйăп Мишши хăй те сăвăсем çырма тытăннă. Унăн чи малтанхи сăввисем 1925 çулта „Канаш" хаçатра пичетленсе тухнă.

Уйăп Мишши Шупашкарти педтехникумра вĕреннĕ тата Горькири пединститутран вĕренсе тухнă. Ун хыççăн вăл, Шупашкара таврăнса, тĕрлĕ вырăнта ĕçленĕ (Чăвашрабфак преподавателĕ, „Сунтал" редакторĕн заместителĕ, Чăваш Совет писателĕсен Союзĕн правлени секретарĕ т. ыт. те).

1933—1935 çулсенче Уйăп Мишши Хĕрлĕ Çар ретĕнче пурăннă.

1939 çулта ăна татах Хĕрлĕ Çара илнĕ. Аслă Отечественнăй вăрçăра пулнă.

Уйăп Мишши çырнă малтанхи сăвăсем уйрăм кĕнекен 1929 çулта (ытти поэтсен сăввисемпе пĕрле) пичетленсе тухнă. Ун хыççăн унăн „Сăвăсем" сборник, „Автогигант" очерк, „Машинăсем кĕрленĕ çĕрте" калавсем, „Çамрăк вăй" сăвăсен сборникĕ пичетленсе тухнă.

Хĕрлĕ Çар ретĕнче пурăннă чух Уйăп Мишши Тăван çĕршыв, Хĕрлĕ Çар, Карели çĕршывĕ çинчен нумай сăвăсем çырнă. Вăл сăвăсем „Тăван çĕршыв" сборникре 1938 çулта пичетленсе тухнă. Уйăп Мишши, совет пограничникĕсен кулленхи пурнăçĕпе йăлисене хăй куçĕпе курнăскер, „Çилхи витĕр çил вĕрет", „Чикĕре", „Кашласа килчĕ сарă кĕркунне" сăвăсенче пирĕн паттăр пограничниксен мораллĕ сăн-сăпатне, вĕсен патриотизмне, интернационаллă тарăн кăмăлĕсене тата хăрама пĕлмен паттăрлăхĕпе сыхăлăхне уççăн кăтартса парать. Ку сăвăсене вуланă чух Совет Çарĕпе халăх хушшинче çирĕп пĕрлĕх пуррине уççăн курса тăраттăр. Пирĕн боецсен пур паха енĕсене те поэт кашни малта пыракан совет çыннин чи паха тĕслĕхĕ туса кăтартать.

Уйăп Мишши хăйĕн сăввисенче общество интересĕсемпе хăйĕн интересĕсене таччăн çыхăнтарать. Пĕтĕмĕшле темăсем унăн хăйĕн темисем пулса тăраççĕ.

Поэт совет партизанĕсем çинчен, фронтри паттăр боецсем çинчен ну-

май сăвăсем çырчĕ. Çав сăвăсене пĕр çĕре пухса, Уйăп Мишши „Малалла, Хĕвеланăçнелле!“ ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Çак кĕнекери „Салтак амăшĕ“ ятлă произведеяире вăл чăваш хĕрарăмĕн пархатарлă та çирĕп чĕрине, аслă вăрçăра халăхсен пĕрлĕхĕпе тăванлăхĕ ўссе пынине уçăмлăн сăнласа кăтартса пареть.

## *Л. АГАКОВ.*

Леонид Яковлевич Агаков 1910 çулта Чăваш республикинчи Етĕрне районĕнче, Канаш посёлкинче çуралнă. Вăл ялти шкултa тата Етĕрнери педтехникумра вĕреннĕ.

Педтехникумра вĕреннĕ вăхăтрах Л. Агаков очерксем, пĕчĕк калавсем, „Капкăн“ журнал валли фельетонсемпе сатирăллă калавсем çырма тытăннă.

1928 çулта ăна „Канаш“ (хальхи „Чăваш Коммуни“) хаçат редакцине ĕçлеме илнĕ. Хаçатра, унтан кĕнеке издательствинче ĕçлевĕ вăхăтра Л. Агаков чылай произведенисем çырнă. Малтан çырнă произведенисенчен паллăраххисем çаксем: „Вĕтлĕхри отряд“, „Юлашки юмах“, „Инкесем“ (калав сборникĕсем) тата „Ултав“ (пьеса).

1932 çулта Л. Агаков Мускаври театр искусстви институчĕн литература факультетне вĕренме кĕнĕ. Ку институтран вăл 1935 çулта вĕренсе тухнă, унтан вара, Шупашкара таврăнса, искусство учрежденийĕсенче тата писательсен союзĕнче ĕçлеме тытăннă.

1938 çулта Л. Агакова Хĕрлĕ Çара илнĕ. Вăл шурă финсене хирĕç çапăçнă, унтан аманса таврăннă.

Çарта пулнă чух Л. Агаков хăйĕн чи паллă произведенийĕсенчен пĕрине—„Пĕрре çуркунне“ повеçе çырнă. Аманнă хыççăн, Ленинградри госпитальре выртнă чух, совет воинĕсен паттăрлăхĕ çинчен „Разведчик Джунгали“, „Пулемётчик юрлать“ тата ытти калавсем те çырнă. Вăл калавсем малтан „Сунтал“ журналта, унтан „Манăн туссем“ ятлă сборникре пичетленсе тухнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансанах Л. Агаков фронта кайнă. Малтан вăл стрелковăй рота командирĕ пулнă, унтан ăна дивизи хаçачĕн редакцине ĕçлеме куçарнă.

Фронтра пулнă чух Л. Агаков хăйĕн пулас кĕнекисем валли материал нумай пухнă. Фронтрах вăл чылай калавсем çырнă, вĕсем кайран „Çапăçу хирĕнче“ ятлă сборникре пичетленсе тухнă. Вăл калавсенчен чи лайăхраххисем — „Вĕри чĕре“, „33 № старик“ „Салтак чунĕ“, „Юрă пурĕпĕр янранă“ т. ыт. те. Çав вăхăтрах, вăл „Тăван юншăн“ („Партизан Мурат“) ятлă повесть çырнă. Ку повеçре вăл совет ачисем партизансемпе пĕрле нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартса парать.

Вăрçă хыççăн та Л. Агаков вăрçă тематикипе ĕçлерĕ. Вăл „Вилĕмрен те вăйлăрах“ (1944 ç.), „Вăрçă ачисем“ (1946 ç.), „Ылттăн вăчăра“ (1948 ç.) ятлă повеçсем çырса кăларчĕ. Ун хыççăн вăл вăрçă хыççăнхи пурнăçа кăтартакан очерксемпе калавсем çырма тытăнчĕ. („Тăватă çул юппинче“ ятлă кĕнеке чăвашла та, вырăсла та тухрĕ. „Этем телейĕ“, „Туссем каллех тĕл пулаççĕ“ калавсем çырчĕ, т.ыт. те).

Кунсăр пуçне Л. Агаков вырăс писателĕсен кĕнекисене чăвашла куçарас тĕлĕшпе нумай ĕçленине палăртас пулать. Вăл А. М. Горькин „Амăшĕ“, „Манăн университетсем“ ятлă повеçĕсене, А. Фадеев, Б. Горбатов, В. Василевская т. ыт. писательсен пысăк произведенийĕсене те чăвашла куçарнă.

Л. Агаковăн фронтри ĕçĕсене тивĕçлипе хакласа, Совет правительстви ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, „За боевые заслуги“ тата „1941—45 çулсенче Отечественнăй вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн“ медальсемпе, вăрçă вăхăтĕнче литературăра çитĕнӳсем тунăшăн — „1941—45 çулсенче Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн“ медальпе наградăланă. Çавăншăнах Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ ăна Хисеп грамоти панă.

## *И. С. ТУКТАШ.*

Илья Семенович Тукташ 1907 çулта Чăваш республикинчи Элĕк районĕнче, Мăн Тукташ ялĕнче, вăтам хресчен çемйинче çуралнă. И. С. Тукташ ялти шкултан вĕренсе тухсан, Элĕкри II-мĕш сыпăк шкулта, унтан Шупашкарти Совпартшкулта вĕреннĕ. 1931—1933 çулсенче Самарти Геолого-разведывательнăй институтра вĕреннĕ.

И. Тукташ литература ĕçне 1919 çултах тытăннă, анчах малтан çырнă сăввисем унăн пичетленмен. 1929 çултан çеç унăн сăввисем чăвашла хаçатсемпе журналсенче пичетленме пуçланă. И. С. Тукташăн малтанхи сăввисене 1929 çулта çамрăк поэтсен сăввисене пухса кăларнă „Сăвăсем“ ятлă сборникре пичетленĕ. 1931 çулта Тукташ сăввисем „Октябрь çулĕ“ сборникпе, 1941 çулта „Чечек çыххи“ сборникпе пичетленсе тухнă.

1930 çултан пуçласа Тукташ прозăпа ытларах çырать. Унăн прозăпа çырнă паллăрах произведенийĕсем: „Кĕрхи каç“, „Тĕпел кукринчен“ „Малтанхи çĕнтерӳ“, „Вăкăр çырми“ „Шурă роза“, „Пурнăç пуçламăшĕ“ т. ыт. те.

И. С. Тукташ М. Горький, Серафимович, Шолохов, Джамбул произведенийĕсене чăвашла куçарнă. Кусемсĕр пуçне Тукташ чăваш фольклорне тĕпчесе пуçтарас тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ.

И. С. Тукташăн чылай сăввисем тăрăх чăваш композиторĕсем хорпа тата пĕччен юрламалли юрăсем çырнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Тукташ калавсемпе прозăллă сăвăсем çырчĕ. Юлашки çулсенче пичетленсе тухнă произведенийĕсенче Тукташ фронтри паттăрсемпе тылри хастарлă çынсене сăнласа кăтартать.

## *К. И. ПАЙРАШ.*

Кузьма Ильич Пайраш 1906 çулта Чăваш АССР Ишлей районĕнчи Вускасси ялĕнче, хресчен çемйинче çуралнă. 1921 çулччен пуçламăш тата II-мĕш сыпăк шкулта вĕреннĕ. 1925 çулта Шупашкарти II-мĕш сыпăк Совпартшкулта вĕреннĕ. 1921 çултанпах чăвашла хаçатсем çине çырса тăнă активлă корреспондент пулнă май, ăна хаçат редакцийĕнче ĕçлеме илнĕ. Унта вăл 2 çул ĕçленĕ.

1929 çулта Мускаври Медицина институтне вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн пĕр вăхăт районри больницăра, унтан Шупашкарти больницăра врач-хирург пулса ĕçлеме тытăннă.

К. Пайраш 1928 çултанпа литература произведенийĕсем çырать. Вĕсенчен паллăраххисем: „Лида йăнă-

шĕ", „Йывăр килсен", „Валя мĕн калĕ", „Прорыв", „Сестра", „Комсомол билечĕ" т. ыт. те.

1938 çултанпа К. Пайраш СССР Совет писателĕсен союзĕн членĕ. Хăйĕн калавĕсенче вăл пуринчен ытларах йăла ыйтăвĕсене хускатать, учительсен, врачсен, студентсен, комсомолецсен пурнăçĕнчен илнĕ фактсене пĕрлештерсе çутатса парать. Вĕсене халăх хушшинче тата тимлĕрех ĕçлеме кирлине, сыхăлăха, политикăллă активлăха ытларах, паянхи задачăсене тивĕçлĕ ӳстерме кирлине кăтартать.

К. Пайраш тăтăшах халăх сывлăхĕ çинчен, чир-чĕрсемпе мĕнле кĕрешмелли тата совет медицинипе уйрăм работникĕсем мĕнле ĕçлесе пысăк ӳсĕмсем туни çинчен хаçатсем çине статьясем, очерксем çырать.

Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче Кузьма Пайраш Совет Çарĕнче врач пулса ĕçленĕ. Юлашки çулсенче вăл „Партбилет", „Пуçламăшĕ", „Надя" тата ытти произведенисем те çырнă.

## УХСАЙ ЯККĂВĔ.

Яков Гаврилович Ухсай — поэт, драматург. Вăл 1911 çулта Пушкăрт республикин Пишпӳлек районĕнчи Слакпуç ялĕнче çуралнă. Унăн аслашшĕ чăваш поэзин классикĕ К. В. Иванов аслашшĕпе пĕр тăван пулнă.

Ухсай ялти пуçламăш шкулта, Пишпӳлекри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче (ШКМ-ра) вĕреннĕ, унтан Уфари аслă шкула кĕме хатĕрлекен курсра вĕреннĕ хыççăн, 1930 ç. вăл Мускаври государственнăй университетăн литература факультетне кĕнĕ. 1931 ç. çак факультетран Редакционно-Издательский Институт тунă, анчах вăл 1933 ç. хупăннă. Вара Ухсай вĕренме пăрахса, тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлеме пуçланă.

1933 — 1934 ç. Ухсай Мускавра тухса тăракан „Коммунар" хаçатра, 1935 — 1936 çулсенче Пушкăртсен Наци культурин наукăпа тĕпчев институтĕнче, 1937 ç. Патăръелĕнчи педучилищере преподавательте ĕçленĕ. 1938 çултан пуçласа Ухсай пикенсех литература ĕçĕ çине куçать. 1942 çулта Отечественнăй Аслă вăрçа, фронта тухса кайнă.

Ухсай 1927—1928 çулсенче сăвăсем çырма пуçланă. Унăн чи малтанхи сăвви 1928 ç. пичетленсе тухнă. Çакăн хыççăн Ухсай произведенийĕсем чăвашла хаçатсемпе журналсенче часчасах пичетленсе тухма пуçлаççĕ.

Ку вăхăтчен Ухсайăн çакăн пек произведенисем уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă: „Савăнаç кĕнеки", „Пуканесен бригади", „Туй", „Халăхсен ылттăн кĕнеки", „Вут чĕлхе", „Кăмака çинчи Иван", „Телей юмахĕ", „Тутимĕр", „Хура элчел", „Ĕмĕт", „Сăвăсемпе поэмăсем", „Чап" тата ытти те.

Ухсай сăввисене чылайăшне вырăсла куçарнă.

Ухсай хăйĕн произведенийĕсенче пуринчен ытларах колхозниксен пуян та культурăллă пурнăçне, совет ĕç халăхĕн тулли кăмăл-туйăмне, тăван çĕршыва юратнине, уншăн пур вăя хурса çапăçма хатĕр тăнине сăнласа парать. Ухсай сăввисен чĕлхи — образлă чĕлхе, вăл образлăх халăх творчествипе таччăн çыхăнса тăрать.

Чăваш АССР 25 çул тултарнине уявланă май, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Ухсай Яккуне Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ ятне панă.

Фронтра пĕтĕм вăйне хурса кĕрешнине шута илсе, Совет правительстви Ухсая „Отечественнăй вăрçă" орденĕпе наградăланă.

## *А. А. ЁҪХӖЛ.*

Аркадий Александрович Ёҫхӗл 1914-мӗш ҫулта Ҫӗрпӳ районӗнчи Янсакасси ялӗнче, вӑтам хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. 1928-мӗш ҫултан пуҫласа 1930-мӗш ҫула ҫитиччен вӑл Чистопольри (Тутар АССР) ял хуҫалӑх техникумӗнче вӗреннӗ. 1930-мӗш ҫулта ӑна, вӑл активлӑ комсомолец пулнине хисепе илсе, яла колхозсем организацилес ӗҫе пулӑшма мобилизациленӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл колхоз председателӗ пулса та, комсомол ӗҫӗнче те ӗҫленӗ. 1934-мӗш ҫултан пуҫласа „Чӑваш Коммуни" хаҫат редакцийӗнче ӗҫленӗ, халӗ Чӑваш совет писателӗсен союзӗнче ӗҫлет.

Аркадий Ёҫхӗл сӑввисем 1930-мӗш ҫултан пуҫласа пичетленме тытӑннӑ. Вӑл „Сунтал" журнала нумай сӑвӑсем ҫырса тӑнӑ. Каярахпа унӑн сӑввисем уйрӑм сборниксемпе пичетленсе тухнӑ. Сборниксен ячӗсем: „Малтанхи утӑмсем", „Ырӑ кун", „Ҫӗнтерӳҫӗсем", „Телей", „Атӑл", „Пӗчӗкҫӗ строительсем", „Тимур тусӗсем", „Пурнӑҫ илемӗ" т. ыт. те.

Ёҫхӗл пуринчен ытла колхоз пурнӑҫӗ ҫинчен, пирӗн ҫӗршыв социализм строительствинче туса пыракан ҫитӗнӳсем ҫинчен, Совет ҫӗршывӗнчи ырӑ та савӑк пурнӑҫ ҫинчен ҫырать.

А. Ёҫхӗл юлашки вӑхӑтра нумай ӗҫленӗ. Совет Союзӗн Геройӗ Орлов Ф. Н. ҫинчен „Ӑмӑрткайӑк" ятлӑ поэма, Чӑваш АССР 25 ҫул тултарнӑ вӑхӑтра Сталин юлташа хисеплесе „Республика ҫулӗ" ятлӑ поэма ҫырчӗ.

Ёҫхӗл творчестви пуян та нумай енлӗ. 1930 ҫултан пуҫласа вӑл темиҫе сӑвӑ-калав кӗнеки, пьесӑсем, критикӑллӑ тата публицистикӑллӑ статьясем пичетлесе кӑларнӑ.

Чӑваш АССР 25 ҫул тултарнине уявланӑ вӑхӑтра Совет правительстви Аркадий Ёҫхӗле литературӑри пысӑк ӗҫӗсемшӗн „Знак почёта" орден парса наградӑларӗ.

## *ИВАН ИВНИК.*

Иван Николаевич Ивник — поэт-лирик. Вӑл 1914-мӗш ҫулта Чӑваш АССР Вӑрнар районӗнчи Ҫавал-Мӑратра ҫуралнӑ. Педтехникумра вӗренсе тухнӑ. Пӗр ҫул ытларах Совет прави Институтӗнче вӗреннӗ. Малтанах „Капкӑн" журнала валли пӗчӗк сӑвӑсем-мыскарасем ҫырса тӑнӑ, унтан, 1930 ҫултанпа, лирикӑллӑ сӑвӑсем ҫырнӑ, вырӑсларан куҫарнӑ. Вӑл чӑвашла хаҫат-журналсенче чылай ӗҫленӗ тата Шупашкарти Чӑваш чӗлхипе литературин тата историйӗн наукӑпа тӗпчев Институчӗн сотрудникӗ пулнӑ. Унӑн сӑвӑ сборникӗсем пӗр 7 кӗнеке пичетленсе тухнӑ. Вӑл Пушкинӑн „Бахчисарай фонтанӗ", „Каменный гость" поэмисене, Лермонтов сӑввисене тата „Мцыри" поэмине, Шевченконне „Тӗлӗк" тата „Тополь" поэмисене, Чеховӑн, М. Горькийӗн, Маяковскин т. ыт. писательсемпе поэтсен произведенийӗсене те чӑвашла куҫарнӑ.

И. Ивникӑн чылай сӑввисем тӑрӑх юрӑсем ҫырнӑ. „Хӗвелӗмӗр Сталин" „Улма чӑпар утӑма" т. ыт. юррисем те чӑваш халӑхӗн юратнӑ юррисем пулса тӑчӗҫ.

Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ 1940 ҫулта, Иван Ивникӑн литература ӗҫӗнчи пысӑк ҫитӗнӗвӗсене шута илсе, ӑна „Хисеп грамоти" парса наградӑларӗ.

Иван Ивник, туберкулезпа вӑрах чирлесе пурӑннӑ хыҫҫӑн, 1942 ҫулхи май уйӑхӗнче вилнӗ.

## *АЛЕКСАНДР АЛГА.*

Александр Егорович Алга — поэт. 1913-мӗш ҫулта Тутар республикинче Аслӑ Турхан районӗнчи Кӑнна Кушки ялӗнче ҫуралнӑ.

1930-мӗш ҫулта Хусанти Чӑваш педтехникумӗнче вӗренсе тухнӑ. Ун хыҫҫӑн темиҫе ҫул хушши Чӑваш республикинче ялти шкулсенче учитель пулса ӗҫленӗ.

1938 ҫ. Александр Алга Шупашкарти пединститутра вӗренсе тухнӑ та Етӗрнери педучилищере чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентсе пурӑннӑ. 1939-мӗш ҫулта Алга Совет Ҫарне кайнӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑ кунсенчех вӑл Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи ҫапӑҫусенче пулнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче аманса сывалнӑ хыҫҫӑн А. Алга 1942 ҫ. Мускавра Ҫар ӗҫ инженерӗсен шкулӗнчен вӗренсе тухать те, офицер пулса, мӗн вӑрҫӑ пӗтиччченех фронтра ҫапӑҫать. Фронтра нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнӑшӑн ӑна „Хӗрлӗ Ялав“, „Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр“, икӗ хутчен „Отечественнӑй Вӑрҫӑ“ орденӗсемпе тата виҫ медальпе наградӑланӑ.

Александр Алга литература ӗҫне 1935 ҫулта пуҫланӑ. 1939-мӗш ҫулта унӑн „Хӗвеллӗ ир“ ятлӑ сӑвӑсен сборникӗ, 1940 ҫ. „Сӑвӑсемпе поэмӑсем“ сборник пичетленсе тухнӑ. Ҫак кӗнекесенче унӑн „Иккӗн“, „Шыв арманӗ“, „Илюк“ поэмӑсем пичетленнӗ.

Чӑвашла оригиналлӑ сӑвӑсемпе поэмӑсем ҫырнӑ вӑхӑтрах вӑл Пушкин, Шевченко тата ытти классик поэтсен произведенийӗсене чӑвашла куҫарать. Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Александр Алга нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ Совет Ҫарӗн паттӑрлӑхӗ ҫинчен, боецсен пултарулӑхӗ ҫинчен нумай ҫырать. Унӑн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫырнӑ сӑввисем тӑшмана хирӗҫ вӑйлӑ курайманлӑхпа ҫапӑҫма тата Тӑван ҫӗршыва чунтан юратма чӗнеҫҫӗ. Вӗсем илемлӗ те витерӳллӗ сӑмахсемпе ҫырнӑ сӑвӑсем— „Хӑрушлӑхпа хаярлӑх“, „Юн“ „Ырӑ ят“ тата ыт. те.

Юлашки ҫулсенче Александр Алган вӑрҫӑ уйӗсенче ҫырнӑ сӑввисен „Тӑватӑ ҫулталӑк“, „Сӑвӑсемпе поэмӑсем“ ятлӑ сборникӗсем тата „Ҫулӑм витӗр ҫул выртать“ ятлӑ поэми уйрӑм кӗнекен пичетленсе тухрӗҫ. „Ялав“ журналра тата „Тӑван Атӑл“ альманахра та чылай сӑввисемпе поэмисем пичетленчӗҫ. Вӗсенчен паллӑраххисем: „Атӑл каччи“, «Вӗсем ҫирӗм саккӑрӑн пулнӑ», «Полк ялавӗ».

## *СТИХВАН ШАВЛЫ.*

Стихван Шавлы (Степан Антонович Шумков) 1910-мӗш ҫулта Чулҫырма ятлӑ ялта (Куйбышев облаҫӗ, Шантала районӗ), чухӑн хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. 1925-мӗш ҫулта комсомола кӗнӗ. 1929 — 1937-мӗш ҫулсенче вӑл Самарти (Куйбышеври) рабфакра, унтан пединститутра вӗренет, ҫав хушӑрах „Колхозник“ хаҫатра ӗҫлет. 1939-мӗш ҫулта Хусанти пединститутран вӗренсе тухать те пурӑнма Шупашкара куҫать.

Стихван Шавлы ҫырма 1930-мӗш ҫулта тытӑннӑ. 1939 — 1941-мӗш ҫулсем хушшинче унӑн „Малтанхи аслати“ (сӑвӑсен пуххи), „Ҫиҫӗм ҫиҫет“ (поэма) тата Лермонтовпа Маяковскин сӑввисене куҫарнӑ кӗнекесем тухаҫҫӗ.

1941—1946 ҫулсенче Шавлы „Йыхрав“, „Поэт сасси“, „Киев пионерӗ“, „Маттур Якур“ ятлӑ кӗнекесем кӑларать, ҫав хушӑрах вырӑс былинисене, Крылов юптарӑвӗсене, иртнӗ ӗмӗрти чаплӑ вырӑс поэчӗсен сӑввисене куҫарать.

## *ХВЕТĔР УЯР.*

Хветĕр Уяр (Федор Ермилович Афанасьев) 1914 çулта, хальхи Куйбышев облаçĕнчи Исаклă районне кĕрекен Сухари-Матак ялĕнче çуралнă. 1927 — 1930 çулсенче Самарти иккĕмĕш сыпăклă чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. 1933 — 1935 çулсенче Хабаровскри педтехникумра тата Амур çинчи Благовещенскри пединститутра вĕреннĕ. 1935 — 1939 çулсенче — учитель. 1939 — 1949 ç.ç. Шупашкарта, „Капкăн" журналпа „Илемлĕ литература" (хальхи „Тăван Атăл") альманахăн редакцийĕсенче тата Чăвашсен кĕнеке палатинче ĕçлет.

1941 — 1945 çулсен фронтрипе тылри ĕçĕсемшĕн ăна „Чап" орденĕпе Аслă Отечественнăй вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн" тата „Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хастар ĕçленĕшĕн" медальсемпе наградăланă.

Унăн кĕнекисем: „Сукмак" (калавсемпе новеллăсем, Шупашкар, 1941 ç.), „Çулсем-йĕрсем" (Шупашкар, 1944 ç.), „Куçукпа Хураçка", „Упа" (ача-пăча кĕнекисем, 1944 — 1945 ç.), „Калавсем" (1947 ç.) пичетленсе тухнă.

Иван-Мучипе пĕрле кăларнисем: „Октябрь революцичченхи чăваш литератури" тата „Вырăс писателĕсем чăвашсем çинчен" (вырăсла).

Вырăсларан куçарнисем: А. П. Чехов калавĕсен кĕнеки (1944 ç.), унăннах „Кулăшла калавсем" (1947 ç.— Иван Мучипе пĕрле), Н. Г. Гарин çырнă „Сарпи" драма (1947 ç.).

## ТУПМАЛЛИ


*Стр.*

Чăваш халăхĕ Аслă Сталин патне янă çыру . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**Уйăп Мишши**

Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ . . . . . . . . . . . . . 17
Сулă çинчи юрă . . . . . . . . . . . . . 18
Салтак амăшĕ . . . . . . . . . . . . . 19

**Л. Агаков**

Пĕрре, çуркунне . . . . . . . . . . . 30
33-№-лĕ старик . . . . . . . . . . . . 91

**И. Тукташ**

Пурнăç пусламăшĕ . . . . . . . . . . 113
Кĕске калавсем (Пурнăçпа вилĕм, Шăпчăк, Пĕчĕк хĕр ача) . . . . . . 132
Полководец Сталин . . . . . . . . . . 134
Çĕнтерÿ юрри . . . . . . . . . . . . 135
Сывă пултăр çĕнтерÿ . . . . . . . . . —

**К. Пайраш**

Сестра . . . . . . . . . . . . . . . 136
Тăван уй-хир . . . . . . . . . . . . . 146
Партбилет . . . . . . . . . . . . . . 153

**Я. Ухсай**

Тутимĕр . . . . . . . . . . . . . . 165
Пĕр дивизири боецсемпе командирсем чăваш халăхĕ патне янă çыру . . 206

*Стр.*

**А. Ĕçхел**

Ăмăрткайăк . . . . . . . . . . . . . 219
Республика çулĕ . . . . . . . . . . . 246
Чи ырă ят . . . . . . . . . . . . . . 254
Атăл çинче . . . . . . . . . . . . . —

**Иван Ивник**

Çуркунне . . . . . . . . . . . . . . 260
Юрă . . . . . . . . . . . . . . . . 261
Хĕвелĕмĕр Сталин . . . . . . . . . . —
Халь те, малашне те . . . . . . . . . 262
Фашистсен йăхне . . . . . . . . . . . —

**А. Алга**

Ĕшнере . . . . . . . . . . . . . . . 265
Шыв арманĕ . . . . . . . . . . . . . 266
Сталинград . . . . . . . . . . . . . 268
Мухтав юрри . . . . . . . . . . . . . 269
Вăрçă туррин симфонийĕ . . . . . . . —
Сталин приказĕ . . . . . . . . . . . 270

**Ст. Шавлы**

Зоя . . . . . . . . . . . . . . . . 272
Мускав . . . . . . . . . . . . . . . 275
Комсомолецсен маршĕ . . . . . . . . . 277

**Хв. Уяр**

Сук хĕрринче . . . . . . . . . . . . 278

Авторсен кĕске биографийĕсем . . . 292

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Редактор *С. В. Эльгер.* Тех. редактор *Н. Степанов.*

НТ 00927. Подписано к печати 16/VIII—1949 г. Объем 18,75 печ. л. Заказ № 1567. Тир. 3000 экз.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров Чувашской АССР

*Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*

## ТӲРЛЕТНИ

| *Страница:* | *Миҫемĕш йĕркере:* | *Пичетленнĕ:* | *Вуламалла:* |
|---|---|---|---|
| 16 | 10 аялтан | ҫĕкленнĕ? | ҫĕкленнĕ, |
| 49 | 5—6 ҫӳлтен | кăтарт-р! | кăтартчăр! |
| 72 | 1 —„— | ҫĕсемпе | куҫĕсемпе |
| 97 | 2 —„— | линче | салинче |

Хрестомати, X кл.

Цена 5 руб. 75 коп.

# ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА

ХРЕСТОМАТИЯ

ДЛЯ X КЛАССА

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1949